
ГЕННАДИЙ ИГНАТЬЕВ
ИРТНĔ КУНСЕН ÇУТИ



УДК 894, 344
ББК 84 (2 Рос - Чув)-4
И 26

Игнатьев Г.С.
И 26 Иртнĕ кунсен çути. Повесть. - Шупашкар: Чăваш Республикинчи писательсен фончĕн «Калем» издательстви, 2000. - 288 с.

Кĕнекери сăнарсем - Патăрьел тăрăхĕнчи Кивĕ Катек, Çĕнĕ Ахпÿрт, Татмăш ял çамрăкĕсем. Вĕсен кулленхи пурăнăçне, канăвне, яш-кĕрĕм тăван колхоз пуянлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçленине, аслисемпе юнашар пулса тăрăшнине автор ĕненмелле те тĕрĕс çырса кăтартать.

Каччăсемпе хĕрсен хушшинчи çирĕп туслăхпа таса юрату та произведенире пысăк вырăн йышăнассĕ.

ББК 84 (2 Рос - Чув)

© «Калем» издательство, 2000 ç.



Кăçал çуркунне ир килчĕ. Хĕвелĕ хытă хĕртнĕрен тавралăх шурă юртан хăвăрт тасалчĕ. Çутçанталăк чĕрĕлни куç умĕнчех: сывлăш уçă, хĕл ыйхинчен вăраннă уйсем-хирсем, вăрмансем симĕс тум тăхăнаççĕ, çарансем çинче малтанхи чечексем шăтса тухрĕç, йывăççем çинче тĕрлĕ кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Çу уйăхĕ пуçланнăранпа акă икĕ эрне çитрĕ ĕнтĕ.

Коля Степанов сержант, Володя Ивановпа Алексей Завражнов аслă сержантсем салтак службинче тăраççĕ. Çывăх кунсенче вĕсен çарта пулмалли вăхăчĕ вĕçленет. Тĕрĕсрех каласан, шутлă кунсем юлчĕç. Çавăнпа та çакă юлашки икĕ эрне çамрăксемшĕн вĕçĕ-хĕррисĕр пулнăн туйăнчĕ. Мĕнле кăна шухăш-кăмăл илĕртмерĕ пулĕ вĕсене çак кĕске вăхăт хушшинче? Эх, çав кун хăвăртрах çиттĕрччĕ! Вара виçĕ тус пĕр вагон çине ларса инçе çула тухĕç. Вĕсене умра çуралнă çĕр, кайран Тăван çĕршывăн пысăк стройкисем кĕтеççĕ. Çакна çамрăксем лайăх ăнланчĕç, шухăш-ĕмĕчĕсенче вĕсем пысăк стройкăсенче пулчĕç ĕнтĕ, унта çĕнĕрен те çĕнĕ заводсем, ГЭСсем çĕкленнĕ çĕрте ырми-канми ĕçлерĕç, хавхалануллă, ырă кăмăл илĕртнĕçемĕн илĕртрĕ, чуна хумхантарчĕ.

Виççĕшĕн ĕмĕчĕсем пĕр евĕрлĕ пулсан та, киле таврăнсан кам ăçта каяссине халĕ те уçăмлăн татса параймарĕç-ха. Лешăна Тутарстан çĕрĕ, Набережные Челныри çĕнĕ стройка илĕртрĕ, механик пулнă май, вăл çĕнĕ машинăсем ăсталаса кăларасшăн. Коля тĕлĕкре те Шупашкар хулине курчĕ. Володьăна вара Çĕпĕрти пысăк стройкăсем хăйсен патне

чёнчёç, унăн Братскри е Красноярскри пек çĕнĕрен те çĕнĕ электростанцисем çĕклес, çĕршыва миллионшар киловатт электроэнерги парас килчĕ.

Вĕсене кашнинех çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕ илĕртрĕ пулин те, çамрăксен, çарта туслашнăскерсен, малашнехи пурнăçра йывăрлăха пĕрле пайлас, пĕр утăмпах утас, умри чăрмавсене ушкăнпа çĕнтерес килчĕ. Çак ĕмĕт тытса чарчĕ те ĕнтĕ вĕсене пĕр-пĕринчен уйрăлма, тĕрлĕ еннелле кайма.

Икĕ çула яхăн пĕрле службăра пулнă юлташĕсенчен хăшĕ-пĕри темиçе кун каялла Охотск тинĕсне пулă тытма, теприсем Магадан тăрăхĕнчи çĕр пуянлăхне шыракан геологсемпе геодезистсен ушкăнне пулăшма тухса кайрĕç, халĕ вĕсем çул çинче, тен, хăйсем ĕмĕтленнĕ вырăна çитсе те пыраççĕ пулĕ. Паян акă салтаксемпе тата командирсемпе сывпуллашма чăваш каччисен черет çитрĕ. Шел пулин те, мĕн тăвайăн, уйрăлмаллах, пурнăç йĕрки çапла. Пĕр çемьере çуралса, пĕр кăкăр сĕчĕпе тăранса ӳснĕ тăвансем те çитĕнсе çитсен, вĕçен кайăксем пек, тĕрлĕ çĕрелле саланаççĕ. Кунта акă çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пуçтарăнса туслашнăскерсене кашнинех е çуратса ӳстернĕ кил-йышĕпе ашшĕ-амăшĕ,е хăйсене пӳрнĕ пурнăç çулĕ кĕтет. Вĕсем тек нихăçан та, паянхи пек, ушкăнпа тĕл пулаймĕç, яланлăхах, ĕмĕрлĕхех уйрăлĕç. Чуна кичемлĕх пуссан та, çамрăксем ăна палăртма шутламарĕç, шӳтлерĕç, кулчĕç. Чаçри юлашки ирхи апат хыççăн кăштах тĕкĕр умĕнче тирпейленчĕç. Пуриншĕн те вĕсемшĕн паян —асра юлмалли кун.

Дневальнăй полка урама йĕркеленсе тăма хушрĕ. Салтаксем казармăран кĕпĕрленсе тухрĕç, киле каякансен чăматанĕсене, уйрăлас умĕн юлашки хут алă панă евĕр, алăран алла илсе, умлăн-хыçлăн службăра юлакан юлташĕсем йатрĕç. Салтаксен ушкăнĕ штаб еннелле çул тытрĕ.

—Юлашки хут стройпа утатпăр, сисетĕн-и, Володя? — кăштах чавсинчен тĕкрĕ ăна Коля.

—Çапла. Атьăр-ха ушкăнпа чух яланлăхах асра юлмалла хамăрăн стройри юратнă юрра шăрантарар,—терĕ те Володя, кăкăр тулли уçă сывлăш çăтса, янăравлă сасăпа юрлама пуçларĕ. Ăна çийĕнчех ыттисем те ярса илчĕç:

Там, где пехота не пройдет,
И бронепоезд не промчится,
Тяжелый танк не проползет,
Там пролетит стальная птица...

Çирĕппĕн харăс пуснă сасă, çĕкленсе тухакан кĕвĕ таçта çити, аякка-аякка саланчĕ. Салтаксен стройĕ штаб еннелле юрласа утрĕ. Часах унтан, полкĕпех йĕркеленсе тăрса, çĕршыв хуралĕнче икĕ çул пулнă çамрăксене инçе çула ăсатĕç.

Акă кĕтнĕ хумханулла самант. Киле каякансем строй умĕнче. Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пуçтараннă çамрăксем хушшинче виçĕ чăваш каччи те пулчĕç, вĕсен кăкăрĕсене Сывлăш Çар отличникĕпе пĕрремĕш класлă специалист паллисем, спортсмен значокĕсем илемлетрĕç.

Çар чаçĕн командирĕ Кореев подполковник икĕ çул хушшинче малтисен ретĕнче пынисене асăнмалăх хаклă парнесем, грамотăсем парса чысларĕ, малашне те йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма, хуçалăх ĕçĕнче çирĕп чунлă пулма сĕнчĕ, стройран кашнине чĕнсе кăларса поезд çинче ларса кайма документсем тыттарчĕ.

—Служу Советскому Союзу! — çине-çинех илтĕнчĕç чуна хумхатакан сăмахсем.

Парнесем илме тивĕç пулнă виçĕ тус ним калама аптранă енне чĕнмесĕр тăчĕç, пичĕсем çурхи хĕвел ăшшинче татах та илемленсе хĕрелчĕç, çамкисем вăтаннипе тарларĕç, кăштах шывланнă куçĕсем уйрăлакан юлташĕсем çине ачашшăн пăхрĕç.

Тепĕр çур сехетрен салтаксене лартнă автобус станци еннелле çул тытрĕ.

Сывă пулăр, çар чаçĕ, тăван самолетсем! Сывă пулăр, хăш чухне çывăрма манса Çĕршыв шăплăхне, тăнăçне пĕрле хураллана туссем! Часах эсир те, палăртнă вăхăт çитсен, пирĕн пекех, юлташăрсемпе уйрăлатăр, çĕнĕрен те çĕнĕ ăру килĕ чаçа. Çапах та кунта çирĕпленнĕ туслăх, салтак пурнăçĕ яланах пирĕн чĕрере юлĕ, ăна аса илнĕ май, çарта ирттернĕ канăçсăр кунсем, вĕренӳре тĕл пулнă йывăрлăхсем куç умне тухĕç. Сывă пул, Инçетри Хĕвелтухăç!

Поезд васкамасăр Свердловск станцине çитсе чарăнчĕ. Кăвак пакунлă сержантсем çăмăллăн вакун çинчен сиксе анчĕç те, çамрăк проводницăпа ăшшăн сывпуллашнă хыççăн, вокзал алăкĕнчен кĕрсе çухалчĕç.

— Пире виççĕмĕре те Канаша çитиччен, —пĕчĕк чӳречерен билечĕсене компостерлама тăсса панă май пĕлтерчĕ сарлака кĕлеткеллĕ сержантсенчен пĕри.

—Поезд тепĕр икĕ сехетрен çеç, —ăна хирĕç хуравларĕ йĕтĕн çӳçлĕ кассир кăшт куларах.

—Хирĕç мар, кăмăлăра кайрăмăр пулсан сирĕнпе яланлăхах юлма хатĕр, —сăмах хушрĕ тепĕр аслă сержанчĕ. —Хăвăртрах киле çитсен авантарахчĕ ĕнтĕ.

Шӳтле-шӳтле çамрăксем вокзалтан тухрĕç.Тепĕр икĕ сехетрен вĕсем каллех поезд çине ларĕç, инçе çула малалла тăсĕç, хальхинче-çуралса ӳснĕ чăваш çĕрĕн хулине çитиччченех кайĕç. Унтан вĕсем, калаçса татăлнă пек, вăхăтлăха тĕрлĕ çĕрелле — тăван кил-йышпа тĕл пулма саланĕç. Анчах та уйрăлу нумая мар, темиçе куна çеç пырĕ, ашшĕ-амăшĕпе, тăван-хурăнташĕпе, тантăш-пĕлĕшĕпе курнăçнă хыççăн, туссем каллех пĕрле пулĕç, малашнехи утăмсене вара пĕрле канашласа тăвĕç.

Икĕ сехет сисĕнмесĕрех хăвăрт иртсе кайрĕ. Акă Новосибирск-Мускав маршручĕпе хăвăрт çӳрекен поезд, сывлăш çавăрса ямалла вокзал умне çитсе чарăнчĕ, унтан, тепĕр темиçе минутран, пассажирсене лартсан, каллех малалла туртăнса хĕвеланăç еннелле çул тытрĕ. Çухрăм юписем чӳречерен пĕрин хыççăн тепри вĕльтлетрĕç çеç.

—Туссем, мĕн шăплантăр? Атьăр пĕтĕмпех тепĕр хут сӳтсе явар,—купере вырнаçса ларнă хыççăн,—сăмахне пуçларĕ Коля.—Леша, сана акă Набережные Челны хули илĕртет, Володьăна — Çĕпĕрти Ангара юханшывĕ, мана вара — шурă Шупашкар. Мĕншĕн-ха кашнинех тĕрлĕ шухăш, тĕрлĕ туйăм? Пиртен никам та çăмăллăх шырамасть-çке, ниçта та пире ăшă вырăн та кĕтмест, çапах та кашнинех çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕ илĕртет. Леша, эсĕ шутланă пек, тен, Набережные Челны хулине пĕрле кайма калаçса татăлатпăр? Çак сĕнӳ пирки тепĕр хут тĕплĕнрех шутласа пăхсан авантарах пулмĕ-и?

Купе самантлăха шăпланчĕ. Виççĕшĕ те сăмах чĕнме хăяйман пек, пĕр-пĕрин çине пăхрĕç, тарăн шухăша кайрĕç. Леша хăйĕн сĕнĕвне юлташĕсем улăштарасран шикленсе, кăштах Володя çумнерех сиксе ларчĕ те, аллисене сĕтел çине хурса, Кольăна куçран пăхрĕ.

—Ăнланаймастăп, мĕншĕн-ха эсĕ, Коля, яланах çапла: йышăннă япалана тепĕр хут сӳтсе явасшăн?

—Тусăм, эпĕ сана хирĕçлеместĕп. Япалана çиччĕ виç те пĕрре кас, тенĕ ваттисем. Май пур чух пирĕн те эс калана

сĕнӳ пирки çĕнĕрен шутласа пăхсан авантарах пулĕ, кайран, йăнăшсан, кая юлăпăр. Тен, чăнах та, Çĕпĕрти Ангара шывне пĕвеленĕ çĕрте эпир Çĕршыва ытларах усă кӳрĕпĕр? Мĕншĕн-ха пирĕн çакна тепĕр хут хакласа пăхмалла мар?

Шăпах çак сăмахсенчен шикленнĕччĕ те ĕнтĕ Леша. Чăнах та, тен, Çĕпĕрте этем алли ытларах та кирлĕ пулĕ, анчах та Набережные Челны тĕнчери чи пысăк стройка-çке!.. Мал ĕмĕтлĕ çамрăксем халĕ пурте унта. «Çук, эпĕ ăна нимĕнле хула-ялпа та улăштармăп.» Унăн питне хĕрлĕ тĕс çапрĕ, вăл хăйĕн шухăшне хӳтĕлемелли сăмахсем шырарĕ, анчах та вĕсем темшĕн тупăнмарĕç.Çавăнпа та вăл, хĕрӳ самант çитессе туйса, чĕнмесĕр ларчĕ. «Эсир халĕ тем çинчен те калаçăр, анчах та эпĕ хамăн шухăша улăштармастăп,» — шутларĕ каччă.

—Леша, тен, Коля, чăнах та, тĕрĕс сăмахлать, тепĕр хут пур шухăш-ĕмĕте сӳтсе-явса илсен авантарах та пулĕ,— хутшăнчĕ калаçăва Володя.

—Сирĕн яланах çапла: пухури пек çырса, алă пусса çирĕплетнĕ йышăнăва тепĕр хут пăхса тухасси.

—Хăш чухне çапла туни усăллă пулма пултарать.

—Хăш чухне çеç мар, яланах,—Кольăпа килĕшрĕ Володя.

—Эппин, çĕнĕрен сӳтсе явăр, эпĕ хальхинче ытларах сире итлĕп,—хĕрӳлленчĕ Леша.

—Юрĕ, эсĕ пире пӳлмесĕр тăнла, унтан пурне те хакласа хăвăн шухăшна каласа кăтарт.

—Коля, итле-ха, эсĕ мĕн пĕчĕкрен инженер пулма ĕмĕтленнĕ,—калаçăва те урăх енне пăрас шухăшпа, те тантăшĕн пуласлăхне аса илтерсе, Леша ун çине пăхрĕ.

—Çапла, ĕмĕтленнĕ, халĕ те ĕмĕтленетĕп.Анчах та ку пирĕн калаçăва нихăш енчен те пырса тивмест, хамăрăн пулас ĕç пирки сăмахлар.

Кольăпа Володя Шупашкарпа Çĕпĕрĕн аталанăвĕ, вĕсен пысăк стройкисем çинчен хĕрӳлленсе калаçрĕç, хаçат-журналсенче çырнă статьясене аса илчĕç. Леша вĕсем çине пăхса тимлĕн итленĕ май, ырă та, усал та — нимĕн те чĕнмерĕ.

—Акă мĕн, туссем,—пуçларĕ вăл Кольăпа Володя хăйсен сăмахĕсене вĕçлесен,—эпĕ сире пӳлмесĕр итлерĕм, халĕ манăн черет. Çук, хăть те мĕн тăвăр, çапах та эпĕ пурпĕрех хамăн шухăша улăштармастăп: Челнынче эпир кирлĕрех. Сăмахран, Çĕпĕрти Ангара юханшывнех илер. Миçе çул ĕнтĕ унта чарăнмасăр стройка шавĕ кĕрлет. Рабочисем пĕр-пĕрне тахçанах пĕлсе çитнĕ, çур сăмахран ăнланакан пулнă.

Çарти пек, бригадăсем ĕçпе туслашса çирĕпленнĕ. Шупашкарта та çавах, унта та этем алли çитмен вырăн юлман. Челнынче вара тин çеç çĕнĕ, пысăк стройка пуçланнă. Уйрăмлăх пур-и? Пур. Эпĕ механик-çке. Манăн хамăн алăсемпе заводăн стенисене купалас , пĕрремĕш машина çине ларас килет. Ку сире те савăнăç кӳмĕ-им вара?

—Савăнăçшăн мар, çĕршыва ытларах усă кӳрессишĕн тăрăшмалла пирĕн,—татса каларĕ Володя.

—Çапла, çавăнпа та халĕ пирĕн ăçта йывăр, çавăнта пулмалла. Тĕрĕс-и? Тĕрĕс. Шăпах çакăн пек вырăн пулать те ĕнтĕ Набережные Челны хулинчи пулас гигант завод.

—Тавлашни усăсăр тетĕн. Чăнах та, эсĕ шутланă пек пулсан, килĕшер,—сĕнчĕ Володя Кольăна.

—Тахçанах калаçса татăлнă, эсир сăлтавсăрах çĕнĕрен тавлашу хускататăр,—каллех хăй çĕнтернишĕн, тусĕсене ӳкĕте кĕртнишĕн савăнчĕ Леша.

—Калаçура çул кĕскелет, теççĕ,—кăштах кăмăлсăр пулса мăкăртатрĕ Коля.

Поезд Канаша ирпе çитсе чарăнчĕ.

Коля, Володя, Леша хальхинче куперен тухма васкамарĕç. Хыпаланма кирлĕ мар. Поезд кунта вунă минута яхăнах тăрать. Вагонсен алăкĕсем умĕнче çынсем хĕвĕшеççĕ. Пуçтараннă халăх пассажирсене кĕтсе илет е ăсатать. Çамрăксене кĕтсе илме никам та тухман, кирлĕ те мар, пĕр хыпарсăр, тăванĕсем патне пач пĕлтермесĕр киле таврăнни авантарах , çемьешĕн те кĕтмен савăнăç пулĕ.

—Атьăр ирхинехи апата пĕрле иртерер,—сĕнӳ пачĕ Леша.

—Ку тĕрĕс шухăш, манăн хырăм паçăрах çурăм шăмми çумне çыпçăнса ларнă,—савăнăçне пытармасăр килĕшрĕ Володя.

Вĕсем виççĕшĕ те вокзала хирĕç вырнаçнă «Канаш» ятлă ресторан çурчĕ еннелле утрĕç.

—Салтаксем киле таврăнма пуçларĕç, яланлăхах-и?—çамрăксен чăматанĕсене майлаштарса лартнă май ыйтрĕ вĕсенчен тумтире вăхăтлăха упрама йышăнакан 40-45 çулхи хĕрарăм.

—Яланлăхах, аннеçĕм, яланлăхах.

—Çемьешĕн мĕн тери савăнăç пулĕ,—хĕпĕртерĕ вăл.—Манăн та ывăлăм, сирĕн пекех, салтак, кĕркунне килмелле, кĕтетĕп. Таврăнсан, кил-йышра пулăшăп, тет.

—Пулăшмасăр, пулăшатех ĕнтĕ,—тĕкĕр умĕнче кĕске кастарнă çӳçне якатнă май, ăна лăплантарма тăрăшрĕ Коля.

Лешӗ вӗсене кӑмӑллӑн та тимлӗн сӑнать. Тен, ҫак палламан, лӑпкӑ сасӑллӑ ырӑ хӗрарӑм салтак тумне тӑхӑннӑ ҫамрӑксене тӗсесен, асаилӗвӗнче хӑйӗн юратнӑ ывӑлне курчӗ пулӗ, часах вӑл та, поезд ҫинчен ансанах тӳрех амӑшӗ патне чупса килессе шанчӗ.

Ресторан иккӗмӗш хутра вырнаҫнӑ, залӑн сылтӑм кӗтессинче пысӑк радиола ларать. Тирпейлӗн йӗркипе лартса тухнӑ сӗтелсем ҫинчи вазӑсенче ҫурхи ырӑ шӑршӑллӑ чӑваш чечекӗсем кӑмӑла ҫӗклерӗҫ. Телее, пушӑ вырӑнсем те чылаях.

—Пирӗн васкамалли ҫук, халӗ ӗнтӗ килте тесен те юрать. Ман шухӑшпа, каҫпа никам сисмен ҫӗртен киле пырса ҫитни авантарах, шӑпах атте-анне ӗҫрен таврӑнӗ,—терӗ Леша.

—Ҫук, магазинсем хупиччен ҫитесчӗ,—хирӗҫлерӗ Володя.

—Чӑнах та, атте-анне ӗҫрен таврӑниччен килте пулни авантарах. Вӗсем, яланхи пек, хӑйсен хуҫалӑхӗнчи ӗҫне манмасӑр, васкаса киле таврӑнӗҫ, ҫурхи вӑхӑтра уйрӑмах тӑрмашмалли нумай. Ывӑнаҫҫӗ пулин те, каллех ӗҫе пуҫӑнаҫҫӗ. Вӗсен хӑйсен планӗ. Кунта акӑ, юмахри пек, алӑка эсӗ уҫатӑн, кашнине ыталаса чуптӑватӑн. Вӗсем, ӗненмесӗр, сана питрен хыпашлӗҫ, пӗрле савӑнӗҫ.

—Санпа эпир, Коля, поезд ҫинчи тавлашӑва шута илмесен, нихӑҫан та хирӗҫмен. Эсӗ каланӑ пек пултӑр.

—Хирӗҫмен тетӗн, эппин, ку — япӑх: тавлашура кӑна чӑнлӑх ҫуралать, ҫакна яланлӑхах астуса юл,—Лешӑна кӑштах хул—пуҫҫинчен чышрӗ Коля.

Кула-кулах, пӗр-пӗрне сӑмахсемпе йӗпленӗ май, ҫамрӑксем радиола ҫумӗнчи сӗтел хушшине ларчӗҫ, хӑйсен юратнӑ юррисене итлерӗҫ. Часах вӗсен умне ҫӳҫне хӗрлӗ тӗспе сӑрланӑ, тулли пӳ-силлӗ официантка пырса тӑчӗ, хӑйӗн блокночӗ ҫине васкаса «заказ» ҫырнӑ хыҫҫӑн, кайма тӑчӗ.

—Чимӗр-ха, хӗрача, тата пӗр бутылка шампански ҫырма ан манӑр, паян пирӗн уяв,—пӗлтерчӗ Коля.

—Тата мӗнле уяв? — тӗлӗнчӗ Володя.

—Паянтан пуҫласа Чӑваш ҫӗрӗнче пӗрремӗш хут виҫҫӗмӗр тӗл пулнӑ кун пирӗншӗн малашне яланах уяв пулӗ.

Ресторанран ҫамрӑксем кӑнтӑр апачӗ ҫитиччен тухрӗҫ. Тепӗр эрнерен Шупашкарта тӗл пулма калаҫса татӑлнӑ хыҫҫӑн автостанци еннелле утрӗҫ.

—Ну, туссем, эппин, уйрӑлар, тек нихӑҫан та ҫар тумӗпе виҫҫӗмӗр тӗл пулаймӑпӑр,—шӳтлеме пӑхрӗ Леша, анчах та унӑн сӑн-пичӗ салхулланчӗ, ҫапах та хӑйӗн кулянӑвне вӑл юлташӗсенчен пытарма тӑрӑшрӗ.

Володьӑпа Леша автобус ҫине ларса Шупашкар еннелле ҫул тытрӗҫ, унта ҫитиччен вӗсем пӗрле пулӗҫ. Кайран Леша хуларах юлать. Володя вара Вӑрнар ҫулӗпе Ишеке ҫитиччен, Коля пекех, пӗччен кайӗ.

Тусӗсене карттусӗпе сулласа ӑсатнӑ май, каччӑ чылайччен вӗсем хыҫӗнчен пӑхса тӑчӗ. Юлташӗсем вӑхӑтлӑха ҫеҫ уйрӑлчӗҫ пулин те, Кольӑн чӗринче кичемлӗх ҫуралчӗ, хӑйне хӑй пӗчченнӗн туйрӗ вӑл ҫак самантра. Унӑн автобуса хӑваласа ҫитес, машинӑна чарса лартса унтан юлташӗсене туртса кӑларас, яланлӑхах вӗсемпе пӗрле пулас, пӗр ҫулпах каяс килчӗ. Анчах та лешсем куҫран часах ҫухалчӗҫ. Коля ҫаплах-ха вырӑнтан хускалмарӗ, палӑк евӗр, пӗр тапранмасӑр тӑчӗ, куҫӗсемпе тусӗсене шырарӗ, анчах та вӗлле хурчӗсем евӗр хӗвӗшекен ушкӑнра текех ҫарти юлташӗсене курмарӗ. Вӑл ассӑн сывласа илчӗ те хӑйӗн автобусӗ чарӑнакан вырӑна утрӗ.

Патӑрьелне вӑл шӑпах кӑнтӑрлахи апат тӗлне ҫитрӗ. Урисем хӑйсем тӗллӗн, ҫӗр ҫийӗн вӗҫнӗн, тӑван яла, ҫуралса ӳснӗ киле васкарӗҫ. Тен, Канашри ресторанри тумтир йышӑнакан хӗрарӑм пек, ӑна та амӑшӗ кӗтсе ывӑнчӗ пулӗ.

Коля пурӑнакан ял Кивӗ Катек ятлӑ. Патӑрьелӗнчен пӗр-икӗ ҫухрӑмра, Пӑлан сулахай енче вырнаҫнӑ. Акӑ ҫуралса ӳснӗ тӑван ял, унӑн урамӗсемпе ҫурчӗсем! Кунта вӑл пӗрремӗш хут алла букварь илсе шкула чупнӑ, сыпӑкӑн-сыпӑкӑн, васкамасӑр вулама, ҫырма, шутлама вӗреннӗ. Ҫак ялтанах Совет ҫарне тухса кайнӑ. Пӗр сехет каялла хуҫӑлнӑ кӑмӑлӗ, тӑван тавралӑха курсанах, кайӑк евӗр ҫунат сарса, ҫӳле ҫӗкленчӗ, умра тӗл пулнӑ кашни паллакана, тӑван пек, тытса чӑмӑртас, ыталас килчӗ. «Сывӑ-и, тӑван ял-йыш, тӑван атте-анне! Акӑ эпӗ каллех сирӗн пата таврӑнтӑм. Манӑн чӗре ҫак самантра, пӗчӗк ачанни евӗрлех, савӑнӑҫлӑн тапать, чун хавалӗпе пур вӑйран кӑшкӑрса яма хатӗр эпӗ. Ҫуралса ӳснӗ тӑван кил! Санпа манӑн пӗтӗм ачалӑх, пӗтӗм савӑнӑҫлӑ кун-ҫулӑм ҫыхӑннӑ. Тепӗр чух, темиҫе ҫул каяллахи евӗр, ҫара уран ӑшӑ ҫумӑр лӳшкенчӗкӗ тӑрӑх пӗр ывӑна пӗлми чупас, ҫухӑрашса-алхасса туссемпе пулас килет. Халӗ те, сана курсанах, хама хам темле урӑхла туятӑп, хумханатӑп.Кашни тӗл пулмассеренех ҫапла. Мӗн тери

савӑнӑҫлӑ, телейлӗ эпӗ»,—хӗпӗртенине тытса чарайман енне пӑшӑлтатрӗҫ унӑн тутисем.

Чӑматанне хапха умне лартса, пӗр вӑхӑт пӳрте кӗме хӑяйман хӑна пек, чӗнмесӗр тӑчӗ, ал панӑн, алӑк хӑлӑпӗнчен тытрӗ, васкамасӑр уҫса шалалла кӗчӗ. Пӳртре никам та курӑнмарӗ, Коля малти пӳлӗме иртрӗ, унта никам та пулмарӗ. «Эппин, ӗҫре»,—ҫак шухӑшсемпе вӑл каллех кайри пӳрте тухасшӑнччӗ, чаршав хыҫӗнчи вӑйсӑр сасӑ ӑна тытса чарчӗ.

—Сергей, эпӗ сана халех килмест пулӗ тесеччӗ, ҫимелли нимӗн те хатӗрлеймерӗм.

—Ҫук, атте мар ку, эпӗ, аннеҫӗм.

Вырӑн ҫинче выртакан амӑшӗ, ывӑлӗн сассине илтсе, ҫара урисемпех урайне пусрӗ, аллисене тӑсса Коля патнелле туртӑнчӗ.

—Ывӑлӑм, ҫартан таврӑнтӑн, эппин,—ачине ыталанӑ май пӑшӑлтатрӗ вӑл, —эпир сана аҫупа кашни кунах кӗтетпӗр, ирсерен хапхаран тухса, Пӑла еннелле пӑхатпӑр, халь-халь килессӗнех туйӑнаттӑн. Тавах Турра, кӗтсе илтӗмӗр иккен сана.

Унӑн куҫӗсенчен куҫҫулӗ пӑчӑртанса тухрӗ, куштӑркаса пӗркеленнӗ пичӗ тӑрӑх йӗпе йӗр хӑварса, васкамасӑр шуса анчӗ. Коля ӑна хӑйӗн сӑмса тутрипе шӑлса типӗтме тӑчӗ, амӑшне ҫупӑрласа лӑплантарма тӑрӑшрӗ.

—Ҫук, эпӗ хурланса мар, савӑнӑҫа ниҫта хурайман енне ҫеҫ йӗретӗп. Кӗтсе илеймесӗрех куҫ хупма тивет тенӗччӗ.

—Мӗн калаҫатӑн, аннеҫӗм,—амӑшне хӑй ҫумнерех чӑмӑртарӗ Коля. Чӗри теме сиссе хӑвӑрттӑн тапрӗ.—Айӑплӑ эпӗ, аннеҫӗм. Каҫар. Икӗ эрне ытла сире хыпар пӗлтерменнишӗн айӑплӑ. Пӗлмен-ҫке эпӗ, чӑн-чӑнах та, эсӗ чирлине...Часах акӑ сывалӑн, ҫӗнӗ пурнӑҫпа, ҫӗнӗ савӑнӑҫпа пурӑнма тытӑнӑпӑр. Халӗ акӑ эпир каллех пӗрле, вилӗм пирки шухӑшласа чӗрӳне ыраттармалла-и вара? Нумай-нумай ҫул телейлӗн пурӑнӑн-ха, мӑнукусене те утьӑкка туса сиктерӗн,—Коля ӑна кравать ҫине выртма пулӑшрӗ. Амӑшӗн пӗркеленнӗ ҫаврака пичӗ, путса кӗнӗ куҫӗсемпе кӑвакара пуҫланӑ ҫӳҫ пӗрчисем каччӑна тӑруках шухӑша ячӗҫ. Чӑтаймарӗ, вӗренме кайиччен час-часах хӑйне ачашланӑ, халӗ вӑйсӑр, куштӑрканӑ алӑсене кӑкӑрӗ ҫумне тытрӗ те, куҫҫулӗсене пытарас тесех пулӗ, пуҫӗпе кравать ҫинчи минтер ҫумне перӗнчӗ, кӑштах тӑварланнӑ тутисемпе амӑшӗн шуралнӑ питне сӗртӗнчӗ: «Аннеҫӗм,сывалсамччӗ хӑвӑртрах, сывалсамччӗ»,—пӑшӑлтатрӗ вӑл.

Анна Егоровна, темĕн аса илнĕ пек пулса, тăма хăтланчĕ:

—Ывăлăм, çул çинче хырăму выçрĕ пулĕ, улма та пулин ăшаласа парам-ха, тăварланă кăмпапа çиме юрататтăн эсĕ.

—Çук,çук, эпĕ хамах,—ура çине сиксе тăчĕ Коля,—халь тин пĕчĕк ача мар ĕнтĕ, эсĕ ан пăшăрхан, вырт, вырт. Саншăн халĕ пуринчен хакли — канлĕх.

Кайри пӳлĕме тухсан , Коля, йывăр япала çĕклесе ывăннă çын пек, пукан çине ларчĕ.

Салтак служби вĕçленни, киле хăçан таврăнасси пирки телеграмма парса пĕлтермеллеччĕ унăн. Намăс пулчĕ ăна, çавăншăн хăйне хăй ӳпкелерĕ вăл. Тен, чирлĕ амăшĕшĕн кашни сехечĕ, кашни минучĕ çулталăк евĕр тăсăлчĕ пулĕ, ывăлĕ таврăнасса, кирлĕ чух çăварне йĕпетмелĕх пĕр курка шыв кам та пулин парасса кĕтрĕ. Вăл пур!..

Коля ассăн сывласа ура çине тăчĕ, кительне çекĕл çине хывса çакрĕ. Унтан кĕпе çаннисене чавса таран тавăрса, çĕр улми шуратма пикенчĕ. Чĕри çаплах-ха лăпланаймарĕ, унăн пуçĕнче тĕрлĕрен те тĕрлĕ шухăшсем çуралчĕç, халь-халь темĕн çухатассăнах туйăнчĕ ăна.

Часах шкултан ашшĕ таврăнчĕ, ывăлĕ тăрăшсах газ плити умĕнче ăшталаннине курсан, вăл ăна хыçалтан вăрттăн пырса куçне хупласшăнчĕ, анчах та ывăлĕ çак вăхăтра теме сиснĕн хăвăрттăн çаврăнчĕ те, тӳрех вĕсем иккĕшĕ те пĕр-пĕрин ытамне çакланчĕç.

—Аннӳне куртăн-и?—тăруках ыйтрĕ ашшĕ.

—Куртăм. Чирĕн ятне ыйтма хăяймарăм пулин те, аннене йывăр иккенне сисетĕп.

—Çапла, йывăр ăна, ывăлăм. Эпĕ кашни кунах ĕçре, мĕн вăхăтра вăйсăрланса çитнине те сисеймерĕм, хăй мана пĕлтермерĕ, пурпĕрех усси çук терĕ пулас. Вырăн çине ӳкичченех чăтнă.

Сергей Иванович тек чĕнмерĕ, ывăлĕ умĕнче амăшĕн сывлăхĕшĕн пĕтĕмпех хăй айăплă евĕр туйса, вăл мĕн каласса кĕтрĕ. Коля çакна çийĕнчех ăнланчĕ, калаçăва урăх енне пăрма шутларĕ.

—Аттеçĕм, эпир пурте чĕрĕ çынсем, хуйхăрма та, савăнма та пултаратпăр, чир-чĕр тени кирек кам çумне те çыпçăнма пултарать. Атьăр çемье пуçтараннă ятпа пĕрле сĕтел хушшине ларар,—терĕ.—Анне, эсĕ хирĕç мар-и?

—Мĕншĕн хирĕçлемелле пултăр, эпир сана тахçанах кĕтетпĕр. Атя, сĕтеле аннӳ патнерех куçарар, эсĕ, амăшĕ, тăрса ан нушалан,—уншăнах хуравларĕ Сергей Иванович.

Тепӗр самантран пӗчӗк ҫемье пӗр сӗтел хушшине вырнаҫса ларчӗ. Анчах та Анна Егоровна сӗтел ҫинчи ҫимӗҫсене тутанса та пӑхаймарӗ. Коньяк бутылки ҫуррине яхӑн пушансан, ашшӗ ывӑлӗ ҫине пӑхрӗ те пӗр тӑхтаса тӑмасӑрах:

—Ну, ывӑлӑм, халӗ эсӗ ҫитӗннӗ ҫын ӗнтӗ, пур ӗмӗтшухӑшна аҫу-аннӳ хутшӑнмасӑрах, хӑвах татса пама пултаратӑн. Ҫапах та малашне епле пурӑнасшӑн, ан пытар, тӗрӗссине пире те пӗлтер.

—Тӗрӗссине тетӗн, атте...Апла пулсан, калам... Эсӗ ҫарти салтаксен ҫирӗп туслӑхӗ епле иккенне лайӑх пӗлетӗн. Эпир акӑ виҫӗ тус, виҫӗ янташ Набережные Челныне, ҫӗнӗ пысӑк стройкӑна кайма шутланӑччӗ.

Ашшӗ тем каласшӑн ҫӑварне уҫрӗ ҫеҫ, ӗлкӗреймерӗ.

—Ҫук, атте, эсӗ хирӗҫлесе темӗн каласшӑнччӗ пулӗ. Пӗлетӗп, эсир мана чунтан кӗтнӗ, ҫартан таврӑнсан эпӗ сире пулӑшас пирки сахал мар ӗмӗтленнӗ ӗнтӗ. Ҫитменнине, анне чирлесе ӳкнӗ, эсӗ те ҫамрӑк ҫын мар, сана та паян куна ҫитиччене хаяр вӑрҫӑн суранӗсем аса илтерсех тӑраҫҫӗ. Килте вӑйпитти ҫын кирлӗ. Сире курса мӗн тумаллине те пӗлместӗп.

—Ывӑлӑм, ҫапах та санӑн пире куҫран пӑхса лармалла мар, хӑвӑн кӑмӑлна каякан специальность алла илес пулать.

—Шӑпах ҫакӑн ҫинчен шутланӑччӗ те ӗнтӗ эпир салтак службинче тӑнӑ чух,—пуҫне усрӗ Коля.

Сергей Иванович шухӑша путрӗ. Анна Егоровна ашшӗпе ывӑлӗн калаҫӑвне хутшӑнмасӑр, шӑппӑн итлесе ларчӗ, чӗнмерӗ. Коля, кӗсйинчен сигарет кӑларса, картишне тухасшӑнччӗ, анчах та ашшӗ ӑна тытса чарчӗ, ывӑлӗ ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ:

—Эсӗ — хӑҫантанпа? — ыйтрӗ вӑл.—Отпуска килсен, туртмастӑп тенӗччӗ-ҫке.

—Халӗ те туртсах каймастӑп, сайра-хутра ҫеҫ, вылямалла тенӗ пек мӑкӑрлантаратӑп,—сигаретне каялла чикнӗ май, ашшӗ умӗнче аванмарланчӗ Коля.

Калаҫу пӗр вӑхӑт хушши татӑлчӗ.

—Эппин, шутланӑ тетӗн. Эпир аннӳпе хирӗҫ мар, кай, анчах та ҫула тухас умӗн тепӗр хут лайӑхрах шухӑшласа пӑх, пушӑлла ҫапкаланса ҫӳремелле ан пултӑрччӗ.

Хӗвел ансан, Коля урама тухрӗ. Каҫӗ паян, чӑнах та, ырӑ: тӳпе таса та ҫӑлтӑрлӑ, уҫӑ сывлӑш кӑмӑла ҫӗклет. Кӳршӗ тӑкӑрлӑкран илтӗнекен ҫамрӑксен сасси хӑй патне йыхӑрса, хӑвӑртрах тусӗсемпе тӗл пулма хистерӗ ӑна.

Çара кайичченхи кунсем аса килчĕç. Ун чух вăл пĕр минут хушши те, паянхи пек, пӳрт умĕнче умри тавралăха тĕпчевлĕн сăнаса пăхса тăман. Хапха алăкне шаплаттарса хупнă-хупманах сасă илтĕннĕ еннелле чупатчĕ. Тен, унăн чĕри çав ушкăн хушшинче хăйĕн чун савни пулнине сиснĕ. Çавăнпа та часрах хĕрпе тĕл пулма васканă. Халĕ акă те ялта чылай вăхăт хушши пулманран, юлташĕсенчен писнĕ евĕр, каччă васкамарĕ-ха: çаплах ял урамне, пĕрремĕш хут курнă евĕр, тĕсерĕ, куçне илмесĕр тӳпене, умри тавралăха сăнарĕ.

Кивĕ Катек пысăк ял мар, вăл пĕр çухрăма яхăн тăсăлакан виçĕ тӳрĕ урамран тăрать. Унăн варринче икĕ хутлă шкул, унтан çӳлерех клуб, магазин, вĕсен çумĕнчех колхоз правленийĕ вырнаçнă. Урамĕсем пурте Пăла юханшывĕ еннелле тăсăлаççĕ. Тĕрĕссипе вĕсем Пăла хĕрринчен пуçланса тăвалла ăнтăлаççĕ темелле. Кольăна çак минутра çарта чух пĕр совхоза илсе кайнă вăхăт аса килчĕ. Унăн ячĕ Дубровкаччĕ пулас. Ялĕ вара, чăнах та, кăмăла каймаллискерччĕ. Çурчĕсем те вĕсен, ӳкерчĕкри евĕр, пурте пĕр проектпа тунăскерсем, кашнинех чӳречесем умĕнче тĕрлĕ тĕслĕ чечек ӳсет, урамĕсем вара ешĕл курăкпа витĕннĕ. Çапах та ютра темле илемлĕ пулсан та, çуралса ӳснĕ тăван ял пуринчен те хаклăрах та, хитререх те.

Коля сисмесĕрех пӳрт умĕнчи тирек çумне тайăнчĕ, аллисене кăкăрĕ умне хĕреслетсе тытса, каллех шухăша путрĕ. Умри йывăçран çурхи сĕткен шăрши çапрĕ, кӳршĕ урамран илтĕнекен такамăн уçă сасси каччăна Лидăна, пирвайхи юратăвне, аса илтерчĕ. «Ăçта-ши эсĕ? Тен, халиччен ача амăшĕ пулма та ĕлкĕртĕн пулĕ? Тен, эсĕ те, ман пекех, çамрăк чунна йăпатса, тунсăхласа, иртсе кайнă, пĕрле çӳренĕ илемлĕ каççене аса илетĕн, хăш чухне шухăшусемпе манпа пĕрле тăратăн? Тен, васкаса качча тухнишĕн ӳкĕнсе, чӳречерен çамрăксене ăмсанса пăхатăн, чуну вара, лăпланаймасăр, сана урамаллах чĕнет? Чăнах та, мĕнле ырă паянхи каç. Анчах та манăн чунра мĕншĕн тĕксĕм шухăшсем хуçаланаççĕ? Савăнмалла кăна халĕ. Çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçласа ыррăн-сыввăн тăван тавралăха, юратнă ялăма, çуралса ӳснĕ килĕме таврăнтăм. Тен, манран хаваслăх хăпнишĕн эсĕ айăплă, Лида? Çук, каçар, савниçĕм. Ытла та кичем пулнăран, хама хам йăпанма вырăн тупайманран çеç аса илтĕм пулĕ сана. Пирĕнтен кашнийĕ савăнăç шырать, пурнăçа телейлĕн пурăнса иртterме

тăрăшать»,—хăйне хăй лăплатса, йывăр шухăшĕсене сирме тăрăшрĕ каччă.

Паçăрхи шăнкăрав евĕр уçă сасă темле халиччен илтмен юрă юрларĕ, акă купăссăçă çав кĕвве ярса илчĕ, ыттисем те хутшăнчĕç. Юрă, тинĕсри çил-тăвăл евĕр, вăйланнăçемĕн вăйланса пычĕ каçхи шăплăхра, Пăла шывĕ пек шăнкăртатса, таçта аякка-аякка чупрĕ. Кунĕпе ĕçлесе ывăннă уй-хир паттăрĕсем, çамрăк яшсемпе хĕрсем, каçхи вăййа тухрĕç. Капланса килнĕ кичем шухăш-кăмăла сирсе, Коля сасă илтĕннĕ еннелле утрĕ. Ушкăнра унпа пĕр çулхисем курăнмарĕç, çамрăксем хĕрсех тĕрлĕ вăйă-кулă ирттерчĕç, пĕр-пĕринпе вылярĕç, пĕчĕкреххисем те пиччĕш-аппăшсенчен юласшăн мар, вĕсем те хăйсен хушшинче темле вăйă пуçарчĕç, çуйхашса-айхашса пĕр-пĕрне тĕрткелерĕç, тытмалла вылярĕç, аслисем çывăрма хăваласан та, килĕсене каймарĕç-ха.

Катекре çамрăксене пĕрле пуçтарăнма клуб пур, анчах та мĕн ĕлĕкрен пыракан ырă йăла — çурхи вăйă —халĕ те çухалман, çанталăк ăшăтса çĕр кушткăркасанах ăçта та пулин пуçтарăнаççĕ те, пуçлаççĕ вара юрра-ташша. Хăш чухне урампа урам е бригадăпа бригада ăмăртусем ирттереççĕ. Ун чухне вара чăтса анчах тăр: чăм шыва ӳкиччен, урасем хускалми пуличчен ăмăртмалла сикеççĕ. Такмакĕсем тата!.. Мĕнли анчах янăрамасть-ши унта! Харам пырсене, мемме каччăсемпе хĕрсене, ĕçрен пăрăнма юратакансене, тепĕр чух пуçлăхсене те тĕртсе илеççĕ, «шампа хырăм» та, «сăра пички» те теççĕ, такапа та, качакапа та танлаштараççĕ, парашютпа та сиктереççĕ, шăн пăрпа та лартса яраççĕ. Çак такмаксемшĕн пĕр-пĕрин çине кӳренсе, шăртланса çӳрекенсем вара халиччен пулман.

Вăйăра пĕр сехет хушши пулнă хыççăн Коля çамрăксенчен уйрăлса килĕ еннелле утрĕ. Çул çинче чылаях ĕшеннĕскер иртерех выртса канма шутларĕ. Тепĕр тесен, кунта ытларах аслă классенче вĕренекен çамрăксем пулчĕç. «Ан тив, савăнччăрах, хамăр та çавнашкалах пулнă»,— шутларĕ вăл. Çул çинче ывăннă пулин те темшĕн çывăрас килмерĕ, уçă сывлăш кăкăра лăпкарĕ, ял шăплăхĕ шухăша ячĕ. Васкамасăр каччă Пăла хĕрринелле, унтан çыран тăрăх тăвалла, кайран вара варринчи сарлака урама кĕрсе, çул хĕррипе утрĕ. Юпасем çинчи электричество лампиcем кăнтăрлахи евĕрех çутатрĕç.

Пĕр çĕре пуçтарăнса ларнă çамрăксем хăйсем патне çывхаракан каччăна тăруках паллаймарĕç, ăна тĕлĕнсе сăнарĕç, хĕрсем пуçланă юрра малалла шăрантарчĕç:

Куккук сиксе авăтнă чух,
Чĕппи ăçта-ши?
Эп хурланса юрланă чух,
Савни ăçта-ши?

Куккук сиксе авăтнă чух,
Чĕппи йăвара.
Эп хурланса юрланă чух,
Савни салтакра.

—Ырă каç пултăр, каччăсемпе хĕрсем! — пурте илтмелле сывлăх сунчĕ вĕсене Коля. Тавралăх тăруках шăпланчĕ. Çакна пĕрре те кĕтменнине пула каччă малтан çухалса кайрĕ, такам умĕнче айăпа кĕнĕн, кăштах аванмарланчĕ те: ăна пула-çке юрă вĕçне çитиччен шăранаймасăр шăпланчĕ.

—Коля, эсĕ-и? Хăçан таврăнтăн? — купăсне хăйĕн çумĕнче ларакан хĕре тыттарса сиксе тăчĕ Саша Кошкин, хирĕç каласса кĕтмесĕрех ăна ыталаса илчĕ, вăйлă аллисемпе салтакран таврăннă каччăна йăтса илсе, пĕр вырăнта тапăртатса ункă туса çаврăнчĕ. Чăнласах савăнчĕ пулас.

—Арçынсен хушшинче тепĕр хутшăну,—хытах кăшкăрса ячĕ вăл.—Маттур, тусăм, халь тин ват хусахсен йышĕнче эпир санпа иккĕн пулатпăр, малашне пире те кичемлĕх пусмĕ.

Коля тăруках нимĕн те чĕнеймерĕ, çухалса кайрĕ тейĕн. Пуçтарăннă ял хĕрупраçĕсем, каччă хăйсем патне пырасса кĕтнĕ май, ун çине куç илмесĕр пăхрĕç.

—Ну, салам сире те,—кашнине ал пачĕ вăл,—сассăрсем, чăнах та, шăпчăксеннинчен пĕрре те кая мар. Çывăрма выртас тенĕччĕ, юрă сасси чăрмантарчĕ, хăй патне илĕртрĕ.Эпĕ кунта ял хорĕ пуçтарăннă пуль тесеччĕ, сирĕн ушкăнра мĕн пурĕ те улт-çич хĕрачапа вăйăçă çеç иккен.

—Хĕрсем, кăштах хĕсĕнĕр-ха, хаклă хăнана вырăн парас, тепĕр тесен, эпир арçынсем сирĕн хушăрта сахалтарах.—Халиччен сăпайлă та сахал калаçма юратакан Саша паян хăйне хĕрсем хушшинче хăюллă тытни Кольăшăн çĕнĕлле курăнчĕ, ĕненмерĕ те, чăн-чăнах çапла улшăннă-ши е савăнăçне пытарайманнипе чĕлхи уçăлчĕ унăн.—Лар-лар, мĕн хăюсăррăн ура çинче тăратăн. Кунта часах эсĕ мар,

хёрсем сана суйла пуҫлёҫ,—шур кёпеллё чиперккесен варрине лартнӑ май йӑпатрё вӑл хӑйён тусне.

—Хальхи каччӑсем вёсем пирён пек ял хёрёсем ҫине пӑхмаҫҫё. Вёсене хуларисем, ҫӳҫёсене сӑрланӑ кёске юбкӑллӑ е сарлака шӑлавар пёҫҫиллисем ытларах килёшеҫҫё,—тӑруках пёр шӳтлесе, пёр кӳренсе хушса хучё хёр «ушкӑнё».

—Ну-ну,—чарчё вёсене Саша юнаса,—эпё мён пёчёкрен выляса ӳснё, пёрле вёреннё юлташсен хутне кёме яланах хатёр, кулма памастӑп, пирён хушӑра ун пеккисем ҫук.

—Саша, эсё пурне те хӑвӑнпа ан танлаштар-ха, пурте ҫар хыҫҫӑн, сан пек, колхоза юлаҫҫё тетён-и? Акӑ Коля та, ытти ял ҫамрӑкёсем пекех, хулана тухса тарё, курсах тӑр. Пёлетпёр эпир каччӑсене, вёсене ытларах ҫёршывӑн романтикӑлла тёрлё стройкисем илёртеҫҫё.

—Ҫитё сире, атьӑр тёл пулнӑ ятпа пёр-пёр юрӑ юрлар,—каллех чарчё вёсене Саша. Вӑл купӑсне чёрки ҫине майлаштарса лартрё те пӳрнисемпе унӑн тӳмисем тӑрӑх ҫёнё ҫемё шыраса васкаса чупса тухнӑ хыҫҫӑн «Подмосковные вечера» кёвве калама пуҫларё.

Вӑхӑт сисёнмесёрех шурё. Паҫӑр ҫеҫ кичемлёх ытамне лекнё Коля пач улшӑнчё, вӑл ҫамрӑксемпе шӳтлерё, кулчё. Автансем ҫур ҫёр ҫитнине систерсе шарлаттарса авӑтма пуҫларёҫ. Пёри пуҫласа сас парать, ҫийёнчех, унпа килёшсе, ялӑн тёрлё кётесёнчен ҫав кёввех теприсем ярса илеҫҫё. Ҫӳлти урамра пёр чарӑнмасӑр йытӑ вёрме тытӑнчё, ҫамрӑк мӑшӑр пӳрт умне ҫитсе тӑчё пулас, часах каҫхи шӑплӑхра ҫав енчех алӑка такам шаплаттарса хупни уҫҫӑнах илтёнчё ; уйрӑлчёҫ пулмалла, анчӑк сасси те шӑпланчё.

—Кайма вӑхӑт,—харӑссӑн ура ҫине тӑчёҫ хёрсем,—ыран ир тӑрас пулать. Ҫывӑрса юлӑпӑр тата. Ырӑ каҫ пултӑр! —терёҫ те килёсем еннелле утрёҫ.

Ҫамрӑксем иккёшех тӑрса юлчёҫ. Хёрсен хӑйсене ӑсаттарас шухӑшё те пурччё пулас, вёсем пёр вӑхӑт хушши хускалмасӑр тӑчёҫ. Лешсем вырӑнтан тапранманнине курсан, савӑнӑҫлӑ сассисемпе хыттӑн ахӑлтатса кулса, утӑмёсене хӑвӑртлатрёҫ. Тен, Саша, тин ҫеҫ Кольӑпа курнӑҫмасан, вёсене кашнинех черетпе килёсене ӑсатса янӑ пулёччё, анчах та кётмен тёлпулу яланхи йӑлана пӑсрё. «Туспа калаҫса пӑхмаллах»,—шухӑшларё вӑл. Каҫхи тёттёмре чиперккесем куҫран ҫухалсанах, хуткупӑсне сылтӑм хулпуҫҫинчен ҫакрё те, ҫаплах шухӑша путса, хёрсен сасси илтёнекен еннелле тинкерекен Кольӑна чавсинчен тёкрё:

—Ну, кайрӑмӑр.

Малтанласа вёсем сывлăм ӳкнĕ çеремлĕ урампа чĕнмесĕр утрĕç. Çывăхри тăкăрлăка çитсен, сылтăм еннелле пăрăнса, Патăръелне каякан параллеллĕ урама тухрĕç.

—Ял пĕрре те улшăнман тейĕн, пурте икĕ çул каяллахи евĕрлех,—калаçăва пуçларĕ Саша.

—Çапла, выляса ӳснĕ урам та çавах, ак çак пура çеç хутшăннă,—нумаях пулмасть купаласа лартнă пӳрт пури çине тĕллесе кăтартрĕ Коля.

—Эсĕ çав териваскатăн-и?—тăруках тем калас шухăшпа ыйтрĕ унран Саша.

—Çук.

—Апла пулсан, атя, çакăнта кăштах ларса сăмахлар, икĕ çул вĕт пĕр-пĕрне курманни.

Вĕсем пура çумне купаланă пĕренесем çине вырнаçрĕç. Калаçу малтанласа çыпăçуллă пулмарĕ, пĕр-пĕрин çарта иртнĕ пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлнĕ хыççăн туссем иккĕшĕн малашнехи шухăш-кăмăлĕсемпе кăсăкланчĕç. Унтан Саша, пĕр эрне маларах яла таврăнса кунти лару-тăрупа паллашма ĕлкĕрнĕскер, пăшăрханса ял пурнăçне сăнарларĕ.

—Коля, пĕлетĕн-и эсĕ, пирĕн ялта çамрăк ĕçченсен шучĕ чакнăçемĕн чакса пырать. Паян хĕрсен калаçăвне хăвах илтрĕн: чăннипех те, пурте хулана тухса каяççĕ. Уй-хирте вăйпитти çамрăксене çутă кунра хунарпа шырасан та тупаймастăн. Юрать-ха, хирте ĕлĕкхи пек алăпа тырă вырмалла мар. Пĕлетĕп, сана ялта юлма хистени усăсăр, çапах та манăн сĕнӳ пирки тарăнрах шутласа пăхсан аванрах.

—Эпĕ халĕ нимĕн те татса калама пултараймастăп. Эсĕ манăн пĕчĕкрен пĕрле ӳснĕ тус, çавăнпа та нимĕн те пытармастăп,—терĕ Коля ун еннелле çаврăнса ларса.

—Мана та малтанласа Шупашкар илĕртрĕ,—юлташĕ калаçăвне вĕçлесен, хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ Саша.—Чăнах та, хула пурнăçĕ ялти мар ĕнтĕ, унта çуллахи вăхăтра Атăл хĕррине пляжа, ӳркенмесен кашни кунах театрсемпе кинотеатрсене çӳреме пулать, палăртнă вăхăтра ĕçлетĕн е канатăн. Ялта вара апла мар, çĕрне-кунне пĕлмесĕр, ирĕн-каçăн тар юхтарма тивет. Пирĕн клубра та, пытарма кирлĕ мар, кино пулманни те пĕр уйăха яхăн. Çапах та эпĕ тăван ялтах юлас терĕм, хамăн шухăша улăштармастăп.

—Сана çăмăлтарах, эсĕ шофер, манăн вара нимĕнле специальность та çук, кĕтӳ кĕтсе çӳренипе колхоза нумай усă кӳреймĕн.

—Специальность çуккишĕн питех хуйхăрма кирлĕ мар, сывлăх çеç пултăр. Колхозра вара ĕçĕ туллиех, ан ÿркен кăна. Акă часах çĕнĕ ĕне вити купалама тытăнмалла, вăйпитти арçынсем кирлĕ пулаççĕ унта. Эсĕ техникăна та ăнкаратăн, ку енĕпе механизаторсенчен пĕрре те кая мар. Пурăна киле колхозран направлени илсе, заочно майпа вĕренме пултаратăн.

Вĕсем чылайччен ларчĕç. Тавралăха шурăмпуç тĕсĕ çапсан тин уйрăлчĕç.

Коля вырăн çине выртсан та, тăруках çывăрса каяймарĕ. Капланса килнĕ тĕрлĕ шухăша пула чылай вăхăт хушши вăл канăçне çухатрĕ. Мĕн каланă пулĕччĕç-ши ăна халь çарти тусĕсем? Сашăн сĕнĕвĕ вĕсене килĕшĕ-ши?..

Хĕвел тухас умĕн тин тĕлĕрнĕ пек пулнăччĕ, анчах та кайри пÿртре амăшĕн савăт-сапа куçарнă сассине илтсен, вăл вăранчĕ. Ялан пĕр вăхăтра тăма хăнăхнăскер, хăвăрт тăрса тумланчĕ.

—Анне, чирлĕ вĕт-ха эсĕ, çывăр, кан, мĕншĕн ирех тăтăн?

Амăшĕ ачи çине ачашшăн пăхрĕ те хăйĕн лăпкă сассипе:

—Эсĕ вăрантăн та-и?-терĕ.—Санăн халĕ инçе çул хыççăн канмалла, ывăлăм. Эпĕ паян хама лайăх, вăй кĕнине туятăп.

Анчах та Коля унăн сăмахĕсемпе килĕшмерĕ, амăшĕ хăйне çаплах япăх туйни куç умĕнчех. Акă кăштах малалла ÿпĕннĕскер, шыв витрине куçарма тăчĕ, куçараймарĕ, чирпе типсе вăйсăрланнă аллисем лăштăрах усăнчĕç. «Çук,—шутларĕ вăл, халĕ ăна пĕр минутлăха та пĕччен хăвармалла мар.»

Часах картишĕнчен пÿрте ашшĕ кĕчĕ, ĕçе кайма хатĕрленсе сумкине тĕрлĕ кĕнекесемпе тетрадьсем чикрĕ. Тухса кайнă чух, ывăлне чеен куç хĕсрĕ, амăшне пулăшмалли пирки систерчĕ, ывăлĕ ăнланнине пĕлтерсе, пуçĕпе сулчĕ.

Каçхине çемье пуçтарăнсан, Коля вăрттăн амăшĕн чир диагнозĕ пирки ыйтрĕ. Сергей Иванович ун çине тĕлĕнерех пăхрĕ те:

—Ывăлăм, эпир çеç мар, врачсем те халлĕхе чир сăлтавне лайăх пĕлмеççĕ,—терĕ.

*   *   *   *   *

Пĕр эрне Кольăна çав тери вăраххăн шунăн туйăнчĕ. Каçсерен вăл урама тухрĕ. Саша Чулхулана командировкăна, çĕнĕ машина илме кайнăскер, тăватă каç иртсен те яла таврăнаймарĕ. Çакна пулах хĕрупраçсен ушкăнĕнче Коля пĕччененех ларчĕ. Вĕсен хушшинче вăл хăйне ют çын пек туймасан та, ялта каччăсем çукки ăна чăннипех те тĕлĕнтерчĕ. Тĕрĕссипе, фермăра ĕçлекен тата аслă классенче вĕренекен хĕрсене шута илмесен, ялта колхоз бухгалтерĕ Сынкова Машăсăр пуçне, урăх никама та кураймăн. Чăнах та, пурте тенĕ пекех, шкул пĕтерсенех, хулана тухса кайнă. Ахальтен мар ĕнтĕ тĕлпулун пĕрремĕш каçĕнчех ялта çамрăксем сахаллишĕн кăмăлсăррăн калаçрĕç хĕрупраçсем. Вĕсене Коля мĕн пĕчĕкренех пĕлет. Пĕрле выляса ӳснĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Акă Машăнах илер. Унпа сакăр çул хушши пĕр класра вĕреннĕ. Кайран вăл Улатăрти ял хуçалăх техникумне вĕренме кĕчĕ. Çав тери хаваслă та кăмăллă хĕрачаччĕ, сăнĕпе те ыттисенчен ӳксе юлмастчĕ. Халĕ тата та чиперленнĕ: çутă питлĕ, кăштах каçăр сăмси тăрринче çурхи сарă пăнчăсем пур, вĕсем ăна илем кӳреççĕ кăна. Шкулта вĕреннĕ чух унăн хулăм вăрăм çивĕтчĕ. Вăл ăна халь кĕске кастарса кăтралаттарнă. Тулли кăкăрĕсем çӳхе кĕпе витĕр илĕртӳллĕн каçăрăлса тăраççĕ.

Малинова Валя, Федорова Нина, Самойлова Галя, Наперсткина Валя, Сорокина Рая Кольăран икĕ çул кĕçĕнрех класра вĕреннĕскерсем, ялти чăн-чăн патриотсем, вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн пиллĕкĕшĕ те фермăна ĕçлеме юлма кăмăл тунă. Тулли пӳ-силлĕ Райăсăр пуçне ( вăл пăрусем пăхать), ыттисем пурте ĕне сăваççĕ. Çав тери хаваслă йыш, анчах та кирек мĕнле ушкăн хушшинче те яланах кам та пулсан илемлĕхĕпе çеç мар, хăйне тыткаланипе уйрăлса тăрать. Наперсткина Валя шăпах çаксенчен пĕри пулчĕ те ĕнтĕ. Пĕвĕпе çӳллех мар, сарă йĕтĕн тĕслĕ вăрăм çивĕтлĕскер, ыттисем пек, питех шӳтлемерĕ вăл, хутран-ситрен çеç çӳхе тутисене илемлĕн туртăнтарса кулчĕ. Унăн илĕртӳллĕ сăнĕ, çăлтăрсем евĕр çиçекен пысăк кăвак куçĕсем Кольăн чĕринче темле ырă туйăм çуратрĕç, хăй патне илĕртрĕç. Каччă шӳтле-шӳтлех ăна ыталама хăтланчĕ, анчах та ку кăлăхах пулчĕ, Валя хăйне çирĕп тытрĕ, кашнинчех унран аяккалла пăрăнма тăрăшрĕ.

Автансем авăтма тытăнсан, хĕрсем, яланхи пекех, килĕсене васкарĕç. Коля кашнинех хапха умне çитиччен

ăсатрĕ, ушкăнпа шурăмпуç çутине кĕтме сĕнчĕ, анчах та лешсем унпа килĕшмерĕç, ыран ир тăмалла тенĕ сăлтав вĕсене пĕр минутлăха та хăвармарĕ. Кăмăлĕ хуçăлнă каччăн карма çăвар автансене лăпкăн çывăрттарас килчĕ, анчах та вĕсем унăн шухăшне ăнланаймарĕç, тепĕр каçхине каллех, çунаттисемпе çапса, хĕрсене килĕсене хăваларĕç. Лăпкă урам варрине пĕчченех тăрса юлнă каччăн ирĕксĕрех пуçне усса, килнелле утма тиврĕ. Ун пек чух чунра кашнинчех кичемлĕх çуралчĕ, çывăрма выртсан та тăруках ыйăх килмерĕ. Пуçа капланса килнĕ çĕнĕрен те çĕнĕ шухăшсем ăна часрах çарти тусĕсемпе тĕл пулма хистерĕç.

Анна Егоровнăн сывлăхĕ самайланнăн туйăнчĕ, утти те çăмăлланчĕ. Аппетичĕ уçăлчĕ пулин те, апат суйлама тиврĕ, кăмăлĕ тем пекех тăварласа йӳçĕтнĕ е маринадланă çимĕç енне туртрĕ, анчах та вĕсене кăшт тутансанах, ăш-чикĕ пăтранчĕ унăн, чир тени хăй çинчен астутарсах тăчĕ.

Акă паян Кольăн шăпах çарти тусĕсемпе тĕл пулмалли кун. Тепĕр темиçе сехетрен ял-йышпа, тăван çемьепе сывпуллашса инçе çула тухĕ каччă. Вĕсене, пĕр эрне каялла çеç çартан таврăннăскерсене, Набережные Челныри пысăк стройка кĕтрĕ. Тĕрĕс тăвать-ши вăл чирлĕ амăшне, эрне хушшинче çывăхланнă ялти тусĕсене хăварса, кăмăл илĕртĕвĕпе çунатланса, пин-пин çамрăк пек, хулана тухса кайса? Тен, ялта каççерен урама тухакан çамрăк хĕрсем, темиçе кунлăха командировкăна кайнă Саша та, ун пекех, çĕршыва ытларах усă кӳрессишĕн тăрăшаççĕ. Анчах та вĕсем темшĕн хăйсен уссине çĕнĕ стройкăра мар, вăйлă тыр-пул пухса кĕртнинче, патшалăха нумайран та нумайрах сĕт-çу, аш-какай панинче кураççĕ. Яш-кĕрĕмшĕн кунтах пысăк стройка та, романтика та. Коля çакна ăнланмарĕ, малашлăха илĕртекен ĕмĕтĕнче вăл Лешăпа Володьăна хăйĕн умĕнче курчĕ, вĕсемпе пĕрле темиçе хутлă çуртсем, завод стенисем купаланă çĕрте кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕ, çирĕм пилĕк тонна туртакан БелАЗ маркăллă машинăпа ытти тĕрлĕ техникăна пăхса савăнчĕ.

Чӳречерен ӳкекен çуллахи ачаш хĕвел ăна ирхине ирех вăратрĕ. Вăл вырăн çинче савăнăçлăн карăнса илчĕ те, яланхи йăлипе, хăвăрттăн сиксе тăчĕ. Картишне тухсан, мускулĕсене вылятса, икĕ пăт таякан кире пуканĕсене чылайччен çӳлелле çĕклесе ывăннă хыççăн, çăвăнса апат çиме ларчĕ.

Ывăлĕн тĕреклĕ хул-çурăмне сăнанă май, картлашка çинче чăрăннă амăшĕ шухăша путрĕ: «Чăнах та, мĕн чухлĕ

усă кӳнĕ пулĕччĕç çак алăсем паянхи кун, шăп та лăп кашни çын ялта шутра пулнă вăхăтра. Акă хулана кайăн та, санăн вăйлă аллусемпе пурнăçланă ĕçӳ ытти пин-пин çынсен хушшинче пач курăнмĕ, нимĕнпе те уйăраймăн вĕсене. Кашни ир, сехет çине пăхса, завода е стройкăна утăн. Пĕлсемччĕ, епле йывăр мана, сана çуратса ӳстернĕскере, килтен кăларса яма? Мĕн пĕчĕкрен эпĕ санран ,хам пекех, уй-хир хуçи тăвасшăнччĕ. Шел, эс ун илемне, тӳпери тăри юррине чăнласа хаклама вĕренеймерĕн. Çитменнине тата çĕршыва ăçта ытларах усă пама пултарассине те чухлаймастăн, романтик тетĕн пулĕ ĕнтĕ хăвна ху,»— ӳпкелерĕ ăшĕнче ывăлне амăшĕ.

Вăл кăштах кăмăлсăр пулса, пĕр самах чĕнмесĕр пӳртелле утрĕ. Унăн хăйĕн шухăшне пĕтĕмпех ывăлне пĕлтерес килчĕ, тен, чăннипех, пурне те шута илсе ăнланĕ, анчах та тĕрĕс тăвĕ-ши? Ашшĕ калашле, халь тин пĕчĕк ача мар ĕнтĕ, чăнах та тусĕсемпе тахçанах калаçса татăлнă пулсан, çаплах юлтăр, ара. Пулас шăпине хăех татса патăр, амăшĕн хутшăнăвĕ вырăнлă мар, тен, ытлашши пулĕ, çитменнине тата кашни этем хăйĕн юратнă ĕçĕнче хăех телей тупать.

Унăн куçĕ умне вăрçă чарăннă çул тухса тăчĕ. Хулара, рабочи çемйинче çуралса ӳснĕскер, ашшĕ-амăшĕ, хĕрĕ ялхуçалăх институтĕнчи агрономсем хатĕрлекен факультета кĕме заявлени панине пĕлсен, мĕн тери ӳпкелешмерĕç пулĕ. Çапах та вăл вĕсене итлемерĕ, хăйĕн çулĕпех кайрĕ. Вĕренсе тухсан Кивĕ Катек ялне направленипе килчĕ. Чăнах та, çуралса ӳснĕ тăван çемьерен, хуларан уйрăлсан та, паян куна çитсе те ӳкĕнмелле пулмарĕ. Каярахпа ашшĕ-амăшĕ хăй вăхăтĕнче сăлтавсăрах чĕрре кĕнишĕн хĕрĕ умĕнчи айăпне лайăх ăнланчĕç, час-часах иртнине аса илсе, хĕрачи çирĕп кăмăллă пулнишĕн, тĕрĕс, телейлĕ çул тупма пĕлнишĕн савăнатчĕç.

Çаксене аса илнĕ май, вăл хăйĕн шухăшне Кольăран пытарчĕ. Кайран, сĕтел хушшине апата ларсан, ун çине ачашшăн пăхрĕ те, çиме чарăнса:

—Ывăлăм, час-часах çыру çыр, ан ман пире,—терĕ.

—Ан хуйхăрăр, часах акă эпир пурсăмăр та çĕнĕ хулара пурăнма пуçлăпăр. Ун чух, хальхи пек ирсерен, вутă хутса пусран шыв витрепе йăтмалла пулмĕ,—кăштах çĕкленӳллĕ кăмăлпа ĕмĕтленсе амăшне йăпатрĕ Коля.

Апат хыççăн вăл, пысăках мар чăматанне алла илсе, çула тухрĕ. Ун хыçĕнчен, шывланнă куçĕсене тутăр вĕçĕпе типĕтсе, амăшĕ пĕр хускалмасăр , ывăлĕ мĕн куçран курăнми

пуличченех пăхса ăсатрĕ. Çук, çăмăл пулмарĕ ăна çак самантра. Чун теме сиссе ыратрĕ, темĕн çухатассăнах туйăнчĕ. Малтанласа хирĕçлеме те тăнăччĕ, мăшăрĕ, Сергей Иванович, хутшăнма хушмарĕ, пурнăç çулне хăй пĕлнĕ пек шыратăр, терĕ. Тен, тĕрĕсех турĕ пулĕ. Паян акă унăн темшĕн чĕри çемçелчĕ, хирĕç пĕр сăмах та калаймарĕ. Тен, хăйĕн иртнĕ çулĕсене аса илни тытса чарчĕ .

Автостанцине çитсен пĕр вунă-вунпилĕк минут иртрĕ-и, иртмерĕ-и, чӳречи çине «Патăръел — Шупашкар» тесе çырнă "Икарус" ятлă пысăк автобус çитсе те чарăнчĕ. Эрне варринче халăх нумаях пулмарĕ. Коля сылтăм енне, салон варринчи чӳрече патне вырнаçрĕ. Кĕçех ун çумне пысăках мар портфель йăтнă, пĕр 25-27 çулсенчи тирпейлĕ тăхăннă арçын ларчĕ. Каччă вăл кам иккенне пĕлеймерĕ, пĕр-пĕр инженер е ахаль рабочиех-и? Тĕрĕссипе халĕ ĕлĕкхи мар вĕт: тумне пăхса çын ăçта ĕçленине чухлаймастăн.

Автобус, расписанипе палăртнă вăхăт çитсен, вырăнтан тапранчĕ. Чылаях тӳпенелле хăпарма ĕлкĕрнĕ хĕвел çути куçа йăмăхтарчĕ. Кольăн кӳрши аллине тытнă костюм кĕсйинчен хура куçлăх кăларчĕ, çапах та лăпланса лараймарĕ-ха, пĕрре чӳрече умĕнчен вĕльтлетсе иртекен çуртсемпе тин çеç ешерме пуçланă хир анисем çине, тепре хăйĕн çумĕнче ларакан чăматанлă каччă çине, унăн шухăш-кăмăлне пĕлес тенĕ евĕр, чылайччен сăнаса пăхрĕ, унтан, куçлăхне хывса (хура куçлăх витĕр пăхса калаçни аван мар терĕ пулас):

—Аякка кайма пуçтарăннă-и, юлташ?—тесе ыйтрĕ.

Çакна пĕрре те кĕтмен, шухăша путнă Коля, тутлă ыйхăран тин çеç вăраннă евĕр, тăруках мĕн каламаллине те пĕлмерĕ. «Тем тăвас? Те тĕрĕссине, те кăштах юптарсан та аптрамасть, тепĕр тесен, мĕн ĕç пур ман çумра, унсăр пуçне те ăш-чик вăркать.» Чылай тăрсан тин:

—Аякка, тăванăм, çĕнĕ стройкăна,—терĕ.

—Яла хăнана килнĕччĕ пулĕ-ха.Пирĕн кунта вырăнсем, чăнах та, хитре. Тахçантанпах стройкăра ĕçлетĕр-и? Ăçта? Килĕшет-и унта?—тăруках пурне те пĕлесшĕн пулчĕ çумри çын.

Коля пушă калаçу пулассине сисрĕ: « Мĕнех,—шутларĕ вăл,—сăмахланă май çул та кĕскелĕ.»

—Пĕрремĕш хут каятăп, халлĕхе ăçта ĕçлессине те пĕлместĕп-ха.

—Хăш ялтан пулатăн вара эсĕ?—ун енне çаврăнса ларчĕ палламан çын.

—Кивĕ Катекрен.

—Кивĕ Катекрен?!—тĕлĕнсе те савăнăçлăн сассине хăпартса тепĕр хут ыйтрĕ вăл.

—Çапла.

—Эппин, эсĕ пирĕн район çынниех пулатăн. Пĕр енчисем!—автобусри пур халăх илтмеллех калаçрĕ лешĕ.

Коля арçыннăн савăнăçне ăнланаймарĕ. Вăл, пĕр сăмах чĕнмесĕр, хăйĕн хулпуççийĕ çине хунă ют алла сирчĕ те, унран тарнă евĕр, чӳрече çумне сыпçăнса, кӳрши çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

Çумри çыннăн сăнĕ тăруках тĕксĕмленчĕ, вăл пĕр вăхăт хушши шухăша путнă пек пулчĕ. Унăн сулахай куç харши кăштах чĕтренсе илчĕ, пит çăмартисем кăмăлсăррăн хĕрелчĕç. Паçăр çеç ачашшăн çиçекен куçĕсем пысăкланса, çынна витĕр курасшăн пулнă евĕр, пăхрĕç. Кăштах тăхтасан, вăл çамки çине усăнса аннă, вăрăм çӳçне аллипе пуçтарса хыçалалла якатса ячĕ те, улшăннă сасăпа:

—Колхоз председателĕ Николай Филиппович Чернов эсĕ стройкăна каясси çинчен пĕлет-и?—тесе ыйтрĕ.

Кольăна ку сăмахсем пушшех те тĕлĕнтерчĕç. Вăл каллех малтанхи евĕр вырнаçса ларчĕ те, калаçу вĕçленнине систерес шутпах, татăклăн:

—Сирĕншĕн пурпĕрех мар-и?—терĕ.

—Тăванăм, эпĕ сана кӳрентерес теменччĕ,—каллех лăпкăн пуçларĕ лешĕ,—ан çилен, çамрăксем хăйсен çуралса ӳснĕ ялĕсене пăрахса хулана тухса тарни чĕрене ыраттарать. Тен, çавăнпа та-и хытăрах каларăм пуль. Эпĕ комсомол райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ. Ăнланаймастăп, куç умĕнчех таратăр, çитменнине çумлă ларсах хулана ăсататпăр. Пуринчен ытла чĕрене ыраттараканни — колхоз пуçлăхĕсем çакна пĕлмесĕр тăрса юлни. Кайран, районти пухусемпе канашлусенче вара комсомол хăйĕн ĕçне тивĕçлĕ пек йĕркелемест тесе, трибуна çинчен аллисемпе хăлаçланса, республикăра пур çын илтмелле кăшкăраççĕ. Ăçтан-ха ун пек чух пĕр тарăхмасăр чăтăн, тусăм?

—Ăнланатăп, секретарь юлташ, çапах та çартан таврăнакансене нимĕнле колхоз председателĕ те тытса чараймĕ. Мана та çаплах, эпир те туссемпе тахçанах ушкăнпа Набережные Челныне кайма калаçса татăлнă.

—Челны-ы,—сăмахне тăсрĕ секретарь,—лайăх вырăн, пĕлетĕп. Акă унта çитсе ĕçе вырнаçатăр, анчах та кам та пулсан каланă-и сана, Кивĕ Катекре кăçал ĕçчен алăсем çитмен пирки çуракине пуринчен кайран вĕçлени,

тракторсем техника паркӗнче тутӑхса ларни ҫинчен? Ҫук, паллах. Мӗн чухлӗ усӑ кӳнӗ пулӑттӑн колхоза! Мӗншӗн-ха ҫарти тусусемпе яла, колхоза килсе, ӑна ура ҫине тӑратса, районти малтисен шутне кӑларас мар? Пурте хулана, пысӑк стройкӑсене туртӑнаҫҫӗ. Ман шухӑшпа, виҫӗ-тӑватӑ ҫын килменнишӗн стройка чарӑнман пулӗччӗ, унта кашни кун ҫӗршывӑн тӗрлӗ кӗтесӗнчен ушкӑн-ушкӑнпа ҫамрӑксем пуҫтарӑнаҫҫӗ. Вӗсен хушшинчен, темиҫе уйӑх ӗҫленӗ хыҫҫӑн, каялла таракан та сахал мар. Ялта ҫак виҫӗ ҫын мӗнле пысӑк вӑй пуласси пирки шутласа пӑхнӑ-ши эсир?

Коля, ҫак хытканрах, питӗ ӗнентермелле сӑмахсемпе калаҫакан ҫамрӑк ҫынна итленӗ май, шухӑша путрӗ, ун куҫӗ умне Саша Кошкин тухрӗ, ҫарти туссем аса килчӗҫ. «Ҫук, салтакӑн ҫирӗп сӑмахне нихҫан та улӑштармӑп, стройкӑнах каятӑп. Кайран куҫ курӗ. Мӗн калӗҫ мана юлташсем эпӗ иккӗленнине курсан? Ҫил хӑвалакан, хӑйӗн шухӑшне, сӑмаха вӗҫне ҫитиччен тытайман ҫын, тейӗҫ. Ӑҫтан тӗл пулчӗ-ха тата ку райком секретарӗ тенӗскер?» Вӑл чӳречене уҫса, тулалла тинкерчӗ. Ҫул айккинче нумаях пулмасть ҫулҫисене сарнӑ хурӑнсем, Кольӑна телейлӗ ҫул суннӑ евӗр, шӑпӑлтатса, лӑпкӑ ҫил вӗрнипе чӳхенсе лараҫҫӗ. Тулашран ҫурхи уҫӑ сывлӑш вӗрчӗ, ҫан-ҫурӑма уҫӑлтарчӗ. Анчах та Коля ӑна туймарӗ те. Ун куҫӗ умне халь ҫартан таврӑннӑ чух вагонри юлташӗсемпе тавлашнӑ самант шуса тухрӗ. Ҫук, маларах калаҫса татӑлнӑ шухӑш-ӗмӗте тинех улӑштараймӑн.

Автобус асфальт сарнӑ тикӗс ҫулпа пӗр чарӑнмасӑр хӑвӑртрах Шупашкара ҫитме васкарӗ. Акӑ хурӑн аллеи вӗҫленчӗ, умра каллех уй-хир, чуна илӗртмелле ешерекен анлӑ уй-хир пуҫланчӗ.

Каҫалран иртсен, ҫул малтанах анаталлаччӗ, автобус, сасӑ кӑларма шикленнӗ евӗр, пӗр тикӗссӗн пычӗ. Халӗ Дубовкӑна ҫитеспе ҫул тӑвалла. Шофер темиҫе хут газ педалӗ ҫине пусса илчӗ те, хӑвӑртлӑхне улӑштарса, рульне ҫирӗпрех тытрӗ. Коля ҫаплах-ха, шухӑша путнӑскер, умри пуласлӑхне курас тенӗ евӗр, малалла тинкерчӗ. Тен, уншӑн та малашлӑх ҫулӗ тӑвалла? Вӑл ун юппинче тӑраканскер, паян пуҫласа пурнӑҫра хӑй тӗллӗн утӑм тӑвать, анчах та тӗрӗс пулать-ши ку? Кайран хурапа шурра уйӑрма вӗренсе ҫитсен ӳкӗнмелле пулмӗ-ши?

Райком секретарӗ чӗнмерӗ. Вӑл ним пулман евӗр хӑйӗн вырӑнӗнчех ларчӗ, хутран-ситрен ҫеҫ, чӳречерен пӑхнӑ пек пулса, кӳрши ҫине тинкерчӗ.

—Çамрăк çыннăм, манăн сĕнӳпе хăвăн тусусене паллаштарсан, вĕсемпе тепĕр хут канашласа пăхсан ытлашши пулмĕ,—каллех пуçларĕ вăл. Анчах Кольăн текех ун çинчен илтес те килмерĕ. Пурпĕрех тусĕсем унпа килĕшес çук.

Çак самантра унăн хăвăртрах Шупашкара çитсе райком секретарĕнчен уйрăлас килчĕ. Чăвашсен тĕп хулине çитиччен сахалтан та тепĕр икĕ сехет иртет. Ăçтан персе анчĕ-ха вăл унăн пуçĕ çине?

Каччă хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ, унран хăпас сăлтавпа чӳрече енне çаврăнса ларчĕ те, Канаша çитиччен текех шăл шурри те кăтартмарĕ. Унăн телейне, секретарь Канашра анса юлчĕ. Коля çăмăллăнах сывласа ячĕ.

—Çапах та, тусăм, енчен те яла каялла таврăнас пулсан, тӳрех ман пата райкома пыр, çав тери хĕпĕртенĕ пулăттăм,—уçă чӳрече умне пырса аллине тăсрĕ секретарь.

-Асра тытăп,—унăн аллине чăмăртанă май хушса хучĕ Коля, хальхинче унăн сасси чылай çемçелчĕ.

Автобус часах вырăнтан тапранчĕ. Каччă темшĕн каялла çаврăнса пăхрĕ. Хыçра, портфельне икĕ аллипе хăйĕн умĕнче тытса, хускалма шикленнĕн, тин çеç анса юлнă кӳрши тăчĕ, Кольăпа унăн хушши ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ. Секретарĕн шурă кĕпе çийĕн çакнă сарлака галстукĕ, çилпе варкăшса, ăна телейлĕ çул суннăн туйăнчĕ. Мĕн шутларĕ-ши вăл çак самантра? Тин çеç чăн-чăн пурнăç çулĕ çине тухма хатĕрленекен каччă çакна пĕлеймерĕ, унăн хăйĕн ĕмĕчĕсем пулчĕç.

Шупашкара Коля тепĕр сехет çурăран çитрĕ. Лешăпа Володьăна шырамалла пулмарĕ. Вĕсем хăйсемех тусне кĕтме автовокзала килнĕ иккен, автобус чăрăннă-чăрăнманах алăк умне çитсе тăчĕç, савăнăçлăн кăшкăрашса, хăйсен ытамне ярса илчĕç.

—Чимĕр-ха, сывлăш çавăрма парăр,—терĕ вăл икĕ енчен тĕреклĕ алăсем хĕстернинчен хăпма тăрăшса.

—Мĕнех, ялта çисе тултарнă сарă çу тепĕр хут шăранса тухмарĕ те, юрĕ, тепре ыталамалăх хăварар, эппин,—аллисене вĕçертрĕ Леша.—Анне пире кĕтсе илеймесĕрех ĕçе кайрĕ пулĕ, атьăр хăвăртрах,—васкатрĕ вăл, Кольăн аллинчи чăматанне алла илсе.—Тен, ĕлкĕрĕпĕр.

Леша Гузовски урамĕнчи пилĕк хутлă çуртăн иккĕмĕш хутĕнче пурăнать. Амăшĕ, чăнах та, çамрăксене кĕтсе илеймесĕрех ĕçе тухса кайнă иккен, сĕтел çине пĕчĕк çыру хăварнă: «Ывăлăм, апат-çимĕç холодильникре. Пурсăра та

телей сунса ыталатăп.» Леша пĕр тăхтаса тăмасăрах холодильнике уçрĕ, сĕтел çине унти çимĕçсемпе пĕрле «Ром» кĕленчине те кăларчĕ:

—Астăватăр-и, кашни уяв умĕн пире офицерсем асăрхаттаратчĕç. Паллах, вырăс йăлипе, аслисем уява çакăнсăр (кĕленчене йăтса этикеткине тусĕсем енне çавăрчĕ вăл) ирттерменнине пĕлеççĕ ĕнтĕ. Тен, салтаксем хушшинче те ун пеккисем тупăнасран шикленнĕрен, киле çитсен ĕçетĕр, тетчĕç. Халь тин пире никам та чармĕ. Çĕнĕрен тĕл пулнă ятпа сĕтел хушшине ларар-ха, эппин. Малтанах асăрхаттаратăп, билетсемшĕн пăшăрханма кирлĕ мар, пурте хатĕр,—терĕ.

Кольăпа Володя пĕрле калаçса татăлнă евĕр, иккĕшĕ те хура костюм тăхăннă, аялтан кăкăрĕсене çат çыпăçтарса тăракан шурă нейлон водолазка курăнать, урисенче çеç тĕрлĕ тĕслĕ шĕвĕр пуçлă пушмак. Леша вара шурă брюкипе чечеклĕ кĕпе тăхăннă. Пĕр-пĕрне салтак тумĕпе курма хăнăхнăскерсемшĕн, килти тумтир вĕсен сăн-питне улăштарчĕ, аслăлатрĕ, çапах та пăхма кăмăллă пулчĕ.

Пĕрер рюмка пушатнă хыççăн, пӳлĕмре туссене пăчă пулнăн туйăнчĕ. Кольăпа Володя костюмĕсене хывса шкапа çакрĕç. Леша балкон çине тухакан алăка уçрĕ, унтан каллех сĕтел йĕри-тавра ларчĕç, калаçу малалла тăсăлчĕ. Эрне хушшинче пĕр-пĕриншĕн тунсăхласа çитнĕскерсен сăмахĕн вĕçĕ-хĕрри те пулмарĕ. Мĕн тунă пĕлĕччĕç-ши вĕсем, енчен те çулталăк курмасăр пурăннă пулсан? Тен, мĕн чухлĕ сахал куратăн, çавăн чухлĕ сăмах кĕскерех тени тĕрĕс пулĕ. Çамрăксем васкамасăр иртнĕ кунсене, çарти тусĕсене аса илчĕç, çăмăл музыка итлерĕç, каярахпа балкон çине тухрĕç. Хăйсене хăйсем кунта тинĕсри карап çинчи евĕрлех туйрĕç. Çывăхри пысăк çуртсем вĕсемшĕн илемлĕ çӳллĕ айсбергсем пек курăнчĕç, çул çинче тимлĕ пулма сĕнчĕç.

Урам тăрăх пĕр чарăнми троллейбуссемпе тĕрлĕ строительство хатĕрĕсем тиенĕ машинăсем пĕрин хыççăн тепри кĕрхи кăткăсем пек, чарăнма пĕлмесĕр таçта васкарĕç, хăвăртрах палăртнă вырăна çитесшĕн пулчĕç ĕнтĕ. Пурнăç шăвать, кунран-кун çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсемпе, урамсемпе илемленет вăтă Шупашкар. Вĕсен ĕмĕтĕнчи Набережные Челны те часах ытти хуласенчен юлмĕ, вăл та асфальтпа витĕнĕ, машинăсен шавĕпе тулĕ, тӳпенелле кармашакан темиçе хутлă пысăк çуртсемпе пуянланĕ. Çĕнĕ пысăк хулашăн çамрăксем ырми-канми ĕçлĕç. Тепĕр темиçе çултан

вара хаçатсемпе журналсен страницисенче унăн хитре урамĕсене курса, хăйсен ĕçĕнчен хăйсем тĕлĕнĕç.

—Ну, туссем, кайма вăхăт,—ура çине çĕкленчĕ Володя.—Ĕмĕтсем пысăк пулас сирĕн, чĕнмесен каçченех ларма хатĕр эсир,—ӳпкеленĕ пек сăмахларĕ вăл.

- Чăнах та, аэропорта иртерех çитсен шанчăклăрах пулĕ.

Анчах та кунта пуриншĕн те кĕтмен чăрмав сиксе тухрĕ. Çамрăксем пуçтарăнса пӳлĕмрен тухма тăнăччĕ çеç, хваттере уçма хистесе, вăрăммăн алăк шăнкăравĕн сасси янăраса кайрĕ.

- Эпĕ — çыхăну уйрăмĕнчен,—алăк уçăлнă-уçăлман хыпаланса пĕлтерчĕ 20-22 çулсенчи хĕр.—Каçарăр. Завражновсем кунта пурăнаççĕ-и?—шикленерех ыйтрĕ вăл каччăсене куçран пăхса.

- Çапла.

- Сире телеграмма, çакăнта алă пусăр,—тăсса пачĕ вăл шурă хут таткине.

Ку сăмахсем пурне те тĕлĕнтерчĕç. Леша хĕр сĕннĕ хута хăюсăррăн илчĕ:

- Камран-ши? — тĕлĕнчĕ вăл, унтан пĕр чĕнмесĕр хăвăрттăн телеграммăна вуласа тухрĕ, Кольăна тыттарчĕ.

Лешĕ хыпаланса ӳкрĕ, чĕтрекен аллисемпе телеграммăна уçрĕ. «Ывăлăм, аннӳне япăх, хăвăртрах таврăн. Аçу.» Тин çеç савăнăçпа çиçекен каччă сăнĕ тăруках ылмашрĕ, чĕри хăвăрттăн, сиксе тухасла тапма пикенчĕ, пуçра сапаланчăк шухăшсем хĕвĕшрĕç. Аллисем, темле йывăр япала йăтса ываннă евĕр, хăйсемех аялалла усăнса анчĕç, куçĕсем тусĕсем çине пăхрĕç пулин те, вĕсене курмарĕç. Ун умне инçе çула ăсатма тухнă, чирпе вăйсăрланнă амăшĕн сăнарĕ тухса тăчĕ:

—Айăплă, пуриншĕн те эпĕ айăплă, аннеçĕм,—чĕтренчĕç унăн тутисем.

- Эсĕ ытлашши хуйха ан ӳк-ха, тен, пурте йĕркеллех, -лăплатма тăчĕ ăна Леша.

- Çук, вăл паян тин çеç чирлемен, эпĕ çартан таврăничченех хăйне йывăр туйнă.

Коля, Леша, Володя тротуар тăрăх утакан çынсемпе пĕрлешсе, троллейбус чарăнакан вырăна васкарĕç. Сăмах пуçлакан никам та пулмарĕ. Паçăр çеç савăнăç шевли вылякан пичĕсем çинче вĕсен пурин те тĕксĕмлĕх хуçаланчĕ.

Коля шухăшсемпе каллех яла таврăнчĕ, вырăн çинчи чирлĕ амăшне курчĕ. Вăл хăйĕн вăйсăр та хыткан аллипе ывăлне ачашларĕ.

Тусĕсем Кольăн шухăш-кăмăлне ăнланчĕç, тен, çавăнпа та-и, чĕнмерĕç.Тен, паян, çак самантра вăл вĕсенчен яланлăхах уйрăласса туйрĕç, ăшă сăмахсем тупайман енне, куçран çеç тўррĕн пăхрĕç.

Троллейбус автостанци умне çитсе чарăнчĕ.

—Коля, эпир сана ăнланатпăр. Мĕн тăвăн — шăпа. Çапах та эсĕ пирĕншĕн яланлăхах тус пулса юлатăн. Час-часах çыру çырăпăр. Аннў сывалсанах, пирĕн пата пыр, çарти туссене ан ман,-алă пачĕç Лешăпа Володя.

—Пурте калаçса татăлнă евĕрлех пулĕ.

Туссем уйрăлчĕç. Кĕтмен инкек, çурхи çирĕп пăр катăкне ваклана евĕр, çамрăксене каллех тĕрлĕ çĕрелле уйăрчĕ. Чунĕсене тунсăх çавăрса илнĕ май, кашнинех темĕн çитмен, хаклă туса çухатнăнах туйăнчĕ, чĕре ыратрĕ...

Такси çуралса ўснĕ тăван кил чўречи тĕлĕнче чарăнчĕ. Коля, машинăран хăвăрттăн сиксе тухса, пўрте часрах кĕрес тесе васкаса чупрĕ, анчах та килĕнче никам та пулмарĕ. Ку пушшех те шухăша пăтраштарчĕ. Сапаланнă çи-пуçпах, такси хускаличчен ĕлкĕрес тесе, вăл каялла урама сирпĕнсе тухрĕ, анчах та кая юлчĕ, çăмăл машина, тусан кăларса, урам вĕçĕнчи тăкăрлăкран пăрăнса куçран çухалчĕ.

—Пит сехĕрленсех ўкмелле мар пулĕ-ха. Тен, пурте йĕркеллех,—илтĕнчĕ хыçалта сасă.

Коля çаврăнса пăхрĕ, хăй умĕнче кўршине, ăна вулама-çырма вĕрентнĕ учительницăна, ĕмĕр-ĕмĕр хисеплемелли çынна курсан, кăштах çухалса кайрĕ, аванмарланчĕ.

—Каçарăр, Елена Марковна, чăнах та, пуç арпашăнса кайрĕ пулмалла, çумри çынна та курмастăп. Эпĕ Челныне кайма тухсаччĕ, çул çинче телеграмма илтĕм, аннене йывăр, тенĕ. Мĕн пулнă-ши, тархасшăн, тен, эсир пĕлетĕр?—унăн сасси темле палламалла мар чĕтренсе тухрĕ.

Елена Марковна, кўршĕ ывăлне мĕн пĕчĕкрен лайăх пĕлекенскер, халиччен Кольăна пĕрре те кун пек сехĕрленсе ўкнине курманччĕ, питĕнче юн та юлман тейĕн, йăлт шуралса кайнă. Чылай кăвакарнă çўçне тутăрĕ айне тирпейлесе пытарнă май, вăл хăйĕн тахçанхи вĕренекенĕ, халĕ каччă пулнă Коля çине пăхрĕ. Ăна лăплатма ăшă сăмахсем шырарĕ, тăруках тупаймарĕ. Тен, ытла та сехĕрленсе ўкнĕскере, амăшĕн сывлăхĕ çинчен йăлтах пĕлтермесен тĕрĕсрех пулĕ? Анчах та çăмăллăх кўрĕ-ши ку

çамрăка, унăн сиксе тухас пек тапакан чĕрине? Акă вăл, тахçан хăй вĕрентнĕ çыннăн сăмахĕсене кĕтсе, пысăк куçĕсемпе ăна шăтарасла пăхать. Май килсен, сĕткене пусса кăларнă евĕр, хыттăн чăмăртаса кăларма хатĕр пытараннă тĕрĕслĕхе. Умĕнче вата çын пулни, ăна хисеплени çеç тытса чарать тейĕн.

—Коля, ытлашшиех ан пăшăрхан,—сăмахĕсене ĕнентермелле калама тăрăшрĕ Елена Марковна.—Чăнах та, аннӳне йывăр ĕнтĕ. Эсĕ килтен кайсан, нумай та вăхăт иртмен пулĕ, ăнсăр пулса, аптраса ӳкнĕ вăл. Эпĕ темшĕн сирĕн пата каçнăччĕ, хĕрарăмсем вĕт, килтисем ĕçе тухса кайсан пире кичем, çитменнине, чирлĕ çын пĕчченех тăрса юлнă. Анна Егоровнăпа калаçса ларса, кăштах та пулин унăн чунне лăплатас тенĕччĕ. Эсĕ кайнишĕн вăл чăнласах кулянатчĕ. Çук, ку сăмахсемпе эпĕ сана айăпласшăн мар...

—Пĕлетĕп, Елена Марковна, пĕлетĕп. Эсир мана халĕ анне ăçтине çеç хăвăртрах калăр,—васкатрĕ Коля чĕтренсе тухакан сасăпа.

—Больницăра аннӳ, аçу та унтах...

Коля ку сăмахсене илтсенех, кӳршĕ хĕрарăмĕнчен васкаса уйрăлчĕ те Патăръел еннелле чупрĕ.

Больницăна çитнĕ çĕре амăшĕ тăна кĕнĕччĕ ĕнтĕ, ним пулман пекех, вырăн çинче тӳррĕн ларса, ашшĕпе аран-аран илтĕнмелле сасăпа сăмахлатчĕ. Алăкран вирхĕнсе кĕнĕ Кольăна курсан, Сергей Иванович ура çине тăчĕ, ун çине тӳррĕн пăхрĕ, анчах та ывăлĕ ăна туймарĕ, вăл, пĕчĕк ача пек, аллисене малалла тăсса амăшĕ патне ыткăнчĕ.

—Каçар мана, аннеçĕм, каçар, текех эпĕ сиртен ниçта та уйрăлмастăп, хальхинче яланлăхах киле таврăнтăм...—унăн куçĕнчен куççулĕ юхса анчĕ. Пĕр-икĕ сехет каялла амăшĕпе çакăн пек ыталанассишĕн тем пама та хатĕрччĕ вăл, сывă пултăрччĕ çеç. Акă вăл куç умĕнче. Больница халачĕпе татах та хытканланнăн туйăнать... Ăçтан пăрахса хăварăн-ха çакăн пек вăйсăр икĕ ватă çынна? Ĕмĕрне те...

Кольăпа ашшĕ киле хĕвел анас умĕн тин таврăнчĕç.

—Эсĕ юнашар пулни пире, чăнах та, савăнăç кӳрет,—ассăн сывланă май пуçларĕ Сергей Иванович.—ӳстерсе çитĕнтернĕ пĕртен-пĕр ывăл килтен, кайăк пек, вĕçсе тухса каясса эпир нихçан та шутламанччĕ, çакна малтан тăруках ĕненес те килмерĕ. Эпĕ сана, чĕре ыратрĕ пулин те, кайма чармарăм. Хăв ăнланасса, ватă аçу-аннӳн хуйхине туйса илсе, киле каялла таврăнасса кĕтнĕ, шаннă. Çавна пулах-и, тен, чĕнмерĕм. Паян аннӳн хырăмлăх сĕткенне илчĕç.

Малтанласа унăн рак чирĕ мар-ши, терĕç. Кислотнăçĕ йĕркеллех иккенне тĕпчесен, врачсем çаплах-ха унăн мĕнле чир иккенне пĕлеймерĕç. Больницăра хăçанччен выртасси халлĕхе паллă мар.

Коля çул тăршшĕпех пуçне усса шухăша кайса утрĕ. Сергей Иванович ывăлĕн кăмăлне ăнланчĕ, текех чĕнмерĕ. «Паллах, ăна халь çăмăл мар. Унăн тусĕсем çĕнĕ стройкăна тухса кайрĕç. Пысăк ĕмĕтпе çартан таврăннăскер, вăл вĕсенчен тăрса юлчĕ. Савăнмалли сахал. Мĕн кĕтет-ши ĕнтĕ ăна малашне ялта? Çапах та вăхăт иртĕ, пурăннăçемĕн хăй кунта кирлĕ çын иккенне чунпа туйса илĕ, халлĕхе ытлашши сăмах вакласа хамран сивĕтес марччĕ çеç»,—шутларĕ ашшĕ.

Кил-çуртра тирпейлесе апат пĕçерсе çинĕ хыççăн, Сергей Иванович портфелĕнчен шкул ачисен тетрачĕсене кăларса тĕрĕслеме пикенчĕ, анчах та темшĕн ĕç кал-кал пымарĕ, пуçа тĕрлĕ шухăш кĕчĕ, тем çитмен пек туйăнчĕ. Хĕрлĕ кăранташне сĕтел çине хурса, пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ утрĕ.

Коля, диван çине тайăнса вырнаçнăскер, çаплах-ха чĕнмесĕр ларчĕ. Унăн куçĕсем хутран-ситрен хăюсăррăн ашшĕне тинкерчĕç. Вăл пĕтĕмпех ăнланчĕ: ашшĕн шухăшне те, ĕçĕ мĕншĕн кал-кал пыманнине те, çуртра кичеммине те. Анчах та пуç çине йăтăнса аннă тунсăха сирме, пӳртре хавасхлăх çĕклеме пĕлеймерĕ. Çитменнине, хăйĕн те ăш-чикĕ вырăнта мар. Вăл тем тума хатĕрччĕ темиçе çул каяллахи çемье телейне каялла тавăрассишĕн. Анчах ăçта-ши çав кунсем, яланлăхах çухалса тĕксĕмлĕх хупларĕ-ши вĕсене? Нивушлĕ малашне аса-илӳ çеç пулĕ? «Хăвăртрах сывал, анне! Кил-çурт ăшши, унăн савăнăçĕ-телейĕ эсĕ пирĕнпе чухне çеç.»

Ашшĕ пӳлĕмре çаплах-ха каллĕ-маллĕ утрĕ. Юлашки кунсенче вăл палăрмаллах улшăнчĕ, ӳт-пĕвĕпе унсăрăн та хытканскер, пушшех те имшерленчĕ. Кĕпи витĕр хулпуççи шăммисем палăрчĕç, кăкăрĕ типсе пĕрĕннĕ, пит çăмартисем самаях путса кĕнĕ. Тен, паян кун ăна каллех хăямат вăрçă суранĕ — ӳпкинчи снаряд ванчăкĕ каллех аптратма тытăнчĕ, анчах та çакна ывăлне палăртасшăн мар çеç, хăйне ватă салтак пек çирĕп тытма тăрăшать.

Çумра чи çывăх çын пулманни килти лару-тăрăва татах та йывăрлатрĕ. Ан тив, вăл сăмах та ан чĕнтĕр. Анчах та ăна хăвăн куçупа куллен юнашар курса тăни саншăн пысăк савăнăç, телей. Вăл çумра чух эсĕ унпа пĕр сывлăшпа сывлатăн, ăна йывăр чух чун ыратăвне ирттерсе ярас е сиплес туйăмпа, сăмахпа та пулин йăпатма пултаратăн. Халĕ

акă çав çын аякра. Эсĕ, пулăшма пултарайманнишĕн кулянса, хăвна ху тăлăха юлнăн туятăн, сана умри усăмсăрлăх татах та шиклентерет те, хăратать те. Çакна пулах ашшĕпе ывăлĕшĕн пӳлĕмре темĕн çитменнĕн туйăнчĕ, ĕç ăнмарĕ, шухăшĕсем пăтрашăнчĕç, шăп та лăп çак самантра иккĕшĕ те çемье вучахне хĕрарăм çеç упрама пĕлнине туйса илчĕç. «Хăвăртрах чир-чĕре çĕнтерсе киле таврăнтăрччĕ» —шутларĕç вĕсем.

Кантăкран уйăх çути ӳкрĕ. Уçă чӳрече каррисене силлентерсе сулхăн çил вĕрчĕ: «Вăранăр, кичем шухăшпа чирлĕ çынна чĕртеймĕр»—тенĕ евĕр питрен-куçран хыпаларĕ, çӳçсене сапаларĕ.

Урамра хуткупăс сасси янăраса кайрĕ, вăл каллех çамрăксене хăй патне чĕнчĕ ĕнтĕ. Урай варрине çитнĕскер, çак сасса илтсе Сергей Иванович тăпах чарăнчĕ, аллисене кăкăрĕ умне хĕреслетсе тытса, пĕр чĕнмесĕр ларакан ывăлĕ çине тинкерчĕ.

- Ывăлăм,—терĕ вăл ăшшăн,—çывăрма выртиччен урама тухса çӳрени саншăн усăллăрах пулмĕ-ши? Кур-ха, мĕн тери ытармалла мар паян каçĕ, эсĕ вара, ват çын пек, пуçа усса ларатăн, пĕрре те йĕкĕт пек мар.

Тен, ашшĕ тĕрĕсех калать? Чăнах та, çамрăк çыншăн çакăн пек ларни килĕшӳсĕр, анчах та Кольăн чунĕ темшĕн урамалла туртăнмасть. Вăл каллех çарти юлташĕсене аса илчĕ. Володьăпа Леша Челныне çитрĕç пулĕ, çывăх кунсенче ĕçе пикенĕç. Куçĕ умне çĕнĕ пысăк хулан çӳллĕ çурчĕсем тухрĕç. Акă çул хĕррипе йывăççем лартнă тротуар тăрăх каччăсемпе хĕрсен пĕр ушкăнĕ иртрĕ. Унта Володьăпа Леша та пур. Вĕсен пурин те пичĕ çинче хаваслăх çиçет. Хĕпĕртемесĕр, хăйсен аллисемпе çĕкленĕ-çке вĕсем çак çуртсене. Çулсем иртнĕçемĕн килен-каян хăнасене, ачисене, мăнукĕсене кăтартмалли, хăйсен ĕçĕпе мухтанмалли пур-çке.

Кольăн шухăшĕсем, вĕçен кайăк йăвине вĕçсе килнĕн каллех тăван яла таврăнчĕç: «Вăхăт шăвĕ, юлташсем пирĕн пата курма килĕç, анчах та мĕнпе мухтанăп эпĕ вĕсен умĕнче? Уй-хирте, çĕр çинче чакаланнине кам хаклĕ?» Йывăрлăхран вăл хăрамасть-ха, ĕçĕ харама каясран та шикленмест. Ахальтен мар çак самантра амăшĕн мĕн пĕчĕкрен вĕрентсе каланă сăмахĕсем аса килчĕç: «Çĕр вăл — анне пекех. Ăна хакламалла, упрамалла. Ан шиклен, санăн ĕçӳ нихăçан та харама каяс çук. Эсĕ ăна юратсан, хаклама пĕлсен, вăл та саншăнах тăрăшĕ: тăрантарĕ, тумлантарĕ. Çĕр пулмасан, хула та, ял та çĕкленес çук».

Коля диван çинчен çĕкленчĕ. Капланса, черетленсе улшăнакан шухăшсене сирес тенĕ евĕр, аллисене хăвăрттăн сарса, карăнса илчĕ, унтан ашшĕне сад пахчине пĕрле тухма чĕнчĕ. Сергей Иванович ывăлĕн сĕнĕвĕпе килĕшрĕ: уçă сывлăша тухни уншăн та сиенлĕ пулас çук. Вăл кĕпе вĕççĕнех, пуçне карттус тăхăнса, Коля хыççăн утрĕ.

Пур шухăшсене манса вĕсем çутçанталăк илемĕпе киленме тăрăшрĕç. Тулли уйăх хăйĕн çутине тавралăха сапаланă вăхăтра кунта, чăнах та, аван. Улмуççисемпе çĕмĕрт йывăççисем çулçи палăрмалла мар шап-шурă чечеке ларнă. Каçхи вăййа хаклă духи сапăнса тухнă хĕрсем пек, тавралăха ырă шăршă сарса, вĕсем хăйсен çывăхнелле чĕнчĕç. Уçă сывлăш кăкăра уçăлтарчĕ. Пуç тăрринче пĕр-пĕринпе куç хĕссе вылякан çăлтăрсем те кăмăла çĕклентерсе хаваслăх туйăмĕ çуратрĕç.

Сергей Иванович нумай лармарĕ. Кăштах çӳçеннĕ пек пулнăскер, пӳртеллеваскарĕ.

- Вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ ĕнтĕ. Шкул ачисен юлашки тĕрĕслев ĕçĕсене пăхса тухса хакламалла,—терĕ. - Тепĕр чух шурăмпуç киличченех пĕрле калаçса ларăпăр.

Коля садрах юлчĕ.

Кӳршĕ урамран каллех хуткупăс сасси, хĕрсем юрлани илтĕнет. «Саша таврăннă пулас, ялта ун пек купăс калакан çын тек çук. Анчах пĕлет-ши вăл тусĕ хулана кайса килнине? Мĕн калĕç-ши ял çамрăкĕсем? Хĕрсем, паллах, ӳпкелешме тытăнĕç, малтанах тавçăрчĕç вĕт-ха вĕсем эпĕ яла юлас çуккине. Саша ун чух маншăн сăмах пачĕ. Тен, чăнах та, колхоза ура çине тăма пĕрле тăрăшасса шанчĕ? Савăнĕ-ши халь яланлăхах тусĕ таврăннине пĕлсен?»

Çук, çав тери аван мар пулчĕ Кольăна ушкăн умне тухма. Вăл вĕсен нушине, хуйхине, ялта ĕçчен алăсем çитменнине курса-тăрса, хулана тухса кайрĕ. Тен, амăшĕ чирлени çинчен телеграмма илмен пулсан, нихăçан та таврăнмастчĕ? Эппин, мĕнле питпе курăнса, пырса тăрса, сывлăх сунĕ-ха вăл? Каçарĕç-ши ăна ялти йывăрлăхран пăрахса тарма тăнăшăн ялти каччăсемпе хĕрсем? «Чăн-чăн салтак нихăçан та çапла хăтланас çук. Апла эпĕ хăравçă, пин-пин çын хушшинче пытанса ӳснĕ мĕскĕн чун! Акă халĕ те юлташсемпе алăран-алла тытса ĕçлеме калаçса татăлас чух, йывăçсем хушшинче пытанса ларатăп. Салтак-и вара çакăн хыççăн? Эх, хăравçă!»—чунтан тарăхса хăйне-хăй питлерĕ каччă. Чĕри сиксе тухаслах тапрĕ. Нумаях пулмасть çеç кулянса ларнăскерĕн, ĕçре паттăрлăх кăтартас, хăйĕн ятне çӳле

çĕклес килчĕ. Çак ĕмĕтсемпе хавхаланса вăл ларнă çĕртен тăчĕ те сасă илтĕннĕ еннелле çирĕппĕн утрĕ.

Хĕрсен ушкăнĕ ăна тараватлăн кĕтсе илчĕ. Тен, вĕсем нимĕн те пĕлмеççĕ? Тусĕ вара тĕпчевлĕн пăхса илнĕ хыççăн, купăсăн тӳмисене хыттăн пусса пĕрмисене çыпăçтарчĕ те янахне ун çине хучĕ. Хĕрсем шăпланчĕç, вăл темшĕн кăмăлсăр иккенне тӳрех сисрĕç пулас. Коля тем тума та хатĕрччĕ çак самантра. Саша ăна хĕрсен умĕнче ан намăслантартăрччĕ çеç. Лешĕ тусĕн шухăшне ăнланчĕ пулас, ирĕксĕррĕн кулам пекки турĕ те, пӳрнисене хăвăрттăн вылятса, каллех паçăрхи чăваш кĕввине шăрантарма пикенчĕ. Кольăн чĕри лăш! пулчĕ. Вăл пĕр сăмах чĕнмесĕр сак вĕçне, Валя Наперсткина çумне пырса ларчĕ. Ытти каçсенче май килнĕ таран унпа сăмахлама тăрăшатчĕ. Хальхинче калаçăва хĕр хăех пуçласан та, каччă чĕнмерĕ, куçĕсемпе унпа тĕл пуласран шикленсе, вĕсене аякка тартрĕ. Пурне те час сисекен Маша Сынкова çакна çийĕнчех асăрхарĕ. Купăс выляма чарăнсанах, вĕсен енне çаврăнчĕ те хăйĕн шăнкăравлă сассипе янăравлăн:

—Коля, сана мĕн пулнă? Темшĕн эсĕ паян пирĕн хушăра хăвна ют çын пек тытатăн, пĕрре те хамăр ял ачи пек мар,—терĕ.

Çак сăмахсем пач кĕтмен çĕртен пулнăран, вăл хăйне пуçĕнчен такам йывăр япалапа çапнăнах туйрĕ. Саша калаçăва хутшăнман пулсан, мĕнпе вĕçленеччĕ-ши паянхи каç, çакна чухлаймарĕ, çапах та унăн хулана кайса килни çинчен каласа памах тиветчĕ.

—Нимех те пулман,—терĕ вăл сӳрĕккăн.

—Маша, миçе хутчен хутчен каламалла-ха сана, пурне те пĕлсен час ватăлатăн тесе,—çăлчĕ ăна тусĕ.

“Эппин, вăл мана сутасшăн мар, хĕрсем эпĕ Шупашкарта пулнине пĕлмеççĕ”,—вĕльтлетсе илчĕç шухăшсем.

Те Сашăн сасси кăштах хытăрах тухнăран, те ытлашши калаçсан ырă мар пулассине сиссе, хĕрсем чылайччен чĕнмесĕр ларчĕç. Каçĕ, яланхи пек, шавлăн та хаваслăн иртмерĕ, такам кӳрентернĕн çамрăксем кăмăлсăрланчĕç, юрă та юрлас темерĕç. Малаллахи вăхăт та çакăн пек тĕксĕммĕн иртессине туйса, автансем авăтасса кĕтмесĕрех, хĕрсем килĕсене каймаваскарĕç, каччăсем те вĕсене урăх ларма хистемерĕç.

Урам пушанса юлнăнах туйăнчĕ. Вăрăм сак çинче туссем иккĕшех ларса юлчĕç. Чăн-чăн арçынпа арçын хушшинчи

çивĕч калаçу puласса сиссен те, вĕсем сăмаха мĕнрен пуçламалла-ха тенĕн, пĕр вăхăт хушши чĕнмерĕç.

—Ну, мĕнле вăй-хăват сана каялла яла тавăрчĕ? Эсĕ паян Шупашкара кайса килнине эпĕ пĕлетĕп. Хăвăн çарти юлташусемпе тĕл пулса, инçе çула тухма шутларăн, эппин. Тĕрĕс-и ку? Пĕр пытармасăр кала, хăвăн чи çывăх тусна шаннă пек,—пуçларĕ Саша. Хăй темшĕн пăлханчĕ, кĕсйинчен сигарет кăларса çăварне хыпрĕ, ăна шăрпăк чĕртсе тивертрĕ те тантăшĕ сăмах пуçласса кĕтрĕ.

Коля ун умĕнче хăйне айăпа кĕнĕ шкул ачи пекех туйрĕ, ыйтса пĕлессе те çывăх тусĕ мар, район прокурорĕ тĕпчет тейĕн. Вăл малтанласа ним калама аптрарĕ. Саша çакна сисрĕ, çавăнпа тусне калаçу пуçарма васкатмарĕ. Çапах та мĕн пĕчĕкрен пĕрле, пĕр урамра выляса ӳснĕ юлташĕ ăна пăрахса хăварасси çинчен нихăçан та шутлама пултарайман, вăл та ун пекех яла юласса шаннă. “Нивушлĕ йăнăшрĕ: пĕр парта хушшинче вунă çул пĕрле ларса вĕренсе, çын пĕлмен вăрттăнлăха пайласа ӳсрĕç пулин те, тусне халĕ ăнланаймарĕ. Коля мĕн пĕчĕкрен çирĕп кăмăллă, тӳрĕ чун-чĕреллĕ пулнипе уйрăлса тăратчĕ. Саша çеç мар, ват çын пек сăмахĕсене шухăшласа калаçнăшăн, аслăраххисем те тĕлĕнетчĕç унран. Çара кайнă чух, уйрăлас умĕн, вăл тусĕн аллине çирĕппĕн чăмăртарĕ те : “Çартан таврăнсан, эпир иксĕмĕр те ăçта йывăр, çавăнта пулăпăр”, -терĕ. Акă халь çак кун çитрĕ. Чăнах та, манчĕ-шим хăйĕн сăмахĕсене? Нивушлĕ çарти хăш-пĕр романтикăпа çунакан çамрăксен ушкăнне лексе, вăл вĕсемпе яланлăхах пĕрле пулма калаçса татăлчĕ? Çук, ĕненес килмерĕ. Чăнах та, салтакра пурнăçа хаклама вĕренетĕн, чылай чух малтанхи ĕмĕт-шухăша улăштаратăн. Анчах та ялти йывăрлăха курса тăрса, мĕншĕн ăна пăрахмалла? Шăп та лăп паян эсĕ кунта кирлĕ çын-çке. Нивушлĕ çакна чухламастăн? Ĕçчен çамрăксем ытларах пулсан çеç, колхоза кая юлса пыракансен шутĕнчен мала кăларма пултаратпăр. Пирĕн пĕрле ĕçлемелле, ăнлансамччĕ!”—тусĕ еннелле çаврăнса кăшкăрас килчĕ Сашăн.

Лешĕ çаплах-ха чĕнмерĕ. Куç умне каллех çара каяс умĕнхи кунсем шуса тухрĕç. Акă юлашки каç, ыран ирхине ирех пĕрремĕш автобус çине ларса, Коля Канаша тухса каять. Унăн та кĕсйинче повестка пур, вăл та тепĕр ик-виçĕ кунтан ял-йышпа уйрăлĕ. Вĕсем, паянхи пекех, чылай вăхăт хушши пĕр-пĕрин çине пăхмасăр, чĕнмесĕр ларнăччĕ. Уйрăлас килместчĕ. Кӳршĕ урамран çамрăксен хаваслă сасси

илтӗнетчӗ. Çур çӗр çитеспе автансем пӗрин хыççӑн тепри ӑмӑртмалла янӑравлӑн çунат çапса авӑтрӗç. Ӑçта-ши халӗ çав кунсем? Салтакра пулнӑ хыççӑн вӑхӑт нумай та иртмерӗ темелле, ял пурнӑçӗ пӗтӗмпех улшӑнчӗ. Енчен те Саша каççерен хут купӑспа урама тухмасан, кунта шӑплӑх хуçаланать, ял пӗтӗмпех пушанса юлнӑ тейӗн. Чӗре ыратать, нивушлӗ, Коля, санӑн ял илемлӗхне каялла тавӑрас килмест.

Саша хӑйне пӗчченнӗн туйрӗ. Пӗр-пӗччен, йӗри-тавра шӑплӑх, çумӗнче тусӗ те çук тейӗн. Каллех тупа туса каланӑ сӑмахсем аса килчӗç: «Ӑçта йывӑр, çавӑнта пулӑпӑр.» Вӑл çӑвар тулли çӑра йӳçӗ тӗтӗме каçса кайсах çӑтрӗ, темӗн калама тӑнӑ Кольӑна аллипе сулса, пӳлсе хучӗ:

—Кирлӗ мар,—халь тин ӑна унӑн сӑмахӗсем кӑсӑклантармаççӗ те тейӗн.—Эпӗ пӗтӗмпех пӗлетӗп. Суймасӑр кала-ха. Эсӗ ялта аннӳ сываличчен çеç пурӑнатӑн-и е яланлӑхах таврӑнтӑн? — вӑл чӑтӑмсӑррӑн хурав парасса кӗтрӗ, унӑн çавракa пичӗ хӗрелсе кайрӗ.

—Яланлӑхах,—чунӗнчен темӗн хӑпса тухнӑ евӗр, тусӗ лӑпланасса сиссе чутах кӑшкӑрса ямарӗ Коля, анчах та унӑн сасси çемçен те йӑвашшӑн тухрӗ.

Саша пуçне кӑлт! çӗклерӗ те, ывӑннӑ хыççӑн вӑй илнӗн, сигаретне сӳнтерсе çул варрине ывӑтса ячӗ. Уйӑх çутинче унӑн тин çеç çиленсе пӑхакан куçӗсем, тӳпери çӑлтӑрсем пек, самантрах ылмашса, савӑнӑçлӑн çиçрӗç. Вӑл çаплах-ха «яланлӑхах» тенӗ сӑмахӑн пӗлтерӗшне тӳрех ӑнланмасӑр, шӳт вырӑнне çеç каламарӗ-ши тенӗ евӗр, ӗненмесӗр ларчӗ, çак сӑмаха тепӗр хут илтесшӗн пулса, тавралӑха тӑнларӗ. Коля çакна йӑлтах сисрӗ тейӗн, сассине хӑпартрӗ те çирӗппӗн:

—Яланлӑхах,—терӗ.

Саша хӑйӗн вырӑнӗнчен сиксе тӑчӗ, Кольӑна хӑй çумне пӑчӑртаса, вӑйлӑ аллисемпе çӳле çӗклерӗ:

—Тусӑм, эпӗ сана шаннӑ, пӗрле вӗреннӗ юлташсем йывӑрлӑхра яланах пулӑшасса ӗненнӗ!

Тантӑшӗ кӳренменнишӗн Коля чунтанах савӑнчӗ пулин те, çакна хавхаланса пӗлтерме васкамарӗ.

—Пӗлетӗн-и,—каллех пуçларӗ Саша,—паян манӑн Канашран комсомолӑн Патӑръел райком секретарӗпе пӗрле таврӑнма тӳр килчӗ.Ӑна çул çинче курсан кабинӑна лартрӑм. Анчах вӑл пӗрре те пирӗн районти çамрӑксен пуçлӑхӗ пек мар. Йӑнӑшмастӑп-ши тесе, темиçе хутчен те сӑнаса пӑхрӑм. Вӑл çакна хӑй те сисрӗ пулас, палӑртмарӗ çеç, çав тери сӳрӗкчӗ, калаçасси те килмест хӑйӗн. Пур çыннӑн кӑмӑлне çӗклеме пултараканскере, секретарь нихӑçан та тӑруках

çакăн пек улшăнма пултарасса шанман. Те ывăннăран, те ёçре çитменлĕхсем пулнăран, вăл пĕр чĕнмесĕр, чӳречерен пăхса, тавралăха сăнаса пычĕ. Каçал тĕлĕнчи автобус чарăнакан вырăнта чăматанлă çамрăксен ушкăнне курсан, хăвăрттăн ман еннелле çаврăнчĕ те: «Итле-ха, Кошкин, санăн хулана каяс килмест-им? Анчах тĕрĕссине кала»— терĕ. Вăл мĕншĕн çакнашкал ыйту панине эпĕ тăруках чухлаймарăм-ха, анчах та чĕре ырă мара сиснĕн темшĕн туртăнса илчĕ, тӳрех сана аса илтĕм вара. Эсĕ ялтан кайма пултарасси çинчен шутламанччĕ. «Çамрăксене пурăнма унта çăмăлтарах, интереслĕрех те ĕнтĕ, анчах та эпĕ хулапа ял хушшинче уйрăмлăх часах пĕтессе шанатăп, çавăнпа та манăн чун хулана питех туртăнмасть»,—терĕм. «Тĕрĕс калатăн, Кошкин, тĕрĕс!—тытса ыталама хатĕр пулчĕ вăл мана.—Çапах та пурте сан пек шутламаççĕ çав, вĕсемшĕн историне кĕрсе юлмалла пысăк стройкăсем, çĕнĕ хуласемпе гидростанцисем çеç пулччăр, Çĕршыва унта кăна ытларах усă паратпăр тесе шутлаççĕ. Яш-кĕрĕме хăйсем çуралса ӳснĕ ял пуласлăхĕ, тăван колхоз пуянлăхĕ пачах та интереслентермест. Çитменнине, хăшĕсем тата ялта юлакан каччăсемпе хĕрсенчен тăрăхласа кулма пăхаççĕ, çамрăклăхăра тислĕк ăшĕнче ирттеретĕр, теççĕ. Анчах та вĕсенчен хăшĕ те пулсан пуç тавра шутласа пăхнă-ши: тăван колхозра юлни те Çĕршыва кирлĕ-çке. —Секретарь кабинăра ларса пынăçемĕн аллисемпе сулкалашса хĕрӳллĕн калаçрĕ. Унăн сăмахĕсем кирек кама та ĕнентермелле пулчĕç. Патăръелне çитеспе çеç кăштах лăпланчĕ, çывăхри ялсем çине пăхнă май, ассăн сывларĕ.—Чăнах та, çамрăксене ялта пурăнма кичемтерех ĕнтĕ, хăш-пĕр ялсенче кино та йĕркеллĕ кăтартмаççĕ, ытти çитменлĕхĕсем те темĕн чухлех. Анчах та кам уншăн айăплă? Райкомран пырса калаçнипе кăна ĕç иттермелле-им? Ăçта пирĕн колхозри комсомолецсем, яш-кĕрĕмĕн ертӳçисем? Е вĕсене нимĕн те кирлĕ мар, е çамрăксем пухусенче тăрăхласа çеç кăшкăрма пĕлеççĕ? Мĕншĕн-ха кашни ялтах пултаруллисен ушкăнне йĕркелесе концертсем иттермелле мар, тĕрлĕ спорт секцийĕсем уçмалла мар? Комсомол райкомĕ яланах ун пек пуçарусене ырлать, май килнĕ таран пулăшать. Çапла мар-и, Кошкин? —Эпĕ унпа килĕшрĕм. Вăл ман çине тӳррĕн пăхса илчĕ те,—савăнмалли çук сирĕн,—терĕ.—Председатель çамрăксемпе сайра-хутра çеç тĕл пулать, колхозра çынсем кирли пирки те вĕсемпе сăмах та хускатмасть пулас. Тем сăлтавпах паян сирĕн ялти пĕр каччă Челныне тухса кайрĕ.

Чӗре ыратать. Мӗн тӑвӗ-ши вӑл Челныре? Унта ытларах специалистсем кирлӗ-ҫке. Унӑн вара нимӗнле професси те ҫук. Паллах, хӑйне валли ӗҫ тупӗ. Яла юлсан мӗн чухлӗ усӑ кӳнӗ пулӗччӗ вӑл. Манпа калаҫма та кӑмӑл тумарӗ. Акӑ сирӗн комсомол секретарӗ ҫук. Унран лайӑх кандидат пулатчӗ: ҫамрӑк, хитре каччӑ, тин ҫеҫ ҫартан таврӑннӑ, хӑйӗн тавра ҫамрӑксен ушкӑнне пуҫтарса, вӗсене колхоз аталантӑр, вӑл районта юлса пыракансен шутӗнчен тухтӑр, ҫуралса ӳснӗ ял илемлӗ те пуян пултӑр тесе хавхалантарма пултаратчӗ.» Вӑл татах та калаҫрӗ, анчах та унӑн юлашки сӑмахӗсем хӑлхана кӗмерӗҫ, манӑн шухӑшсем пӗтӗмпех сан ҫине куҫрӗҫ, хӑвӑртрах яла ҫитес килчӗ. Нивушлӗ мана пӑрахса хулана тарнӑ? Ӗненместӗп!—ҫак шухӑшсемпе райком секретарьне Пӑла кӗперӗ патӗнче антарса хӑвартӑм та тӳрех сирӗн пата васкарӑм. Эсӗ чӑнахах та ялта ҫуккине пӗлсен, манӑн чӗре сиксе тухаслах тапрӗ. Тем тума та хатӗрччӗ эпӗ ҫав вӑхӑтра, енчен те сана ҫул ҫинче хӑваласа ҫитес пулсан, питӳнтен ҫупса яраттӑм,-терӗ Саша. Анчах та вӑл текех тусне ҫиленмерӗ, ҫапах та пӗр пуҫланӑ чух, тулса ҫитнӗ сӑмах миххине йӑлтах пушатса силлес терӗ пулас.—Каҫпа хӗрсем эпӗ пӗчченех килнишӗн шалтах тӗлӗнчӗҫ, пӗрин хыҫҫӑн тепри: «Тусна ӑҫта ҫухатрӑн?»—тесе ҫулӑхрӗҫ. Малтанласа шӳтлесе, манран тӑрӑхласа кулаҫҫӗ тесеччӗ. Вӗсем чӑнласах ыйтнине курсан, чӗнмерӗм, хама хам шантарса: «Часах килет»,—терӗм. Валя та ҫав тери кичем, час-часах анаталла пӑхать, курӑнмасть-ши, тет пулас, хам сисетӗп пулин те,чӗнместӗп...

—Эппин, хӗрсем, чӑнласах та, пӗлмеҫҫӗ? — ура ҫине сиксе тӑнӑ май, ӑна пӳлсех ыйтрӗ Коля, анчах та хурав парасса кӗтмесӗрех,ывӑннӑ ҫын пек, каллех хӑйӗн вырӑнне ларчӗ.—Пӗлместӗп, мӗнпе тав тумалла сана.

Саша ун сӑмахӗсене илтмен пекех пулчӗ, аллине сулчӗ те калаҫӑвне малалла тӑсрӗ:

—Эсӗ килнине курсан, чӗре лӑштах пулчӗ, ҫапах та хам яланхи пек санпа юнашар ларма васкамарӑм, уншӑн каҫар,—терӗ.

Коля аванмарланчӗ.

—Мӗн эсӗ, манӑн каҫару ыйтмалла, санӑн мар.

—Юрӗ, килӗшрӗмӗр тейӗпӗр, ун пирки сӑмах тек ан пултӑр.

Малаллахи калаҫу кӗске пулчӗ. Саша Кольӑна колхозри комсомол секретарӗн ӗҫне пуҫӑнма сӗнчӗ, анчах та тусӗ унпа килӗшмерӗ.

—Мĕнле секретарь пултăр манран? Ял çамрăкĕсем те палламаççĕ.

—Ку çитменлĕх мар, вĕсемпе пĕр чĕлхе тупсан, ютшăнмасăр, килĕштерсе ĕçлеме тытăнсан, часах ыттисенчен уйăрма пикенĕç. Сана курсан, кăштах именерех: «Акă пирĕн секретарь»,—теме тытăнĕç. Ун чух эсĕ мăнкăмăлланма та пăхăн-ха, кăкăрна каçăртса, сывлăх сунсан та, пуçупа çеç сĕлтĕн. Халĕ ман умра аванмарланса çеç килĕшмен пек курнăçланатăн.

—Çук, тусăм, чăнласах та,манран комсомол секретарĕ пулас çук. Пĕреххут, кĕреçе тытса тислĕк кăларма каятăп, çапах та секретарь пулма тивĕçлĕ мар эпĕ.

Коля чăнласах хирĕçленине курсан, Саша сăнĕ тăруках улшăнчĕ, аллипе тусне хулпуççинчен тытрĕ те татăклăн:

—Тусусем шанаççĕ пулсан — тивĕçлĕ. Секретарь пулатăнах,—терĕ. Текех вăл пĕр минутлăха та чарăнса тăмарĕ, хăвăрттăн çаврăнчĕ те анаталла утса кайрĕ. Те васкаса, те тусне пулас ĕçĕ пирки тарăннăн шухăшлама чăрмантарас мар тесе уйрăлчĕ вăл кĕçĕр, Коля çакна пĕлеймерĕ, пĕр вăхăт хушши куçĕсемпе Сашăна ăсатрĕ, унтан килĕ енне утрĕ.

Çамрăксен хушшинче пулнă май, вăл çемье хуйхине маннă пекех пулнăччĕ. Халĕ акă, хапха алăкне уçнă-уçманах, каллех амăшĕ аса килчĕ: «Мĕнлерех-ши унăн сывлăхĕ? Халиччен те врачсем пĕлмен чирĕн сăлтавĕ мĕнре-ши? Анне сывалас шанăç кăштах та пулсан пур-ши?»—çак шухăшсемпе вăл пӳрте кĕчĕ. Ашшĕ çаплах-ха çывăрма выртман, шкул ачисен ĕçĕсене тĕрĕслет. Ывăлĕ таврăннине курсан, вăл хăйĕн умĕнчи тетрадьсене айккинерех сирсе, шутарса хучĕ те:

—Атя вĕри чей ĕçер, юриех эсĕ таврăнасса кĕтсе вĕретрĕм,—терĕ.

Коля килĕшрĕ. Паллах, ашшĕн кăштах та пулин чунне йăпатмалла калаçу пуçарас килчĕ, унăн куçĕсем час-часах амăшĕ ларакан пушă вырăна пăхрĕç. Вăл шухăша путрĕ. Çемье пĕрле пуçтарăнайманнишĕн кил хуçин чĕри ыратрĕ ĕнтĕ, çакна ывăлĕ каламасăрах ăнланчĕ. Тен, амăшĕ çак минутра вĕсемпе пулманшăн пĕтĕмпех вăл айăплă? Ĕнер çеç вĕт-ха пурте пĕрлеччĕ, телейлĕччĕ вĕсем. Паян акă уншăн чи хаклă çын — больницăра. Мĕнле туять-ши вăл хăйне унта?

Юрать-ха телеграмма вăхăтра çитрĕ. Кăштах кая юлнă пулсан, Коля халĕ ашшĕпе пĕр сĕтел хушшинче ларăймастчĕ те, виççĕшĕ виçĕ кĕтесре пулатчĕç. Кил-çуртра, хирти хурăн

пек, пӗччен тӑрса юлнӑ ашшӗ каҫарӗччӗ-ши ун чух? Паянхи пек вӗри чей лартса ӑшшӑн кӗтсе илнӗ пулӗччӗ-ши?

Сӗтел хушшинче Коля каллех Сашӑна, нумаях пулмасть пӗрле ларнӑ хӗрсене аса илчӗ. Чӑнах та, вӑл хулана кайса килнине чылайӑшӗ пӗлмеҫҫӗ. Тен, нихӑҫан та чухлаймӗҫ. Анчах та унӑн чӗринче ирхи хӑтлану яланлӑхах йӗр хӑварса, асра юлӗ. Умра сахал мар йывӑрлӑх пулӗ, темле чӑрмав сиксе тухсан та, куҫӗ умне паянхи кун тухса тӑрӗ, хӑйне ҫирӗп пулма вӑй-хал парӗ. Вӑл темиҫе сехет каялла ҫеҫ пурнӑҫри пирвайхи утӑма хӑй тӗллӗн тӑвасшӑнччӗ, анчах та пултараймарӗ, уншӑн Коля ӑшӗнче кӑштах савӑнчӗ те. Халӗ акӑ юлташӗсемпе курса калаҫнӑ хыҫҫӑн, ҫав утӑм, чӑнласах та, тӗрӗс маррине ӑнланчӗ: паянхи кун тӑван колхозӑн хуҫалӑхне ҫӗклеме ҫамрӑк, вӑйпитти ҫынсем кирлӗрех. Тен, чӑнах та, Челныре те вӗсем ҫитмеҫҫӗ, анчах та 10 — 15 ҫын ҫукки пиншер ӗҫҫынни хушшинче палӑрмасть, ҫак йыш кӳлӗри тумлам пек ҫеҫ. Кам вӑйлӑ тыр-пул, пахчаҫимӗҫ ӳстерӗ?

Тӳшек ҫине выртсан та Коля тӑруках ҫывӑрса каяймарӗ, каллех пуҫра шухӑш хыҫҫӑн шухӑш вӗҫрӗ, ҫарти туссем аса килчӗҫ. Нивушлӗ яланлӑхах уйрӑлчӗҫ вӗсем? Ҫакна пӗрре те ӗненес килмерӗ. Хӗвелтухӑҫне шурӑмпуҫ ҫути ҫапсан тин вӑл ҫывӑрса кайрӗ.

( Володя Иванов дневникӗнчен )

Набережные Челны. Акӑ пирӗн умра тахҫантанпах курма ӗмӗтленнӗ хула. Вӑл Кама юханшывӗ ҫывӑхӗнче, айлӑмра вырнаҫнӑ, ҫумрах этем алли лартса ӳстернӗ хыр вӑрманӗ. Чӑнах та, эпир кунта кӑшт каярах юлса килтӗмӗр пулас, кӗске самант хушшинче ӗненмелле мар, юмахри пек, хӑвӑрт ӳссе ларма ӗлкӗрнӗ те вӑл. Ҫӗрле ҫитнӗскерсем, ҫап-ҫутӑ ҫунса ларакан ҫӳллӗ ҫуртсене курсан, малтанласа ку Челны пулнине ӗненес те килмерӗ, пирӗн ҫул ҫинче тӗл пулнӑ мӗнле те пулин урӑх хула пуль тенӗччӗ. Кайран ҫак шухӑша улӑштарма тиврӗ: пирӗн умра чӑннипех те хамӑр курма ӗмӗтленнӗ Набережные Челны ҫиҫсе ларать, пире кунта кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлеме йыхӑрать.

Эпир виҫӗ янташ пӗрле килме калаҫса татӑлнӑччӗ. Пӗр-пӗрне шантарса салтак сӑмахне те панӑччӗ, анчах та пурнӑҫра ялан шухӑшланӑ пек пулмасть ҫав, Коля Степанов пирӗнпе килеймерӗ. Ӑна айӑплама сӑлтавӗ ҫук, ҫав тери пӗр

ушкăнра пуласшăнччĕ вăл. Пĕтĕм вăй-халне, хăйĕн пурнăçĕнчи кашни минутне усăллă иртересшĕн çунатчĕ, пиртен çулĕпе икĕ çула яхăн çамрăк пулин те, унăн ĕмĕчĕсем пире яланах тарăн шухăша яратчĕç, çивĕч каланă сăмахĕсем йывăрлăхра çухалса кайма памастчĕç, чăтăмлă пулма вăй паратчĕç. Чăнах та, пирĕн çакăн пек туса çухатас килмерĕ. Вăл хăйĕн сăмахне тытасса çирĕп шанатпăр, амăшĕ сывалсанах пирĕн пата килĕ.

Лешăпа иккĕнех çула тухрăмăр. Малтан, хамăр шутланă тăрăх, пирĕн çав кунах Челныне çитмеллеччĕ, анчах та çанталăк пăсăлнине кура, самолетсем вĕçмерĕç, икĕ талăк Хусанта ларма тиврĕ. Челныне лекме çав тери йывăр иккен, самолетсемсĕр пуçне Хусантан нимĕнле транспорт та çӳремест. Эпир Ульяновск урлă чукăн çулпа та кайма хатĕрччĕ, пирĕн телее —паян Челныне тата икĕ рейс уçрĕç. Каçа юлтăмăр пулин те, поезд çине ларса кайма килĕшрĕмĕр. Ĕмĕтленни пурнăçланчĕ — эпир часах хулана çитрĕмĕр.

Ыран ирхине ирех савăнса тухакан хĕвел çутипе вăранăпăр. Чунра çĕкленӳллĕ туйăм: юрлас, ташлас килет. Тепĕр темиçе сехетрен пирĕн те çĕнĕ пурнăç пуçланать, ĕç тумтирĕ тăхăнса, стройкăна утăпăр, çĕршыв валли çĕнĕ те вăйлă машинăсем туса кăларас тесе чунтан тăрăшăпăр.

* * * * *

Коля вăраннă тĕле ашшĕ килĕнче çукчĕ, ăна ыйăхран вăратмасăрах вăл ĕçе тухса кайнă иккен. Ывăлĕ çĕрĕпех çывăрманнине сиснĕ ĕнтĕ, тен, çавăнпа та ăна, вырăн çинчен тăратман, кантăр, тенĕ. Çирĕмрен иртнĕ каччă хăйне халĕ те пĕчĕк ача вырăнне шута хунине туйсан, аванмарланчĕ. Ялта хĕвел тӳпене хăпаричченех вырăн çинче йăваланса выртни килĕшӳллĕ-и вара? Коля хăйне такам умĕнче айăпа кĕнĕ пекех туйрĕ.

Вăл васкавлăн çăвăнса тумланчĕ те çатма çинче ăшаласа хăварнă, халĕ сивĕнме ĕлкĕрнĕ çĕрулмине ăшăтса, пĕчченех сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Анчах та темшĕн унăн, чирлĕ çыннăнни евĕр, апат анмарĕ, вăл вара çур литр сĕт ĕçнипех çырлахрĕ. Халиччен пĕччентлĕхе хăнăхманскерĕн, каччăн пĕрре те пӳртре чылай вăхăт хушши пулас килмерĕ, ĕçе

кӳлӗнес килчӗ. Анчах та ăҫта каймалла-ха? Специальность пулсан, ҫак шухăш ăна кулянтармастчӗ, паллах. Ӗнер Саша комсомол секретарӗ пирки сăмах хускатрӗ. Ҫак сӗнӳ Кольăна питех илӗртмерӗ темелле, мӗншӗн тесен, ку колхоза усă кӳни мар, ҫитменнине, хӗрсем те тăрăхласа кулма пикенӗҫ: «Вăйлă, сывлăхлă каччă ӗҫрен пăрăнать, ҫăмăл ҫул шырать, пуҫлăхра ҫӳрессишӗн ҫеҫ тăрăшать, тейӗҫ»,— шутларӗ вăл. Чим-ха, ăна райком секретарӗ яла каялла таврăнас пулсан, хăй патне пыма чӗннӗччӗ-ҫке. Тен, мӗнле те пулсан ырă канаш парӗ. Ҫак шухăшсемпе хавхаланса, вăл район центрне кайса килме шут тытрӗ.

Коля Патăръелне тухса каякан «Набережная» текен урамра пурăнать, анчах та ҫапла вырăсла калама йышăнни ял халăхне пӗрре те килӗшмест, ҫынсем ӗлӗкхиллех ăна «Хăрах кас» теҫҫӗ, ҫитменнине вӗсемшӗн аслашшӗ-асламăшӗсем пуҫарнă ят хаклăрах пулчӗ пулмалла, урам ятне таҫти проект институтӗнче панă, ялти ҫынсемпе канашламан та, теҫҫӗ. Малтанласа кунта урам йӗрки те пулман. Тӗлли-паллисӗр, пушă ҫӗр курса, йышлă ҫемьесенчен уйрăлса, ывăлӗсемпе хӗрӗсем хăйсен йăвисене ҫавăрнă. Ҫурчӗсене вара кашниех чӳречисемпе хӗвеле хирӗҫ пăхтарнă, ҫӗнӗ урам Пăла хӗрринчен пуҫласа Ыхра ҫырми кукăрӗ тӗлне ҫитичченех тăсăлнă. Вăрманӗ аякра вырнаҫнăран, хир ҫыннисемшӗн вут-шанкă тупса пӳрте ăшăтасси ҫав тери хӗн, кунта вара ҫурхи кунсенче ҫуртсен ăшчикки хӗвел ăшшипех ăшăннă. Ҫӗнӗ урамӗ чылай ҫул хушши хăрах енлӗ ҫеҫ пулнăран «Хăрах кас» уншăн ӗмӗрлӗх ят пулса юлчӗ. Вăл ыттисенчен нимӗнпе те уйрăлса тăмасть ӗнтӗ, унăн икӗ енӗпе те, ӳкерчӗкри пек, илемлӗ ҫуртсем ларaҫҫӗ. Пӳрт умӗнче кашнинех ҫӗмӗрт е сирень йывăҫӗ ӳсет. Ялта асаттесем тупса хунă урамсен ячӗсем паянхи кун та ӗлӗкхиллех янăраҫҫӗ: «Малти кас», ял варринче вырнаҫнăскер, ял пуҫламăшне аса илтерет, «Ҫӗнӗ кас» вара каярахпа ҫӗкленнӗ.

Кольăсен ҫурчӗ чӳречисемпе хӗвеланăҫ еннелле пăхса ларать. Хыҫалта, пахча вӗҫӗнче, пӗр 100 — 150 метртра Ыхра ҫырми. Ҫуллахи шăрăх кунсенче вăл типсе ларнăпа пӗрех, пушмака хывмасăрах каҫма пулать, ҫумăр ҫуса иртсенех вара, пӗвесене татса, ҫурхи кунсенчи евӗрлех тулса сарăлать, хăш чухне кунта ҫамрăк выльăх-чӗрлӗхе, хӳмесене юхтарса кайни те сахал мар. Ял вӗҫӗнче, анаталла, Пăла лăпкăн юхса выртать. Ун урлă каҫсанах — Патăръелӗн Крепков урамӗ пуҫланать.

Коля, яланхи пек, Пăла енне утмарĕ, пурпĕрех халь шыв самаях тулли, kaçма туса ĕлкĕреймен-ха,ял кĕперĕ урлă çаврăнса каймах шутларĕ. Чăнах та, кунтан çул пĕр-икĕ çухрăма яхăн вăрăмланать, çапах та шанчăклăрах, каллĕ-маллĕ çӳреме тивмĕ. Çак шухăшсемпе вăл çӳхе болонья плащне йӳле ярса, çăмăллăн тăвалла утрĕ.

Хăрах кас вĕçĕнче пысăк çаран сарăлса выртать. Кĕтӳ ансан, килти выльăх-чĕрлĕхсене шырама Коля яланах çак вырăна чупса килетчĕ, вăл çеç мар, ялти пур ача-пăча пуçтарăнатчĕ кунта. Хĕвел аничченех çамрăксен хаваслă сасси илтĕнетчĕ. Хăш чухне мĕншĕн килнине мансах вылятчĕç вĕсем. Ачи-пăчисене кĕтсе ывăннă ашшĕ-амăшĕ чĕнме килмесĕр те саланмастчĕç. Мĕнле çеç выляман-ши вĕсем: аллăмла, лапталла, нӳрекле, футболла, пытанмалла, вун ик патакла тата ытти те. Ывăннине пĕлмесĕр чупатчĕç, хавасланатчĕç, халĕ те çавсем куç умĕнчех.

Çаран хыçĕнче кĕлетсем, механизациленĕ арманпа тырă типĕтмелли çурт вырнаçнă. Хăрах кас пысăк мар, Малти каспа танлаштарсан, унăн çурри çеç пулать. Малалла каймалли çул сылтăмалла пăрăнса ял варрине — шкул патне тухать, кăштах çӳлерех — кирпĕчрен купаласа лартнă клуб, магазин, правлени.

Коля урам вĕçне çитсен, кăштах сулахаялла пăрăнса, çыран хĕррипе утрĕ. Арман тĕлĕнчи кĕпере курсан, вăл чăннипех те хĕпĕртерĕ. Ыхра çырми типме ĕлкĕреймен-ха, унăн шывĕ чĕркуççи таранах пулать. Такамăн ĕçчен те ырă аллисем вара çула кĕскетмелли тирпейлĕ kaçма туса хунă.

Каччă çырантан аялалла пĕчĕк ача пекех, аллисене сарса, чупса анчĕ. Çилпе саркаланнă плащĕ, ăна таçта инçете вĕçтересшĕн пулнă евĕр,сывлăшпа тулса çĕкленчĕ, çӳлелле хăпартасшăн туртрĕ. Çырман тепĕр енче — Кĕçĕн Патăръел çĕрĕ, каллех пысăк çаран, вăл кăштах шурлăхлă пулнăран, унта акма-вырма техника кĕреймест, çавăнпа та акăнмасăрах юлать.

Тӳперен хĕртсе хĕвел пăхрĕ. Ем-ешĕл курăкпа витĕннĕ çаранран тутлă шăршă çапрĕ, сăмсана кăтăкларĕ,çемçе симĕс кавир çийĕн утнă евĕрлех туйăнчĕ ăна. Пуç тăрринче тăрăлтаттарса тăри юрларĕ, чунра çĕкленӳллĕ туйăм хушрĕ.

Çур çухрăм пек утсан, аслă çул çине тухиччен, Патăръелĕн улма-çырла питомникĕ пуçланать. Кунта чечеке ларнă панулми, груша йывăççисем, чиесем, çĕмĕртсем каччăна хăйсем патне самантлăха та пулин чĕнчĕç, çурхи илемпе киленме хистерĕç, анчах та вăл чарăнса тăмарĕ,

район центрĕ еннелле васкарĕ. Уçă сывлăш, вĕçен-кайăк сасси кăмăла çĕклесе, вăш-вашшăн утма хистерĕ.

Райком çурчĕ шăпах Патăръел варринче вырнаçнă. Тĕрлĕ плакатсемпе илемлетнĕрен ăна ыттисенчен çийĕнчех уйăратăн, унта яланах халăх йышлă, машинăсем чылай. Паян, те комсомола илмелли кун пулнăран, çамрăксем нумаййăн пухăннă. Вĕсенчен ытларахăшĕ шкул ачисем, аслăрах çулхисем те пур. Кашниййĕ экзамен умĕнхи евĕр хумханни тӳрех курăнать.

Коля райком алăкне хăюллăн уçрĕ, анчах тăруках шалалла иртме хăяймарĕ-ха, иккĕленчĕ: «Çук, каярахпа килĕп, халĕ вĕсен кунта мансăр пуçне те ĕç мăй таранах пулĕ,»—çак шухăшпа вăл каялла çаврăнма кăна тăнăччĕ, ак тамаша, унăн телейне, секретарь шăпах ăна хирĕç тухрĕ.

—А-а, ĕнерхи тус! Эсĕ таврăнтăн та-и?—пĕр тĕлĕнсе, пĕр хĕпĕртесе аллине тăсрĕ вăл.—Тĕрĕссипе, эсĕ паянах пирĕн пата килессе шанманччĕ эпĕ. Пĕр килнĕскер, атя, кĕрер,—терĕ те хăй пӳлĕмне чĕнчĕ.

Коля хирĕçлеймерĕ. «Первый секретарь Батыревского райкома ВЛКСМ» тесе çырнă алăк тĕлне çитсен, хăй хыççăн ăна таччăн хупса, пӳлĕм хуçи тĕллесе кăтартнă пукан çине вырнаçса ларчĕ.

—Ну, паллашар. Паян пирĕн калаçу йĕркеллех, пĕрпĕрне ăнланмалла иртессе шанатăп. Чекушкин Александр Сергеевич.

—Степанов Николай.

Александр Сергеевич , сĕтел çине ӳпĕннĕскер, каччă хăйĕн ашшĕ ятне те каласса кĕтрĕ. Коля, çакна сиссе, кăштах вăтаннă пек пулчĕ.

—Эпĕ те Сергеевич, анчах та мана атте ячĕпе чĕнме кирлĕ мар, çамрăк-ха. Çавăнпа ун пек чыслама иртерех-ха, халлĕхе тивĕçлĕ те мар.

—Пĕр тăвансем пекех, Николай Сергеевич, вăт — тĕлпулу! Ну, юрĕ, чыс пирки кайран калаçăпăр. Яла яланлăхах таврăнтăн-и?—Кольăна куçран тӳррĕн пăхнă май тăруках ыйтрĕ Чекушкин. Унăн хитре баритон сасси йăвашшăн тухрĕ, куçĕсем кăштах куларах та шанчăклăн, ĕнентермелле пăхрĕç. Тен, çавăнпах та-и Кольăна ку ыйту пĕрре те пăшăрхантармарĕ. Тĕрĕссипе, секретарь çакăн пек ыйту парасса вăл малтанах туйнă, анчах та темшĕн калаçу пӳлĕмре мар, ăçта та пулсан çул çинче, уçă сывлăшра пуласса кĕтнĕ.

—Яланлăхах, Александр Сергеевич. Халĕ эсир ятлама та, мухтама та пултаратăр. Манăн шăпа йăлтах сирĕн алăра, учета та паянах тăрасшăн. Акă документсем, —кăкăр кĕсйинчен комсомол билечĕпе учета тăмалли карточкине кăларма тăчĕ каччă, анчах та секретарь ăна пӳлсе:

—Кирлĕ мар, документусем йĕркеллине пăхмасăрах ĕненетĕп, карточкуна вара урăх пӳлĕмре кăтартăн,-терĕ.

Коля çухалса каймарĕ, вăл, тикĕс шăлĕсене кăтартса, кăштах кулам пекки турĕ те, секретаре куçран пăхса, хаваслă кăмăлпа:

—Сире эпĕ мĕншĕн каялла яла таврăнни кăсăклантарать пулас.Пытармастăп, тĕрĕссине калатăп: мана сирĕн сăмахăрсем мар, пач урăх сăлтав каялла илсе килчĕ. Анне йывăр чирлесе ӳкрĕ, атте те сывах мар. Çавăнпа çарти туссенчен уйрăлма тиврĕ. Халь тин ялтан хулана каяс шухăшăм пĕтрĕ темелле.

—Эппин, яланлăхах тетĕн.

—Çапла.

—Енчен те аннӳн чирĕ иртсе кайсан, вăл сывалсан?

—Пурпĕрех.

Александр Сергеевич самантлăха шухăша путрĕ, унтан тăруках темĕн аса илнĕ евĕр пулса, васкамасăр пуçне çĕклерĕ, анчах та сăмахне каласа ĕлкĕреймерĕ, умри телефон шăнкăравĕ ăна тытса чарчĕ. Секретарь такампа калаçнă хушăра, Коля пӳлĕмри сĕтел-пукана, стена çине çакнă тĕрлĕ япаласене сăнарĕ. Уншăн алăка хирĕçле стена çинчи Ленин портречĕпе тĕрлĕ ӳкерчĕксем, урайĕнчи кавир, пӳлĕмри вăрăм сĕтел — çаксем пурте çĕннĕлле курăнмарĕç-ха, халĕ вĕсене кашни пуçлăх пӳлĕмĕнче асăрхама пулать. Кольăна урăххи, курăн йывăççи пек, пăрăхсенчен илемлĕн сăрласа тунă чечек лартмаллисемпе ун çинчи кĕрен çеçкесем илĕртрĕç, вĕсем нумай пулнăран хăйне вăл кунта юмахри тĕнчене лекнĕнех туйрĕ.

Александр Сергеевич трубкине хучĕ. Каллех Кольăпа сăмах пуçарса:

—Крепков ячĕпе хисепленекен колхоз виçĕ çул хушши ĕнтĕ районта чи кайрисен шутĕнче. Çураки е хиртен тыр-пул пуçтарса кĕртмелли вăхăт-и, хуçалăхра ĕçлекен çав тери сахал, çамрăксем вара çукпа пĕрех, кашни çул ытти колхозсенчен çынсене чĕнсе илсе,вĕсене пулăшма яратпăр. Ăçта-ши Катек уй-хирĕн çамрăк паттăрĕсем? Пĕлетĕп, ку ыйтăва хуравлама сана иртерех-ха, унти лару-тăрăва эсĕ халлĕхе пĕлместĕн-ха. Ман шухăшпа, ялти çамрăксем

ытларах уй-хире, tăван яла юратчăр тесен, паян пирĕн, комсомолăн, ырми-канми ĕçлемелле. Тĕрĕс калатăп-и?

Коля калаçу хăш енне сулăннине тăруках ăнланаймарĕ: «Мĕнле-ха капла, эсĕ ырми-канми ĕçле, ыттисем пăхса тăччăр, ку çамрăксене йăлăхтармĕ тетĕр-и? Ирĕксĕрех вĕсем аллисене сулса ялтан тухса тарĕç.»

Секретарь, шурă тикĕс шăлĕсене кăтартса, чеен кулса илчĕ, каччă иккĕленсе шухăша кайса ларнине сисрĕ пулас, малалла пуплерĕ:

—Пирĕн çамрăксене ытларах хавхалантарма тăрăшмалла. Кăçал эпир, колхоз председателĕсем сĕннипе, кашни хуçалăхрах çĕнĕ штат хушма, комсомол секретарĕн должноçĕсене йĕркелеме йышăнтăмăр. Ĕç укçине колхозсем хăйсен шутĕнчен тӳлеççĕ. Çапла туни, чăнах та, тĕрĕс пулĕ тетпĕр. Халиччен пирĕн вĕсене ферма ĕçченĕсен е механизаторсен йышĕнчен суйлатчĕç.Уйрăм штатсем çукчĕ. Лешсем вара, тĕп ĕçĕнче вăхăта ытларах иртternине пула, пур çĕре те ĕлкĕрейместчĕç,ырăн йышăнни çеçчĕ темелле,— вăл кăштах чарăнса чĕнмесĕр ларчĕ. Унтан тăруках Кольăна тĕлĕнтерес тенĕн,—Крепков ячĕпе хисепленекен колхозри комсомол секретарĕ пулма сан кандидатуруна сĕнчĕç. Çак шухăша паян ирхине мана телефонпа шăнкăравласа пĕлтерчĕç. Çавăнпа та санăн паян учета тăрса, ыран каçхине комсомол пухăвне пырасах пулать,—сăмахне вĕçлерĕ Александр Сергеевич.

—Ыранах-и? — тĕлĕнчĕ Коля.—Чекушкин юлташ, ун пек шанăçа тивĕçлĕ мар-ха эпĕ. Секретарь — комсомолецсен пуçлăхĕ. Çавăнпа та çамрăксен пурнăçĕ вăл ĕçе мĕнле йĕркеленинчен килет. Тен, юлса пыракан колхозра опытлă çынна суйлани тĕрĕсрех?

—Степанов,—кăштах сассине хăпартрĕ Чекушкин.—Мана эсĕ хирĕçлессине малтанах пĕлтерчĕç. Тусусем сана шанаççĕ пулсан, мĕншĕн-ха тăрăшмалла мар? Эсĕ —ĕнерхи салтак, эппин приказа яланах хирĕçлемесĕр, вăхăтра тата пысăк ăсталăхпа пурнăçламалла, вăй-хала шеллемелле мар. Кирек ăçта та ху салтак пулнине ан ман,-терĕ те калаçу вĕçленнине систерсе ура çине тăчĕ.

Каччă хăйне пусĕнчен йывăр япалапа çапнăнах туйрĕ.

—Ан хумхан, тăванăм. Йывăрлăхра пĕр-пĕрне яланах пулăшăпăр. Пытарма кирлĕ мар, чăн та, санăн ытти секретарьсенчен ытларах ĕçлеме тивĕ,—Коля хулпуççи çине аллине хурса сассине каллех çемçетрĕ райком секретарĕ.

Вĕсем урама пĕрле тухрĕç.

—Ăсталла çул тытатпăр?—хĕвел çутине пула кăштах куçне хĕссе ыйтрĕ Чекушкин.

—Анне патне больницăна кĕрсе тухасшăн.

—Эппин, 50 метр пулин те çулсем каллех пĕрле. Степанов юлташ, ваттисем калашле, пире пĕрле ĕçлеме шăпа çырнă пуль. Сисетĕн-и?-хулпуççинчен тĕкрĕ ăна вăл савăнăçлăн.

Коля хирĕç нимех те хуравлаймарĕ: «Пĕлместĕп»,—теейрĕ çеç. Александр Сергеевич каччăн тĕксĕмленнĕ сăнне асăрхаса тăпах чарăнчĕ:

—Тусăм, ан пăшăрхан, курсах тăр, пурте йĕркеллех пулĕ. Паянхи медицина ĕлĕкхи мар, вилме выртнă çынна та ура çине тăратать.

—Тухтăрсене шанатăп-ха, анчах та хама пăхса ӳстернĕ çын умĕнче айăпа кĕнине сисетĕп. Вăл тепĕр хут чирлесе кайнишĕн пĕтĕмпех эпĕ айăплă. Анне сывалнăпа пĕрехчĕ вĕт-ха, кил-çуртри ĕçе те хутшăнакан пулнăччĕ. Пĕртен-пĕр ывăлĕ килтен тухса кайнине чăтаймарĕ курăнать, тепĕр хут аптраса ӳкрĕ.

—Эсĕ пур айăпа та ху çине кăна ан ил-ха,—пӳлчĕ ăна Чекушкин.—Час-часах эпир, чирлĕскерсем, врачсем çырса панă кун йĕркине хамăр пăсатпăр, кăшт çеç сăмăл туйăнсанах, вырăн çинчен сиксе тăрса, ĕçе пуçăнатпăр, ӳт-пӳ тĕрекленнине пăхмасăрах, иртнĕ вăхăта хăваласа çитме тăрăшатпăр.

Калаçу каллех татăлчĕ. Çул юппине çитсен те вĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлма васкамарĕç-ха. Коля хăйĕн чунĕнче темĕн çитмен, чи кирлĕ сăмахсене каласа пĕтермен пек туйрĕ. Александр Сергеевич вара, каччă çине пăхса, Анна Егоровнăна, районти ăста агронома аса илчĕ, унăн сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлме меллĕ самант

çитессе кĕтрĕ. Нивушлĕ вăл уй-хирпе уйрăлчĕ-ши? Çук, секретарĕн ун çинчен шутлас та килмерĕ:

—Эпĕ санăн аннӳне чылайранпа пĕлетĕп. Хăйĕн ĕçне вăл чăн-чăн агроном пек чунтан юратса пурнăçлать. Врачсем унăн сывлăхĕшĕн çине тăрсах кĕрешĕç, ура çине тăратаççех ăна. Манăн çакна шанас килет.

Çапла пĕр-пĕринпе ăшшăн калаçса тăнă хыççăн вĕсем часах алă парса уйрăлчĕç.

Коля, больницăна çитсен, амăшĕ патне палатăна васкарĕ. Вăл вырăн çинче выртатчĕ. Сăн-питне шурă простынь тĕсĕ çапнăскер, Анна Егоровна ывăлĕ килнине те туймарĕ. Шăппăн, палатăри çынсене кансĕрлесрен шикленсе, чĕрне

вĕççĕн пусса унăн кравачĕ тĕлне çитсен, Коля чарăнчĕ: «Çывăрать пулас»,—çак шухăшсемпе вăл çывăхри пукана асăрхануллăн шутарса, амăшĕн пуçĕ çумнерех пырса ларчĕ. Куçĕсене çаплах-ха ун çинчен илмерĕ, пуçра шухăш хыççăн шухăш вĕльтлетрĕ: «Нивушлĕ врачсем чир сăлтавне пĕлеймерĕç? Тен, чухлаççĕ, анчах та пире пĕлтермеççĕ. Кĕçех сывалать тени вăхăтлăха кăна йăпатни мар-ши? Чăнлăха мĕншĕн тăванĕсенчен пытармалла-ха? Пурпĕрех ăна паян е ыран пĕлĕпĕр. Эпир вара, çывăххисем, ăна нимпе те пулăшма пултарайманнишĕн, вăхăтĕнче ачаш сăмах тупайманнишĕн чĕрене чылай вăхăт хушши ыраттарса пурăнăпăр.»

Анна Егоровна вăйсăррăн куçне уçрĕ, çывăрман иккен. Хăйĕн умĕнче ывăлĕ ларнине курсан, путса кĕнĕ кăвак куçĕсем савăнăçлăн çиççе илчĕç, пичĕ çуталнă пек пулчĕ. Вăл пĕчĕк черченкĕ куштăрканă аллисемпе хăй çумне ӳпĕннĕ Кольăна пуçĕнчен ачашларĕ:

—Ывăлăм, эсĕ паçăрах килнĕ-и? Мĕншĕн сас памасăрах ларатăн?

Унăн сасси таçта аякран вăйсăррăн илтĕннĕнех туйăнчĕ.

—Эсĕ çывăратăн пулĕ тесеччĕ,—май килнĕ таран ачашшăн сăмахлама тăрăшрĕ ывăлĕ.—Сана халь, аннеçĕм, канлĕх кирлĕ, çавăнпа чăрмантарас мар терĕм.

—Кăштах тĕлĕрсе илтĕм пулас: тин çеç куç умĕнче аçупа иксĕрччĕ, унтан кил-çурт, уй-хир аса килчĕ. Халĕ шăпах çĕр улмине сӳрелеме вăхăт çитрĕ, тепĕр темиçе кунтан кая юлăпăр. Председательпе курса калаçмаллаччĕ, темшĕн вăл та килеймерĕ.

Ĕç çине куçнă калаçу Коля чĕринче темле çĕкленӳллĕ туйăм, шанчăк çуратрĕ. Вăл савăнчĕ. Амăшĕ ĕçшĕн çуннине пĕрремĕш хут курчĕ тейĕн. Чирлĕ пулин те ăна уй-хир хăй патнех чĕнсе тăрать иккен. Эппин часах сывалса, каллех пур вăй-халне парса ĕçлессе шанать, ĕненет вăл. «Ĕмĕтӳ,шанчăку пур пулсан, сывалатăнах эсĕ, аннеçĕм,»—хĕпĕртесе, темле тулти вăя шанса шухăшларĕ ывăлĕ. Уйрăлас умĕн Анна Егоровна хăйне çывăх кунсенче Шупашкар больницине илсе каясси пирки пĕлтерчĕ.

—Эпир аттепе час-часах пырса çӳрĕпĕр, аннеçĕм, эсĕ ан тунсăхла,—сăмахларĕ ывăлĕ çак хыпара пĕлсен.—Колхозра та, кил-çуртра та пурте йĕркеллĕ пулĕ. Пирĕншĕн эсĕ ан пăшăрхан,—шăппăн пăшăлтатса, амăшне çамкинчен чуптуса уйрăлчĕ Коля.

Амӑшӗ шывланнӑ куҫӗсемпе алӑк хупӑниччченех ывӑлӗ кайнине пӑхса юлчӗ.

Коля Патӑръелӗнчен таврӑннӑ чух Сергей Иванович килтехчӗ. Паян вӑл уроксем пӗтсен, яланхи пек ,шкулта тытӑнса тӑман иккен. Арӑмӗ патне больницӑна кайса килмелле-ҫке-ха, халӗ ав, хыпаланса уяври тумне тӑхӑнать. Ывӑлӗ ҫакна тӳрех сисрӗ, хӑй те тин ҫеҫ унта пулнине пӗлтерчӗ. Тӗрӗссипе, унӑн ашшӗпе ларса калаҫас, хӑйӗн пулас ӗҫӗ пирки канашлас кӑмӑлӗ те пурччӗ, анчах та лешӗ васканине кура шарламарӗ. «Каҫхине, анне патӗнчен таврӑнсан»,—шухӑшларӗ вӑл.

Сергей Иванович каяс умӗн темиҫе тӗрлӗ ӗҫ хушса хӑварчӗ: чӑх-чӗпсене апат памалла, кӗтӳ ансан, ӗнене шӑвармалла, сумалла. Коля унпа килӗшсе пуҫне сулчӗ: «Пурне те эсӗ каланӑ пек тӑватӑп»,—терӗ.

Каҫхине ашшӗ ҫӗнӗ хыпарпа таврӑнчӗ: амӑшне Шупашкара ыранах, ирхине ирех леҫеҫҫӗ иккен.

Тепӗр кунне тул ҫутӑлсанах Коля Патӑръелне каясшӑнччӗ: тен, амӑшне хулана ӑсатиччен ывӑлне мӗн те пулсан каласа хӑвармалли пур? Анчах та урӑхла килсе тухрӗ: витререн тӑкнӑ пек ҫумӑр ҫурӗ, ҫула тухма тытса чарчӗ. Кӑнтӑрла ҫитеспе тин вӑл килтен тухрӗ, хӑвӑртрах амӑшӗ патне хӑвӑртрах васкарӗ, тен, ҫумӑра пула тытӑнса тӑнӑ? Больницӑна ҫитсенех ӑна васкавлӑ пулӑшу машинипе, аслатиллӗ ҫумӑра пӑхмасӑрах, ирхине ирех Шупашкара илсе кайнине пӗлтерчӗҫ.

Кольӑна пылчӑклӑ ҫулпа утма ҫӑмӑлах пулмарӗ. Паҫӑр вӑл ҫакна туйман та. Тӳперен каллех хӗртсе хӗвел пӑхрӗ. Ҫумӑр хыҫҫӑн таврара вӗҫен-кайӑк каҫса кайсах юрларӗ, ҫерем ҫинчи шыв кӳлленчӗкӗсем хӗвел ҫинче кӗмӗл пекех йӑлтӑртатрӗҫ, куҫа йӑмӑхтарчӗҫ.

Каҫхине колхоз ҫамрӑкӗсем ял клубне пуҫтаранчӗҫ. Паллах, унта райком секретарӗ Александр Сергеевич Чекушкин та пулать. Мӗнле сӗнӳ парӗ-ши вӑл уй-хир хуҫисене? Кольӑна секретаре суйласан, мӗнрен пуҫлӗччӗ-ши хӑйӗн ӗҫне, хисеплӗ-ши ӑна ял халӑхӗ? Тен, вӑйпитти каччӑшӑн ку ӗҫ майлах та мар? Тӗрӗссипе, ӑна секретарь пуканӗ питех илӗртмерӗ. Вӑл ҫӗршыва усӑ кӳрессишӗн урӑх вырӑнта ырми-канми ӗҫлеме ӗмӗтленнӗччӗ-ҫке-ха! Ҫакна пӗлсен ҫарти юлташӗсем епле хак парӗҫ-ши?

Крепков ячӗпе хисепленекен колхоз виҫӗ яла пӗрлештерсе тӑрать: Кивӗ Катек, Татмӑш, Ҫӗнӗ Ахпӳрт.

Кивӗ Катек вара шӑпах вӗсен хушшинче вырнаҫнӑ, ҫавӑнпа та пухӑва кунта ирттерме йышӑнчӗҫ.

Сашӑпа Коля клуба пӗрле килсе ҫитрӗҫ. Халӑх пуҫтарӑнма ӗлкӗрейменччӗ-ха. Унпа усӑ курса, вӗсем сцена ҫине трибунӑпа вӑрӑм сӗтел вырнаҫтарса лартрӗҫ, ҫиелтен хӗрлӗ пуставпа витрӗҫ. Акӑ клуб заведующийӗнче ӗҫлекен Семенов Петьӑпа пӗрле ял хӗрупраҫӗсем шавлӑн кӗпӗрленсе кӗчӗҫ, ушкӑнпа пукансене сцена ҫывӑхнерех куҫарчӗҫ. Кил-ҫуртра тирпейлӗхпе илем кӗртме хӑнӑхнӑ хӗрсем кунта та ҫавнах курасшӑн пулчӗҫ, вӗсем стенасем ҫине, выставкӑри евӗр, алӑпа тӗрленӗ тӗрлӗ тӗрӗсем ҫакрӗҫ, сӗтел ҫине кӗленче савӑтпа ырӑ шӑршӑ саракан хитре чечексем лартса хучӗҫ. Темиҫе минут каялла ҫеҫ тӗксӗммӗн курӑнакан клуб стенисене ӗҫчен чӑваш хӗрӗсен тӗррисем тӗс кӳрсе илемлетрӗҫ, чуна ҫӗклену хушса, хаваслӑх кӳртрӗҫ.

Часах Александр Сергеевичпа кӳршӗ ял ҫамрӑкӗсем те килсе ҫитрӗҫ. Райком секретарӗ, катексен тӑрӑшуллӑхне курса, пӗр-икӗ хутчен алӑ ҫупрӗ:

—Маттурсем, пултаратӑр. Чӑнласах та, илемлӗ, юмахри чӑваш кил-ҫурчӗ, тейӗн.

Тепӗр темиҫе минутран пуху пуҫланчӗ. Мӗн пурӗ 25 ҫын, иккӗшӗ килеймен, вӗсенчен ытларахӑшӗ хӗрупраҫсем, каччӑсем улт-ҫичӗ ачаран та ытла мар пулӗ. Вӗсенчен чылайӑшне Коля паллаймарӗ, ытла та хӑвӑрт ҫитӗнеҫҫӗ ҫав хальхи ҫамрӑксем.

Президиум суйланӑ хыҫҫӑн, райком секретарӗ Чекушкин пухӑва уҫрӗ. Иртнӗ ҫулхи комсомол секретарӗ хальхи вӑхӑтра колхозра пулман пирки, отчетлӑ сӑмахпа унӑн заместителӗ, Татмӑш хӗрӗ тухса калаҫрӗ. Чӑнах та, нумай сӑмахламарӗ, мӗн калатӑр ӗнтӗ вӑл, енчен те колхозра комсомолецсем нимӗнпе те палӑрса тӑмаҫҫӗ пулсан. Кольӑна тухса калаҫакансенчен уйрӑмах Саша Кошкин сӑмахӗсем кӑмӑла кайрӗҫ, васкамасӑр, пурне те шухӑша ямалла каларӗ вӑл. Пӗрремӗш комсомолецсене, вӗсен ӗҫӗсене аса илчӗ. Паянхи ҫамрӑксен тӑрӑшулӑхӗ ҫинчен те манмарӗ, тӗслӗхсем илсе кӑтартрӗ. Сӑмахне вӗҫлес умӗн аллисене трибуна ҫине хучӗ те куҫӗсемпе кашнин шухӑш-кӑмӑлне пӗлесшӗн пулнӑ евӗр, пӑхса ҫаврӑнчӗ: « Мӗншӗн-ха пирӗн колхоз районта юлса пырать? Нивушлӗ пирӗн ҫамрӑксем ытти ял ҫамрӑкӗсенчен кая? Атьӑр, туссем, хамӑр комсомолецсем иккенне, пирӗншӗн нимӗнле йывӑрлӑх та хӑрушӑ маррине тӑван ялти, районти, республикӑри ӗҫ-халӑхне кӑтартар. Кайран

пурнӑҫланӑ ҫитӗнӳсемшӗн ушкӑнпа пуҫтарӑнса савӑнар»,— вӗҫлерӗ вӑл сӑмахне.

Пуху ҫӗнӗ комитет членӗсене суйларӗ. Паллах, вӗсен хушшинче Коля Степанов, Александр Кошкин, хӗрсенчен Маша Сынкова тата иккӗн, кӳршӗ ял дояркисем пулчӗҫ. Коля вӗсене палламасть. Райком секретарӗ комитет членӗсене пуху хыҫҫӑн юлма сӗнчӗ, ыттисем кӗпӗрленсе урама тухрӗҫ, клуб кӗске вӑхӑт хушшинчех пушанса юлнӑнах туйӑнчӗ.

Александр Сергеевич умри протокол хучӗсене пуҫтарса сӗтел хушшинчен тухрӗ.

—Юлташсем, Крепков ячӗпе хисепленекен колхозри комсомолецсен отчетпа-суйлав пухӑвӗ вӗҫленчӗ. Эсир кунта ларакансем пурте — колхозри комсомол комитечӗн членӗсем. Умра вара кашнинех пысӑк задача. Сирӗн ҫине пур ҫамрӑк пӑхать, тӗслӗх илме тӑрӑшать. Анчах пур ӗҫе те пуҫарса йӗркелесе пыма ертӳҫӗ, урӑхла каласан, секретарь суйламалла. Ҫавӑнпа та ырана хӑвармасӑр паянах комитет ларӑвне ирттерни тӗрӗс тесе шутлатӑп. Кун йӗркинче пӗр ыйту — комсомол секретарьне суйласси. Камӑн мӗнле сӗнӳ пур?

Бюрори комсомолецсем пурте пӗр сасӑлӑн Коля Степанова суйларӗҫ. Лару ҫакӑнпа хӑй ӗҫне вӗҫлерӗ. Александр Сергеевич Чекушкин кашнинех алӑ парса саламларӗ, колхоз аталанӑвӗнче, комсомол ӗҫӗнче пысӑк вӑй-хал хурса ӗҫлеме сӗнчӗ.

—Пирӗн тӑрӑшуллӑх хамӑр юратнӑ ҫӗршыв тӗреклӗхӗшӗн, ӑна ытларах усӑ кӳрессишӗн пултӑр,—терӗ.

Ҫамрӑксем унӑн сӑмахӗпе килӗшсе алӑ ҫупрӗҫ. Вӗсем килӗсене саланма та тӑнӑччӗ ӗнтӗ. Ҫак вӑхӑтра клуба колхоз председателӗ Николай Филиппович Черновпа парторганизаци секретарӗ Георгий Михайлович Галкин килсе ҫитрӗҫ.

—Кая юлтӑмӑр пулас, каҫарӑр. Шупашкарта нумай тытӑнса тӑма тиврӗ,—сывлӑх суннӑ май, палӑртнӑ вӑхӑтра ҫитейменнин сӑлтавне пӗлтерчӗ председатель.—О-о, кунта районти пуҫлӑхсем те пур иккен,—терӗ вӑл Александр Сергеевича алӑ парса.

—Шӑп та лӑп вӑхӑтра килтӗр. Эпир тин ҫеҫ хамӑр ӗҫе вӗҫлерӗмӗр. Паллашӑр, сире пулӑшакансем,—хурчӑкаран хӑраса пӗр ҫӗре пуҫтарӑннӑ чӗпсем пек тӑракан ҫамрӑксен ушкӑнӗ ҫине кӑтартрӗ Чекушкин. —Малашне ҫамрӑксен ӗҫӗ —хӗлӗ пирки тӳрех ҫаксенчен ыйтӑр.

Николай Филипповичпа Георгий Михайлович кашнинех сывлăх суннă май:

—Саламлатпăр сире. Кун пек йышпа, чăнах та, пĕр шиксĕр малалла утма пулать. Мĕн чĕнместĕр, туссем? Паянтан пуçласа çĕнĕлле пурăнма тытăнар. Колхоз парторганизацийĕ яланах сирĕнпе пулĕ, йывăрлăхра сĕнӳ парĕ, май килнĕ таран пулăшма тăрăшĕ...

Коля килне çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăнчĕ. Чăнах та, хуçалăхра çамрăксем сахал мар. Георгий Михайлович калашле, вĕсемпе пĕр шиксĕр малалла утма пулатех. Паллах, пур ĕçе те пĕлсе йĕркеленинчен нумай килет. Пуçлăхсем çĕнĕлле пурăнас пирки сăмах хускатрĕç. Эппин, комсомолецсене шанаççĕ, вĕсен ертӳçи ĕçе пĕлсе йĕркелессе кĕтеççĕ. Анчах та мĕнрен пуçламалла-ши ял пурнăçĕ улшăнтăр, çамрăксене уй-хир, колхоз ĕçĕ ытларах килĕштĕр тесен? Çĕнĕ секретарь диван çине ларса, пирус тивертрĕ, унăн тĕтĕмне çăтса каялла вĕрсе кăларнă май шухăша путрĕ. Анă çаплах-ха «мĕнрен» тенĕ сăмах канăç памарĕ, сĕтел хушшине каçхи апата ларсан та, ашшĕне те çак ыйтăвах пачĕ.

Сергей Иванович ывăлĕ çине тĕлĕнерех пăхрĕ. Те тăруках калаçу мĕн пирки пулнине ăнланаймасăр, те çак ыйтăва пач кĕтменрен пĕр вăхăт хушши чĕнмерĕ, унтан тин:

—Ывăлăм,—терĕ вăл лăпкă сасăпа,—яшсемпе хĕрсем колхозра юлччăр, тăван уй-хире, ял пурнăçне чăнласах юратчăр тесен, вĕсене ытларах ĕçе явăçтармалла, мĕнпе те пулин кăсăклантармалла. Паллах, пĕччен-иккĕн нимĕн те тăваймăн, çавăнпа та хăвăн тавра ял çамрăкĕсене пуçтарма тăрăш. Ман шухăшпа, кăçал шкул пĕтерекенсене те колхоз ĕçне хутăштарни тĕрĕсрех пулĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ паянхи куна çитсе те хăйсен пурнăç çулне палăртма ĕлкĕреймен-ха. Шел, каярах юлтăн, ирхине пирĕн шкулта юлашки шăнкăрав янăрарĕ. Ку нимех те мар, тăрăшсан, вĕсемпе эсĕ кашни кунах тĕл пулма пултаратăн.

Кольăна ку сăмахсем шухăша ячĕç. Чăнахах та, ашшĕ тĕрĕс калать, мĕн чухлĕ çамрăк, тăруках пурнăç çулне тупайманран, халăх хушшинче чылай вăхăт хушши пăтрашăнса пурăнать. Вĕсем çын сăмахĕ хыççăн кайса, кирек мĕнле техникумра е институтра вĕренме хатĕр, пулас специальноçĕ килĕшет-и, килĕшмест-и — диплом çеç алăра пултăр. Каярахпа чавса çывăх та, анчах ăна çыртаймăн, тенĕ пек пулса тухать. Тен, вĕсен хушшинче тăван уй-хире чунтан юратма хатĕррисем те пур. Çапах та эпир вĕсене

курмастпăр, уй-хир ĕçне те явăçтармастпăр. Çакăн пек кăлтăксемшĕн чăн иалтан комсомол секретарĕпе колхоза ертсе пыракан пуçлăхсем айăплă.

—Ывăлăм, эсех-и ку? Паян сана паллама та çук, пач урăх çын. Мĕн пулчĕ? Мĕншĕн халиччен интереслентермен ял çамрăкĕсен пурнăçĕ кăсăклантарать сана паян? Аннӳпе курса калаçнă хыççăн шухăш-кăмăлу улшăнчĕ-им? Тен, вăл сĕннипе агроном пуласшăн? Апла чăннипе кала, аçунтан ан пытар,—ывăлĕн шухăшне пĕлесшĕн пулчĕ ашшĕ.

—Çук, атте,—лăпкăн хирĕçлерĕ вăл,—ку ыйту мана тахçантанпах канăç памастчĕ. Агроном пулас пирки шутламан-ха. Тен, кам пĕлет, пурăна киле ку профессипе ĕçлес тесен, вĕренме те тивĕ. Ун чух анне çав тери савăннă пулĕччĕ. Ахальтен мар вăл мана мĕн пĕчĕкрен хăйпе пĕрле хире чĕнетчĕ. Тĕрлĕ ӳсен-тăран е тыр-пул ани умĕнче чарăнса, чылайччен пĕр-пĕрне сăмах хушмасăр, вĕсем епле лăпкă çилпе хумханнине сăнаттăмăр. Ун пек чух, чунтан хĕпĕртетчĕ, мана куçран пăхса, кăштах çилпе куштăрканă аллипе пуçран ачашлатчĕ, час-часах, ӳссе çитĕнсен, кам пулатăн тесе ыйтатчĕ. Эпĕ, айванскер, инженер пулатăп, теттĕм. Вăл тӳрех куçĕсене таçта хир пусси çине тартатчĕ, малалла утса кайса, ăшă çилпе выляса хумханакан пучахсене асăрхануллăн сĕртĕнетчĕ. Кӳреннĕ сасăпа: «Санран эпĕ чăн-чăн уй хуçи пуласса кĕтсе илеймĕп, чуну чухăн-тетчĕ.—Эсĕ тавралăх илемне, аннӳ курнă пек, нихăçан та кураймăн. Саншăн тӳпере юрлакан тăри те, анлă уй-хир те, пурте йăпану çеç. Юрĕ ĕнтĕ, тен, хăçан та пулин эпĕ мĕн каласшăн пулнине ăнланăн»,-хăйне хăй йăпатам пекки тăватчĕ вара ун пек чух. Эпĕ чĕнместĕмччĕ, нимĕн пулман пек, малалла чупаттăм. Анне тĕрĕс каланă. Чăнах та, уй-хирпе ял илемне нихăçан та ун пек кураймăп та, хаклаймăп та. Хăш чухне хулана каяс пирки калаçу хускатсан, вăл час-часах мана пӳлетчĕ те хăйĕн çумне лартса, ачашшăн: «Ывăлăм, ялти пек илем урăх ниçта та тĕл пулаймăн. Театр, кино тетĕн, ан тив, вĕсем илемлĕ пулччăр, шурă экран е сцена çинче кăтартни вăл — пач урăх сăн. Çутçанталăкăн илĕртӳллĕ ӳкерчĕкĕсене çав тери илемлĕн кăтартма темле тăрăшсан та, пурпĕрех пурне те тĕплĕн сăнарлаймастăн. Хула, хула, тетĕн. Мĕн вăл хула? Таса мар сывлăш тата тӳпене кармашнă çӳллĕ çуртсем. Мĕн туртать сана унта?»

Халĕ шутлатăп та анне сăмахĕсем тĕрĕс иккенне туятăп. Тен, эпĕ паян та вăл мĕн калас тенине ăнланса çитейместĕп? Çапах та яла юлса хам йăнăшманнине сисетĕп.

Сергей Иванович кăштах шăртланнă шĕвĕртерех янахне сăтăркаларĕ, ывăлĕн шухăш-кăмăлĕшĕн чунĕнче савăнчĕ пулин те, тăруках нимĕн те татса каламарĕ.

—Коля, пăхатăп та сан çине, темшĕн хамăн çамрăклăха аса илетĕп. Йĕкĕт пулнă чух эпĕ те çапларахчĕ, яланах хам мĕн шутланине пурнăçлама тăрăшаттăм. Юлташсемпе те, туссемпе те канашлаттăм, паллах, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илнĕ, унсăрăн епле-ха? Хăшĕсем ырлатчĕç пулин те, манăн пурĕпĕр хамăн шухăша тепĕр хут сӳтсе явас килетчĕ. Вунă класс пĕтернĕ хыççăн эпĕ ют чĕлхене вĕрентекен Мускаври института кайса кĕнĕччĕ. Анчах та иккĕмĕш курс пĕтерейменрĕм, вăрçă пуçланчĕ. Паллах, халь чĕрĕк ĕмĕр ытла иртнĕ хыççăн пулни-иртнине аса илме çăмăл. Иртнĕ хĕрӳ самантсенчен чылайăшĕ, тĕтрелĕхре пек, манăçа тăрса юлнă. Çапла калани тĕрĕсех мар-ха, çав вăхăтсем асăмрах-ха. Çапах та питĕ шел, аслă ăрури çынсен ĕçне хакламаннине те, çăмăллăн шутланине те пурнăçра тĕл пулатăн. Тен, тарăннăн шухăшласан, чуна тепĕр хут хускатма кирлех те мар, вăрçă вăрçах, кашниййĕ унта пĕр тăвансем пек, татăк çăкăра та ушкăнпа пайланă, тĕрлĕ наци çыннисемччĕ, пурте пĕр-пĕрне ăнланнă, пулăшнă. Вырăс халăхĕн ывăл-хĕрĕсем пирки ыррине кăна калама пулать. Вĕсем тăван çĕршывшăн кашни минутра чунне пама хатĕрччĕ. Вăрçă хирĕнчен вăхăтлăха тăван землянкăна сывă, тĕрĕс-тĕкел пуçтарăнсан, кашнинчех хĕпĕртесе ыталанас, пĕр-пĕрне ăшă сăмах калас килетчĕ. Ывăннине манса, хуткупăсăн шухăша ямалла сассине итлетĕн. Çуралса ӳснĕ кĕтес, атте-анне аса килет. Паллă ĕнтĕ, вĕсем санран кашни кунах васкавлăн çырнă «сывах» сăмаха чăтăмлăн кĕтеççĕ, пăшăрханаççĕ. Ирĕксĕрех хăвăнпа çыру çитиччен мĕн пулассине пĕлместĕн пулин те, умма шурă хут листи илсе, вĕсене лăплатас ĕмĕтпе ларатăн. Йĕри-тавра хутла пĕлмен ырă чĕреллĕ çĕр ĕçченĕсем пуçтарăнаççĕ. Сисеттĕм: кашниййĕн тăван çемйине хăйсем çинчен çав сăмаха çырса пĕлтерес килетчĕ, анчах та салтаксем çырма пĕлменнишĕн вăтанса, куçĕсене айккинелле тартаççĕ. Тен, саншăн эпĕ каласа пани кулăшла пек туйăнать. Çапах та ăнлансамччĕ: сывă та тĕреклĕ çынсемшĕн ют çынна каласа çыртарма çăмăл пулман. Вĕсем чунĕпе епле асапланнине курса, мĕнле кăна шухăш пырса кĕместчĕ-ши пуçа! Шăпах вăрçăн хаяр çулĕсенче хамăн умма тĕллев лартрăм та: енчен те вăрçăран ырă-сывă таврăнас пулсан, хамăн пулас пурнăçа çамрăк ăрăва пĕлӳ парассипе çыхăнтаратăп, вĕсене вулама, çырма, шутлама, Тăван

çĕршыва чунтан-вартан юратма вĕрентетĕп. Çакă чăн-чăн телей мар-и вара?..

Сергей Иванович сĕтел хушшинчен тухса васкамасăр пӳлĕм тăрăх уткаларĕ.

—Пĕлетĕн-и,—калаçу çиппи часах татăласса сиссе сăмахларĕ Коля, çавăнпа та ашшĕне çĕнĕ хыпар пĕлтерме шутларĕ,—мана паян комсомол секретарьне суйларĕç, ялти çамрăксемпе пур вăй-хала хурса ĕçлеме сĕнчĕç. Райком секретарĕпе пуçлăхсем те колхозра çĕнĕ пурнăç пуçланасса, иртнĕ çулсенчи пек, тыр-пула тăккаламасăр, кӳршĕсем пулăшнипе мар, хамăр вăйпа пуçтарса кĕртессе шанчĕç. Анчах та виçĕ ялĕпе те 27 комсомолец çеç шутланса тăрать, вĕсенчен 7 механизатор, 13 ферма ĕçченĕ, икĕ бухгалтерпа счетовод, çак йышран çуррине яхăн — çемьеллĕскерсем,— ашшĕне ăнлантарма тăрăшрĕ Коля.

Сергей Иванович тăруках чарăнса тăчĕ, ывăлĕ комсомолецсен секретарĕ пулнишĕн савăнчĕ, анчах ăна палăртма васкамарĕ. Вăл ун еннелле çаврăнса:

—Эсĕ мĕн, пĕр ĕçлемесĕрех çăкăр пулать тетĕн-им? Пĕлетĕн-и, колхозсене йĕркеленĕ вăхăтра пирĕн ялта мĕнпурĕ те виçĕ комсомолец çеç пулнă. Тен, вĕсене паянхинчен пин хут йывăртарах чăтма лекнĕ, анчах та вĕсем пуçа усса ларман, хăçан та пулин тĕрĕслĕхе ăнланса, хресченсем хăйсен хыççăн каясса ĕненнĕ. Тăрăшмалла, ывăлăм.

—Чăнахах та, çанна тавăрса ĕçлеме тивнине пĕлетĕп-ха эпĕ. Анчах мĕнрен пуçламалла-ши?

—Вăт ку урăх ыйту. Ун пирки кайран калаçăпăр, паянлăха çитĕ.

Пӳлĕме уçă чӳречерен хуткупăс сасси кĕчĕ, çамрăксем урама тухрĕç курăнать.

—Секретарь, тусусенчен уйрăлма аван мар, кĕтеççĕ пулĕ,—чеен кулчĕ ашшĕ.

Сĕтел çинчи савăт-сапасене пуçтарса хунă хыççăн, Коля пĕр тăхтаса тăмасăрах, пиншакне илсе, яланхи пекех, сасă илтĕннĕ еннелле васкарĕ. Унăн хăвăртрах çамрăксемпе тĕл пулас, вĕсене хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерес, комсомолецсен ĕçне мĕнрен пуçлас пирки ушкăнпа сӳтсе явас килчĕ.

Сергей Ивановича ывăлĕ хыпаланни пĕрре те тĕлĕнтермерĕ, савăнтарчĕ çеç. Этемĕн пурнăçра мĕнле те пулсан ĕмĕт, тĕллев пулмалла. Çын маллалла ăнтăлсан çеç

яланах хăйĕн пĕлĕвне ӳстерĕ, ĕçре те ӳркенсе тăмĕ, вĕсене пурнăçлама тăрăшĕ.

Енчен те Коля вырăнĕнче пулсан, мĕн тунă пулĕччĕ-ши, мĕнрен пуçлĕччĕ-ши вăл хăйĕн ĕçне? Çакна, паллах, пĕр сăмахпа каласа, татса пама çук. Шухăша путнăскер, сисмесĕрех ывăлĕн ĕçĕ-хĕлĕпе, унăн хуйхи-суйхипе çума-çумăн пулса, çамрăксен пурнăçне пуçĕпех кĕрсе ӳкрĕ. Мĕн чухлĕ вăхăт хушши ларчĕ-ши, пĕлеймерĕ. Темле сасă ăна вăратрĕ тейĕн. Вăл ура çине тăчĕ. Пӳртре пĕччен ларма кичем. Сергей Иванович карттусне тăхăнса, кĕпе вĕççĕнех урама тухрĕ, хапха алăкне питĕрсе, пĕр вăхăт хушши вырăнтах тăчĕ, унтан васкамасăр тăвалла утрĕ. Каçĕ паян, чăнах та, тĕлĕнмелле илемлĕ, тулса çитнĕ уйăх ял çине хăйĕн çутине сапалать. Таса тӳпере, куç хĕснĕ евĕр, пин-пин çăлтăр çиçет, ватă çын чĕринче хавхалану çуратать. Ирхине çеç витререн янă евĕр çумăр çунăччĕ, халĕ ав хура çĕр хĕвел ăшшипе типме те ĕлкĕрнĕ, лăпкă ăшă çилпе çепĕççĕн пăшăлтатса ларакан йывăççенчен ырă шăршă çапрĕ.

Ял варринчи урамран çамрăксен сасси каçхи шăплăхра таçта çитиех илтĕнчĕ. Унта темĕн пирки хĕрсе кайсах тавлашаççĕ пулас.

—Çук, пирĕн аслисем каланине яланах итлемелле, вĕсен сăмахĕнче тĕрĕслĕх тупса, хамăр пурнăçра усă курма пĕлмелле.

Сергей Иванович ывăлĕн сассине самантрах уйăрса илчĕ: «Тĕрĕс, ывăлăм, аслисен сăмахĕнче тĕрĕслĕх тупма пĕлмелле»,—килĕшрĕ вăл унпа.

Тавлашăва чарăнса итленĕ май, вăл шухăша путрĕ, хăйĕн çамрăк чухнехи кунĕсене аса илме хăтланчĕ. Анчах пулнă-ши унăн яшлăхĕ? Çук, пулман та пуль. Савăнса пурăнмалли чух, вăрçă пуçланчĕ. Вунсакăр çулхи каччă, ытти пиншер çамрăксемпе пĕрле Çĕршыва тăшманран хӳтĕлеме çĕкленчĕ. Вĕри чĕрене нимĕнпе те тытса чараймăн, тейĕн. Тăшмана хăй йăвине хăваланă май, вăл татах çĕкленӳллĕ те хăватлăнрах тапрĕ. Анчах... Анчах, шел пулин те, сывлăха каялла тавăраймăн. Паянхи пек, çутçанталăк чĕрĕлнĕ чух, Дрезденшăн пынă çапăçура тăшман снарячĕ унăн кун-çулне яланлăхах татасшăнччĕ. Çирĕп чун-чĕреллĕ пулни çеç вилĕмрен хăтарчĕ пулас, анчах та суранĕ пĕр йĕрсĕрех иртмерĕ, халĕ те унăн ӳпкине юлнă тимĕр татăкĕ хăй çинчен астутарсах тăчĕ.

Сергей Иванович çаплах-ха хайӗн шухăшӗсенчен тӗлӗнсе, васкамасăр тăвалла утрӗ: «Мӗн амакӗ,мӗншӗн-ха ӗçри телейлӗ кунсем мар, вăрçăн тарăн йӗрӗсем умма тухаççӗ?»

Шкул тӗлне çитсен, вăл сылтăмалла пăрăнса тин çеç ешернӗ хурăнсен хӳтлӗхне кӗчӗ. Вӗсем халӗ ачаш, çитӗнсе çитеймен черчен хӗрачасем пек, хайсенчен темиçе çул аслă каччăна юрасшăн хаклă йышши духи сапнă евӗр туйăнчӗç ăна. Çамрăк йывăççем тавралăха тутлă шăршă сапаларӗç, çилпеле авăнакан çинçе турачӗсем ачашшăн питрен сӗртӗнчӗç, сарăлса çитеймен черчен çулçисем хӗрсех темӗн хăлхаран пăшăлтатрӗç, куçран, çамкаран чуптурӗç. Çывăхри кӳлӗ уйăх çутинче куçкӗски пекех çуталса выртать. Вăл ватă çынна ан тунсăхлатăр тесе тавралăхри илемпе киленме сӗнет. Хурăн çулçин çепӗç пăшăлтатăвӗ, шкул патнелле çывхарса килекен яшсемпе хӗрсен юрланă сасси ăна тата та ытларах пурнăçа юратма, ушкăнпа пуçтарăнса пӗрле пулма чӗнчӗ.

Акă юрă вӗçленчӗ. Уççăн та янăравлăн çамрăксем хавасланса шӳтлеме, кулма пикенчӗç. Ир пуличчен, шăпчăксем вăранса пирвайхи хут сас париччен ларма хатӗр пулчӗ аллă çултан иртнӗ ватă салтак. Вăл çак тăнăçлăхшăн, ача-пăчан телейлӗ куллишӗн вăрçă хирӗнче хайӗн сывлăхне çухатнă. Халӗ ăна никам та кунтан хăвалаймӗ. Çапах та Сергей Иванович çитӗнекен çӗнӗ ăру умӗнче курăнма темшӗн именчӗ, пăлханса тапакан чӗри ăна çак вырăнтан кайма хистерӗ: «Сире чăрмантарас мар. Эпир çамрăк чух савăнайманнишӗн, савнисемпе шăпчăк сассине итлейменнишӗн эсир айăплă мар. Эпӗ кунта ларни сире чăрмантарӗ çеç.—Вăл, васкавлăн сак çинчен тăрса,килӗ еннелле утрӗ.—Ирӗккӗн ӗмӗтленме,пӗр-пӗрне юратма, хурăнсемпе пӗрле шăппăн пăшăлтатса шăпчăк сассине итлеме сире никам та чараймӗ. Эсир çӗнӗ пурнăç çыннисем. Колхоз, тăван çӗршыв пуян та тӗреклӗ пуласси, ял халăхӗн пурнăçӗ улшăнасси сиртен килет. Савăнăр, пӗр-пӗринпе шухăш-ӗмӗтӗре пайлăр. Илемлӗ çанталăкра илемлӗ шухăш çуралать, теççӗ. Хăвăра хăвăр хуçа пек туйăр,»—пăшăлтатрӗç унăн тутисем.

*　*　*　*　*

Тепӗр кунне Коля ирех вӑранчӗ. Ҫапах та хӗвел чылаях ҫӳле хӑпарма ӗлкӗрнӗ те ӗнтӗ. Вӑл ӗнер хӗрсемпе фермӑра ирхине ирех тӗл пулма калаҫса татӑлнӑччӗ. Кӑшт маларах тӑманшӑн каччӑ хӑйне хӑй ӑшӗнче ятласа та илчӗ. Васкамалла, вӑхӑтра ҫитмелле, унсӑрӑн намӑс курӑн хӗрсен умӗнче. Ҫӑвӑнса тумланнӑ хыҫҫӑн, чупнӑ пекех, тӑвалла утрӗ.

Ферма шӑпах ял вӗҫӗнче — Киремет ҫырми леш енче вырнаҫнӑ. Киремет — типӗ, тарӑн та чӑнкӑ ҫыранлӑ ҫырма. Ваттисем астӑвасса, ун урлӑ ӗлӗкрех лашапа каҫса ҫӳренӗ. Кашни уяврах ӑна тӗрлӗ парнесем панӑ, пӗр вырӑна укҫатенкӗ пӑрахнӑ. Халӗ ҫав йӑла ҫухалчӗ пулин те, ҫырма хӑйӗн малтанхи ятне ҫухатмарӗ, ӗлӗкхи пекех, ял халӑхӗ ӑна Киремет ҫырми, тет.

Коля лайӑхах астӑвать-ха, унӑн асламӑшӗ кирек мӗнле чир ерсен те, кашнинчех Киремет тытрӗ пуль, тетчӗ, парне пама васкатчӗ. Пӗррехинче вӑл ӑна та хӑйпе пӗрле илсе тухрӗ. Вӗсем, карттус сӑмси пек, усӑнса тӑракан чӑнкӑ ҫыран хӗрне тухрӗҫ. Асламӑшӗ, темӗн пӑшӑлтатса, сӑхсӑхма тытӑнчӗ. Мӑнукӗ кӗрхи тӗттӗм ҫанталӑкӑн хӑрушлӑхӗнче хӑйне ачашлакан алӑсем шырарӗ, асламӑшӗн кӗпе аркинчен ҫатӑрласа тытса, ӑна васкама хушрӗ. Лешӗ хӑйӗн кӗллине часах вӗҫлерӗ, саппун кӗсйинчен темле чӗркенӗ хут кӑларчӗ те Кирherметрен вӗсен ҫемйине чир-чӗртен сыхлама ыйтса, ҫӗр ҫине пӗр ывӑҫ вак укҫа сапрӗ, шурӑ ҫӑнӑх вӗҫтерчӗ, мӗншӗнне Коля ун чух пӗлеймерӗ. Киремет ҫырми тӗлне ҫитсенех, халӗ те ҫакӑ аса килет, кулӑшла та пек туйӑнать. Чӑн-чӑнах чир-чӗр тени Киремет тытнинчен килет тенӗ пулас ваттисем. Унран халӑх хӑранӑ, ҫавӑнпа та ҫирӗпленнӗ йӑлана хирӗҫлеме хӑяйман. Ҫырми вара, ҫурхи шывсем ҫурнӑран, ҫулсерен сарӑлса, тарӑнланса пычӗ.

Ҫак вырӑнтан, кӑштах утсан, сӑрт пуҫланать. Вӑл ҫурҫӗр — хӗвелтухӑҫ еннелле тӑсӑлса Пӑла хӗрнех тухать.

Кивӗ Катек тӗлӗнмелле вырӑнта вырнаҫнӑ. Кӑнтӑр енче — Пӑла, хӗвеланӑҫ енче — Ыхра ҫырми, ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫ енчен вара йӗри-тавра, яла ыталанӑ евӗр, сӑрт хупӑрласа тӑрать. Ялӑн юлашки урамне, тен, ҫапла калани тӗрӗс те мар пулӗ, хӑрах енне, ҫӳллӗ сӑрт, сӑпкари пӗчӗк ачана ачашланӑ евӗр, пӗр хӑпартать, пӗр антарать. Аякран пӑхсан, ӑна хум ҫинче ишекен карапа танлаштарма пулать.

Çурçĕр-хĕвелтухăç енче, сăрт чалăшĕнче, Пăла хĕррипе тăсăлса колхозăн сачĕ, çывăхрах вĕлле хурчĕсен утарĕ вырнаçнă. Сад вĕçĕнче, çӳллĕ вырăнта, тӳпене кĕç-вĕç вĕçсе хăпарма хатĕр пулнăн, çиларманĕ ларать. Халĕ унăн сарлака çуначĕсем лăпкă çилпе васкамасăр çаврăнчĕç.

Коля часах сарлака çултан сулахая пăрăнса ферма хĕрĕсем пурăнакан çурт еннелле утрĕ. Унăн икĕ енĕпе колхозăн выльăх-чĕрлĕх витисем вырнаçнă.

Каччă, общежити патне çитсен, шала кĕме ĕлкĕреймерĕ, çывăхри сасă ăна тытса чарчĕ.

—Хĕрсем, курăр-ха, ĕнерхи паттăр ыйăхран вăраннă. Малтанах каларăм вĕт сана, çывăрса юлатăн тесе,—тавралăха янăратса кулчĕ Валя Малинова.

Çывăхри ĕне витинчен татах та шурă халатлă хĕрсем тухрĕç. Вĕсен кашнинех аллисенче кăпăкланнă сĕтпе тултарнă икшер çутă витре. Каччă ушкăн еннелле утрĕ. Яри уçă вите алăкĕнчен, те тусĕсен сассине илтсе, те хăйсен ĕçне пĕтерсе, тулли витресем йăтнă хĕрупраçсем татах та курăнчĕç, вĕсенчен кашниех ирхи хĕвел çутинче ĕçпе хĕрелнĕ пичĕсене хаваслăн кăтартса, комсомол секретарĕпе шӳтлеме тăчĕç. Нина Федорова утнă май темле такмак калама та ĕлкĕрчĕ. Анчах та Коля унăн сăмахĕсене пурне те илтеймерĕ.

Тавралăх çамрăксен сасси-куллипе тулчĕ. Секретарь пĕр вăхăт хушши нимĕн те чĕнеймерĕ. Унăн çумĕпе мăн кăмăллăн, тулли кăкăрĕсене каçăртса, чăлт шурă халатлă, ытармалла мар дояркăсем ярăнса утса иртрĕç. Каччă малтанах çухалса кайнă пек пулчĕ, анчах та хăйне хăй вăхăтра алла илчĕ, хăюллăрах курăнма тăрăшрĕ.

—Кӳр-ха, Валя, пулăшам,—хыпаланса витрисене унран илесшĕн пулчĕ вăл, анчах та лешĕ, йĕтĕн çӳçлĕ Валя Наперсткина ăна хирĕçлесе, çапах та чуна ăшăтмалла сасăпа: «Хамах»,—терĕ те, ним пулман пекех, малалла утса кайрĕ. Пысăк куçĕсем çеç каччă çине савăнăçлăн та ытарлăн йăлкăшса чалăшшăн пăхрĕç, унăн чĕринче темле вăй-хăват çуратрĕç, хăй патне илĕртрĕç, уççăн калама çеç хăяймарĕç.

Хаваслăх хăвăрттăн вĕçленмерĕ-ха, тавралăх татах та çĕнĕрен те çĕнĕ сасăпа тулчĕ. Кунта дояркăсем çеç мар, пăру, сысна пăхакансем те хăйсен ĕçĕсене пĕтерсе пуçтарăннă.

—Акă ăçта пирĕн ял çамрăкĕсем, арăм тупас тесен, тӳрех кунта килмелле иккен,—хĕрсенчен юлас мар терĕ каччă.

—Асту ҫав, ҫула ан ман, тахҫантанпах кӗтетпӗр кӗрӳ килессе.

Дояркӑсем пӗр-пӗрне пӳлсе калаҫрӗҫ пулсан та, хӑйсен тӗп ӗҫӗ пирки манмарӗҫ, шӳтлесе кулнӑ майӑн витресенчи сӗте марлӗ витӗр сӗрсе флягӑсене тултарчӗҫ.

—Секретарь, тен, эпир сунӑ сӗте тутанса пӑхма кӑмӑлу пур, ӑшӑлла ҫав тери усӑллӑ, теҫҫӗ,—кӑштах чеереххӗн пӑхса кулчӗ каллех Валя Наперсткина.

—Паҫӑртанпах сӗлеке юхать, калама хӑяйманнипе ҫеҫ тытӑнса тӑратӑп,—ун аллинчи ҫур литр кӗрекен кружкӑна илсе, шурӑ тикӗс шӑлӗсене кӑтартса хаваслансах калаҫрӗ хӗрсемпе Коля.

Часах сӗт тултаракан машина та килсе ҫитрӗ. Тулли флягӑсене умлӑ-хыҫлӑ кузова лартса, ҫу заводне ӑсатнӑ хыҫҫӑн, ӗнесене витерен кӑларчӗҫ. Кӗтӳҫӗ вӑрӑм пушшине хулпуҫҫи урлӑ ҫакса, васкамасӑр кӗтӳ хыҫҫӑн утрӗ.

—Халӗ пушантӑмӑр тесен те юрать. Ҫапах та ҫывӑрса юлтӑн-юлтӑнах, хӗрсемпе пӗрле ӗне сӑваймарӑн,—ҫаплах шӳтлерӗ Валя Малинова.

—Эпир ӗне сума калаҫса татӑлманччӗ-ҫке, хамӑрӑн ӗҫе мӗнрен пуҫлас пирки ушкӑнпа канашласа пӑхасшӑнччӗ,—хӑйне ҫирӗп тытма тӑрӑшрӗ Коля.

—Эсӗ пире улталаймӑн, ирччене шӑпчӑк юррине илтессишӗн урамра ҫӳрерӗр пулӗ-ха,—тӑруках ярса илчӗҫ дояркӑсем.

Каччӑ вӗсен шухӑшне ӑнланчӗ. Каҫхине пурте пӗрле саланчӗҫ пулин те кунта хирӗҫлени усӑсӑр. Хӗрсем йӗкӗлтеме тытӑнсан ҫатма ҫинчи пӑрҫа пек ӑшаланӑн. Ҫавӑнпа та вӑл тӳрех парӑнас темерӗ, каллех шӳтлӗ сӑмахсем пуҫланчӗҫ, пӗр-пӗрне тӗрткелесе, вӗсем общежитине кӗчӗҫ. Коля тӳрех тӗпелелле иртсе чӳрече умӗнчи сӗтел хушшине ларчӗ, тирпейлӗн пуҫтарнӑ хаҫат ҫыххине хӑй ҫумне шутарса, темӗн вулама тӑчӗ. Пӳлӗмре ҫаплах-ха хаваслӑх чакмарӗ. Чаршав хыҫӗнче шӑппӑн пӑшӑлтатса, хӗрсем темрен хыттӑнах кулчӗҫ.

Часах шурӑ халачӗсене хывса, хитре чечеклӗ кӗпесем тӑхӑнсан, вӗсем пурте харӑссӑн чаршав хыҫӗнчен чупса тухрӗҫ, Кольӑна йӗри-тавра ҫавӑрса илсе, ҫывӑхри вырӑн ҫине ӳкерме хӑтланчӗҫ. Ытла та кӗтмен ҫӗртен пулнӑран,вӑл малтанласа ҫухалса кайрӗ, ним тума пӗлмерӗ: те хирӗҫлемелле, те тӑруках парӑнмалла. Ҫакӑнпа усӑ курса, лешсем ӑна вырӑн ҫине месерле ӳкерчӗҫ, хӑйсем ҫаплах-ха ахӑлтатма чарӑнмарӗҫ. Секретарь вӗсенчен хӑтӑласшӑн тӗрлӗ

еннелле пăркаланма тытăнчĕ, анчах та ĕçпе хытнă çамрăксен вăйлă аллисенчен хăтăлаймарĕ.

—Ну, чипер каччă, кала, кампа ĕнер çĕре кĕскетрĕн?

Те ыйтăвĕ ытла та кулăшла пулнăран, те кĕрмешсе тара ӳкнĕрен вăл вĕсен умĕнче хăй парăннине пĕлтерсе куçĕсемпе çеç ачашшăн мăчлаттарчĕ.

Хаваслă ушкăнра кăмăлĕсене çĕкленĕ çамрăк хĕрупраçа халь тăруках лăплатаймăн, çакна Коля малтанах сиснĕччĕ-ха, çавăнпа та вăл чееленме шутларĕ:

—Нина, иккĕн пĕрле пулнине мантăн-им вара? Аса илха, эпĕ сана хапха çумĕнче чуптума та хатĕрччĕ, ыйăхран вăраннă аннӳ чăрмантармасан, тутусем кăвакаричченех юратнă пулăттăм. Уншăн ан кулян, паян каçхине аяккарах пытанăпăр, аннӳ сисеймĕ те. Хĕрсем эсир ман алăсене çеç пушатăр, вара мĕнле ыталанине те кăтартса паратăп, кун пек ман чĕлхе çыхланать.

—Çук, пире улталаймăн,—хĕрсем каччă шӳтленине ăнланчĕç пулин те, сăмахĕсемпе пĕрре Кольăна, тепре Нинăна йĕплерĕç.—Эппин, пĕрле пулнă, кайран тĕлĕкре те пĕр-пĕрне ыталарăр пулĕ-ха!

—Паллах, тĕлĕкре çеç. Ирччен кĕтрĕм, килмерĕн. Миçе çул ĕнтĕ каччă ытамне лексе курман, шкулта вĕреннĕ чух çеç, хальхи пек, пĕр-пĕрне нушалантараттăмăр,-калаçăва хутшăнса кулчĕ Нина. Унтан тăруках кулма чарăнса,—эх, эс калană сăмахсем пурте чăн пулсанччĕ,-терĕ.

—Суять вăл, суять, каларăм вĕт-ха, аллăмсене çеç пушатăр, пĕтĕмпех каласа паратăп тесе,—çĕкленме хăтланчĕ секретарь.

—Çук, ямастпăр,—Кольăна вырăн çумнерех пусарасшăн пулчĕ Нина.

Анчах та çак вăхăтра хĕрсем,чăнахах, унăн аллисене вĕçертрĕç. Çакна пач кĕтмен тулли те хытă кăкăрлă Нина тăруках каччă ытамне лекрĕ.

—Эппин, тунсăхлатăн? Кӳр-ха эп сана асăнмалăх ыталам,—хĕре хăй çумне чăмăртарĕ Коля.

Çак вăхăтра пӳлĕме ферма заведующийĕ Анна Ивановна Николаева килсе кĕчĕ, тăруках мĕн пулса иртнине ăнланаймарĕ пулас.

—Ку мĕне пĕлтерет?—терĕ вăл алăк умĕнче чарăнса тăрса.

—Эпир ĕç пирки калаçасшăнччĕ, кунта акă хĕрсем каччăсемсĕр тунсăхласа çитнĕ иккен, шăм-шака авма пикенчĕç,—тӳрре тухма, калаçăва шӳт енне куçарма хăтланчĕ секретарь.

Анна Ивановна унӑн сапаланнӑ ҫӳҫ-пуҫне курсан кӑштах йӑвашланчӗ, пичӗ ҫинче кулӑ та палӑрчӗ.

—Асту, пирӗн хӗрупраҫсем хӑйсене кӳрентерме памаҫҫӗ, текех нихӑҫан та пӗччен вӗсен аллине ан ҫаклан,-терӗ.

Анна Ивановна сӗтел хушшине ларса дояркӑсене хӑй ҫывӑхнерех пуҫтарӑнма чӗнчӗ. Малаллахи сӑмах паян кам миҫе литр сӗт суса илни, июнь уйӑхӗ валли ҫӗнӗ обязательствӑсем йышӑнас пирки хускалчӗ. Коля калаҫӑва хутшӑнмарӗ, ҫавӑнпа та вӑл пӳлӗмре ларнине пӗр вӑхӑт хушши асӑрхамарӗҫ те. Каччӑ уншӑн кӳренмерӗ, вӗсен ӗҫӗ пирки пыракан калаҫӑва, хутран-ситрен, вӑйсӑр кӑвайт пек, тӗлкӗшекен, анчах та хӑвӑрт сӳнекен кӗске тавлашӑва сасӑ кӑлармасӑр тӑнларӗ. Хӗрсем хӑйсен ӗҫне юратни, пӗр-пӗринпе ӑмӑртни ӑна чунтан савӑнтарчӗ.

Анна Ивановна умри блокнотне халат кӗсйине чикрӗ те, васкамасӑр ура ҫине тӑрса, Коля енне ҫаврӑнчӗ:

—Чим-ха, эпӗ сана комсомол секретарьне суйланӑ ятпа саламлама та манса кайнӑ, каҫар. Ӗҫре ҫитӗнӳ сунатӑп,—терӗ те, ун патне пырса, аллине чӑмӑртарӗ.

—Тавтапуҫ,—пуҫне кӑштах тайса хуравларӗ каччӑ.

—Тен, эпӗ кунта ытлашши? Ҫамрӑксем хӑйсем тӗллӗн, ирӗклӗн шухӑшлаҫҫӗ, ҫапах та мӗнле ӗҫ пирки сӑмахласшӑн-ха эсир?—ыйтрӗ вӑл.

—Тӗрӗссипе, хамӑр та пӗлместпӗр, ӗнертенпе калаҫса татӑлма май ҫук. Воскресник ирттересшӗн, кашниййӗн тӗрлӗ шухӑш: пӗрисем хамӑрӑн ял ҫамрӑкӗсемпе ҫеҫ пуҫтарӑнасшӑн, теприсем — виҫӗ ялӗпех. Ман шухӑшпа, ялпа ял ҫамрӑкӗсене туслаштарни ҫав тери лайӑх.

—Паллах, усӑллӑ,—тӑруках килӗшрӗ секретарьпе Анна Ивановна.—Акӑ пӗр уйӑх каялла ҫеҫ пирӗн ушкӑнри чи ӑста доярка Осипова Лида Чӑваш Сӑкӑтне качча тухрӗ. Мӗн тери лайӑх пулатчӗ пирӗншӗн, енчен те вӑл хамӑр ял каччипех мӑшӑрлансан. Ӗҫчен те маттур хӗрачана ҫухатрӑмӑр.

Ҫамрӑксем пӗр вӑхӑт хушши шухӑша кайрӗҫ.

—Акӑ мӗн, туссем, пӗрле пуҫтарӑнни лайӑх, ӗҫӗ пуриншӗн те усӑллӑ пултӑр вара.

—Ушкӑнпа йывӑҫ лартма тухмалла. Акӑ Тимрӗҫ урамнех илер, пӗр вӗҫӗнчен тепӗр вӗҫне утса тухсан та, чӗрӗ йывӑҫ курма ҫук. Мӗншӗн-ха ӑна симӗслетессишӗн тӑрӑшмалла мар?—такама кӳреннӗн хушса хучӗ Валя Малинова.

Коля, Анна Ивановнӑпа пӗр ялта ҫуралса ӳснӗ пулсан та, унпа паянхи пек хире-хирӗҫ тӑрса, калаҫсах курман. Ӗлӗкрех, салтака кайиччен, вӑл вӗсен бригадине ертсе

пыратчĕ, çамрăксем унран хăратчĕç, ĕçрен пăрăнсассăн е алхасма пăхсассăн тӳрех йĕркене кĕртетчĕ. Хĕрарăм çав тери хăвăрттăн, хыçран такам хăваланăнах васкаса калаçать. Ял çинче ăна хисеплесе: «Анна Ивановна вĕри, сăмаха тытакан, тӳрĕ чунлă хĕрарăм» теççĕ. Чăнах та, çапла пулĕ. Вăл пуçланă ĕçне вута кĕрет те вĕçлемесĕр чарăнмасть. Пурнăçра миçе хутчен колхоз, район пуçлăхĕсемпе вăрçма, хăйĕн тĕрĕслĕхне кăтартма тивмен пулĕ унăн. Пытарма кирлĕ мар: хăш чухне хăйĕн тӳрĕ сăмахĕсемшĕн хĕрелме те тивнĕ. Тен, таса чун-чĕреллĕ, тĕрĕслĕхшĕн çунакан çын пулнишĕн юратать те ĕнтĕ ăна халăх, çавăнпа та хĕрӳ самантра унран хытă сăмах илтсен те, асра упрамасть, çилле хăваламасть.

Анна Ивановна хăй те çавнашкалах, аслатиллĕ, вăйлă çумăр иртнĕ хыççăн хĕвел тӳпене тухнă пек, капланса килнĕ шухăшне каласа пĕтерсенех, хăвăрт лăпланать, каллех, ним пулман пек, кулма, шӳтлеме пикенет.

Ун пурнăçĕ, ялти ытти хĕрарăмсенни пек, çемье чăмăртаса, ача-пăчапа савăнмалла пулмарĕ. Тен, колхоз ĕçне, уй-хире чунтан юратнăран пурнăçне пĕччен пурăнса ирттерме шутланă те ĕнтĕ вăл. Сăмах нихăçан та ахаль çӳремест, теççĕ Вĕсене ĕненсен, Анна Ивановнăна çамрăк чух темиçе хутчен те вăрлама хăтланнă. Йĕкĕтсем ăна пĕрре курсах кăмăллани, юратни çинчен те сахал мар легенда çӳрет. Анчах та вăл паянхи кунччененех амăшĕпе çеç пурăнать, çулĕпе хĕрĕхе çитнĕ пулин те, сăнĕпе çамрăк курăнать-ха. Куçĕсем те, çăлтăр евĕрлех, çивĕччĕн пăхаççĕ. Унпа калаçса чуна пусарма та кăмăллă.

Анна Ивановна Вальăн сĕнĕвĕпе тӳрех килĕшрĕ.

—Йăмăкăм, ял урамĕсене хамăрах илемлетĕпĕр. Ман шухăшпа, Киремет çырмин çыранĕсене тĕреклетмелле. Хăвăрах куратăр, вăл куç умĕнчех çулсерен юпленсе, тарăнлансах пырать. Çавна пула çулсерен миçе гектар çĕр çухататпăр, тырă акаймастпăр. Çакăншăн чĕре ыратать Ĕçĕ те нумай мар ĕнтĕ, йывăççем çеç лартмалла, малтанласа шыв çулне çатан тытса, туратсем пăрахса пӳлмелле. Усси вара пулатех. Вăрмана йывăç кăларма каяс тетĕр пулсан, председательпе хамах калаçăп, вăл пĕр сăмахсăрах машинăсем уйăрса парĕ.Эсир хăвăр хушăрта çеç ĕçе тухма килĕшĕр.

Коля колхозри комсомолецсене пурне те паллайман пирки, тăруках пурте пĕр çын пек пулса воскреснике тухасса шантарса калама тăхтаса тăчĕ, кăштах иккĕленчĕ те. Кӳршĕ

ял çамрăкěсем çак ěçе хутшăнма килěшеççě-ши? Халлěхе вěсем кун пирки нимěн те пěлмеççě. Эппин вěсемпе малтан калаçса пăхасах пулать, анчах та хăçан? Кăнтăрла вěсене кунěпе шырасан та тупаймăн, пурте ěçре. Тен, каçхине урама тухсан курнăçма май килě? Çак шухăшсемпе секретарь ферма хěрěсенчен уйрăлчě.

Каçхине хěвел аннă-анманах Сашăпа Коля, велосипедсем çине ларса, çула тухрěç.

—Малтанласа Татмăша каяр пуль. Çěнě Ахпӳрте кайран та ěлкěрěпěр, унта паян кино пулать, пурпěрех çамрăксем тӳрех саланас çук, шăпах сеанс вěçленнě çěре ěлкěрме тăрăшăпăр,—сěнчě Саша.

Коля килěшрě. Кустăрмасем нӳрлě çěр çумне çыпçăннă май, хăйне евěр кěвě тупса, чăрлатса чупрěç, анчах та ку сас, чунра кăштах хаваслăх хушрě пулин те, нумая пымарě. Киремет çырми урлă каçсан, вěсен велосипечěсене йěтем тěлне çитиччен тăвалла çавăтса утма тиврě. Малалла Татмăш ялěн кěперě патне çитиччен çул анаталла, унтан каллех, Киремет евěр, типě çырма, чăнкă сăрт тěл пулать. Татмăш шăпах çавăн айккинче вырнаçнă. Сăртран аялалла, кăнтăралла кěске те сарлака, алă лаппи çинче вырнаçнăн тăвата урам тăсăлать. Вěсене варринчен пěр çул пěрлештерет. Аякран пăхсан вăл тăвата «Н» саспалли пек курăнать.

Ялě пысăк мар, мěн пурě те 200 килтен ытла мар пулě. Кунта сакăр çул вěренмелли шкул, кирпěчрен купаласа тунă клуб тата магазин пур. Вěсем пурте ял вěçěнче, сăрт тӳпинчи йывăçсем хушшинче вырнаçнă.

Кириметрен каçса пěр 100 метр пек тăвалла хăпарма ěлкěрейменччě, Коля темшěн тăпах чарăнчě. Çул хěрринчи тарăн та сарлака шыв çулне курсан, унăн чěри çěçěпе чикнě евěр, туртăнса илчě, куçěсем темрен хăранă чухнехи пек сарăлчěç. Çул айккинче çеç мар, унтан кăштах шалалла кайсан та, ана çинче çавнашкалах тарăн çěнě çырмасем курăнчěç.

—Тусăм, мěн амакě ку? Эпир çара кайиччен вěсем çукчě вěт-ха?—тěлěннипе чутах пур вăйран кăшкăрса ямарě вăл.

Саша шарламарě. Паллах, кашни кун çак çулпа çӳрекенскер, икě енчен те шыв çěмěрсе хăпарнине пěр курмасăр иртмен ěнтě вăл. Чунě, чăнахах та, ыратнă пулин те эрозипе кěрешесси асра та пулман. Саша çеç-ши? Колхоз пуçлăхěсем ăçта пăхнă тата? Ял халăхě? Е пурте курмăш пулнă, çын туса парасса, кӳршě колхозран пулăшу килессе

кётнĕ-ши? Анна Ивановна тĕрĕсех калать, мĕн чухлĕ çĕр сая кайса выртать, тесе. Шыв çулĕ чарăнассин палли те çук. Вăл çĕнĕ вăй илсех пырать.

Малалла вĕсем пĕр чĕнмесĕр утрĕç.

Татмăша тĕттĕмлениччен çитрĕç пулин те, кунта вĕсен чылаях кĕтсе тăма тиврĕ. Ял çамрăкĕсем катексем пекех, клубра мар, урамрах пуçтарăнаççĕ иккен. Чăнах та, кунта ĕç хыççăн аван: сывлăш уçă, такамăн ĕçчен аллисем канса ларма сарлака вăрăм саксем тунă.

—Чимĕр-ха, пирĕн паян хăнасем те пур иккен!—ушкăнран уйрăлса ют ял каччисем еннелле утрĕ шурă тĕслĕ кĕске кĕпе тăхăннă пĕр хĕрĕ.

Коля ăна тӳрех палласа илчĕ, бюро членĕ Галя Никифорова иккен, ялти шкулта учительница пулса ĕçлекенскер. Хăнасем ăна курсанах хăюлланчĕç.

—О-о, паллакан тупăнчĕ! Эппин, тĕрĕсех килнĕ, малтанласа эпир хамăра ют çĕршыва лекнĕ тесех шутланăччĕ. Ĕненмелле мар пулин те, никама курмасăрах, каялла таврăнма тивесрен шикленнĕччĕ,—малтан Гальăн, кайран ытти çамрăксен аллине чăмăртанă май шӳтлерĕ Коля.

—Ну, мĕн шăплантăр, атьăр ушкăнпа пĕрле ташлар,—сак çинче хăйне валли вырăн тупса, çумри хĕр аллинчен купăсне илчĕ Саша.

Татмăшсем малтан хăнасенчен кăшт ютшăнчĕç пулин те, часах вĕсен кăмăлĕсем çĕкленчĕç, акăшсем евĕр çăмăллăн ярăнса тухса, такмак каласа ташлама пуçларĕç. Чăнах та, Юхма енче каччăсемпе хĕрсем пĕрле пуçтарăнсан, савăнма пĕлеççĕ çав. Ушкăнра купăс калакан вăйăçă çеç пултăр, пуçланать вара хаваслăх, кашниййĕ пĕр-пĕрне хыçа хăварассишĕн ăмăртмалла ташлама пикенет. Халĕ те çаплах. Коля йĕри-таврa пуçтарăннă, такмак каласа алă çупакан хĕрсемпе кашнинпех ташласа çаврăнчĕ:

—Тахçантанпах кун пек сикменччĕ, чăнах та, татмăшсем ташă енчен ăста,—хыттăн тапăртатакан çамрăксене хисеплесе, пуçне тайса алă çупрĕ вăл. Ташă картинчен тухнăскер, пăчăртанса тапса тухнă тарне тутăрпа шăлса типĕтрĕ, унтан кĕпин çӳлти тӳмисене вĕçертсе, кăкăрне уçăлтарчĕ.

Ташă вĕçленчĕ. Саша купăсне, унăн уçă сассине мухтаса хуçине каялла тавăрса пачĕ те, ĕç пирки калаçма вăхăт çитнине систерсе, сылтăм куçне чеен хĕссе Галя çине пăхрĕ.

Лешӗ ҫакна чухласа илсе Кольӑпа Саша ҫывӑхнерех куҫса ларчӗ:

—Чим-ха, эпӗ малтан хамӑр ял ҫамрӑкӗсене сирӗнпе паллаштарам, тен, чылайӑшӗ эсир кам иккенне те пӗлмеҫҫӗ пулӗ.—Унтан ушкӑн енне ҫаврӑнса,—пирӗн колхозӑн комсомол секретарӗ —Коля Степанов,—Коля ҫине тӗллесе кӑтартрӗ вӑл.—Ку акӑ—Саша Кошкин, бюро членӗ, иккӗшӗ те нумай пулмасть ҫартан таврӑнчӗҫ.

Каччӑсемшӗн хӑйсене кашнинех ҫапла уйрӑммӑн паллаштарни сцена ҫинчи артистсене кӑтарнӑ пекех туйӑнчӗ, тен, ҫавӑнпа та вӗсем иккӗшӗ те кӑштах аванмарланчӗҫ. Галя ҫамрӑксен енне ҫаврӑнчӗ те:

—Хӑнасем вӑтанаҫҫӗ,—терӗ.—Ытла та сӑпайлӑ-ҫке эсир. Ну, нимех те мар, кунта ют ҫынсем ҫук. Атя, Коля, пуҫла,—секретаре хавхалантарма тӑрӑшрӗ вӑл.

—Сирӗн хушӑрта мӗн чухлӗ хитре хӗр, ирӗксӗрех хӑюсӑрланӑн,-пуҫларӗ Коля лӑпкӑ сассипе.—Эпир ҫак вырсарникун комсомолецсен воскресникне ирттересшӗн. Сирӗн пата канашлама килтӗмӗр. Ӗҫӗ йывӑрах мар, тен, сиртен кам та пулсан, Киремет ҫырми патӗнчен иртсе ҫӳренӗ чух уй-хире эрози ҫӗмӗрсе пынине асӑрханӑ пулӗ. Колхоза мӗн чухлӗ сиен кӳрет вӑл? Ҫырансене йывӑҫсем лартса тӗреклетме, шыв ҫулне вара хӑвасенчен ҫатан авса, вӗсен ҫулне пӳлме шухӑш пур. Ку ӗҫе кӑшт маларах тумаллаччӗ те, халӗ те кая юлман-ха, вӑхӑт пур. Паян эпӗ ун пирки колхоз председателӗпе калаҫса пӑхрӑм. Пирӗн шухӑша вӑл ырларӗ. Шӑматкун вӑрмана йывӑҫ кӑларма кайма машина паратӑпах, кирлӗ пулсан, пӗрре мар, иккӗ, виҫҫӗ те. Усӑллӑ ӗҫшӗн нимӗн те шел мар, терӗ. Анчах та катексемсӗр пуҫне, юнашар ялти ҫамрӑксемпе калаҫса татӑлман пирки, миҫе машина кирлине калаймарӑм. Пирӗн ял ҫамрӑкӗсем пурте воскресника тухма савӑнсах килӗшрӗҫ. Татмӑшсем мӗнле, халлӗхе пӗлместӗп-ха,—сӑмахне вӗҫлерӗ вӑл.

Ҫамрӑксем пӗр самант шарламасӑр тӑчӗҫ.

—Коля, эсӗ пирӗн ялсем катексенчен кая тесе шутлатӑн-им, усӑллӑ ӗҫе хутшӑнма эпир те яланах хатӗр, ҫапла вӗт?—тусӗсем еннелле ҫаврӑнса хыттӑн ыйтрӗ Галя.

—Паллах кая мар, секретарь, эсӗ малашне пирӗншӗн те яланах шантарса калама пултаратӑн, эпир — сирӗнпе,—ҫирӗплетрӗ Галя сӑмахне юнашар тӑракан ҫамрӑк.

Унпа ыттисем те килӗшрӗҫ. Калаҫу вӗҫленсе пыратчӗ ӗнтӗ. Кольӑпа Саша кайма хатӗрленсе, карта ҫумне

тайăнтарнă велосипечĕсем патне пычĕç. Çак вăхăтра ушкăнран пĕр çамрăк каччă тухрĕ те:

—Воскресник комсомолецсемшĕн çеç пулать-и вара?—тесе ыйтрĕ.

—Çук, паллах. Пуриншĕн те. Тĕрĕссипе каласан, çамрăксемшĕн çеç мар, кам ӳркенмест , пурте хутшăнма пултараççĕ. Çак кун уяв пек ирттĕр,—терĕ секретарь велосипечĕ çине ларнă май.

Çĕнĕ Ахпӳрте вĕсем тахçан икĕ ял хушшинчи хире уйăрса тирексем лартнă аллея витĕр кайрĕç. Халĕ йывăçсем ӳссе çитĕннĕ ĕнтĕ, вĕсен çулçисем, вăрманти пек, уйăх çуттине хупласа, татах та тавралăха тĕксĕмлетрĕç, çепĕççĕн шапăлтатса, çамрăксене çул çинче сыхланаллăрах, тинкерӳллĕрех пулма хушрĕç. Умра нимĕн те курăнмарĕ, чухăммăн машина йĕррипе вĕсем çамрăксем саланиччен Çĕнĕ Ахпӳрте çитме васкарĕç, анчах та тĕттĕмре çул çӳреме çăмăлах пулмарĕ — тăсăлса тăракан йывăç тураттисем питкуçа çапăнчĕç, чĕркелерĕç. Кольăпа Саша тарăхса çитнипе аллейăран пăрăнса, хир анипе кайма шутларĕç. Ĕлĕкрех кунта машина çӳремелĕх çул хăвараканччĕ, анчах та халĕ вăл курăнмарĕ, ирĕксĕрех каллех вĕсен йывăççен хушшине кĕме тиврĕ. Çурма çула çитсен, анаталла кайнипе велосипед педалĕсем хăвăртрах та çăмăлтарах çаврăнма пикенчĕç. Туссем пĕр-пĕрне асăрханаллă пулма хушрĕç пулин те, хăвăртлăх ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ. Аллейăран аслă çул çине тухмалли хушă нумай та юлманччĕ ĕнтĕ. Кунта кашласа ларакан çӳллĕ йывăççене çамрăк тирексем улăштарчĕç, вĕсене нумаях пулмасть çеç лартнă. Çулçисем шапăртатнă сасă йăвашшăн та салхун илтĕнчĕ. Уйăх çути машина йĕррине халь тин палăрмаллах çутатрĕ, пĕр шикленмесĕрех малалла кайма хистенĕн туйăнчĕ. Анчах та, ваттисем калашле, асăрханаллăх яланах хăвăнпа пулмалла çав.

Каччăсемшĕн çул тăршшĕпех чĕнмесĕр пыни, аллейăра шăплăх хуçаланни кичеммĕн туйăнчĕ, вĕсем каллех воскресник пирки сăмах хускатрĕç, çул пăрăнчăкĕнче такам пăрахнă типĕ хăрăк йывăç туратне те асăрхаймарĕç, иккĕшĕ те ун çине пырса тăрăнчĕç.

Коля хăй малалла мĕнле вĕçсе ӳкнине те сисеймерĕ, унран ик-виçĕ утăмра тусĕ пулчĕ.

—Ну, мĕнле, тĕрĕс-тĕкелех-и?—харăссăн сиксе тăрса ыйтрĕç вĕсем пĕр-пĕринчен.

—Тĕрĕс-тĕкелех пулас. Чĕркуççи çеç пусма çук ыратать,—хăрах ури çинче сиккелесе хуçлаткаларĕ Коля.

Вёсем пёр-пёрне тумтир çумне çыпçăннă çӳп-çапран тасалма пулăшрĕç.

-Чим-ха, Саша, санăн шăлавару çурăлнă, шăпах палăрмалла, курăнмалли вырăнта.

—Мĕн тăвăпăр, аван мар-çке кун пек çынсен умĕнче курăнма,—тусĕн куçĕнчен айăплăн пăхрĕ Саша,—тен, ырана хăварса яла таврăнăпăр?

Паллах, çурма çула çитнĕскерсемшĕн каялла çаврăнма çăмăл мар, ялти комсомолецсене паян икĕ ялта та пулма шантарсах хăварчĕç вĕт-ха. Эппин, кĕтеççĕ.

—Атя, Саша, çула тухнăскерсем, çитсех килер. Ман çумра йĕппе çип пур. Çурăлнă вырăнне халлĕхе çĕлесе хурăпăр.

Тусĕ малтанах итлесшĕн те марччĕ, чылай тархасласан килĕшрĕ:

—Юрĕ, çитсе килер. Эпĕ курăнмалла вырăнах тăмăп.

Тепĕр çур сехетрен, шăлаварне çĕлесе лартса, кустăрмасене тĕрĕслесен, вĕсем тăпра хăпартса тунă тикĕс çул çине тухрĕç.Ăмăртури пек, пĕр-пĕринчен иртме тăрăшса, вăй çитнĕ таран педалĕсене çавăрчĕç. Халĕ кашни минут шутра, çамрăксем саланиччен яла çитмелле. Çĕнĕ Ахпӳрт клубĕ ял варринче вырнаçнă. Кунта, Татмăшри пек, икçĕр кил çеç мар, вĕсен шучĕ пилĕкçĕртен те иртет пулĕ. Кунтах вăтам шкул, ял совечĕ пур. Ĕлĕк вара чиркӳ те пулнă теççĕ, халĕ ун вырăнĕнче ача сачĕ вырнаçнă. Çĕнĕ Ахпӳрте çитичченех çулĕ анаталла. Тен, çавăнпа та-и, Кольăпа Саша кунта ним чухлĕ те ывăнмарĕç, çăмăллăн ярăнса вĕсем часах клуб тĕлĕнче чарăнчĕç. Çул çинче чух çамрăксем саланса пĕтесрен ахалех шикленнĕ иккен. Каччăсемпе хĕрсем клубра туллиех, вăхăт чылаях иртнĕ пулсан та, кунта халĕ хĕрсе çитнĕ хаваслă самант темелле. Çамрăксем залри вальс кĕввине итлесе, çăмăллăн ташлаççĕ. Юрă хыççăн юрă янăрарĕ. Тăхтав вăхăтĕнче клуб заведующийĕ Светлана Мартышкина, нумаях пулмасть культпрофтехучилище пĕтерсе яла таврăннăскер, хĕрсен хушшинчен тухрĕ те çăмăллăн сцена çине чупса хăпарчĕ. Сылтăм аллине кăштах тăсарах çĕклесе çынсене шăпланма ыйтрĕ.

—Туссем,—пуçларĕ вăл янăравлăн, залри шав кăштах чаксан,—паян пирĕн тус-юлташăмăр Роза Кротова 18 çул тултарчĕ. Саламлакансем нумайăн пулчĕç. Тата мĕн сĕнерши ăна? — сăмахне вĕçлеймерĕ, темле хăюсăр сас ăна пӳлсе:

—Качча тухма, пĕчĕк ача сасси илтме ,—терĕ.

Тахăшĕ кулма тăчĕ, анчах Светлана çухалса каймарĕ:

—Килĕшетĕп, лайăх сĕнÿ. Пĕчĕк ача сасси вăл — çемье телейĕ, уйрăммăнах ашшĕ-амăшĕшĕн. Ун сассинче хăвăн вăйна, ĕçне, пуласлăхна куратăн, ачу çине пăхса савăнатăн. Роза ĕçчен те тăрăшуллă хĕр. Икĕ çула яхăн ĕнтĕ вăл уй-хир бригадинче тухăçлă тыр-пул туса илессишĕн тăрăшать. Эпĕ ăна çемьеллĕ пуличчен вĕренсе пĕтерме, кайран каллех тăван колхоза таврăнма, хăйĕн пĕлĕвĕпе усă курса пысăк тыр-пул туса илнĕ çĕрте вăй хума сĕнесшĕн. Килĕшетĕн-и, Роза?

Роза хирĕçлеменнине пĕлтерсе пуçĕпе çеç сулчĕ.

Коля Светлана сăмахне вĕçлесенех хăйĕн шухăшне пĕлтерме чи меллĕ самант çитнине сисрĕ, çавăнпа та вăхăта сая ямасăрах сцена çине хăпарчĕ.

—Юлташсем! Чăнах та эсир ушкăнпа хаваслăн та кăмăллăн çуралнă куна паллă туни, пĕр-пĕрне ырă сĕнÿсем пани питĕ лайăх йăла.18 çул вăл — этемĕн чи телейлĕ те хаваслă саманчĕ, мăкăнь чечекĕ евĕр, ÿссе çитсе илемлĕн сарăлнă вăхăт. Тен, çавăнпа та-и, ĕмĕрлĕхех асра юлать пулĕ вăл пирĕншĕн. Роза, сана вунсакăр çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп, нумай-нумай çул пурăнма, хăв хыççăн пурнăçра ырă йĕр хăварма, телей сунатăп. Чăнах та, тыр-пул туса илесси — чи хисеплĕ ĕç вăл,—терĕ.

Роза Кротова вăтам пÿллĕ хыткантарах çăмăл шăм-шаклă хĕр. Тен, ытла та именÿллĕ пулнăран, халь унăн тăрăхларах хитре пичĕ, пиççе çитнĕ хăмла çырли пекех, хĕрелчĕ. Хăйĕн çепĕç сассипе тусĕсене тав тунă хыççăн, вăл сцена çинчен чупнă евĕрлех васкавлăн анса ушкăн хушшинче çухалчĕ.

—Калаçу пурнăçра ырă ят хăварассишĕн пуçланчĕ пулсан, эппин, унран тăруках пăрăнса иртер мар-ха,—терĕ малалла Коля. Унтан вăл çак эрне вĕçĕнче колхозĕпех воскреснике тухас пирки пĕлтерчĕ. —Пуриншĕн те усăллă ĕç. Эрозие хирĕç халех, ырана хăвармасăр кĕрешмелле. Мĕн калĕç пире ачасем ÿссе çитсен, енчен те эпир халь алă усса ларсан, пулăхлă çĕр юрăхсăра тухнине курсан? Паллах, пĕр ÿпкелешмесĕр ирттермĕç. Пирĕншĕн халь кашни лаптăк çĕр ылтăн вырăнĕнче пулмалла.

Залри халăх вăхăтлăха шăпланчĕ, çамрăксем васкамарĕç, пĕр-пĕрин çине ыйтуллăн пăхса, сцена çинчи каччăн сĕнĕвĕнчен, унăн сăмахĕнчен тĕлĕннĕ евĕр, çаплах ха, шухăша кайнăн, вăл тата мĕн каласса кĕтрĕç. Коля та чĕнмерĕ. Тĕрĕссипе, тен, унăн пăлханма та кирлĕ мар? Çĕнахпÿртсене кÿршĕ ял çĕрĕн эрозийĕпе кĕрешме чĕнни те, тен, кăлăхах? Вĕсем Кольăн сĕнĕвне йышăнмасан та нимех

те калаймăн. Анчах та пĕр колхоз çыннисен пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленинчен, пĕр-пĕрне пулăшнинчен пахи мĕн пултăр, мĕн çиттĕр çамрăксем пĕрле пулнине!

-Туссем, —калаçăва хутшăнчĕ сцена çинчен анма ĕлкĕреймен Светлана. Вăл калаçăва хутшăннă май, Кольăн шухăшĕ татăлчĕ, комсомол бюровĕн членĕ, хăйĕн заместителĕ мĕн каласса кĕтрĕ, сисмесĕрех ун еннелле утрĕ. —Туссем,—шухăша путса тепĕр хут каларĕ клуб заведующийĕ,—чăнах та, кӳршĕ ял çамрăкĕсем пысăк та усăллă ĕçе пуçăннă. Ман шухăшпа, çĕнахпӳртсем те вĕсенчен юлас çук.

Залра шăв-шав пуçланчĕ. Сĕнĕве йышăнса та, хирĕçлесе каланă сăмахсем те илтĕнчĕç. Ун пек чух, тавлашура тĕрĕслĕх çуралать, теççĕ. Воскресник пуриншĕн те усăллă ĕç пулнине пĕр-пĕрне ăнлантарнă хыççăн çамрăксем катексемпе килĕшрĕç.

Секретарь çăмăллăнах сывласа ячĕ. Халĕ вăл залри сассене илтмерĕ те тейĕн. Светланăна ачашшăн хулĕнчен тытрĕ. Çак вăхăтра «Березовый сок» юрă янăраса кайрĕ. Коля хĕре зал варрине васкамасăр ташлама илсе тухрĕ. Пĕр-пĕрне тав тунă евĕр, кăштах хăюсăртараххăн куçран пăхрĕç. Юрă вĕсене иккĕшне те шухăша ячĕ.

—Светлана,—терĕ Коля ăна хăй çумнерех чăмăртаса,—сирĕн клубра кашни каçах паянхи пек çамрăксем йышлăн пуçтарăнаççĕ-и?

Лешĕ куçĕ çине усăнса аннă кĕске çӳçне кăштах пуçĕпе сулса хыçалалла ывăтрĕ те каччăна куçран пăхрĕ, тикĕс шурă шăлĕсене кăтартса, кулса илчĕ.

—Кашни каçах,—терĕ. Унăн сасси хаваслă та янăравлăн, кăштах мухтаннă пек тухрĕ.—Пĕлетĕн-и, кунта пуçтарăннисенчен ытларахăшĕ — шкул ачисем, кӳршĕ ялтан килнисем те пур. Темиçе уйăх каялла çеç кичемччĕ, çамрăксем çукпа пĕрехччĕ, пуçтарăнмастчĕç, вĕсен йышĕ хăш чухне вунă çынран та иртместчĕ пулĕ, кино хыççăнах килĕсене саланатчĕç, хирти йывăç пек, пĕчченех тăрса юлаттăм вара пушă çуртра. Куççулĕсене шăлса, ирĕксĕрех алăка питĕрме тиветчĕ, ĕçрен ывăнса таврăннă евĕр, васкамасăр киле утаттăм, чĕре ырататчĕ ял çамрăкĕсем клубран ютшăннине курсан, хăш чухне кашнине килне кĕрсе сĕтĕрсе тухассăм килетчĕ. Хаçат-журнал вулама пуçтарăннинччĕç хăть, çук, каç пулсанах, кăмака хутса, ăшă пӳртре телевизор курма лараççĕ, сенкер экранран шыв сапсан та уйăраймăн. Ĕçе пăрахас шутпа заявлени çырасси

патнех ҫитрӗм. Вӗренни сая кайрӗ тесех шутланӑччӗ, тавах, мана шкул ачисем пулӑшма килӗшрӗҫ. Халӗ кашни каҫах репетицисем irttеретпӗр. Хамӑн ӗҫ ҫынсемшӗн усӑллӑ пулнине туятӑп,—савӑнмаллипех савӑнчӗ Светлана.

Коля та унӑн ӗҫӗ йӗркеленсе кайнӑшӑн хӗпӗртерӗ. Кашни ялтах ҫакӑн пек ҫунса тӑракан ҫынсем пулсан, ун чух пурнӑҫ та йӑлтах улшӑнӗччӗ, лайӑхланӗччӗ. «Мӗнле хаваслӑ кунта!»—юлашки сӑмахӗсене сасӑпах каларӗ каччӑ.

—Ҫапла, хаваслӑ. Анчах сирӗн тусӑра питех илӗртмест пулас пирӗн ушкӑн. Темшӗн вӑл паян пӗрре те яланхи пек мар, тен, ютсенчен именет, килнӗренпе те вырӑнтан хӑпма хӑяймасть,—Саша мӗншӗн кичем пулнине пӗлесшӗн пулчӗ хӗр.

—Ҫук, именнӗрен мар, паян вӑл типӗ тытать, амӑшӗ ташлама хушман ӑна. Ҫавӑнпа ҫеҫ.

—Чӑнах-и? Атя, эппин, ун кичемлӗхне сирер. Роза, чарӑн-ха,—Кольӑран ыйтмасӑрах хӑйсен ҫумӗнчен иртсе пыракан тус-хӗрне тытса чарчӗ вӑл.—Хӑнасем пумилккери пек лараҫҫӗ,—пуҫӗпе Саша енне сӗлтрӗ.—Ташлама чӗн-ха ӑна.

Саша ҫакна пурне те курса тӑнӑскер, Роза хӑй патне пыричченех аллисемпе сулса хирӗҫлерӗ, пичӗ хӗрелсе кайрӗ, намӑса юласран шикленчӗ ӗнтӗ: «Мӗншӗн пӗреххут урамра юлмарӑм»,—хӑйне-хӑй вӑрҫрӗ вӑл. Юрать-ха, тусӗ вӑхӑтра пулӑшрӗ.

—Ҫук, кирлӗ мар, унӑн сӑлтавӗ пур. Анчах та пурне те каласа пама юрамасть. Светлана, эс пӗлсен те ҫитет.

Коля ҫул ҫинче пулса иртнӗ мыскара пирки шӑппӑн хӗр илтмелле ҫеҫ калама пикенчӗ. Светлана чӑтса тӑраймарӗ, каҫса кайсах кулчӗ, хутран-ситрен Саша ҫине пӑхкаласа илчӗ. Лешӗ калаҫу хӑй ҫинчен пынине тӳрех ӑнланчӗ, тусӗ ытлашши нимех те каламаннине чухларӗ, ҫавӑнпа та ячӗшӗн ҫеҫ пӳрнипе юнаса илсе вӗсемпе пӗрле кӑмӑллӑн кулчӗ.

Ташӑсем паян, яланхи пек мар, кая юлса вӗҫленчӗҫ. Чӑнах та, ҫакӑн пек ушкӑнран катексен тӑруках уйрӑлас килмерӗ, клуба хупиччченех вӗсем кӳршӗ ял ҫамрӑкӗсемпе пӗрле пулчӗҫ: савӑнчӗҫ, ташларӗҫ, ушкӑнпа юрӑсем юрларӗҫ.

Ҫулпа тӑвалла хӑпарнӑ чух велосипед кустӑрмисем йывӑррӑн ҫаврӑнчӗҫ. Халь тин васкама та кирлӗ мар ӗнтӗ. Чунра темле, йывӑр ӗҫ хыҫҫӑнхи пек, хаваслӑх ҫиҫрӗ, колхоз ҫамрӑкӗсем воскресника хапӑл тусах йышӑнчӗҫ тесен те юрать. Эппин, шухӑшланӑ ӗмӗт пурнӑҫланӗ, эрне вӗҫӗнче

çамрăксем ушкăнпа ĕçе тухĕç. Халĕ каçхи шăплăхра таçта çити илтĕнмелле хыттăн юрлас, кăшкăрас килчĕ.

—Коля,—çумри машина кустăрми йĕрĕ çине ярăнса тухса унпа танлашрĕ Саша,—куртăн-и, пĕр каçрах икĕ яла çитрĕмĕр. Пĕр колхоз пулин те, тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ пурнăç. Пĕринче çитмĕлмĕш çулсенче пурăнатпăр, тепринче ĕлĕкхиллех, улшăну çукпа пĕрех. Мĕншĕн-ха çапла пулса тухать? Халĕ çуллахи вăхăтра, паллă ĕнтĕ, ытларах çутçанталăк ытамĕнче, уçă сывлăшра пулас килет, пӳлĕм хăтлăхĕ те пит илĕртмест. Анчах та кĕрхи çумăрсем пуçлансан, çара йывăçсем хушшинче тем чухлех пытанса лараймăн. Çавăн чухне, Светлана калашле, килсенче телевизор курса ларасси çеç юлать. Клуб çамрăксене илĕртмест, çавăнпа та унта сайра-хутра çеç пуçтарăнаççĕ. Тăван ял вара вĕсемсĕр тĕксĕм те илемсĕррĕн туйăнать.

—Саша, кунта çамрăксенчен кăна килмест. Пирĕншĕн никам та клубра кашни кун тĕрлĕ концертсемпе спектакльсем лартса памĕ. Ун пек мероприятисем тăтăшах пулччăр тесен, хамăрăн хатĕрленсе пĕр-пĕрин патне хăнана çӳремелле. Ун чухне вара тин ял пурнăçĕ илĕртӳллĕрех, тĕллевлĕрех пулĕ, халăх та час-часах клуба пуçтарăнĕ, унта çӳреме хăнăхĕ. Анчах та концертсене хатĕрленес тесен яш-кĕрĕме пĕлсе ертсе пыраканĕ, вĕсене хавхалантараканĕ кирлĕ. Ун пек çынсем паян кун сахалтарах çав. Акă хамăр ялах илер. Астăватăн-и, çара кайиччен, 10 класс пĕтернĕ пулсан, та клуба каймастăмăр, килте е пĕр-пĕрин патĕнче пуçтарăнсах пушă вăхăта ирттереттĕмĕр: «Мĕн пур унта, чикаркка тĕтĕмĕнчен ытла нимĕн те кураймăн»,-теттĕмĕр. Хĕрупраçсем вара пачах кĕместчĕç, шалта клуб заведующийĕн кăмăлсăрланнă сăн-питне çеç сăнаттăмăр. Чăнах та, вăл çынсемпе ĕçлеме пĕлнинчен нумай килет çав. Лекцисем вара çулталăк хушшинче виççĕ — тăваттăран ытла пулман та пулĕ.

—Чим-ха, мĕншĕн эсĕ темиçе çул каяллине аса илетĕн. Çартан таврăннăранпа хăв халь пĕрре те пулин клуба кĕрсе курнă-и? Çук, паллах пулман. Ку нимех те мар-ха, пĕлетĕн-и тата, ялта кино курманнăранпа шăпах çур çул çитет теççĕ. Юлашки хут Çĕнĕ çул умĕн кăтартнă, ытти пирки калама та кирлĕ мар. Çитменнине тата заведующи клуба хăйĕн пушă вăхăтне кура, хăçан уçас тет, çавăн чухне çеç уçать. Урăх çын тупайманран тытса тăраççĕ ăна. Тĕп ĕçĕ унăн ял хуçалăх управленийĕнче.

Ку сăмахсем Кольăна, чăнахах та, шухăша ячĕç. Тĕрĕссипе, вăл клуб çинчен пĕрре те шутламан. Тен, комсомолецсен пухăвне унта ирттермен пулсан, вăл ун çинчен аса илес те çукчĕ. Ун чухне те заведующи вĕсене çынсем çӳремен тепĕр алăкран çеç кĕртрĕ, юсав пырать, терĕ, анчах та мĕнле юсав, унпа никам та интересленмерĕ.

—Саша, çывăх вăхăтра колхозри комсомолецсен пухăвне ирттерĕпĕр. Шăпах ял пурнăçне лайăхлатасси, клуб ĕçне вăйлатасси çинчен те сăмах хускатăпăр унта. Пухăва хамăр тĕллĕн ирттернипе çеç мар, ялти пур çамрăксене те чĕнĕпĕр. Часах акă шкул ачисем юлашки экзамен тытĕç, кашнин шухăш-ĕмĕтне пĕлмелле. Тен, чылайăшĕ колхозрах юлма кăмăл тăвĕ?

—Ку лайăх шухăш,—килĕшрĕ унпа Саша.

Çапла калаçса татăлнă хыççăн туссем уйрăлчĕç.

* * * * *

Шăматкун Коля правленине пуринчен малтан çитсе ларчĕ, председатель килессе кĕтрĕ. Вăл паян çамрăксене вăрмана кайса хунавсем кăларса килме машина пама шантарнăччĕ. Колхоз пуçлăхĕ ытти кунсенче пуринчен малтан хăйĕн «газикĕпе» çитсе лараканскер, каччăна чăннипех те тĕлĕнтерчĕ, пăшăрхантарчĕ те: вăл çаплипех курăнмарĕ, таçта васкавлă ĕç тупăннă-ши?

Акă ытти специалистсем те килсе çитрĕç. Маша Сынкова бухгалтер, Кольăна курсан, тӳрех ун патне утса пычĕ, темле вăрттăн, иккĕшĕ çеç тума палăртнă ĕç пирки ыйтнăн, шăппăн:

—Ну, мĕнле, председатель хирĕç мар-и? —терĕ.

Хĕр мĕн çинчен ыйтнине каччă çийĕнчех ăнланчĕ, машина пирки ĕнтĕ, каçхинех вĕсем, ушкăнпа пуçтарăнса вăрмана каясси çинчен калаçса татăлнăччĕ-çке-ха. Кĕçĕнреххисем тата, пиччĕшсемпе аппăшсен шухăшне таçтан сиснĕскерсем, хăйсене те çак ĕçе хутăштарма ыйтрĕç, уйрăммăнах кăçал шкул пĕтерекенсем. Вĕсен паян пысăк уяв — экзамен. Çак куна асра хăварас тесе, экзамен хыççăн тем пекех вăрмана каясшăн пулчĕç, кайран хăйсен аллисемпе çамрăк хунавсене ачашшăн тытса, вĕсене палăк евĕр, ĕмĕрлĕхех лартса хăварасшăн.

—Халлĕхе председателе курмасăрах нимĕн те калаймастăп. Ĕнер вăл çирĕппĕн шантарсах каларĕ, виçĕ ял çамрăкĕсем валли машинăсем уйăрса паратăп, терĕ.

—Эпин транспорт пулатех. Николай Филиппович хăй сăмахне çилпе вĕçтерекен çын мар, —каччă иккĕленнине курса ăна лăплантарма тăрăшрĕ Маша.

—Халлĕхе хам та шанăçа çухатасшăн мар-ха, çавăнпа кĕтетĕп.

Николай Филиппович правленине тепĕр çур сехетрен тин çитрĕ. Механик пӳлĕмĕн усă алăкĕнчен комсомол секретарьне курсанах ăна хăйĕн патне кĕме чĕнчĕ. Председатель паян савăнăçлă, вăл Кольăна сĕтел çывăхĕнчи пукан çине ларма сĕнчĕ те çĕкленӳллĕ кăмăлпа ирхинехи çулçӳревĕ çинчен калама пикенчĕ.

—Пĕлетĕн-и, —ашшĕ ывăлĕпе калаçнă евĕр, Кольăпа сăмахларĕ вăл,—кăçал пирĕн тыр-пул лайăх, ăнса пулмалла. Çӳллĕшĕпе халех пĕр шитрен иртнĕ ем-ешĕл калчасене курсан чун савăнать, умра тинĕс хумханать тейĕн. Ăшă та тӳлек кунсем тăраççĕ. Ятарласа этем кăмăлне ăнланнă евĕр, тӳперен хĕвелĕ савса пăхать, санпа пĕрле вĕçен кайăк, тавралăх, тĕнче юрланăнах туйăнать. Анчах та çĕр типет, пĕр тикĕс ӳсекен тыр-пул валли халĕ ăшă çумăр кирлĕ, вăл пулатех, паян пулмасан — ыран,—хăйĕн ыйтăвне хăех хуравласа шанчăкне çухатмасăр савăнчĕ Николай Филиппович.—Çапла вĕт?—Пӳлĕме кĕрсе тăнă колхоз агрономне, Анатолий Владимирович Колпакова асăрхаса каларĕ председатель, ăна та калаçăва хутшăнтарасшăн пулса.

Колпаков калаçу мĕн пирки пынине тӳрех чухлаймарĕ. Çавăнпа кăштах тĕлĕнереххĕн ун çине пăхрĕ:

—Çумăр пирки калаçатпăр-çке, Анатолий,—сĕтел хушшинчи пукан çине вырнаçса ларнă май пĕлтерчĕ председатель.

—А-а, лайăхчĕ те, анчах та ав хĕвел мĕнле хĕртет, çумăр пулассин палли те çук, синоптиксем те шантармаççĕ.

Анатолий Владимировичпа Николай Филиппович çулланнă çынсем. Иккĕшĕ те пĕр класра вĕреннĕ, туссем, вăрçа та пĕрлех кайнă. Сăнĕпе председатель хăй çулĕнчен 4-5 çул аслăрах курăнать. Унăн тĕм хура çӳçĕ йăрăм-йăрăм шурă пĕрчĕсемпе хутшăннă, çара çамкипе куçĕ тĕлĕнче пĕркеленнĕ йĕрсен шучĕ ытларах. Пĕвĕпе вара тусĕнчен пĕр шите яхăн çӳллĕрех. Агроном ырхан шăм-шаклă пулсан, тусĕ вара сарлака та тĕреклĕ. Унăн хура куçĕсем çивĕччĕн, çынна витĕр курас тенĕ евĕр, пăхаççĕ. Сăнĕпе вăл çиллес, сайра-

хутра çеç кулкалать, сасси хулăм, янăравлă, ырă кăмăллăскер.

Анатолий Владимировича сăнран пăхсан хĕрĕх çултан ытла параймăн. Куçĕсем унăн, çамрăксенни евĕр, йăваш та тÿрех çынна шанса пăхаççĕ, кăштах чĕрне вĕççĕнтереххĕн пусса çемçен те вĕттĕн ярăнса утать. Председательпе агроном иртенпе хир тăрăх çÿресе ывăннă пулмалла. Халĕ вĕсем пукан çине ларнă май урисене, рингри боксерсем пек, кăшт тăсарах вырнаçтарса хучĕç. Калаçу майĕпен комсомолецсен пуçарăвĕ çине куçрĕ.

—Анатолий Владимирович,—агроном еннелле çаврăнарах ларса сăмахне пуçларĕ председатель,—пирĕн çĕнĕ секретарь ĕçе хăюллăн тытăнчĕ. Колхозри пур çамрăксене те, Киремет тытасран шикленмесĕрех, унпа кĕрешме чĕнет, ваттисен сăмахĕсем хăйсене хирĕç пуласран та шикленмест,—кăштах шÿтлесе илчĕ вăл.

—Илтнĕччĕ-ха эпĕ, чăнах та, кирлĕ ĕç, анчах та,—Николай Филиппович çывăхнерех шуса ларчĕ агроном,—Киремет пирĕн, юханшыв пек, хăйĕн характерне уçса памасть, е тăруках типсе ларать, е çуркунне-кĕркунне урмаллипех урса, çĕршер кубометр пулăхлă çĕре юхтарса çырма-çатрана сарать. Тен, ăна бетонласан авантарах пулмĕ-ши, вара малалла ишĕлме пăрахĕччĕ.

—Кун пирки эпир пĕр кун çеç шутламан ĕнтĕ. Анчах та шыв çулĕсем пире кĕтмеççĕ-çке, çулран-çул чĕрене çĕçĕпе чикнĕ евĕр татах та çĕнелсе, юпленсе, тарăнланса пыраççĕ. Ман шухăшпа, халлĕхе çыран хĕррипе темиçе рет йывăç лартса тухмалла. Шыв пухăнакан вырăна вара, эсĕ калана пек, бетонлани тĕрĕсрех пулĕ. Паллах, çамрăксен сĕнĕвне ырламалла. Вĕсем Киремет çыранĕсене йывăç лартнисĕр пуçне тата унăн юпписене çатанласшăн, унсăрăн каллех усси сахал пулĕ, теççĕ. Киреметĕн кашни юппи халь тарăн çырма пек курăнать.

Пÿлĕм пĕр вăхăт хушши шăпланчĕ. Николай Филиппович умĕнче выртакан кăранташне илсе шухăшлăн сĕтеле шаккарĕ.

—Анатолий Владимирович, Николай Сергеевич,—лăпкăн пуçне çĕклесе пĕрре Коля çине, тепре агроном çине пăхса илчĕ председатель,—манăн тата тепĕр сĕнÿ пур, пĕлместĕп, йышăнатăр-ши эсир ăна? Енчен те эпир Киремет çырмине тимĕр пăрăхĕ хурса пĕвелес пулсан, пурпĕрех пирĕн çитес çулсенче кĕпере тĕпрен юсамалла, унăн сăвайĕсем те, хăмисем те шанчăкран тухнă темелле, машинăпа иртсе

çӳренĕ чухне хăрушла силленет. Пăрăхсене вара уçăлса хупăнмалла тума май пур. Çуркунне вĕсене хупса çырмана шыв тултарăпăр. Çывăхри фермăсемпе ялти ĕç мĕн чухлĕ çăмăлланнă пулĕччĕ. Çуллахи типĕ вăхăтра выльăх-чĕрлĕхе шăварас тесе Пăлана çитиччен хăвалатпăр. Пахчари улма-çимĕç валли те шыв йăтма меллĕ пулать. Халĕ ав çӳлтикассем епле асапланаççĕ, шывшăн ăçта çити утаççĕ. Çапла тусан пыра-киле пушара хирĕç те кĕрешме пулать, шыв çывăхра пулни пуриншĕн те лайăх. Хальхи тарăн та тăмлă çырансем шывпа тулĕччĕç, унăн икĕ айккипе çамрăксем лартнă йывăççем ешерĕç, тырă-пулă хумханĕ. Ялта, курортри пек, пирĕн те хитре вырăн пулĕ, ватти-вĕтти çуллахи лăпкă каçсене, пушă вăхăтне унта ирттерĕ. Вĕсен умĕнче лăпкă шыв чӳхенĕ.

—Коля, ĕмĕтленме пултаратăн, пĕр сăмахпа каласан: романтик. Çакнашкал сĕнӳсемпе сан колхоз правленинче мар, пĕр-пĕр Советсен çуртĕнче лармалла. Тĕрĕссипе каласан, ĕмĕтӳ ырă, хирĕçлеме çук,—мухтарĕ тусне агроном.

Николай Филиппович пуканĕ çинчен çĕкленсе пӳлĕм тăрăх уткалама пуçларĕ. Чӳрече умĕнче чарăнса, хăй ĕмĕтне курас тенĕ пек, урамалла тинкерчĕ. Колхозниксен пурнăçне лайăхлатассишĕн, ял илемне ӳстерессишĕн унăн пуçĕнче ĕмĕт хыççăн ĕмĕт çуралчĕ, чуна савăнтарчĕ. Çакăн пек ĕçлĕ калаçура пуçланать те ĕнтĕ телейлĕ, савăнăçлă пурнăç. Енчен те кил хуçине пуласлăх илĕртет пулсан, вăл ăна пурнăçлассишĕн вăй-халне шеллемесĕр тăрăшать.

—Коля,—хальхинче ятран чĕнчĕ вăл каччăна,—эсĕ транспорт пирки пĕлесшĕн пулас. Эпĕ Быков механика ĕнер каçхинех комсомолецсен шухăшне пĕлтернĕччĕ, машина кăнтăрлахи апат хыççăн пулатех, терĕ.

Николай Филиппович телефон трубкине илсе трактор паркне шăнкăравларĕ. Лерен нумай кĕттермерĕç, трубкине часах илчĕç пулмалла.

—А-а, Петр Михайлович! Шăпах эсĕ кирлĕччĕ те мана. Мĕнле унта çамрăксем валли машинăсем уйăрнă-и?

Трубкăран Петр Михайлович мĕн хуравланине Коля илтмерĕ, çапах та унăн сăмахĕсенчен вăл пĕтĕмпех ăнланчĕ. Эппин, Николай Филиппвич каланă евĕрлех, кăнтăрла хыççăн машинăсем пулаççĕ. Каччăн пит çăмартийĕсем тăрăх хаваслăх шевлийĕ чупса иртрĕ. Председатель трубкине хучĕ. Те калаçу вĕçленнине туйса, те хăйĕн ĕçĕпе васкаса, агроном пӳлĕмрен тухма тăчĕ.

—Анатолий Владимирович,—тăруках чарчĕ ăна председатель,—ан васка-ха, эпир тата тепĕр ыйтăва татса паман.

Агроном каялла таврăнчĕ. Коля та, вăл та калаçу мĕн пирки пуласса чухлаймарĕç-ха.

—Толя,—яланхилле лăпкăн пуçларĕ колхоз пуçлăхĕ,—ман шухăшпа, секретарь валли пирĕн пĕр пӳлĕм тупса памалла, кашни комсомолецпа урамра кăна курса калаçсан, ĕç малалла каймасть, унăн çамрăксемпе пĕрле пуçтарăнса канашламалли кашни кунах тупăнать.

Анатолий Владимирович самантлăха председателе пӳлчĕ:

— Эпир ун валли юрăхлă пӳлĕм тупайăпăр-ши?

Секретарь унăн лăпкă сассине илтсен, агроном хирĕç маррине тӳрех ăнланчĕ, çавăнпа калаçăва тăруках хутшăнмарĕ.

—Эпĕ бухгалтерсен çумĕнчи пушă пӳлĕме уйăрса пама сĕнесшĕн. Халĕ вăл склад пекех, унта пĕтĕм ăпăр-тапăра пуçтарса хунă: пуртă, кĕреçе, витре, шăпăр тата ытти те. Çав япаласем валли хăмаран çапса ятарласа сарай тумалла. Пӳлĕмне кăштах юсасан, вăл хĕлле те ăшă пулать. Çуса тасатсан, стенисене секретарь хăйне кăмăла кайнă пек илемлетĕ, комсомолецсем вăл енĕпе кая юлаканах марччĕ, председатель пӳлĕмĕнчен те хăтлăрах пулĕ.

—Эпĕ хирĕç мар, сĕтел-пукансăр пуçне, телефон та кирлĕ пулать,—йăвашшăн хушса хучĕ агроном.

—Паллах,—тусĕпе пĕр шухăшлă пулчĕ пуçлăх.

Коля ку калаçăва ура çине тăрса итлерĕ, ăшĕнче савăнчĕ. Чăнах та, пӳлĕм кирлех, анчах та председатель калаçăва хăй пуçарман пулсан, вăл ун пирки ыйтма хăйĕччĕ-ши? Ытла та тăрăшуллă, хуçалăхра пĕлсе ĕçлекен çын иккен Николай Филиппович.

Председатель хăй сăмахне улăштармарĕ. Кăнтăрлахи апат хыççăн правлени умне «ГАЗ-52» маркăллă машина çитсе чарăнчĕ, руль умĕнче Саша Кошкин иккен:

—Ну, мĕнле, начальник юлташ, час каятпăр-и?—кабинăран пуçне кăларса ыйтрĕ вăл.

—Часах, тусăм, часах. Акă майĕпен пуçтарăнаççĕ те ĕнтĕ,—аялти урамран кĕреçесемпе пуртăсем йăтнă çамрăксем çинелле тĕллесе кăтартрĕ Коля.—Кӳршĕ ялсем çитиччен пухăнса ĕлкĕресчĕ, унсăрăн ĕçе пуçаракансем хăйсем юлса çӳреççĕ, тейĕç.

Саша кабинăран тухса Кольăна алă пачĕ. Вĕсем кĕпĕрленсе хăпаракан 8-мĕш класра вĕренекен ачасем еннелле тинкерчĕç.

—Хăвăртрах, хăвăртрах,—хавхалантарчĕ Саша , лешсем чылаях çывхарсан.—Халех каятпăр.

Шкул ачисем ăмăртмалла тенĕ пек машина кузовĕ çине хăпарса ларчĕç. Часах йĕтемпе арман енчен татмăшсемпе çĕнĕахпӳртсен машинисем çăмăллăн ярăнса анчĕç. Ачасем вĕсене курсанах: «Килеççĕ, килеççĕ!»—тесе кăшкăрчĕç. Кузов çинчен сиксе анса хирĕç чупма хатĕр пулчĕç вĕсем.

Тепĕр самантран урамăн икĕ вĕçĕнчен икĕ машина çитсе чарăнчĕç. Çамрăксен хавaслă та уçă сассисем таçта çити аякка саланчĕç.

Секретарь кӳршĕ ялтан килнĕ машинăсем патне пычĕ те хаваслă сасăпа:

—Эпир сире пирĕнсĕрех кайнă пуль тесеччĕ. Ирех канăçа çухатрăм, ну, лекет ĕнтĕ мана паян кая юлнăшăн кӳршĕ ялсенчен, мĕнле сăмах каласа тӳрре тухмалла-ши, тесе шухăшлаттăм. Эппин, пурте пĕрле каятпăр.

—Паллах, пĕрле. Ушкăнпа хаваслăрах та, шанчăклăрах та,—илтĕнчĕç сасăсем.

—Апла пулсан кайрăмăр, васкамалла, каç пуличчен каялла çитесчĕ.

Машинăсем пĕрин хыççăн тепри, газ парса, вырăнтан тапранчĕç. Коля моторсен сассине хуплас тенĕ евĕр, аллипе сулса татах та темĕн кăшкăрчĕ, анчах та ун сăмахĕсене хăй ларса пыракан машинăрисемсĕр пуçне никам та илтеймерĕ. Вăл юрлама чĕнчĕ. Кунта ытларах шкул ачисем пулсан та, вĕсем çине пăхсан, чун савăнчĕ. Пурте, хĕрупраçĕ те, арçын ачасем те, спорт тумĕпе, урисене атă тăхăннă. Хĕвелпе пиçе пуçланă пичĕсем çинче хаваслăх шевлийĕ çиçет. Урамра тĕл пулакан çынсенчен хăшĕ-пĕри çамрăксем ăçта кайма çула тухнине чухлаймарĕ те пулĕ, çапах та вĕсем ырă ĕç пуçарнине туйса, чарăнса тăрсах телейлĕ çул сунчĕç.

Кăкăра уçăлтармалла хирĕç вĕрекен ăшă çил юрă сассине таçта аякка-аякка илсе кайрĕ, ытти ял халăхĕсене хавхалантарса, хăйсен хыççăн чĕнчĕ. Чун-чĕре хавасланнă чух вăхăт хăвăрт иртнине те сисместĕн. Часах Шăмăршă вăрманне çитрĕç. Шалтан-шала кĕнĕ май умра ланкамаллă çул пуçланчĕ. Кустăрмасем пĕрре аялалла, тепре çӳлелле хăпарчĕç, машина моторĕсем çавăн майлах нăйлатрĕç. Йăлкăшса савăнăçлăн çиçекен хĕвел çутине çӳллĕ йывăçсем хупларĕç. Яш-кĕрĕмĕн юрри, вăрмана кĕрсен, татах та уççăн,

янӑравлӑн илтӗнчӗ. Сӑмахсем, алла вӗреннӗ кайӑк пек, вӑрман ҫийӗн вӗҫсе ҫаврӑнса, каялла хуҫи патне таврӑнчӗҫ, тутлӑ шӑршӑ саракан хырсем юрӑҫӑсене тав турӗҫ, вӗсем патнелле, пӗчӗк ача пек, ачашланса, тураттисемпе туртӑнчӗҫ, хӑйсен уҫӑ сывлӑшне хӗрхенмесӗр пит-куҫран, сӑмсаран тӗксе, шӑршласа пӑхма сӗнчӗҫ, иртен-ҫӳренсем чарӑнманнишӗн кӑштах кӳреннӗ пек пулчӗҫ.

Асфальтлӑ ҫулран сылтӑмалла пӑрӑнса пӗр ҫухрӑм ҫурӑ пек шалалла кӗрсен, уҫӑ вырӑнта каллех хӗвел ҫути йӑлкӑшрӗ. Ку вырӑнта темиҫе ҫул каялла шурлӑхлӑ вырӑн пулнӑ. «Ҫынсем ҫак вырӑнта мӑк кӑлараҫҫӗ иккен»,— шухӑшларӗ Коля. Тата кӑштах кайсан, машинӑсем умлӑн-хыҫлӑн чарӑнчӗҫ, вырӑна ҫитнине пӗлтерсе, вӑрӑммӑн кӑшкӑртрӗҫ. Кузов ҫинчи ҫамрӑксем пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫӑмӑллӑн сиксе анчӗҫ, хӑвӑртрах ӗҫе пуҫӑнасшӑн пулчӗҫ. Коля вӗсен хастарлӑхӗшӗн чунтан савӑнчӗ, кашнинех ырӑ ӑшӑ сӑмах каласа тав тӑвас килчӗ.

—Пӑх-ха, Саша, шкул ачисем пулин те, мӑн ҫынсем евӗрлех ӗҫчен,—тусӗпе савӑнӑҫне пайламасӑр чӑтаймарӗ секретарь.

—Шкул ачисем тетӗн. Тепӗр ик-виҫӗ эрнерен кашнийӗ хӑй тӗллӗн пурӑнма пуҫлӗ, колхозран ҫеҫ вӗсене тартас марччӗ,—аллине кӗреҫе илсе тусӗнчен, ушкӑнран юласшӑн пулмасӑр хыпаланчӗ вӑл.

—Тӑрӑшӑпӑр, Саша...

Чӑнах та, паянхи ӗҫре саккӑрмӗшпе вуннӑмӗш класс пӗтерекенсем те пулчӗҫ. Вӗсене никам та вӑрмана килме хистемен. Эппин, ачасем хӑйсем хыҫҫӑн яланлӑх асра юлмалли ырӑ ӗҫ хӑварасшӑн. Ҫакна мухтамалла ҫеҫ.

Вырӑнӗ шурлӑхлӑ пурнӑран, тӳпери хӗвел куллен хӗртсе пӑхсан та, ҫӗр типсе ҫитеймен-ха. Тен, ҫӑвӗпех ҫапла кунта халӗ те вӑл резина губка евӗрлех, пусмассерен лапчӑнать, ура айӗнче вара пӑчӑртанса шыв пуҫтарӑнать, атта ҫӗклесенех йӗр каллех сӑрхӑнса ҫухалать.

—Вырӑнӗ ҫав тери лайӑх, турат касма та, йывӑҫ кӑларма та меллӗ,—сӑмах хушрӗ Саша.

—Тен, сан пек ҫивӗч куҫлӑ шоферсем пулмасан, эпир ҫак тӑрӑха нихӑҫан та шыраса тупаймастӑмӑр. Ахальтен каламаҫҫӗ иккен, нушана лексен шофертан ыйт, мӗн кирлине вӑл пурне те тупать, унӑн пур ҫӗрте те паллакан пур, ӑна кашни юпа, кашни тунката паллать тесе. Тӗрӗсех иккен.

—Хăвăн шухăшна ӳстерсе калатăн, секретарь. Халиччен эп кун пек сăмахсене илтменччĕ-ха, çапах та эсĕ каланинче çурри тĕрĕс те пулĕ,—шенкер куçĕсене ялкăштарса вĕсене чеен хĕсрĕ Саша.—Чим-ха, мĕн усăсăр пакăлтататпăр. Çынсем авă ĕçе те пикенчĕç,—хăйĕн утăмне хăвăртлатрĕ вăл,—васкамалла.

Кĕреçисене хулпуççи çине хурса, вĕсем иккĕшĕ те йывăççем хушшине чупса кĕчĕç.

—Коля,—сĕнчĕ ăна Саша,—ытларах яштака хурăн тĕпĕсем шыра. Ӳссе çитсен, чипер хĕрсене çупăрланă евĕр, вĕсене ыталама май килтĕр!

Хаваслăн кăшкăрашса, ăмăртмалла ĕçлекен çамрăксен сасси чылайччен шăпланмарĕ. Вĕсем, вăрмана каç сĕмĕ çапсан çеç, нӳрлĕ çĕрпе йывăрланнă кĕреçисене пăрахса, чĕркуççи таранах пылчăкпа вараланнăскерсем, пĕр çĕре пуçтарнă тымарлă йывăççене тата каснă туратсене машинăсем çине тиерĕç. Пурте пит çăмартисем хĕреличчен, çурăм тарличченех ĕçлерĕç. Ĕнтĕ киле кайма та вăхăт çитрĕ, çапах та вăрманпа уйрăлас килмерĕ, хĕрупраçсем каллех усланкă еннелле чупрĕç. Вăхăт шурĕ, кузов çинче юлнă каччăсем кĕтсе те ывăнчĕç, лешсем çаплах-ха курăнмарĕç. Ĕçпе тарланă çан-çурăма усă çил çӳçентерни хăвăртрах яла каймаллине систерчĕ. Хĕрсем хăш вырăнта çӳренине никам та чухлаймарĕ, маларах янăранă сасăсем те тек илтĕнмерĕç.

Машина çывăхĕнчисем тата кузов çинчисем усланкă еннелле тинкерчĕç.

—Ирччен те кĕтсе илейместпĕр пулĕ,—сăмах хушрĕ пĕри.

—Шырама каймалла мар-ши?—ыйтрĕ тепри.

Çапла сăмахласа кĕтнĕ хушăра виççĕмĕшĕ:

—Килеççĕ,—терĕ.

Йывăççем хушшинчен хĕрсен ушкăнĕ кĕпĕрленсе тухрĕ. Аллисенче кашнинех пысăк чечек çыххисем. Кĕтекенсем вĕсене курсан, кăштах кăмăлсăр пулса мăкăртатрĕç.

—Тупнă вăрттăнлăх, пире пĕлтернĕ пулсан, ушкăнпа икĕ хут ытларах татнă пулăттăмăр.

Хĕрсем каччăсем кăмăлсăрланнине туймарĕç те тейĕн. Хаваслă, янăравлă сассисемпе, калаçса татăлнă евĕр, чарăнса тăрсах: «юратать, юратмасть, юратать, юратмасть... юратать...» тесе васкамасăр чечек çуначĕсене татрĕç. Тахăшĕ, пуринчен малтан хăй шăпине пĕлнĕскер ĕнтĕ:

—Эпир хăвăр тавçăрасса кĕтнĕ. Мĕнле каччă вăл, хăйĕн умĕнчи хӳхĕм чечек пек ӳссе çитнĕ хитре хĕре курмасть пулсан,—терĕ.

Калаçу ытла та шала кĕресрен шикленнĕрен Коля хăвăрттăн ура çине сиксе тăчĕ те хĕрсене кузов çине хăпарма пулăшнă май:

—Эсир пире кăмăлланине чечек çуначĕсене татса пăрахмасăрах туятпăр. Çавăнпа та халь акă хăвăра вĕсемпе танлаштарнине курсан, малашне сирĕнтен пăрăнса иртмĕпĕр. Паянхи тĕлпулу асăмăрта пĕр-пĕринпе паллашнă кун евĕр юлтăр. Çапах та куçа савăнтармалла ӳсекен илеме татма хăю çитеймест. Çапла хăтланни хитре хĕрача чунне ыраттарнăнах туйăнать,—терĕ вăл кăштах сассине çемçетсе.

—Коля, санăн сăмаххусем пĕр юрра аса илтереççĕ. Хĕрсем, атьăр паçăрхи пек каллех ушкăнпа юрлар,—каччăсен кăштах тĕксĕмленнĕ кăмăлне уçас шутпа вырнаçса ларнă-ларманах сĕнчĕ Çĕнĕ Ахпӳртĕн клуб заведующийĕ:

Улăхра курсан чечек
Ешĕл çуркунне,
Ан васка эсĕ татма
Пăхма хитрине.

Хĕрупраççем çакна кĕтсе çеç тăнăн, пурте унпа пĕрле юрлама пикенчĕç. Часах вĕсен çумне каччăсен сассисем те хутшăнчĕç, вăрман хаваслă кĕвĕ сассипе тулчĕ.

Шăмăршăпа Кивĕ Катек хушши 20-25 çухрăмран ытла мар пулин те, яла машинăсем тĕттĕмленсен тин çитрĕç. Паянтан шкул ачисен çуллахи каникулĕ пуçланчĕ. Çавна май ашшĕ-амăшĕсем вĕсене урама тухма чармарĕç, лешсем çавна кăна кĕтнĕ тейĕн, уçă сывлăшра хаваслă сасăпа кăшкăрашса, пĕр-пĕринпе тытмалла е пытанмалла вылярĕç. Ял хушшинче транспорт сахал çӳренĕрен, ачасем çул тăрăх чупма та питех шикленмерĕç. Анчах та кĕпер енчен умлăн-хыçлăн темиçе машина курăнсанах, вĕсем пĕр çĕре пуханнă чăх-чĕпсем йытăран хăранă пек, çул варринчен чăл-пар тĕрлĕ еннелле чупса саланчĕç. Те кузов çинче камсем тăрса килнине тавçăрса илсе, те пиччĕшĕсемпе аппăшĕсене тахçантанпа кĕтсе ываннăран, пĕр ушкăн ача машинăран юласшăн пулмарĕ, вĕсен хыççăн Киремет еннелле чупрĕ, анчах та темĕнле тăрăшсан та хăваласа çитеймерĕç. Вĕсем чупса çитнĕ çĕре машинăсене пушатма та ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Татмăшсем чарăнса тăмарĕç, пурпĕрех ĕçе ыран хăйсен ялĕ енчен пуçламалла, çавăнпа та йывăççене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна темиçе хутчен куçарас мар, терĕç. Çĕнахпӳртсем те, кунти ĕçе вĕçлесенех, сад çуммипе хăйсен ялне васкарĕç.

Саша та машинине каялла ҫавӑрнӑччӗ ӗнтӗ, ҫынсем вырнаҫса ларасса кӗтетчӗ, шӑпах ҫак вӑхӑтра вӗсем патне паҫӑр урамра вылякан ача-пӑча ушкӑнӗ чупса ҫитрӗ, хӑюллӑраххисем, кабина патне пырса, лартма ыйтрӗҫ, ыттисем айккинче пӑхса тӑчӗҫ.

—Лартмалла-ши, лартмалла мар-ши ҫак шӑпӑрлансене?- иккӗленнӗ пек пулчӗ шофер, ӳркенмен вӗт, ӑҫта ҫити чупса килнӗ,—унтан кулса илчӗ те,—лартса каймах тивет пуль, хамӑр ялсем вӗт, ну, хӑвӑртрах хӑпарса ларӑр,—хушрӗ вӑл вӗсене.

«Шӑпӑрланӗсем» ҫак сӑмахсене илтессе чунтан хумханса кӗтнӗскерсем, хирте пӗччен тӑрса юласран шикленсе пӗр-пӗрне тӗрткелесех, васкаса кузов ҫине хӑпарма тӑрӑшрӗҫ. Чи пӗчӗкки, пӗвӗ ҫитменрен пулас, аллисене тӑсса хӑйне аслисем пулӑшасса кӗтрӗ. Ҫакӑн пек лару-тӑрура куҫҫуль кӑларсан, тата лайӑх пулӑшасса пӗлекенскер, вӑл кӗтмен ҫӗртен сасӑпах макӑрма пуҫларӗ. Ку, чӑнах та, аслӑраххисемшӗн кулӑшла пулчӗ. Саша кабинӑран тухрӗ. Пурне те курса тӑнӑскер, вӑйлӑ аллисемпе ӑна йӑтса илчӗ те:

—Хӗрсем, тытӑр, каччӑ вӗт,—терӗ.—Ыран ак пирӗнпе воскреснике те тухӗ-ха, курсах тӑрӑр.

Коля ӗҫрен таврӑннӑ чух ашшӗ килтеччӗ. Вӑл шухӑша путса диван ҫинче тунсӑхласа ларатчӗ, ывӑлӗн сассине илтсен те вырӑнтан тӑруках тапранмарӗ, хӑйӗн яланхи лӑпкӑ сассипе ҫеҫ:

—Ҫимелли плита ҫинче,—терӗ.

Пилӗк таран салтӑнса Коля картишне ҫӑвӑнма тухрӗ. Ӗнер ҫеҫ-ха вӑл пӳртри умывальнике тула кӑларса ҫакнӑччӗ. Ҫуллахи кун пӳртре шыв шӑпӑртаттарни лайӑх мар ӗнтӗ, урайне йӗпетесрен те асӑрханма тивет, картишӗнчех лайӑх: кӑмӑл туличченех шыв сирпӗтсе ҫӑвӑнма пулать. Тепӗр пилӗк минутран вӑл каялла таврӑнчӗ. Ашшӗ ҫаплах-ха хӑй вырӑнӗнчех ларать. Коля алшӑллипе шӑлӑнса типӗннӗ май ун ҫумне вырнаҫрӗ.

—Атте, эсӗ чирленӗ пулмалла, сӑну-питӳ темле улшӑннӑ санӑн,—терӗ.

Сергей Иванович кӑкӑрӗ умне хуҫлатса тытнӑ аллисене вӗҫертсе вырӑнтан ҫӗкленчӗ:

—Сана туйӑнать кӑна пуль, атя-ха, малтан каҫхи апат тӑвар,—терӗ вӑл ним пулман пекех.—Кайран калаҫӑпӑр. Пӗччен чух ҫиес килмест.

Вӗсем кайри пӳрте кухньӑна тухрӗҫ.

—Ну, мĕнле ĕçлерĕç унта паян пирĕн шкул ачисем?— кăсăкланчĕ Сергей Иванович.

—Нимĕн те калаймăн, чăн-чăн комсомолецсем пек. Ыран каллех ушкăнпа воскресник тухатпăр, терĕç.

—Ĕçре ӳркенмеççĕ, çакăншăн мухтамалла çеç. Анчах та эсĕ паян вĕсене пĕрремĕш экзамена пурте ăнăçлă панă ятпа саламлама та мантăн пулĕ-ха, çапла-и? Ку вара аван мар, секретарь. Ĕçе явăçтарни лайăх-ха вăл, çапах та экзаменсем вăхăтĕнче тепĕр хут чăрмантарма кирлĕ мар, вĕренччĕр,—ăс пачĕ ывăлне вăл.

Калаçу майĕпен килти хуçалăх çине куçрĕ. Чăнах та, амăшĕ çукки çемьешĕн пысăк хуйхă ĕнтĕ, çав вăхăтрах чăрмав та: иккĕшĕ те ирех ĕçе тухса каяççĕ, выльăх-чĕрлĕхе пăхакан çук. Шкулта экзаменсем пĕтсен, ашшĕ пушанать-ха, унччен пĕр уйăха яхăн кĕтмелле-çке, кил-çурт хуçасăр юлнăпа пĕрех.

—Паян кӳршĕ Маня ĕне сума каçрĕ. Те хĕрарăма çеç курма хăнăхнăран, мана вăл хăйĕн çывăхне те ямасть, тапать,—кулма хăтланчĕ Сергей Иванович.—Аннӳрен çаплах-ха пĕр хыпар та çук. Эсĕ çак кунсенче ун патне кайса килеймĕн-ши, тетĕп. Эпĕ ерçейместĕп, экзаменсем йышăнмалла. Тен, аннӳн пире мĕн те пулин каламалли те пур. Шупашкара илсе кайнă чухне те тĕл пулаймарăмăр. Ăнланатăп-ха, санăн та ĕçӳ мăй таранах хутшăнчĕ. Пĕлместĕп, хăçан курнăçăпăр-ши унпа?

Коля, ашшĕн кичемленнĕ питне курсан, нимех те чĕнмерĕ, чылайран тин:

—Эпĕ тунтикун председательпе калаçса пăхăп, Николай Филиппович ăнланакан çын. Тĕрĕссипе каласан, çак ыйтупа тăруках ун патне пыма та аван мар пек, ĕçлеме тытăнни те пĕр эрне çеç, çапах та аннепе курнăçмаллах, килти хыпарсене пĕлсенех вăл, тен, хăйне аванрах туйма пуçлĕ, хăвăртрах сывалĕ.

Коля урама тухмарĕ. Кунĕпе ĕçлесе ывăннăскер, вырăн çине выртнă-выртманах тĕлĕрме пуçларĕ. Сергей Ивановичăн вара ыйăхĕ килмерĕ, аптранипе вăл тăрса урама та тухса уçăлса çӳрерĕ, анчах та пӳрте кĕрсе выртсан, çав-çавах куç хупасси пулмарĕ. Кашни тăмассерен, ашшĕ, пĕчĕк ачана пăхнăн, ывăлĕ урисемпе тапса сирнĕ утиялне тӳрлетрĕ, анчах та месерле сарăлса выртнă Коля, вăл кăшт пăрăнсанах, ăна юри йĕкĕлтенĕ пек, каллех хăйĕн çинчи çивиттине сирсе, çара ӳтне кăтартса выртрĕ.

—Пӳртре пăчă пулĕ?—тавçăрса илчĕ те Сергей Иванович, вара ун патне тек пымарĕ, чăрмантармарĕ, тĕпелти чаршав хыçне хăйĕн вырăнĕ çине кайса выртрĕ, ыйăхĕ килменрен, Леоновăн «Вырăс вăрманĕ» кĕнекине алла илчĕ. Сехет юпписем чаклатса вăхăт хăвăрт шунине систерчĕç. Вăл çаплах-ха страница хыççăн страница уçрĕ, çывăрма вăхăт иккенне те туймарĕ. Каштари автансем паçăрах çунат çапса авăтрĕç, çур çĕр иртнине систерчĕç ĕнтĕ. Халĕ шăпланса каллех ирхи ыйха путрĕç темелле. Уçă чӳречерен варкăш çил вĕрчĕ, кассăн-кассăн лăпкăн хумханакан çĕмĕрт çеçки шăршине пӳртелле сапаларĕ, кăкăра уçăлтарса, кăштах сăмсана кăтăкларĕ. Урамран çамрăксен сасси те илтĕнме пăрахрĕ. Вĕсем мăшăрăн-мăшăрăн килĕсене саланчĕç те пулĕ. Халĕ хăшĕ-пĕрисем, тен, çын куçĕнчен пытанса, пĕр-пĕрне юратни çинчен ăнлантараççĕ? Сергей Иванович, хăй ялта çуралса ӳснĕскер, çамрăксен йăлине аван пĕлет. Вăрçа кайиччен вăл та час-часах ял-йыш кĕтӳ хăваланă чух çеç килне таврăнатчĕ. Талăкĕпех çывăрман вăхăтсем те пулнă унăн. Кăнтăрла, хĕвел ăшшинче лăштăрах пулса çитнĕскерĕн, чăтма çук çывăрас килетчĕ, анчах та хĕвел анса тавралăха каç сĕмĕ çапсанах, çăвăнса тасалнă хыççăн, пурне те манса, каллех çамрăксен ушкăнĕ енне васкатчĕ.

Пĕр вăхăт хушши кĕнекерен хăпса, кантăк патне пырса урамалла тинкерчĕ. Хĕвелтухăç хĕрелме ĕлкĕреймен-ха, пĕлĕт те кăштах тĕксĕмреххĕн курăнать. Урамсем пушă та лăпкă. Ял-йыш тутлă ыйхăпа çывăрать. Акă вĕсен тĕлĕнче шурă кĕпеллĕ каччă чарăнчĕ, куçĕсемпе такама шыранăн, вĕсен çурчĕ еннелле тинкерчĕ, темĕн каласшăн пулнă евĕр, шухăша кайса тăчĕ, анчах та вăхăт нумай иккенне сисрĕ те, каллех савăнăçлă кĕвĕ шăхăрса, тин çеç сывлăм ӳкнĕ урампа аналл утрĕ.

Сергей Иванович сасă кăларма шикленчĕ. Уçă кантăк умĕнче, пĕчĕк ача пек ĕмĕтленсе, чĕнмесĕр ларчĕ. Çĕмĕрт туратти, ăна алă парасшăн пек, пӳртелле туртăнчĕ, хăй патне илĕртрĕ. Вăхăт çаплах-ха чарăнмасăр шурĕ. Часах турат çинчен шăпчăксен çепĕç юрри илтĕнчĕ: «Кил кунта, мĕн кичеммĕн ларатăн тунсăхласа»,—тенĕнех туйăнчĕç. Тен, Сергей Иванович сада тухма та хатĕрччĕ, анчах та алăк патĕнчи вырăн çинче выртакан Коля сасси ăна тытса чарчĕ. Ывăлĕ ыйăхĕ тĕлĕшĕпе пĕр енчен тепĕр енне çаврăнса выртрĕ те темĕн мăкăртатса илчĕ, вĕсен хушшинче «Саша, кĕреçе» тенĕ сăмахсем уççăнах илтĕнчĕç. Вăл тата темĕн

пирки сӑмахларӗ, анчах та ашшӗ ытти сӑмахсене ӑнланаймарӗ:

«Саша, тетӗн, тусу санӑн тин ҫеҫ урамран таврӑнчӗ. Эсӗ ҫамрӑк пуҫупа ҫывӑрса выртатӑн, ҫапах хӑвна каччӑ, салтак, тетӗн,—кӑштах кулам пекки турӗ вӑл ӑшӗнче.—Хӗр шухӑшӗ те санӑн ҫук, ыйӑхра та ӗҫпех аташатӑн,—шеллес килчӗ унӑн ывӑлне. Юлашки сӑмахӗсем ӑна хӑйне те шухӑша ячӗҫ.—Ӗҫшӗн канӑҫсӑрланса тӗрӗсех тӑватӑн-ха, ывӑлӑм. Саншӑн ыран йывӑр кун пулӗ, хӑвӑнах тӗслӗх кӑтартма тивет, пурте сан пек пулма тӑрӑшӗҫ. Пирӗн колхоз ҫыннисем вӗри, вӗсем тӗрӗсмарлӑха курсан нихӑҫан та айккинче чӗнмесӗр пӑхса тӑмаҫҫӗ, ӗҫе юратакана, ял халӑхӗшӗн тӑрӑшакана ҫеҫ кӑмӑлласҫӗ. Колхозра та, аннӳ пек, маттур та хастар пулма тӑрӑш. Санӑн ӗҫӳ, чӑнах та, пуриншӗн те усӑллӑ пултӑрччӗ»,—ҫак сӑмахсемпе вӑл лӑпланса вырӑн ҫине кӗрсе выртрӗ.

* * * * *

Коля ыйхӑран вӑраннӑ чух хӗвел тухма ӗлкӗрейменччӗ-ха. Вӑл асамат кӗперри евӗрлех халь: шӑпах горизонт тӗлӗнче, таҫта ҫӗр ӑшӗнче, такам вучах чӗртнӗ тейӗн, кӗренленсе хӗрелчӗ, ҫӳлелле туртӑннӑҫемӗн ҫак тӗс ҫуталса, саррӑн курӑнчӗ. Кунӗ лайӑх та ырӑ пулмалла паян. Кольӑна тӑма иртерех пек туйӑнчӗ, ҫавӑнпа тумланмасӑрах ашшӗн кравачӗ еннелле утрӗ: «Тен, тепрер сехет ҫывӑрма та май килӗ, аттене ҫеҫ ун ҫинчен пӗлтерес, вӑл мана вӑхӑтра вӑратма ан мантӑр». Анчах та лешӗ лӑпкӑн ҫывӑрнине курсан, тӑпах чарӑнчӗ, унӑн ыйӑхне татма хӑяймарӗ: «Пӗр сехет ҫывӑрманнишӗн темех пулмӗ, иксӗмӗр те ҫынсемпе пӗрле тӑманнине курсан, кӳршӗ-аршӑ, ял пиртен кулӗ»,—ҫак шухӑшсемпе васкамасӑр Коля вырӑнне пуҫтарчӗ.

Ҫӑвӑнса тасалнӑ хыҫҫӑн, кил-ҫурт ӗҫӗпе аппаланнӑ май, вӑхӑт иртнине те сисмерӗ. Чӑн малтанах выльӑхсем валли шыв хатӗрлерӗ. Вӗсене шӑварнӑ хыҫҫӑн, ҫутӑ витрепе таса нӳрлӗ алшӑлли илсе, хӑех ӗне сума шутларӗ. Ӗнер ашшӗ, кӳршӗсене чӗнтӗм, терӗ. Чӑнахах сутармӗ-ши вара? Алла тӑвар сапнӑ ҫӑкӑр татӑкӗ илчӗ те, ӗнине илӗртсе, ун патнелле утрӗ, ӑна пит-куҫӗнчен ачашларӗ, этемпе пупленӗ евӗр калаҫрӗ, унтан, сӗтпе тулнӑ ҫиллине нӳрлӗ алшӑллипе

шăлса тасатсан, сума пикенчĕ. Те чăнахах арçын аллине хăнăхманран, выльăх тăруках пăхăнасшăн пулмарĕ, хӳрипе пит-куçран çапрĕ, кайран хăнăхрĕ тейĕн. Кольăн витрине çуррине яхăн кăпăклă ăшă сĕт тулнăччĕ ĕнтĕ, ĕне те ăна итленĕ евĕр, лăпкăнах тăчĕ. Çип пек çинçен чăрлатса юхакан ăшă сĕт шăрши картишĕнче сарăлчĕ. Пӳрнесем, кун пек ĕçе хăнăхманскерсем, часах ывăнчĕç. Самантлăха чарăнса кăштах канса илес килчĕ, анчах та выльăх çапла хăтланакана юратманнине Коля аванах пĕлет, çав вăхăтра вăл малалла утса кайма, сĕт витрине урипе тапса тăкса яма пултарать. Çавăнпа каччă хăй ывăннине систересшĕн марччĕ, анчах та унăн пӳрнисем хытса ларчĕç, сисмесĕрех вăхăтлăха сума чарăнчĕ. Ура çине тăма шутланăччĕ кăна, ĕне, çавна çеç кĕтнĕн, ун еннелле пуçне пăрчĕ те хыçалти урине çĕклесе сăвакана çамкаранах лектерчĕ. Çакна пĕрре те кĕтмен Коля çийĕнчех кутăн кайса ларчĕ, ӳпĕннĕ витри ури вĕçне ӳкрĕ. Ку йăлтах пĕр самант хушшинче пулса иртрĕ. Выльăх пулин те, ĕне хăй айăпне сисрĕ пулас, хăвăрттăн вырăнтан утса кайрĕ, хапха умĕнче чарăнса, çĕр çинче мĕскĕннĕн ларакан хуçи çине çаврăнса пăхрĕ, пысăк куçĕсем каçару ыйтрĕç. Кольăн малтанласа çилли тулса килнĕччĕ, анчах та ку нумая пымарĕ. Хăй айăплă: пĕр вырăнта кукленсе лармаллаччĕ. Каччă аллипе çамкине хыпашларĕ. Вăл тем пекех ыратрĕ пулин те, халь уншăн пулса-иртни çав тери кулăшла туйăнчĕ. Вырăнтан тăрса, хуçи вăрçасса кĕтекен чĕлхесĕр янавар çине тинкерчĕ, сассине хăпартмасăр, каллех çăкăр чĕллипе пушă сĕт витрине илсе ун еннелле утрĕ. Малалла вăл асăрханулларах пулчĕ.

Ĕне суса пĕтернĕ çĕре сăртри çил арманĕ хыçĕнчен, ыйăхран вăраннă евĕр, сарăлса хĕвел тухрĕ. Паçăр çеç кĕреннĕн курăнакан тĕс таçта кайса çухалчĕ, тĕттĕм-кăваккăн курăнакан пуç тӳпинчи пĕлĕт те палăрмаллах çуталчĕ. Кил-çуртри ĕç вĕçленсе пычĕ. Выльăх-чĕрлĕхе шăварнă, ĕне сунă ĕнтĕ, кĕтӳ хăваласса çеç кĕтмелле. Чăх-чĕпсене тулă сапса пачĕ те лаçри хуран айне апат пĕçерме кăвайт чĕртрĕ. Электросăмавара шыв тултарса вĕретме лартрĕ. Пăтă пĕçерес пулсан, шыв вĕреме кĕриччен пушă ларас мар тесе, вăл пахчари йывăççене шăварма шутларĕ. Шыв енчен кунта çӳлти касри пек мар, хапха умĕнчех, иквиçĕ кил валли пĕр пусă тивет. Ăна çул сиктерсех тасатса тăраççĕ, шывĕ тутлă та сивĕ, таса пултăр теççĕ ĕнтĕ. Икĕ пушă витре йăтса Коля урама тухрĕ. Ирхи çĕкленӳллĕ кăмăлпа савăнăçлă кĕвĕ ĕнĕрлерĕ. Ун сассине илтнĕ евĕр,

чӳрече умӗнчи ҫӗмӗрт хушшинчен кайӑк юрри илтӗнчӗ. Каччӑ сывлама чарӑнчӗ тейӗн. Хускалма шикленсе, вӑл уҫӑ та янӑравлӑ, чунра ҫӗнӗ туйӑм, ҫӗнӗ шухӑш ҫуратакан пӗчӗк ҫеҫ вӗҫен кайӑкӑн шӑнкӑравлӑ сассине итлерӗ.

Куҫ умне ҫара кайичченхи ир тухрӗ. Ун чухне те вӑл ҫак кайӑкӑн юррине итленӗччӗ. Акӑ вӑл паян та, темиҫе ҫул каяллахи пекех, хӑйӗн юррине шӑрантарать. Ҫав вӑхӑтра картишӗнче амӑшӗн сасси те илтӗнетчӗ, анчах та вӑл паян, ӗлӗкхи евӗр, янӑрамарӗ, ҫавӑнпа та-и, чунра кӑштах кичем.

Коля ӑнсӑртран каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ, хӑй хыҫӗнче ашшӗ тӑнине курсан, унӑн кӑмӑлӗ ҫӗкленчӗ, чунӗ хаваслӑхпа тулчӗ, часах амӑшӗ таврӑнӗ те, вӗсен ҫемйи те унчченхи пекех пурӑнма пуҫлӗ.

Хӗвел чылаях тӳпене хӑпарчӗ ӗнтӗ. Халь ун ҫине пӑхма май ҫук, куҫ шывланать. Ял йӑлтах ыйхӑран вӑранчӗ. Кашни хуҫалӑх хӑй ӗҫне пуҫӑнчӗ темелле, алӑксемпе хапхасем шалтлатса хупӑнни, выльӑх-чӗрлӗх сасси, чӑх-чӗп кӑтиклетни тата ытти шӑв-шав таврара пӗр кӗвӗллӗн янӑрарӗ. Киремет леш енчи трактор паркӗнчен пускач хыттӑн тӑрӑлтатни вара ҫӗнӗ ӗҫ кунӗ пуҫланнине систерчӗ. Тепӗр темиҫе сехетрен колхозри пур ҫамрӑксем те хире тухӗҫ.

Сергей Иванович паян кунӗпех ывӑлӗпе пӗрле пулма шут тытрӗ.

*   *   *   *   *

Калаҫса татӑлнӑ вӑхӑт тӗлне ҫамрӑксем колхоз правлени умне пуҫтарӑнчӗҫ. Комсомолецсем ҫеҫ мар, ватти-ҫамрӑкки, камӑн вӑхӑт пур, ҫавсем пурте, кӗреҫепе витре, пуртӑ йӑтса, ушкӑнпа ӗҫлеме кӑмӑл турӗҫ.

Воскресник пысӑк уяв пек ирттӗр терӗҫ. Тухса калаҫакансем те пулчӗҫ, кашниех хӑй шухӑшне пӗлтерчӗ. Председательпе ытти колхоз пуҫлӑхӗсем те кунтах. Акӑ Николай Филиппович хыҫалалла выртнӑ ҫӳҫне тураса якатрӗ те ушкӑн умне тухрӗ:

—Паян,—пуҫларӗ вӑл хӑй сӑмахне,—ял халӑхӗ пирӗн колхоз комсомолецӗсем тахҫантанпа ишӗлсе пыракан ҫырма-ҫатрана йӗркене кӗртес, эрозие хирӗҫ кӗрешес тесе чӗнсе каланине ӑнланса йышӑнчӗ. Эпир вӗсен ырӑ

пуҫарӑвӗпе савӑнатпӑр, ҫамрӑксемпе пӗр ҫын пек пулса, тӑрӑшса ӗҫлеме сӑмах паратпӑр,—терӗ.

Ун хыҫҫӑн Маша Сынкова, Галя Никифорова, Саша Кошкин тухса калаҫрӗҫ, тӑрӑшса ӗҫлеме сӑмах пачӗҫ. Юлашкинчен пуҫтарӑннӑ ушкӑн умне Коля Степанов та тухрӗ, хӑйӗн сӑмахӗсенче вӑл комсомол ретӗнче тӑманнисене тав туса каларӗ:

—Эсир пирӗн шухӑш-кӑмӑлпа килӗшни, ӑна ырлани чӑнах та савӑнтарать, татах та тӑрӑшса ӗҫлеме вӑй парать. Комсомолецсен ырӑ пуҫарӑвӗ паянхи воскресникпе ҫеҫ ан пӗттӗр, малашне те ҫӗнелсе, вӑйланса пытӑр...

Пуҫтарӑннӑ халӑх алӑ ҫупрӗ.

Темиҫе минутлӑха пынӑ митинг часах вӗҫленчӗ. Алла кӗреҫе тытнӑ Николай Филиппович Коля патне пычӗ те:

—Ну, салтак, эсӗ паян пирӗншӗн старшина вырӑнӗнче пулатӑн. Атя, тытӑнар ӗҫе,—терӗ. Унӑн куҫӗсем савӑнӑҫлӑ та телейлӗн ҫиҫрӗҫ.

—Чӑнах та, сӑмах каланипех ӗҫ малалла каяймӗ,—унпа пӗр шухӑшлӑ пулчӗ Коля,—кайрӑмӑр!

Халӑх калаҫса-кулса Киремет ҫырми еннелле утрӗ. Чӑн малта ача-пӑча, ҫамрӑксем утрӗҫ. Вӗсен хыҫӗнче ашшӗ-амӑшӗсем, арҫыннисем хӑйсен чӗлӗмне мӑкӑрлантарнӑ май, ывӑлӗ-хӗрӗсен пуҫарӑвне мухтаса пычӗҫ. Коля ашшӗ Сергей Иванович та кунтах. Халӗ ӑна тӗрлӗ енчен шкул ачисем ҫавӑрса илнӗ. Вӗсене вӑл хӗрсех тем ҫинчен каласа ӑнлантарчӗ. Ӗнерхипе танлаштарсан, кӑмӑлӗ те ҫӗкленӳллӗ унӑн, вӑл ачасемпе пӗрле хыттӑн кулчӗ, темшӗн хӗпӗртерӗ. Коля пӗр ҫулти тантӑшӗсемпе пулчӗ. Ҫак ушкӑнран тахӑшӗ юрлама сӗнчӗ, ҫийӗнчех «Не расстанусь с комсомолом» юрра пикенчӗ, ӑна ыттисем те ярса илчӗҫ. Правлени ҫуртӗнчен пуҫласа ҫывӑхри урам кӗтесне ҫитекен ҫӗр лаптӑкне халӑх пуҫтарӑннӑччӗ, халӗ вӗсем юрӑ кӗввипе хавхаланса тӑвалла утрӗҫ. Илемлӗ ҫемӗ кашни киле кӗрсе тухса урамсем тӑрӑх малалла саланчӗ.

Те юрӑ сассине илтсе, те хулпуҫҫисем ҫинче пуртӑ-кӗреҫесем йӑтнӑ, халиччен ҫакӑн чухлӗ пуҫтарӑнман пысӑк ушкӑна курса, килте ҫеҫ аран-аран ҫӳрекен ватӑсем пӳрт умне тухса, хӗвелтен куҫӗсене хупласа, пӗр тӗлӗнсе, пӗр савӑнса вӗсем ҫинелле пӑхрӗҫ, инҫе ҫула ӑсатнӑ евӗр, вырӑнтан тапранма хӑяймасӑр, пӑшӑлтатса телей сунчӗҫ. Ача-пӑча выляса-кулса ашшӗ-амӑшӗнчен, пиччӗшӗсемпе аппӑшӗсенчен юласшӑн мар, витресем йӑтса вӗсем хыҫӗнчен чупрӗҫ, вӑй ҫитнӗ таран аслисене пулӑшасшӑн пулчӗҫ.

Ял вӗҫӗнчи ҫуртра пурӑнакан сакӑрвуннӑран иртнӗ шурӑ сухаллӑ Иван Игнатьевич та, хӑйӗн аллинчи патакне такам туртса илесрен хӑранӑ евӗр, ӑна хыттӑн ҫатӑрласа тытнӑскер, ушкӑн ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ. Тен, вӑл, чӑнах та, ӗмӗрне ялта пурӑнса иртернӗскер, икҫӗр ҫын ытла юрласа ӗҫе утнине халиччен курман? Старик, шурӑ сухалне каҫӑртса, пӗр вырӑнта хускалмасӑр тӑчӗ.

—Сывӑ-и, Иван Игнатьевич,—ушкӑнран уйрӑлса ун умӗнче чарӑнчӗ колхоз парторгӗ.

—А-а, Георги, эсӗ-и,—хыткан аллине тӑсса пачӗ вӑл.— Ӑҫта утать халӑх, мӗн амакӗ? Халиччен пурӑнса та кун чухлӗ ҫын ӗҫе кайнине курманччӗ эпӗ.

Георгий Михайлович чӑтаймарӗ, кулса ячӗ:

—Ҫапла, Иван Игнатьевич, вӑхӑт шӑвать, малашне кун пеккине час-часах курма тивӗ-ха. Пурнӑҫ кунран-кун улшӑнса, лайӑхланса пырать, хамӑр ватӑлатпӑр пулин те, вӑл ҫӗнелсех тӑрать. Пӑх-ха, мӗн чухлӗ ҫын уй-хире васкать.

Парторгӑн кӑмӑлӗ паян ҫӗкленӳллӗ. Унӑн пичӗ ҫинче иртенпех кулӑ ҫиҫет. Вӑл ҫара пуҫӑн, сайрарах сарӑ ҫӳҫне, яланхилле аяккинелле туранӑ. Кӗске ҫанӑллӑ хӑмӑр тӗслӗ кӗпе, хура шӑлавар тӑхӑннӑ, ӑна ҫинҫерех пиҫихипе ҫыхнӑ, уринче ҫӑмӑл пушмак. Иван Игнатьевич парторг мӗншӗн хӗпӗртенине, умра мӗн пулса иртнине йӑлтах тавҫӑрса илме пултараймарӗ:

—Парторгӑн мӗншӗн кӗреҫе йӑтса ҫӳремелле тата, хирте ӗҫлекен ҫитмест-им?—сассине юри ҫинҫетнӗ пек тӗлӗнсе ыйтрӗ старик.—Е хайхи эсир калакан коммунизм текенни ҫитрӗ-и?

—Киремет ҫырмине йывӑҫсем лартма каятпӑр. Иван Игнатьевич, унта, хӑвах пӗлетӗн, ҫулсерен ҫӗр ишӗлет, пахча вӗҫнех ҫитрӗ авӑ, ҫавна чарса лартасшӑн,—терӗ те парторг малалла утса кайрӗ.

—Эккей,—мӑкӑртатрӗ старик,—мӗн пулнӑ ку халӑха? Ҫынсем ирех Киремет ҫырми патне кайма та шикленмеҫҫӗ Ӗлӗкрех ун ҫывӑхне пыма та хӑранӑ. Йывӑҫсем лартма каятпӑр, терӗ-ха. Ку ӗҫе ырламалла ӗнтӗ. Чӑнах та, ҫулсерен мӗн чухлӗ пулӑхлӑ ҫӗр сая каять. Ҫапах та унран ҫынсен хӑрамалла, ӑна парнесем парсах тӑмалла. Тепӗр тесен, ӗҫленишӗнех ҫылӑх пулмасть-ха. Тем тумалла ӗнтӗ, хамӑн та унта ҫитсе курмалла мар-ши?—иккӗленсе шутларӗ вӑл.

Капланса килнӗ тӗрлӗрен шухӑшран тӳрех хӑтӑлаймарӗ-ха старик: «Киремет сӑваплӑ вырӑн. Ӑна пирӗн несӗлсем питӗ хисепленӗ. Халӑх усалланса ан кайтӑрччӗ, ӗлӗкренпех

çирĕпленнĕ йăла-йĕркене ан мантăрччĕ. Çынсем ырă ĕç тăватпăр тесе хутран-ситрен йăнăшсан та, Христос вĕсене инкек-синкекрен хăтартăрах,—вăл сăхсăхма тăчĕ, анчах та унăн сăмахĕсене никам та илтмерĕ, таçта инçете саланакан юрă сасси вĕсене хупласа хучĕ. Çакна Иван Игнатьевич хăй те ăнланчĕ пулас, унăн аллисем йывăррăн усăнса анчĕç, çапах та çухалса каймарĕ вăл, тӳрленсе тăчĕ те хыттăнах,—вăхăт шăвать, этем уйăх çине вĕçекен пулчĕ пулсан, мĕншĕн Киреметрен хăраса лармалла. Пĕреххут кайсах курам-ха. Çамрăксем хушшинче чун çамрăкланать, тен, виличчен вĕсене пулăшма та пултарăп»,-терĕ.

Вăл васкамасăр, шурă сухалне каçăртса, тăвалла утрĕ. Тӳпери ачаш хĕвел, тăри сасси ăна вăй пачĕ, тин çеç иртсе кайнă халăх ушкăнĕ хушшине çитсе курма чĕнчĕ.

Пурте ĕçе харăссăн тытăнчĕç. Коля Степанов хăй ертсе пыракан çамрăксемпе пĕрле Киремет çырмин çыранĕ хĕррипе йывăçсем лартрĕ, председатель çывăхĕнчи çынсем çулăн икĕ енĕпе шыв çулне пӳлес шутпа, çатансем вырнаçтарса сăрталла хăпарчĕç.Хирте пуçтарăннă халăх тăватă ушкăна пайланчĕ. Паллах, кам хăш ялтан иккенне пăхса тăмарĕç, пĕтĕмпех хутшăнса кайрĕç. Икĕ ушкăнĕ хăйĕн ĕçне Татмăш енчен пуçларĕ. Шалчасене çĕр ăшне çапса кĕртнĕ сасă, ăмăртса пĕр-пĕрне хавхалантарнă сăмахсем, ача-пăча çуйăхни, çамрăксен кулли пĕр минутлăха та чарăнмарĕ.

—Кам хăвăртрах йывăç валли шăтăк алтĕ? Камăн манпа ăмăртас кăмăл пур?!.

—Манăн!..

—Манăн та!..

—Эпĕ сиртен малтан чавса пĕтеретĕп!—илтĕнчĕç тĕрлĕ енчен çамрăк та уçă, хаваслă сасăсем.

Кольăн ушкăнĕнче ялти ферма хĕрĕсемсĕр пуçне тата çĕнĕахпӳртсем, татмăшсем пулчĕç. Саша та кунтах, вăл кăкăр таран çарамасланнăскер, паян пурне те тĕлĕнтерсе, Светлана Мартышкинăпа уйрăлма пĕлмесĕр , килĕштерсе ĕçлерĕ. Ял хĕрĕсем кун пирки асăрхаттарма та пăхрĕç:

—Асту, кĕвĕçетпĕр,—терĕç,—Светланăн хăйсен ялĕнче те каччăсем туллиех, кайран хусах пулса, пĕччен тăрса юлатăн ак.

Саша, вĕсен сăмахне хăлхана чикмерĕ, çаплах-ха шӳтлерĕ, кулчĕ. Светлана ун çине илĕртӳллĕн пăхрĕ:

—Саша пек хитре те тӗреклӗ йӗкӗтсем ҫине те пӑхмасан, кам ҫине пӑхмалла-ши вара хӗрсен? Ҫук, ан шиклен, хусах пулса юлмастӑн,—терӗ.

Каччӑ хӑйӗн ҫинчен пыракан калаҫӑва сирес шухӑшпах пулӗ, самантлӑха шӑтӑк алтма чарӑнчӗ те Коля енне ҫаврӑнса:

—Хывса пӑрах-ха кӗпӳне, пӑх-ха, ӳтӳ чӑкӑт пекех шап-шурӑ вӗт,—тусӗн шӑлаварӗнчен кӑларнӑ кӗпине ҫӳле ҫӗклесе, сулахай аллипе ҫара ҫурӑмӗнчен ҫатлаттарчӗ.

Пӗр вӑхӑт хушши Сашӑн хӑтланкаларӑшне сӑнаса тӑракан ҫамрӑксемшӗн ҫакӑ ҫав тери кулӑшла пек пулчӗ.

—Чӑнах та, секретарь, хӗвелпе пиҫмен арҫын пирӗншӗн чирлӗ ҫын евӗрлех туйӑнать. Пӑх-ха, Саша акӑ таҫта хӗрелме те ӗлкӗрнӗ,—янӑравлӑ сассипе каллех мухтарӗ каччӑна Светлана.

Чӑнах та, Саша шурӑ ӳтлӗ пулсан та, унӑн ҫурӑмӗ хӗрлӗ сӑрӑпа сӑрланӑ евӗрлех курӑнчӗ. Астӑвать-ха Коля, пӗчӗккӗ чух вӗсем яланах, хӗвел ҫинче кам ытларах хӗртӗнет тесе, мухтанатчӗҫ. Шурӑ ҫӳҫлӗ Саша кашнинчех хыҫала юлатчӗ. Мӗнле ҫеҫ тӑрӑшмастчӗ пулӗ мала тухассишӗн? Пӗррехинче ҫакӑн пек ӑмӑрту хыҫҫӑн, те кӳреннӗрен, те тусӗсене хуса иртес кӑмӑлпа, вӑрттӑн, ашшӗ-амӑшӗнчен пытанса, кунӗпех аслӑк ҫинче ирттернӗччӗ вӑл хӑйӗн вӑхӑтне. Каҫхине, хӗвел анас умӗн, аслисем ӗҫрен таврӑнсан, ача-пӑча вӗсемпе пӗрле яланхиллех Пӑла хӗрне шыва кӗме пуҫтарӑнчӗ. Саша та унтахчӗ, хаваслӑскер, ҫӗкленӳллӗ кӑмӑллӑччӗ. Кольӑна курсан, тӳрех ун патне чупса пычӗ:

—Ну, халь кам малта?—ҫурӑм хыҫӗнчи кӗпине ҫӗклесе тусӗ мухтасса кӗтрӗ вӑл.

Коля ун ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ. Лӑпкӑ сасӑпа:

—Эсӗ,—терӗ.

—Вӑт, куртӑн-и, ыран акӑ тата та ытларах пиҫӗп,—хӑй мала тухнишӗн савӑнчӗ вӑл.

Коля аллипе унӑн ҫурӑмне кӑшт ҫеҫ перӗнчӗ.

—Ы-ых, ан тыт, ыратать!—тӳрех малалла туртӑнса кӑшкӑрса ячӗ тусӗ. Унтан кӗпине асӑрхануллӑн антарса килнелле утрӗ.

Коля ун хыҫӗнчен тӗлӗнсе пӑхса юлчӗ, шеллерӗ те: «Мӗне кирлӗччӗ ӗнтӗ ҫакӑн пекех хӗвел ҫинче чылай вӑхӑт хушши хӗртӗнме,—шутларӗ вӑл хӑй ӑшӗнче,—ыран акӑ татах та ытларах ыратӗ. Тупнӑ мухтанмалли»...

Чӑнах та, тепӗр кунне Саша урама тухаймарӗ. Каҫхине аптрасах ӳкнӗ вӑл. Амӑшӗ, Маюк аппа, больницӑра

медсестра пулса ĕçлет пулин те, кирлĕ чухлĕ пулăшу парайман курăнать. Ирпе вара ашшĕ, милицинче ĕçлекенскер, дежурствăран таврăнсанах ăна тӳрех районти больницăна леçнĕ. Пĕр эрнене яхăн пулчĕ вăл унта. Кайран, таврăнсан та, чылай вăхăт хушши вĕри шывпа пĕçертнĕ евĕрлех çӳрерĕ. Çиелти ӳчĕ вара çинçе хут пекехчĕ, сĕвĕнетчĕ. Унтанпа Саша асăрханса çеç хĕвел çинче хĕртĕнет. Çапах та çан-çурăмĕ ыттисенни евĕр хуралмасть, кăшт çеç хĕрелет.

Коля тусне итлерĕ, хăвăрттăн кĕпине хывса, çывăхри тĕмеске çине пăрахрĕ.

—Вăт, капла чăн-чăн çĕр çынни пекех, санпа çуммăн тăрса ĕçлеме те халь намăс мар,—хавхалантарчĕ ăна Саша.

Çара кайиччен Коля çӳллĕ те хыткан каччăччĕ. Те çинçе кĕлеткеллĕ, черчентерех ӳтлĕ пулнăран çеç çапла курăнатчĕ вăл. Халĕ ун çине пăхатăн та, пĕрре те икĕ çул каяллахипе танлаштарас килмест: умра вăтам пӳллĕ, сарлака хул-çурăмлă çитĕнсе çитнĕ тĕреклĕ арçын тăрать. Кашни хусканăвĕ илĕртет, çарта мускулĕсене аталантарни тӳрех куçа курăнать. Сăн-пичĕпе вара вăл пĕрре те улшăнман тейĕн: çав-çавах ачаш та илĕртӳллĕ пăхакан çивĕч çутă куççем, хура авăнчăк куç харшисем, çӳллĕ çамка, каçăрăларах тăракан сăмса, варринчен уйрăлакан янах шăммипе çутă çаврака пит çăмартисем те икĕ çул каяллахи пекех, шăртпа çеç витĕннĕ.

—Саша, хĕвел çакăн пек хĕртес пулсан, курăн, тепĕр ик-виçĕ эрнеренех ман ӳте бронза тĕсĕ çапĕ. Мантăн-и, пĕчĕккĕ чух эсир мана хĕвел ачи тесе чĕнеттĕр. Ӳт ытла та хăвăрт хĕрелнипе çапла каланă пулĕ.

Ахăртнех, çывăхри хĕрсемшĕн ку калаçу çав тери кичем пек туйăнчĕ, ахальтен мар Валя Наперсткина кĕреçине тарăннăн çĕре пусса лартрĕ те:

—Тупнă калаçмалли япала,—терĕ улшăннă саспа секретаре пӳлсе,—атьăр-ха каллех тепрер çаврăм юрă юрлар. Ну, пуçлар, хĕрсем, тахçантанпа туй юрри юрламан, туй юрри юрлар-ха.

—Атьăр,—ярса илчĕç ăна ыттисем те, унтан çийĕнчех такмаклама пикенчĕç.

Ой, хатĕр, туй хатĕр,
Ой, хатĕр, туй хатĕр,
Хамăр хатĕр пулмасан,
Туй та хатĕр пулас çук.

Туй урапин кустӑрмисем пек шакӑртатса юрӑ сасси таҫта аякка кайрӗ. Ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа тӑрӑшнӑ чух, ӗҫ яланах кал-кал пырать. Киремет хӗррипе лартнӑ хурӑнсен шучӗ ӳснӗҫемӗн ӳссе пычӗ. Ҫынсенчен чылайӑшӗн ҫак черчен йывӑҫсене кипкери ачапа танлаштарас килчӗ. Пирвайхи хут ҫут тӗнче курса, ал-урипе хускатнӑ евӗр, вӗсен сарӑлса ҫитеймен ҫулҫисем ӑшӑ ҫилпеле хумханчӗҫ, хӑйне тӗллӗн сас кӑларчӗҫ, лартакансене тав туса, лӑпкӑн пуҫ тайрӗҫ. Часах кунта хурӑн аллейи пулӗ.

Кольӑн куҫӗсем ӑнсӑртран Валя Наперсткина куҫӗсемпе тӗл пулчӗҫ. Сисмесӗрех, иккӗшӗн те пичӗсем, анис улма пек хӗрелсе кайрӗҫ, тутисем ӑшшӑн кулчӗҫ, анчах та пӗчӗк ачасем евӗр, вӗсем пӗр-пӗринчен вӑтанса, ҫак туйӑма палӑртасшӑн мар пек, такамран пытарнӑн, татах та ӑмӑртса ӗҫлеме пикенчӗҫ. Паллах, вӑйпитти каччӑшӑн ҫамрӑк хӗрпе тупӑшни пит килӗшӳллех пулмарӗ. Тӗрӗссипе, вӗсем ӑмӑртма калаҫса татӑлман вӗт-ха, ку вӑл ӑнсӑртран Коля васкаса шӑтӑк алтнӑран ҫеҫ сиксе тухрӗ. Валя вара унран юлма шутламарӗ, хӗрсем те каччӑсемпе пӗр тан ӗҫлеме пултарнине кӑтартас килчӗ. Тӑрӑшса ӗҫленӗ май юрӑ сарӑлнӑҫемӗн сарӑлса пычӗ.

Валя пӗвӗпе кӑштах лутрарах пулин те, унӑн аллинчи шӗвӗр вӗҫлӗ тимӗр кӗреҫе ҫӑмӑллӑн та илӗртӳллӗн вылярӗ. Каччӑн хӗр ҫине куҫ илмесӗр пӑхас, шӑпчӑк пек илемлӗ сассине каҫса кайсах итлес килет, анчах та пӗр-пӗринпе йӑпанса савӑнма вӑхӑт ҫук, кашнинех тӑрӑшса ӗҫлемелле.

Юрӑ вӗҫленейменччӗ-ха, ҫамрӑксем патне ал туйипе ҫӗре таклаттарса, васкамасӑр Иван Игнатьевич ҫывхарчӗ. Сакӑрвуннӑран иртнӗ пулин те, тӗреклӗ-ха вӑл, ҫулне кура мар, пӗкӗрӗлмесӗрех утать. Ялта унран асли ҫук та пулӗ, колхозӗпе те старикпе пӗр вӑхӑтра ҫуралнисенчен икӗ-виҫӗ ҫын ҫеҫ юлнӑ. Арӑмӗпе сакӑр ача пӑхса ӳстернӗ, халӗ вӑл ялта кӗҫӗн ывӑлӗпе пурӑнать. Аслӑ ывӑлӗсем иккӗшӗ вӑрҫӑра пуҫӗсене хунӑ. Наҫтукӗ — Ҫӗнӗ Ахпӳрте, Анюкӗ Тӑрӑна качча тухса, хӑйсем те асанне пулнӑ ӗнтӗ. Иван Игнатьевич ҫаплах-ха аптрамасть, хӑйӗнпе пӗр ҫулаллахи ват ҫынсем пек, пӳрт умӗнчи хӗвел ӑшшинче ларнипех ҫырлахмасть, кашни уйӑхра тенӗ пекех кӳршӗ ялсене хӗрӗсемпе мӑнукӗсем патне кайса килет. Вӗсене курмасан, чун вырӑнта мар, тет. Виҫӗ ывӑлӗ вара инженера вӗреннӗ, вӗсем тӗрлӗ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ. Пӗри Мускаврa пурӑнать, кӗҫӗнреххисем: пӗри — Украинӑра, тепри — Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче геологсен ушкӑнӗн пуҫлӑхӗ. Ҫуралса ӳснӗ ялта, тӑван килӗнче кашни

пилёк çулта вёсем пурте пёрле пуçтарăнаççĕ. Иван Игнатьевич ун чухне вара чылай çамрăкланнăн курăнать, ывăлĕсем парнеленĕ чи чаплă тумтирне тăхăнса, сётел пуçне ларать. Ачисем саланмасăр та хывмасть ăна. Кил-çурчĕ пушанса юлсан, унăн сăн-пичĕ темиçе кунлăха тĕксĕмленет. Ашшĕн тем пекех ачисене хăйĕнпе юнашар тытас килет. Вăл вĕсемпе хуйхи-суйхине пайласшăн, ватлăх кунĕсенче пурне те пăхса савăнасшăн. Анчах та тĕп килтен уйрăлса тухнă ывăлĕсен те, хĕрĕсен те кашнинех хăйĕн çемйи, кил-çурчĕ пур. Вĕсене те тăван ачисем кĕтеççĕ. Куççулĕ кăларсах, ыталансах уйрăлать вара старик, унтан каллех, яланхи йăлипе, хĕвел çинче кăштах тĕсне çухатнă кăвак сатин кĕпине тăхăнать, пилĕкне пурçăн шерепеллĕ пиçихи çыхать. Халăх хушшинче çакăн пек халап çӳрет: ăна пĕрлешнĕ чух арăмĕ Марье парнеленĕ иккен. Ёлĕкрех вăл пиçиххине пысăк уявсенче çеç çыхнă. Анчах та темиçе çул каялла юратнă мăшăрĕ çĕре кĕнĕренпе вăл унпа уйрăлмасть. «Асăнмалăх панă чи хаклă парнене алла илсенех куç умне Марье тухать»,—тенĕ сăмахсене Иван Игнатьевичран час-часах илтме пулать.

Старик кĕпине хура шăлавар çийĕн кăларнă, каччă пек ăна хутран-ситрен тӳрлеткелет, урине çăмăл пушмак, пуçне пысăк сăмсаллă карттус тăхăннă, вăл шурă сухалĕ тĕслех. Ватă пулин те, тирпейлĕ çӳреме килĕштерет.

—Турă пулăштăр, ачамсем!—терĕ вăл ушкăн тĕлне çитсен.

—Тавтапуç, Иван тете,—пĕр çын пек харăссăн хуравларĕç çамрăксем.

—Эсĕ пире Киремет çывăхĕнче йывăç лартнăшăн вăрçас теместĕн пулĕ те?—тăруках аслашшĕ çумне пырса тăрса, куçне чеен хĕссе каларĕ кăçал саккăрмĕш класс пĕтерекен Мишша мăнукĕ.

Иван Игнатьевич ун çине тĕлĕнерех пăхса илчĕ те, сухалне чĕтрентерсе, кулам пекки турĕ:

—Ах, шăпăрлан! Ырă ĕçшĕн вăрçмаççĕ ăна, мухтаççĕ çеç. Пыр, ĕçле, кур-ха, тантăшусем епле тăрăшаççĕ,—ал туйипе мăнукне купарчинчен ачашшăн тĕксе, унтан унпа пĕр çулхи çамрăксем çине тĕллесе кăтартрĕ вăл.

Мишша, аслашшĕне итлесе, хăвăртрах аллинчи кĕреçипе йывăç лартнă шăтăка тăпра сапма пикенчĕ.

—Чим-ха, мăнукăм,—чарчĕ ăна аслашшĕ,—эсĕ йывăçна ытла та çыран хĕррине çывăха лартатăн. Çур метр пек ишĕлсенех тымарĕ çĕрсĕр юлать, типсе каять. Тăрăшни сая

ан кайтӑр тесен, шӑтӑксене кӑшт шаларах кӗрсе чавмалла, унсӑрӑн йывӑççем чӗрӗлме те ӗлкӗрейççӗ.

—Вӑт, Иван Игнатьевич, эсир кунта килсе пире ӑс пани, вӗрентни епле усӑллӑ, вырӑнлӑ. Юрать-ха, вӑхӑтра çитрӗр, ватӑ çын—тӑватӑ çын, тесе ахалех каламан иккен,—тин çеç лартнӑ йывӑç çумӗнчи тӑпрана çӑмӑллӑн таптаса çаврӑннӑ май старикӗн кӑмӑлне хӑйсем майлӑ çавӑрма тӑрӑшрӗ Коля.

—Хальхи çамрӑксем пиртен темиçе хут нумай пӗлеççӗ. Ав, хамӑр Мишшанах илер, темле чӗмересем, Пихвакурсем вӗренет, эпир ун çулӗнче алӑ пусма та пӗлмен.

—Асатте, чӗмере мар, теорема, Пихвакур та мар, Пифагор темелле, миçе хутчен каланӑ ӗнтӗ сана, çаплах тӗрӗс калама пӗлместӗн,—намӑслантарам пекки турӗ мӑнукӗ аслашшӗне.

—Мана картне лартсан юрать,—кӳренмерӗ старик.

—Сирӗн пурнӑç опычӗ пысӑк, çавӑнпа пирӗн сиртен вӗренмелле те вӗренмелле.

Çамрӑксен кашнийӗн хӑйсене хисеплесе кӑмӑллӑ сасӑпа калаçакан старикпе пӗр-ик сӑмах та пулин хушса пуплес килчӗ.Вӗсем ватӑ çын çывӑхнерех туртӑнчӗç. Çакна Иван Игнатьевич хӑй те тӳрех сисрӗ:

—Эсир юрланӑ юрӑ сасси кунта килме хистерӗ мана, тахçан çакӑн пек утӑ çулма тухнисем аса килчӗç. Ну, ӗçлӗр, ӗçлӗр, текех сире чӑрмантарса тӑмӑп, халех каятӑп, терӗ вӑл сулахай аллипе тытса тӑракан ал туйине теприне илсе.

—Иван тете, ан васка-ха,—тӑруках тӗрлӗ енчен илтӗнчӗç сасӑсем,—пирӗнпе кӑштах пул ӗнтӗ.

Старик хистенине кура уйрӑлса, малалла утса кайма тӑхтарӗ, пӗр вырӑнтах тӑчӗ.

—Иван тете,—хӑйне тахçантанпах кӑсӑклантаракан ыйтӑва хускатрӗ Саша.—Сире граждан вӑрçи вӑхӑтӗнче Киремет çырми вилӗмрен çӑлнӑ теççӗ. Тӗрӗс-и çакӑ?

Иван Игнатьевич çакна кӗтрӗ тейӗн, çапах та тӳрех хурав памарӗ, чееленчӗ:

—Сисетӗп, уйрӑлас килмест ӗнтӗ сирӗн манпа,—терӗ вӑл ватлӑхпа пӗркеленнӗ питне савӑнӑçлӑн туртӑнтарса, унтан Саша çине пӑхрӗ те,—пулнӑ, ывӑлӑм, пулнӑ ун пекки,—терӗ.

Çав вӑхӑтра Мишша таçтан пысӑках мар муклашка тупса килчӗ.

—Ларсах каласа пар-ха, асатте. Ура çинче тӑма çамрӑк çын мар вӗт эсӗ,—терӗ мӑн çын пек.—Кур-ха, епле меллӗ ун çинче ларма,—ларсах кӑтартма шутларӗ вӑл.

—Вăт шельмă,—хăй çумне ачашшăн çупăрларĕ аслашшĕ мăнукне.—Сире кун пирки кашни кун каласа парсан та, йăлăхтармасть пуль. Ну, юрĕ, юрĕ,пыр, ĕçле,—каллех ушкăн хушшине хăваларĕ вăл мăнукне.—Юрататăп, мур илесшĕ, вĕсемсĕр хама мĕнле туяссине те пĕлместĕп,—хăй тĕллĕн калаçнă евĕр мăкăртатрĕ вăл пĕрене пуçĕ çине вырнаçса ларнă май.—Кăштах канса илĕр апла, каласа парам.

Çамрăксен ушкăнĕ ăна итлеме хатĕр пулса, шăпланчĕ. Иван Игнатьевич чылай кĕттермерĕ, хăйĕн калавне пуçларĕ.

—Ку шăпах граждан вăрçи вăхăтĕнче, шуррисем Патăрьелне тытса илсен пулчĕ. Ун чухне эп сирĕн пекех вăй-питти çынччĕ, ӳт-пӳре вĕри юн вылятчĕ. Эпир фронт çывхарса килет тенине малтанах илтнĕччĕ ĕнтĕ, анчах та мĕнле фронт, кампа кам çапăçать, ăна ăнланайман. Пĕрисем Колчак çĕршыва большевиксенчен хăтарма килет тетчĕç, ăна ырласа мухтатчĕç, хăвăртрах пирĕн тавралăха çитессе кĕтетчĕç, теприсем вара ăна сивлесе сăмахлатчĕç. Тĕрĕссипе каласан, ун чухне эп большевиксем камне, вĕсем мĕншĕн кĕрешнине те пĕлмен. Хуларан килекенсем пире кашниййĕ тĕрлĕрен ăнлантаратчĕ, анчах та вĕсем ялта сайра-хутра çеç пулкалатчĕç. Вăл вăхăтра çĕршыври лару-тăрăва тĕрĕс ăнланса илме çав тери йывăр пулнă ĕнтĕ. Хаçат-журналсем тени те яла çитеймен, вулама çырма пĕлекенсем те сахал пулнă. Часах Йăлăма, ав çав армана,—ал туйипе Кĕçĕн Патăрьел ялĕ вĕçĕнче ларакан çунатсăр арман çине тĕллесе кăтартрĕ Иван тете,—Крепков отрячĕ килсе вырнаçрĕ. Вĕсен Канаша каякан çула хӳтĕлеме янă иккен. Отрядĕнчи салтаксен йышĕ 20-30 çынран иртместчĕ, çапах та вĕсен пулемет пур, тетчĕç. Пĕррехинче ирпе вĕсем пирĕн яла апатçимĕç илме килчĕç. Крепков хăй те пулнă. Анчах та эп ăна курман. Çынсем пăшаллă салтаксенчен хăраса пурăннă. Эпĕ те çавсен шутĕнче тăнă. Мĕн пытармалли, халь ӳкĕнетĕп те, вĕсемпе пĕрле пĕр сĕтел хушшине ларса чей ĕçме те май пулнă та-ха. Часах салтаксем чан çапса хура халăха хурал пӳрчĕ умне пуçтарнă. Вăл шăпах яла кĕпер енчен пырса кĕнĕ урамра, хальхи правлени çумĕнче вырнаçнăччĕ, суйлавпухусем çавăнта иртетчĕç ун чухне. Эпĕ каймарăм, урама тухма-и, тĕпсакайĕнчи чи тĕттĕм кĕтессе кĕрсе пытантăм вĕт. Халь-халь такам килессĕнех туйăнать. Пачăшкă каланă тăрăх, вĕсем кашни ялтах вăйпитти çамрăксене пуçтараççĕ иккен, кайран хамăр пек хресченсенех çаратма вĕрентеççĕ. Марье пӳртре чӳрече умĕнчен кайма пĕлмест, урипе сăпкана сиктерсе, шав ассăн-ассăн сывлать. Ку сасă мана пушшех те

сехӗрлентерет. Пӗлместӗп, мӗн чухлӗ вӑхӑт иртрӗ, тен, чун таҫта шала тарса пытаннӑран, маншӑн пӗр сехет те талӑкпа танлашнӑ. Илтетӗп-ха, асанне такампа ҫепӗҫҫӗн калаҫса картишне кӗчӗ, ун чухне вӑл сывахчӗ. Ют ҫын сассине илтсенех, ҫӳҫ-пуҫ вирелле тӑчӗ, пӗтрӗм, этем пек вырӑн ҫине выртса мар, тӗпсакайӗнчи тӗттӗм шӑтӑкрах вилмелле пулчӗ иккен, тетӗп хама хам. Турӑ ҫеҫ сыхлатӑр. Палламан хулӑм саслӑ арҫын пӳрте кӗрсен арӑма сывлӑх сунчӗ. Те пӑшаллӑ ҫынна курнипе Марье тӑруках вырӑнтан сиксе тӑчӗ пулас, хыттӑн урипе урайне тӳплеттерсе , ҫухӑрса ячӗ. Вӑл сас шӑпах ман тӗлте пулнӑран, пуҫран темле йывӑр япалапа ҫапнӑнах туйӑнчӗ. Часах сӑпкари ача та вӑранчӗ, арӑмпа иккӗшӗ те хаӑссӑн йӗме пуҫларӗҫ. Эпӗ тӗпсакайӗнчен палламан арҫынна систермесӗр мӗнле тухмалли ҫинчен шутлама тытӑнтӑм. Тӳрех пӑвса пӑрахнӑ пулӑттӑм: ҫиллӗм тулса, куҫ-пуҫ хӑрушланса кайнине хам та сисрӗм,— аллисене кӑкӑрӗ умне тытса, хыткан шӑнӑрӗсене туртӑнтарчӗ Иван тете. Ҫак ӗҫ хӑйӗнпе тин ҫеҫ пулса иртнӗ евӗр, хумханса кларӗ вӑл сӑмахӗсене, анчах та пичӗ кӑкӑр таран сухалпа витӗннӗрен, сӑнӗ улшӑнни курӑнмарӗ, сухалӗ ҫеҫ чӗтренсе сиккелерӗ, хӗсӗкрех куҫӗсем вара пӗрре савӑнӑҫпа, тепре ҫилӗпе черетленсе ҫиҫрӗҫ.

—Иван тете, эсӗ ҫывӑхарах куҫса лар-ха, аякран калама йывӑр пулӗ,—ун айӗнчи муклашкине ушкӑн ҫывӑхне куҫарса лартасшӑн пулчӗ Саша.

—Эсир ӗҫлӗр, ӗҫлӗр. Айри пукана йӑтса куҫарасси пӳрт никӗсӗ ҫӗклесси мар, шӑм-шака ҫемҫетмелле ӑна хамах куҫарма пултаратӑп,—тесе аллине сулчӗ вӑл. Унтан пуканне илсе ушкӑн еннелле утрӗ, анчах та тепӗр самантран каллех вӗсенчен юлса, ҫӗнӗ вырӑн шырама тиврӗ.

Иван Игнатьевичпа вӑхӑт irttерме ҫав тери кӑмӑллӑ. Унӑн чӗлхи ҫепӗҫ те илемлӗ, пуян. Сӑмахӗсене вӑл васкамасӑр, асра юлмалла калать. Халӗ акӑ хӑйӗн пуканӗ ҫине ларчӗ те, сухалне аллипе шӑлса якатнӑ май:

—Сирӗнтен камӑн та пулин арӑмпа сӑпкари ача пур вӑйран кӑшкӑрса йӗнине илтме тӳр килнӗ-и?—ыйтрӗ вӑл калавне малалла тӑсса.—Ҫав тери чуна ыраттармалла сасӑ. Эпӗ ӑна никама илтме е итлеме сунмастӑп. Ҫапла шикленсе , майӗпен упаленсе тӗпсакай алӑкӗ патне пытӑм. Кӑшт ҫеҫ ҫутӑ ӳкекен хӑма ҫурӑкӗнчен пӳрт ӑш—чиккине сӑнатӑп. Унта нимӗн те курӑнмасть, шалта ҫаплах-ха хӑйсене пулӑшма чӗннӗ евӗр, Марьепе Микула кӑшкӑраҫҫӗ. Хулӑм саслӑ арҫын, хам курмастӑп пулин те, мана хӑрушла сӑн-

питлӗн туйӑнчӗ. Анчах та вӑл шӑп ҫак вӑхӑтра Марьене лӑплатасшӑн ӑшӑ сӑмахсем хушман пулсан, мӗн тунӑ пулӑттӑм-ши эпӗ унпа, пӗлместӗп. Илтетӗп, килнӗ ҫын сӑпкари ача умне таплаттарса утса пычӗ, тен, таплаттармарӗ те пулӗ, мана, тӗпсакайӗнче лараканскере, ҫавӑн пек туйӑнчӗ. Хӑрах аллипе сӑпкана сиктерсе, тепринпе Марьене ачашларӗ курӑнать:

—Мӗншӗн манран хӑратӑр, тӑванӑмсем? Эпир ҫын вӗлерекенсем мар-ҫке, ҫакӑн пек сӑпкари ачасен телейӗшӗн, ҫутӑ куншӑн кӗрешекенсем. Ну, чарӑнӑр йӗме.

Эпӗ хама хам тытса чартӑм. Хӑлхасене ҫаплах-ха ҫивӗч тытатӑп. Марье кӑштах лӑпланнӑн туйӑнчӗ. Асанне,арӑм йӗме чарӑнсан,чӑлана тухрӗ пулмалла,ун хыҫҫӑн палламан арҫын та утрӗ ӗнтӗ,мӗншӗн тесен вӗсен сассисем пӳртре тек илтӗнмерӗҫ.

Ялта шӑв-шав чарӑнсан эпӗ тӗпсакайӗнчен тухрӑм. Хама темиҫе ҫул хушши тӑвансене курман евӗрлех туятӑп, кашнинех ҫума тытса ыталанӑ хыҫҫӑн, кӑнтӑрлахи апата лартӑмӑр.

Асанне каланӑ тӑрӑх, яла килнӗ салтаксем усал ҫынсем мар иккен, пирӗн ҫуртра пулни те ырӑ кӑмӑллӑ, ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн кӗрешекен чӑваш каччи, сӑн-пичӗ те, эпӗ шутланӑ пек мар, лӑпкӑ та илӗртӳллӗ. Вӑйпитти ҫамрӑксене ирӗксӗрлесе пуҫтармаҫҫӗ, кам ҫӗршӗн, ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн кӗрешес тет, ҫавсем хӑйсемех отряда ҫырӑнаҫҫӗ.

Салтаксем хурал пӳрчӗ умне пуҫтарӑннӑ халӑха ҫӗнӗлле пурӑнма чӗннӗ, вӗрентнӗ. Чӑнах та, вӗсене тӗрлӗ апат-ҫимӗҫ кирлӗ пулнӑ. Ун ҫинчен аран-аран пӗлтерме хӑйсанах, ял куштанӗсем пулӑшма шутламан та, пач урӑхла хӑтланнӑ, вӗсене хирӗҫ халӑха ҫӗклеме тӑрӑшнӑ. Крепков, ҫакна курса, чылайччен чӗнмесӗр шухӑшласа тӑчӗ тет.Асанне апат ҫиме манса ялта мӗн пулса иртнине пире каласа пачӗ. Килте ун чухне эпир хамӑр ҫеҫчӗ, аттепе анне Пӑва пасарне кайнӑччӗ те килейменччӗ.

—Кайран,—малалла тӑсрӗ хӑйӗн калавне асанне,—Крепков хура халӑх ҫине ҫывӑх тӑван пек ачаш куҫӗсемпе пӑхса-сӑнаса ҫаврӑнчӗ те,—шел , ентешсем, эсир хӑвӑр та мӗнле пурнӑҫа хирӗҫ тӑнине пӗлместӗр,—терӗ.—Сирӗн пирки шухӑшлатӑп та, чӗре ыратать, май килсен, кӗнеке пек уҫса, пурне те кӑтартӑттӑм пулас кунсене. Анчах та шел, малашлӑха эсир ӗненместӗр, хӑвӑра хӗсӗрлекен ҫынсенех ытларах шанатӑр.

Унăн сăмахĕсем çĕр çинче асапланса ĕмĕрне ирттернĕ асаннен чĕрине, чăнах та, хускатнă иккен. Вăл телейлĕ кун çитессе кĕтсе пурăннăскер, куштансенчен чĕтресе тăман, пурин умĕнче те салтаксене килне чĕннĕ, ăна курса ыттисем те.

Пирĕн пата пурте мар, пĕри çеç пынă. Ватă çынна чăрмантарас мар тенĕ пулас, хамăр пек, хурапа шурра курса ӳснĕ чăвашсем пулнă-çке-ха отрядра. Асанне ăна уйранпа хăналаса, кутаммккине ирхине пĕçернĕ çаврака хĕрлĕ питлĕ çăкăр, ытти ĕçме-çиме тултарнă. Паллах, кучченеç мар, ватă ырă карчăк вĕсен ĕçне ăнланни савăнтарнă салтака.

Тепĕр кунне ирех эпĕ пулемет сассипе вăрантăм. Васкавлăн картишне чупса тухрăм, нимĕн те ăнланмастăп, ăçтан переççĕ, кама переççĕ? Пульăсем пуç çинчен шăхăрса иртсе, вите тăррине пăр ӳкнĕн тăкăнаççĕ. Вăйсăррăн картлашка çине лартăм, ăçта хӳтлĕх шырамаллине те пĕлместĕп, пӳртре каллех ĕнерхи пекех арăмпа ача йĕме пуçларĕç. Хама хам алла илсе, вĕсене йăпатма кĕтĕм. Урамри шăв-шав часах шăпланчĕ. Тавралăх каллех уçă сывлăшпа сывларĕ, хĕвел те, ним пулман пекех, сарăлса, хаваслăн çĕкленчĕ. Тӳпере тăри юрларĕ, çутçанталăк илемĕпе киленме чĕнчĕ. Анчах та савăнма-и унта?

Эпĕ васкаса картишне тухрăм. Чим-ха, калама мансах кайнă,—хăйне хăй пӳлчĕ Иван Игнатьевич.—Эпир ун чухне кунта мар, кĕпер çумĕнче пурăнаттăмăр. Илтетĕп: хыттăн кăшкăрашса, çуйхашса пирĕн еннелле пĕр ушкăн килет. Шуррисем икĕ юланутçă хыççăн хăвaласа килнĕ иккен, анчах та тăрăшни харам пулнă, лешсем çырма урлă, хальхи ĕне ферми тĕлĕнчен каçса, тарса ӳкме ĕлкĕрнĕ. Пĕлместĕп, тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и, хĕрлисем Патăръелне килсенех, пирĕн ял çыннн шуррисем патне кайнă пулать. Вăрттăн çулпа, шăпах отрядри салтаксем канлĕн çывăрнă вăхăтра, вĕсене Йăлăма илсе çитернĕ. Крепков хăй аманнă пулсан та, шуррисене хирĕç çирĕп тăнă теççĕ, юрĕ ĕнтĕ, ун çинчен тепĕр чух каласа парăп-ха. Халь тĕп калаçуран кăштах пăрăнтăм пулас,—каллех пуканне ушкăн çывăхне куçарса калаçăва малалла тăсрĕ вăл.—Шуррисем малтанласа никам патне кĕмесĕр хурал пӳрчĕ умне çитсе чарăнчĕç, унтан, хыттăн чан çапса, ял халăхне пуçтарчĕç. Пирĕн çемьерен никам та каймарĕ. Тепĕр çур сехетрен пулĕ, алăка хыттăн тапса, пӳрте винтовкăллă палламан çын кĕчĕ.

—Пуçтарăнăр,—терĕ вăл ман умма пырса. Эпĕ нимĕн те ăнланаймастăп:

—Ăçта?—тетĕп.

—Эсĕ тата ыйтса тăратăн-и?!—хулпуççинчи винтовкине хывса штыкĕпе ман еннелле хăмсарчĕ вăл.—Хĕрлисене пулăшма пĕлтĕр пулсан, явапне те тытăр!—сурчăкне сирпĕтсе пур вăйран вырăсла кăшкăрчĕ вăл.

Эпĕ ун чухне вырăсла питех пĕлместĕм, манăн чĕре ырă маррине сисрĕ, пуçтарăнма пуçларăм, аллăмран Марье çакăнать, ют çын умне пырса, мана ирĕке яма йăлăнать. Лешĕ хĕрарăм куççулĕ çине çаврăнса та пăхмарĕ, приклачĕпе çеç хыттăн ăна аяккалла тĕртрĕ. Марье урайне ӳкрĕ. Çакна пурне те курса тăнăскер, эпĕ урăх чăтса тăраймарăм, кушак пек, ун çине сиксе ӳкрĕм. Арăмпа пилĕк çул пĕрле пурăнатăп пулин те, эпĕ ăна халиччен пĕр сивĕ сăмах каласа курман, кунта, кур-ха, ман куç умĕнче, çич ютран килнĕскер, прикладпа ăна чышать. Çиллĕм килнĕрен, пĕрех пуçĕнчен çапрăм, вăл тĕшĕрĕлсе ӳкрĕ. Шăв-шава илтсе пулĕ, алăк хыçĕнче сыхлама юлнă тепĕр тăсланкă, унăн юлташĕ ĕнтĕ, чупса кĕчĕ. Эпĕ, хĕрсе кайнăскер, ăна та тин çеç тӳнсе кайнă салтакран туртса илнĕ винтовка приклачĕпе çапрăм, вăл та урай варрине тăсăлса выртрĕ. Малалла мĕн тумалла-ши тетĕп, анкă-минкĕленнĕ евĕр, пуçа нимĕнле шухăш та пырса кĕмест. Марье ăс паман пулсан хăçанччен пĕр вырăнта тăраттăм-ши?

—Иван, атя, вĕсене нӳхрепе хупар, унта никам та тупаймĕ, тет хăлхаран пăшăлтатса. Сисетĕп, унăн та чĕри вырăнта мар. Нӳхрепне эпир кил-çуртран пĕр 20-30 метр аяккарах, пахча хыçĕнче чавнăччĕ. Ялта ун çинчен кӳршĕ-аршăсăр пуçне пĕлекен те çук. Тимĕр çăрапа питĕрсех тăраттăмăр. Эпĕ —тăсланкине, арăм —малтан пӳрте кĕнине, эх, сĕтĕретпĕр хайхисене улма йăранĕ тăрăх. Пĕлместĕп, мĕн чухлĕ вăхăт иртрĕ-ши, нумай мар пулас, маншăн çав тери хăвăрт иртнĕн туйăнчĕ çак операци. Эпир иккĕшне те хăвăрттăн нӳхрепе чăмтартăмăр та алăка çăрапа питĕрсе илтĕмĕр.

—Куншăн пире каçарас çук,—тетĕп арăма.—Атя, пуçтарăнăр хăвăртрах! Эпĕ халех тăрантас кӳлетĕп.

Лаши пирĕн çав тери чаплăскер, таврари халăха ăмсантармаллискерчĕ, кашни çулах унпа çăварнире катаччи чупаттăмăр. Пур хĕрупраç та пирĕн çуна çине ларасшăн çунатчĕ, ăна хуса çитесрен шикленмен эпĕ.

Марье ман çинчен куçне илмесĕр пăхать. Сисетĕп, уйрăласшăн мар ĕнтĕ. Пичĕ тăрăх, ăшăпа тарланă кантăк тăрăх шыв юхнă пек, куççулĕ чупса анчĕ, хăй пуçне ман

кăкăр çине хучĕ. Хамăн та чун хурланать. Мĕн тăвăн, мĕнле те пулсан хăтăлмаллах. Арăма хулĕнчен тытса, ăна çавăтса, картишне васкарăм.

Тăрантас хатĕрччĕ ĕнтĕ, асанне те, пĕчĕк ачана чĕркеме ĕлкĕрнĕскер, унпа пĕрле хăпарса ларчĕ. Марье çеç, хăяйман пек, çаплах пĕр вырăнта тăрать, куçĕсем тем каласшăн. Лăпланма пĕлмен чĕре, хыттăн тапса, васкама хушать. Чăтса тăраймарăм, ыталас вырăнне, ăна йăтса илтĕм те:

—Сыв пул!—терĕм.

—Эсĕ...Эсĕ пымастăн-и?!—чĕтрекен тутисемпе ман еннелле туртăнчĕ вăл.

—Çук, килтех юлатăп. Аттесене систермелле, унсăрăн тата темле нуша курма тивĕ,—лашана хапхаран çавăтса кăларнă май, куççулĕ юхса тухасран тутана хыттăн çыртса, аран ăнланмалла мăкăртатрăм эпĕ. Васканă май, ăçта каймаллине те калама маннă. Ку маншăн тăван килйыша килтен хăваласа кăларнăнах туйăнчĕ. Чĕре пуриншĕн те хĕссе ыратрĕ. Май килсен, лăпкăн пурăнакан халăха пăтратакансене тем туса хума хатĕр пултăм эп çак самантра.

Асаннепе арăм куçран çухалманччĕ-ха, хурал пӳрчĕ тĕлĕнчен илтĕнекен хĕрарăмăн çинçерех сасси мана ыйăхран вăратрĕ тейĕн. Тӳрех ăнлантăм: хĕрлисене пулăшакансене нушалантараççĕ. Тен, ял пухăвне кайнă пулсан, эпир те вĕсемпе çумлăнах тăнă пулăтăмăр. Çакăн çинчен шутласанах, çан-çурăм чĕтресе илчĕ, май пур чух — пытан, тенĕнех туйăнчĕ. Анчах та ăçта тарса каймалла? Çынран пытанса пурăнма çут кун панă-шим мана? Çук, çĕр çинче тырă-пулă ӳстерсе савăнма, ача-пăча çитĕнтерме, ирĕкре пурăнма çуратнă мана атте-анне! «Енчен те телей курас тесессĕн, санăн шуррисемпе кĕрешмелле. Халлĕхе пытан, тăванăм, паян эс пĕччен нимĕн те тăваймăн, халь тин паттăрланни пуçна çини çеç пулать,—хăлхаран пăшăлтатса, хушсах калать пек ăшри сасă. Чун тени ĕнтĕ вăл.—Часах акă хĕрлисем те çитĕç. Ун чух вĕсемпе çумлăн тăрса пуриншĕн те тавăрăн. Халлĕхе, мăшкăл пулин те, пытан, пытан, пытан!»—çине-çинех кăшкăрсах калать пек мана ырă сунакан ăшри сасă.

Аллăмсемпе хăлхана хупласа, улма пахчи тăрăх Киремет çырми еннелле чупатăп. Ун чух вăл пĕчĕк çеç çырмаччĕ, çыранĕсем çӳллĕ вĕлтĕренпе хупланнăччĕ. Хальхи кĕпер вырăнĕнче 3-4 метрлă икĕ пĕрене пăрахса, çиелтен саваламан хулăн хăмасем çапнăччĕ.

Ăҫта пытанмалла-ши? Нумай шутласа тăма вăхăт ҫук. Пур вăя пухса ҫырмана чупса антăм. Илтетĕп: хыҫра такам хыттăн кăшкăрать. Мана курчĕҫ-шим тесе тӳрех вĕлтĕрен ăшне чăмрăм. Пит-куҫа, ал-урана ҫунтарнине пăхмасăрах упаленетĕп. Шăпах кĕпер тĕлне ҫитсен, малалла утма хăватăм юлмарĕ, ӳт лаптăк-лаптăк хĕрелсе хăмпăланса тухрĕ. Вĕри шывпа пĕҫертнĕ хыҫҫăнхи евĕр, пĕҫертет, ал-ура кĕҫтет, чăтма ҫук хыҫас килет. Хуть те мĕн пултăр, каҫ пулса тĕттĕмленмесĕр те кунтан тухмастăп, тетĕп хама хам. Ҫапла шутласа ҫыран хĕррипе тăвалла упаленетĕп, унтан икĕ пĕрене хушшинчи хăма айне, май килнĕ таран ҫӳлерех хăпарма тăрăшса, тăсăлса выртатăп. Ял енчен ҫаплах-ха чĕрене тивмелле сас илтĕнет. Ăна тăнлас мар тесе, каллех хăлхасене хуплатăп. Куҫ умне Марьепе асанне тухаҫҫĕ. Ĕлкĕрчĕҫ-ши вĕсем? Ăҫта, хăш яла тарчĕҫ-ши? Ҫак шухăшсем пуҫа, чĕрене ыраттарчĕҫ, анкă-минкĕлетрĕҫ те.

Унччен те пулмарĕ, манăн айри ҫĕр, лаша урисем пуснă май, чĕтренме пуҫларĕ пек. Хăлхасене уҫсах итлетĕп: чăнах та, юлан утҫăсем кĕпер еннелле килеҫҫĕ иккен, тарма кая юлнине сисрĕм. Сывлама чарăнса малалла мĕн пуласса кĕтетĕп.

Лашасем кĕпер ҫине утса кĕчĕҫ. Вĕсен урисем мана таптанă пекех туйăнаҫҫĕ. Телее, пуҫ тĕлĕнче, кăшт ҫӳлерех хыттăн таплаттарса илсен, вĕсем пĕр чарăнмасăр малаллаваскарĕҫ. Эппин, пурте йĕркеллех, мана асăрхакан пулмарĕ. Хĕвел анса тĕттĕмленсен, хамăн хӳтлĕхрен тухрăм та, ял урамĕ тăрăх асăрханса утрăм, часах йăпшăнса пӳрте кĕтĕм. Кунта нимĕн те ăнланма ҫук: сĕтел-пукан, тирĕк-чашăк, кĕпе-тумтир — пурте урай варринче сапаланса выртаҫҫĕ. Темĕн шыранă пулас. Эппин, килте юлма юрамасть. Шуррисем таврăнма пултараҫҫĕ. Эпĕ каллех хама хӳтĕлесе хăварнă Киремет ҫырми еннелле утрăм. Паллах, ĕҫме-ҫимелли те илтĕм.

Ларатăп ҫапла хама хӳтĕлесе хăварнă вырăнта. Тӳперен, кăмăла ҫĕклес тенĕ евĕр, ҫăлтăрсем куҫ хĕсрĕҫ. Ҫĕнĕ уйăх, хыҫалалла таяннăскер, яланхи пек мар, айваннăн курăнчĕ. Вăл пĕлĕт таткисемпе хутран-ситрен хупланса, манăн хуйха пĕлмесĕр, пытанмалла выляма чĕнчĕ. Ҫын куҫĕ тĕлне пулас мар тесе тарса ҫӳретĕп. Эсĕ ҫакна ним чухлĕ те ăнланмастăн, пĕчĕк ача пек хăтланатăн, тесе калассăм килчĕ ăна. Хăҫанччен ҫакăн пек пурăнмалла пулĕ-ши?

Эпĕ ăҫталла каймаллине пĕлмесĕр, Киремет хĕррипе утатăп, унăн вĕҫне ҫитсен, сылтăмалла — Ҫĕнĕ Ахпӳрт ялĕ

енне пăрăнатăп. Часах Йăкăнат лартнă çил арманĕ патне пырса тăтăм. Вăл халĕ те çав вырăнтах ларать. Тĕттĕм каç унта никам та курăнмарĕ. Сарăлса ларакан çунаттисем чуна шиклентерчĕç. Хăра-хăра кăшт аяларах ларакан пĕчĕк пÿрт енне çывхаратăп. Унта ытти каççенче яланах е Йăкăнат пичче хăй, е ывăлĕсем çывăратчĕç. Эпĕ пынă чух çуртра никам та курăнмарĕ. Çапах та шала кĕме хăратăп, алăк умĕнчи сак çине ларса, тавралăхри сас-чĕве тăнлатăп. Çывăхранах çунаттисемпе çатлаттарса тăмана вĕçсе иртрĕ. Пăлара те çумăра сиссе, те яланхи йăлипе чарăнма пĕлмесĕр шапасем кăваклатрĕç. Илтетĕп-ха, тăвалла пĕр йывăр лав хăпарать. Васканăран, урапа тĕнĕлне тикĕт сĕрме те маннă пулас. Каçхи шăплăхра кустăрмисем пĕр-пĕринпе калаçса килеççĕ тейĕн. «Кусем шуррисем мар пуль-ха,—шутлатăп хам ăшра,—çапах та асăрханни ытлашши пулмĕ». Çак шухăшсемпе çулран инçе мар, чылаях çÿллĕ ÿснĕ мăянсен хушшине пытанатăп. Хам çаплах-ха алăри винтовкăна меллĕрех чăмăртаса, хăлхасене çивĕч тытатăп.

Вĕсем калаçнинчен акă мĕн ăнлантăм: ял-йыш шуррисенчен тарать иккен. Çитменнине пĕр лав çеç мар, умлă-хыçлă темиçе килйыш пуçтарăнса çула тухнă. Манăн сиксе тухса кашнинех ыталас, ял çинче кун каçипе мĕн пулса иртни çинчен ыйтса пĕлес килчĕ. Çапах та хама хам тытса чартăм. Чунăм вĕсен хушшинех туртăнчĕ, анчах та шуррисене курайман туйăм хĕрлисене кĕтме хушрĕ.

Телее, вĕсем нумай кĕттермерĕç, тепĕр икĕ кунтанах, Крепков отрядне шуррисем çĕнтернине пĕлсенех, командовани станцине каякан çула хÿтĕлеме çĕнĕ отряд яма хушса васкавлă телеграмма янă, теççĕ. Эпĕ иккĕленмесĕрех вĕсен ушкăнне çырăнтăм. Отрядра ман пек чăвашсем татах пурччĕ. Ялта нумай тăма тивмерĕ. Çав кунах шуррисене хăваласа Пăва еннелле кайрăмăр. Марьепе икĕ ывăла курмасăрах çула тухма тиврĕ, çитменнине арăма çеç мар, пушанса юлнă ялти тăван-пĕтенсене те тĕл пулма май килмерĕ. Вĕсемшĕн эпĕ, йĕп пекех, пĕр сас-хурасăр çухалтăм. Кайран çул çинче пĕр хутла пĕлекен юлташа каласа пырса çыру çыртартăм,—çапла вĕçлерĕ калавне Иван Игнатьевич.

—Иван тете, эсĕ хĕрлисене пулăшакансене асаплантарчĕç, терĕн. Апла пулсан сутăнчăкĕ хамăр ялтах пурăннă ĕнтĕ,—малаллине пĕлесшĕн пулса ыйтрĕ Нина Федорова.

—Халь тин ун ҫинчен аса илме те кирлӗ мар, вӗсен паянхи кун тӗлне пирӗн ялта шӑрши те юлман, ӑҫта иккенне те пӗлместпӗр,—ура ҫине тӑчӗ вӑл.

—Иван тете, ан кайăр-ха, тата мӗн ҫинчен те пулин каласа парăр, ҫав тери илемлӗ, кӗнекере ҫырнă пек калатăр эсир,—ярасшăн мар пулчӗҫ ăна ҫамрăксем.

—Вăт шăпăрлансем! Сирӗнпе пуҫла кăна, куршанак пек ҫулăхатăр. Ну, ӗҫлӗр, ӗҫлӗр,—терӗ вăл сăн-питне ҫутăлтарса, унтан муклашкине илсе куҫса ларма тăчӗ.—Чим-ха, кунта пуҫлама та кирлӗ мар, Киремет ҫырми вӗҫне те тухрăмăр ӗнтӗ, чăн-чăнах вăрман лартакан машина пек ӗҫлетӗр, маттур, маттур!—аллинчи ларкăчне пăрахса тӗлӗннӗ пек пулчӗ старик.

—Ушкăнпа пӗччен лартни мар вӗт. Ахальтен мар, усси пысăк пуласса пӗлсе, колхозсем йӗркеленӗ,—юлашки шăтăка чавнă май хушса хучӗ Коля.

—Ывăлăм,—ун патне пычӗ Иван Игнатьевич,—санăн ку лартмалли юлашки йывăҫу-и?—аллипе хăйӗн ал туйи хулăнăш шурă туналлă хурăна ачашларӗ вăл.

—Ҫапла, юлашки, Иван тете, анчах та ӗҫ пӗтмен-ха, ав, председатель ушкăнне пулăшас пулать.

—Пулăшма пулăшăр-ха, эп ун ҫинчен мар, вăхăт иртет, акă эпӗ те 83 ҫулта ӗнтӗ,—сассине пусарса хурлăхлăн каларӗ вăл. Ҫамрăксем ун тавра пуҫтарăнчӗҫ, мӗн каласса кӗтрӗҫ. Иван Игнатьевич ҫаплах-ха хурăна аллипе сăтăркаласа, васкамасăр темӗн аса илнӗ пек,—вăхăт шăвать,-терӗ. —Халь тин эпир ӗҫпе мала тухаймăпăр ӗнтӗ. Пурăннă кунсем хыҫа юлаҫҫӗ. Часах ак ӗмӗр те вӗҫленӗ. Ума Киремет ҫырми пек, тарăн, кӗперсӗр ҫырма тухӗ, малалла ҫул ҫук; тӗттӗмлӗх, нимӗн те курăнмасть, ҫутатмасть те. Ҫакăнпа пурнăҫ ҫулӗ вӗҫленет, саншăн юлашки минутсем. Кашни этем ҫутă тӗнчепе уйрăлас умӗн иртнӗ кун-ҫулне аса илсе хыҫалалла ҫаврăнса пăхать теҫҫӗ. Пӗр шухăшсăр ҫӳренӗ чухне те хушăран пурнăҫ ҫулӗ тумхахлă, вăхăчӗ-вăхăчӗпе йăлăхтарса ҫитернӗнех туйăнать. Унăн вӗҫне ҫитнӗ сыншăн вара вăл асфальт сарнă ҫулран та тӳрӗрех, якарах. Куҫ умне пурнăҫри чи асамлă кунсем тухаҫҫӗ, юлашки хут чун-чӗрене савăнтарса малалла чӗнеҫҫӗ. Акă маншăн та часах ҫав вăхăт ҫитӗ. Тен, аса илмелӗх эпӗ ҫӗр ҫинче нимӗн те тăваймарăм, уншăн каҫарăр. Эпӗ сиртен ҫак юлашки йывăҫа лартма ирӗк пама ыйтасшăн,—йӗри-тавралла, йăлăннă евӗр, куҫӗсемпе пăхса ҫаврăнчӗ вăл.

Кольӑн ҫак старике шеллес килчӗ, ытла та ырӑ кӑмӑллӑ, хӑюсӑр-ҫке ватӑлсан этем.

—Иван Игнатьевич, эпир сана нихҫан та манмастпӑр, пиртен уйрӑлсан та эсӗ ялан пирӗн чӗрере пулӑн. Паллах, лартах ку йывӑҫа.

Ватӑ ҫын ал туйине Кольӑна тыттарса унран кӗреҫине илчӗ, анчах та вӑл унпа тӳрех ӗҫлеме васкамарӗ-ха, чӗркуҫленсе ларса, хурӑн тымарӗсене майлаштарчӗ, унтан мӑнукне, Мишшана хӑй патне чӗнсе илчӗ.

—Тытса тӑр-ха,—терӗ вӑл ачашшӑн. Хӑй малтанласа, ҫын пытарнӑ чухнехи пек, хура тӑпрана ывӑҫласа темиҫе хутчен шӑтӑка сапрӗ, унтан тин, ура ҫине ҫӗкленсе, кӗреҫипе ӗҫлеме пикенчӗ. Ҫав тери асра юлмалла пулчӗ ку пуҫтарӑннӑ халӑхшӑн. Акӑ юлашки кӗреҫе тӑпра. Унпа вӑл тин ҫеҫ ҫӑмӑллӑн урипе пусарнӑ йӗрсене, йӗтем ҫинче тырра сӑвӑрнӑ евӗр, ҫӑмӑллӑн чӗтрентерсе, йывӑҫ йӗри-тавра сапрӗ. Кӗреҫе пушансанах халӑх хаваслӑн шавлама пикенчӗ, алӑ ҫупрӗ.

—Иван тете, эсӗ лартнӑ хурӑн пирӗншӗн ӗмӗрлӗх палӑкӗ пулӗ. Эпир ӑна куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек упрӑпӑр, шӑварса тӑрӑпӑр.

Иван Игнатьевич яш каччӑ пекех имене хӗрелчӗ.

—Ачамсем, ку вырӑнта ӗҫ пӗтрӗ, халь кайӑр, председатель ушкӑнне пулӑшӑр ӗнтӗ. Эпӗ кунтах юлатӑп.

Ушкӑн кӗпӗрленсе йӗтем еннелле утрӗ. Мишша Игнатов каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ. Аслашшӗ ҫаплах-ха хӑй лартнӑ хурӑн ҫумӗнчен хӑпмарӗ. Халь вӑл карттусне хывса, шухӑша кайса хурӑна ачашларӗ. Ӑшӑ лӑпкӑ ҫил унӑн сайралса юлнӑ ҫемҫе шурӑ ҫӳҫӗсене сапаларӗ, анчах та старик ӑна туймарӗ те пулас. Вӑл пӗр хускалмасӑр тӑрса, таҫта аяккалла пӑхрӗ.

Хӗвел чылай ҫӳле хӑпарма ӗлкӗрнӗччӗ ӗнтӗ. Халӗ вӑл ҫӳхе кӗпе витӗр ҫан-ҫурӑма аванах пӗҫертрӗ. Николай Филиппович Чернов та пӗр вӑхӑт пилӗк таранах салтӑнса ӗҫлерӗ. Унӑн ҫан-ҫурӑмӗ тарпа витӗннӗ, вӑл ҫаплах-ха аллинчи йывӑр тукмакне пӑрахмасӑр, шалчасене ҫӗре ҫапса кӗртрӗ. Шкул ачисем ҫатан тытса ун хыҫҫӑн аран-аран ӗлкӗрсе пычӗҫ. Председатель тӑрӑшрӗ пулин те, ҫамрӑк чухнехи мар ҫав, ӗҫ ывӑнтарать, час-часах канма, сывлӑш ҫавӑрма лекет. Этем ватӑлса пынӑ май, ӳт-пӳ те улшӑнать иккен. Ял-йыш астӑвасса, Николай Филиппович темиҫе ҫул каялла ярмӑрккасенче кӗрешме тухсан, ун кӗлеткине пӑхса кашниех ӑмсаннӑ. «Ытла та час иртет-ҫке вӑхӑт, унтанпа нумай та пурӑнман пек ҫӗр ҫинче, анчах та епле хӑвӑрт ылмашрӗ пит-куҫ, кӗлетке. Мускулсем ӗлӗкхи пек

вылянмаççĕ, вăйсăррăн чĕтренеççĕ çеç халь. Хырăм çинчи ӳт те хулăмланса илемсĕррĕн пĕркеленчĕ. Çамрăк чухне çеç иккен хăвăн пӳ-сийӳпе савăнма пулать,»—шутларĕ председатель хутран-ситрен хăйĕнчен-хăй тĕлĕнсе.

Киремет енчен çамрăксен ушкăнĕ кĕпĕрленсе килнине курсанах, вăл аванмарланса, кĕпине тăхăнчĕ, унтан каллех тукмакне илсе, эхлетсех шаккама пуçларĕ.

—Николай Филиппович,—чарчĕ ăна Сергей Иванович,—кăштах ларса кан-ха, тăруках хăв çине йывăр ан ил, вырăн çине ӳкмелле пулĕ.

—Нимех те мар, паян çеç тăрмашмастпăр вĕт кун пек ĕçре. Ав, Киремет çырми патĕнчисем кунталла килеççĕ. Кăтартар-ха вĕсене, пире те чустаран туманнине,—хăйне хăй хавхалантарса пĕтĕм вăйран çапма тăрăшрĕ вăл.

—О-о-о, пирĕн председатель тепĕр çамрăк çынран та ирттерет!—ун патнелле çаннисене тавăрса утрĕ Коля.—Парăр-ха, эп те çапса пăхам тата,—колхоз ертӳçин аллинчи тукмакне илсе пуç çине çĕклерĕ вăл, унтан ăна хăвăрттăн çĕрелле антарчĕ.

Николай Филиппович чĕм шыва ӳкнĕскер, кĕсйинчен шурă тутăрне кăларса питне шăлса типĕтрĕ, çамки çинчи тарпа сыпçăннă çӳçне темиçе хутчен аллипе хыçалалла ывăтрĕ пулин те, леш каллех, арпашăнса, куç умне анчĕ, тураса якатмасăр та тикĕс выртмарĕ.

—Ну, шăрăх та паян, çумăр пуласса пуль,—терĕ вăл каллех пичĕ çинчи пăчăр-пăчăр юхакан тарне шăлса.

—Темĕн, пĕлĕчĕ ытла та тăрă, çумăр пулассин палли те çук,-тӳпенелле тинкерсе хушса хучĕ Сергей Иванович.

—Çапла. Нивушлĕ метеорологсем тĕрĕсех калаççĕ, апла пулсан, кăçал çăвĕпе те çумăр пулас çук. Пĕтĕм тĕш-тырă хирте типсе çунĕ.

Ку калаçу пурне те пĕр вăхăт хушши кичемлетрĕ. Коля çеç вĕсем сăмахланине тăнламасăр çаплах-ха чарăнмасăр тукмакне вылятрĕ.

—Ытла та çăмăллăн туйăнать-çке ун аллинче тукмак, темле тĕкрен тунă япалапа вăйă вылять тейĕн,—пуçĕпе Коля енне сулса, калаçăва урăххи çине пăрма шутларĕ председатель.

—Çамрăксем вĕт. Хамăр та вĕсен çулĕнче çаплах пулнă,—унпа пĕр шухăшлă пулчĕ Сергей Иванович.

Николай Филиппович çак хушăра сывлăш çавăрмалла тенĕ пек, çерем çине ларса, пирус тивертрĕ. Ĕçпе хавасланнă ушкăн сасси каллех çĕнĕ юрăпа çĕкленчĕ, председателĕн

ывӑнни те ҫухалчӗ тейӗн. Вӑл ҫуррине яхӑн туртма ӗлкӗрнӗ пирусне ҫӗре пӑрахса урипе таптаса сӳнтерчӗ те унтан каллех ӗҫе пикенчӗ.

Ушкӑнпа пӗрле тӑрӑшнӑ чух темӗнле йывӑр ӗҫ те ҫӑмӑлланать, вара вӑй хунӑҫемӗн ывӑннине туймастӑн.

Колхоз ертӳҫисем малтанах ҫакӑн пек пысӑк ӗҫе кӑнтӑрла тӗлне вӗҫлесси ҫинчен шутлама та пултарайман. Ахальтен каламан ҫав, пӗр ҫын сурать — типсе пырать, халӑх сурать — кӳлӗ пулать, тесе. Часах сӑрт тӳпинче ушкӑнсем пӗр-пӗринпе хире-хирӗҫ тӗл пулчӗҫ. Халӗ кунтан пӑхсан, Катек те, Татмӑш та, Ҫӗнӗ Ахпӳрт те курӑнать. Вӗсем ҫеҫ мар, Пӑла айлӑмӗнче вырнаҫнӑ таврари ялсем: Патӑръел, Шӑнкӑртам, Йӑлӑм, Тӑрӑн, Тренъел — пурте алӑ тупанӗ ҫинчи пекех туйӑнчӗҫ. Хӗвел ҫутипе 7-8 ҫухрӑмра вырнаҫнӑ Тӑрӑнти чиркӳ тӑрри темле ахах евӗр ҫутатрӗ. Куҫа илмесӗр йӗри-тавралла сӑнас килчӗ. Аялтан вӗҫекен самолет чӳречинчен пӑхнӑ евӗр, тавралӑх хитрен, чуна илӗртмелле курӑнчӗ. Кунтанах аслӑ ҫулпа Пӑлан кашни юппи палӑрчӗ.

Ӗҫ вӗҫленнӗпе пӗрехчӗ ӗнтӗ. Пӗрисем ҫутҫанталӑк илемӗпе киленчӗҫ, теприсем ҫемҫе ӑшӑ ҫӗр ҫине ларса, пирус тӗтӗмне рехетленсе ҫӑтрӗҫ, виҫҫӗмӗшӗсем, юлашки шалчасене ҫапса кӗртсе, йывӑҫ турачӗсемпе ҫатансем тытрӗҫ. Ҫак вӑхӑтра, аслӑ ҫулпа тусан кӑларса, вӗсем патне "ГАЗ-69" маркӑллӑ машина васкарӗ. Ялта ниҫта чарӑнса тӑмасӑр вӑл тӳрех, сулахаялла пӑрӑнса, хирелле ҫул тытрӗ. Часах акӑ канма ларнӑ ушкӑн тӗлне ҫитсе чарӑнчӗ. Кабинӑран чӑлт шурӑ тӗслӗ шӑлаварпа кӗпе тӑхӑннӑ районти комсомол пуҫлӑхӗ хаваслӑн кулкаласа тухрӗ.

—Сывлӑх сунатӑп, юлташсем!—терӗ вӑл хыттӑн пурте илтмелле, сылтӑм аллине кӑштах ҫӗклесе.—Ну, пултаратӑр та вара эсир. Правленине иртенпе шӑнкӑравлатӑп, пӗр сас-чӗв те ҫук. Ӑҫта тарса пӗтнине тавҫӑрайманнипе килсех курас, терӗм. Кунта иккен.

—Уншӑн комсомол айӑплӑ, секретарӗ ӗҫлеме пуҫланӑ-пуҫламан пире пуҫлӑхсене сывлӑш ҫавӑрма памасть вӗт. Ӑна ялан тем кирлӗ, тем ҫитмест. Ну, тупса патӑр та эсир мана нуша. Халь тата ку ӗҫе вӗҫлесен, клуба хӑйсене кӑмӑла кайнӑ пек йӗркелесшӗн, каллех пулӑш, мӗн те пулсан тупса памаллах,—Чекушкин пекех ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа хушса хучӗ председатель.

—Эппин, тинех сирӗн колхозра та яшсемпе хӗрсен пултаруллӑ пуҫлӑхне тупрӑмӑр.

—Ҫапла, ачи, чӑнах та, пӑрӑҫ пек.

—Вăт, Николай Филиппович, эсир шăпах çакăн пек пулăшакан çын тупассишĕн ĕмĕтленеттĕрччĕ-ха. Çамрăксем çапла та, çамрăксем капла, тесе кăмăлсăрланаттăрччĕ, ялтан тухса тараççĕ, теттĕр,—ăна тахçанхи иккĕшĕн хушшинчи калаçăва, чеен куçне хĕссе, аса илтерчĕ райком секретарĕ.—Тĕрĕс, Коля, малашне те çаплах ĕçле,—каччăна хулпуççичен çапса лăпкарĕ вăл.

—Председатель ÿстererex сăмахлать. Клуб пирки те мана тĕртсе каларĕ. Мĕнех, хуçа хирĕç мар пулсан, эпир яланах хатĕр, культура вучахне те чĕртсе яма тăрăшăпăр,—ĕмĕтленчĕ Коля.

Йĕри-тавра пуçтараннă çамрăксем ун майлă пулчĕç. Каччăн çакăншăн кăмăлĕ çĕкленчĕ:

—Ăçтан —ха тÿрех кунта килме пĕлтĕр эсир?—хăй тĕлĕннине ним чухлĕ те пытармасăр ыйтрĕ вăл райком секретарĕнчен.

—Вăрттăнлăх. Эсир хăвăр хушшăрта пирĕн агентсем çук тетĕр-им? Асту çав, сыхланса ĕçле, Коля,—çаплах-ха сăнпитне çиçтерсе чееленме пăрахмарĕ Чекушкин.

Ку сăмахсем чăннипех те шухăша ячĕç. «Мур илесшĕ! Ĕçлеме пуçламан, такам мухтанма та ĕлкĕрнĕ,—мăкăртатрĕ вăл кăштах кăмăлсăрланса. Унăн савăнăçпа çиçекен пит-куçĕ кăштах тĕксĕмленчĕ, куçĕсем çынна витĕр курма тăрăшакансем: —«Кам пĕлтерчĕ?»—тесе пĕлесшĕн пулнă евĕр, ыйтуллăн пăхрĕç.

Чекушкин çакна тÿрех сисрĕ пулас, темиçе кун каяллахи пек, икĕ аллипе Кольăна хулпуççинчен тытса, сасăпах кулма пикенчĕ:

—Ан тĕлĕн, тусăм, никам та пĕлтермен! Йăлăм урамĕнчен тухсанах эсир воскресникре иккенне тавçăрса илтĕм эпĕ. Сăнарăм та, халăх хирте хĕвĕшет. Енчен те мана систерес темен пулсан, сирĕн пурин те пĕр тĕслĕ кĕпе тăхăнмалла пулнă. Кунта вара пач урăхла, пăх-ха, мĕнле тĕс кăна çук пуль кунта, художник ÿкерчĕкĕ пек вĕт,—халăх енне аллине сарса кăтартрĕ вăл.—Тĕрĕссипе, унпа çеç мар, пурпĕрех тупнă пулăттăм.

—Эпĕ шалтах тĕлĕнтĕм, пурте ĕçре, кам-ши, тетĕп. Пĕлтерекеншĕн хама хам лайăх мар туйрăм. Ĕçе тин тытăнтăмăр вĕт-ха, тĕрĕссипе каласан, мĕн тытăнни, пĕр-пĕринпе паллашатпăр çеç темелле,—терĕ Коля. Çапах та вăл райком секретарĕ никам систермесĕрех, хăй тĕллĕн сăнаса, çамрăксем воскреснике тухнине ăнкарса илнинчен тĕлĕнчĕ. Анчах та çакна калаçура тепĕр хут аса илтерес темерĕ.

—Чăнах та, пысăк ĕç хускатнă, курсанах чĕре савăнăçпа тулчĕ. Маттур, пуçламăшĕ лайăх санăн,—хавхаланса калаçма чарăнмарĕ Чекушкин.

—Çук, мухтама иртерех-ха, куçăхтарасран та шикленместĕр-и, Александр Сергеевич?

—Шанатăп пулсан, мĕншĕн шикленмелле вара? Ĕçре чи йывăрри вăл — пуçласси.

—Вăт ку тĕрĕс,—вĕсен калаçăвне хутшăнчĕ колхоз парторгĕ Георгий Михайлович.

—О-о, кунта комсомолецсем çеç мар, колхоз пуçлăхĕсенчен те килте ларса юлакансем çук иккен, пурте уйра,—каллех шӳтлеме тытăнчĕ Чекушкин Быковпа Галкина алă парса.—Шкул ачисем те, интеллигенчĕсем те,—хĕпĕртенĕçемĕн хĕпĕртерĕ вăл Сергей Ивановичпа шкул ачисене уйрăммăн тепĕр хут сывлăх суннă май.

—Эпир çеç мар, кăштах маларах килнĕ пулсан, сакăрвуннăран иртнисене те курнă пулăттăн,—хушса хучĕ Быков.

Чекушкин ун сăмахĕсене шӳт вырăнне хурса ирттерсе яма хăтланчĕ, анчах та лешĕ хайĕн сăмахĕсене çирĕплетсе:

—Эпĕ чăнласах калатăп, пирĕн хушăра Иван Игнатьевич Игнатов та пурччĕ. Асăнмалăх Киремет çырми пуçне хăй аллипе хурăн лартрĕ, унтан чылайччен карттусне хывса çамрăк йывăçран хăпаймасăр тăчĕ,—терĕ.

Александр Сергеевич кулма чарăнчĕ. Унăн куçĕсем татах та темĕн пĕлесшĕн пулнă пек колхоз механикĕ çине тĕпчевлĕн пăхрĕç. Малаллахи калаçу часах уй-хир ĕçĕ çине куçрĕ.

Шкул ачисемшĕн аслисен калаçăвĕ кичем пек туйăнчĕ, çавăнпа та вĕсем кĕреçисене илсе, кăшкăрашса-çуйхашса ял еннелле, аналлла чупса анчĕç. Саша Кошкин шăллĕ, ун пекех сарă çӳçлĕскер, Федя, пурне те чĕннĕ евĕр, чарăнса:

—Атьăр, Пăлана шыва кĕме! Пурте шыва кĕме!—темиçе хутчен кăшкăрчĕ вăл аллине сулла-сулла, унтан хăвăрттăн тусĕсене хăваласа çитес шутпа, вĕсем хыççăн ыткăнчĕ. Аслăраххисемшĕн çакна пăхса тăма çав тери кăсăклă пулчĕ.

Райком секретарĕ нумай тытăнса тăмарĕ, районти ытти хăш-пĕр ялсене çитес тесе, сывпуллашма васкарĕ.

—Чим-ха,—чарчĕ вăл хăйĕнпе хăй калаçнăн тăруках темĕн аса илсе,—сирĕнпе сăмахласа, кунта мĕншĕн килнине те маннă. Коля,—сассине хăпартрĕ вăл мотор кĕрлевне çĕнтерес тесе,—кĕçнерникун ирхине 10 сехетре райкомра

бюро ларăвĕ пуçтарăнать. Ятарласа чĕнме килтĕм. Асту, кая ан юл. Саншăн ку пĕрремĕш лару пулать!

—Юрĕ, пыратăп,—терĕ лешĕ, кун йĕрки пирки ыйтма манса кайса.

Машина тырă пуссипе çултан сылтăмалла пăрăнчĕ, унтан, хăвăртлăхне ÿстерсе, хыçран çĕкленсе юлакан тусан айĕнче курăнми пулчĕ.

—Ĕç вĕçленчĕ, халĕ килсене саланма та юрать,—терĕ председатель каллех çăварне пирус хыпса.

—Тен, ют ялсене машинăпа леçĕпĕр, çакăн пек ĕçленĕ хыççăн халăха çуран çÿретни лайăх мар,—Николай Филиппович шухăшне пĕлес тенĕ пек ăна куçран пăхрĕ механик.

—Паллах, Петр Михайлович, кун пирки ыйтма та кирлĕ мар,—сигарет тĕтĕмне вĕрсе кăларнă май лăпкăн каларĕ председатель.

Çамрăксем, çак хушăра хăйсем пĕр ушкăна пуçтарăнса тăнăскерсем, хĕрсех тем çинчен калаçрĕç, шÿтлерĕç, кулчĕç.

—Атьăр, эпир те Пăлана шыва кĕме каятпăр!—чĕнчĕ пурне те Саша.

—Чăнах та, эпĕ Пăла тăрăхĕнче кун чухлĕ пурăнса та унта шыва кĕрсе курман,—Саша сĕнĕвĕпе савăннăран чутах кăшкăрса ямарĕ Галя Никифорова,—эпĕ çеç мар, ман пеккисем Татмăшра туллиех.

—Галя, эсĕ чăнласах калатăн-и?—ун çумне пырса тăчĕ Светлана Мартышкина.

—Чăн пулмасăр, шыва кĕрессишĕн 5-6 çухрăма çити каллĕ-маллĕ çÿрейместĕн вĕт. Эпир хамăр пĕвере çеç юшкăн тухиччен чăмпăлтататпăр.

—Эппин, эсĕ нумай çухатнă,—кударах хушса хучĕ Саша.—Ну, мĕнле, кайрăмăр-и?—тепĕр хут пурте илтмелле кăшкăрчĕ вăл.

Çĕнĕ Ахпÿрт çамрăкĕсем хăйсемшĕн Светлана каласса кĕтсе ун çине ыйтуллăн пăхрĕç. Лешĕ çакна туйса илчĕ пулас:

—Эпĕ хирĕç мар, кăмăлăрсем пулсан, атьăр!—терĕ.

—Паллах, ушкăнпа кайсан интереслĕрех, мĕн шутласа тăмалли, кайрăмăр,—Светланăна хулĕнчен тытса çавăтрĕ Çĕнĕ Ахпÿрт механизаторĕ, çÿллĕ те тĕреклĕ Витя Комаров.

—Кайрăмăр!—пĕр кăмăллă пулчĕç татмăшсемпе катексем.

—Пăх-ха эс вĕсене, ăçтан вăй-хăват тухать? Кунĕпе пĕр канмасăр ĕçлерĕç пулин те, тин çеç вырăн çинчен тăрса

тухнă тейĕн, ывăнма та пĕлмеççĕ,—кĕпĕрленсе Пăла еннелле çул тытнă çамрăксем çине пăхса тĕлĕнчĕ Николай Филиппович.

—Ан та кала,—калаçăва хутшăнчĕ пасăртанпа чĕнмесĕр ютшăнса тăнă агроном,—колхоз пуласлăхĕ çĕнĕ ăруран килет тесе ахаль каламаççĕ çав. Машина пирки мĕнле канашлăпăр? Паллах, вĕсем хăйсем ыйтма хăяймĕç.

—Петр Михайлович,—механик енне çаврăнчĕ председатель, чăнах та, паян çамрăксем тăрăшса ĕçлерĕç, тĕрĕссипе каласан, вĕсем çеç мар, пурте. Мĕн тери усăллă пулчĕ çак пуçару ял-йышшăн, хуçалăхшăн! Ку ĕçе вăраха ярса, çиййĕнчех пуçăнман пулсассăн, тата миçе гектар пулăхлă çĕр сая каятчĕ, хăçанччен чăтма тивĕччĕ-ши пирĕн? Тавтапуç комсомолецсене. Атя, пĕреххут юлашкинчен те пулин катаччи чуптарар, савăнтарар. Ман шухăшпа, шăпах шывран чăмпăлтатса тухнă тĕле машина çитсен, вĕсемшĕн паянхи кун чăн-чăн уяв, хăйне майлă сюрприз пек пулать.

—Эпĕ те çапла шухăшлатăп. Малтан кунта юлнисене леçĕпĕр. Кайран шыв хĕрринчисене,—Николай Филиппович сĕнĕвĕпе килĕшрĕ механик.—Юлташсем,—çаврăнчĕ вăл çамрăксенчен тăрса юлнă халăх енне,—килĕрсене çуран кайма ан та шутлăр, халех машина килет,—шантарса каларĕ вăл вĕсене.

—Чăрманма кирлĕ марччĕ, çуранах çитеттĕмĕр. А-а, тепĕр тесен, эпир хирĕç мар,—пуриншĕн те явап пачĕ Татмăш ялĕнчи кладовщик, хĕрĕхсенчен иртнĕ Дюкин.

Петр Михайлович механик правленине утрĕ. Кивĕ Катек шăпах виçĕ ял варринче пулнă май, ăна колхоз центрĕ вырăнне шутларĕç, правлени те, колхозниксем сĕннипе, кунтах вырнаçнă.

—Шăпах çул çинче, хăш чухне,васкатăн пулин те, йăпăрт çеç кĕрсе тухма пулать,—терĕç вĕсем ялсене пĕр хуçалăха пĕрлештернĕ чух.

Чăнах та , çапла, Патăръелне каятăн-и, Татмăша е Çĕнĕ Ахпӳрте, çуллахи çумăрлă кунсене шутламасан, пурпĕрех Катек урлă çӳремелле. Ял Совечĕ вара Çĕнĕ Ахпӳртре пулнăран, куçарса çӳреме шутламарĕç, çавăнтах юлтăр, терĕç.

Пуçлăхсем пĕр самантлăха хăйсем çеç юлчĕç. Вĕсен калаçăвĕ каллех çамрăксем çине куçрĕ.

—Пасăр клуб пирки секретаре аванах тĕртсе илтĕн эсĕ,—хĕвелтен аллипе хупланса, куçне чеен хĕссе калаçăва пуçларĕ Георгий Михайлович Галкин.

Парторг председательпе агрономран 10-15 çул кĕçĕнрех. Пĕвĕпе вăл Николай Филипповичран пĕчĕкрех, анчах та Анатолий Владимирович агрономран кăшт çÿллĕрех. Сарă çÿçлĕ, ырхан шăм-шаклă. Паян вăл кĕске çанăллă симĕс тĕслĕ клеткăллă кĕпепе хăмăр тĕслĕ брюки, урине çăмăл пушмак тăхăннă. Хытканрах та, çавăнпа сăнĕпе çамрăк курăнать. Колхоза вăл шăпах икĕ çул каялла Шупашкарти парти шкулне пĕтерсен таврăннă, унччен вăл пĕр вăхăт хушши уй-хир бригадирĕ пулса ĕçленĕ. Янахĕ унăн шĕвĕртĕрех те илемлĕ, çÿхе тутисемпе йăлтăркка куçĕсем пĕр вĕçĕм савăнăçпа çиçеççĕ. Куç —чун тĕкĕрĕ, тесе ахаль каламан çав. Ăна пăхсан, чăнах та, çыннăн шухăш-кăмăлне, вăл мĕнлерех пулнине чухласа илетĕн. Тен, çавăнпа та-и, ял халăхĕ Георгий Михайловича уçă кăмăлĕшĕн хисеплерĕ, парторгран нимĕн те пытармарĕ, хăйĕн çывăх тăванне шаннă пек ĕненме пуçларĕ. Георгий Михайлович хăй те çакна сисрĕ, вĕсен шанăçне тÿрре кăларассишĕн пур вăй-халне пачĕ.

Николай Филиппович парторг çине хăйĕн хура куçĕсемпе пăхрĕ те ун пекех хавасланса:

—Çук, эп тĕртсе мар, чăнласах каларăм. Пирĕн хушăра паянхи кунччен кăшт маларах клуб пирки калаçу пулса иртнĕччĕ, анчах та ун чух пур ыйтăва та йăлтах татса параймарăмăр. Халĕ те çавăн пиркиех калаçмаллисем пур.

—Мĕн çинчен сăмахланăччĕ вара эсир?

—Ыйтăвĕсем чылай. Сăмахран, клубра юсав ĕçĕсем ирттермелле: стенасене сăрламалла, чÿрече каррисене улăштармалла тата ытти вак ыйтусем. Клуб заведующине те улăштармалла. Анчах та çак ĕçе пултаракан çын халлĕхе çук-ха.

—Мĕншĕн çук,—хирĕçлерĕ ăна парторг,—кандидачĕсем пур-ха вĕсем. Пирĕн малтанласа акă комсомолецсен секретарĕ те çукчĕ, тупăнчĕ-çке. Кун пирки çамрăксем малтан хăйсемех шутлаччăр. Клубри юсав ĕçĕсене тăвасах тесен, пирĕн укçа-тенкĕне, районтан парассине кĕтсе лармалла мар, хамăрăнах тупмалла.

*  *  *  *  *

Çамрăксенчен ку калаçăва никам та илтмерĕ. Вĕсем Пăла хĕрне çитнĕ-çитменех, хăвăрттăн салтăнса шыва сикрĕç. Маларах килме ĕлкĕрнĕ шкул ачисенчен хăшĕ-пĕри чăма-чăма ывăннăран, симĕс кавир евĕр çăра курăкпа витĕннĕ Пăлан сулахай çыранĕ хĕрне тухса ларма та ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ, аслисем килнине курсан, текех чăтса тăраймарĕç, тепĕр хут кăшкăрашса-çуйхашса чăнкă çыранран, аллисемпе шыва çурса, чăмрĕç, самантлăха куçран çухалчĕç. Хĕрупраçсемшĕн ку çав тери тĕлĕнмелле туйăнчĕ, хăшĕ-пĕри путрĕ пуль тесе хăй тĕллĕн пăшăрханма та ĕлкĕрчĕ, анчах та кăшт вăхăт иртсенех çыранăн тепĕр енĕнче, дельфинсем пек, паçăрхи ачасем сиксе тухрĕç.

Пăлана пĕвелени 3-4 кун çеç-ха, анчах та шывĕ чылаях пуçтарăнма ĕлкĕрнĕ. Кунта çуллахи шăрăх кунсенче кĕрсе уçăлма çав тери лайăх: пулă пек ишме пĕлекенсемшĕн çеç мар, пачах пĕлменнисемшĕн те тарăн мар вырăнсем пур. Революциччен çак вырăнта шыв арманĕ, хуçи Вырăс Иванĕ пулнă теççĕ.

Юлашки вăрçă хыççăнхи çулсенче таврари ялсене электричество вăйĕпе çутатма темиçе ял пĕрлешсе хăйне евĕр «ГЭС» тунăччĕ. Ăна Коля хăй те лайăх астăвать-ха. Пысăк вольтлă электролинисем тăснă хыççăн çеç, утмăлмĕш çулсенче, малтанхи электростанцине пăсрĕç. Халĕ ун вырăнĕнче кашни çулах шыва пĕвелеççĕ. Кĕркунне шăнтма пуçласанах ăна уçса яраççĕ, çуркунне вара, шыв чаксан, тепĕр хут пĕвелесе лартаççĕ.

Юханшывăн çыранĕсем пĕр пек мар: хăрах енĕ çӳллĕ те чăнкă, тепĕр енĕ вара пачах урăхла, ку йăлтах çырма ăçталла кукăр тунинчен килет.

Пĕве Катекрен кăштах çӳлерех вырнаçнă. Кунта Пăла шăпах ял еннелле — сылтăмалла пăрăнать. Çавăнпа унăн сулахай çыранĕ чăнкă та ешĕл. Патăръел енĕ вара шыва кĕрекенсемшĕн юри хатĕрленĕ евĕр, хăйăрлă, шывĕ те тӳрех мар, майĕпен тарăнланса пырать. Чăнах та, сулахай енче тăхăнма меллĕрех, чăг-чăн кавир çинчи пекех, хĕвелпе ытларах хĕртĕнес тесен — сылтăмра хăйăр çинче выртма пултаратăн. Кунтах, кăшт çӳлерех, çырана ем-ешĕл лаштра йăмрасем илемлетеççĕ. Уçă сывлăш, курортри пек, илĕртӳллĕ вырăн. Ахальтен мар, хĕвеллĕ шăматкунпа вырсарникун ĕç халăхĕ бидонсемпе килте тунă сăра тултарса Пăла хĕрне

утать. Хăш чухне йăмрасен хушшинчи çерем çинче ушкăнпа пуçтарăнса хăналаннине те час-часах курма пулать.

Коля çыран хĕрне çитнĕ-çитменех, салтăнса пăрахса, шыва чăмрĕ, ун хыççăн ыттисем те. Хĕрсем пурте тенĕ пек Патăръел енне каçрĕç, çӳçене-çӳçенех васкамасăр тарăнрах вырăна утса кĕчĕç.

—Ну, чăмăр, чăмăр, мĕн пĕринчен тепри иртме шикленетĕр,—кăшкăрчĕç вĕсене каччăсем васкатса.—Тӳрех чăмпăлтатсан ӳт-пӳ те шыва хăвăрт хăнăхать.

Анчах та хĕрсем хыпаланмарĕç. Çакна курса, Пăла варринче пуçтарăннă каччăсем ăмăртсах вĕсен еннелле харăссăн ишрĕç, ура çĕре лекекен пулсанах, шала кĕме хăяйман хĕрупраçсен енне шӳтле-шӳтлех шыв сирпĕтме пуçларĕç. Лешсем, çакна пачах кĕтменрен пулĕ, çуйхашма, аллисемпе каçăрăлса тăракан кăкăрĕсене хупласа, хӳтĕленме тăчĕç, çӳçенсе, чĕрĕп пек, хутланчĕç.

—Ну, чăмăр, мĕн хăраса тăратăр,—хĕрсен çуйхашнă сассине çĕнтересшĕн ăс парса кăшкăрчĕç çыран хĕррине тухса ларнă шкул ачисем те.

Ку сăмахсене пуринчен малтан Светлана илтрĕ тейĕн. Вăл, каччăсене кăштах çурăмпа çаврăнса кукленсе ларнăскер, хăвăрттăн сиксе тăрса вĕсене хирĕç сирпĕтме пуçларĕ, ăна курса ыттисем те пĕрин хыççăн тепри çан-çурăмне йĕпетрĕç, унтан хăйсен тусне, Ирăна пулăшма васкарĕç. Çыран хĕрринче пăхакансемшĕн ку вăйă çав тери кулăшла, икĕ ушкăна пайланса, пĕр-пĕрне çĕнтересшĕн кĕрешнĕнех туйăнчĕ. Сывлăша сирпĕннĕ шыв тумламĕсем хĕвел çинче асамат кĕперĕ пек, тĕрлĕ тĕспе йăлтăртатрĕç, кăмăла ытларах та ытларах çĕклерĕç.

—Туссем, пирĕн парăнасах пулать пуль, унсăрăн намăса юлăпăр,—сулахай аллине малалла тăсса, пит-куçне хупланă май, сĕнчĕ юлташĕсене Комаров Витали.

—Парăнас,—килĕшрĕç унпа ытти каччăсем те, унтан хăвăрттăн пулăсем пек сывлăшра пĕтĕрĕнсе илсе, харăссăн шыва чăмрĕç. Кăмăлĕсем тулнă хĕрупраçсем, таçта çити илтĕнмелле саспа ахăлтатса кулчĕç.

Пĕве шывĕ тăрă та таса. Хĕвел çинче вăл хумханса, кĕмĕл пекех ялтăрать, çутă пайăркасем сапалать. Кунта ишнĕ чух алăсемпе урасене вылятни те уççăнах курăнать, пĕр вĕççĕр чăмпăлтатас килет. Пур-ши чăваш тăрăхĕнче татах та, Пăла евĕр, чуна илĕртмелле юханшыв? Пур пуль те, анчах та Патăръел тăрăхĕнчисемшĕн вăл — чи хакли, чи илемли.

Çамрăксем апат вăхăчĕ çитнине мансах уçă шывра киленчĕç. Мĕнле çеç ишсе кăтартмарĕç пулĕ вĕсем пĕр-пĕрне: вырăсла ( Алла пуç урлă малалла тăсса ишнине ку тăрăхра çапла калаççĕ. Ёлĕк ун пек чăн малтан арман хуçи Вырăс Иванĕ ишсе кăтартнă, теççĕ. Ячĕ те унтанах юлнă), çурăмпа хăяккăн, пуçа чиксе, чăмса, пĕтĕрĕнсе, кама мĕнле кăмăла кайнă çавăн пек. Пĕр Валя Наперсткина çеç кăкăрĕнчен тарăнрах вырăна кĕме шикленчĕ. Тантăшĕсем çине ăмсанса пăхрĕ, унăн та вĕсем пекех шывра чăмпăлтатас, пĕтĕрĕнес килчĕ, анчах та хăй ишме пĕлменнине пĕлтерме хăяймарĕ.

Коля хĕр ютшăннине паçăрах сисрĕ, çапах та ун патне васкамарĕ-ха, шыв çÿçентернипе тăруках кĕме шикленнĕрен çеç пуль ку, терĕ. Часах акă вăл та ыттисем пекех чăтса тăраймĕ те, акăш евĕр ярăнса, ишме тытăнĕ, лăплатрĕ хăйне хăй, анчах та каччă çакна кĕтсе илеймерĕ.

—Валя, атя иксĕмĕр пĕр-пĕрне тытмалла выляр,—сĕнчĕ вăл ун патне çăмăллăн ишсе пырса.

—Кунта-и? Çыран хĕрринче пулсан, эп халех хатĕр,—шÿтлесе ирттерсе яма шутларĕ Валя.

—Мĕншĕн çыран хĕрринче, шывра,—ăна тăруках ăнланаймарĕ каччă.

Валя пысăк кăвак куçĕсемпе ун çине илĕртÿллĕн пăхрĕ, çÿхе илемлĕ тутисем темĕн каласшăн туртăнса кулчĕç, хитре пит çăмартисем хĕвел çутинче савăнăçпа çиçрĕç, анчах та ку савăнăç нумая пымарĕ, часах çухалчĕ:

—Эпĕ ишме пĕлместĕп,—терĕ хĕр шăппăн, именсе. Кольăшăн унăн сасси темле хурлăхлăн тухнăнах туйăнчĕ, Маршакăн «Часовой» ятлă калавĕнчи çамрăк ача сассине аса илтерчĕ. Каччă чăтаймарĕ, сасăпах кулса ячĕ. Валя та пĕр кÿренмесĕр шурă шăлĕсене кăтартса унпа пĕрле савăнчĕ.

—Вĕрентес-и?—çаплах-ха пит çинчи куллине çухатмасăр ун çывăхнерех пычĕ Коля.

—Темĕн, халь тин вĕренсе пулĕ-ши?—каччăна хирĕçлемерĕ тем пекех ишме вĕренесшĕн çунаканскер, çапах та унăн сĕнĕвĕпе килĕшсе.

Каччă асăрханса пикене çинçе пилĕкĕнчен тытрĕ. «Епле ачаш ÿт»—çиçсе илчĕç ун пуçĕнче шухăшсем. Шыв çине çĕкленĕ черчен пÿ-силлĕ хĕре ÿкерсе çĕмĕресрен шикленнĕ пек, пĕр вăхăт хушши çут тĕнче çинчен манса, ăна хăй çумне хытăрах пăчăртарĕ вăл. Каччă сасартăк чĕринче темле ăшă та ырă туйăм çуралнине сисрĕ. Çакă ăна хăюллантарчĕ,

хавхалантарчӗ, ҫавӑнпа та Коля Вальӑна хӑй аллинчен вӗҫертме васкамарӗ.

Хӗр хӑйне тарӑн шыва илсе кӗресрен шикленсе, каччӑна икӗ аллипе те хыттӑн мӑйӗнчен ыталарӗ. Кольӑшӑн ку унӑн шухӑшне ӑнланнӑ евӗрлех туйӑнчӗ, вӑл каҫӑрӑлса тӑракан тулли кӑкӑрсем ҫумне перӗнсенех, сывлама та манчӗ тейӗн. Мӗн чухлӗ вӑхӑт иртрӗ-ши, каччӑ ҫакна пӗлеймерӗ, хӗр аллине пушатсан тин, кӗлеткинчи капланса тулнӑ сывлӑшне сывласа кӑларса, пикене аллисемпе ҫӗклесе, лӑпкӑ хумсен ҫийӗнче тытрӗ, ишме вӗрентрӗ. Те шыв ҫӗкленӗрен, те хӗр ытамӗ ҫӗнӗ вӑй-хӑват хушнӑран, уншӑн вӑл тӗк пекех ҫӑмӑл туйӑнчӗ, анчах та Коля унӑн ҫемҫе ачаш ӳтӗнчен аллисене ҫаплах-ха вӗҫертмерӗ, вӗсене пушатсанах ӑна ҫухатассӑн туйӑнчӗ.

Пӗр ҫур сехет пек чӑмпӑлтатнӑ хыҫҫӑн, вӗсем ҫыран хӗрне тухрӗҫ. Урана пӗҫертекен хӑйӑр йӗпе ӳт ҫумне ҫыпӑҫрӗ. Коля пӗчӗккӗ чухнехине аса илсе, тӳрех хырӑмӗ ҫине тӑсӑлса выртрӗ. Вӑл темиҫе ҫул каялла ҫеҫ-ха ҫакӑнта ача-пӑчасемпе тытмалла вылятчӗ, пулӑ пек, сиксе тухса, хӑйӑр ҫине ӳкетчӗ, йӑваланатчӗ, тытаканӗ хӑй патне килнине курсанах, урисемпе сирпӗтсе каллех пуҫ хӗрлӗн шыва чӑматчӗ. Лешӗ, ҫыран хӗрринче пӑхса, ӑна куҫӗсемпе шыратчӗ е ун хыҫҫӑнах чӑмса, иккӗшӗ те икӗ енчен пуҫӗсене кӑларатчӗҫ. Ҫав тери хаваслӑ халь иртнисене аса илме.

Коля тепӗр май ҫаврӑнса чавси ҫине таянчӗ. Унран виҫтӑватӑ утӑмра ҫеҫ, шыври ҫамрӑксем ҫинчен куҫне илмесӗр, Валя пӑхса тӑчӗ. Каччӑ каллех сывлама чарӑнчӗ тейӗн. Унӑн чӗри паҫӑрхинчен те хытӑрах, хӑватлӑрах тапрӗ, темшӗн пӑлханчӗ.

Коля хӑйӗн умӗнче ҫурӑмпа ҫаврӑнса тӑракан хӗрӗн сӑнпитне, пысӑк кӑвак куҫӗсене, уйӑх пек авӑнчӑк сарлака мар куҫ харшийӗсене курмарӗ. Хальхинче вӑл илӗртӳллӗ аллисемпе пилӗк таран вӑрӑм ҫӳҫӗсене сапаласа, асӑрхануллӑн турипе якатрӗ. Йӗтӗн тӗслӗ сарӑ ҫӳҫӗ, шывпа йӗпенсе тӗттӗмленнӗскер, хӗвел ҫутинче ҫиелтен темле йӑлтӑркка япала сапнӑнах туйӑнчӗ. Вӑл хуҫин ҫемҫе ӳтлӗ пӗчӗк аллисене итлесе, хӗвел ҫинче пиҫсе хӑмӑрланнӑ ҫурӑмӗ ҫине ачашшӑн выртрӗ. Хӗрӗн кашни хусканӑвӗ каллех хӑй патне чӗнчӗ, икӗ пая уйрӑлнӑ ҫурӑмӗ, ҫинҫе пилӗкӗпе илӗртӳллӗ хулпуҫҫийӗсем, хулӑм мар тӳрӗ, шӑмӑ палӑрман урисем ӳкерчӗк ҫинчи пекех курӑнчӗҫ, каччӑн чӗрине пушшех те хускатрӗҫ. Вӑл чиперкке ҫинчен куҫне

илмесӗр, ӑна хӑратасран шикленнӗ евӗр, хускалмасӑр ларчӗ, сасӑ пама та именчӗ.

Валя ҫӳҫне тураса якатнӑ хыҫҫӑн, кӑштах пуҫне силлесе илчӗ те Коля енне ҫаврӑнчӗ. Унӑн хитре тутисем илӗртӳллӗн кулчӗҫ, куҫӗсем шанчӑклӑн пӗр шиксӗр пӑхрӗҫ, кӑкӑрӗсем хӑй патне чӗнчӗҫ. Темиҫе минут каялла ҫеҫ-ха Коля унпа ҫумлӑччӗ, чӗрин таппине туятчӗ, ӑна шывра мӗнле вылятас тенӗ, ҫавӑн пек вылятма пултаратчӗ, хӑй ҫумне чӑмӑртама та май пурччӗ. Анчах та унпа халь тем пулчӗ тейӗн, пӗтӗмпех ылмашрӗ. Паҫӑр шывра киленекенӗ те хӑйӑр ҫинче выртакан Коля мар, пачах урӑх ҫын пулнӑнах туйӑнчӗ. Халь хӗрпе ҫумлӑ тӑрассишӗн, унӑн пӑхӑр тӗслӗ те ачаш ӳтне перӗнессишӗн тем тума та хатӗрччӗ каччӑ. Мӗнле-ха вӑл ял хушшинче ҫакӑн чухлӗ пурӑнса та унӑн хитрелӗхне, ачашлӑхне, асамлӑхне курман, ҫемҫе, ҫепӗҫ, чӗвӗлти сассине илтмен? Хӑйне хӑй айӑплана май, унӑн чӗри ытларах та ытларах ҫулӑмпа ҫунчӗ, умӗнчи хитре ҫурхи мӑкӑнь чечекне такамӑн чунсӑр алли татса илессӗнех туйӑнчӗ, васкама хушрӗ, анчах та вӑл вырӑнтан хӑпаймарӗ, куҫӗсене хупса, ҫак чечек сӑнне яланлӑхах хӑйӗн умӗнче хӑварас шутпа, пуҫӗпе хӑйӑр ҫине ӳкрӗ.

Валя та ҫак самантра каччӑн шухӑшне вӑрттӑн вуланӑн, темӗн ырӑ марра сисрӗ. Унӑн пичӗ ҫинчи ҫутӑ кулли ҫийӗнчех ҫухалчӗ. Вӑл хӑвӑрттӑн Коля патне чупса пычӗ те ун умӗнче чарӑнса тӑрса, тӑруках аллипе перӗнме хӑяйман пек, куҫӗсене хупнӑ каччӑна сӑнарӗ. Коля ҫакна туйрӗ пулин те куҫне уҫма васкамарӗ-ха, пӗтӗм чун-хавалӗпе хӑйӗн умӗнче ҫаплах-ха юмахри пек ҫӳҫӗсене илемлӗн сапаланӑ кӑвак куҫлӑ, хитре сӑн-питлӗ пике тӑнине туйрӗ. Ҫӑтмах тӗнчине кӗрсе, каччӑ ҫак ӑш ҫунтармӑш хӗр ҫине пӑхса савӑнмаллипех савӑнчӗ.

Валя ун ҫумне пырса ларчӗ, хӑйӑр ҫинче выртакан каччӑн пуҫне ачашшӑн ҫӗклесе, хӑйӗн чӗрки ҫине хучӗ, ҫинҫе те илемлӗ пӳрнисемпе унӑн питӗнчен сӗртӗнчӗ, сапаланнӑ ҫӳҫ пӗрчисем ӑна кӑкӑрӗнчен, мӑйӗнчен ыталарӗҫ, тутинчен кӑштах кӑтӑкласа, хӗрӳллӗн чуптурӗҫ.

Коля хӑйне хӑй алла илеймерӗ. Вӑл ҫакӑн пек кунӗ-кунӗпе выртма хатӗр. Анчах та ку пурте туйӑнмасть ҫеҫ мар-ши? Каччӑ хӑй тӗлӗннине палӑртнӑ евӗр куҫне уҫрӗ, ҫапла, ун ҫине паҫӑрхи куҫсемех пӑхрӗҫ, вӗсем паҫӑрхи пекех, илӗртсе кулчӗҫ.

—Вӑрантӑн, эппин?—терӗ хӗр, ура ҫине тӑрасшӑн пулса.

—Валя, ан васка-ха. хама халь юмахри патшалăха лекнĕнех туятăп. Ытла та хитре-çке эсĕ!—Хĕр тăрса утасран шикленнĕрен аран-аран калама ĕлкĕрчĕ каччă. Унăн сасси чĕтренсе, пăлханса тухрĕ.

—Шӳтлесе е чăнласах?—каллех тутисене хитрен туртăнтарчĕ пике.

«Мĕн калаçатăп эпĕ, тӳрех апла юрать-и вара?»—хăйне хăй тытса чарчĕ Коля. Унтан кăшт хăюлланчĕ те:

—Паллах, чăнласа,—терĕ.

Унăн куçĕсем йăлкăшса илчĕç. Валя калаçăва каччă шӳт енне куçарнине туйса, хăй вырăнĕнчех юлчĕ.

Часах Пăла хĕррине машина çитсе чарăнчĕ, вăрăммăн кăшкăртса, Носов Витали шофер, нумаях пулмасть çеç мăшăрланнăскер, кабинăран тухрĕ.

—Ну, çитĕ сире чăмпăлтатса, апат çиесси çинчен те мантăр пулĕ,—терĕ машининчен аякка каймасăр.

Çамрăксем васкавлăн тăхăнса, ăмăртмалла тенĕ пек, кузов çине улăхса ларчĕç.

Валя та тытăнса тăмарĕ. Вăл малтанхи евĕрлех ачаш аллисемпе Кольăн пуçне çĕклерĕ те:

—Эпĕ каятăп,—терĕ.—Часах ĕнесене сума та вăхăт çитет.

Унпа пĕрле Коля та хăйăр çинчен тăчĕ. Юлашки хут ун хитре кĕлеткине курас тенĕ евĕр, ытараймасăр пăхрĕ.

—Правлени умĕнче чарма ан ман,—асăрхаттарчĕç яшсемпе хĕрсем шофера.

Секретарь пуринпе те сывпуллашрĕ.

—Эсĕ мĕн, килне кайма шутламастăн-им?—хăйсен хушшине чĕнчĕ ăна тахăшĕ ушкăнран.

—Ларса машинăна ывăнтарас мар, икçĕр утăма çуран та утса тухăп,—терĕ вăл аллипе сулса. Хăй те сисмерĕ, унăн куçĕсем Вальăннипе тĕл пулчĕç, пĕр-пĕринпе каçхине урамра тĕл пулма калаçса татăлнăн, хĕм кăларса илчĕç.

Машина вырăнтан тапранчĕ те хăвăртлăхне ӳстерчĕ, унăн хыçĕнчен çӳллĕ тусан çĕкленчĕ, кузовра ларакансен сăнпичĕ самантрах курăнми пулчĕ. Коля, çаплах ха Вальăн сăнне çухатасшăн мар пулса, чĕнмесĕр тăчĕ.

—Ну, кайрăмăр, килтисем кĕтсе те ывăнчĕç пулĕ,—чĕнчĕ кĕпине хулпуççи урлă çакнă Саша. Вĕсем пĕр чĕнмесĕр тăвалла утрĕç. Кашнийĕ хăйĕн шухăшĕн тĕнчинче çӳрерĕ, унта хăй тĕллĕн ĕмĕтленчĕ, çав асамлăх тыткăнне лексе, унран уйрăлма васкамарĕ. Чылайран тин Коля тусне паянхи ялкăшса çуралнă юрату хĕлхемĕ çинчен пĕлтерчĕ.

—Асту, тусăм, ун пек чиперккесем çине кашниех куç хывать, епле пулсан та ан вĕçерт,—терĕ Саша кударах, анчах та ку нумая пымарĕ, вăл тăруках сăн-питне улăштарчĕ,—тĕрĕссипе, мана та çав «чирех» ерчĕ пулас. Кам пĕлет, мĕн кĕтет пире малашне, паян пулса иртни темшĕн пурте тĕлĕкри пек çеç, пĕрре те ĕненессĕм килмест,—терĕ, сăмахне Светлана Мартышкина çине куçарчĕ, чăнласах кăмăлласа пăрахнă иккен вăл ăна.

Мĕнле савăнăç, пĕр кун хушшинче икĕ чун тыткăна лекнĕ. Хĕрĕсем мĕн шутларĕç-ши çак самантра? Малашлăх пĕтĕмпех вĕсенчен килет ĕнтĕ.

*          *          *          *          *

Ывăлĕ килне çитнĕ çĕре Сергей Иванович малти пӳртри диван çинче ĕнер вулама ĕлкĕреймен хаçатсене пăхкаласа ларатчĕ. Хапха сасси пулсанах, Коля пуль тесе, кайри пӳрте тухрĕ, чăнах та, йăнăшмарĕ.

—Мĕнле, шыв сивĕ мар-и?—пӳрт алăкĕ уçăлнă-уçăлманах калаçу пуçарас шутпа ыйтрĕ вăл унран.

—Çырма хĕрринче пăхса тăракансем пулмарĕç, сивех мар, кĕме пулать,—терĕ çӳхе кĕпине хыçлă пукан çине çакнă май,—ну пăчă та паян, çумăр çуса иртинччĕ пĕреххут.

—Темĕн, шанма йывăр, Николай Филиппович калана тăрăх, июнь уйăхĕ тăршшĕпе çумăрсăр пулать.

—Енчен те ку сăмахсем тĕрĕсех пулсан, кăçал пысăк тухăçлă тыр-пул çинчен шутлама та кирлĕ мар. Ытла та тутлă шăрш кăларнă-çке эсĕ, атте. Шыв хĕрринче чух, апат çинчен те маннăччĕ, хапха хăлăпне тытсанах хырăм выçнине аса илтĕм

—Хам та çаплах шутларăм çав, атя, яшкине антар,—терĕ ашшĕ, хура çăкăр касса, чĕллисене турилкке çине хунă май.

Кольăн, чăнах та, хырăмĕ выçнă, вăл пĕр сăмах чĕнмесĕр ашшĕ пĕçернĕ çуллă купăста яшкине вĕре-вĕрех сыпрĕ, хутран-ситрен çăкăр татăкĕ патне кармашнă май, ăна хатĕрлекене мухтарĕ.

—Атте, яшка пĕçерме, чăнах та, талант тени кирлĕ. Санран лайăх учитель çеç мар, тăрăшсан ăста повар та пулатчĕ ĕнтĕ.

Сергей Ивановича, паллах, ывăлĕн сăмахĕсем кăмăла кайрĕç, ăшăтрĕç те. Ара, санăн ĕçне мухтани кама килĕшмĕ? Юлашкинчен чей ĕçнĕ хыççăн, Коля вырăнтан тухмасăрах пукан çине таянчĕ.

—Фу, тем чухлĕ ĕçсе-çисен те тăраннине пĕлместĕп тесе шутланăччĕ малтан, халĕ хырăм сарăлсах, тулсах кайрĕ,— терĕ вăл ăна аллипе майка витĕр сăтăркаласа.

—Сĕтел çинчен кам пуçтарĕ?-чеен куçне хĕссе ыйтрĕ ашшĕ.

—Паллах, эпĕ. Пĕçерекенни — асли, пуçтараканни — кĕçĕнни,—ура çине тăрса, чейникре юлнă ăшă шывпа тирĕк-чашăка çунă май каларĕ ывăлĕ.

Ашшĕ малти пӳрте кĕрсе каллех хаçат-журнал вулама пикенчĕ.

—Ну мĕнле, сана паянхи воскресник кăмăлна кайрĕ-и?— сĕтел çинчи чашăк-тирĕке тирпейленĕ хыççăн ашшĕ çумне пырса ларчĕ Коля.

—Мĕнле калас,—хаçатне куçĕ тĕлĕнчен кăшт айкинерех сирсе, ывăлĕ çине тӳррĕн пăхрĕ Сергей Иванович,—чăнах та, санăн, Чекушкин калашле, пуçламăшĕ лайăх. Анчах та малашне те ĕçӳ çакăн пек çăмăл пуласса манăн пĕрре те ĕненес килмест. Халăхĕ пирĕн çавнашкал-çке, вăл хăйĕн вăйĕпе нимĕн те тăвасшăн мар, хатĕррине çеç кĕтет, паллах, ку пĕлсе ĕçленинчен нумай килет. Мĕнех, хурав пама васкамастăп, пурнăç кăтартĕ. Паянхи ӳсĕм сана малашне те хавхалантартăр. Манăн пĕтĕм сĕнӳ те çакă çеç.

—Эсĕ сăмаха айкинелле ан пăр-ха, хăвăн шухăшна пĕр пытармасăрах каласа пар,—çаплах-ха унăн кăмăлне пĕлесшĕн пулчĕ Коля.

—Паллах. Килĕшрĕ тени сахал, савăнтарчĕ те.

—Кăна эсĕ мана лăплатасшăн хăвăнтан хушса калатăн ĕнтĕ, çапах та тăван аттерен кун пек сăмахсене илтме çав тери кăмăллă,—ĕнер çеç вулама пуçланă кĕнекине аллине илчĕ ывăлĕ.

Анчах та малтан шутланă пек пулмарĕ, кĕнекен хуплашкине уçнă-уçманах куç умне каллех Валя тухса тăчĕ, вăл страницăсенче çапăннă пур сăмахсене те пытарса хунăн туйăнчĕ. Нивушлĕ чĕрене чăн-чăн юрату хĕлхемĕ хыпса илчĕ? Ӳт илес çук суран тӳрленсе, иртнисене палăрмалла мар хупласа хучĕ-ши? Çулталăк каялла çеç вĕт-ха ăна Лида Федяевăсăр пуçне урăх никам та кирлĕ марччĕ. Вăл качча тухнине пĕлсен, хĕвел те яланлăхах сӳннĕн туйăннăччĕ, тӳпери çăлтăрсем те, ним те, ним те илĕртместчĕ. Халь акă

пăх та кур: чĕре çĕнĕрен хаваслăн та телейлĕн тапрĕ, таçта аякка, юратун юмахри тĕнчине чĕнчĕ. Умра нихăçан та Лида пулман, уншăн çунман та тейĕн. Коля каç пуласса чăтаймасăр кĕтрĕ.

* * * * *

Коля хĕвел аниччен чылай малтан кил-тĕрĕшри ĕçсене пурнăçларĕ. Пахчаçимĕçе шыв сапасси, выльăх-чĕрлĕхе пăхасси унăн йăлина кĕчĕ ĕнтĕ, май килнĕ таран ăна ашшĕ те пулăшрĕ. Кĕтӳ ансанах, вăл халат тăхăнса, ĕне сума ларчĕ. Халь вăл, малтанхи евĕр, хӳрине вылятмарĕ, урипе тапма та тăрăшмарĕ, пĕр вырăнта лăпкăн тăрса, васкамасăр кавлерĕ. Çиллисене ачашласа çемçен турткалани ăна кăмăла кайрĕ пулмалла. Хуçи унпа сассине хăпартмасăр калаçать, сума пуçличчен тăвар сапнă çăкăрпа хăналать, çамкинчен ачашлать, мăйĕнчен сăтăрать, çепĕççĕн ятран чĕнет. Ун пек чухне Тунькка, пысăк хăлхисене вылянтарса, хуçине куçран пăхать, хăш чухне мăйне тăсса мĕкĕрсе илет. Эсĕ мана килĕшетĕн, тет пуль ĕнтĕ хăйĕн чĕлхипе.

Коля хăй те ăна юратать. Ялти ĕнесенчен вăл уншăн чи ăсли туйăнать. Ку, чăнах та, çапла. Кĕтӳ ансан, ытти хăшпĕр çынсем пек, выльăх шырама каймалла мар, Тунькка хăех таврăнать. Çула май Ыхра çырмине анса шыв ĕçет, унтан васкамасăр килĕ еннелле утать. Пӳрт умне çитсен, хăй килнине пĕлтерсе, чарăнса тăрать те хыттăн пурте илтмелле сас парать, хапха уçăр, тет ĕнтĕ. Хăш чухне килте никам та пулмасан, кӳренсе çурт умĕнчен пăрăнса малалла утмасть, алăк çинчен куçне илмесĕр чăтăмлăн уçасса кĕтсе тăрать. Вăл тĕсĕпе те ытти ĕнесенчен хитререх пек туйăнать Кольăна. Тунькка çутă хĕрлĕ тĕслĕ. Унăн çамки çинче пысăк шурă пăнчă пур. Шăпах çавна сăтăрса ачашлама юрататъ те ĕнтĕ каччă. Ĕнен, ухват пек, шĕвĕр те илемлĕ мăйраки хăшпĕр палламан çынсене малтанах шиклентерет те пулĕ, анчах та ку кăлăхах. Тунькка этеме те, выльăх-чĕрлĕхе те килĕштерет. Çуркуннехи ăшă кунсенче вара вăл пӳрт умне хĕвел çине тухсан, ĕнен çурăмĕ çине чăх-чĕпсем ним хăрамасăр хăпарса лараççĕ те картиш тăрăх ун çинче ярăнаççĕ çеç, анма та шутламаççĕ, урисене ăшăтаççĕ ĕнтĕ. Туньккана çакă килĕшет пулас, вăл хӳрине те вылятмасть.

Ашшӗ темиҫе хутчен те ӗнене сутасси ҫинчен сӑмах хускатрӗ, анчах та Коля кашнинчех хирӗҫлерӗ: «Кирлӗ мар, халь кӗтӗве ҫӳрет, кӗркунне мӗн тумалли пирки шутласа пӑхӑпӑр. Ҫав тери шел ӑна, кайран ҫавнашкаллине тупайӑпӑр-ши,» —терӗ.

Ашшӗ унӑн шухӑшӗпе килӗшрӗ.

Ӗнине суса пӗтернӗ хыҫҫӑн, Коля яланхи йӑлипе чӑхчӗпсене ҫитерчӗ, унтан, витре йӑтса, пахча шӑварма тухрӗ. Шывне вӑл пӳрт умӗнчи каткаран йӑтрӗ. Кунӗпе хӗвел ҫинче ӑшӑннӑскер, унпа йывӑҫсене сапсанах, вӗсем уҫҫӑн сывласа, ҫулҫисене ҫӗкленӗнех туйӑнаҫҫӗ.

Акӑ хӗвел ҫухалнӑпа пӗрех. Коля вырӑнтан хускалма шикленнӗн савӑнӑҫлӑ кунпа сывпуллашрӗ: «Июнӗн иккӗмӗшӗ яланлӑхах асра юлатӑн пулӗ эсӗ маншӑн?—шутларӗ вӑл.—Ҫак самантра хама ҫӗр ҫинче чи телейлӗ ҫын вырӑнне хуратӑп. Тен, йӑнӑшатӑп? Ыран мана мӗн кӗтет? Нивушлӗ атте сӑмахӗсем тӗрӗсех пулӗҫ? Ҫук, пӗрре те ӗненес килмест. Колхоз тӗреклентӗр, ялта ҫамрӑксем ытларах юлччӑр, хӑйсене вӗсем чӑн-чӑн хуҫа пек туйччӑр тесе пур вӑйран тӑрӑшӑп. Анчах та ыран мӗн пулассине пӗлме ҫук. Паянхи пекех тӳперен илӗртсе хӗвел пӑхӗ, ҫапах та ҫынсен хушшинчи хутшӑну еплерех ылмашӗ? Ҫакна никам та уҫӑмлӑн татса калаймасть.»

Астӑвать-ха Коля, малтанхи савниййӗ Лида качча тухнӑ тенине пӗличчен, ирхине кӑна унӑн кӑмӑлӗ ҫав тери ҫӗкленӳллӗччӗ. Темиҫе минут каялла ҫеҫ ҫӗр ҫумне лӑпчӑннӑ парашютне пуҫтарса, вӑл, паянхи пекех, хӑйне чи телейлӗ ҫын тесе шутланӑччӗ. Салтакӑн шухӑшне ӑнланнӑ евӗр, хӗвел те тӳперен хӗпӗртесе ачашшӑн каччӑна сӑнатчӗ. Казармӑна та вӑл хаваслӑ кӑмӑлпа таврӑннӑччӗ. Анчах та ку савӑнӑҫ нумая пымарӗ, илемлӗ почеркпа ҫырнӑ пысӑках мар хут листине вуласа тухсанах, уншӑн тӗттӗм каҫ пуҫланнӑнах туйӑнчӗ. Пӗчӗк ҫеҫ ҫыру салтакӑн ҫутӑ ӗмӗтне пӗтӗмпех хупласа хучӗ. Текех ӑна нимӗн те илӗртмерӗ, хавхалантармарӗ те, умри тавралӑх сасартӑк кичемленсе тӗксӗмленчӗ.

Хӗвел аннӑҫемӗн хӑмла ҫырли тӗслӗ кӗрен пӗлӗт сарӑлса пычӗ. Коля ҫаплах-ха пӗр вырӑнтан хускалмасӑр анӑҫалла пӑхса, шухӑша кайса тӑчӗ. Таҫта васкать хӗвел ҫӗр ҫумне перӗнсен. Ӑна темӗнле ҫӑткӑн шурлӑх хӑйӗн патне туртса илнӗн, ҫӑтса янӑнах туйӑнать. Тин ҫеҫ вӑл тулличчӗ, ҫапҫавракаччӗ, майӗпен-майӗпен лӑпчӑнса ҫӗре перӗннӗччӗ, унтанпа вӑхӑт нумай та иртмерӗ, апла пулин те хӗвел хӑйӗн

çаврашкине çурри таранах пытарчĕ, куç умĕнче сисĕнмеллех çухалса-çухалса пычĕ. Акă вăл юлашки хут сывпуллашмалла йĕри-тавралла пăхса илчĕ те курăнми пулчĕ. «Ытла та хăвăрттăн иртсе кайрĕ-çке паянхи кун,—хăй тĕллĕн пăшăлтатрĕ каччă.—Телейлĕ, савăнăçлă вĕçленчĕ. Хаваслă ĕçпе, юратупа çывăхланса çуралнăччĕ вăл»,—çапла пĕтĕмлетӳ туса, çак шухăша ырласа, çĕрелле туртакан йывăр витрисене чĕтрентерсе, каччă улма йывăççисем хушшине утрĕ. Анчах та талăк вĕçленмен-ха. Ял çамрăкĕсем тепĕр çур сехетренех урама тухĕç. Кольăпа Валя та унтах пулаççĕ. Вĕсем каллех хăйсен ĕмĕчĕсем пирки калаçĕç, пĕрле тăрса илемлĕ юрă юрлĕç, тар тухиччен ташлĕç. Нумай та мар, мĕн пурĕ те çур сехет çеç кĕтмелле! Вальăна аса илсенех, чĕрере телейлĕ хумхану çуралчĕ, хăвăртрах ĕçе вĕçлес, унпа çумлă пулас килчĕ.

Урамра тĕттĕмленчĕ. Коля яланхи йăлипе Малти кас урамне, сасă илтĕннĕ еннелле утрĕ. Каччă унта çитнĕ çĕре çамрăксем чылаях пуçтарăннăччĕ ĕнтĕ. Вĕсем хыттăн шӳтлесе калаçрĕç, кулчĕç. Коля куçĕсемпе Вальăна шырарĕ. Лешĕ те савнине кĕтнĕ евĕр, сулахай енче пушă вырăн хăварса, тантăшĕсен хушшинче куçĕсене çиçтерсе, хăйĕн çумне ларма чĕнет.

Хĕр шурă кĕпе тăхăннă, уринче çӳллĕ кĕлеллĕ пушмак, çара пуç, çӳçне тирпейлĕн çивĕтлесе умне янă.

—Ырă каç пултăр!—пурте илтмелле კаларĕ Коля.

—Кая юлса çӳретпĕр, килти ĕçрен пушанайманран пулас,—кăштах тĕртсе илчĕ Валя Малинова.

—Мĕн ĕçĕ унта. Атте урама кăларасшăн мар. Хĕрсем хыççăн чупма çамрăк-ха, тет,—Валя çумĕнчи пушă вырăн тĕлне чарăнса, шӳтлеме тăрăшрĕ каччă.—Ларма юрать-и?—ыйтрĕ вăл пушă вырăн çине кăтартса.

—Паллах, юрать. Хĕрĕ каччине кĕтсе те ывăнчĕ, ун валли ятарласа вырăн та хатĕрлесе хучĕ. Вăл, ларма юрать-и тесе, ыйтса тăрать тата,—кăштах куларах калаçăва хутшăнчĕ Валя çумне вырнаçнă Нина Федорова.

—Чăнах та, тавçăрусăр эпĕ, пин хут тав тума хатĕр сана куншăн, Валя.

—Вăт пыр та калаç хальхи çамрăкпа, тем пекех юрасшăн тăрăшатăп пулсан та сисмест, ытти çинчен калама та кирлĕ мар,—пуçне кăштах каччă енне пăрса ытарлăн пăхрĕ Валя.

Паян ушкăнра ферма хĕрĕсем çеç мар, унччен хăйсем тĕллĕн вăхăчĕсене ирттерекен ытти çамрăксем те кунта пуçтарăннă. Вĕсенчен ытларахăшĕсем — аслă классенче

вёренекенсем. Çывăхрах тата кĕçĕнрех ача-пăчасем те пур. Вĕсем те килĕсене кĕме васкамарĕç, хĕрсе кайсах пĕр-пĕринпе ăмăртса вылярĕç, чупрĕç, сикрĕç, çуйхашрĕç.

Паян воскресник иртсен чух çамрăксемпе пуринпе те пĕр вырăнта тĕл пулмалли пирки калаçса татăлнăччĕ. Халĕ пур шанчăк та кăçал шкул пĕтерекенсенче, çавăнпа та вĕсене мĕнле пулсан та колхозра хăварма тăрăшмалла. Секретарь малтанах пуçтарăнма ĕмĕтленнĕччĕ-ха, пĕр-пĕрин шухăшĕ пирки ыйтса калаçу иртерме шутланăччĕ. Анчах та шел, меллĕ самант тупăнмарĕ. Ку ĕçе ырана хăварма юрамасть. Часах шкулта экзаменсем те вĕçленĕç, вара кайран çамрăксене кăнтăр кунĕнче хунарпа шырасан та тупăймăн, вĕсем тĕрлĕ çĕре сапаланса пĕтĕç.

—Коля, тусна ăçта çухатса хăвартăн? Çĕнĕ Ахпÿрте вăрласа каймарĕç-и ăна?—тÿрех темĕн аса илнĕ пек пулса ыйтрĕ Маша Сынкова.

Коля, Валя çумĕнче лараканскер, çут тĕнчере мĕн пулса иртнине пач асăрхама манса кайнă евĕр, тусĕ кунта пуррипе çуккине те сăнаман иккен.

—Чăнах та, ăçта-ши вăл? Паçăр нимĕн те каламарĕ,—тĕлĕннĕ пек сăмахларĕ секретарь, анчах та хĕрсене çакна палăртмарĕ, вĕсене йăпатса,—часах килет,—терĕ.

—Кун чухлĕ ушкăнпа юрă юрлама та, ташлама та кăмăллă. Сашăсăр пуçне пирĕн хушăмăрта ялта купăс калакан тек çук-шим?—çаплах-ха тĕлĕнчĕ Маша.

—Мĕншĕн çук? Купăсĕ çеç пултăр,—тăруках шавлама пикенчĕç вуннăмĕш класс пĕтерекенсем.

—Купăсĕ пур, халех илсе килетĕп,—пĕр тытăнса тăмасăрах вырăнтан сиксе тăчĕ тепри, унтан килне кĕрсе çухалчĕ. Часах икĕ ретлĕ хут купăсне йăтса та тухрĕ.

—Толя, вăтанса ан тăр, кил-ха лар пирĕн çумма,—чĕнчĕç ăна пĕр класра вĕренекен хĕрачасем вырăн парса.

Антонов Толя хăйне чĕнессе çеç кĕтрĕ тейĕн, васкаса хĕрсен хушшине канлĕн вырнаçса ларчĕ те:

—Ну, мĕнрен пуçлас?—тесе ыйтрĕ.

Коля Тольăна лайăх астăвать. Хăй çара кайиччен вăл пĕчĕк те имшер шкул ачи кăначчĕ. Халĕ паллама та йывăр: ытла та хăвăрт çитĕнсе кайнă, çÿллĕшĕпе те унран кăшт çеç пĕчĕкрех, питне те арçын сăнĕ çапнă, çакна мамăк пек çемçе сухал шăтнинчен тÿрех асăрхама пулать. Сасси шăпах ылмашнă вăхăт пулас, вăл темле чĕтренсе хулăм илтĕнет.

—Толя, иртенпе ура тупанĕсем кĕçтеççĕ. Ташлас килет,—вăйăçă тупăннипе савăнăçне пытараймарĕ Маша.

Вӑйӑҫӑ нумай кӗттермерӗ, купӑс тӳммисем ҫине пусса, паллашнӑ евӗр, темӗнле ҫыхӑнусӑр кӗвӗсем кӑларчӗ, тин кӑна вӗренекен пек, хӑлхана килӗшмен ҫемӗсем тупса, сысна ҫухӑрнӑ пек, икӗ хутчен нӑртлаттарчӗ, унтан пӳрнисене хӑвӑрттӑн вылятса, чӑваш ташши калама пикенчӗ. Каччӑсем тӑруках ушкӑн умне тухма именчӗҫ, пӗри те тепри пуҫласса кӗтсе, кӳршисем ҫине пӑхрӗҫ. Ҫакна Коля самантрах сисрӗ. Эппин, унӑнах пуҫлама тивет, шкул ачисем халлӗхе вӑтанаҫҫӗ-ха.

—Валя, атя пӗрре иккӗн ташлар,—сӗнчӗ вӑл чавсинчен хӗре тӗксе. Лешӗ хирӗҫлемерӗ:

—Атя, эпӗ хирӗҫ мар.

Валя вырӑнтан ҫӑмӑллӑн ярӑнса тухрӗ. Аллисене кӑштах сарса, пӗрре Коля ҫывӑхне пычӗ, тепре аяккала кайрӗ, урисене ҫӑмӑллӑн куҫарчӗ. Хӗрӗн тулли кӑкӑрӗсем майӗпен чӗтренчӗҫ, хулӑм ҫивӗчӗ сывлӑшра вылярӗ. Каччӑшӑн халь вӑл кӳлӗре ишекен шурӑ акӑш пекех туйӑнчӗ. Коля хӑйне ирӗклӗ туяс шутпа, хура костюмне тӳмелемен, йӳле янӑ. Урине хура тӗслӗ ҫӑмӑл туфли, юлашки вӑхӑтра модӑна кӗнӗ, кӑкӑрӗсене тачӑ тытакан шурӑ тӗслӗ нейлон водолазка тӑхӑннӑ. Хӗрсем тӑрӑхласа тӗрлӗ такмаксем каларӗҫ, кӗвве пӑсас мар тесе, килӗштерсе харӑссӑн алӑ ҫупрӗҫ, каччӑ акӑш-пикене мӗнле тытассишӗн тӑрӑшнине сӑнарӗҫ. Акӑ Валя Коля ҫывӑхне пычӗ, ун ҫине куҫӗсене ялкӑштарса пӑхрӗ, унтан аллисене пӗр хуҫлатса, пӗр тӑсса, вырӑнта тапӑртатса тӑчӗ. Каччӑ ҫакна ҫеҫ кӗтнӗ тейӗн, ӑна хулӗнчен тытрӗ, хӗрӗ унран уйрӑласшӑн пулнӑ евӗр, кӑштах турткаланнине кӑтартма тӑрӑшрӗ, ирӗке тухасшӑн пек хӑтланчӗ, унтан иккӗшӗ те пӗр-пӗрне алӑ парса, вальс кӗвви пуҫланнӑ евӗр, ҫаврӑнма пикенчӗҫ.

—Ҫитӗ,—каччи илтмелле ҫеҫ шӑппӑн пӑшӑлтатрӗ хӗр.

Вӗсем пӗр-пӗрне ӑнланчӗҫ, ҫаврӑннӑ ҫӗртенех аллисене ҫирӗп тытса, вӑйӑҫӑ умне пырса урисемпе тапрӗҫ, кӑмӑллӑн тав тунӑ май, пуҫӗсене сӗлтрӗҫ.

Толя, хӗрсе кайнӑскер, вӗҫкӗннӗн вылянса ҫеҫ илчӗ. Кӗвӗ ҫакӑнпах вӗҫленмерӗ-ха. Кольӑпа Валя тӗслӗх кӑтартни ыттисене хавхалантарчӗ ҫеҫ, паҫӑр алӑ ҫупса такмаксемпе тӑрӑхлакансем хӑйсем те, мӑшӑрлана-мӑшӑрлана ташлама пикенчӗҫ. Темиҫен харӑссӑн тапнӑран, ура айӗнчи ҫӗр чӗтреннӗн туйӑнчӗ, ҫамрӑксен сасси таҫта аякка вӗҫсе саланчӗ. Карталанса тӑнӑ хӗрӗсем, каччӑсем хӑйсене чӗнессе кӗтсе, хутран-ситрен вӗсем ҫине ыйтуллӑн пӑхрӗҫ, анчах та лешсем ҫакна асӑрхамрӗҫ те тейӗн. Хӗрупраҫсем вара

аптраса ӳкмерӗҫ, хӑюлланса кашнинех пӗрер-пӗрерӗн алӑран ҫавӑтсах хӑйсем ташша илсе тухрӗҫ, хирӗҫлекенсем пулмарӗҫ. Часах сак ҫинче, вӑййӑҫӑсӑр пуҫне, никам та юлмарӗ, пурте ташӑ картине тӑчӗҫ.

Ҫамрӑксем шӑпах хӗрсе кӑна кайнӑччӗ. Ҫав вӑхӑтра ушкӑн патне пысӑках мар чӑматан йӑтнӑ, салтак тумне тӑхӑннӑ каччӑ ҫывхарчӗ, малтанласа ӑна асӑрхакан та пулмарӗ, вӑл сывлӑх сунсан тин пурте сасӑ илтӗннӗ еннелле ҫаврӑнчӗҫ.

—Юра, эсех-и?!—кӑшкӑрса ячӗ Коля. Унӑн сасси ташӑ карти варринче чарӑнса тӑнӑ Нина Федоровӑна ыйхӑран вӑратнӑ евӗрлех пулчӗ. Вӑл Кольӑран маларах ӗлкӗрес тенӗ пек, аллисене тӑсса, Юра патне чупса пычӗ те унӑн мӑйӗнчен ҫакӑнчӗ:

—Тинех кӗтсе илтӗм,—пурте илтмелле каларӗ вӑл ҫак сӑмахсене.

Ҫине-ҫинех каччӑна чуптунӑ майӑн тутисем чӗтренчӗҫ. Салтакӗ, чӑматанне ҫӗре лартса, ӑна хыттӑн хӑй ҫумне чӑмӑртарӗ. Вӑл та хӗре хитре ҫаврака тутинчен, хӗм сапакан пысӑк куҫӗсенчен антӑхса кайсах чуптурӗ, пӳрнисене унӑн кӗске кастарнӑ ҫӳҫӗ ҫине антарчӗ, ӑна ҫемҫен шӑлнӑ май ачашларӗ.

—Нина, акӑ эпӗ те килтӗм,—пӑшӑлтатрӗ вӑл чун савнине вӗҫертмесӗр.

Пуҫтарӑннӑ ҫамрӑксем телейлӗ мӑшӑрӑн тӗлпулӑвне курса савӑнчӗ, вӗсене ырласа калаҫрӗ.

—Тинех кӗтсе илчӗ,—пӗр-пӗринпе шӑппӑн пӑшӑлтатрӗҫ Нинӑн тус-хӗрӗсем, тантӑшӗшӗн чунтанах хӗпӗртесе.

Юра Цыпленков Кольӑпа пӗр класра вӗреннӗ, ҫара та пӗр вӑхӑтра — ҫуркунне кайнӑччӗ, повесткине Кольӑна, чӑнах та, пӗр эрне маларах панӑччӗ, ҫавӑнпа та унӑн ялтан иртерех тухса кайма тиврӗ. Вӑл Аякри Хӗвелтухӑҫӗнче десантник пулчӗ, Юра вара Амур облаҫӗнче — пограничник. Унпа пӗрле паянхи вӑййӑҫӑн пиччӗшӗ Леня пӗр чаҫре службӑра тӑчӗ. Толя, пиччӗшӗн тусне курсанах, ун умне чупса пычӗ. Ҫамрӑк каччӑн Леня хӑҫан яла таврӑнасси пирки ыйтса пӗлес килчӗ, анчах та вӑл савнисене тӳрех чӑрмантарма хӑяймарӗ, ҫавӑнпа пӗр вырӑнта чӗнмесӗр тӑчӗ. Хӗрпе каччӑ икӗ ҫул хушши пӗр-пӗринпе ҫыру ҫеҫ ҫӳретнӗ, ҫакӑ ырӑ саманта ирӗн-каҫӑн кӗтнӗ-ҫке. Ан тив, пурин умӗнче те чуптуччӑрах, ӑшӑ сӑмахсем калаччӑр. Вӗсем ӑна тивӗҫлӗ: пӗри Тӑван Ҫӗршыва сыхланӑ, тепри тӑван ялта ӗҫлесе таса юратӑва упранӑ.

Акă хĕрӳ самант кăштах лăпланчĕ. Çапах та Юра Нинăна çаплах-ха аллинчен ямарĕ: «Курăр, акă вăл манăн юратăвăм!»—тесе, хăпартланса калас шухăшпа каччă хĕре ушкăн умне çавăтса пычĕ. Иккĕшĕн те пичĕ çинче савăнăç шевли вылярĕ, Нинăн куççульпе йĕпеннĕ пичĕ уйăх çутинче ахах пекех йăлтăртатрĕ.

—Салам, ял-йышсем!—кашнинех алă пачĕ салтак.—Эсĕ мĕн, кама кĕтетĕн, пыр, чуп, тетӳ кĕтсе те ывăнчĕ пулĕ,—Толя умĕнче чарăнса, тĕлĕннĕ пек пулчĕ вăл.—Пăх-ха, урăх çĕрте тĕлпулнă пулсан, паллайман та пулăттăм. Епле ӳссе кайнă.

—Тете, чăнах та, килте-и?—савăнăçне пытараймарĕ Толя.

—Паллах. Салтак суяс çук. Чим-ха, вăл халех килет. Ăçтан унăн чăтăмлăхĕ çиттĕр çамрăксен сассине илтсе пӳртре ларма?—тытса чарасшăн пулчĕ Юра Тольăна, анчах та лешĕ унăн сăмахне итлемерĕ, пиччĕшĕ таврăннă тенине илтсенех, пур вăйне пухса, килĕ еннелле ыткăнчĕ.

—Толя, ан васка-ха! Эпĕ те санпа пыратăп,—кăшкăрса чарчĕ ăна Маша. Вĕсем иккĕшĕ, алăран-алла тытăнса, тăвалла васкарĕç. Эппин Маша та текех хапхи умĕнче пĕччен тунсăхласа ларас çук.

Çамрăксем кĕçĕр килĕсене кайма васкамарĕç. Шурăмпуç кăвакара пуçласан тин, вăхăт чылаях иртнине туйса, саланма пикенчĕç.

Саша кĕçĕр ушкăн хушшинче курăнмарĕ. Ăçта çӳрет-ши вăл? Çакна никам та чухлаймарĕ. Тĕрĕссипе, каçĕ унсăрах хаваслă иртрĕ. Валя Малиновăсăр пуçне ăна аса илекен те пулмарĕ темелле. Вăл темиçе хутчен Кольăран тусĕ пирки ыйтрĕ, анчах та лешĕ ыран ирпе ун патĕнче пулма сăмах панисĕр пуçне хĕре йăпатмалли сăмах тупса, нимех те калаймарĕ. Кăмăлĕ пăсăлнă Валя пĕчченех урам вĕçнелле утрĕ, хăйне никама та ăсаттармарĕ.

Нинăпа Маша çеç паян пĕрре те ытти кунсенчи пек тунсăхламаççĕ, ассăн-ассăн сывламаççĕ. Икĕ тантăшăн çĕкленӳллĕ те хавас кăмăлпа çиçнин сăлтавĕ ытти çамрăксемшĕн тинех вăрттăнлăх пулмарĕ ĕнтĕ: хĕрсен савнийĕсем çартан таврăннă. Паллă ĕнтĕ, вĕсем каччийĕсемшĕн икĕ çул хушши вутра пулнă пек çуннă, çапах та панă сăмаха тытнă, савнийĕсене кĕтсе илнĕ.

Коля Вальăна хулĕнчен тытрĕ те, май килнĕ таран çепĕççĕн:

—Ăсатма ирĕк парсамччĕ,-терĕ.

—Мĕнех, çывăрассу килмест пулсан, тархасшăн.

Унăн сăмахĕсем Кольăна пĕрре савăнтарчĕç, тепре пăлхантарчĕç.

—Çывăрма васкас марччĕ-ха, этем тени вăл çавнашкал, хăйĕн çур ĕмĕрне тĕлĕрсе ирттерет, теççĕ,—хăй хумханнине пытарма тăрăшрĕ каччă.

—Çук, Коля, кирлĕ мар, пĕчченех каятăп. Вăхăт чылаях ĕнтĕ, санăн та, манăн та ыран ирех тăрас пулать,—утма чарăнчĕ Валя. Унăн сăн-пичĕ тăруках улшăнчĕ, пĕр вĕçĕм кулакан куçĕсем кичемлĕхпе витĕнчĕç.

Каччă нимĕн калама аптрарĕ. Вăл хирĕçлеме те пултараймасть, хĕре пĕччен пăрахса хăварни те аван мар пек:

—Килĕшместĕн пулсан, эпĕ сана хапха умне çеç çитерĕп,—аран-аран сăмахне тупрĕ вăл.

Вĕсем васкамасăр утса кайрĕç. Валя аслă çулпа пырса кĕнĕ урам вĕçĕнче пурăнать. Халĕ унта çитес тесен çухрăма яхăн утмалла. Вĕсен килĕ хĕвеле хирĕç ларать, икĕ пӳлĕмлĕ çĕнĕ йывăç çурт, урам енче нумай чӳречеллĕ веранда, вырăсла хапха. Кольăна çак çул питĕ кĕске пек туйăнчĕ. Каччă калаçу пуçарса яма сăмахне çаплах-ха тупаймарĕ. Вальăсен тĕлне çывхарнăçемĕн унăн чĕри сиксе тухас пек хытăрах та хăвăртрах тапрĕ, сывлăшĕ пӳлĕнчĕ. Пуплемелли, каламалли темĕн чухлех, анчах та чĕлхи çĕтнĕ, сăмах тупаймарĕ. Пырта йывăр чул ларнăнах туйăнчĕ.

—Çитрĕмĕр, -терĕ Валя хапха умĕнче чарăнсан салхуллăн.—Тавтапуç, ăсатса янăшăн. Ыранччен,—вĕри аллине каччă енне тăсса каларĕ вăл.

Коля асăрханулллăн ăна хăй кăкăрĕ çумне тытрĕ, çаплах-ха чĕнеймесĕр куçран пăхрĕ.

—Ыранччен,—тепĕр хут пăшăлтатрĕ Валя.

—Ыран тĕл пулсан та хапха умне çитиччен кăна ăсатма ирĕк паратăн-и?—аран-аран чĕтренсе тухрĕç каччăн сăмахĕсем.

—Пĕлместĕп,—терĕ те хĕр, çӳхе тутисемпе илемлĕн кулса хăвăрттăн картишне кĕрсе çухалчĕ.

Коля аллисене, тин çеç Валя парса хăварнă ăшша сыхласа хăварас тенĕ пек, кăкăр çумне тытрĕ, вырăнтан хускалма шикленнĕн, хупăннă алăк çине пăхрĕ. Мĕн чухлĕ тăчĕ вăл çапла, ăна хăй те пĕлмерĕ. Кашта çинчи автан çунат çапса авăтни каччăна киле кайма вăхăт çитнине систерчĕ. Вăл, йывăр ĕç туса ывăннă пек, аран-аран каялла çаврăнчĕ те килĕ енелле утрĕ. «Ыранччен...Пĕлместĕп...»-янăрарĕç унăн хăлхинче тин çеç хĕртен илтнĕ сăмахсем.

«Ыранччен, пĕлместĕп»... Мĕнле ăнланмалла-ха çак сăмахсене? Пур-ши вĕсенче кăштах та пулин юратăва амалантаракан шанăç? Тен, мана тăруках çапса хуçма хăяймасăр çеç, лăплатмалла çак сăмахсене калатăн? Енчен те эсĕ урăххине саватăн пулсан, ан шелле, кала тӳрĕссине, эпĕ пурпĕрех чăтатăп. Юрату тени мана нихăçан та куç хĕссе чĕнес çук»,—çак шухăшсемпе Коля васкамасăр урам тăрăх утрĕ.

Хăй те сисмерĕ, шухăш-кăмăл иртнĕ кунсемпе тулчĕ. Аса-илӳ, кустăрма пек, пĕр чарăнми анаталла чупрĕ. Куç умне шкулта вĕреннĕ кунсем, пирвайхи юрату, Лида тухса тăчĕç. Кашнинче çапла, ăна аса илни чуна ыраттарать. Темиçе сехет каялла çеç Вальăн ытармалла мар пăхакан куçĕсене курсан, ĕлĕкхи суран тӳрленнĕ пекчĕ, халь акă каллех, тăвар сапнă евĕр, çĕнĕрен туртса ыратма тытăнчĕ. «Эх, Лида, нивушлĕ эпĕ сансăр пурăнма пултарайманнине ăнланаймарăн эсĕ? Е чĕререн тухакан сăмахсене шӳт вырăнне хутăн, мана ĕненмерĕн? Çавна пулах пач палламан çынна качча тухрăн-ши? Ытла та час уçма тăрăшрăм пулĕ çав чун тĕпĕнче пытаннă вăрттăнлăха. Пĕлетĕп, эсир хĕрсем çирĕп кăмăллă каччăсене кăмăллатăр. Эпĕ хама çав енчен кăтартаймарăм-шим вара? Чăнах та, санпа чух пĕчĕк ача пек курăнса, çухалса каяттăм. Юрататăп, тенисĕр пуçне урăхларах, çавăн евĕрлĕ илĕртӳллĕ, ăшă сăмахсене каламан та ёнтĕ. Халĕ иртсе кайнă вăхăта аса илсен кулăшла та пек туйăнать. Чăнах та, айван, мĕскĕннĕн курăннă ёнтĕ ун чух. Тен, санăн хăш чухне каччăн сарлака кăкăрĕ çине ӳкес, унăн çирĕп ытамне лекес, вĕри тутинчен чуптăвас килнĕ. Анчах та умăнта вăтанчăк каччă тăнине курсан, ĕмĕтӳсем тĕтре пек, хăвăрттăн сирĕлнĕ. Çара кайнă чух эсĕ мана ытти çамрăксемпе пĕрле ăсатма пытăн. Пирвайхи хут сана хам çумма чăмăртаса пурин умĕнче те тутунтан вăрăммăн чуптурăм. Ун чухне питӳ темшĕн пĕçеретчĕ, ачаш çемçе тутусем кăвар пекех вĕриччĕ. Тен, пирвайхи тата чăн юлашки хут çакăн пек пĕр-пĕрне куçран пăхнине сиссе, манăн вăтанни иртсе кайрĕ. Уйрăлаймасăр тутунтан, питӳнтен, куçунтан чуптурăм, аллăмсемпе пире чăрмантарасшăн пулнă кĕске кастарнă сарă çӳçне якатрăм, пĕр вĕçĕм юрататăп, терĕм. Тен, çакна чăтаймасăр кĕтсе пурăннăскер, эсĕ телейне пытармасăр хăв мĕн каланине те пĕлмерĕн, икĕ аллупа мăйран ыталаса илтĕн те кăварлă тутусемпе мана хыттăн çыртрăн, шăппăн никам илтмелле

мар: «Кĕтетĕп»,—терĕн. Пĕлместĕп, тен, мана ун чухне туйăнчĕ çеç.»

Коля хапха алăкне питĕрсе пӳрте кĕчĕ. Шăп. Ашшĕ сăмсипе кăштах шăхăрттарса сывланă май, ăпкăн çывăрчĕ. Вăхăт нумай иртнĕ ĕнтĕ. Анчах та Кольăн темшĕн ыйăхĕ килмерĕ. Çăлтăрсем сӳнсе чӳречерен кăвак сăн çапсан тин вăл тĕлĕрсе кайрĕ кайрĕ.

*  *  *  *  *

Ирхине хапха алăкне хыттăн шăлтăртаттарнă сасă каччăн ыйхине татрĕ, Маня аппа иккен.

—Коля, çывăрса юлатăн вĕт, ав, кĕтӳ хăваласа килеççĕ,—Пăла еннелле кăтартрĕ вăл.

Каччă тин çеç вăраннăскер, кил-çуртри ĕçе туса ĕлкĕрейменнине туйсан, кӳршĕ хĕрарăмми хыпаланса ӳкрĕ:

—Чим-ха, эсĕ ĕнӳне те суман вĕт-ха, ăçта витрӳ?

—Паварта. Эп часах илсе тухатăп,—чупса кайрĕ вăл.

Кӳршĕ хĕрарăмĕ Кольăсен ĕнине пĕр хут çеç мар сунă, çавăнпа та Тунькка ун çине кӳренсе пăхмарĕ. Витрене çинçен тăсăлса пĕр кĕвĕллĕн юхакан ăшă сĕт шăрши часах картишне сарăлчĕ.

Кĕтӳ вĕсен килĕ умне çитсен Коля сурăхпа пӳтеккине хапхаран кăларса ячĕ.

—Часах, Тунькка , акă Маня аппа сана суса пĕтерĕ те, эпир те хире кайăпăр,—ăплатрĕ вăл урам еннелле туртăнакан ĕнене. Лешĕ, ăна ăнланнă евĕр, пуçне сулларĕ.

Алăк сассипе Сергей Иванович та вăраннă иккен.

—Чутах çывăрса юлаттăмăр вĕт. Мĕнле-ха эпир будильнике малти пӳрте лартма аса илеймен,—терĕ вăл.—Тавтапуç сана, Маня.

—Мĕн тав тумалли. Ытти кунсенче эсир ир-ирех тăрса тухаканччĕ. Сăнатăп та, никам тухса кĕни те курăнмарĕ. Кусем çывăраççĕ пуль, тетĕп, чăнах та, çапла иккен,—тулли сĕт витрине йăтса çĕкленчĕ вăл.

—Акă, Тунькка, кĕтсе те илтĕн. Ну, кайрăмăр,—хапха çинчен куçне илмесĕр сăнакан ĕнене чĕнчĕ каччă. Унпа хăй тĕллĕн калаçа-калаçа выльăхсем пуçтарăнакан вырăна васкарĕ. Телее, кĕтӳ ялтан тухса кайма ĕлкĕреймен-ха, хĕрарăмсемпе арçынсем, яланхи пекех, правлени умĕнче

чаранса, ытти урамсенчен выльăхсене хăваласа килессе кĕтеççĕ. Тĕрлĕ енчен пуçтараннă халăх пĕр ушкăна пуçтаранса ĕнерхи хыпарсене сӳтсе яврĕç. Чăнах та, кунта ытларах хĕрарăмсем пулчĕç. Арçынсем вĕсем пирки шӳтлесе çапларах калаççĕ: ялти хĕрарăмсен хыпарне итлесен районта саланакан «Авангард», Шупашкарта тухакан «Коммунизм ялавĕ» хаçатсем кирлĕ те мар. Мĕншĕн тесен çут тĕнчери мĕнпур хыпара вĕсенчен илтме пулать. Паллах, ку шӳт, апла пулин те çак сăмахсенче чăнлăх тĕшши пурах.

Коля вĕсен калаçăвне хутшăнмарĕ, килнелле утрĕ. Выльăхсем тарас çук, кĕтӳçисем пурте кунта. Çул айккинчи сывлăм типсе çитеймен-ха, çемçе курăк çинче ура йĕрĕсем палăрмаллах юлса пычĕç. Урари пушмак пуçĕсем самаях нӳрленчĕç, çапах та çеремпе пыма кăмăллăрах, çул çинчи тусана тустарса утни мар. Хыçра, хире васкама хушса, ĕнесем вăрăммăн мĕкĕрчĕç, амăшĕсене шыраса, кĕтӳ варринче çамрăк кăтра путексем чупрĕç. Кашнийĕнех пӳрчĕ умĕнче хур-кăвакал сас парать, лупас айĕнче тин çеç çăмарта тунишĕн савăнса, каçса кайсах чăххи кăтиклетрĕ, автанĕ уншăн хĕпĕртерĕ пулĕ, çунатне çапсах авăтрĕ. Акă тата пĕрисен хапхи айĕнчен, шалалла пăхса, айăпа кĕнĕ пек, урама кăларса янă сысна çури картишне кĕресшĕн нăриклетрĕ, ăна юриех йĕкĕлтенĕ евĕр, ун йĕри-тавра йытă çури чупрĕ, вылясшăн тяппипе çапрĕ, çыртам пекки турĕ, анчах та лешĕ ун çине çавrănса та пăхмарĕ, çаплах-ха çурăкран пăхрĕ. Анчăкĕ, никам та выляс çуккине сиссе, пĕр вăхăт хушши хӳрине илемлĕнункă евĕр çавăрса хурса, хыçалти урисем çине ларчĕ, хăлхисене вылятрĕ. Кăвак трико тăхăннă палламан каччă хăйĕн умĕнчен иртнине курсанах, хăраса каялла тарчĕ, вăл иртсе кайсанах ун хыççăн чупрĕ.

Пахчари улмуççи, çĕмĕрт, сирень йывăççисем хушшинче кайăксен юрри, унта-кунта хапха уçăлса хупăнни, хуçисем кайăк-кĕшĕке йыхăрса чĕнни илтĕнчĕ.

Коля кĕтӳ хăваласа тавраннă çĕре Сергей Иванович сысна çурипе чăх-чĕпсене çитернĕччĕ ĕнтĕ, халĕ картишне пысăк шăпăрпа васкамасăр шăлса тасататчĕ.

Ирхи апата вĕсем чей ĕçнипех ирттерме шутларĕç. Газ çинче шывĕ пилĕк минут хушшинчех вĕреме кĕрĕ, васкама кирлĕ мар, хĕвел хĕртме тытăниччен пахча-çимĕçе сапас-ха тесе, Коля мăшăр витрине йăтса урама тухрĕ.

—Малашне тен, каçкӳлĕм сапни те çитет, унсăрăн та ĕç мăй таранах,—сĕнчĕ Сергей Иванович.

—Халлёхе çитёнсе вăй иличчен ир-каç сапăпăр. Кайран куç курать,—чарăнса тăмасăрах хуравларĕ Коля.

Ашшĕпе ывăлĕ ĕçрен пушансан пӳрте кĕчĕç.

—Выльăх-чĕрлĕхе çитерсе тăрантарсан алă пушаннăнах туйăнать,—çăвăнса тасалнă хыççăн сăмахларĕ Сергей Иванович.

—Тен, вĕсем пулмасан пире ик-виçĕ хут канлĕрех пулать, тесшĕн мар пуль эсĕ, атте?

—Çук, уншăн мар. Пĕлетĕн-и, ывăлăм, шутлатăп-шутлатăп та, мĕн тунă пулăттăмăр-ши эпир, çĕр çыннисем, енчен те кил-çуртра выльăх-чĕрлĕх те пулмасан, вĕсене пăхса йăпанмасан?

—Çапла. Анне те час-часах çапла калаçатчĕ.

—Коля, эсĕ паян аннӳ патне Шупашкара каяс пирки председательтен ыйтасшăнччĕ. Енчен те вăл ирĕк парсан, мана пĕлтермесĕр ан кай, ик сăмах та пулин çыру çырса, санран парса яратăп.

—Эпĕ шкула шăнкăравлăп.

—Ӳркенмесен, çула май кĕрсе тухма та пултаратăн. Пирĕн паян шăпах экзамен. Эсĕ шкул ачисемпе хăçан тĕл пуласшăн?

—Шупашкартан таврăнсанах. Калаçу планĕ хатĕр ĕнтĕ. Ман шухăшпа вĕсемпе пĕччен курса калаçни çителĕксĕр. Тĕлпулăва чапа тухнă колхозниксене чĕнес пулать. Ĕçпе çеç мар, сăмахпа та вĕсем уй-хире илĕртме пĕлччĕр.

—Васкамалла, ывăлăм. Ĕçе вăхăтра тума тăрăшмалла. Ваттисем, кая юлсан — каю шăтать, теççĕ. Тепĕр 10 кунтан саккăрмĕш класра вĕренекенсем юлашки экзамен тытаççĕ, тата тепĕр эрнерен — вăтам шкул пĕтерекенсем. Вĕсене кайран пĕрне те шыраса тупаймастăн.

—Анчах та пирĕн ачасемпе курнăçас тĕллев çеç мар-çке-ха. Май килнĕ пек вĕсене колхозра хăварасси, уй-хир пуянлăхне ӳстересси, ăна чунтан юратма вĕрентесси пирки сăмах пырать. Çавăнпа та ытлашши васкани вырăнсăр. Малтан çыннисене тупас пулать.

—Эсĕ мĕн, халĕ те вĕсене тупайман-и? Кун пек ĕçлесен эсĕ шанчăкран тухатăн. Таçта шыраса çӳреме кирлĕ мар. Акă, тĕслĕх вырăнне хамăр колхоз председателĕн кун-çулне илер. Вăл вăрçă çулĕпе Атăл хĕрринчен пуçласа Берлина çити утса тухнă. Мĕншĕн хальхи çамрăксемпе курнăçма тивĕçлĕ мар? Унпа пĕрле агронома е парторга чĕнсен япăх пулать-им? Колхоз пуçлăхĕсенчен, пурнăç çулĕ çинче хурипе шуррине сахал мар курнăскерсенчен, тĕслĕх илмелле чух

мĕншĕн пирĕн таҫта такама шырамалла? Кирек камăн ыйтăвне вĕсем хăвăрт татса пама е, кирлĕ чух, пулăшма пултараççĕ. Енчен те ахаль колхозниксене чĕнес тесен, урамваррипе иртекен кашни уй ăстине чарса сĕнме пултарăн. Чăвашсем, ĕмĕр ҫĕр ҫинче ĕҫлесе пурăннăскерсем, унăн хакне яланах тĕрĕс калĕҫ, ҫăкăр-тăварсăр нимĕн пулманнине ăнлантарма та ўркенсе тăмĕҫ.

Коля шухăша путрĕ:

—Сансăр мĕн тунă пулăттăм-ши эпĕ, пĕлместĕп. Тавтапуҫ, ăс панăшăн, аттеҫĕм,—ун ҫумне туртăнчĕ вăл.—Чăнах та, мĕнле-ха ман пуҫра халиччен те ҫак шухăшсем ҫуралман?—хăйĕнчен хăй ыйтса тĕлĕнчĕ секретарь.

—Нимех те мар, малашне пурăна киле аякрине те, ҫывăхрине те, юнашаррине те асăрхама, курма вĕренĕн,—лăплатрĕ ашшĕ.

Ёҫе кайма ашшĕпе ывăлĕ урама пĕрле тухрĕҫ. Сергей Иванович тĕттĕм кăвак тĕслĕ костюмне тăхăннă. Уяври пек, шурă кĕпепе галстук, пуҫĕнчи ҫăмăл шлепки, аллинче вара, шкул ачисенни евĕр, кĕнекесемпе тултарнă пысăк хăмăр папки ăна сумлă кăтартать. Вăл ҫамрăк ҫын евĕр хырăнса тасалнă, хаклă одеколонпа сапăннă. Халĕ Кольăшăн ашшĕ сăнĕпе ытти кунхисенчен те ҫамрăкраххăн курăнать. Кăштах путарах кĕнĕ куҫĕсем, уяври пек, телейлĕн ҫиҫнĕнех туйăнаççĕ. Тĕрĕссипе каласан, уншăн паян чăн-чăн уяв: экзаменсем ҫулталăк хушшинче пĕрре ҫеҫ пулаççĕ. Чи хумханупă вăхăт ку. Тен, хăшĕсем хăйсен пĕлĕвне шанса, вĕрентекенĕ евĕр хумханмаççĕ те пулĕ? Кунта акă пуриншĕн те чĕре ыратать, темиҫе ҫул вĕсене вĕрентнĕ вăхăт сая кайма пултарни шиклентерет. Мĕн тăвăн, кашни ҫулах ҫапла пăшăрханма тивет. Апла пулин те Сергей Иванович ывăлĕ умĕнче хăй хумханнине палăртмарĕ, май килнĕ пек, унпа савăнăҫлă та хаваслă курăнма тăрăшрĕ. Паян вăл ҫамрăк сăнлă тени те хăйне паттăрла тытнине пула ҫеҫ. Шкул тĕлĕнче вĕсем пĕр-пĕрин патне шăнкăравлама калаҫса татăлса уйрăлчĕҫ.

Правлени ҫуртне кĕрсен Коля тўрех хăй пўлĕмне васкарĕ. Унăн пўлĕмĕн чўречисем хĕвел тухăҫ енне пăхаççĕ, вĕсенчен инҫех мар, алăк ҫывăхнерех икĕ тумбăллă сĕтел лартнă, ҫиеле ванман кĕленче хунă. Стена ҫумне тайăнса лармалли пукансем вырнаҫтарнă. Чăнах та, халлĕхе кунта сĕтел-пукансăр тата стена ҫинчи Ленин портречĕсĕр пуҫне нимех те ҫук. Ҫывăх кунсенче Коля, тусĕсем сĕннипе, стенасем ҫине тĕрлĕ ўкерчĕксемпе лозунгсем, писательсемпе паллă

ӑсчахсем комсомол пирки каланӑ сӑмахсене ҫырса ҫакма шутларӗ, хӗрупраҫсем чечексем илсе килме шантарчӗҫ.

Сӗтел хушшине вырнаҫса ларсанах, вӑл васкаса темӗн ҫырма пикенчӗ. Хӗвел ҫути пӳлӗме ӑшӑтмах ӗлкӗреймен-ха, пӳлӗмре халлӗхе уҫӑ. Каччӑна чӑрмантаракан ҫын пулмарӗ, хӑйӗн умне хунӑ шурӑ хут ҫийӗн шариклӗ ручка ҫӑмӑллӑн чупрӗ. Тепӗр ҫур сехетрен тин, ҫӳллӗ шӗвӗр кӗлеллӗ туфлисемпе шаклаттарса, савӑнӑҫпа ҫиҫекен Маша пӳлӗме кӗчӗ.

—Пӑх-ха ун ҫине, пуринчен малтан ҫитсе ларнӑ. Манса кайиччен каҫхине Вальӑпа ирттернӗ малтанхи туйӑмсем ҫинчен ҫырса хурас тетӗн пулӗ ӗнтӗ,—янравлӑ сассипе ахӑлтатрӗ вӑл.

—Шӑпах ҫавӑн ҫинчен, мӗнле пӗлсе каларӑн,—пуҫне ҫӗклемесӗрех малалла ҫырчӗ Коля.

—Эппин, чӑрмантарас мар,—алӑкран тухма тӑчӗ Маша.

—Чим-ха, ан васка,—чарчӗ ӑна секретарь. Хӑй ҫаплах-ха ҫырма чарӑнмарӗ.

Акӑ вӑл шухӑшне вӗҫлесе шурӑ хут ҫине куҫарчӗ пулас, пукан ҫинчен ҫӗкленнӗ май мӗн ҫырнине тепӗр хут тӑрса вуласа тухсан тин пуҫне ҫӗклерӗ, Маша ҫине пӑхрӗ.

Хӗр паян уяври евӗрлех тумланнӑ. Унӑн ҫийӗнче илемлӗ, чӗркуҫҫинчен кӑшт ҫеҫ ҫӳлерех, ҫинҫе пилӗкне тӑп-тӑп тытакан кӗске ҫанӑллӑ ҫутӑ симӗс тӗслӗ кӗпе. Вӑл ҫурма уҫӑ тулли кӑкӑрӗ ҫине темиҫе куҫлӑ пысӑк ҫӑрха ҫакнӑ, кӗске хура ҫӳҫне кӑпӑшкалантарса туранӑ, куҫ харшисене тирпейлӗн тушьпа сӑрланӑ, тӑрӑхларах пит ҫӑмартисене шурӑ тӗс ҫапиччен пудра сӗрнӗ. Бухгалтерӑн ҫутӑ хӑмӑр куҫӗсем телейлӗн ҫиҫрӗҫ.

—Маша,—ун ҫине пӑхса тӗлӗннӗ пек пулчӗ Коля,—эсӗ паян мӗнле чипер! Енчен те чи хитре хӗрсен конкурсне ирттерес пулсан, эпӗ хам жюри йышӗнче ларсан, сана чӑн пысӑк балл параттӑм. Кӑштах та пулин сӑну ҫине пӑхса савӑнма ирӗк парсамччӗ,—ун еннелле ярса пусрӗ вӑл.

—Ҫук, секретарь, халь тин юрамасть, савни кӗвӗҫме пултарать, ахалех сире вӑрҫтарӑп.

—Леня ман тус, пӗрреллӗхе кӗвӗҫмӗ,—кулчӗ каччӑ. —Ну, салам!

Маша аллине пачӗ.

—Эппин кӗтсе илтӗн? Ирчченех ҫӳрерӗр пулӗ-ха?

—Паллах, икӗ ҫул кӗтнӗ вӗт пӗр-пӗрне. Пӗлессӳ килет пулсан, ыталанса хыттӑн-хыттӑн чуптурӑмӑр та,—янӑравлӑ

сасăпа кулса хăйĕн телейне пытармарĕ Маша.—Эсир те пирĕнтен кая юлмарăр, алла-аллăн тытăнсах утаттăр.

Вальăна аса илтерни чунра темле çĕкленӳлĕх хушрĕ пулин те, Кольăн сăн-питне кăштах салхулăх пусрĕ, çавăнпа вăл сăмаха ĕç çине куçарма васкарĕ.

—Пĕлетĕн-и, Маша, колхозра пирĕн пек çамрăксен йышĕ чаксах пырать, кăçал шкул пĕтерекенсене ытларах уй-хир ĕçне явăçтармалла, вĕсемпе калаçусем ирттермелле. Халех, вăхăта сая ямасăр, çитес кунсенчех.

—Пухăвне ăçта ирттерме шутлатăн вара?

—Вĕсене пурне те клуба пуçтармалла пуль тетĕп, калаçаканĕсем вара колхоз пуçлăхĕсем пулччăр. Акă эпĕ мĕн пирки ытларах канашламалли çинчен çырса хатĕрлерĕм,—аллинчи хут листине Маша енне тăсрĕ Коля,—пуçлăхсем килĕшессипе килĕшмессине çеç пĕлмелле. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ вĕсене шанатăп-ха, анчах та пур çамрăк та клуба пытăр тесен, кашнийĕшне мĕнпе ытларах интереслентермелле-ши? Çакна хам та пĕлместĕп.

—Коля,—вуласа тухса хут листине каялла тавăрса пачĕ Маша. Унăн сăнĕ халь паçăрхи пек çиçмерĕ, пĕтĕмпех пулас ĕç çине куçрĕ,—эсĕ çырса хатĕрлени мана килĕшет, пурте лайăх пек, анчах та шкул пĕтерекенсемпе кăна тĕл пулас тени вара тĕрĕс мар. Мĕншĕн вĕсемпе çеç курнăçмалла? Çитменнине, эсĕ çамрăксемпе пĕрре курса калаçнипех каччăсемпе хĕрсем колхоза юлĕç тетĕн-и? Çук, секретарь юлташ, йăнăшатăн. Çитĕнсе пыракан ăрупа пирĕн мĕн пĕчĕкрен ĕçлемелле. Ман шухăшпа, колхозри шкул çулне çитнинчен пуçласа пур яш-кĕрĕмпе çакăн пек калаçу ирттерни сиен кӳрес çук. Ача чухнех уй-хире юратма вĕрентсен тин пирĕн колхозра техника усăсăр лармĕччĕ. Хăшĕсем акă ялта пурăнаççĕ пулин те, паянхи куна çитсе те хире тухса курман. Кайран, шкул пĕтерсен, хулана, пысăк стройкăсене тухса тараççĕ. Мĕншĕн? Сăлтавĕ паллă: уй-хире савма вĕрентмен. Кам айăплă? Эпир çеç, тек никам та мар. Кашни çулах хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче çын çитмен пирки нушаланатпăр. Тен, ытти хăшпĕр район центрĕнчен аяккарах вырнаçнă колхозсенче çакăн пек чăрмавсем çук, пирĕн акă кашнийĕ уй-хирте мар, Патăръелĕнчи пĕр-пĕр предприятине ĕçлеме кĕрессишĕн тăрăшать. Чăнах та, унта лайăх, çывăхра, шалуне те колхозринчен нумайрах илет, ĕçлеме те канлĕ, пĕр вăхăтра пуçласа, пĕр вăхăтра вĕçлемелле. Анчах та чылайăшĕ шутласа пăхнă-ши, вĕсене пулах пирĕн колхоз çулсерен пин-пин тенкĕлĕх пурлăх хире

хăварнине? Енчен те тутăхса ларакан техникăна юсасан, ун çине ларса ĕçлесен, çав пурлăх пĕтĕмпех колхоз кĕлетне кĕрĕччĕ, ĕçлекенĕсене вара тырă та, какайĕ те йӳнĕ хакпа ытларах лекĕччĕ. Укçи пирки кӳренме кирлĕ мар, хăшлĕр колхозниксем халь предприятисенче ĕçлекенсенчен те ытларах илеççĕ.—Хăйĕн сăмахĕсене Маша тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ.—Анчах ăçта пуçтарăнмалла? Хамăр ял клубне кĕрес те килмест. Вăл темшĕн илĕртӳсĕр, ытла та тĕксĕммĕн курăнать. Хăçан çĕнĕ клуб заведующине тупăпăпăр-ши? Вăл унти ĕçе лайăхлатма тăрăшĕччĕ.

—Мана та ку шухăш канăç памасть, çамрăксемпе ĕçлеме пĕлекен çын кирлĕ, çăтăр-çатăр калаçнипе çеç мар вĕт-ха,—ручкине янахĕ патне илсе пырса шухăша путрĕ секретарь.—Тен, Маша, хамăр ялтах irttерĕпĕр?—каллех паçăрхи сăмах çине куçрĕ вăл.—Техничкăран урайсене тирпейлĕн çуса тасатма ыйтăпăр, пулăшу кирлĕ пулсан хамăр та ĕçлĕпĕр.

—Темĕн, ку мана питех килĕшсе каймасть те.

—Маша, пуç тавра шутласа пăх-ха, пирĕн ялта авантарах,—каллех хăйĕн сĕнĕвĕпех килĕшме йăлăнса ыйтнă евĕр, пăхрĕ ун çине каччă.—Районти ĕç тăвакан культура заведующинчен, Табаковăран, ял-хуçалăха сăнласа паракан фильм кăтартма ыйтăпăр. Темиçе уйăх хыççăн клубра кино пулать тенине пĕлсенех, ватти-вĕтти пуçтарăнĕ. Кӳршĕ ял çамрăкĕсене машинăпа илсе килĕпĕр.

—Енчен те ăна ӳкĕте кĕртме май килсен, чăнах та, пирĕн ялта авантарах ĕнтĕ: клубĕ пысăк, кино аппарачĕсем те пурте хатĕр, механикĕ çеç пултăр.

—Шăпах механик пирки ытларах калаçма тивет те ĕнтĕ унпа.

—Сывлăх сунатăп. Комсомол каллех мĕн те пулин çĕнни сĕнесшĕн пулĕ ĕнтĕ,—уçă алăк умĕнче чарăнса ыйтрĕ вĕсенчен Николай Филиппович.

—Çĕнни çĕнех мар та, колхозшăн усăллă пулĕ тетпĕр,—ун еннелле çаврăнчĕ Коля.

—Чăнах та питĕ усăллă, Николай Филиппович,—калаçăва хутшăнчĕ Маша Сынкова.

—Усăллă пулсан, атьăр, хам патах кĕрсе калаçар,—чĕнчĕ председатель çамрăксене.

Кольăпа Маша ун хыçĕнчен утрĕç.

—Ну, каласа парăр, савăнсах итлетĕп,—сĕтел хушшине вырнаçса ларчĕ Николай Филиппович.—Эсир ларăр, ларăр, мĕн ура çинче тăратăр. Енчен те ĕç пирки калаçас тетĕр пулсан, ман пӳлĕме асăрхаттармасăрах кĕрĕр. Ура çинче

тӑрса калаҫнине питех кӑмӑлламастӑп эпӗ. Кунта пухура мар вӗт,—терӗ вӑл ҫывӑхри пукансем ҫине тӗллесе кӑтартса.

Секретарьпе бухгалтер хӑйсен шухӑшне пӗлтерчӗҫ, хут листи ҫине ҫырса хатӗрленӗ пулас планне председателе кӑтартрӗҫ. Николай Филиппович ӑна васкамасӑр тӗплӗн вуласа тухрӗ, куҫӗсене ҫаплах-ха хут ҫинчен илеймесӗр:

—Ҫапла, эсир, чӑнах та, усӑллӑ ӗҫ пуҫаратӑр, анчах та ҫамрӑксен умӗнче кам тухса калаҫать? Ӑна палӑртса хунӑ-и эсир?

—Паллах, унсӑрӑн эпир хамӑр шухӑша пӗлтерме те васкамастӑмӑр.

—Вӑрттӑнлӑх пулмасан, кам-ши вӑл?

—Вӑрттӑнлӑх мар, вӑл — эсир!—чутах харӑссӑн кӑшкӑрса ямарӗҫ Кольӑпа Маша.

—Эпӗ?

—Ҫапла, эсир тата колхоз агрономӗпе парти секретарӗ.

—Ну, кӑна эп сиртен кӗтменччӗ. Ман шухӑшпа, ҫакӑн евӗрлӗ сӗнӳ пирки тӗплӗнрех шутласа пӑхмалла.

—Вӑт ҫавӑнпа сире ун ҫинчен пӗлтерес терӗмӗр те ӗнтӗ.

—Чимӗр-ха, хамӑр хушӑмӑрта калаҫнипе ҫеҫ ҫырлахар мар-ха, енчен парторгпа агроном та пирӗнпе пулаҫҫӗ пулсан, вӗсене те систерер, ушкӑнпа пӗр шухӑш патне пырса тухни авантарах,—ура ҫине ҫӗкленчӗ председатель. Ӑна курса, Кольӑпа Маша та тӑчӗҫ.—Ан васкӑр, ларӑр, эпӗ кайсах чӗнсе килетӗп,—терӗ те хӑвӑрттӑн пӳлӗмрен тухрӗ.

—Коля, ан иккӗлен, сисетӗп,хирӗҫлес ҫук вӑл. Пӗр-пӗр явапллӑ ӗҫе пурнӑҫлас умӗн председатель яланах ытти ҫынсен шухӑшне ыйтса пӗлет, кайран тин пӗтӗмлетӳ тӑвать,—лӑплатрӗ хӑй ҫине ыйтуллӑн пӑхакан каччӑна Маша.

—Эппин, чӑнласах, вӑл ҫамрӑксене шанать, малашлӑх ӑна та пӑшӑрхантарать.

—Пӗччен татса калаймарӗ пулсан, чӑнласах та, Коля,—ура ҫине тӑчӗ Маша,—эпӗ каятӑп, ӗҫ ҫав тери нумай халь пирӗн.

—Тен, юлатӑн? Пилӗк минут хушшинче тем чухлех ӗҫлеймӗн. Санпа чух темле вӑй малалла тӗртет, тухса ан кай, тӑхта кӑштах.

—Кама мӗнле вӗт, ӗненме те пулать, эс каччи аванччӗ-ха. Енчен те тепӗр ик-виҫ уйӑхранах качча тухас пулсан, ун чухне мӗн тӑвӑн-ши мансӑр? Кам вӑй-хал парӗ сана?—шӳтлерӗ Маша.

—Леньӑран темиҫе минутлӑха та пулсан кил-ҫурт ӗҫӗнчен ыйтса хампа пӗрле илсе ҫӳрӗп.

—Кӳршӗ-аршӑсенчен те вӑтанмӑн-и?

—Паллах, ҫук. Алӑ ҫинче йӑтса ҫӳреме хатӗр эп сана, Маша.

Хӗр сасӑпах кулса ячӗ, ҫапах та пӳлӗмре текех тытӑнса тӑмарӗ, хӑйӗн ӗҫ вырӑнне васкарӗ.

—Маша, ӑҫта каятӑн? Атя, атя, калаҫу вӗҫленмен-ха,— вӑрӑм коридорта ӑна тытса чарса, каялла илсе кӗчӗ Николай Филиппович. Хальхинче унпа пӗрле парторгпа агроном тата механик пулчӗҫ.

—Вӑт, туссем, пирӗн комсомолецсен ертӳҫи ӗнерхи воскресникпе ҫеҫ лӑпланасшӑн мар, каллех ырӑ пуҫару сӗнет. Пӗлессӗр килет пулсан, акӑ вӗсен планне вуласа тухма пултаратӑр,—терӗ председатель сӗтел ҫинчи Коля ҫырса хатӗрленӗ хут листине тин ҫеҫ килсе кӗнӗ колхоз пуҫлӑхӗсене сӗннӗ май.

Лешсем пӗрин хыҫҫӑн тепри вуласа тухрӗҫ.

—Пӗлетӗр-и докладчиксем камне?—чеен пӑхрӗ вӗсем ҫине Николай Филиппович.

—Районти пӗр-пӗр Социализмла Ӗҫ Геройӗ пуль?

—Эпӗ те малтан ҫаплах шутланӑччӗ, анчах та пирӗн серетарь урӑхларах шухӑшлать, хамӑрӑн колхоз пуҫлӑхӗсем те вӗсенчен кая мар, тет,—хальхинче савӑнӑҫпа ҫиҫрӗ ун пит-куҫӗ. Унтан тӑруках каччӑ енне ҫаврӑнса,—Коля, эпир комсомол ҫулӗнчен тухнӑ ҫынсем ӗнтӗ. Тен, чӑнахах, районти пӗр-пӗр герой-комсомолеца чӗнӗпӗр?

—Ҫук, эпир шутланӑ пекех пултӑр. Эсир хӑвӑр ӗҫӗре мӗнле юратнине ялти кашни ҫын курать вӗт, кун пек ӗненмеллерех пулать.

—Николай Филиппович, эпӗ те вӗсем пекех шутлатӑп,— калаҫӑва хутшӑнчӗ парторг,—кам вӑл герой, мӗнлерех ҫын, хӑшӗ-пӗри тата хушаматне те тӗрӗс астуса юлаймӗ. Килӗ те кайӗ, вӑл ӑҫта тата мӗнле ӗҫре чапа тухнине никам та курас ҫук. Енчен те хирӗҫлесе тӑрас кӑмӑлу пулсан,—те шӳтлесе, те чӑнласах каларӗ ҫакна Георгий Михайлович,—ку ӗҫе хутшӑнма сана парти хушӗ.

—Эсир мана нихӑҫан та ватӑлтарасшӑн мар иккен.

—Ҫамрӑксем каллех хӑйсен йышне чӗннишӗн савӑнмалла ҫеҫ пирӗн, Николай Филиппович,—сӑмах чӗнмесӗр юлас темерӗ агроном та.—Пурнӑҫран йӑлӑхнӑ этем ҫеҫ ӑна ватӑлма васкать. Эпир халлӗхе вӑйпитти, ҫӗршыва усӑ кӳме пултаракан ҫынсем-ха.

—Ӳкӗте кӗртрӗр,—килӗшрӗ вӗсемпе председатель.—Енчен те колхоз шучӗпе халӑха кино кӑтартас пулсан,—тӑруках

темĕн аса илнĕ пек пулчĕ вăл.—Маша, кала-ха, çакăн валли укçа-тенкĕ тупăнать-и?

—Тупăнать. Культура валли малтанах уйăрса панă укçа-тенкĕне тăккаламан та халлĕхе,—пуçлăх килĕшессе сиссе хĕпĕртерĕ бухгалтер.

—Ну вăт, çакăнта ларакансем хирĕçлемесен, килĕшрĕмĕр те темелле,—аллисене сарса умĕнчи сĕтел кĕтессинчен тытрĕ Николай Филиппович.

Хирĕçлекенсем пулмарĕç.

-Секретарь сĕннипе, шăматкун пурте клуба пуçтарăнăпăр,—калаçу вĕçленнине систерсе ура çине тăчĕ вăл.

Коля тухма тăнăччĕ, анчах та темиçе кунранпа канăç паман ыйтăва аса илни ăна самантлăха тытса чарчĕ.

—Николай Филиппович,—пуçларĕ вăл кăшт хумханса,—эпĕ ĕçлеме тытăннăранпа нумай та вăхăт иртмерĕ, аван мар пулин те, ыйтасшăн...

—Именме кирлĕ мар, ыйт, кала ара,—хăвăртрах пĕлесшĕн пулчĕ председатель,—укçа енчен пулăшмалла е килти ĕçре?

—Çук, çук. Эпĕ анне патне пĕр-икĕ кунлăха Шупашкара кайса килесшĕн.

—Анна Егоровнăна тĕп хулана ăсатнă-и?—тĕлĕнчĕç пӳлĕмрисем пĕр харăссăн.

—Эрне каяллах. Илсе кайнă чухне те курса ĕлкĕреймерĕм. Хăйне çав тери йывăр туять, терĕç.

—Мĕншĕн паян куна çитсе те пĕлтермесĕр пурăнатăн вара?—сассине хытарчĕ председатель.—Чармастăп, паянах кайма пултаратăн.

—Тавтапуç, Николай Филиппович.

—Коля, ыран ирхине ирех эпĕ Горькине тухса каятăп. Кăмăлу пулсан, çула май больницăнах илсе çитерĕп,-сĕнчĕ ăна механик.—Паян пурпĕрех каçа юлатăн, гостиницăна çитсе çывăрни çеç пулать.

—Чăнах та, Коля, пурпĕрех ыран эсĕ тăхăр сехетре Шупашкарта пулатăн, çывăрса çеç ан юл,—сăмах хушрĕ парторг та.

—Мĕн çывăрса юласси, çула май эпĕ ăна килне кĕрсе илетĕп.

Коля пуçлăхсене тав туса пӳлĕмрен тухрĕ.

*      *      *      *      *

Хёвел анас умӗн Саша Кольӑна хыттӑн шӑхӑрса урама тухма чӗнчӗ. Тусӗ нумай кӗттермерӗ.

—Ӗнер каҫ ӑҫта пулнӑ эсӗ? Валя Малинова сана кӗтсе илеймесӗрех кайрӗ, ҫитменнине кӳренчӗ те пулас, никама та ӑсаттармарӗ,—хапхаран тухнӑ-тухманах ыйтрӗ унран Коля.

—Эпӗ сана кӑнтӑрлах хамӑн туйӑмсем пирки каласа патӑм-ҫке. Шӑматкунччен чӑтса тӑраймарӑм, урама тухсанах Светланӑна аса илтӗм те, вара никама систермесӗрех, ун патне ҫитсе килме шутларӑм.

—Мӗнле, кӗтсе илчӗ-и?

—Пурте йӗркеллех. Малашне кун сиктерсе тӗл пулма калаҫса татӑлтӑмӑр. Эпӗ ӑна хам пырасси пирки пӗлтерменччӗ, апла пулин те вӑл ҫав тери хӗпӗртерӗ.

Саша сӑмахӗсем Кольӑна каллех Валя Наперсткинана аса илтерчӗҫ. Чӑн-чӑнах унӑн та юрату туйӑмӗсем ҫуралчӗҫ пулмалла, хӗр пӗрре те куҫ умӗнчен кайма пӗлмерӗ. Тепӗр темиҫе минутран вӗсем каллех тӗл пулӗҫ, ӗнерхи пекех, каччӑ ун ҫумне ларӗ, хутран-ситрен хӗрӗн ҫинҫе пилӗкӗнчен тытса ыталӗ, куҫран пӑхӗ, савӑнӗ. Ӗнер уйрӑлнӑ чух Валя «ыранччен» терӗ. Акӑ вӑл чӑтаймасӑр кӗтнӗ вӑхӑт ҫитрӗ. Паянхи каҫран малашлӑх килет тейӗн, ахальтен мар пулӗ, ушкӑн ҫывӑхне ҫывхарнӑҫемӗн каччӑн чӗри ытларах та ытларах хумханчӗ, хыттӑн-хыттӑн васкаса тапрӗ.

—Коля, пӑх-ха, пӑх. Эпир ларакан вырӑнта мӗн чухлӗ ҫамрӑк пуҫтараннӑ, ют ялсем хӑнана килмен-ши?

—Ӗнер каҫ ҫеҫ пулмарӑн, паян хӑвна таҫти ют ҫӗршывран килнӗ евӗрлех туятӑн. Пурте хамӑр ялсем унта. Пӗлетӗн-и, ушкӑнпа пӗрле пулма мӗнле интереслӗ.

—Тавҫӑратӑп-ха.

—Саша, мӗншӗн-ха юрату тени пурне те тивӗҫтермест, пӗр пек куҫ хӗсмест: пӗрисемшӗн — телей, теприсемшӗн — куҫҫуль. Тӗслӗхшӗн таҫта кайма кирлӗ мар. Валя Малинова сана кӑмӑлланине пурте пӗлеҫҫӗ. Эсӗ ҫавна асӑрхамастӑн. Ытла та чунсӑр ҫав эпир арҫынсем. Такамӑн чӗри пирӗншӗн вутпа ҫунни нимех те мар, енчен те хӗр каччӑна юрасшӑн тӑрӑшсан та, эпир вӗсен таса юратӑвӗнчен пӑрӑнатпӑр, татах та аяккалла таратпӑр.

—Коля, иксӗмӗртен пӗри ҫеҫ юратни ҫителӗксӗр. Ҫитменнине, кашни хамӑра кӑмӑллакан ҫынпа вӑхӑт ирттерме тытӑнсан, эпир этем тивӗҫне ҫухатни, чӑн-чӑн юратӑва тупмасӑрах пурнӑҫа кӑлӑхах ирттерни пулмӗ-ши?

—Эпӗ урӑхла каласшӑнччӗ. Мӗншӗн юрату тени кӑварлӑши? Акӑ Валя Малинова саншӑн ҫунать, манӑн чӗрере вара тепри йӑва ҫавӑрать, вӑл та Валя ятлӑ, хушамачӗ кӑна урӑхла — Наперсткина, анчах та унӑн чӗринче... Пӗлместӗп, такам. Мӗншӗн куҫпа пӑхсах туйӑмсене ӑнланмалла туман-ха? Ҫук, енчен те апла пулсан, эпир пурнӑҫа, юрату хакне пӗлейместӗмӗр,—кӑштах чӗнмесӗр тӑнӑ хыҫҫӑн хӑех хуравларӗ Коля.

—Мӗн, Валя сана тиркерӗ-им тата? —тӑруках куҫран тӳррӗн пӑхса ыйтрӗ унран Саша.

—Пӗлместӗп. Пӗтӗмпех паянхи каҫран килет.

—Эппин, саншӑн та, маншӑн та татӑклӑ каҫ паян пулать тесен те юрать.

—Саншӑн тата мӗншӗн?

—Пӗлетӗн-и, текех тӑсмастӑп, хам туйӑмсене пӗтӗмпех Вальӑна уҫса паратӑп. Ҫав тери шел ӑна, чӑнах та, вӑл маншӑн тем тума та хатӗр.

Калаҫа-калаҫа икӗ каччӑ ҫамрӑксем патне ҫитрӗҫ.

Тӗлӗнмелле: калаҫса татӑлнӑ пекех икӗ Валя паян юнашар ларнӑ. Пӗри пӗвӗпе ҫӳллӗрех, хура брюкипе кӑвак блузка тӑхӑннӑ, ҫӳҫне, кӗске кастарса, хыҫалалла вырттарнӑ. Пӗчӗк ҫаврака питлӗ, чӗрӗ куҫлӑскер. Тепри унран лутрарах. Вӑрӑм йӗтӗн тӗслӗ хулӑм ҫивӗт, тӑрӑхларах илемлӗ пит, ӗнерхи пекех, шурӑ кӗпепе.

Каччӑсене вӗсем ӑшшӑн кӗтсе илчӗҫ, пӗр-пӗрин ҫумнерех куҫса, ларма вырӑн туса пачӗҫ.

Часах хуткупӑс йӑтса Маша Сынкова тухрӗ.

—Тен, малашне шкул пахчинче пуҫтарӑнӑпӑр. Асанне, купӑс сассине пула ҫывӑраймастӑп, тет,—пурте илтмелле каларӗ вӑл.

—Мӗнех, ват ҫынсемпе ун пек япала час-часах пулкалать. Ҫывӑрччӑр эппин. Атьӑр, каяр, хурӑнсен аллейинче халь вӑрманти пекех илемлӗ,—килӗшрӗҫ ҫамрӑксем.

Саша купӑс йӑтрӗ. Ӗлӗк салтак ачисене ӑсатнӑ евӗр, ҫамрӑксем пӗтӗм урам сарлакӑшӗпе утрӗҫ. Вӗсем «Ма хитреши Шупашкар урамӗ юрра» хӑйсем майлӑ урӑхлатса юрларӗҫ:

Ма хитре-ши Катексен урамӗ
Ҫӑлтӑрсем каҫхи вӑййа тухсан?
Ма хитре-ши Катексен урамӗ
Пӗр-пӗрне чӗререн юратсан?

Юлашки йӗрке вӗҫленсен, Валя Кольăн хулӗнчен хытăрах тытса, кăкăрӗпе ун ҫумне ҫыпҫăнчӗ. Тутисем каччă илтмелле ҫеҫ шăппăн пăшăлтатса:

—Ӗнер эсӗ мана кӳрентӗн пулӗ, каҫар,—терӗ.

Унăн пысăк кăвак куҫӗсем ачашшăн юратса пăхрӗҫ. Коля тăруках утма чарăнса, хытса тăчӗ, тӗрӗс илтрӗм-ши, тенӗ пек.

—Паян пире никам та ирччен ҫӳреме чăрмантармӗ,— илтӗнчӗ каллех чӗрене савăнтарса унăн сасси.

Каччă хӗр енне ҫаврăнчӗ. Ушкăнран уйрăлса, урам варринче тăнине пăхмасăр, ăна ҫинҫе пилӗкӗнчен ыталарӗ, хăй ҫумне чăмăртаса, вӗри тутинчен вăраммăн чуптурӗ. Валя ҫакна пач кӗтменскер, малтанласа каччăна хирӗҫленӗ пек, вăйсăррăн сарлака кăкăрӗнчен тӗртрӗ, ҫапах та тутисене уйăрма васкамарӗ, ăна Коля ҫумӗнче тăма, хăйӗн кӗлеткипе унăн ăшшине туйма ҫав тери кăмăллă пулчӗ, халиччен пӗрре те вăл кун пек телей курман. Ҫавăнпа та хӗр темӗнле асамлă тӗнчене лекнӗн, каччăна текех хирӗҫлеме пултараймарӗ, аллисене Кольăн хулпуҫҫийӗ ҫине хурса, унра хӳтӗленмелли стена тупнă евӗр, тулли кăкăрӗсемпе ун ҫумне тачăрах ҫыпҫăнчӗ. Тута хӗрринчен кăштах сывлăш кӗмен пулсан, хăҫанччен ҫапла тăратчӗҫ-ши вӗсем?

Коля хӗре ытамӗнчен вӗҫертмерӗ, Валя та тăруках уйрăлма васкамарӗ, вăл, пăлханса кайнăскер, унăн питӗнчен, куҫӗнчен, ҫурма уҫă кăкăрӗнчен ҫине-ҫинех чуптурӗ.

—Мӗншӗн?..Кирлӗ мар...—пăшăлтатрӗ хӗр, анчах хăй те ҫак сăмахсен пӗлтерӗшне ăнланаймарӗ.

Каччă ҫак минутра каллех хăйне ҫӗр ҫинчи чи телейлӗ ҫын вырăнӗнче шутларӗ. Акă виҫӗ кун каялла ҫеҫ вăл унăн ачаш ӳтне перӗнессишӗн, йӗтӗн тӗслӗ ҫӳҫне сӗртӗнессишӗн тем тума хатӗрччӗ, ӗнер вара пӗтӗм шанчăкне ҫухатнăччӗ, юрату тӗнчин алăкӗ уншăн хупăннă пек туйăнатчӗ. Ҫак самантра Коля хăйӗн асӗнчи Лидăна, вăл унăн ытамӗнче маррине, ун ҫумӗнче урăххи пулнине те манчӗ. Ҫӗнӗ туйăм тахҫанхи юратăва пӗтӗмпех хупласа хучӗ. Пурăна киле вăл , шăннă пăра ҫурса тухнă шыв евӗр, ҫӗнӗрен куҫ умне тухмӗ-ши? Халлӗхе ăна иккӗшӗ те пӗлеймерӗҫ-ха.

—Атя, уҫăлса ҫӳретпӗр,—сӗнчӗ каччă хӗре.

—Ăҫта каяс тетӗн?

—Маншăн пурпӗрех, суйлаканӗ эсӗ.

—Апла пулсан, Пăла хӗррине, улăха,—уйăх ҫутинче ҫăлтăр евӗр ҫиҫрӗҫ хӗрӗн куҫӗсем.

Вӗсем, пӗр-пӗрне хулран тытса, анаталла утрӗҫ. Таса тӳперен тулса ҫитнӗ янкăр ҫутă уйăх вӗсене ҫул кăтартса пычӗ. Пăла шывӗ ҫине унăн сăнӗ ӳкнӗ, Кольăн ăна алла тăсса илес, мечӗк пек вылятас, асăнмалăх ҫумри хӗре парнелес килчӗ. Вӗсем ҫеремлӗ ҫыран хӗррипе васкамасăр утрӗҫ. Пӗве канавӗнчен хăй тӗллӗн шăнкăр-шăнкăр, янăравлăн калаҫса, тăп-тăрă шыв юхрӗ. Ыйăха маннă пулă, хутран-ситрен сывлăша сиксе тухса, чăмпăлт! тутарса, каялла чăмрӗ, хӗрпе каччăран шикленчӗ тейӗн, уйăхăн тӗкӗрне ватса, тӗрлӗ ҫаврашкасем сапаларӗ. Патăръел енчен шыв ҫине йывăҫ мӗлкисем ӳкрӗҫ. Таврара шăплăх хуҫаланчӗ. Кунӗпе ӗҫлесе ывăннă ҫутҫанталăк халӗ каннăнах туйăнать, кассăн-кассăн, ытла тӗлӗрсе каясран вăратнă евӗр, кăнтăр енчен ăшă ҫил вӗрсе, ҫулҫăсене алă ҫуптарчӗ, пӗр шит ҫӳллӗш ӳснӗ калчасене хумхатрӗ.

Шкул пахчинчен хуткупăспа хаваслă юрă-кулă сасси илтӗнчӗ, хăй патне чӗнчӗ, анчах та Кольăпа Валя унта кайма васкамарӗҫ, тавралăхра никам та ҫук пулин те, шăппăн пăшăлтатса, юрату хӗлхемӗпе ҫиҫрӗҫ.

Акă Пăла ҫийӗн анаталла икӗ кăвакал ҫумлăн ишсе анчӗҫ: аҫипе ами. Вӗсем, такамран вăтаннă евӗр, майӗпен нартлатрӗҫ, шыв чӳхенӗвӗнче пӗр-пӗрин патне пӗрре ҫывхарчӗҫ, тепре уйрăлчӗҫ, анчах аякка мар. Вӗсен те ыйăхӗ килмест пулмалла. Мӗн ҫинчен калаҫҫӗ-ши? Тен, юрату ҫинченех?

Хӗрпе каччă вӗсене чарăнса тăрсах сăнарӗҫ, кайран каллех, шăппăн кулса, ҫыран хӗррипе тăвалла утрӗҫ. Тавралăха кăвак тӗс ҫапсан тин Вальăсен хапхи умне ҫитсе чарăнчӗҫ.

Ял тутлă ыйхăра. Шкул пахчинчен ҫамрăксем паҫăрах саланчӗҫ ӗнтӗ. Ҫывăрма маннисем те пур, паллах. Вӗсем халь улах вырăнта ҫын куҫӗнчен пытанса, тен, пӗр-пӗрне ҫепӗҫ сăмахсем калаҫҫӗ, уйрăлма васкамаҫҫӗ.

—Эпӗ ыран дежурствăра пулатăп,—пӗлтерчӗ Валя.

—Эппин, тӗл пулассине тепӗр куна хăваратпăр. Эпӗ те ыран Шупашкара тухса каятăп, унтах ҫӗр каҫма тивет пулӗ.

—Яланлăхах каймастăн-и? — пăшăрханса ыйтрӗ Валя.

—Ҫук, анне патне ҫеҫ, икӗ кунлăха.

Ҫапла калаҫса татăлса вӗсем пӗр-пӗринчен уйрăлчӗҫ. Хальхинче нихăшӗ те «ыранччен» темерӗ, каламасăрах ăнланчӗҫ, пурпӗрех тӗл пулаҫҫӗ. Паянхи пек, каллех Пăла хӗррипе утӗҫ, ҫутҫанталăк илемӗпе киленсе, чӗрене ăшăтмалли хӗрӳ сăмахсем калӗҫ.

Коля ҫӑмӑллӑн ярса пусса килнелле утрӗ. Чунра хаваслӑ, ҫӗкленӳллӗ туйӑм хуҫаланчӗ, каччӑн пӗр вӗҫӗм юрлас, ташлас килчӗ, унӑн куҫӗ умне пӗрмаях шурӑ кӗпеллӗ, акӑш евӗр, Валя-Валентина тухса тӑчӗ. Ырӑ шухӑшсенчен, вӗсен ытамӗнчен тӳрех хӑпайманран, вӑл сулахай енчен килекен тусне асӑрхамасӑрах, тепӗр урама утса кӗчӗ. Лешӗ ҫине-ҫинех темиҫе хутчен чӗнсен тин, чарӑнса тӑрса, ун еннелле ҫаврӑнчӗ.

—Эпӗ сана хӑлхасӑрланнӑ тесеччӗ,—темле хӑйӗн сассипе мар, ют сасӑпа каларӗ Саша. Унӑн сӑнӗ пӑлханullӑ, шенкер куҫӗсем, айӑплӑ ҫыннӑнни евӗр, тӗксӗм, шухӑшлӑ, сарӑ ҫӳҫӗсем сапаланчӑк.

—Мӗн пулнӑ сана, эсӗ сывах мар пулас?

—Хам та пӗлместӗп, Коля. Пӗтӗмпех ҫав хӗрсене пула.

Тусӗ малалла ыйтасса кӗтмесӗрех Малинова Вальӑна юлашки хут ӑсатма кайни ҫинчен каласа пама пикенчӗ вӑл.

* * * * *

Ҫамрӑксем мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн шкул пахчинчен тухрӗҫ. Валя ҫав тери хаваслӑ. Ун ҫумӗнче яштака пӳллӗ, шенкер куҫлӑ каччӑ утать. Икӗ ҫул вӑл ӑна чӑтӑмлӑн кӗтрӗ, Саша та хӑйне юратасса шанчӗ. Ирӗн-каҫӑн аса илетчӗ, хӑш чухне ыйӑхӗ вӗҫнипе, ҫывӑрма манса кайса, тухӑҫ кӑвакариччен ҫемҫе тӳшек ҫинче каллӗ-маллӗ ҫаврӑнатчӗ, пӗрмаях савнине куҫ умне кӑларатчӗ. Анчах та Саша салтакран таврӑнсан та чунне уҫмарӗ, хӑйӗн туйӑмне пӗлтермерӗ. Ҫырусенче те, пирӗн хушӑмӑрта туслӑх ҫеҫ, тетчӗ. Мӗн чухлӗ шухӑшлаттарман-ши ку сӑмахсем хӗре? Хӑвӑртрах унпа тӗлпулас килетчӗ, умлӑ-хыҫлӑ ӑшӑ ҫырусем ҫыратчӗ. Сашӑн хуравӗсем вара ҫапларахчӗ: «Каҫар, Валя, эпӗ санӑн юратӑвна тивӗҫ мар. Манӑн чӗре чул пекех сисӗмсӗр», тетчӗ. Ку сӑмахсем хӗршӗн ешерекен хитре чечеке пӑрлӑ шывпа сапнӑ пулсан та, часах ун ҫинчен манса, татах та хытӑрах кӗтме хушатчӗ.

Акӑ юлашкинчен кӗтсе илчӗ-илчех. Юратнӑ каччи халь унпа ҫумлӑ, юнашарах утать, унпа пӗр сывлӑшпах сывлать. Валя хӑйне ҫав тери телейлӗн туйрӗ, чарӑна пӗлмесӗр тем ҫинчен те вӗҫӗмсӗр калаҫрӗ, тулли савӑнӑҫне пытараймасӑр юрлама та хӑтланчӗ. Чӑнах та, ку енӗпе ӑна никам та

çитеймест. Ялта Валя пек хитре юрлакан сахал, вăл шăпчăк сассипе çепĕç юррисене шăрантарма пуçласан, итлесе тăранаймăн. Анчах та Сашăна паян хĕр юрри питех илĕртмерĕ. Вăл калаçăвне тӳрех пуçласа яма хăяймасăр, Валя сасси ăна йăлăхтарса çитернĕн, чĕнмесĕр утрĕ.

—Саша, —пуçларĕ Валя,—пĕлетĕн-и, эсĕ кичемленнине курсан, манăн та савăнăçăм çийĕнчех çухалать. Сан пекех шухăшлă пулас, чĕнмесĕр утас килет, анчах та пултараймастăп. Мĕншĕн, хам та пĕлместĕп.

—Валя,—пуçне ниçта пăрмасăр пуçларĕ каччă лăпкă сассипе тӳррĕн, хĕре хăйĕн сăмахĕсем йăлтах ăнланмалла пултăр тесе,—ахалех эсĕ мана юрасшăн тăрăшатăн. Пĕлетĕп, сана йывăр, манпа чух эсĕ ялан хаваслă та телейлĕ. Эпĕ вара кĕрхи çумăр пĕлĕчĕ пек, тĕксĕм те сивĕ,—пач ăнланмалла мар янăрарĕç юлашки сăмахĕсем.

—Саша, мĕн пулчĕ сана? Мĕншĕн ун çинчен калаçмалла-ха пирĕн. Атя, пĕреххут, иксĕмĕр юрă юрлар,—темĕн ырă марра сиссе каччăн аллине кăкăрĕ çумне чăмăртарĕ Валя.

Тен, хĕр чĕри хăй савнă çын мĕн каласса ăнланчĕ, унпа ытла та час уйрăласран шикленсе çеç илтме пӳрнĕ сăмахсене тепĕр куна хăварма, юрату вутне ĕлĕкхиллех ялкăштарса хĕмлентерме ĕмĕтленчĕ, анчах та каччă хăй шухăшне тата та уçăмлăрах пĕлтерме шутларĕ.

—Çук, ан чар, Валя, пурпĕрех паян калаймасан ыран, ыран мар пулсан хăçан та пулин пĕлтересех пулать пуç тавра шухăшланине, пĕр-пĕрне улталама, шанăç пама кирлĕ мар. Тен, мĕн чухлĕ ытларах калăп, çавăн чухлĕ пире уйрăлма çăмăлтарах пулĕ.

—Саша, йăлăнатăп, кирлĕ мар.

Каччă малалла тăсрĕ.

—Валя, чĕрене хушма та, унран ыйтма та пултараймăн. Пĕлместĕп, сан пек ырă та çемçе чĕреллĕ çын тĕлне пулайăп-ши эпĕ? Тĕрĕссипе каласан, çав тери йывăр санран уйрăлма. Анчах та ăнлан,ултавăн серепине лексе ним пулман пек санпа çумлă утма, тутунтан чуптума пултараймастăп малашне эпĕ. Тахçантанпах çак сăмахсене калассишĕн канăçа çухатрăм. Халĕ акă хама хам пĕтнĕ çын евĕрлех туятăп.

Хĕр нимĕн те чĕнмерĕ. Хыçаларах юлнăскер, аллине тăсса çаплах-ха каччăн хулĕнчен, ан кай, пурпĕрех эпĕ санпа, тенĕ евĕр тытрĕ, пуçне усарах утрĕ.

Саша чарăнмарĕ.

—Хăшĕсем: «Çемьере туслăх çеç пултăр, ача-пăча çуралсан, юрату хăех килет,»—теççĕ. Эпĕ çакăн пек каланипе пач килĕшместĕп. Тен, çĕр çемьерен пĕр çемьене пĕчĕк ача сасси хутшăннипе юрату кĕрĕ, анчах та пурин те туслăх юратăва куçать тенине шанма кирлĕ мар. Эпĕ санăн пурнăçун çулĕ çинче тĕрлĕ шăтăк-путăк чавасшăн мар. Каçар, тен, чăнахах та, пуриншĕн те айăплă. Çапах та ăнлан, манăн та чĕре пур-çке-ха, манăн та чăн-чăн юратăва тупас килет.

—Тăванăм, мĕншĕн çапла калатăн?—хĕрĕн пичĕ тăрăх, уйăх çутинче ку аванах курăнчĕ, шăрçа пек йăлтăртатса куççулĕсем юхса анчĕç.—Тен, чăнахах та, юратмасть тетĕн-ши?

Каччă пĕр вăхăт хушши чĕнмесĕр тăчĕ, унтан хĕр чунне амантас мар тесе:

—Лăплан-ха, тен, пирĕн хушăра юрату мар, пĕр-пĕрне хăнăхса çитнĕ туслăх çеç,—терĕ.—Эсĕ çамрăк, чĕрӳ каланине нумайăшне ăнланаймăн. Тен, чăн-чăн юрату малашне пулĕ?

—Çук, сансăр пуçне мана никам та кирлĕ мар. Хăш чухне тĕлĕк курса вăранатăп. Куç умĕнче яланах эсĕ. Аса ил-ха çара кайичченхи каççене. Ун чух эсĕ мана хальхи пек мар, ытларах ачашлаттăн, ыталаттăн та. Халĕ те çавсем аса килеççĕ.

—Валя, эпĕ сана мар, урăххине юрататăп...

—Ĕненместĕп!.. Енчен те эс чăнласах калатăн пулсан, эпĕ пĕр кунлăха та çут тĕнчере юлмастăп!..

—Валя, Валя, мĕн калаçатăн эсĕ? Пурнăçпа çакăн пек шӳтлеме юрать-и вара? Кама мĕн ĕнентерĕн, енчен те хăв çине хăв алă хурсан? Кашни çыннăн çирĕп чĕреллĕ, йывăрлăха хирĕç утма вĕренмелле.

Хĕр каллех шăпланчĕ, унăн куçĕсем куççулĕпе тулчĕç, пичĕ хĕрелсе пĕçерекен пулчĕ. Саша ăна йăпатма тăрăшни те пулăшаймарĕ.

Валя хитре хĕр. Халĕ куççуль кăларса шăппăн йĕнĕ чух вăл татах та хитререх курăнать. Каччăн ăна кас-кас шеллес, юратас, çара кайичченхи пек, ыталас, чуптăвас килет, анчах та юрамасть. Çапла хăтлансан, хĕмленекен вучаха вутă пăрахса, ăна татах та вăйлатма çеç пултарать.

—Сывă пул, Валентина, усалпа мар, пĕр-пĕрне ырăпа çеç асăнар, йывăрлăхра пулăшса, яланлăхах туслă юлар...

—Саша, ан кай...ямастăп...—ун мăйĕнчен çакăнчĕ Валя. Пуçĕпе каччăн кăкăрĕ çине ӳкрĕ, ĕсĕклесех йĕме пуçларĕ.—Ямастăп. Каяс пулсан та, пурпĕрех санра та юрату туйăмĕ

çураласса шанатăп, эсĕ ман пата таврăнасса кашни кунах кĕтетĕп!

Саша ун аллине ачашланă евĕр, çăмăллăн сирчĕ, хĕрĕн пĕçерекен питне хăйĕн тутипе кăшт çеç перĕнчĕ, унтан унран уйрăлса, çаврăнса пăхмасăрах тăвалла утрĕ.

—Саша!

Лешĕ мĕн пулса иртнине ăнланаймасăр, сылтăм аллипе Саша тутипе перĕннĕ вырăна тытса хускалмасăр тăрса юлчĕ. Мĕн шутларĕ-ши е аса илчĕ-ши вăл çак самантра? Çакна никам та пĕлеймерĕ.

Каччă пралукран сулахаялла пăрăнас чух, хăй сисмесĕрех, каялла çаврăнса пăхрĕ. Валя уйрăлнă вырăнтах, çаплах-ха шăнтса лартнă пек, пĕр тапранмасăр тăчĕ. Унăн çÿçĕсене ăшă çил арпаштарчĕ, анчах та хĕр ăна туймарĕ те пулас.

* * * * *

Саша вĕçлерĕ. Коля ун çине ыйтуллăн пăхрĕ.

—Саша, тен, Светланăна курнипе санăн юрату туйăмĕсем улшăнчĕç?

—Пĕлместĕп. Халĕ акă шутлатăп та, Вальăнах юрататăп пулĕ тетĕп. Анчах та пурнăç çулĕ тупайман çын пек, хамăн чĕре кама ытларах савнине те пĕлместĕп. Унăн куççулĕсене курсан, манăн ăна тем пекех çумма чăмăртас, яланлăхах унпа пулас килчĕ. Чăн-чăн ырă анне пулмалли çын вăл. Тен, ăна ытла хам çумма çулăхнăшăн çеç тиркетĕп? Енчен те инçе çула тухас пулсан, мана яланах унăн ачашлăхĕ, япшар чĕлхи çитмест. Куç умĕнче ăна кăна куратăп.

—Саша, эпĕ сана акă мĕн сĕнетĕп. Çак эрнере эсĕ Вальăпа пĕрре те ан курнăç, ытларах Светланăпа пул. Ун чухне кама ытларах килĕштернине, чуну кам патне вăйлăрах туртăннине туйса илĕн.

Çапла сăмахласа туссем уйрăлчĕç.

* * * * *

Сергей Иванович, ывăлĕ ыран Шупашкара каяссине пĕлсен, канăçне пĕтĕмпех çухатрĕ: «Шел, экзаменсен вăхăчĕ,

унсăрăн пĕр минут та çакăнта тытăнса тăмăттăм,—шутларĕ вăл.

Акă чылай кая юлса ывăлĕ килчĕ, шăппăн, ытлашши сас кăлармасăр салтăнма пикенчĕ, унтан чĕрне вĕççĕн пусса малти пӳрте утса кĕчĕ те тӳрех вырăн ăшне чăмрĕ, часах çывăрса та кайрĕ.

Ашшĕ çаплах-ха лăпланаймарĕ, унăн куçĕ умне арăмĕ тухса тăчĕ. Унпа вăл апрель вĕçĕнче ял хуçалăх институтĕнчи çамрăксен каçĕнче паллашнăччĕ, ун чухне иккĕшĕ те виççĕмĕш курсра вĕренетчĕç. Вăтам пӳллĕ хĕре вăл пĕрре курсах килĕштерчĕ. Аня кăтрарах хура çӳçне тирпейлĕн çивĕтленĕччĕ, çамки çинчи, хăлха çывăхĕнчи çивĕтне кĕреймен çӳçĕсем пĕтĕрĕнсе, унăн çаврака питне татах та хитрелететчĕç. Сăпайлă, ытлашши нумай калаçма юратманскер, Сергей Иванович чĕрине çийĕнчех тыткăна илнĕччĕ. Ун чухне вăл тӳрех хĕр куллине, унăн кăвак куçĕсене курнипех çĕр çывăраймасăр асапланакан çын марччĕ ĕнтĕ. Чылай хутчен хурапа шурра тӳснĕ, вăрçă çулăмĕ витĕр утса тухнă, вилĕмпе хире-хирĕç кĕрешнĕ каччăччĕ, анчах та хальхинче ачаш чĕреллĕ çамрăк хĕр куллине çĕнтерейменĕ, яланлăхах ăна парăнчĕ. Чăн-чăн юрату сахалах мар инкек-синкек курса ирттернĕ çынна кĕске вăхăт хушшинчех тыткăна илчĕ. Çак кунтан пуçланчĕ те ĕнтĕ вĕсен ĕмĕрхи туслăхĕ, пĕр-пĕрне чунтан килĕштерсе юратасси.

Аня вăтам шкул вĕçленĕ хыççăнах ял хуçалăх институтне вĕренме кĕнĕ, ăна пĕтернĕ хыççăн мăшăрĕпе колхоза таврăнчĕ, агроном ĕçне кӳлĕнчĕ.

Сергей Ивановичăн вара пурнăç çулĕ урăхларах килсе тухрĕ. Вăрçăччен вăл Мускаври ют чĕлхесен институтне вĕренме кĕнĕччĕ. Тусĕсем, вăл ăна пăрахса Шупашкарти педагогика институтĕнчи вырăс тата чăваш чĕлхипе литература факультетне куçассине пĕлсен, тем пекех тархасларĕç, ӳкĕте кĕртме тăрăшрĕç. Сергей Иванович пĕчĕк ача мар ĕнтĕ, вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчен пуçласа Краков хулине çитиччен вутпа-çулăм витĕр утса тухнăскер, хăй пурнăçĕнче нумай çухатассине, ялта пурăнсан, хулари пек карьера тума çуккине ăнланчĕ, çапах та тăван халăха çутта кăларас ĕçе мала хучĕ, çавăнпа Шупашкара таврăнчĕ.

Унтанпа нумай çул иртрĕ ĕнтĕ. Мускавра пĕрле вĕреннĕ тусĕсем тахçанах пысăк хуласемпе ют çĕршывсене саланчĕç. Сергей Иванович çирĕм çул ытла ĕнтĕ ялта пурăнать,

ачасене пӗлӳ парать, унӑн пӗтӗм телейӗ вӗренекенӗсем тӗрӗс ҫул тупса, хӑйсен пурнӑҫне йӗркелени пулса тӑрать.

Пуҫра шухӑш хыҫҫӑн шухӑш вӗҫрӗ. Акӑ чӳречерен, вӑрттӑн пытанса, хӗвел ҫути ӳкрӗ, йывӑҫ стена ҫумне тӑрӑнчӗ. Те ун ҫутипе, те ҫӗнӗ кун ҫитнипе савӑнса, пӳрт умӗнчи ҫӗмӗрт туратти ҫинче кайӑк юрлама пикенчӗ. Вӑхӑт чылаях иртрӗ пулин те, вырӑн ҫинчен тӑрас килмерӗ. Никам ыйӑхне шеллемен будильник ҫеҫ, пӳрт шӑплӑхне сирсе, такама вӑрҫнӑн пӗтӗм пӗвӗпе чӗтренсе шӑнкӑртаттарчӗ, тӑма хушрӗ.

Сергей Иванович йывӑррӑн вырӑн ҫинчен ҫӗкленчӗ. Коля, вӑраннӑ пулин те, утиялне сирсе, пӗр-икӗ хутчен туртӑнса илчӗ, унтан тин, ашшӗнчен маларах тӑхӑнас тенӗ евӗр, васкаса тумланма пикенчӗ.

Петр Михайлович Быков хӑйӗн «Жигулипе» шӑпах кӗтӳ хӑваланӑ хыҫҫӑн ҫитсе чарӑнчӗ. Коля ҫав вӑхӑтра ҫула тухма хатӗрччӗ ӗнтӗ, ирхи ҫӑмӑл апат та ҫинӗччӗ, ҫапах та механикпа, юлташа тенӗ пек, тепӗр хут сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗ. Ашшӗ таҫта кайса ҫухалчӗ, ывӑлӗпе Петр Михайлович урама тухсан та курӑнмарӗ. Ҫамрӑксем машина ҫине ларма та хатӗрленнӗччӗ, анчах та шӑп ҫав вӑхӑтра кӗҫӗн алӑк сассине илтрӗҫ те чарӑнса тӑчӗҫ. Улмуҫҫи пахчинчен пысӑк чечек ҫыххи йӑтса Сергей Иванович тухрӗ.

—Ывӑлӑм, аннӳне ман ятран ҫакна пар-ха,—терӗ вӑл, хӗрлӗ тюльпансен ҫыххине Кольӑна тыттарса,—тен, вӗсем ӑна ҫамрӑклӑха, паллашнӑ кунсене, аса илтерӗҫ, вӑй хушӗҫ. Хӑвӑртрах сывалма сӗн.

Унӑн сасси чӗтренсе тухрӗ. Ашшӗ мӗн калас тенине Коля ӑнланчӗ.

—Юрӗ, аттеҫӗм. Пӗр сӑмах сиктермесӗр калӑп,— чечексене илсе вӑл Петр Михайлович ҫумне ларчӗ.

Ялтан асфальт сарнӑ ҫул ҫине тухиччен 4-5 ҫухрӑм пулать. Ланкашка нумайййине кура машина ӑшӗнче ларса пынӑ май хӑвна сӑпкари пекех туятӑн. Ҫине-ҫине сиктернипе каччӑн сисмесӗрех куҫӗсем хупӑнчӗҫ. Вӑл тӗлӗрме тытӑнчӗ, ҫул ҫинче нимӗн те кураймарӗ. Петр Михайлович ун ҫине пӑхса лӑпкӑн кулчӗ. Хӑй те каччӑ пулнӑ, ӑнланать. Тӗрӗссипе, хусах пурнӑҫӗпе уйрӑлнӑранпа икӗ ҫул та ҫитеймен-ха. Сӑнне пӑхсан, ӑна никам та авланса атте пулнӑ тесе калаймӗ, 24-25 ҫулхи каччӑ тейӗҫ.

Шупашкара вӗсем шӑпах сакӑр сехет тӗлне ҫитрӗҫ. Кольӑшӑн темиҫе минут каялла ҫеҫ килтен тухнӑн туйӑнчӗ.

—Вăран, унсăрăн тĕп хулана кĕнине кураймастăн,— хулпуççинчен тытса силлерĕ ăна Петр Михайлович.

Каччă куçне уçрĕ. Умра —хитре юрăсенчи ватă Шупашкар. Унăн сарлака урамĕсемпе пĕр вĕçĕмсĕр халăх утрĕ, троллейбуссемпе машинăсем чарăна пĕлмесĕр чупрĕç, хăлхара темле хăнăхман шав тăчĕ, пĕрре те килти пек мар. Ялта вăранатăн та, çынсем урам тăрăх утса иртнине те сайра хутра кăна куратăн. Кунта пач урăхла: вĕсем кашниех ĕç çукран каллĕ-маллĕ çӳренĕн туйăнать. Коля тăруках ним ăнланаймасăр куçĕсене сăтăркаларĕ.

—Каçхине ытла та нумай чупатăн пулĕ эсĕ, халĕ те вăранаймастăн?—кăштах шӳтлĕн тĕртсе илчĕ Петр Михайлович.

—Çук, ирех выртнăччĕ, хĕвел ăшшипе çеç çан-çурăм çемçелсе кайрĕ пулас,—питне сăтăркалама пикенчĕ каччă.

—Ну, ну, пĕлместĕп мар, ял хĕрĕсем ăмăртмалла хăйсем майлă çавăрасшăн пулĕ-ха, сан пек хитрисене тӳрех куç хываççĕ вĕсем.

—Темĕн, пурпĕрех пурне те юратас çук.

Умри светофор çине симĕс çутă тухрĕ. Петр Михайлович васкамасăр сцеплениине ярса, машинине вырăнтан тапратрĕ.

—Анна Егоровна хăш больницăра выртать?—калаçăва урăх енне куçарчĕ вăл.

—Республика больницине леçнĕ терĕç, çавăнтах пулĕ.

—Эппин, вăхăта сая ярар мар, тӳрех унта каяр. Манăн Горькине кăнтăрла тĕлне çитмелле, ĕлкĕретпĕр.

—Манăн хамăн та аннепе хăвăртрах тĕл пулас килет.

Машина вокзал патĕнчен сулахай енне пăрănса Ленин проспектне тухрĕ, унтан сылтăма пăрăнчĕ. Сулахай енче, сывлăша çурса часах касас пек, хĕççине çӳле çĕкленĕ Чапаев палăкĕ тăрса юлчĕ. Коля урамăн икĕ енчи çуртсене сăнаса чĕнмесĕр ларса пычĕ. Петр Михайлович сăмах хушмарĕ, халĕ умри машинăсем пĕр вĕçĕм чупнăран, унăн руль умĕнче паçăрхинчен икĕ-виçĕ хут тимлĕрех пулма тиврĕ, калаçу ăна чăрмантарĕ çеç.

Республика больници шăпах Горькине тухса каякан çул çинче, сулахай енче вырнаçнă. Палăртнă вырăна çитсен, Коля анса юлчĕ те больница картишĕнче тĕл пулнă чылаях çулланнă, самăр ӳт-пӳллĕ хĕрарăмран хирурги уйрăмăн çурчĕ ăçта вырнаçнине ыйтса пĕлчĕ, унтан тӳрех вăл кăтартнă корпуса тупса шала кĕчĕ, анчах та дежурнăй сестра чирлисем патне ирхине тăхăр сехетрен тин кĕртме ирĕк панине пĕлтерчĕ. Ним тума та çук, кĕтме тивет. Мĕншĕн ун

пек чух 50-60 минут та ҫав тери нумая тӑсӑлнӑн туйӑнать-ши?

Пуҫри шухӑшсем сирӗлме пӗлмерӗҫ. Акӑ каччӑ часах, шурӑ халат тӑхӑнса, палатӑна кӗрӗ. Ун ҫине кӑштах путса кӗнӗ куҫӗсемпе амӑшӗ савӑнса пӑхӗ, простынь ӑшӗнчен аллисене кӑларса, ывӑлне питӗнчен сӗртӗнӗ, ашшӗ парса янӑ чечексене илсе, малтан кӑкӑрӗ ҫумне чӑмӑртӗ, унтан тумбочка ҫине лартӗ, ӑшшӑн тав тӑвӗ. Ку иккӗшӗшӗн те чи телейлӗ самант пулӗ.

Кӗтнӗ вӑхӑт ҫитрӗ, анчах та Коля шухӑшланӑ пек пулса тухмарӗ. Унӑн ӗмӗтне вӑтӑр ҫула ҫитнӗ, куҫлӑхлӑ пӗр арҫын татрӗ. Вӑл, ҫынна витӗр курас тенӗ пек, куҫлӑхне сӑтӑркаласа, чӗнмесӗр тӑчӗ, юлашкинчен тин Кольӑн ыйтӑвне хуравласа, татӑклӑн ҫапла каласа хучӗ:

—Степанова патне кӗме юрамасть. Чирлӗ ҫынна халь канӑҫлӑх кирлӗ. Эсир килте лара-тӑра пӗлменни ӑна сывалмашкӑн кансӗрлеме ҫеҫ пултарать.

Унӑн сӑмахӗсем Кольӑшӑн аслати кӗмсӗртетнӗн янӑрарӗҫ, сасси те, хуҫине пӑхӑннӑн, пӗр чарӑнмасӑр коридор тӑрӑх малалла чупса кайнӑ пек туйӑнчӗ.

—Чимӗр-ха, тен, халь пулмасан, каҫхине?—тухтӑр куҫран ҫухаличчен аран-аран ыйтма ӗлкӗрчӗ Коля.

—Каларӑм-ҫке, паян та, ыран та юрамасть. Енчен те чӑвашла ӑнланмастӑр пулсан, вырӑсла калама пултаратӑп,—самантлӑха чарӑнса, каллех хулӑм сассипе хуравларӗ паҫӑрхи арҫын.

Каччӑ, шалкӑм ҫапнӑ пек, пӗр вырӑнта хытса юлчӗ. Чылайран тин ашшӗ парса янӑ чечек ҫыххине амӑшне памалли ҫинчен аса илчӗ, анчах та кая юлчӗ, куҫлӑхлӑ тухтӑр паҫӑрах ӗнтӗ коридор тӑрӑх утса кайса курӑнми пулчӗ. Вӑл хӑвӑрттӑн кӗсйинчи блокнотӗнчен пӗр листа хут ҫурса, ашшӗ каланӑ сӑмахсене васкаса ҫырчӗ, унтан сестраран ӑна амӑшне пама ыйтрӗ.

—Тархасшӑн, чечек те пулсан йышӑнӑр.

—Вӑт ку урӑх калаҫу,—ӑшшӑн кулса, халех унӑн ыйтӑвне тивӗҫтерме шантарчӗ лешӗ.

Коля больница ҫуртӗнчен тухсан Шупашкар урамӗпе пӗр тӗллевсӗр тӑвалла утрӗ, хула хӗррине ҫитсен тин пӑтрашӑннӑ шухӑшсем, ҫип пек, пӗрин-хыҫҫӑн тепри ҫыхӑнса тухрӗҫ. Ӑҫта кайӗ малалла? Тен, ӑна ыран амӑшӗпе курнӑҫма ирӗк парӗҫ? Ҫак шухӑшсемпе вӑл «Атӑл» гостиницӑра вырӑн йышӑнма шутларӗ.

Тепӗр кунӗ те, малтанхи евӗрлех, ӑнӑҫсӑр пулчӗ, амӑшӗпе тӗл пулса калаҫаймасӑрах, сывлӑхӗ мӗнлине пӗлмесӗрех унӑн каялла Патӑръелне таврӑнма тиврӗ.

Ҫуралнӑ ене ҫывхарнӑҫемӗн чӗре ытларах ыратрӗ. Мӗн калӗ вӑл киле ҫитсен ашшӗне, епле лӑплатӗ ӑна? Ҫак ыйтусене хуравлама хӑй те пӗлмерӗ.

Районти Культура ҫурчӗ тӗлне ҫитсен, ҫиҫӗм пек килсе ҫапнӑ шухӑшсем ӑна тӑпах чарчӗҫ.

—Ҫук, пурпӗрех анне сывлӑхне пӗлмесӗр киле таврӑнмастӑп,—пӑшӑлтатрӗ каччӑ, унтан хӑвӑрттӑн каялла ҫаврӑнса, районти больница еннелле утрӗ.

Вӑл шӑпах Патӑръел варринче вырнаҫнӑ. Унӑн сулахай енче икӗ хутлӑ ҫӗнӗ универмаг, «Ударник» ятлӑ кинотеатр, ӑна хирӗҫ районти ӗҫ тӑвакан комитет, универмагран сылтӑмалла асфальтлӑ ҫулпа пӑрӑнсан, ачасен сачӗ, унпа ҫумлӑ райкомпа вӑтам шкул. Коля шкул ҫумӗпе иртсе больница ҫуртне, унтан тӳрех районти аслӑ врач пӳлӗмне кӗчӗ. Геннадий Петрович Петров самӑртарах, ҫӳллӗ те тӗреклӗ, хӗрӗхрен иртнӗ ҫутӑ ҫамкаллӑ арҫын, ун ҫине пӗр тӗлӗнсе, пӗр ыйтуллӑн пӑхрӗ. Малтанласа вӑл каччӑна чирлӗ ҫын вырӑнне хучӗ пулмалла:

—Мӗн канӑҫ памасть?—терӗ, салтӑнма хушрӗ.

Чӑнах та, сӑн-пичӗпе Коля халь пӗрре те чирлӗ ҫынран уйрӑлса тӑмарӗ. Каҫхине ҫӗрӗпех ҫывӑрман пирки унӑн куҫӗсем шыҫса тулнӑ, пит ҫӑмартисем путса кӗрсе, чӗрепе аптранӑ ҫыннӑнни евӗр, шуралнӑ.

—Эпӗ сывах-ха,—пӑлханнӑ сасӑпа пуҫларӗ Коля.—Сирӗн патӑрта пӗр эрне каялла Степанова Анна Егоровна выртнӑ. Халӗ вӑл Шупашкарта. Калӑр-ха, тархасшӑн, чӗрӗлес шанӑҫ пур-и унӑн?

Геннадий Петрович йывӑр шухӑшлӑн сӗтел хушшинчен тухрӗ, каччӑ тӗлӗнче чарӑнчӗ, Коля ҫине куҫӗсемпе сӑнавлӑн пӑхрӗ, унтан ларма вырӑн кӑтартса, хӑй те ӑна хирӗҫ вырнаҫрӗ.

—Пӗлетӗн-и, тӑванӑм, медицина науки хальхи вӑхӑтра вӑйлӑ аталаннӑ пулсан та, вӑл та час-часах кашни врач тӑруках пӗлеймен чирсене тупса палӑртать. Анна Егоровнӑна эпӗ вӑл пирӗн патӑрта чиртен сипленнипе ҫеҫ мар, ӗҫре чапа тухнипе, районти чи хастар та тӑрӑшуллӑ ӗҫчен пулнипе чылайранпа пӗлетӗп. Больницӑра вара ӑна пӗрремӗш хут кӑҫал кӑна куртӑм, тем пекех пулӑшма тӑрӑшрӑмӑр, анчах та усси пулмарӗ. Эсӗ унӑн ывӑлӗ пуль-ха?

—Ҫапла,—пуҫӗпе сулчӗ Коля.

—Пӗлместӗп, мӗн пулчӗ манпа? Анна Егоровна ҫине кӑна мар, сана та куҫран пӑхма хӑяймастӑп. Хама пуриншӗн те айӑплӑн туятӑп.

Геннадий Перович ура ҫине тӑчӗ. Аллипе ҫутӑ ҫамкине тытса, пӳлӗм тӑрӑх уткаларӗ. Коля чӗнмесӗр ларчӗ.

—Пӗлетӗн-и, Коля,—каччӑна ятран чӗнсе сӑмахларӗ врач. Унӑн тулли пит ҫӑмартисем темшӗн хӗрелчӗҫ, шӗвӗртерех пысӑк сӑмси халь-халь Кольӑна пач кӗтмен йывӑр сӑмах каласа сӑхассӑнах туйӑнчӗ. Каччӑна ҫак самантра шурӑ ҫиттиллӗ сӗтел те, стена ҫумӗнчи эмелсем тултарса хунӑ шкаф та, больницӑра кӑна тӗл пулакан шӑршӑ та йӑлӑхтарса ҫитерчӗ. Унӑн хӑвӑртрах ура ҫине сиксе тӑрса пӳлӗмрен тухса тарас килчӗ, ҫапах та темле вӑй кунта юлма тытса чарчӗ. Геннадий Петрович  пусӑрӑнарах сасӑпа ӑна тем ӑнлантарма хӑтланчӗ, анчах та Коля унӑн малтанхи сӑмахӗсене илтмерӗ. Вӑл куҫне икӗ аллипе хупласа, юлашки хут вырӑн ҫинче курнӑ амӑшне аса илчӗ.

-...Малтанласа Анна Егоровна вар-хырӑмри язва чирӗпе аптӑрать пуль терӗмӗр, ҫав чиртенех сиплерӗмӗр. Пӗр вӑхӑт вӑл самайланнӑ пекчӗ, анчах та рентген пӑхни тата ытти анализсем туни пӗтӗмпех пирӗн диагноза хирӗҫле кӑтартрӗҫ. Ӗненес килмест, ҫапах районти пур врач та унӑн панкреатит чирӗ аталаннӑ тесе ҫирӗплетрӗҫ.

Вӑл татах та тем каларӗ. Коля текех нимӗн те илтмерӗ, пуҫне икӗ аллипе тытса чӗнмемӗр, шӑппӑн итлесе ларчӗ.

«Панкреатит, панкреатит, мӗнле чир-ши вӑл панкреатит? Чӗрӗлес шанчӑк кӑштах та пулсан пур-ши?»—ҫак шухӑшсем ӑна ҫул тӑршшӗпех канӑҫ памарӗҫ. Килне вӑл йывӑр кӑмӑлпа таврӑнчӗ. Чӗре тем ырӑ марра сиссе туртса ыратрӗ, алурасем темиҫе вагон чул пушатнӑ евӗр, лӑштӑрах кайрӗҫ. Ашшӗ ывӑлӗн кӑмӑлӗ япӑххине тӳрех сисрӗ, ҫавӑнпа та ӑна ыйтусем парса йӑлӑхтармарӗ.

*  *  *  *  *

Хӗвел аниччен чылай малтан Степановсен килне пӑлханнӑ сӑн-питпе алӑка кӗмсӗртеттерсе Саша Кошкин кӗчӗ. Малти пӳлӗмре диван ҫинче тӑсӑлса выртнӑ Кольӑна курсан, Сергей Иванович пуррипе ҫуккине асӑрхамасӑрах ун патне ыткӑнчӗ.

—Хуйхă, Коля, вăран хăвăрттарах,—тĕлĕрсе кайма пуҫланă тусне кăкăрĕнчен тытса силлерĕ вăл.—Вăран тетĕп!

—Мĕн пулнă? Чарăн-ха лăскама,—ҫаплах силлеме чарăнманнине курса, ҫирĕп ярса тытнă тусĕн аллинчен хăтăласшăн пулчĕ каччă.

—Валя, Валя ялтан тухса кайнă!—чĕтренекен сасăпа чутах кăшкăрмарĕ Саша.

—Хăҫан?

—Ĕнер. Хĕрсем ҫиллес, вĕсем те пурте ялтан тухса каясси ҫинчен калаҫаҫҫĕ. Халĕ Вальăн ĕнисене сăвакан та ҫук, паянлăха ушкăнпа сурĕҫ-ха, анчах ку юлашки пултăр, терĕҫ. Мĕн тумаллине те пĕлместĕп.

Коля, ура ҫине сиксе тăнăскер, йывăррăн вырăн ҫине ларчĕ.

—Саша, ку пĕтĕмпех сана пула... Николай Филиппович мĕн тет?

—Чĕнмесĕр ирттерчĕ. Анна Ивановна ҫеҫ пĕтĕм ҫиллине пирĕн ҫине ярать, пуриншĕн те эпир айăплă, тет. Унччен, вĕсем ҫук чух, ялта шăпахчĕ, хĕрĕсем те хăш чухне ассăн сывланипех ирттеретчĕҫ, никам та ялтан тарас пирки калаҫмастчĕ. Акă каччисем таврăнчĕҫ, малтан усси пулать пуль тенĕччĕ. Вĕсем пур, пулăшма мар, хĕр пуҫĕсене ҫавăрма тытăнчĕҫ. Чăх витине тилĕ ернĕ пек, пăтратаҫҫĕ, паян — пĕри, ыран тепри тарĕ, тет, чарса та ĕлкĕреймĕн.

—Ну, кăна вăл вĕриленнĕрен ҫеҫ калать-ха. Эпир, тен, хĕрсен куҫĕсене уҫрăмăр. Халиччен нимĕнпе интересленменскерсене, юрату телейĕпе ҫĕнĕрен ҫуратрăмăр. Саша, Вальăна шыраса тупса яла илсе килмелле.

—Хам та ҫапла шутлатăп. Анчах та ăҫтан-ха ăна тупăн? Шупашкар ял мар-ҫке.

—Паллах, килне ҫыру ҫырмасăр тăмĕ, тупатпăр. Ун вырăнне ĕне сума кама сĕнмелле-ши?

Вĕсем шухăша путрĕҫ. Кольăн пит ҫăмартисем хĕрелсе кайрĕҫ. Вăл сассине хăпартса тусĕ ҫине кăштах кӳренсе пăхрĕ

—Виҫĕмкун каҫ эсĕ унпа йĕркеллех калаҫнă пулсан халь ҫакăнта пуҫа ҫĕмĕрсе лармастăмăрччĕ. Тупăннă Дон-Жуан! Паянхи куна ҫитсе те хĕрсене хăвăн туйăмусем пирки ретлĕн ăнлантарма пĕлместĕн. Ну, кама сĕнес тетĕн Валя вырăнне?

—Коля, эпĕ айăплă, анчах та санăн мĕншĕн хĕрӳленмелле-ха? Ҫакна ниепле те ăнланаймастăп.

—Хӗрӳленме ҫеҫ мар, тӗреклӗ хул-ҫурӑму ҫине пӑхмасӑрах питӳнтен ҫупмалла, сансӑрах кунта пуҫ ҫурӑлса тухассӑн туйӑнать.

—Енчен те ҫакӑн пекех вӗриленетӗн пулсан, эпӗ каятӑп,—терӗ те тусӗ алӑк еннелле утрӗ.

—Саша, тӑхта-ха,—чарчӗ ӑна Сергей Иванович, вӗсен калаҫӑвне итлесе, пӗтӗмпех курса тӑнӑскер.—Ывӑлӑм, ытла та вӗри-ҫке эсӗ, яланах ҫапла-и?

Коля чӗнмерӗ. Вӑл диван ҫинчен тӑрса магнитофонне ячӗ, анчах та янӑракан юрӑ унӑн кӑмӑлне тивӗҫтермерӗ, музыка инструменчӗсен кӗрлевӗ чунра татах та йывӑр туйӑмсем ҫеҫ ҫуратрӗҫ.

—Каҫар,—Саша патне пычӗ вӑл.—Мӗн пирки вӗриленме пуҫланине хам та пӗлместӗп. Инкек ҫине синкек пулчӗ-и, е атте каланӑ йывӑрлӑхсем умма туха пуҫларӗҫ-ши? Шупашкарта анне йывӑр чирлесе выртать, кунта акӑ тепӗр «савӑнӑҫ». Эпӗ пур, урама тухса хама хам лӑплатас, хуйха манас теттӗм. Халь мӗнле питпе курӑнӑпӑр ӗнтӗ ял-йыш, колхоз пуҫлӑхӗсемпе райкомрисен умне? Вӗсем комсомолецсем ҫӗнӗ вӑйпа ӗҫе пуҫӑнасса шанчӗҫ-ҫке-ха. Эпир вара ҫамрӑксене хуларан яла туртас вырӑнне яшсемпе хӗрсене кунтан тарма пулӑшатпӑр.

—Акӑ мӗн, Коля. Манӑн Валя вырӑнне вӑхӑтлӑха Сорокина Райӑна сӗнес кӑмӑл пур. Пурпӗрех халь пӑрусем кӗтӗве ҫӳреҫҫӗ. Вӗсене ирпе каҫ ҫеҫ пӑхмалла. Ку ӗҫе пирӗн анне те пуҫӑнма пултарать. Ял ҫинче ку хыпара пурте пӗлмеҫҫӗ, систерер те мар, ытла та аван мар-ҫке-ха ку ҫамрӑксемшӗн.

Коля Саша сӗнӗвӗпе килӗшрӗ, Рая ҫеҫ ан хирӗҫлетӗрччӗ.

—Килӗшетех, хам кӳршӗшӗн шантарма та шикленместӗп. Атя-ха малтан Вальӑсен патне кайса килер. Вӑл пӗр сӑмах каламасӑрах килтен тухса кайман ӗнтӗ.

Валя Малти касра, Пӑла хӗрринчен виҫҫӗмӗш ҫуртра сакӑрвунӑ ҫулхи аслашшӗпе тата асламӑшӗпе пурӑнать. Пӳрчӗ самаях ҫӗнӗ, виҫӗ сӑрлӑ чӳречипе урамалла пӑхса ларать. Крыльцине ӗлӗкхи евӗрлӗ тӗрӗсемпе эрешлесе илемлетнӗ. Ҫурчӗ умӗнче ҫӳллӗ йӑмрасем ӳсеҫҫӗ.

Каччӑсем пынӑ вӑхӑтра карчӑкпа старик хапха умӗнчи сак ҫинче ларатчӗҫ. Мӑнукӗ килтен кайни ватӑ ҫынсен чӗрине вырӑнтан хускатни тӳрех куҫа курӑнать: пӗтӗм савӑнӑҫӗ-йӑпанӑвӗ вӑл ҫумра пулнинче вӗт-ха. Кольӑн Марье аппапа Ванькка тетен шалтан хурлӑхлӑн тухакан сассине илтсен, иккӗшне те, пӗчӗк ачана хӑй ҫумне

чăмăртаса шелленĕ пек, хĕрхенес килчĕ. Кусĕ умне темиçе çул каяллахи Ванькка тете тухрĕ. Ун чухне Коля кĕçĕн классенче вĕренетчĕ, ватă старик вара çуллахи кунсенче ферма патĕнчи лапам вырăнта пахчаçимĕç сыхлатчĕ. Унăн сывлăхĕ чаплах марччĕ, çакна вăл васкамасăр, патакки çине тайăнса утнинченех асăрхама пулатчĕ. Килте ĕçлекен пулманран кашни çулах çапла нушаланма тивнĕ ĕнтĕ. Çамрăксем ăна тарăхтарас тесе, пурпĕрех вăл хуса çитейменнине туйса, кăштах тĕттĕмленсенех хăяр вăрлама чупатчĕç. Кашниййĕшĕ ик-виçĕ хăяртан ытла татман та пулĕ ĕнтĕ, анчах та вĕсем ват çын чĕрине мĕнле ыраттарнине ун чух чухлайман çав.

Ванькка тетепе Марье аппан ача пулман. Ватăлсан хăйсене пăхакан пултăр тесе вĕсем Чĕмпĕрти ача çуртĕнчен ывăл усрава илеççĕ. Коля ăна лайăхах астăвать-ха. Çўллĕ те тĕреклĕскер, пĕр вăхăт хушши вăл колхозра платник пулса ĕçлерĕ. Кайран шкулта вĕренекен икĕ ачине пăрахса, çĕнĕ арăмĕ хыççăн ялтан тухса кайрĕ. Карчăкпа старик паянхи кун та вăл ăçта пурăннине пĕлмеççĕ.

—Çук, пархатарлă ача пулмарĕ,-тетчĕ Марье аппа ун пирки сăмах тапратсан.—Ытларах ачашласа ўстертĕмĕр пулас, ĕçре тар тăкас вырăнне, арăмĕн арки айне кĕрсе ўкрĕ, унăн сăмахĕнчен иртеймерĕ, тăван ачисене пăрахса тухса кайрĕ.

Чăнах та, Алюшăн (Ванькка тетепе Марье аппан усрава илнĕ ывăлĕ) çемье пурнăçĕ пит ăнăçлах пулмарĕ. Малтанхи арăмĕ вилсен, унран икĕ ача — Сашăпа Валя тăлăха юлчĕç. Иккĕшĕ те шкул çулне çитменскерсемччĕ: асли — улттăра, кĕçĕнни, Валя — пиллĕкреччĕ. Кил-çуртра тирпейлекен кирлĕ, ача-пăчана юратакан хĕрарăм пулсан тата та аванрах. Çавна шанса Алюш тепре авланчĕ. Анчах та иккĕмĕш арăмĕ ун пек çын пулмарĕ, ытларах хăйĕншĕн, хăйне кăмăла кайнă пек пурăнма тăрăшрĕ. Енчен те Алюш яваплăха туякан чăн-чăн арçын шутĕнче пулсан, хăйне тăван ывăлĕ вырăнне хурса, тен, ытларах та шеллесе, юратса, инкек-синкекрен, чир-чĕртен сыхласа пăхса ўстернĕ ашшĕпе амăшне тав туса, вĕсен ватлăх кунĕсем канăçлă ирччĕр тесе тăрăшмаллаччĕ. Тав тăвас чух, хăйĕн ывăлĕпе хĕрне те куккук евĕр пăрахса, арăмĕ хыççăн тухса кайрĕ.

Çын çинче этем вилмест, теççĕ. Сашăпа Вальăн, тен, ытти юлташĕсенни пек ачалăхĕ телейлĕ иртмерĕ пулĕ, çапах та вĕсем тĕрĕс-тĕкелех çитĕнчĕç, çын пулма тăрăшрĕç. Саша институтра вĕренет. Валя та кăçал Канашри финанс

техникумӗнче заочно майпа иккӗмӗш курс пӗтерчӗ. Пӗлесчӗ Алюшăн: мӗн тери йывăр карчăкпа старике каллех пулăшакансăр тăрса юлма, тăлăххăн пӳрт умӗнче ларма. Тен, вӗсем телейлӗ те канăçлă ватлăхра çемçе тӗк тӳшек çине выртассишӗн ӗмӗтленнӗ, çав вăхăта кӗтсе илес шутпа, тахçан çич ют ачине хăйсем патне илсе юлашки çăкăр татăкне ăна панă, вăл ӳссе çитсе ырă чӗреллӗ çын пултăр, тăлăх ачасен çуртӗнче хăйне нихăçан та пӗччен ан туйтăр, ашшӗ-амăшӗн ăшшине туйса ӳстӗр тенӗ.

Валя, эсӗ те çакна ăнлансамччӗ: аçуна çеç мар, сана та çавăн пекех юратса ӳстернӗ-çке вӗсем! Нивушлӗ ватăлса, ӗçлейми пулсан çакăн пек тав тумалла-ши ырă кăмăллă çынсене?

—Çук, ывăлăм, Валя пире пăрахмасть, вăл, ӗçе вырнаçăп та, тӳрех сире илме килӗп, терӗ. Пӗрре те çуралса ӳснӗ ялтан каяс килмест те, мӗн тăвăн, вилме тытăнсан шыв паракан та кирлӗ, каймах тивет пулӗ çав,—сăмахланă майăн хуйхине çаплах пусарма тăрăшрӗç карчăкпа старик.

Коля текех вӗсен хурлăхлă сассине итлесе, чăтса лараймарӗ, кăмăлӗ çемçелнине хăй те сисмерӗ, унăн пичӗ тăрăх куççулӗ чупса анчӗ. Вăл ура çине тăчӗ те, вӗсене алă парса, ырă каç сунчӗ.

—Хулана каймастăр, ялтах юлатăр. Валя часах каялла килет,—терӗ вăл, пӗр-икӗ утăм тунă хыççăн, чарăнса тăрса. Унăн сăмахӗсем татăклă пулчӗç.

—Чăнахах-и, ывăлăм?—шурă сухалне каçăртрӗ Ванькка тете.

—Чăнахах. Çак эрнере пулмасан, çитес эрнере килетех. Адресне çеç хăвăртрах пӗлтеринччӗ.

Карчăкпа старик каччăсене тав турӗç. Анчах мӗншӗн: хăйсене шантарнишӗн е пӗрле вăхăт ирттернишӗн? Çакна иккӗшӗ те чухлаймарӗç. Саша хăйне çав тери аван мар туйрӗ. Ват çынсен тунсăхӗшӗн пӗтӗмпех хăйне айăпларӗ, çавăншăнах чӗмсӗрленчӗ, çамрăксем патне шкул пахчине те каймарӗ.

—Çук, халӗ мана унта нимӗн те илӗртмест, хăвăртрах Валя таврăнтăрччӗ,—терӗ вăл пусăрăннă сасăпа.

—Светланăна кампа хăваратăн?—кăштах шахвăртса ыйтрӗ Коля.

—Çӗнӗ Ахпӳртре те каччăсем сахал мар. Çитменнине, пирӗн хушăмăрта туслăх кăна. Пурнăç çине иксӗмӗр те пӗр пек пăхнăран çеç унпа курса калаçма кăмăллă. Чăнах та, малтан эпӗ çакна юрату тесе шутларăм, Светланăпа

курнăçма васкарăм. Сана тĕрĕссине калатăп. Унăн хăйĕн каччи пур. Вăл халлĕхе — студент.

—Куртăн-и, сана пула миçе çын нушаланать? Вĕсен хушшинче çамрăксем çеç мар, ваттисем те пур.

—Пĕлетĕп, тархасласа ыйтатăп: чуна ан ыраттар-ха, ун çинчен текех калаçар мар. Юрататăп эпĕ Вальăна. Вăл халь ман çумра пулсан, çак сăмаха ăна каламасăр чăтаймăттăм.

—Ну, сывă пул, ыранччен!—аллине тăсрĕ Саша.—Эпĕ малалла текех каймастăп, киле çитсе анне çывăрма выртиччен унпа калаçса татăлатăп.

—Чим-ха,—чарчĕ ăна Коля,—аннӳ çамрăк çын мар ĕнтĕ, отпуск вăхăтĕнче канасси те килет пулĕ.

—Канма терĕ, канăçсăрскер вăл пирĕн. Килте ларса наяна каятăп, тет. Хăвăртрах ĕçе тухасшăн. Тен, фермăра ĕçлени уншăн усăллă та пулĕ, каникул вăхăтĕнче ăна Федя шăллăм та пулăшĕ.

—Апла пулсан, калаçса пăх эппин.

Çамрăксен ушкăнĕ юлашки вăхăтра шкул пахчинчи хурăн аллейинче пуçтарăнма пуçларĕ. Анчах та кĕçĕр каç кунта яланхи пекех хаваслăх хуçаланмарĕ. Фермăри тантăшсем, çывăх çынна çухатнă евĕр, ташша та, юрра та хутшăнмарĕç, каччăсенчен уйрăларах ларчĕç, такама чăтăмлăн кĕтрĕç. Маша Сынкова, бухгалтер, вĕсен кăмăлне ăнланчĕ, çавăнпа та питех хистемерĕ, хăй те пуринпе те пĕрле кулянница пытармарĕ.

Секретарь çывхарнине курсан, хĕрсем сак çинчен сиксе тăрса, ăна çавăрса илчĕç, Валя Малинова пĕр хыпарсăр ялтан тухса кайни çинчен пĕлтерме васкарĕç.

—Мĕнле пĕр хыпарсăр? Ăçта?—ним пĕлмен пек пулчĕ Коля.

—Ăçтине пĕлместпĕр, çапах та ĕнисене пăрахсах хулана тарнă,—ушкăнрисем илтесрен шикленсе шăппăн пăшăлтатрĕ Нина.

—Пулма пултараймасть,—çавăн пекех тĕлĕнсе сăмах хушрĕ Коля.—Эпĕ ăна ĕнер çеç Шупашкарта куртăм-çке-ха. Пĕр-ик эрнелĕхе пиччĕшĕ патне хăнана килтĕм, терĕ. Сире те хăйĕнпе тĕл пулнине каласа пама ыйтрĕ. Тархасшăн, ырă мар ан шутлаччăр, эпĕ часах яла пыратăп, тет. Пиччĕшĕпе темĕн пулнă пулас. Никама та пĕлтермесĕрех тухса килме тиврĕ, тет. Ĕнисемшĕн Валя çав тери хытă кулянать. Кам сăвĕ-ши, ют алла лексен пĕтĕмпех пăсăлаççĕ ĕнтĕ, ун чух хĕрсем манран иртсе те кайĕç-ха тесе пăшăрханать,—

дояркӑсем ӗненсе, унран куҫ илмесӗр итленине кура, хӑюлланса калама пикенчӗ вӑл.

Ҫав вӑхӑтра хӗрсен ҫеҫ мар, секретарӗн хӑйӗн те ҫак сӑмахсене ӗненес килчӗ. Пуҫра тӗрлӗ шухӑшсем ҫуралчӗҫ. Енчен те ыран Анна Ивановнӑна та ҫавнах каласан? Паллах, суя сӑмахсем ӗнтӗ, анчах та халлӗхе хӗрсен кӑмӑлне ҫӗклес тесен, суеҫтерме те тивӗ. Вӗсен хушшинче ҫирӗпленнӗ туслӑх ҫеҫ ан ҫухалтӑр. Ҫапах та кун пек ӗҫе комсомолецсен хушшинче сӳтсе явмасӑр ирттерме юрамасть.

Секретарь сӑмахне вӗҫлерӗ. Дояркӑсем ҫаплах-ха унран уйрӑлмарӗҫ. Коля Райӑна вӑхӑтлӑха ӗне сума сӗнсен, пӑрусене Саша амӑшӗ пӑхма килӗшнине пӗлтерсен, вӗсем тӑруках кӑмӑлсӑрланчӗҫ.

—Мӗншӗн отпускри ҫынна чӑрмантармалла? Пӗр-ик эрнелӗхе хамӑрах сӑвӑпӑр. Райӑшӑн та, хӑнӑхнӑскере, пӑрусенчен уйрӑласси пӗчӗк ачасене урамра пӑрахса хӑварнӑнах туйӑнӗ,—терӗҫ.

—Хирӗҫлеместӗп. Сире курӑнарах парать ӗнтӗ. Енчен те хӑвӑра шанатӑр пулсан, чӑнах та, Саша амӑшне ку ӗҫе явӑҫтарма кирлӗ те мар.

—Паллах,—пӗр ҫын пек харӑссӑн килӗшрӗҫ вӗсем.

Пӗчӗк ача евӗр хӗпӗртенӗ Коля текех пӗр минут та тытӑнса тӑмарӗ:

—Кӗтӗр, эп часах!—терӗ те Кошкинсен килӗ енне вӗҫтерчӗ.

—Саша! Саша!—кӑшкӑрса чӗнчӗ вӑл хапха тӗлне ҫитсе пыракан тусне.—Кирлӗ мар, хӗрсем хӑйсемех ӗлкӗретпӗр, терӗҫ,—ӑна хӑваласа ҫитсе аллинчен тытрӗ вӑл.—Савӑн, мӗн тӗлӗнсе пӑхса тӑратӑн? Халь тин Валя килессе шансах тӑратӑп, ӑна ҫак хыпара пӗлтересчӗ ҫеҫ.

—Мӗнле хыпара?

—Дояркӑсем унӑн ӗнисене сунине, савниӗ чунтан кӗтнине.

—Эппин, аннене каламасан та юрать.

—Пӗлместӗп, тусӑм. Енчен те аннӳне Вальӑна юратнине систерес тетӗн пулсан, тархасшӑн, хӑвӑн кӑмӑлу. Пӑру пӑхас пирки вара пӗр сӑмах та ан кала.

—Тавтапуҫ, Коля, эсӗ мана йывӑрлӑхран тухма пулӑшрӑн. Валя ку хыпара пӗлсен таврӑнатех. Атя, савӑнар ушкӑнпа!—тусне тытса ыталанӑ хыҫҫӑн, аллинчен пӗчӗк ачана ҫавӑтса чупнӑ евӗр, шкул пахчи еннелле сӗтӗрчӗ вӑл ӑна.

Ушкӑн тӗлне ҫитиччен каччӑсем чарӑнмасӑр чупрӗҫ. Ҫитнӗ-ҫитменех Саша хуткупӑсне ярса илчӗ, сывлӑша ҫӳле

çĕклесе ăна каланă май, çамрăксемпе пĕрле тăпăртатрĕ, унăн, савăнăçне пĕлтерсе, ял-йыш илтмелле кăшкăрас, юрлас килчĕ. Тин çеç, пĕр-пĕринчен вăтаннă евĕр, ютшăнса тăракан ушкăна хаваслăх варкăшса кĕчĕ тейĕн, кашниех мĕнпе те пулин палăрма тăрăшрĕ.

Уйрăлас умĕн çамрăксем Кольăна хупăрласа илчĕç.

—Секретарь, ыран райкомра бюро пулассине манман-и эсĕ? Асту, колхоз ятне ан яр. Пире хуш çеç —эпир кирек мĕнле ĕç сĕнсен те —пурнăçлатпăр. Ушкăнпа тăрăшни пурсăмăра та çав тери кăмăла кайрĕ, пурпĕрех ыттисенчен хыçа тăрса юлмăпăр,—сĕнчĕç ăна каччăсемпе хĕрсем. Вĕсен хушшинче ытларах кăçал шкул пĕтерекенсем пулчĕç.

—Юрĕ, туссем, эсир каланине шута илĕп, анчах та астăвăр, сирĕншĕн манăн кайран хĕрелмелле ан пултăр.

—Хĕрелес пулсан та каллех пурте пĕрле, çапах та пуçа усмăпăр. Катексем йывăрлăхран нихçан та хăраса тăман.

—Эсир каланă пек пултăр, эппин. Ну, ыранччен!

—Ыранччен, секретарь!

Коля Наперсткина Вальăна хулĕнчен тытрĕ. Вăл, тин çеç савăнăçпа çиçекенскер, каллех шухăша путрĕ. «Мĕншĕн-ха унăн кăмăлĕ çанталăк пекех улшăнса тăрать? Нивушлĕ такама кĕтет?—çаплах-ха иккĕленсе шутларĕ каччă.—Апла пулсан мĕншĕн манран пытарать? Е чăннине каласа чĕре суранне ыраттарасран шикленет-ши?» Урăххине савать тенине те ĕненес килмерĕ. Енчен те тепĕр çынна килĕштерет пулсан, вăл Вальăпа курнăçмасăр, унăн çепĕç чĕлхине итлемесĕр малашне мĕнле пурăнасси пирки шутлама та пĕлмерĕ. Тĕрĕссине те пытарма кирлĕ мар ĕнтĕ: ыран мĕн пулма пултарасси, ăнкарса илме май çук уçăмсăрлăх ăна хăратать те. Паян акă пĕр-пĕринпе алăран-алă тытса юнашар утни те каччăна телей кӳрет, савăнăç пиллет. «Урăххи» текен сăмах пирки вара шутлас та килмерĕ, çавăнпа та капланса килнĕ кичем шухăшсенчен хăвăртрах хăтăлма тăрăшрĕ вăл.

—Итле-ха,—терĕ Коля лăпкăн,—енчен те Валя ялтан хулана тарнă пулсан, эсĕ ун хыççăн кайнă пулăттăн-и?

Хĕр каччă çинчен чылайччен куçĕсене илмерĕ:

—Çук. Эсĕ чăн-чăнах интересленетĕн-и е ман çинчен ытларах пĕлес шухăшпа çакна ыйтатăн?

—Ахальтен çеç. Çапах та манăн сан шухăшна пĕлес килет. Нивушлĕ хăвăн ĕçне пăрахса кайнă пулăттăн?

—Кунта «ĕç» тенине çеç мар, тата «килти ачана» текен сăмахсене те хушса хума ан ман,—терĕ Валя ассăн сывласа.

Кăштах чěнмесěр утнă хыççăн,—эпě тахçанах çăмăлттай пулма пăрахнă.

Коля унăн сăмахěсен чăн пěлтерěшне, уйрăмах кайран каланине йăлтах ăнланаймарě, хěр шўтлет пуль тесе савăнса, уççăн кулчě.

Валя чěнмерě, каччăн хитре кулли илěртнěрен çеç яланхилле тутисене туртăнтарчě. Унăн куçěсенче каласа пěтереймен сăмахсем пытарăнса юлчěç. Кольăна чунри туйăмě улталамарě. Вăл çакна кăштах сисрě пулин те, хěр куçěнчи вăрттăнлăха вулама, ăна тарăннăн та тěпчевлěн сăнама хăяймарě, ним пулман пекех хăй кăкăрě çумне чăмăртаса, пикене тутинчен хыттăн чуптурě.

* * * * *

Райкомри бюро ларăвě вăрăма тăсăлмарě, унта икě ыйту çеç пулчě. Пěрремěшě — июнěн 18-мěшěнче ěçпе юрă уявне ирттересси, иккěмěшě — кашни колхозрах пултарулăх коллективě йěркелесси. Ěçпе юрă уявне аса илни бюро членěсен кăмăлне çěклерě. Çěклемесěр, Чăваш тăрăхěнчи чи хаваслă та кěтнě кун-çке-ха вăл. Патăръелсем ăна яланах уйхирте пěр вăхăт хушши ěç вěçленсен — тырă-пулă акса, пахчаçимěç лартсан, июнь варринче ирттереççě. Таврари пур районсенчен пуçтарăнаççě кунта. Хăнана чăвашсем çеç мар, Тутар республикинчен, Чěмпěрпе Чулхула облаçěсенчен те килеççě. Кичем тесе калакан çук. Кашнийě çитес çул татах тěл пулма шантарса патăрьелсемпе ăшшăн уйрăлать. Уява яланах Шăнкăртам вăрманěнчи уçланкăра ирттереççě. Вăл кăçал та çавăнтах пулать.

Район пуçлăхěсем праçник çулран çул интереслěрех те илемлěрех пултăр тесе тăрăшаççě. Комсомол райкомě те çывăрмасть. Уявăн илемне çамрăксем кўреççě-çке-ха. Шăпах çакăн çинчен каларě те ěнтě Чекушкин хăйěн докладěнче. Колхозри комсомолецсен секретарěсем уява ертсе пыраканěсем пуласса кěтрě.

Иккěмěш ыйтупа районти ěç тăвакан культура заведующийě Табакова, тулли пў-силлě те илемлě хěрарăм, тухса калаçрě. Вăл çывăх вăхăт хушшинче ялсенче пултарулăх коллективěсем йěркелеме сěнчě.

—Паянтан,—терĕ вăл,—районта пултарулăх коллективĕсен смотрĕ пуçланать. Çулталăк вĕçĕнче хăш колхоз мала тухнине пĕлтерĕпĕр. Çĕнтерӳçĕ Шупашкарти республика смотрне кайма тивĕçлĕ пулĕ.

Бюро хăй ĕçне çакăнпа вĕçлерĕ. Çапах та пухăннисем тӳрех саланма шутламарĕç, секретарьсем пĕр-пĕрне хăйсем туса ирттернĕ ĕçсемпе паллаштарчĕç. Коля чĕнмерĕ, тантăшĕсем çине ăмсанса пăхрĕ. Ăмсанмасăр, вĕсен пурте йĕркеллĕ. Крепков ячĕпе хисепленекен колхозри пек, çамрăксем хулана тармаççĕ, тракторсемпе плугсем те тутăхса лармаççĕ. Тен, унти халăх ытларах вĕреннĕ? Вĕсене нимĕнле романтика та, пысăк стройка та илĕртмест, уй-хир ĕçĕ пуринчен хакли шутланать. Ял çамрăкĕсем çакăнпа мухтанаççĕ, савăнаççĕ. Кольăн кӳршĕсене хуса çитес тесен чылай вăхăт хушши тар тăкма тивет.

—Степанов,—татрĕ ун шухăше Чекушкин,—эсĕ мĕншĕн чĕнмесĕрех ларатăн е хăвăн ĕçне пытарас тетĕн-и? Тусусене епле воскресник ирттернине каласа пар-ха, çакна пĕлни вĕсемшĕн те усăллă пулĕ.

—Чăнах та, Степанов, каласа кăтарт-ха,—кăсăкланчĕç ыттисем те.

Коля йĕри-тавра пăхса илчĕ. Халлĕхе вăл чылайăшне палламасть. «Воскресник, теççĕ. Пĕлесчĕ вĕсен çамрăксем мĕнле ялтан тарнине!—шухăшларĕ вăл хăйĕн ăшĕнче. Çав вăхăтрах унăн умне хĕвеллĕ воскресник кунĕ тухрĕ. Унта юрланă Валя Малиновăн шăпчăк пек сасси аса килчĕ.— Ăçта-ши халь вăл? Кунта акă воскресник çинчен ыйтаççĕ. Мухтанма халь иртерех-ха секретарĕн. Кирлĕ мар, çакăн пек шăтарасла ан пăхăр, пĕччен хăварăр мана»,—хыттăн пурте илтмелле пĕлтерес шухăш та çуралчĕ пĕр вăхăтра. Анчах та кун пек каласан ăна никам та ăнланаймĕ. Ним чĕнме аптранăран Кольăн пичĕ хĕрелсе кайрĕ, темиçе теçетке сăнакан куçсене чăтайманран, вăл пӳлĕмре текех пĕр минут та ларма пултараймарĕ, коридора тухрĕ.

—Мĕн пулчĕ? Çавăн пекех вăтанчăк-ши ку каччă,— тĕлĕнчĕç пӳлĕмре юлнисем.—Епле ял çамрăкĕсемпе ĕçлĕ-ши вăл, енчен те пиртен те именет пулсан?

Райком секретарĕ темĕн ырă марра сисрĕ, вырăнтан çĕкленсе Коля хыççăн тухрĕ.

—Çук, каччи пит именчĕклĕ пулакан марччĕ-ха, паян сывах мар пулас,—лăплатрĕ вăл бюро членĕсене.

Коля вестибюльти диван çинче, чавси çине таянса, шухăша кайса ларатчĕ. Вăл пӳлĕмрен мĕншĕн тухнине те

малтанах хӑй те ӑнланаймарӗ, шухӑшӗсем ҫаплах-ха Валя пирки пулчӗҫ, ҫак хыпар бюро членӗсен хӑлхине кӗриччен, ӑна хӑвӑртрах колхоза илсе килесчӗ. Шӑп та лӑп ҫак самантра пырса ларчӗ те Чекушкин ун ҫумне. Каччӑпа тӳрех сӑмах хускатма васкамарӗ, унӑн шухӑш-кӑмӑлне пӗлес, сӑн-питне астуса юлас тенӗн, хӑйӗн ҫивӗч те витӗр куракан куҫӗсемпе Кольӑна сӑнарӗ. Пӗрремӗш хут ӑна вӑл автобус ҫинче курнӑччӗ, ун хыҫҫӑн — хӑйӗн кабинетӗнче, унтан — комсомолецсен пухӑвӗнче. Малтанхи тӗлпулусенчех каччӑ секретаре хӑйӗн ҫивӗчлӗхӗпе, куҫа-куҫӑн тӑрса тӗрӗслӗхшӗн тавлашма пултарнишӗн кӑмӑла кайнӑччӗ. Шӑпах Крепков ячӗпе хисепленекен колхоза ҫакӑн пек ертӳҫӗ кирлӗччӗ те ӗнтӗ. Ҫынна пӗрре куҫран пӑхса пӗлме пултараканскер, нивушлӗ хальхинче йӑнӑшрӗ? Тӗлӗнтермеллипех тӗлӗнтерчӗ ӑна паян Коля: ытла та вӑтанчӑк, хӑйӗн ӗҫне пытарса тӑракан чӗмсӗр каччӑ евӗр туйӑнчӗ.

—Степанов!—Коля аллинчен тытрӗ Чекушкин.—Атя, ман пӳлӗме, унта пире никам та чӑрмантармӗ, санӑн темле инкек пулас,—каччӑна тӳррӗн куҫӗнчен пӑхса каларӗ вӑл.

—Александр Сергеевич, каҫарӑр, залран тухса кайса эпӗ тӗрӗс мар турӑм, пӗлместӗп, чунра темшӗн йывӑр.

Райком секретарӗ мӗн пулса иртнине пӗтӗмпех итлессе шанса Коля ура ҫине тӑчӗ те, унтан:

—Пӳлӗмре темле тӗксӗм, пӑчӑ, атьӑр урама йывӑҫсен хушшине тухса ларар,—терӗ

Чекушкин килӗшрӗ. Вӗсем ача сачӗпе райком ҫурчӗ хушшинчи йывӑҫ аллейинчи сак ҫине вырнаҫса ларчӗҫ.

—Ну, мӗншӗн-ха никампа пӗр сӑмах чӗнмесӗр, хӑвӑн малтанхи ҫитӗнӗвӳ пирки пухӑннӑ юлташусене каласа памасӑрах, пӗчӗк ача пек, вӑтанса тухса тартӑн? Пӗлетӗн-и, мӗн шутларӗҫ вӗсем? Хӑюсӑр, ял ҫамрӑкӗсемпе ӗҫлеме пултарайман каччӑ, терӗҫ. Ҫапла, ан тӗлӗн, уҫҫӑнах каларӗҫ. Пирӗн секретарьсем хӑйсен шухӑшне пытарма юратмаҫҫӗ. Кирлӗ пулсан хӑвна та куҫран калӗҫ.

—Александр Сергеевич, йӑнӑш тунине туятӑп. Тен, чӑнах та, эпӗ хамӑн вӗрилӗхпе вӗсен умӗнче айван ача пек хӑтлантӑм. Анчах та ӑнланӑр-ха, мӗнле питпе воскресник ҫинчен мухтанса каласа парӑп, енчен те ҫамрӑксем ун хыҫҫӑнах ялтан тараҫҫӗ пулсан! Чӑнлӑха пытарни пулать вӗт ку.

—Чим-ха, татах вӗриленетӗн, ан васка-ха. Кам ялтан тарать? Нимӗн те ӑнланаймастӑп,—каччӑна лӑплатса, йӗркипе калама ыйтрӗ секретарь.

—Акă икĕ кун каялла çеç пĕр доярка, Валя Малинова килĕнчен тухса кайнă.

—Коля, пăтраштармастăн-и эсĕ? Валя районта чи малта пыракан дояркăсенчен пĕри-çке! Вăл çапла хăтланнине пĕрре те ĕненес килмест. Эпир ăна шанса Мускавра ирттерекен ял хуçалăх ĕçченĕсен слетне яма кандидата та тăратнăччĕ.

Каччă, секретарь малалла ыйтасса кĕтмесĕрех, хĕр мĕншĕн ялтан тухса кайни çинчен калама пикенчĕ. Александр Сергеевич шухăша путса итлерĕ.

—Н-да...Тус-хĕрĕсем мĕн калаççĕ?—ыйтрĕ вăл каччă хăй сăмахне вĕçлесен.

—Халлĕхе вĕсем сăлтавне тĕплĕн пĕлмеççĕ. Шупашкара пиччĕшĕ патне кайнă тесе кăштах суйма лекрĕ. Ыттисем те ялтан тухса тарассипе хăратаççĕ.

—Санăн ĕçӳсем пит чаплах мар иккен. Çапах та пӳлĕмрех чăтса лармаллаччĕ, юлташусем саланнă хыççăн пирĕн иксĕмĕрĕн çак лару-тăрăва сӳтсе явма пулатчĕ. Халь акă мĕн тейĕн бюро членĕсене?

—Вĕсене хамăрăн калаçу пирки каласа пама кирлĕ мар. Валя каялла яла таврăнатех, эпĕ шансах тăратăп. Маншăн пур савăнăç та вара çакă пулĕччĕ. Малашне хам вăтанчăк маррине кăтартăп-ха, ĕçе тин çеç пуçăннă.

Чекушкин юлашки сăмахсене илтмерĕ те тейĕн. Малинова Валя районти чи ăста юрăçă, ĕçре малта пыраканскер виçĕмкун ялтан тухса кайнă тени ăна тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ, кулянтарчĕ, шухăша ячĕ.

—Акă мĕн, Коля, ку пирĕншĕн пуриншĕн те урок пултăр. Ун пек япалана пытарма юрамасть. Валя таврăнсанах колхозра комсомолецсен пухăвне пуçтарăпăр, пурте пĕлччĕр. Паллах, тус-хĕрĕсене улталани те, ман шутпа, тĕрĕс мар. Пирĕн çамрăксене хăйсен ĕçне хисеплеме вĕрентмелле. Енчен те ăна чунтан юратаççĕ пулсан, вĕсене нимĕнле хулари стройкăпа та, романтикăпа та илĕртеймĕн. Ĕç пурне те савăнăç, телей кӳтĕр.

—Александр Сергеевич, Валя хăйне пухура сӳтсе явассине пĕлсен яла таврăнма шикленмĕ-ши?

—Вăл чăнласах хăйĕн ĕçне, ял пурнăçне юратса каялла таврăнас пулсан шикленмĕ. Илĕртме кирлĕ мар. Ун пек çынсем пурпĕрех колхозра нумай тытăнса тăрас çук. Умра татах йывăрлăх сиксе тухсанах, каллех канлĕ пурнăç, çăмăл ĕç шырама пикенеççĕ.

Ку сăмахсем каччăн шухăшне çирĕплетрĕç. Ĕнер хĕрсене суйнишĕн вăл Чекушкин умĕнче аванмарланчĕ. Эппин, чăн сăмаха Коля ялти комсомолецсене те пĕлтерĕ. Пăшатана михĕре чылай вăхăт хушши пытарса тăраймăн çав. Хĕрсемпе тĕл пулсанах, пĕтĕмпех ним суймасăр каласа парĕ. Çак шухăшсемпе каччă Александр Сергеевичпа алă тытса уйрăлнă хыççăн малтан тăван ялне, унтан, килне кĕмесĕрех, ферма еннелле утрĕ.

* * * * *

Валя Наперсткина Кольăпа уйрăлнă хыççăн чылай вăхăт хушши ыйăх çĕтнипе аптраса выртрĕ. Темиçе хутчен те тăрса чаршав хыçĕнче лăпкăн çывăракан ывăлĕн тӳшекне, утиялне тӳрлетрĕ. Кашнинчех шурă çемçе çӳçлĕ, хăй сăнлăрах пулнă пепкене чылайччен тинкерчĕ. Амăшĕн ăна хăйĕн çумне тытса юратас, ачашлас килчĕ, анчах та ывăлне вăратасран шикленни çакна тума тытса чарчĕ. Вăл каллех хăйĕн вырăнĕ çине кайса выртрĕ. Валя умне темиçе сехет каялла çеç тĕл пулнă каччă сăнĕ тухрĕ, лешĕ уйрăлас умĕн хăй хĕр тесе шутлакан çынна ăшшăн ыталаса тутинчен чуптурĕ. Валя пĕр хушă çут тĕнче çинчен те манчĕ темелле. Каччăн кĕлеткинчен ырри урăх нимĕн те çук тейĕн, пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе парăнма хатĕр пулчĕ вăл ăна çак самантра. Коля хăйне кăмăлланине сисрĕ, паян çеç мар, малтанах туйнăччĕ-ха. Ахальтен мар Пăлара пĕрле шыва кĕнĕ чух, ун çинчен куç илмесĕр сăнарĕ, аллисемпе хăюсăррăн çӳçĕнчен, питĕнчен сĕртĕнчĕ, кăмăлласа пăхрĕ. Вальăн хăйĕн чĕринче темĕнле ăнланмалла мар çĕнĕ туйăмсем çуралчĕç, анчах та çĕнĕ юрату пулчĕ тенине ĕненес килмерĕ. Коля чăннине, унăн ывăлĕ пуррине пĕлсенех, юрату туйăмĕсем пĕлĕтлĕ çанталăкри хĕвел çути пекех тĕксĕмленсе сӳнĕç. Хăвăртрах пĕлтересчĕ çеç, унсăрăн ытла та шала кĕрсе кайĕ, анчах та мĕнле сăмах каласа, тĕрĕслĕхе уçса памалла-ха? Йывăр, тем пекех йывăр уйрăлма. Нивушлĕ унăн вунтăхăр çулхи çамрăк чĕришĕн юрату тени текех пулмасть?

Паян акă хăйĕн ача пурри çинчен каланăпа пĕрехчĕ ĕнтĕ. Каччă унăн чун тĕпĕнчен тухнă сăмахĕсене ăнланмарĕ, шӳт вырăнне йышăнчĕ, куçĕсене кăштах чеерех хĕссе савăнăçлăн кулчĕ. Валя текех нимĕн те калама пултараймарĕ, вăл

чуптунипе ачашланчӗ çеç. Анчах та хӗрарӑмӑн хальхи ачашлӑхӗ каччӑ чӗришӗн кайран, кӑвар пек, вӗри хӗлхем пулмӗ-ши? Мӗнле йывӑр пулсан та, шалти туйӑмсем çивӗчленсе кайиччен каламаллах, ырана хӑвармасӑр, пӗр-пӗринпе тӗл пулсанах.

Çак ӗмӗтсемпе Валя çывӑрас тесе куçне хупрӗ, анчах та ку та пулӑшмарӗ, ыйӑх килмерӗ. Капланнӑ шухӑшсем, кӗрхи пӗлӗтсем пек, темиçе çул каялла пулса иртнӗ самантсене кино курнӑ чухнехи евӗр тӗрлӗ тӗслӗ сӑрӑсемпе çутатса, ума яр уççӑн кӑларчӗç. Çав ӳкерчӗксем черетленсе пынӑ май хутран-ситрен чӗрене хӗстерсе ыраттарчӗç те.

Ун чухне вӑл тӑххӑрмӗш класс пӗтернӗччӗ, çуллахи каникулсем тин çеç пуçланнӑччӗ. Çавӑнпа та ашшӗ-амӑшӗсем хӗрачасене каçсерен урама тухма чармастчӗç. Халь тин вӗсене хирӗçлеме те аван мар ӗнтӗ, вунултӑ çултан иртнӗ, эппин, хӗр шутне кӗнӗ тесен те йӑнӑшах пулмасть.

Каçӗ ырӑччӗ. Тӳперен тулли, çутӑ уйӑх пӑхрӗ, кӑнтӑр енчен пӳрт умӗнчи йӑмра çулçисене каластарса, ӑшӑ çил вӗрчӗ. Анчах та Вальӑна вӑл темшӗн илӗртмерӗ, унӑн чунӗнче ӑнланмалла мар кичемлӗх хуçаланчӗ, халь-халь тулса килекен кӑкӑрне такам уçса кӗрессӗнех туйӑнчӗ. Часах çамрӑк хӗрӗн пурӑнӑçӗ улшӑнассине хӑй те сисмерӗ. Шӑпах çав вӑхӑтра тӗл пулчӗç те ӗнтӗ вӗсем пӗр урамра пурӑнакан, нумаях пулмасть çартан таврӑннӑ Падисов Володьӑпа. Вӑл çав тери хаваслӑччӗ, çӗкленӳллӗ кӑмӑлӗ кирек кама та хӑйӗн çине пӑхтарма пултаратчӗ. Хура та кӑтра çӳçлӗ, сарлака шӑм-шаклӑ, илӗртекен сӑн-питлӗ кӑшт лутрарах каччӑ çине хӗр сӑнаса пӑхмасӑр чӑтаймарӗ. Унӑн лӑпкӑ сасси Вальӑн чӗринче хальччен сисмен тӑванлӑх туйӑмӗ вӑратрӗ, кӑмӑла çӗклерӗ, сисмесӗрех хӑй енне çавӑрса илсе, пӗрле савӑнма, кулма хистерӗ. Володя та çакна тӳрех асӑрхаса хӗр çумне пырса ларчӗ. Кайран, çамрӑксем саланма пуçласан, аллинчен тытса, хапха умне çитиччен ӑсатма пычӗ.

Ун чухне Валя пирвайхи хут юрату хӗлхемне туйрӗ, çав хӗлхем кунран кун вӑй илсе, амаланса пычӗ.

Володя ялта нумай пурӑнмарӗ, тепӗр уйӑхранах Çӗнӗ Шупашкарти хими заводне ӗçе кайса кӗчӗ. Çывӑх пулин те, кун сиктерсе тенӗ пекех çыру çырса тӑчӗ, час-часах яла килетчӗ, унӑн кашни çырӑвне, тӗлпулӑвне Валя пӑлханса кӗтетчӗ. Пӗр-пӗринпе курнӑçнӑ самантсем хӗре телей кӳчӗç, çавӑнпа та унӑн хӑвӑртрах шкула пӗтерсе Шупашкара каяс килетчӗ. Володя ӑна хулана пырсанах ӗçе вырнаçтарма шантаратчӗ.

Акă кĕтнĕ кун та çитрĕ. Валя хулана каяссине пĕлсенех ашшĕпе амăшĕ хирĕçлерĕç, анчах та хĕрĕ вĕсен сăмахне итлемерĕ.

—Фермăра е уй-хирте чакаланассишĕн вунă класс пĕтермен-ха эпĕ,—терĕ.

Володя ăна çĕр пĕрремĕш номерлĕ строительство управленине вырнаçма пулăшрĕ. Кунта çамрăксем нумайччĕ. Вĕсем химкомбинатпа Шупашкар хушшинчи чугун çул çинче ĕçлерĕç. Паллах, хăвăн пек пĕр çулхи тантăшсем хушшинче пулма, Паникасси ялĕнчи общежитинче пĕрле пурăнма интереслĕччĕ. Кичемленсе ларма, чăн та, вăхăчĕ те çукчĕ. Каçсерен Валя Володьăпа тĕл пулчĕ. Канмалли кунсенче вĕсем пĕрле кинона, театрсене çӳрерĕç, хăйсене хăйсем чи телейлĕ çын вырăнĕнче туйрĕç.

Пĕррехинче Володя пĕрлешес пирки калаçрĕ, анчах та Валя тăруках татса каламарĕ, уншăн арăм тенĕ сăмаха илтме çав тери кулăшла пек туйăнчĕ.

—Çамрăк вĕт-ха, малтан вĕренме кĕрсе специальность илесчĕ. Пĕр-пĕрне юрататпăр пулсан, темиçе çул кĕтесси те, инçе çула пĕрле утса тухасси те йывăр мар,—терĕ.

Декабристсемпе паллă революционерсен арăмĕсене, вĕсен пурнăçне аса илчĕ, анчах та ку танлаштару Володьăна килĕшмерĕ пулас, çавăнпа та вăл калаçăва урăх енне пăрса ячĕ.

Çав каçа Володя çĕрĕпех Вальăпа ирттерчĕ. Пĕр пӳлĕмре пурăнакансем шăматкун килĕсене кайнăран вĕсене чăрмантаракан никам та пулмарĕ. Иккĕшĕ пĕрле ĕмĕтленчĕç, савăнчĕç. Шăпах çак каç туйрĕ те ĕнтĕ каччă хĕр ăна чунтан юратнине, уншăн тем тем тума та хатĕр пулнине. Вăл уншăн савăнчĕ, хĕр ытамне лексе, ӳсĕрĕлнĕ çын пек, мĕн тунине те пĕлеймерĕ.

—Кирлĕ мар,—шăппăн пăшăлтатрĕ Валя ăна кăкăрĕнчен тĕртсе, анчах та Володя ăна илтмерĕ те тейĕн, кăштах чĕтрекен тутисемпе унăн çара ӳтне çине-çине чуптурĕ, ачашларĕ.

Валя пирвайхи хут арçын вăйне туйрĕ. Володьăн вара чун-чĕринче чăн-чăн юрату çуралман, унăн пуçĕнче хĕр чысне таптас, варалас шухăш çеç пулнă. Хăйĕн выльăхла ĕçне пурнăçланă хыççăн вăл Валя куçне курăнасран шикленсе, чылай вăхăт хушши пăрăнса çӳрерĕ, часах вĕсен ача пулассине пĕлсен, тĕлĕннĕ пек кăтартса, пĕр шутламасăрах больницăна кайма сĕнчĕ. Лешĕ вăл хушнă пек тумарĕ, ял-йышран, ашшĕ-амăшĕнчен вăтаннине пăхмасăрах

яла таврӑнчӗ. Ҫук, Володьӑна пӗрре те кӳренмерӗ, халӗ те час-часах ӑна ырӑпа аса илчӗ, уншӑн вӑл пӗрремӗш юрату пулчӗ.

Тахҫанах ҫуралнӑ ырӑ туйӑмсене аса илсе йӑпаннӑ май, Валя хӑй мӗнле ҫывӑрса кайнине те сисмерӗ.

Чылай ҫӳле хӑпарма ӗлкӗрнӗ ирхи хӗвел, пит-куҫӗнчен хыпалама тытӑнсан вӑл ыйхӑран вӑранчӗ. Кольӑпа курнӑҫас шухӑшпа васкаса ферма еннелле утрӗ. Анчах та шутланӑ пек пулса тухмарӗ, каччӑ, юриех тенӗ пек, паян кая юлса килчӗ. Вӗсем тулти ӗҫсене вӗҫлесе, общежитине тирпей кӳме тытӑннӑччӗ ӗнтӗ. Ҫав вӑхӑтра, Коля кӗнине курсан, дояркăсем ӑна тӑруках тытса чарчӗҫ:

—Ҫук, ҫук, сана кӗртместпӗр,—терӗҫ шӳтлесе.—Малтан пирӗн валли витресемпе шыв тултарса йӑтса кил, ун хыҫҫӑн кӑмӑлна курса, малалла мӗн тумаллине пӑхӑпӑр.

—Енчен те сирӗнпе килӗшмесен?

—О-о, ун чухне эсӗ нумай ҫухататӑн. Ҫакна асра тыт: ялти чи хитре те ӗҫчен хӗрсем — фермӑра!—уҫҫӑн кулчӗ Федорова Нина. Унӑн икӗ пит ҫӑмарти ҫинче те путӑксем палӑрчӗҫ, ҫавракa пичӗ ҫуталса татах та илемлӗрех курӑнчӗ.

Каччӑна асӑрхасанах, Вальӑн ҫан-ҫурӑмӗ темле пӗҫерсе, тарласа кайрӗ. Унӑн та витре илсе Кольӑпа пӗрле утас, ҫӗрӗпех канӑҫ паман шухӑшне хӑвӑртрах ӑна каласа парас килчӗ, анчах та ҫапла тума хӑяймарӗ. Хӑмла ҫырли тӗсӗ ҫапнӑ питне пӳлӗмрисем асӑрхасран шикленсе, аллисемпе хупласа, чӗнмесӗр тӑчӗ. Каччӑ ун ҫине вӑрттӑн пӑхрӗ, хулӑм мар тутисем темшӗн хӑй патне чӗнсе, ӑшшӑн кулчӗҫ, хӗсӗннӗ куҫӗсем, часах килетӗп, тенӗ евӗр, хӑвӑрттӑн ҫиҫсе илсе, ӑна ура тупанӗнчен пуҫласа пуҫ тӳпине ҫитиччен сӑнарӗҫ. Валя ҫакна пӗтӗмпех сисрӗ, ку пушшех чӗрине ыраттарчӗ пулин те — унра темле ырӑ шанӑҫ ҫуратрӗ. Чӗлхине такам тӑлласа хунӑн, тутине те шӑнтса лартнӑн, вӑл пӗр сӑмах та калаймарӗ.

Каччӑ шӳтле-шӳтле пушӑ витресем илсе урама тухрӗ. Валя вӑл хӗр-тусӗсемпе мӗн калаҫнине илтмерӗ. Акӑ Коля, паҫӑрхи пекех, ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа пӳлӗме кӗчӗ, витрисене урай варрине лартнӑ-лартманах, Нинӑна вӑйлӑ аллисемпе йӑтса илсе пӗр вырӑнта ҫаврӑнчӗ, ун хыҫҫӑн Валя патне пычӗ, ӑна та пилӗкӗнчен тытса сывлӑша ҫӗклерӗ.

—Ну, мӗн калӑр, халь тин хӑваласан та кунтан тухмастӑп,—хыттӑн янӑранӑн туйӑнчӗҫ унӑн сӑмахӗсем.

Хӗр вӑраннӑ пек пулчӗ:

—Ӳкеретӗн, Коля,—сисмесӗрех пӑшӑлтатрӗҫ тутисем.

—Нимех те мар, ҫӳле мар вӗт, пурпӗрех аяла,—татах та тӑрӑшарах ҫӗклемеваскарӗ каччӑ.

Ҫамрӑксене пӗр вӑхӑт хушши ӗҫлеме чӑрмантарнӑ хыҫҫӑн, вӑл чӳрече умӗнчи сӗтел хушшине вырнаҫса ларчӗ. Хӗрсем стенасемпе койка ҫинчи тусана сӑтӑрчӗҫ, шкафри кӗнекесемпе тетрадьсене майлаштарчӗҫ, урайне ҫурӗҫ, юлашки кунсенче пуҫтараннӑ хаҫат-журналсене ҫӗлерӗҫ. Коля вӗсем тӑрӑшнине асӑрхамарӗ те тейӗн. Малинова Валя выртса тӑнӑ, халӗ тирпейлесе пуҫтарнӑ вырӑна курсанах унӑн хаваслӑхӗ ҫухалчӗ. Темиҫе сехет каялла каланӑ Александр Сергеевич сӑмахӗсем аса килчӗҫ: «Ку пирӗншӗн урок пултӑр, ун пек япалана пытарма юрамасть». «Пытарма юрамасть»,—шухӑшларӗ каччӑ. Анчах та вӑл ӗнер ҫеҫ вӗт-ха вӗсене Валя пиччӗш патне кайнӑ тесе ӗнентерчӗ. Паян акӑ хӗрсен чунне ыраттарма тивет. Ҫав сӑмахсене мӗнле каламалла-ха унӑн? Мӗн шутлӗҫ хӗрсем? Паллах, ултавҫӑ, тейӗҫ. Суеҫтернине йышӑнма пулӗ-ха, темех мар, енчен те вӗсем ушкӑнпа ферма ӗҫне пӑрахса хулана кайма шухӑш тытсан? Ун чух мӗнлерех сӑмахлӑн, секретарь юлташ? Хӗрсене темле илӗртсен те тытса чараймӑн, тен, вӗсен те хула пурнӑҫӗпе пурӑнса курас ӗмӗт пур".

—Коля, мӗн шухӑша кайрӑн, пирӗнпе пӗрле пурӑнма куҫас теместӗн-и?—сӗтеле урайваррине шутарса, чӳречене ҫуса тасатнӑ май пӗр кулмасӑр ыйтрӗ Сорокина Рая.

—Савӑнсах килӗшнӗ пулӑттӑм. Пӳлӗмӗ, казарма евӗрлех, пысӑк, йыш сахал: тӑватӑ дояркӑпа пӑру пӑхакан ҫеҫ пурӑнатӑр.

Каччӑна сӑмах вӗҫлеме памарӗҫ, паҫӑртанпах чӗнмесӗр ӗҫлекен Самойлова Галя ӑна пӳлсех:

—Ҫитменнине пурте хӑрахскерсем. Ҫапла каласшӑнччӗ-и эсӗ?

—Ҫук, кичем пуль сире, тесшӗнччӗ. Стенасем те ҫап-ҫара. Кунта ҫамрӑк хӗрсем пурӑнаҫҫӗ тенине ӗненме йывӑр. Хирӗҫли пӳлӗмре ҫемьеллӗ хӗрарӑмсем пулсан та, унта чӗрӗ чечексем те, тӗрӗсем те, рамкӑллӑ ӳкерчӗксем те пур.

—Кӑна тӗрӗсех калатӑн вара, анчах та кам панӑ пуль тетӗн вӗсене, эпир пулмасӑр? Ялан пӗр чечексемпе ӳкерчӗксем йӑлӑхтараҫҫӗ, ҫавӑнпа ылмаштарма шутларӑмӑр,—кӗленчене хыттӑн пусса сӑтӑрнӑран хӑйне евӗр кӗвӗ кӑларса ӗҫлерӗ Рая.

Валя Кольӑна курнӑранпа ҫаплах лӑпланаймарӗ-ха, вӑрттӑн пулин те, куҫӗсемпе каччӑна тӗсерӗ, хӑй мӗн ӗҫленине те манчӗ тейӗн, «Коммунизм ялавӗ» хаҫата йӗппе

витёрме тытăннă чух ăна сисмесёрех урайне ўкерчĕ, вара пушшех те çухалса кайрĕ. Юрать-ха, кашниййĕ хăйĕн ĕçне тăвать Çавăнпа та вăл аптăраса ўкнине никам та асăрхамарĕ. Çакă пĕр хушă Вальăна лăплатрĕ, анчах та вăл каччăна сăнама пăрахмарĕ. Темшĕн Коля паян яланхи пекех хаваслă мар, унăн тăрăхларах пичĕ тĕксĕм те кичеммĕн курăнчĕ, сылтăмалла ярса хыçалалла туранă çўçĕ илемлĕ те сарлака куç харшисене хупласа куçĕ çине аннине те туймарĕ, сылтăм урине сулахаййи çине хăпартса хунăскер, чавси çине таянса, шухăша кайса ларчĕ вăл.

—Коля,—каччă райкомра бюро ларăвĕнче пулнине аса илсе ун кичемлĕхне сирме шутларĕ Валя,—эсĕ темшĕн чĕнмесĕр ларатăн? Хăвăн каламалли темĕн чухлех пулĕ-ха, куçран пăхсах сисетĕп, çапах та сăмах пуçарма васкамастăн.

—Чăнах та, секретарь, эпĕ мансах кайнă, эсĕ райцентрта пулнă вĕт-ха паян,—калаçăва хутшăнчĕ Нина.

—Çапла, пулнă. Пĕлетĕр-и унта мĕн каларĕç?—чеен куçне хĕсрĕ каччă, çапах та хăйĕн ыйтăвĕ çине хуравлама васкамарĕ, хĕрсем каласса кĕтрĕ.

—Патшалăха сĕт, аш-какай нумайтарах памалла, тĕрлĕ ăмăртусем йĕркелемелле. Мĕн калама пултарччăр ĕнтĕ унта хальхи вăхăтра,—кăштах кичемленнĕ пек пулчĕ тулли пў-силлĕ Рая.

—Вăт шăпах йăнăшатăр, ун пирки сăмах пулмарĕ. Мĕн пустуй калаçмалли, капла та паллă, патшалăха мĕн чухлĕ ытларах сĕт, аш-какай сутатпăр, çавăн чухлĕ пуянрах пурăнатпăр. Райкомра ялти çамрăксен пурнăçне лайăхлатасси, июнĕн вунсаккăрмĕшĕнче районта ĕçпе юрă уявне ирттересси пирки сăмах пулчĕ.

Хĕрсем ку хыпара илтсен тўрех ĕçлеме чарăнчĕç, каччă шўтлемест-ши тесе, ун çине тăруках тĕрлĕ енчен тăвата мăшăр куç тĕпчевлĕн, сăнаса пăхрĕ.

—Коля, чăнласах калатăн-и? — ун патнелле çывхарса ыйтрĕ Валя.

—Коля!—тăруках ĕç çинчен манса ун еннелле ыткăнчĕç хĕрсем.—Пĕлместпĕр, мĕнпе тав тумалла сана? Кил-ха, пĕреххут питўнтен те пулсан чуптăвам,—пуринчен те ытларах савăнчĕ Нина. Каччă хирĕç каласса кĕтмесĕрех, вăл чĕрне вĕççĕн çĕкленсе, вĕри ачаш тутисемпе Кольăн питне сĕртĕнчĕ.

Хĕрсем хăйсене кун пек тыткалани каччăшăн малтанласа аван мар пек пулчĕ, анчах та ку нумая пымарĕ, вăтану

туйӑмӗ часах ҫухалчӗ, сисмесӗрех питне хӗрсен еннелле пӑрчӗ,—ҫыртса ан илӗр,—терӗ.

Ҫӗнӗ хыпаршӑн тем пекех хӗпӗртенӗ дояркӑсем лара-тӑра та пӗлмерӗҫ.

—Савӑнма савӑнатӑр-ха та, анчах пӗлетӗр-и: кашни колхозӑнах уявра икӗ номертан кая мар юрӑ-ташӑ кӑтартмалла.

—Тупнӑ пӑшӑрханмалли. Кунта ял артисчӗсем пуҫтарӑннӑ вӗт, купӑс калакан ҫеҫ пултӑр, халь тесен халь хатӗр эпир,—урай варрине ярӑнса тухса ташлама пуҫларӗҫ вӗсем. Коля вӗсем ҫине пӑхса лӑпкӑн ҫеҫ кулчӗ.

«Эппин, пурте йӗркеллех, кун пек ҫамрӑксемпе нихҫан та намӑса юлмӑн,—шутларӗ вӑл. Куҫӗсем каллех Вальӑн пушанса юлнӑ вырӑнне сӑнарӗҫ, пит ҫинчи кулӑ ҫийӗнчех ҫухалчӗ, шухӑшсем ун ҫине куҫрӗҫ.—Ӑҫта, мӗн шутлать-ши вӑл ҫак минутра?»

Хӗрсем ташшине вӗҫлесе каччӑ умне пычӗҫ, пӗр-пӗрне шӳтлӗ сӑмахсемпе йӗплерӗҫ, анчах та Коля вӗсене асӑрхаманнине курсан, тӑруках шӑпланчӗҫ, вӑл мӗншӗн пӑшӑрханнине тӳрех ӑнланса илчӗҫ.

—Мӗн кулянмалли, часах акӑ килӗ, яланлӑхах пирӗнтен уйрӑлман вӗт,—урай мунчалине алла илсе каллех ӗҫе пикенчӗ Галя.

«Килӗ, анчах хӑҫан?—хӑй тӗллӗн шутларӗ Коля.—Эппин, ӗнер эпӗ каланине йӑлтах ӗнентӗр. Эпӗ сире улталарӑм-ҫке, пиччӗш патне мар, яланлӑхах тухса кайнӑ вӑл ялтан»,—пурте илтмелле хӑй ҫине хӑй ҫиленсе кӑшкӑрас килчӗ унӑн ҫак самантра, ҫапах та хӗрсене палӑртмарӗ, ассӑн сывласа:

—Пӗлместӗп, яланлӑхах-ши е вӑхӑтлӑха ҫеҫ,—терӗ.

—Мӗнле пӗлместӗн пулать, ӗнер эсӗ таврӑнать терӗн-ҫке, Шупашкарта унпа курса калаҫрӑм тесе пире ӗнентертӗн.

Кольӑшӑн ку сӑмахсем питӗнчен ҫупнӑ евӗрлех туйӑнчӗҫ, шӑпах ҫаксене кӗтнӗччӗ пулин те, вутран хӑранӑ пек, шикленнӗччӗ. Акӑ вӑхӑт ҫитрӗ, вӗсем ҫиҫӗм ҫиҫнӗ хыҫҫӑн, аслати сасси евӗр, ҫине-ҫине темиҫе хутчен те хӑлхара кӗрлерӗҫ.

—Ҫук, хӗрсем, ӗнер эпӗ сире лӑплатас тесе ҫеҫ каларӑм. Валя яланлӑхах ялтан кайнӑ,—сассине пусарса хурлӑхлӑн пӗлтерчӗ вӑл.

Унӑн куҫӗ умне темиҫе ҫул каяллахи кунсем шуса тухрӗҫ. Вӑл саккӑрмӗш класра вӗренетчӗ, класра чӑваш чӗлхи урокӗ пыратчӗ. Сергей Иванович ывӑлне доска умне чӗнчӗ. Коля, юриех тенӗ пек, пурнӑҫӗнче пӗрремӗш хут шкула вӗренмесӗр

килнĕччĕ. Ашшĕ çакна сисрĕ пулас, тӳрех унран ыйтрĕ. Хĕрлĕ хăмачран та хĕрлĕ сăн-питлĕ Коля парта хушшинчен тухрĕ, хальхи пекех пуçне усса, пусăраннă саспа:

—Пĕлместĕп,-терĕ.

Шăппăн ларакан класра тăруках шăв-шав пуçланчĕ. Вăл урока хатĕрленменни пурне те тĕлĕнтерчĕ, вĕренӳре кая юлса пыракансене вара ку савăнтарчĕ.

Шăп та шай хăйне çавăн чухнехи пек туйрĕ халĕ Коля. «Часах акă хĕрсем те шавлама пикенĕç, тĕлĕнĕç. Валя хыççăн кайма ĕмĕтленекенсем , паянах ĕçе пăрахĕç». Вăл пуçне усса чĕнмесĕр ларчĕ, мĕн пуласса кĕтрĕ. Анчах та кунта, шкулти пек, никам та тĕлĕнмерĕ, хĕрсем ун çывăхне вырнаçса ларчĕç, пĕр вăхăт хушши шăплăх хуçаланчĕ, ку вара секретарьшăн пушшех те чуна ыраттармалла самант пулчĕ.

—Эсĕ пире лăплатас тесе çеç каларăн эппин,—ăна куçĕнчен тӳррĕн пăхрĕ Рая.

—Çапла, анчах та вăл хăйне Саша юратнине пĕлсен, унта пĕр минут та тытăнса тăманнине пĕлетĕп-çке эпĕ.

—Юратман чĕрене ирĕксĕрлеме те, хушма та май çук,—Вальăн каялла таврăнас шанчăкĕ сахаллине сиссе çĕкленчĕ Галя.—Аслашшĕпе асламăшне шалккă. Валя кайнăранпах кашни кун урама тухса лараççĕ те хĕвел анса тĕттĕм пулмасăр та пӳртне кĕмеççĕ, çул çине тинкереççĕ. Пăхса ӳстернĕ мăнукĕсемшĕн чунĕсем ыратаççĕ ĕнтĕ, çавна уççăн калама çеç хăяймаççĕ.

—Галя чĕрене ирĕксĕрлеме пулмасть тесе каланипе килĕшетĕп. Анчах та Саша юратать-çке, вăл ăна халь тесен халь алă çинче йăтса çӳреме хатĕр.

—Ĕненме йывăр. Валя вара чăнласах уншăн çунса çĕрĕ-çĕрĕпе çывăраймастчĕ, тĕлĕкре те ăнах куратăп, тетчĕ. Саша унран кулать кăна.

—Мана ĕненместĕр пулсан Сашăран хăйĕнчен ыйтăр. Вăл та эпĕ каланинех калĕ.

—Çитĕ сире,—чарчĕ Кольăпа Гальăна Нина. -Пĕр-пĕрне юратаççĕ тейĕпĕр,—унтан тăруках каччă енне çаврăнса,—ĕнер эсĕ пире вăхăтра лăплатрăн. Эпир, хĕрсе кайнăскерсем, хамăра хамăр тытса чараймастăмăр. Мĕнпе вĕçленнĕ пулĕччĕ-ши ку? Çапах та фермăран тухса каймастăмăр. Халĕ тĕрĕссине пĕлтĕмĕр, енчен те Валя чăнах та ялтан тухса кайнă пулсан, эпир унăн ĕнисене нумай вăхăт хушши сăваймастпăр вĕт. Эппин, ун вырăнне кама та пулин урăх çынна ĕçе илме тивет.

—Сире йывӑр пулнине чухлатӑп-ха, ҫапах та, тен, пӗр-ик эрне чӑтатӑр? Питӗ ыйтатӑп. Эпӗ шансах тӑратӑп: Валя кӗҫех таврӑнать. Таврӑнатех вӑл колхоза. Кайран вӑл тем пекех ӳкӗнессе те туятӑп.

—Хӗрсем,—чавси ҫине тайӑнса шухӑша путрӗ Валя Наперсткина,—чӑнах та, пирӗн ушкӑна урӑх ҫын килсен, эпир Вальӑна яланлӑхах ҫухататпӑр. Этемӗн пурнӑҫ урапи пӗр йӗрпе чупмасть, час-часах тӗп ҫулран пӑрӑнать, анчах та ҫав пӑрнӑҫ тени те тӗрлӗ енлӗ пулать. Хӑшӗсем пурнӑҫра тарӑн йӗр хӑварса, кашни утӑмрах хӑйсем ҫинчен астутарсах тӑраҫҫӗ. Вӗсен ырӑ ячӗ нихӑҫан та ҫухалмасть. Теприсем, такӑр ҫулран пӑрӑнса, йӑнӑш хыҫҫӑн йӑнӑш тӑваҫҫӗ. Ҫынсен хушшинче ҫавсен сумлӑхӗ пач ҫук тесен те юрать. Малтанласа эпир, ҫамрӑксем, хамӑр аташнине туймастпӑр. Пирӗншӗн суха ани те тикӗс ҫул пекех курӑнать. Вӑй-хал пӗтсе ҫитсен тин, иртнӗ вӑхӑта аса илсе, такӑр ҫул шырама тытӑнатпӑр. Анчах та пӗрре кая юлсан, тепӗр хут тӳрӗ сукмакпа утма питӗ йывӑр. Вальӑн, ман шутпа, пирӗн ҫумрах пулмалла. Ӑна хамӑр ушкӑнран хӑваламалла мар, пурте пӗрле пуҫтарӑнса шыраса тупма тӑрӑшмалла. Мӗн чухлӗ хӑвӑртрах, ҫавӑн чухлӗ ӑна та, пире те лайӑх пулӗ.

Валя хӑй калас тенӗ сӑмахне вӗҫлерӗ пулин те, малтанхи вырӑнтах пӗр хускалмасӑр ларчӗ. Куҫӗсемпе никам ҫине те пӑхмарӗ, тӗлли-паллисӗр таҫта аяккалла сӑнарӗ. Унӑн лӑпкӑ сӑмахӗсем тус-хӗрӗсен, Кольӑн чӗрине хускатрӗҫ, шухӑша ячӗҫ. Ҫамрӑксем уҫӑ алӑкран пӳлӗме Анна Ивановна кӗрсе тӑнине те сисмерӗҫ.

—Эппин, ушкӑнпа шыраса пӑхас тетӗр?—сӗтел ҫывӑхнелле васкамасӑр утнӑ май ыйтрӗ вӑл.

—Ҫапла. Пурпӗрех вӑл ӗнесенчен яланлӑхах уйрӑлас ҫук. Валя таврӑнатех,—ура ҫине тӑчӗҫ хӗрсем.

—Илтрӗм-ха. Мӗншӗн ялтан кайнине те пӗлтӗм, анчах та вӑл кунта малашне ӗҫлесси сиртен ҫеҫ мар, председательпе манран та килет-ҫке. Тен, эпир ӑна ӗнесем шанса памастпӑр? Ҫакӑн ҫинчен шухӑшларӑр-и?—васкаса тӑрӑлтатма тытӑнчӗ вӑл.

—Анна Ивановна, эсир шеллес вырӑнне ахаль те вутпа ҫунакан чӗрене тата тӑвар сапатӑр? Валя районта малта пыракан дояркӑсенчен пӗри-ҫке-ха,—тусне хӑйсенчен ҫухатасран шикленсе йӑлӑнма тытӑнчӗҫ хӗрсем.

—Вӑт шӑпах ҫакна каласшӑн та эпӗ. Тен, вӑл малта пынишӗн мӑнкӑмӑлланса, хӑй хыҫҫӑн чуптарас шутпах ялтан

тухса тарнă, «каччă»—тени вара пустуй сăлтав кăна?—сассине хăпартрĕ ферма заведующийĕ.

Хĕрсем часах куççуль кăларса йăлăнассине туйса калаçăва Коля хутшăнчĕ:

—Çук, Анна Ивановна, Валя ун пек çын мар. Вăл чăнласах та, чăтайманран çеç çапла хăтланнă. Эсир хăвăр та çамрăк пулнă вĕт, юрату тем тума пултарнине те лайăх чухлатăр.

—Çапах та ялтан тарман,—хăйĕн шухăшне улăштарма шутламасăр касса татрĕ вăл.—Ыранах Валя вырăнне урăх çын килет. Ун хыççăн чупса мĕскĕнленер мар-ха.

Хĕрсем нимĕн те калаймарĕç. Вĕсен пичĕсем çинчен, çумăрлă çанталăкра чӳрече тăрăх шыв юхнă евĕр, шăрça пек, шултăра куççуль тумламĕсем юхса анчĕç. Çакна заведующипе комсомол секретарьне кăтартас мар тесе, дояркăсем вырăнĕсем çине ӳксех чĕтренсе йĕме тытăнчĕç. Хĕрсемшĕн çеç мар, Кольăшăн та Анна Ивановна калани ӳте çĕçĕпе чикнĕ пекех туйăнчĕ.

—Пĕлетĕр вĕт-ха, ку Вальăна çеç мар, пурне те кӳрентерни пулать. Апла пулсан мĕншĕн-ха хĕрсене сăлтавсăрах айăплатăр?—заведующине куçран тӳррĕн пăхса ыйтрĕ вăл.

—Коля, эсĕ пирĕн ĕçре пурпĕрех нимĕн те ăнланмастăн. Сан вырăнта пулас пулсассăн, эпĕ чĕнмесĕрех лараттăм.

—Каçарăр та, Анна Ивановна, эпĕ унччентерех сирĕн çинчен урăхларах шутлаттăм. Эсир ырăпа аса килеттĕр. Пĕлместĕп, мĕн калăр кун хыççăн, çапах та хĕрсене шеллемелле. Вĕсем сивĕ сăмах илтме тивĕç мар: хĕвелпе пĕрле тăрса ир-ирех ĕçлеме тытăнаççĕ те мĕн каçчен тăрмашаççĕ.

—Эпĕ пĕлместĕп тетĕн пуль. Мана ун çинчен аса илтерме те, вĕрентме те кирлĕ мар. Хĕрсем халĕ кашнийĕшĕ вунултшар ĕне сăваççĕ. Çавна пула кĕтӳ çур сехете яхăн кая юлса тухать, каçхине те тĕттĕмленичченех юлма тивет. Машина завода вăхăтра çитейменнипе сĕт йӳçĕхсе каять. Камăн айăпĕпе? Хĕрсем вăхăтра суман пирки-и? Çук, вĕсем ĕлкĕреççĕ. Çак пăтăрмахсем пурте Вальăна пула сиксе тухрĕç. Вăл хулара йăпанса çӳренĕ пирки кашнинех тăватшар ĕне ытларах сума тивет. Аллисем мĕнле чăтаççĕ? Çакна вара эпĕ чăнахах та пĕлместĕп иккен, тĕлĕнмелле,—хĕрӳлĕхне пусарса лăплана пуçланă хĕрсем çине ытарлăн пăхрĕ вăл.

Коля хĕрӳленсе кайнине пула васкаса каланă сăмахсемшĕн хăйĕн ăшĕнче ӳкĕнсе те илчĕ. Çавăнпа та Анна Ивановнăран каçару ыйтнă евĕр:

—Кам килĕ вара ыран Валя вырăнне?—тесе ыйтрĕ.

—Колхоз бухгалтерăн арăмĕ Исаева Тамара...

Ку сăмахсене илтсен хĕрсем тăруках пуçĕсене çĕклерĕç:

—Мĕнле Исаева? Вăл çемьеллĕ-çке, çитменнине икĕ ачи те çамрăк, яланлăхах-и?

—Яланлăхах,—çаплах сассине улăштармасăр хушса хучĕ заведующи.

—Тен, тăхтатăр? Халлĕхе хамăр та ĕлкĕретпĕр, енчен те кĕтӳ кая юлса тухать пулсан, иртерех сума тытăнатпăр. Валя килессе чун сисет манăн,—кӳрши хутне кĕме пăхрĕ Галя.

—Пĕчĕк ача мар вĕт эпĕ сирĕнпе шӳтлесе калаçма. Ырантан Валя вырăнне Тамара килет,—каллех арçын пек сассине кăштах хăпартса, татса каларĕ Анна Ивановна.—Сисетĕп-ха: сирĕн хăвăр пек çамрăка илес килет. Тамара та ватах мар-ха, ĕçре кая тăрса юлмĕ.

Паçăртанпа чĕнмесĕр ларакан Рая вырăн çинчен тăрса сĕтел умне пычĕ.

—Анна Ивановна,—терĕ вăл чĕлхе вĕççĕнтереххĕн,—мĕншĕн мана дояркăна куçарасшăн мар эсир? Тамара пăру пăхтăр.

—Рая, лăплан-ха,—ӳкĕте кĕртесшĕн пулчĕ ăна заведующи.—Пăрусем сана пĕчĕк ача хăйĕн амăшне юратнă пекех хăнăхнă ĕнтĕ. Эсĕ пăхма пăрахсан, вĕсем çав тери кулянма пуçлаççĕ. Выльăх ăнланмасть тетĕн пуль, калаçма çеç чĕлхи çук, куçĕсемпе кăна ачашшăн пăхать. Эсĕ хăçан та пулсан асăрханă-и, витере ют çын пуррине туйсанах, вĕсем пĕр çĕре пуçтарăнаççĕ, хăравçăллăн пăхса, хăйсем палламан çын часрах тухса каясса кĕтеççĕ. Рая, ан та ыйт, сана урăх ĕçе куçарма пултараймастăп. Мĕншĕн-ха икĕ çĕрте икĕ çыннăн хăнăхмалла? Пăрусене пăхасси — садикри ачасене ӳстернĕ евĕрлех. Кашнинех, этемĕнни евĕр, хăйне уйрăм кăмăл, уйрăм чĕлхе. Эсĕ вара çав чĕлхене тупнă ĕнтĕ, ăна пăхмасăр вĕреннĕ.

Чылай чĕнмесĕр ларнă хыççăн заведующи ура çине тăчĕ:

—Хĕрсем, сире кӳрентертĕм пулсан, каçарăр. Коля, эсĕ те каçар,—каччă енне çаврăнчĕ вăл.—Тен, Валя, чăнахах та, каялла таврăнас пулсан, кайран куç курĕ. Халлĕхе сире пулăшмалла Тамара ĕçлетĕр. Ну, мĕн пуçăрсене усрăр, килĕрсене кайиччен пӳлĕмĕре тасатса хăварăр. Апат хыççăн наянлăх пусать, теççĕ,—хĕрсене хавхалантарма тăрăшрĕ вăл.

Пӳлӗмрисем ун кӑмӑлне лайӑх ӑнланчӗҫ пулин те, вӗсем ӗҫ патне алӑ тӳрех пымарӗ, хӑйсем хушшинче, такам ют ҫын илтесрен шикленнӗ евӗр, пӑшӑлтатса каласрӗҫ. Коля та чӗнмерӗ. Заведующи тухса кайсанах, Валя хыҫалтан пырса, аллисене ҫемҫен каччӑ хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ, ӑна лӑплатма тӑрӑшрӗ.

Чылайран тин хӗрсем каллех хӑйсен ӗҫне пуҫӑнчӗҫ. Коля килне кайма тӑчӗ, анчах та хӗрсем ӑна часах пурте пӗрле тухатпӑр тесе, тытса чарчӗҫ. Вӑл килӗшсе, каялла ларчӗ, хаҫатсем пӑхкаларӗ. Тепӗр ҫур сехетрен ҫамрӑксем ял еннелле утрӗҫ.

Валя каҫхинеренпех канӑҫ паман шухӑшсене каччӑна тӗл пулсанах каласа пама хатӗрленнӗччӗ. Анчах та вӑхӑт шунӑҫемӗн шурӗ: кун хыҫҫӑн кун иртрӗ, ҫапах та чунне уҫса параймарӗ. Чӗринче ӑшӑ туйӑмсем сарӑлнӑҫемӗн сарӑлса пычӗҫ. Пӗр-пӗринчен уйрӑлма йывӑр икkenне хӗр пӗлсессӗн те, тем пуласса сиссе, сӑмах пуҫарма тӑхтаса тӑчӗ. Мӗн кӗтрӗ-ши вӗсене малашне, ӑна иккӗшӗ те чухлаймарӗҫ.

*     *     *     *     *

Сергей Иванович ывӑлӗ Шупашкара кайса килнӗренпе улшӑннине сисрӗ пулин те, унпа ҫумлӑн ларса калаҫма тӑхтаса тӑчӗ. Тӗрӗссипе каласан, пӗтӗм сӑлтавӗ те пушӑ вӑхӑт тупӑнманнинче кӑна-ха. Ҫапах та ывӑлӗн ӗҫре пурте йӗркеллех мар пулас, ӑна ашшӗ хӑй те курчӗ. Пач кӗтмен ҫӗртен ялтан Малинова Валя тухса кайрӗ, халь акӑ нумаях пулмасть салтакран килнӗ Антонов Леньӑпа Цыпленков Юра Шупашкара кайма ӗмӗтленеҫҫӗ текен хыпар та унӑн хӑлхине кӗчӗ. Паян тата райкомрисем те Кольӑна пуҫӗнчен ачашламан пулмалла, райцентртан вӑл пӑлханнӑ сӑн-питпе таврӑнчӗ. Ӑҫтан-ха тӳрех сӑмах пуҫарса калаҫӑва пуҫлӑн ҫакӑн пек лару-тӑрура? Ҫара кайиччен ывӑлӗпе пӗр чӗлхе тупма ҫӑмӑлтарахчӗ, вӑл ашшӗ-амӑшӗнчен нимӗн те пытармастчӗ. Тен, ун чухне айвантарах пулнӑ, ӗҫре те ҫынсемшӗн явап тытма тӳр килмен, шухӑшӗсем те ҫирӗпленсе ҫитеймен. Халӗ акӑ пӗтӗмпех урӑхла, Сергей Иванович умӗнче ывӑлӗ мар, пӗр сӑнлӑ ют ҫын ларать тейӗн, унпа сӑмахлама та йывӑр. Ҫапах та ашшӗн калаҫу пуҫармах тивет, унсӑрӑн ывӑлӗн ҫулӗ ҫинче чӑрмав хыҫҫӑн

чăрмав сиксе тухĕ. Ваттин — ватă, çамрăккин — çамрăк пулмалла, тенине лайăх ăнланать-ха вăл. Эппин, унăн ывăлне ăшă сăмах каласа лăплантармалла.

Сергей Иванович иртсе кайнă вăхăта лайăх астăвать-ха. Пĕррехинче, Коля пĕчĕккĕ чух, ăшă çумăр хыççăн, вĕсем иккĕшĕ Катекпе Çĕнĕ Ахпӳрт хушшинчи йывăç аллейине кăмпа пуçтарма кайрĕç. Ун чухне ывăлĕ 4-5 çулта пулсан та, ашшĕнчен юлмарĕ. Сергей Ивановичăн ăна пĕрре те йĕпе-сапаллă çанталăкра ывăнтарса çӳретес килмерĕ. Коля тархасланине шута илмерĕ-ха, анчах та арăмĕ сĕннине хирĕçлеймерĕ, вара вĕсем иккĕшĕ çула тухрĕç.

—Асту, кайран ывăнтăм тесе ан кала, унсăрăн нихăçан та кăмпана тек каяймăн,—малтанах асăрхаттарса хучĕ вăл ывăлне.

Çумăрпа çул лачăрккаланса кайнăччĕ, утма çав тери кансĕрччĕ, пылчăк урари атă çумне çыпçăнса тарăхтарсах çитернĕччĕ. Ăна силле-силле малалла талпăннă май, Коля çеç мар, Сергей Иванович хăй те ывăннине туйрĕ, ачи ларса канма сĕнсен хирĕçлеме те хăймĕччĕ, анчах та ывăлĕ ун пирки асăнмарĕ те, шав малалла утрĕ. Арман сăрчĕваррине çитсен, вăл пĕр вăхăт хушши чарăнса, ашшĕ çине пăхрĕ, унăн шухăшне ăнланасса кĕтрĕ.

—Ывăнтăм, тесшĕн ĕнтĕ эсĕ, атя тата тепĕр вăтăр утăм тăвар, вара хамăрăн çитес вырăн çывăхланать.

Вĕсем малалла утрĕç. Коля вăтăр таран шутлама пĕлмен пирки, вуннă таран шутларĕ, унтан чарăнса тăчĕ.

—Нумай та утмарăмăр-çке, çук-çук, тата çирĕм утăм ту.

Коля ашшĕне ĕненмесĕр кусран пăхрĕ пулин те, пур вăй-халне пуçтарса тата çирĕм утăм турĕ.

—Тек пĕр утăм та ярса пусмастăп,—терĕ вăл тăпах чарăнса тăрса.—Саншăн, тен, лачакапа утасси нимĕн те мар, эсĕ пысăк çын, вăйлă. Ӳссе çитсен эпĕ те кун пек сăрт çине çеç мар, пысăк тусен тăррине те хăпарăп-ха, санран та иртсе кайăп.

Сергей Ивановичăн ывăлне шеллес килчĕ. Тăвалла хăпарса çитнĕпе пĕрехчĕ ĕнтĕ, тепĕр вунă утăмран ытла та юлманччĕ, ун хыççăн тăпра хăпартнă çулпа анаталла каймаллаччĕ. Малалла утма темиçе хут çăмăлтарах пулĕ, ывăннине те кĕçех манса кайăн. Мĕн калĕ-ши вăл, енчен те тепĕр вунă утăм каймалла тесе ыйтсан? Чăнах та ывăннă ĕнтĕ, пĕчĕккĕллех ача-пăчана ытлашши нушалантарма юраманнине те пĕлет-ха ашшĕ. Çапах та ывăлне йывăрлăхпа кĕрешме вĕрентес шухăш унăн чунне тăруках хытарчĕ.

Пурнăçра кирек хăçан та çул яланах тăвалла-çке. Ывăнтăм тесе, çул хĕрне нихăçан та лармалла мар, малтан мала талпăнмалла.

—Тăр,—терĕ вăл лăпкăн ывăлне, вăй пама тăрăшса,—тепĕр вунă утăм тусан, çур сехет чухлĕ ларса канăн, халлĕхе атя,—ăна аллинчен тытса малалла талпăнчĕ вăл. Коля унпа тăруках килĕшесшĕн пулмарĕ, çапах та ашшĕ тăснă аллинчен тытрĕ.

—Кун пек утма çăмăлтарах,—терĕ вăл хăй тĕллĕн.

Сăрт тăррине хăпарса çитсен те, ывăлĕ тек ларса канма шутламарĕ. Шăпах арман тĕлĕнче вĕсем каялла çаврăнса пăхрĕç. Кольăшăн ял таçта аялта курăнчĕ пулас, унăн чăнкă сăрт çине пĕр канмасăр хăпарнине ĕненес те килмерĕ. Чунĕ хавасланчĕ, аллипе вăл ял çине тăсса темĕн кăтартрĕ, кулчĕ. Унтан тăруках аллине ашшĕнчен вĕçертсе, ывăннине манса кайса, Çĕнĕ Ахпÿрт еннелле чупрĕ, лачака çине шуса ÿкрĕ, тумтирне вараларĕ, çапах та ашшĕ ăна çакăншăн ятламарĕ. Мĕншĕн тесен йывăрлăха çĕнтернĕ вăхăтра пулчĕ ку. Çакăн пек ырă самантра ятлани вырăнсăр. Ывăлĕ вара ура çине хăйех тăчĕ, унтан каллех, ним пулман пек малалла утрĕ.

Пурнăçра та çавах, ывăнни çинчен шутламасăр, телейшĕн, тÿрĕ, такăр çул тупассишĕн кĕрешмелле. Анчах та мĕншĕн-ха темиçе çул каяллине аса илчĕ ватă учитель? Унăн вĕренекенĕ йывăрлăха курса нăйкăшмасть-çке, хăйне паттăр салтак пек тытса, шăлне çыртсах малалла утать. Ăна чăрмантарни усăсăр, çапах та ашшĕн чĕри ывăлне шеллемесĕр чăтаймарĕ. Тен, темиçе çул каяллахи пек, аллинчен тытмалла, сăмахпа та пулин хавхалантармалла.

Каçхине Коля ĕçрен таврăнса апата ларсан, Сергей Иванович ăна пирвайхи хут курнă пек сăнарĕ: «Хамăн çамрăк чухнехи кĕлеткене аса илтерет. Сăнĕпе те мана хывнă, сăмси çеç амăшĕнни пек»,—шутларĕ вăл ун çинчен куçне илмесĕр. Ывăлĕ ашшĕ çапла пăхнине халиччен асăрхаманччĕ-ха. «Эппин, ĕçри йывăрлăхсем çинчен пĕтĕмпех пĕлет. Ара, илтмесĕр. Ял хушшинче пур хыпар та хăвăрт сарăлать çав, никамран та пытараймăн.—Ашшĕне вăл нимĕн те каламарĕ. Анна Ивановнăпа кăшт урлăрах пулнине те, çав калаçушăн хăй кăштах намăсланнă пирки те шарламарĕ. Çывăх çыннăн сăнĕ-пичĕ кăштах улшăннă пек туйăнчĕ. Вăл ывăлĕ çине ăшшăн та юратса пăхрĕ.—Ăнланать, пĕтĕмпех ăнланать манăн шухăш-кăмăла. Мĕнпе те пулин пулăшасшăн тăрăшать. Кашнинчех вăл çапла: малтан тĕпчевлĕн сăнаса тĕсет, унтан ăшшăн пăхса, канаш парать.

Шкулта вёреннё чухне те, ача урока хатёр мар пулсассăн, пурпёрех ăна çăмăл ыйтусем парса, урокра ответлетттеретчё, нихăçан та «2» паллă лартса кÿрентерместчё. Анчах та халь пачах урăх лару-тăру-çке: чăн-чăн пурнăç ыйтăвёсене татса памалла. Мёнпе пулăшма пултарăн-ши эсё, аттеçём?— вăрттăн ун çине пăхса ассăн сывларё вăл.—Чим-ха, ыран мар тепёр кун çамрăксен пухăвё пулать. Тен, хурапа шурра нумай курнăскер, мён те пулин çёнё шухăш калё?»

Анчах Коля хальхинче йăнăшрё. Сергей Иванович, унăн шухăшне пёлсен, лăпкăн кулчё çеç:

—Ывăлăм, кунта эпё нимёнпе те пулăшаймăп,—терё.— Мансăр пуçне те клубра тухса калаçакансем нумайăн пулёç. Çамрăксене йăлăхтарса çитерицченех сăмах вакламалла мар. Вёсен çёнё шухăш, çёнё ёмёт çуралтăр тесен, калаçу кёске те ёненмелле пултăр. Атя-ха, ывăлăм, пёр-пёринпе чуна уçса калаçар, юлашки вăхăтра эсё темшён пётёмпех улшăнтăн, çиленсе çÿренё пек, манпа та сайра-хутра çеç сăмах хушатăн.

«Эпё пуçласа каласса кётет. Кам та пулсан фермăри калаçу çинчен ăна пёлтернё ёнтё. Анчах та çакна тăван аттерен мёншён пытармалла-ха? Вăл мана ырă сунать, ăс парасшăн. Апла пулсан мён хурчăкаран шикленекен чăх чёппи пек, чётресе ларатăп-ха эпё?—хăйне хăй хавхалантарчё Коля.—Çара кайиччен института конкурспа лекеймесессён, вăл пуçа усма памарё, хавхалантармалли сăмахсем тупма пёлчё».

Чăнах та, ун чух кÿренмелле килсе тухрё: унăн мён пурё те пёр балл çитеймерё, çавна пула документсене каялла илме тиврё. Вăл, чирлё çын евёр, институтран тайкаланса тухрё. Хыçра алăк хыттăн шалтлатрё. Кольăшăн вăл яланлăхах хупăннăн туйăнчё, малашне ăçта каяссине, мён тăвассине те пёлмерё. Шăпах çак самантра ашшё ăна пулăшрё, ăшă сăмахсемпе лăплантарчё те ёнтё, хал пачё...

—Чăнах та, каçар мана, атте. Хама юлашки вăхăтра темшён пёчченнён туятăп, кил-çуртра эсё çук та пек. Чăрмав хыççăн чăрмав сиксе тухать, палăртса хунă ёç пурнăçланмасть, камран пулăшу ыйтмаллине те пёлместёп,—кулленхи хăйён ăнăçсăрлăхё пётёмпех ашшёне пула сиксе тухнă пек, вёриленсе калаçма тытăнчё Коля.— Пёреххут, алла кёреçе илсе хире утăттăм, ун чух чунра çёр хут çăмăлтарах пулёччё. Хăшёсем, секретарён ёçё ансат, çамрăк, вăйпитти каччă вăхăта усăсăр ирттерет, тесе шутлаççё ёнтё.

—Чим-ха, ывăлăм, ан вĕрилен-ха, лăплан. Çапах та кама хунă-ха эсĕ? Пирĕн йăхра сан пек вĕри çын пулман, ним сăлтавсăр тӳрех сассуна хăпартатăн,—тĕлĕнсе ыйтрĕ ашшĕ унран.

Коля аванмарланчĕ.

—Хăвна виçере тытма вĕрен. Санăн çеç ĕçре çитменлĕхсем пур тетĕн-и? Николай Филиппович председателех илер, ăна темиçе хут йывăртарах. Çапах та вăл кирек хăш вăхăтра та çынпа лăпкăн калаçма пĕлет, хăйне сăпайлă тытать, нихăçан та вĕриленсе-хĕрсе каймасть.

Коля хирĕçлемерĕ. Паллах, ашшĕ тĕрĕс калать.

Сергей Иванович ура çине тăчĕ, яланхилле пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ утса çаврăннă хыççăн, шкулти пек, урай варринче чарăнчĕ.

—Эппин, санăн ĕçне пурте пĕр пек хакламаççĕ? Кĕреçепе ĕçлесси халăха ертсе пырассинчен чылай çăмăлрах тетĕн, çакна тĕрĕс каларăн. Анчах та санăн пушă сăмахсен илĕртĕвĕ хыççăн каймалла мар. Пĕлетĕп, пирĕн хушăра хăшĕсем этем ĕçне кăшман, кукуруза çитĕнтернинче кăна кураççĕ. Ку тĕрĕс мар. Вĕсене, çакăн пек ансат шутлакансене, ан итле. Хăвăн ĕçне пур енлĕн виççе, хакласа, пĕлсе йĕркеле. Санăн умăнти чи пысăк тĕллев вăл çамрăксене ытларах та ытларах колхоз уй-хирĕнчи ĕçе явăçтарасси. Кайран халăха канма, хавасланма, вăхăта усăллă ирттерме пулăшасси. Хăвах куратăн: паян пирĕн ялта пур çамрăк та фермăра çеç ĕçлет, техника усăсăр тутăхса ларать, ĕççи пуçлансан ытти колхозсем пулăшасса кĕтетпĕр. Пур-ши республикăра пирĕнни пек юхăнса юлнă тата тепĕр хуçалăх? Мĕн чухлĕ пуянлăха эпир кĕрхи йĕпе-сапара хире хăваратпăр. Çаксем пурте ĕç вăйĕ çитменрен пулаççĕ. Енчен те уй-хире кашни кун ытларах çамрăк тухсан, çав пурлăх пĕтĕмпех колхозпа ĕç çыннисен кĕлечĕсене кĕретчĕ. Санăн тĕллевӳ — колхозри çамрăксене ертсе пырасси, вĕсен пурнăçне лайăхлатасси. Ял пурнăçĕ илемленнĕçемĕн яш-кĕрĕмĕн йышĕ ӳсме пултарĕ. Çак тĕллев эсĕ тăрăшсан çеç пурнăçланать. Хăвах куратăн: яваплăху пысăк. Эппин, ывăлăм, çĕнĕ пурнăçшăн кĕреш. Шкул çамрăкĕсемпе клубра пуçтарăнас пирки эсир тĕрĕс шухăш тытнă. Вĕсем хăвăртрах шăматкун çитессе кĕтеççĕ. Эпĕ унта сăмах каламаннишĕн ан çилен. Шкулта вĕрентсе ăс пани те çителĕклĕ пулĕ тетĕп. Ялан пĕр çынна итлеме кичем. Клубри калаçăва хутшăнмасан та, пыратăпах,—шантарчĕ вăл.

—Аттеҫём,—ура ҫине тӑчӗ Коля,—мӗнле-ха эпӗ ҫумра ҫывӑх тус пулнине туйман. Темиҫе минут каялла ҫеҫ хама телейсӗр ҫын вырӑнне хураттӑм, урамра утнӑ чух пур кӗтесрен те ман ҫине тӗллесе кӑтартнӑн туйӑнатчӗ. Эсӗ хӑвӑн ӑслӑ сӑмахусемпе манӑн чӗрере каллех ҫӗнӗ вӑй, ҫӗнӗ хӑват хушрӑн. Санпа чухне нихӑҫан та текех пӗчченнӗн туяс ҫук,—Коля ашшӗ ҫине савӑнса пӑхрӗ. Анчах та часах шухӑша кайрӗ.—Пӗлетӗн-и, атте? Эпӗ санран нумай пытартӑм. Анне патне епле кайса килнине те тӗплӗн каласа параймарӑм. Уншӑн каҫар.

—Коля, мӗн пулчӗ? Лӑплан-ха,—темӗн ырӑ марра сиссе ывӑлне хулпуҫҫинчен лӑскарӗ Сергей Иванович.—Йӗркипе, хумханмасӑр каласа пар.

—Аннепе эпӗ тӗл пулса калаҫаймарӑм.

—Мӗнле апла?!—ӑна пӳлсе чутах кӑшкӑрса ямарӗ ашшӗ.

—Ун патне кӗртмеҫҫӗ. Маларах ӑна язва чирӗнчен сипленӗ. Диагнозне тӗрӗс палӑртман. Унӑн язва мар иккен, татах та хӑрушрах.

Сергей Иванович ҫывӑхри пукан ҫине тӗшӗрӗлсе анчӗ:

—Ывӑлӑм, ҫакӑн пек япалана пытарса усрама юрать-и вара? Пӗлетӗн вӗт-ха, этем куҫне хупсан, ӑна нихӑҫан та уҫаймӑн. Мӗн чухлӗ калас тенӗ сӑмах чӗрере чул пек ыраттарса юлать,—унӑн сасси вӑйсӑррӑн пусӑрӑнса тухрӗ, сывлӑшӗ пӳлӗнсе ларчӗ пулас.

—Аттеҫём, пӗлетӗп. Ҫапах та сана ку хыпара каласа пӑлхантарас мар терӗм, унсӑр та ҫӗрӗпех ҫывӑраймастӑн. Тӗкӗр ҫине пӑхса ил-ха: куҫусем чирлӗ ҫыннӑнни пек, йӑлтах путсах кӗнӗ. Мӗншӗн пӗрре те хӑвна шеллеместӗн?

—Кирлӗ мар, Коля. Ҫапах та тӗрӗссине каламаллаччӗ. Эпӗ ватӑ салтак, пурне те чӑтса ирттеретӗп.

Калаҫу малалла тӑсӑлмарӗ, кашниййӗ хӑй тӗллӗн шутласа, кун-ҫул кӗнекин страницисене уҫрӗҫ, анчах та вӗсем ашшӗпе ывӑлӗн тӗрлӗрен пулчӗҫ.

Сергей Иванович хӑвӑртрах шкулти экзаменсем вӗҫленесси пирки шухӑшларӗ, ҫав вӑхӑт ҫитсен ялта пӗр кун та тытӑнса тӑмӗччӗ, тӳрех арӑмӗ тухса патне кайнӑ пулӗччӗ.

Коля та ашшӗ умӗнчи хӑйӗн айӑпӗ пирки шухӑшларӗ. Ӑна савӑнтарас тесе унӑн мӗнле те пулин ырӑ ӗҫ тӑвас килчӗ, анчах та нимӗн те шутласа кӑлараймарӗ.

Ҫывӑрма выртсан, ашшӗ ывӑлӗн сӑмахӗсене аса илчӗ: «Ҫӗрӗпех ҫывӑрмастӑн, пӑлхантарас мар терӗм». Чӑнах та, тӗрӗс каларӗ ӗнтӗ, арӑмне больницӑна илсе кайнӑранпа та канлӗх курман, хӑш чухне тӗлӗрсе кайиччен капланнӑ

шухӑшсенчен хӑпас шутпа, пуҫа пӑтраштарас мар тесе кӗнеке вулама та тӑрӑшать, ҫавах усӑсӑр. Паллах, пӑшӑрханнипе ӑна пулӑшас ҫук, анчах та мӗн тӑвӑн-ха, енчен те пур шухӑш та унпа ҫыхӑнса тӗвӗленет пулсан? Халь акӑ каллех арӑмӗ аса килчӗ, каллех ҫывӑрасси пулмасть. Пӳртри шӑплӑх татах та ытларах шутлаттарать пулӗ. Текех ним ҫинчен те шухӑшлас мар тесе, Сергей Иванович «Сокол» радиоприемника алла илсе, Александр Вампиловӑн «Пӗлтӗр ҫулла Чилимскинче» драмине итлерӗ. Шухӑшӗсем хутран-ситрен приемник сассине татса, пӑр айӗнчен тапса тухнӑ шыв пек, каллех Анна Егоровна ҫине кусрӗҫ. Сергей Иванович кашнинчех ӑна пытарма тӑрӑшрӗ, унпа кӗрешрӗ, ир пуласпа тин ыйӑха путрӗ.

Ҫӗр варринче Кольӑн темшӗн пӗр вӑхӑт хушши ыйӑх таталчӗ. Тӗпелте радио итлекен ашшӗ ҫывӑрманнине туйса, унпа сӑмах хушма тӑчӗ, хирӗҫ сасӑ илтӗнмерӗ. Вӑл, хӑраса ӳкнӗскер, вырӑн ҫинчен сиксе тӑрса ҫара уранах ун патне чупса пычӗ, ашшӗ тарӑннӑн сывласа ҫывӑрнине курсан тин лӑпланчӗ. Ҫартан килнӗренпе пӗрремӗш хут ӑна ҫакӑн пек лӑпкӑ ыйхӑра пулнине курчӗ. Ытлашши сас кӑларасран шикленнӗскер, пуҫӗ тӗлӗнчи приемникне илсе сӗтел ҫине лартрӗ.

—Ҫывӑр, лӑпкӑ ыйӑхпа ҫывӑр, канӑҫа пӗлмен ватӑ салтак, манӑн учитель, командир.

* * * * *

Тепӗр кунне Сергей Иванович вырӑн ҫинчен йӑлтах урӑх ҫын пек тӑчӗ. Унӑн куҫӗсем хаваслӑн ҫиҫрӗҫ, вӑл ывӑлне хавхалануллӑ пулма хушрӗ.

—Ну, ывӑлӑм, паян саншӑн яваплӑ кун тесен те юрать. Хатӗрлен, тӑванӑм, ҫамрӑксен чӗрине пырса тивмелли сӑмахсем калама.

Коля унпа килӗшрӗ.

Сергей Иванович кашни минутрах чунӗпе арӑмӗпе юнашар пулчӗ, хӑйӗн хуйхине ҫынна палӑртмарӗ, ним пулман евӗр шӳтлерӗ, кичемлӗх пуссан та, унран хӑпма тӑрӑшрӗ. Кольӑна та ҫавнах вӗрентрӗ.

—Ушкӑнра нихӑҫан та куляннине кӑтартма ан васка. Ҫынсемпе чух шӳтле, кул. Унсӑрӑн эсӗ хӑвӑн кӑмӑлна ҫеҫ

мар, ыттисенне те пăсăн. Ку вара ĕçре чăрмав çеç кӳрет. Пурнăçра çитĕнӳ тăвасси чылай чух этем хăйне мĕнле тытничен нумай килет. Пĕччен чухне хуйхăр,-терĕ.

Ывăлĕ унпа пĕр шухăшлă пулчĕ. Çавăнпа та ял çинче вĕсен хурлăхне, Анна Егоровна Шупашкарта больницăра йывăр выртнине сахал çын пĕлчĕ.

Пуху, тĕрĕссипе ку пуху мар, колхоз пуçлăхĕсемпе çамрăксен тĕлпулăвĕ кăнтăрла хыççăн ял клубĕнче пуçланчĕ. Сергей Иванович саккăрмĕш класс пĕтерекенсемпе килчĕ (вăл çак класа ертсе пыраканĕ), малти рете вырнаçса ларчĕ. Коля ăна тӳрех асăрхарĕ пулин те, ун патне çывхарма хăяймарĕ.

Сцена çинче çиелтен хĕрлĕ бархатпа витнĕ сĕтел хушшине колхоз председателĕпе агроном, парторгпа комсомол секретарĕ ларчĕç. Тĕлпулăва Коля хăй ертсе пычĕ. Вăл чи малтан колхоз председательне сăмах пачĕ.

Ял пуçлăхĕсем паян пурте уяв тумĕпе. Николай Филиппович хура костюмпа шурă нейлон кĕпе тăхăннă, мăйне галстук çыхнă. Çӳçне яланхилле типтерлĕн тураса хыçалалла янă. Вăл васкамасăр çĕкленсе трибуна умне тухрĕ. Залра шăп. Темиçе мăшăр куç кăкăр тулли медальсемпе Мухтав орденĕ çакнă председатель çине пăхрĕ, унăн сăмахĕсене кĕтрĕ.

—Юлташсем!—чĕтренсе тухрĕ унăн малтанхи сăмахĕ.— Халиччен эпĕ нихăçан та, паянхи пек, йышлă çамрăксем умĕнче тухса калаçман. Çавăнпа пăлхансассăн та çак тĕлпулушăн савăнатăп. Эсир мана, ялта чылай вăхăт хушши пурăнса ирттернĕ çынна, иртнĕ кун-çул çинчен каласа пама çăмăл тесе ан шутлăр. Хăшĕсем председательтен пухура отчет туса панă пек калаçнине çеç кĕтеççĕ. Çук, мухтанмасăр калатăп, пĕрре те апла мар. Паянхи тĕлпулăвăн тĕллевĕ — çамрăксене пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме пулăшасси. Кам пĕлет, тен, сирĕн хушăрта пулас паллă писательсемпе геологсем, инженерсемпе врачсем, ученăйсемпе артистсем лараççĕ. Кашни çыннăн хăйĕн таланчĕ пур теççĕ. Çавна пирĕн малтан мала аталантарса пырасчĕ. Тепĕр тесен тырă-пулă пухса илме те хăйне евĕр талант кирлĕ. Сирĕн пурнăçри пуласлăхăр эсир хăвăрăн пĕрремĕш утăма тĕрĕс тунинчен килет. Этем кун-çулĕ çав тери кĕске. Хăш чухне çул юппинче пăтрашăнса кайса, калла таврăнмалли çула тупма йывăррине пĕлетпĕр пулсан та, мĕн чухлĕ хаклă вăхăта сая яратпăр. Часах акă шкулсенче экзаменсем вĕçленĕç. Эсир хăвăра, темиçе кун тăвăр пӳлĕме питĕрсе хăварнă

хыççăн уçă сывлăша тухнă пек, ирĕклĕ туйма пуçлатăр. Сирĕншĕн малтанласа пур çул та такăррăн курăнĕ. Чăнах та, çапла: ăçта каяс тетĕр, çавăнта кайма пултаратăр, анчах та, чăтлăхран ирĕке тухнă кайăк евĕр, ăçта куç курать, унталла анваскăр. Тепĕр хут пуç тавра лайăх шутласа, хăвăрăн пултарулăхăрпа ăсăра тĕплĕн шута илĕр. Кăмăла кайнă специальноçа алла илесси магазина кайса пальто туянасси мар. Тумтире пĕр кун хушшинче улăштарса тата лайăххраххине илме пулать. Профессине ылмаштарас тесен каллех мĕн чухлĕ вăхăт иртет.

Сергей Ивановичшăн Николай Филиппович танлаштарăвĕ çав тери шухăша ямалла пулчĕ. Çук, уншăн çеç мар, акă кашни çамрăках хускалма шикленсе, председательтен куç илмесĕр, унăн кашни сăмахне тăнларĕ. Эппин, вĕсен чĕрине те тиврĕ пулас вăл калани.

—Мана паян сирĕн секретарь колхоз пурнăçĕ, ытларах ял илемĕ çинчен сăмахлама сĕнчĕ. Мĕн калас-ха, енчен те эсир кашниех ялта çуралса ÿснĕ пулсан? Паллах, малтанласа эпир унăн илемне туймастпăр. Пирĕншĕн уй-хиртен тырă-пулă пуçтарса кĕртесси те кулленхи ĕç евĕр çеç курăнать. Эпĕ хам та, сирĕн пек çамрăк чух, тăван тавралăх чуна çывăх пулнине хакламан, вăрçă хирĕнче тин пĕрремĕш хут çакна ăнланса илтĕм. Ман куç умне мăрьесенчен йăсăрланакан тĕттĕмсемлĕ хĕллехи ял ирĕ, ака вăхăтĕнче тÿпере юрлакан тăри юрри, чечеке ларнă сиреньсемпе çĕмĕртсем, сывлăм ÿкнĕ урамсемпе хаваслăхпа тулнă çуллахи ял каçĕсем тухса тăратчĕç. Вара пурнăçăн юлашки кунĕсем çитиччен ялта пурăнса irттерме тупа турăм, уншăн халь те пĕрре те ÿкĕнместĕп. Уй-хирте ĕçлесси пысăк телей, пысăк тивĕç,—сăмахĕ вĕçленнĕ евĕр пĕр вăхăтлăха чарăнса тăчĕ Николай Филиппович, шухăша путрĕ.—Эпĕ ял илемне сăнласа парса çамрăксене илĕртесшĕн мар. Сирĕн халь хăвăра пÿрнĕ шăпа пирки шухăшламалли вăхăт. Мĕн пĕчĕкрен ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕре те татасшăн мар эпĕ. Çапах та ман шутпа, эсир колхозра юлсан, кашниййĕ çĕршыва ытларах усă кÿнĕ пулăттăр, кайран ÿкĕнмелле пулмĕччĕ.

Николай Филиппович трибуна патĕнчен уйрăлса хăйĕн вырăнне кайса ларчĕ. Унăн сăмахĕсем кĕске те витĕмлĕ пулчĕç, çамрăксене хумхантарчĕç.

Коля ура çине тăчĕ, шăплăха пăсма, шухăша путнă çамрăксене чăрмантарма шикленнĕ евĕр, малтан чĕнмесĕр тăчĕ, унтан агронома сăмах пачĕ.

Анатолий Владимирович Колпаков уй-хир ӗҫӗпе, ял хуҫалӑхӗнче кирлӗ пулма пултаракан специальноҫсем пирки каларӗ, ҫамрӑксене пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тухма ҫӑмӑлтарах пултӑр, терӗ.

Георгий Михайлович парторг вара пӗччен мар, пӗтӗм залпа калаҫрӗ, ыйтусем пачӗ, хӑш-пӗрисем ҫине хӑех хуравларӗ.

—Эпӗ хамӑн пурнӑҫа тӳрех ялпа ҫыхӑнтарман,—пуҫларӗ вӑл.—Шкул пӗтерсен, малтанхи икӗ ҫулне шкулта ӗҫлесе ирттертӗм, анчах та чунра темӗн ҫитмен пекчӗ, хулара пурӑнакансене ӑмсанаттӑм. Атте-анне ирӗк парсанах ялтан кайӑттӑм, теттӗм. Авланса ҫемьеллӗ пултӑм. Шӑпах вӑл вӑхӑтра Ҫӗнӗ Шупашкар («Спутник» тетчӗҫ ӑна малтан) хули ҫинчен калаҫа пуҫларӗҫ, пур хаҫатра та хими центрӗ Чӑваш ҫӗршывне куҫасси пирки ҫыратчӗҫ. Арӑмпа иксӗмӗр те комсомол путевкипе романтика шыраса ялтан тухса кайрӑмӑр. Текех нихӑҫан та таврӑнас ҫук пекчӗ, икӗ пӳлӗмлӗ хваттер илсе хулара пурӑнма пуҫларӑмӑр. Пурте ҫителӗклӗ темелле, ял илемӗ ҫеҫ ҫитеймест, кунран кун ытларах та ытларах чун тӑван тавралӑха туртӑнчӗ, ҫывӑхра пулсан та, атте-аннепе курнӑҫсан, кашнинчех куҫҫулӗ тухатчӗ. Ҫук, чӑтса пурӑнаймарӑмӑр, малтанласа кивӗ ҫурт туянтӑмӑр, унтан яла таврӑнтӑмӑр. Арӑм сысна фермине ӗҫе кӗчӗ, мана уй-хир бригадине ертсе пыма хушрӗҫ. Кил-ҫуртра кичем пулсан та, уя тухсан чун уҫӑлатчӗ, хама чи телейлӗ ҫын вырӑнне хураттӑм, пиҫсе ҫитнӗ тырӑ-пулӑ шӑршиллӗ, уҫӑ, ытармалла мар сывлӑшпа кӑкӑр тулли сывласа, кӑмӑла ирӗке ярса юрлас килетчӗ. Ман шухӑша пӗлнӗ пек, пуҫ тӑрринчи тӑри пӗрре аялалла, тепре ҫӳлелле хӑпаратчӗ. Мӗн вӑтанатӑн, юрла тесе ҫуначӗпе пӑлтӑртаттаратчӗ. Чӑтса тӑраймастӑм, сасӑпах кӑмӑла кайнӑ кӗвӗсем шӑрантараттӑм. Уй-хирте таҫта ҫитиех илтӗнетчӗ пуль, ӗҫлекенсем пӗр вӑхӑт хушши чарӑнса, тавралӑха сӑнатчӗҫ, унтан ҫийӗнчех темиҫе тӗрлӗ сасӑ хутшӑнатчӗ. Ҫывӑхри тырӑ ҫапса килекен уй карапӗн двигателӗ юрра хуплама пӑхатчӗ, анчах та кӑлӑхах. Комбайнер савӑнӑҫлӑн, аллипе юнаса, ушкӑнран малалла иртетчӗ, ун пек чух, юрӑ хӳтлӗхрен тухнӑ пек, татах та хӑватлӑрах янӑратчӗ.

Колхозрах партине кӗтӗм, ял-йыш умӗнче яваплӑх ӳсрӗ. Кайран пуҫлӑхсем мана Шупашкарти парти шкулне вӗренме ячӗҫ. Эпӗ хирӗҫлемерӗм, килӗшрӗм. Мӗншӗн тесен, шанатӑп, ялтан текех ниҫта та каяс ҫук. Маншӑн тырӑ-пулӑ ӳстересси—пысӑк телей,—терӗ.

Унтан вăл хăйĕн калаçăвне урăхларах йĕркелерĕ, трибуна умĕнчен каймарĕ-ха. Залра ларакан çамрăксене тĕрлĕрен ыйтусем пама пуçларĕ, сăнĕ-пичĕ, уяври пек, савăнăçпа çиçрĕ.

—Калăр-ха, туссем, кам сиртен хăйĕн пуласлăхне тĕплĕн татса панă?

Хурав паракан пулмарĕ, парторг шўтлет терĕç пуль, анчах та Георгий Михайлович çак ыйтăвах тепре пачĕ.

—Чĕнместĕр, эппин, сиртен никам та татăклăн хăй шухăшне татса парайман.

—Мĕншĕн, акă эпĕ мĕн пĕчĕкрен инженер-строитель пуласшăн,—ура çине çĕкленмесĕрех пурте илтмелле каларĕ Галя Никифорова шăллĕ.

Ушкăнра ларакансенчен хăйсем кам пулассине пĕлекенсен шучĕ 10-15 çынран та иртмерĕ. Тен, хăшĕсем вăтанчĕç, çамрăк çын ĕмĕтленмесĕр пурăннине пуçлăхсен ĕненес килмерĕ, анчах та вăл хăшĕсен паян кун та пăтрашуллă иккен.

Георгий Михайлович йĕри-тавра сăнаса çаврăнчĕ:

—Акă мĕн, туссем, манăн хамăр колхозра çамрăксен ушкăнне йĕркелес килет. Кăçал эпир тракторист-комбайнер пулма ĕмĕтленекен яшсемпе хĕрсен кăмăлне те тивĕçтерĕпĕр. Çавăнпа та халех заявлени çырма пултаратăр. Малашне çак çамрăксем колхоз чысне çўле çĕклессишĕн кĕрешекенсем пулĕç те ĕнтĕ. Çĕрĕ пирĕн аван. Ĕçлекенсен шучĕ хушăнсах тăрсан, колхоз ячĕ районта çеç мар, республикăра та кĕрлĕ.

Парторг татах та калаçрĕ. Ун сăмахĕсене итленĕ май, Сергей Иванович шухăша путрĕ. Ку пуçарăва вăл ырларĕ. Çамрăксем килĕшчĕр çеç, часах пирĕн колхоз кўршĕсенчен пулăшу ыйтма пăрахĕ, хăех уй-хирти тыр-пула пуçтарса кĕртме пуçлĕ, кĕркунне сухаламасăр пĕр лаптăк çĕр те хăвармĕ. Ватă учителĕн çак кунсем часах çитессе шанас килчĕ.

Тĕлпулу кĕçех вĕçленчĕ, хăшĕсем коридора тухрĕç, теприсем сцена çине хăпарчĕç. Сергей Иванович вырăнтан тапранмарĕ. Çамрăксем ывăлĕ çывăхĕнче кĕпĕрленсе пухăннине те, ăна тĕрлĕ енчен ыйтусем панине те курчĕ. Кольăн хăш-пĕр сăмахĕсене те илтрĕ:

—Туссем, ыранах правленине пырăр, пĕтĕмпех калаçса татăлăпăр, пĕр-пĕрне кăмăла кайнă специальность та тупма пулăшăпăр, пуриншĕн те вăл усăллă пулĕ.

Анчах лешсем лăпланмарĕç, татах та кăсăкланчĕç. Вĕсем çине пăхса ларнă чух Сергей Ивановичăн кăмăлĕ çĕкленчĕ, савăнчĕ, мĕншĕнне хăй те пĕлеймерĕ.

Тепĕр пилĕк минутран лăпланнă хыççăн çынсем «Русское поле» ятлă кино курчĕç.

Клубри тĕлпулу хыççăн Кольăн ĕçĕ палăрмаллах хутшăнчĕ. Ял çамрăкĕсем ун пÿлĕмне тăтăшах канашлама çÿрерĕç, хăйсен шухăш-кăмăлне, ăçта вĕренме каяссине пĕлтерчĕç. Тĕрĕссипе, экзаменсене шкул ачисем çеç мар, секретарь та хатĕрленчĕ, документсене Шупашкарти ял-хуçалăх институтне ярса пачĕ. Пушă вăхăтра вăл хăйĕн патне çÿрекен çамрăксем пекех, тригонометри уравненийĕсемпе физика задачисене шутларĕ, вырăс классикĕсен произведенийĕсене тепĕр хут аса илчĕ Анчах та юлашки эрнере кĕнекесем алла сайра-хутра çеç леккелерĕç, вăхăт çитмерĕ. Тепĕр икĕ кунтан районта —ĕçпе юрă уявĕ. Унта катексем каях юлмĕç-ха, куншăн пăшăрханма кирлĕ мар.

Кошкин Саша урама сайра-хутра темиçе минутлăха кăна тухкаларĕ, пушă вăхăтне тренировкăсенче ирттерчĕ, кĕрешме тухасшăн, уяври приз —çамрăк така пурпĕрех пирĕн пулать, тет. Коля хăй те бокс енĕпе ăмăртăва хутшăнасшăн-ха: вăл — çав енĕпе пĕрремĕш разряд нормине тултарнă спортсмен. Совет çарĕнче чухне салтаксем хушшинчи кĕрешÿре яланах мала тухатчĕ. Енчен те спорт енĕпе ăнăçлăх кăтартсан, малашне ял çамрăкĕсене татах та интереслентерме май килĕччĕ, тĕрлĕ секцисем уçса, час-часах ăмăртусем ирттерме пулĕччĕ.

Паян ирхине ирех Коля фермăна кайрĕ, унта ушкăнпа çĕнĕ хаçатсене пăхса тухрĕç, çĕршыври лару-тăрупа паллашрĕç, анчах та Валя вырăнне Исаев Иван Макарович арăмĕ ĕçлеме пуçланăранпа хĕрсем ютшăннăн, калас тенĕ сăмаха такамран пытарнăн туйăнчĕç. Каччă çакна сисрĕ пулин те палăртмарĕ, хăйне хăй йăпатса: «Часах пĕр-пĕрне хăнăхса çитĕç, ун чух пурте ĕлĕкхи евĕр пулĕ-ха»,—тесе шутларĕ.

Тĕрĕссипе каласан, кунта унччenхи пек савăнăç мар, пач урăхла, ăнланмалла мар кичемлĕх хуçаланчĕ. Коля та общежитине пырсан хăйне хăнари пек сăпайлă тыткаларĕ. Тем пекех хĕрсемпе шÿтлес кăмăлĕ пулсан та, Тамара умĕнче темшĕн именчĕ. Каçсерен вара Вальăна ăсатма çÿрерĕ, анчах та кашнинчех лешĕ тантăш-тусĕшĕн Малинова

Вальăшăн тунсăхланине туйрĕ, темшĕн унăн иккĕшне те шеллес килчĕ.

Хирти ĕçсем пĕтнĕпе пĕрехчĕ ĕнтĕ. Экзаменсене хутшăнман, тăххăрмĕш класра вĕренекенсем ĕççи пуçланиччен хĕрсех йĕтем тасатрĕç. Ирсерен лашисене урапасем кӳлсе, тăвалла хăпарчĕç. Кăнтăрлахи апата вара çул çинчи тусана çĕклесе ăмăртмалла чуптарса анчĕç, правлени умне çитеспе тин, колхоз пуçлăхĕсенчен шикленсе, лашисене лăпкăн уттарчĕç. Чӳрече умĕнчен иртсенех, тилхеписене каллех сулласа, урописем силленнĕ май, чĕтренсе тухакан сассисене хăпартрĕç. Николай Филиппович ача-пăчасен шухăлăхне ăнланчĕ, пӳрнипе юнаса, лăпкă çӳреме хушрĕ. Лешсем малтанласа ун сăмахне пăхăнчĕç, анчах кăшт аяккарах кайсан, каллех лашисене хăвалама, пĕр-пĕринпе ăмăртма пуçларĕç.

Чӳрече умĕнчи лавсен эшелонĕ аналалла иртсенех, Коля хăйĕн умĕнчи ĕç хучĕсене сĕтеле пуçтарса чикрĕ. Шăпах çак вăхăтра пӳлĕме Маша кĕчĕ, вăл та апата кайма хатĕрленнĕ иккен.

Вĕсем иккĕшĕ те урама тухрĕç.

—Коля, пăх-ха, кунĕ паян епле илемлĕ, чăн-чăн уяв çитрĕ тейĕн, кăмăл та çавăн пекех, пӳлĕмре ларас та килмест,—терĕ Маша тӳпенелле тинкерсе.

—Çапла, кунĕ, чăнах та, ырă, май килсен, шывран тухмасăр чăмпăлтатăттăм.—Унтан тăруках темĕн аса илсе,—чим-ха, Маша,—чарăнчĕ вăл,—кăмăл уяври пек, тетĕн, ахаль те чăн-чăн уяв вĕт паян: саккăрмĕш классем юлашки экзамен тытса пурнăç çулĕ çине тухаççĕ. Аса ил-ха, нумай вăхăт иртрĕ-и хамăр шкул пĕтернĕренпе? Пурте ĕнерхи пекех.

Вĕсем васкамасăр аналалла утрĕç. Тӳперен хĕртсе хĕвел пăхрĕ. Симĕс тутăр çыхнă тирексем сулхăна ларма чĕнчĕç. Çĕмĕртсемпе сиреньсенчен тутлă шăршă кĕчĕ. Пурте илĕртӳллĕ. Хĕвелпе хĕрнĕ хăйăр пек тусана пусарма çеç çумăр çитеймест. Ун çине пуснă май, вăл ура тĕпĕнчен пăлтăртатса çĕкленет, тин çеç чул айĕнчен тухнă çăнăх тейĕн, ӳт çумне çыпçăнать. Çапах та тусан çамрăксен кăмăлне пăсаймарĕ. Вĕсем, шкулта вĕреннĕ хаваслă кунсене аса илсе, сасăпах кулчĕç.

—Коля, пĕлетĕн-и,—куçĕсене çиçтерсе каччă çине пăхрĕ Маша,—пĕрремĕш хут экзамен тытма кĕрсен, эпĕ йăлтах çухалса кайрăм, пуçра нимĕн те çук пек. Алла кĕнеке илтĕм, пурпĕрех унта мĕн çырнине ăнланмастăп, пĕтрĕм иккен,

тетĕп, пĕрле вĕренекенскерсем акă пирĕн отличник тесе пӳрнепе тăсса кăтартассăнах туйăнать. Чĕркуççисем чĕтрене ерчĕç. Хĕвел паянхи пекех хĕртсе пăхрĕ пулин те, темшĕн хам çӳçенетĕп. Чăн малтан Володя Логинов тухрĕ, литература экзаменĕ пыратчĕ ун чух. Мария Захаровна Теребилова унран Шолохов çырнă «Уçнă çерем» романĕн геройне сăнласа пама ыйтрĕ. Лешĕ темиçе хут «Давыдов...Давыдов» терĕ те шăпланчĕ. Сас-чӳ кăларма шикленсе чĕнмесĕр ларатпăр. Кашнийĕ хамăрăн черет çитессе кĕтетпĕр. Комиссинче ларакансем эпир пăлханса çухалса кайнине сисрĕç, пулăшас шутпа ансатрах ыйтусем пачĕç. Павел Ильич Таллин вара ура çине тăчĕ те пире хавхалантарма шутларĕ. Вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче кун пек мыскара пĕрре çеç мар курнă ĕнтĕ, Володя çине ачашшăн пăхса:

—Кала-ха, Логинов, Шолохов Давыдова хăш енчен çырса кăтартнă?—терĕ.

Лайăх енчен е япăх енчен тесшĕн пулчĕ ĕнтĕ вăл. Логинов ун ыйтăвне ăнланмарĕ иккен, тахăшĕ телее, çак вăхăтра сулахай аллине сулнă пулнă. Вăл ним шутласа тăмасăрах çирĕппĕн:

—Сулахай енчен,-терĕ.

Эпир çак вăхăтра лăпланма ĕлкĕрнĕччĕ темелле, хамăра алла илнĕ хыççăнах, мĕн пĕлни йăлтах аса килчĕ. Пирĕншĕн унăн хуравĕ çав тери кулăшла туйăнчĕ.

—Володя тетĕн. Акă эпĕ ыйтăва пĕлеттĕм пулин те, экзаменра чутах шпаргалкăпа çакланаттăм, пĕр вĕçĕм алă ун патне туртăнать, йăнăшасран шав шикленетĕп. Учительсем манăн кĕсьере темĕн пуррине сисрĕç пулас, тĕк ларма вăйхал çитереймен пиркиех ĕнтĕ, камăн ытлашши япала пур, халех сĕтел çине хурăр, терĕç. Çĕр тĕпне анса кайнă евĕрлех туйрăм, хăвăрттăн хут купăс евĕр хуçлатса чикнĕ вĕттĕн çырса хатĕрленĕ пĕр ывăç хут листине комисси членĕсене тыттартăм. Аса илсен, кулăшла та пек, мĕне кирлĕ пулнă-ши çавăн чухлĕ асапланма. Аттепе аннерен вăрттăн çырнăччĕ. Чăнах та, ытла хумханнăран тăрăшнă пулас, пурнăçри пирвайхи экзамен пулнă вĕт, шикленнĕ те.

Вĕсем çапла калаçса пырса шкул тĕлне çитнине те асăрхамарĕç. Экзаменсем паçăрах вĕçленнĕ иккен. Вĕренекенсен ĕçĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн Сергей Иванович уçăлмалла хурăнсен аллейине тухнă. Ывăлне курсан, ăна самантлăха тăхтама ыйтрĕ. Çул юппине çитнĕрен Маша

чарӑнса тӑмасӑрах анаталла утрӗ, Кольӑн вара сылтӑмалла пӑрӑнма тиврӗ. Вӑл ашшӗне кӗтрӗ.

—Атте, эсӗ апат ҫинчен те мантӑн-им?

—Тепӗр сехетрен вӗренекенсем килмелле. Вӗсен ӗҫӗсене епле хакланине вуласа памалла. Ачасене кӗттерес теместӗп.

—Сехет хушшинче Мускава ҫитме пулать. Атя пӗрле, майӗпен утса та ӗлкӗретпӗр.

Сергей Иванович унпа килӗшрӗ. Ҫул ҫинче вӑл хӑй ыран Шупашкара каяссине пӗлтерчӗ.

—Паян ӗлкӗрейместӗп ӗнтӗ, мӗн тесен те хамӑн класс вӗт, ҫитменнине юлашки экзамен. Кӗҫӗрхи каҫа пӗрле ирттерме калаҫса татӑлтӑмӑр. Чӑнах та, уйрӑлма йывӑр, хамӑн тӑван ачасем пекех туйӑнаҫҫӗ.

—Паллах, тӑван пекех, ахальтен мар-ҫке талӑкӑн пӗрре виҫҫӗмӗш пайне вӗсемпе ирттеретӗн.

—Коля, эсӗ ялти комсомол секретарӗ. Ман вӗренекенсем пурте тенӗ пекех комсомолецсем. Вӗсене сакӑр класс вӗреннӗ ятпа саламласах пулать. Тен, вӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем малашне колхоз ӗҫне пусӑнӗҫ.

Ывӑлӗ ашшӗн сӗнӗвӗпе килӗшрӗ. Вӗсем апатланнӑ хыҫҫӑн иккӗшӗ те шкул еннелле утрӗҫ. Кунта пурте пуҫтарӑннӑ темелле, тепӗр ҫур сехетрен, шӑпланса, класра вырнаҫса ларчӗҫ. Сергей Иванович юлашки экзамента ачасем мӗнле паллӑсем илнипе паллаштарчӗ.

Секретарь хӑйӗн шкулти юлашки кунне аса илчӗ. Вӗсем те, хальхи пек, парта хушшине ларчӗҫ. Чунра малтанласа савӑнӑҫ хуҫаланчӗ, пӗр-пӗрне ыталарӗҫ, саламларӗҫ. Кайран вара ҫӗрӗпех музыка кӗрлерӗ, магнитофон вылярӗ. Акӑ юлашки вальс. Текех кунта паянхи пек ушкӑнпа пуҫтарӑнса парта хушшине нихӑҫан та лараймӗҫ, мӗн пӗчӗкрен хӑнӑхнӑ шӑнкӑрав сасси те класа кӗме е тухма илӗртмӗ, малашне вӑл янӑранине илтсен, иртнине аса илтерсе, чуна тунсӑх пусса илӗ.

Юлашки вальс! Мӗншӗн ытла та тунсӑхлӑн янӑратӑн-ши эсӗ? Мӗншӗн ачалӑха яланлӑхах сар кун ҫӗршывӗнче илсе юлатӑн? Уйрӑлас килмест санран, ачалӑхӑм, анчах та мӗн тӑвайӑн — пурнӑҫ йӗрки ҫапла.

Сергей Иванович хӑйӗн сӑмахне вӗҫлерӗ. Класри ачасем хаваслӑн алӑ ҫупрӗҫ. Экзаменсем вӗҫленнӗ! Чӑн-чӑн савӑнӑҫ мар-и вара ку! Тен, кайран темиҫе хутчен те аса илӗҫ-ха вӗреннӗ кунсене, пӗр-пӗриншӗн тунсӑхлӗҫ те.

Виталий Владимирович Владимиров, шкул директорӗ, ура ҫине тӑчӗ, часах Кольӑна та тухса калаҫма черет ҫитӗ.

Мӗншӗн вӗренекенсене кичемлентермелле? Ӑшри тунсӑха пусармалла, лайӑххи пирки ҫеҫ шухӑшламалла. Ҫамрӑксене хавхалантармалла чух, унӑн чунне тунсӑх пусса илчӗ ав. Каччӑ хӑйне хӑй вӑхӑтра тытса чарчӗ. Ҫук, шкул пӗтернӗшӗн кичемленмелле мар, савӑнмалла ҫеҫ. Паянтан ӗнтӗ вӗсем ҫитӗннӗ, малалла ашшӗ-амӑшӗсем хутшӑнмасӑрах пурнӑҫ ҫулне суйласа илме пултарӗҫ. Ҫӗршыва усӑ кӳрес тесен нумай вӗренмелле. Эппин, ачасене хавхалантарас шутпа татах та хӑйсен пӗлӗвне ӳстерме чӗнес. Ҫак шухӑшсемпе Коля сӑмахне пуҫларӗ...

Тепӗр кунне ирхине ирех Сергей Иванович Шупашкара тухса кайрӗ. Часах ӗҫпе юрӑ уявӗ пулать, анчах та арӑмӗн сывлӑхне пӗлес, унпа хӑвӑртрах тӗлпулас ӗмӗт ӑна пӗр минутлӑха та тытса чараймарӗ. Паллах, ывӑлӗн те ашшӗпе пӗрле каяс шухӑш пурччӗ. Анчах та питӗ шел, унӑн уява ертсе пыракансен хушшинче пулмалла, колхозри ҫамрӑксене хавхалантармалла. Ҫавӑнпа та ку шухӑша Кольӑн пӑрахӑҫлама тиврӗ. Ашшӗ ун кӑмӑлне ӑнланчӗ, йӑпатмалла чечек ҫыххи илчӗ те:

—Ку аннӳ валли сан ятран пултӑр,-терӗ.

Автобус вырӑнтан хускалчӗ. Коля чылайччен хыҫалтан пӑхса тӑчӗ. Вӑл курӑнми пулсан тин, ҫаврӑнса васкамасӑр ялалла утрӗ. Шухӑша путнӑҫемӗн куҫӗ умне хӑйне ҫара ӑсатнӑ кунсем тухрӗҫ. Ун чухне амӑшӗ кӑвак кӗпе тӑхӑннӑччӗ, пуҫӗнче те ҫавӑн тӗслех ҫӳхе тутӑрччӗ. Ашшӗ ҫинче тӗттӗм хӑмӑр костюмпа шурӑ клеткӑллӑ кӗпеччӗ, вӑл амӑшӗнчен ик-виҫӗ утӑмра, сулахай енче тӑратчӗ. Уйрӑлма вӑхӑт ҫитсен, амӑшӗ куҫҫульне шӑлса, Коля кӑкӑрӗ ҫине пуҫне хучӗ, шӑппӑн, никам илтмелле мар:

—Ывӑлӑм, кӗтсе илейӗп-ши эпӗ сана?—терӗ.

Ывӑлӗ ӑна илтмен пекех пулчӗ. Нивушлӗ амӑшӗ хӑй чирлине ун чухнех сиснӗ, ҫемйинчен вара ҫавна пытарнӑ? Эх, аннеҫӗм, эсӗ сывӑ маррине малтанах пӗлнӗ пулсан, эпӗ хама урӑхла тытнӑ пулӑттӑм. Каҫар, мана пулах хӗне кайрӑн пулӗ, ура ҫине тӑнӑпа пӗрехчӗ-ҫке эсӗ.

Ашшӗ ун чухне амӑшӗн сӑмахӗсене илтмерӗ, вӗсен ҫывӑхне пычӗ те:

—Ҫитӗ ӗнтӗ, мана та ывӑлпа сывпуллашма ирӗк пар-ха,—терӗ. Унтан аллине чечек ҫыххи тыттарчӗ. —Йывӑрлӑхра ан нӑйкӑш, килшӗн ан хуйхӑр, ҫынпа илемлӗ, лӑпкӑ та сӑпайлӑ пул, аслисене итле. Чечек ҫынна илемлетет, теҫҫӗ. Ҫапла калани тӗрӗс-ши, пӗлместӗп. Вӑрҫа кайнӑ чух пӗр группӑри хӗрсем мана, ҫакӑн пекех, чечек ҫыххи панӑччӗ. Шанса

типсессĕн те эпĕ вĕсене хампа пĕрле илсе çӳрерĕм. Йывăр самантсенче кĕсьерен кăларса чечексем çине пăхаттăм. Пĕтĕм чăрмав алăпа сирнĕ евĕр çухалатчĕ, куç умне тăван уй-хир, атте-анне, сăпкара выртакан пĕчĕк ача сăнĕсем тухатчĕç, тăшмана курайманнипе чĕре çилĕпе тулатчĕ, хама хам шеллемесĕр окопран сиксе тухаттăм. Сана та вĕсем службăра пулăшчăр, вăй-хал паччăр.

Тен, вăл паян та çак чечексем амăшне сывалма пулăшасса шанать?

Автобус хускалчĕ. Амăшĕ пуçĕнчи тутăрне салтса сулларĕ. Ун çумĕнче ашшĕпе юнашар Лида тăчĕ. Хĕр те, Анна Егоровна пекех, тутăрне вĕлкĕштерчĕ, ашшĕ хăйĕн ачаш куçĕсемпе автобус хыçĕнчен куç илмесĕр пăхса, хускалмасăр тăчĕ.

Паян акă Коля пĕчченех. Хăвăртрах таврăнтăрччĕ ашшĕ, пĕччен мар, амăшĕпе пĕрле. Май килсен... Лида та. Шел, хĕре ĕлĕкхи пек текех ыталаймĕ. Мĕншĕн çакăн пек самантсенче аса килет-ха вăл? Чун савнине тахçанах манма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Тен, амăшĕнни пек, унăн ырă чĕри, чуна лăплатакан ытармалла мар сасси, ачашлăхĕ çитеймест паянхи кун каччăна? Çавна пулах ăна йывăр, кичем.

Коля правлени еннелле утрĕ. Килте ларма вăхăт çук. Ыранхи уява хатĕрленмелле. Çамрăксем ăна кĕтсе те ывăнчĕç пулĕ, ĕçĕ çителĕклех. Юлашки хут репетици ирттермелле, халăх умне тухма хатĕрленмелле.

*     *     *     *     *

Патăръелсен ĕçпе юрă уявĕ кашни çулах Карабай Шăмăршăпа Патăръел хушшинчи уçланкăра, Шупашкар-Ульяновск çулĕнчен кăшт пăрăнсан, сылтăм енче иртет. Йĕри-тавра хăмасенчен вăхăтлăха çапса тунă лареексемпе киосксем вырнаçнă. Уçланкă варринче ăмăрту площадки пур. Кăнтăр енче пысăк сценăпа вăрăм саксем, ун йĕри-тавра сасса ӳстермелли микрофонсем вырнаçтарнă. Ватти-вĕтти пуçтарăннă кунта, чечек клумби пек, тĕрлĕ тĕслĕ уяв тумĕсем тăхăннă халăх çапса хĕснĕ тейĕн. Автобуссемпе машинăсем, хулари евĕр, Патăръелпе уçланкă хушшине каллĕ-маллĕ чарăнмасăр чупрĕç.

Катексем уяв иртекен вырăна тăхăр сехет тĕлнех çитрĕç пулсан та, уçланкăра çын нумайччĕ, вĕсем, кăткăсем евĕр, хĕвĕшрĕç. Кам кăна пулмарĕ кунта: чăвашĕ, вырăсĕ, тутарĕ, ирçи. Аякранах хĕрлĕ пустав çине пысăк саспаллисемпе темиçе тĕрлĕ чĕлхепе «Ырă сунса кĕтетпĕр!» тесе çырса çапнă. Нумай чĕлхепе çырма сăлтавĕ те пур: ултă чĕлхепе калаçнине илтме пулать Патăръел тăрăхĕнче.

Машина, çулран пăрăнса, уçланкăра чарăнчĕ. Уяв тумĕсене вараласран шикленсе çамрăксем кузов çинчен асăрханса анчĕç, пĕр-пĕрне пулăшрĕç. Кунта ял-йышсем çеç мар, хăнасем те хăйсен тусĕсен уявне курма килнĕ. Мĕн чухлĕ çамрăк пуçтарăнман-ши яла? Ĕнер каçхине шурăмпуç çути киличчен шкул пахчинче çамрăксен сасси янăрарĕ. Шупашкарта тата çывăхри хуласенче пурăнакансем пурте яла куçса килнĕ тейĕн.

Кузов çинчен ансанах, хуларан килнисемпе хăнасем халăх хушшинче çухалчĕç. Ферма хĕрĕсемпе Кошкин Саша, Степанов Коля, Цыпленков Юрăпа Антонов Леня сцена еннелле утрĕç. Халлĕхе концерт пуçланман-ха, магнитофон çеç пĕр чарăнмасăр юрларĕ.

Кăшт тăрсан парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕпе колхоз председателĕсем, ĕçре малта пыракансем тата тĕрлĕ çĕртен килнĕ хăнасем сцена çине хăпарчĕç. Çапла тахçантанпа кĕтнĕ уяв пуçланчĕ. Уй-хир ĕçченĕсен пичĕсем çинче савăнăç шевлийĕ вылярĕ. Çывăхрах йывăççсен хушшинче акатуй лашисем часах хăйсен çулталăк тăршшĕпех хатĕрленнĕ вăйне виçессине сиссе, малти урисемпе çĕре кукалерĕç.

Лавккасем умĕнче халăх хĕвĕшрĕ. Тутлă шăрш сарăлнă хўтĕ вырăнта çуракинче ырми-канми ĕçленĕ ял ĕçченĕсем кăвар çинче пĕçернĕ шашлыкпа кăпăкланнă сăра ĕçрĕç, хĕвел ăшшинче вĕсемшĕн чăваш хăмлинчен тунă çак уçă шĕвек темрен те пахарах туйăнчĕ. Уй-хир ĕçĕнче пĕр-пĕринпе туслашнă арçынсем çут çанталăк ытамĕнче çерем çине вырнаçса ларса, иртнĕ çур аки кунĕсене аса илчĕç, пулса çитнĕ тыр-пула çакăн пекех ăнăçлă та вăхăтра пуçтарса кĕме ĕмĕтленчĕç.

Акă сцена çине икĕ аркăллă кĕпепе умне пурçăн саппун çакнă хĕрсемпе тĕрĕллĕ кĕпе тăхăннă каччăсем тухрĕç. Чăваш юрри таçта илтĕнмелле Атăл хумĕ евĕр хумханчĕ. Кольăшăн çак самант çав тери ăмсанмалла туйăнчĕ, çарта чухне, унăн тем пекех тăван чĕлхе юррине илтес килетчĕ. Тинех вăхăт çитрĕ, вăл сывлама чарăнса тăнларĕ.

Юрă вĕçленсен, виçĕ тус хăйсен ертӳçине аяккарах чĕнсе илчĕç:

—Ну, мĕнле секретарь юлташ, «çылăха» кĕмесĕр кун иртмест пулĕ паян, çитменнине, пĕр класра вĕренсе ӳснĕ пулин те, çартан таврăннăранпа та пĕрле сĕтел хушшине ларăймарăмăр,—çӳхе тутисене илемлĕн вылятса кулчĕ Юра.

—Паллах, туссем. Çапах та халлĕхе иртерех-ха, хамăр ялсем сцена çинче хăйсене мĕнлерех тыткаланине курмалла пирĕн.

—Унччен ĕлкĕретпĕр, кайран хĕрсен умĕнче аван мар,—мăкăртатрĕ Леня.

Кăштах аяккарах чĕнмесĕр тăракан Саша сасăпах кулма тытăнчĕ:

—Тупнă вăтанмалли, вĕсенчен вăрттăн çӳресен пушшех те намăс пулĕ, «çылăхпа» епле кĕрешме тухас вара манăн?

Юрăпа Леня пĕр-пĕрин çине пăхса илнĕ хыççăн тăхтама шутларĕç, хĕрсем сцена çине тухасса кĕтрĕç.

Хор вĕçленчĕ. Малаллахи пайра уйрăм номерсем пуçланчĕç. Программăн вĕçĕ-хĕрри те курăнмарĕ. Çук, кăçал çеç мар, çулсеренех çапла, халăх саланиччченех концерт пырать. Баянисчĕсемпе ертсе пыраканĕсем темиçе хутчен те улшăнаççĕ, кашни колхозпа предприяти хăйĕн пултарулăхне кăтартма чарăнмасăр та вĕçленмест вăл.

Катексен хăйсен черетне нумай кĕтме тивмерĕ. Кольăпа Саша Леньăпа Юрăна иккĕшне çеç хăварса, сцена хыçĕнче çухалчĕç. Тепĕр вунă-вунпилĕк минутран пуçтараннă халăх умне баян йăтнă Сашăпа колхоз хĕрĕсен ушкăнĕ тухрĕ.

—Кур-ха, юрать-ха вĕсен хыçĕнчен каймарăмăр, ирĕксĕрех пирĕн те тухма тиветчĕ вĕт,—Юрăна чавсипе тĕксе тантăшĕсем еннелле пуçĕпе сулчĕ Леня.

Çакна Саша асăрхарĕ пулас: «Нимех те мар, сирĕншĕн те тăрăшăпăр, катексем парăнманнине курччăр»,—тенĕ евĕр, куçне хĕсрĕ, унтан пӳрнисемпе баян тӳмисем тăрăх çăмăллăн та хăвăрттăн чупса кайрĕ. Унăн сасси хĕрсен чунне çĕклерĕ, халь-халь вĕçсе кайма хатĕр пулнăн, пĕр харăссăн вĕсен тулли кăкăрĕсем çĕкленчĕç, шăпчăк пек сассисем тавралăха тыткăна илчĕç.

—Пăх та тĕлĕн, хамăр ялтах чăн-чăн артистсем пурăнаççĕ иккен, ахалех хулана туртăнатпăр,—кулчĕ Юра ытларах Федорова Нина çине пăхса. Уншăн савнийĕсĕр пуçне урăх сас пулмарĕ те тейĕн.

Хĕрсен ушкăнĕ ик-виçĕ юрă та юрларĕ, кашнинчех вĕсене тăвăллăн алă çупса хисеп турĕç. Катек ял каччисем те

кая юлмарĕç. Саша, сасăсем лăпланасса кĕтмесĕрех, украина халăхĕн ташă кĕввине калама пикенчĕ. Сценăн икĕ енчен хире-хирĕç Вальăпа Коля çăмăллăн сиксе тухрĕç, çĕре перĕнмесĕр сывлăшра урисене вылятрĕç тейĕн. Пичĕсем çинче çиçекен кулă куракансен кăмăлне татах та çĕклерĕ. Саша пӳрнисем баян тӳмисем тăрăх хĕрсе кайса хăвăрттăн та хăвăрттăн чупрĕç, урасене çĕклесе çеç ĕлкĕр.

Акă хĕрпе каччă пĕр-пĕрне хулран тытрĕç, сывăхри ача-пăча ярăнакан карусель пек, пĕр вырăнта çаврăнчĕç. Валя, пĕр вăхăт уйрăлса, сывлăша сикрĕ. Коля ăна ӳкесрен тытса чарчĕ, шăпах çак вырăнта баян сасси татăлчĕ, ташлакансем пĕр вăхăт хушши хускалмасăр хытса тăчĕç. Тăвăллăн алă çупнă сасă вĕсене вăратнăн туйăнчĕ. Валя урисем çĕре перĕнсенех, иккĕшĕ те пĕр-пĕрне алăран-алла тытса чаршав хыçне чупса кĕчĕç.

—Ну, патăр та вара!—мухтарĕ тусĕсене Саша.—Тĕрĕссипе каласан, сирĕн çине пăхма хама та кăмăллă пулчĕ.

—Намăса юласшăн çирĕм çухрăма килмĕç, çапла вĕт, Коля,—савăнăçне ниçта пытарайманран унăн хулĕ çумне сыпçăнчĕ Валя.

—Паллах, тен, санăн кăвак куçусем илĕртмесен, манран ташласси пулмастчĕ пулĕ, эсĕ ертсе пытăн,—сылтăм аллипе ăна хăй çумнерех пăчăртарĕ каччă.

Катек артисчĕсем салтăнса тумланнă хыççăн, Леньăпа Юра тăрса юлнă вырăна тухрĕç.

—Акă вĕсем,—илтĕнчĕ çывăхра паллана сасă.—Хăш ялсем çакăн чухлĕ халăх пуçтарнă-ши тетпĕр? Петьăпа иккĕн те килсе курмах шутларăмăр,—ушкăн хушшинчен курăнчĕç Ивановсем.

—Кама куратпăр! Мĕнле çилпе вĕçсе килме пĕлтĕр?—Тоньăна çавăрса илчĕç хĕрсем. Унăн мăшăрĕ Петя каччăсен хушшинче тăрса юлчĕ.

—Мĕн автансем пек пăхса тăратăр, сывă-и, Петя?—аллине тăсрĕ Коля. Вĕсем кулма пикенчĕç. Çак вăхăтра Леньăпа Юра та çитрĕç.

—Пăх-ха вĕсене, кама çаклатнă? Хăçан таврăнтăр?

—Тин çеç, юрать-ха Ульяновск урлă килтĕмĕр. Унсăрăн уява курмасăрах юлаттăмăр. Пăхатпăр та, пĕтĕм халăх кунта, таçтан аякранах юрă сасси илтĕнет, никам каламасăрах акатуй иккенне пĕлтĕмĕр. Киле çитмесĕрех автобусран тухса юлтăмăр, пурпĕрех халь ялта никам та çук. Чацкий калашле, карап çинчен бала лекнĕ пек.

—Ульяновск урлă кайма кам сĕннине каламасть-ха вăл,— кулчĕ Тоня упăшки çумнерех туртăнса.

—О-о, чăнах та, вăт ватлăх! Мансах кайнă, туссем, пирĕн, арçынсен, хĕрарăмсене яланах итлес пулать: вĕсен туйăмĕ пирĕннинчен çивĕчрех.

Çамрăксем пĕр-пĕринчен юласшăн мар пулса шӳтлеме пуçларĕç.

Петьăпа Тоня Ивановсем Катекре çуралса ӳснĕ. Упăшки арăмĕнчен ик-виçĕ çул аслăрах, Шупашкарти пединститутăн тăваттăмĕш курсĕнче заочно майпа вĕренет. Тоня вара Сынкова Машăпа пĕр парта хушшинче ларса вĕреннĕ, икĕ çул каялла культпросвет училищине пĕтернĕ хыççăн ăна Челябинск облаçне ĕçлеме янă. Кăçал çуркунне, Коля хăйĕн тусĕсемпе çартан таврăниччен пĕр-икĕ уйăх маларах, Петьăпа Тоня пĕрлешрĕç. Çамрăк мăшăр халĕ тăван кĕтесе курма килет иккен. Петьăн та часах сесси пуçланмалла.

—Ну, мĕн чарăнтăмăр, тахçантанпа рысаксем ăмăртнине курман,—тӳрех темĕн аса илсе сĕнчĕ Петя.

—Çук, малтан кĕрешӳре такана çĕнтерсе илер-ха, кайран унта кайăпăр,—сарлака аллисене сăтăркаларĕ Саша.

—Кĕрешме тухас теместĕн пуль?

—Паллах, ахальтен анне ик эрне хушши хăймапа сĕт çитерсе усрарĕ тетĕр-им?

—Асту, хăйму сая ан кайтăр,—сăмахпа тĕкрĕ ăна Маша.

Кĕрешекенсем сценăран пĕр икçĕр метрта сулахай енче вăй виçеççĕ.

—Малтан такине пăхар-ха, мĕнле çитĕнтернĕ?—шӳтлерĕ Саша, анчах та тусĕсем пек курма каймарĕ, судьясем патне пырса, хăйне списока кĕртме ыйтрĕ, салтăнса кĕрешĕве хатĕрленме пуçларĕ.

—Пур çĕрте те чееленет. Пăх-ха ăна, пире така курма ячĕ, хăй вара вырăнтан та хускалмарĕ,—кăштах кăмăлсăрланнă пек пулчĕ Галя Самойлова.

—Спортсмен нихăçан та парне курасшăн тăрăшмасть. Унăн пĕтĕм ĕмĕт-шухăшĕ те ăмăртура кĕрешсе мала тухасси пулса тăрать. Каярахпа приз хăех çĕнтерӳçĕн аллине лекет,— ăнлантарчĕ Петя.

—Нимех те мар, Саша, тăрăш, таки сан пекех çамрăк та тĕреклĕ, хитре, пирĕн алăра пулмаллискерех!

Саша Леня сăмахĕсене вĕçне çитиех итлесе тăмарĕ, пилĕкĕнчен шурă алшăлли çыхса, кĕрешмелли çерем çине тухрĕ.

—Саша, ан парăн!—хавхалантарчĕç паллакансем пур енчен те.—Тăрăш! Çĕклесе илсе çап!

Унăн «тăшманĕ» те тăруках парăнакан йышши пулмарĕ, Шăнкăртамри тутар каччи, пĕлтĕр район чемпионĕ пулнăскер, май килсенех ăна хăйĕн айне персе чикме тăрăшрĕ. Чăм тара ӳкрĕç пулин те, çаплах-ха кĕрешрĕç. Акă меллĕ самант та тупăнчĕ. Саша ăна вĕçертмерĕ, кăкăрĕ çумне чăмăртаса, йăтса илчĕ, тепĕр самантранах хирĕç тăракана çĕр çине ӳкерчĕ. Пурте алă çупма пикенчĕç. Çĕнтерӳçĕ, сывлăш çавăрмалла тенĕ пек, сĕтел çине ещĕкпе лартнă чĕрĕ çăмарта умлă-хыçлă ĕçрĕ. Канма тесе ларчĕ çеç, тусĕ парăннăшăн пăшăрханнă тутар каччисем пĕрин хыççăн тепри Сашăна вăй виçме чĕнчĕç. Хĕрсе кайнă Саша ывăннине манчĕ тейĕн, çамки çине пăрçа пек тапса тухнă шултăра тарне шăлса типĕтрĕ те каллех кĕрешме тухрĕ. Тусĕсем ăна чарма хăтланчĕç, кăштах та пулин канса илме ыйтрĕç. Лешĕ итлемерĕ, хăйĕн вăйне ытларах шанчĕ пулас, анчах та кăлăхах: тутарсем кĕрешме кашниех ăста, ахальтен мар юлашки çулсенче така вĕсене лекет.

Кĕрешӳ паçăрхи пек нумая пымарĕ, çав тери вăйлă «тăшман» çакланчĕ иккен хальхинче, вăл Сашăн кашни хусканăвне асăрхарĕ. Шăпах ураран ӳкерес тенĕ чух, хăвăрттăн каялла туртăнчĕ те пĕвĕпе сылтăмалла пăрăнчĕ. Каччă, çакна пĕрре те кĕтменскер, сулăнса кайса, çерем çине тăсăлса ӳкрĕ. Тем пекех хĕпĕртенĕ тутарсем хăйсен чĕлхипе савăнса кăшкăрашрĕç, çĕнтерӳçĕне алă çинче çĕклесе темиçе хутчен сывлăша ывăтрĕç. Мĕн тăвăн? Спортра яланах чеерехнисем, хăйсен вăйĕпе пĕлсе усă куракансем çĕнтереççĕ. Камăн та пулсан мала тухмаллах.

Саша аяла юлнишĕн ӳкĕнмерĕ, çитес çул асăрханулăрах пулĕ. Кунта чăн-чăн самбо кавирĕ мар çав — халăх кĕрешĕвĕ, халăх искусстви.

—Малтанах каларăм вĕт, Саша, аннӳн хăйми сая ан кайтăр тесе,—кулчĕ Маша.

—Сахалтарах çитерчĕ пулас, нимех те мар, Маша, вăл чĕрĕ çăмарта ĕçрĕ, эпир çав вăхăтра сĕлеке юхтарса тăтăмăр,—тусĕ хутне кĕчĕ Леня.

—Шел, бокс енĕпе ăмăрту ирттермеççĕ,—шеллерĕ çак хушăра Коля.

—Эсир мана ĕçке ернĕ çын тесе ан шутлăр, çапах та уява типĕлле ирттерсе яни уй-хир ĕçченĕсен кунне хисеплемен пек туйăнать,—калаçăва тепĕр енне пăрчĕ Юра.

—Камăн мĕн ыратать, вăл ун çинченех калаçать,—савни çине пысăк куçĕсемпе ытарлăн пăхрĕ Нина.

—Туссем, Юра тĕрĕссине калать, пурте тĕл пулнă ятпа...—Петя сăмахне вĕçне çитиччен каласа пĕтермерĕ, пӳрнипе янахĕнчен çапса кăтартрĕ. Ăна пурте ăнланчĕç.

—Уяв уяв пекех пултăр, çапах та нумай ĕçмĕпĕр, пурпĕрех каçхине пирĕн патăрта пуçтарăнатпăр,—сăмах хушрĕ Коля.

Çывăхри лавккаран ĕçме-çиме туянсан, çамрăксен ушкăнĕ йывăççен хушшинчи сулхăнра, çынсем сахалтарах çӳрекен вырăнта вырнаçрĕç.

—Ну, Петя, эсĕ асли, пуçла,—сĕнчĕç ăна пурте пĕр шухăшлă пулса.

—Сирĕн кăмăлăра тивĕçтерем, эппин.

Ăвăс çулçисем çилпе çатăлтатса илчĕç, çил уççăн варкăшса иртрĕ. Микрофонсенчен çаплипех хитре юрăсем янăрарĕç. Пур пултарулăх коллективĕсем те, катексем пекех, тăрăшса хатĕрленнĕ концерта. Акă юрă вĕçленчĕ, çав шăплăхпа усă курса диктор тепĕр темиçе минутран рысаксен ăмăртăвĕ пуçланасса пĕлтерчĕ. Çывăхрах тахăшĕ пушă бутылка кĕленчине йывăç çумне çапса çĕмĕрчĕ, тавралăхра хăйне майлă сасă кăларса, канакансене шартах сиктерчĕ. Çакă катексене канлĕхрен вăратнăнах туйăнчĕ. Вĕсем васкавлăн сиксе тăрса, пĕр çухрăм чухлĕ радиуспа ăмăрту валли хатĕрленĕ çаврака лаптăк еннелле васкарĕç. Хашкаса чупса çитнĕ çĕре кунта шăпах чупма хутшăнакан рысаксене майĕпен васкамасăр уттарса çавăрчĕç, пурте курăр терĕç, пулĕ ĕнтĕ. Крепков ячĕпе хисепленекен колхозăн çӳллĕ те вăрăм уроллă тĕм хура тĕслĕ «Буянĕ» та кунтах. Унăн çăмĕ йăлтăртатса тăрать. Малтанласа мăнкăмăллăн пуçне каçăртса утрĕ. Катек çамрăкĕсен ушкăнĕ тĕлне çитсен вăл, эпĕ те сирĕн пекех пĕр колхозран тенĕ евĕр, пуçĕпе суллакаларĕ.

Саша ăна ятран чĕнчĕ, урхамах ун çине пысăк куçĕсемпе тав тунă пек пăхрĕ те тепĕр хут пуçне сулларĕ. Каччăшăн ку: «Ан пăшăрхан, тусăм, пирĕн йышри рысаксенчен паян кам та пулсан çĕнтеретех»,—тесе каланăн туйăнчĕ.

Çамрăксен умĕнчен иртсен, паçăрхи евĕр, каллех пуçне каçăртса, мăнаçлăн утса кайрĕ.

Акă пĕрремĕш старт. Судьясен секундомерĕсем чаклатма тытăнчĕç. Тин çеç çӳллĕ курăнакан рысаксем çĕр çумне лăпчăннăн кăшт пĕчĕкленчĕç, вĕсем, урисене малалла пур вăйран тăсса, пĕр-пĕринчен иртсе кайма тăрăшрĕç. Тилхепе тытакансем —икĕ кустăрмаллă çемçе тăрантас çинче ларса

пыракансем пур вăйне паракан урхамахсене татах та хавхалантарма тăрăшрĕç. Вĕсен ункăна виçĕ хутчен чупса çаврăнмалла. Ăмăрту вунпилĕк минут хушшинче пулса иртет. Уяври пур халăх та кунта пуçтараннă тейĕн, çынсем ипподром йĕри-тавра стена пек тăрса тухнă. Кашниййĕ ушкăн умне тухма тăрăшса, ăмăртакансене курасшăн пулчĕ, урхамахсем хăйпе танлашсанах, хавхалантарса алă çупаççĕ, кайри — мала! тесе, кăшкăраççĕ. Выльăх та ун пек чухне этем шухăшне ăнланать ĕнтĕ. Рысаксем тата та хытăрах малалла туртăнчĕç, хăйсемшĕн «чирлекенсене» савăнтарасшăн пулчĕç. Чăн малтанхи ăмăрту районĕçтăвкомăн «Орликĕпе» «Гвардеец» колхозăн çамрăк урхамахĕ «Чайка» хушшинче пуçланчĕ. «Орлик» — «Чайкăн» ашшĕ, кăçал ăна халăх юлашки хут курчĕ, çавăнпа та чылайăшĕн рысака, канма ăсатнă май, мала кăларас килчĕ. Унăн сылтăм урине, шăнăр тăсăласран пулĕ, шурă бинтпа çыхнă. Çулланнă пулин те çамрăккине парăнмарĕ, ăна хыçала хăварнăçемĕн хăварса пычĕ. Лешĕ ашшĕнчен юлнине курса, те çитес тесе, те кутăнланса, сиккипе чупма пикенчĕ. Ку вара ăмăртун çирĕпленнĕ йĕркине пăхăнманнине, пăснине пĕлтерет. Судьясем çакна асăрхамасăр юлмарĕç, штраф очкине шутлама пуçларĕç.

«Орлик» çĕнтерӳшĕн пĕтĕм вăйне пачĕ, пĕр тикĕссĕн юлашки çаврăма чупса тухрĕ. Халăх тăвăллăн алă çупрĕ. Миçе çул ĕнтĕ вăл малти вырăнта, ăслă та лăпкă, хуçи сăмахне этем евĕр ăнланакanскер, татах та ăмăртма хатĕр пулчĕ. Анчах та тепĕр хут ăмăртма ветеринарсем ирĕк памарĕç. Вăл çаплах-ха васкамасăр утса çӳрерĕ, хăйне юратакансене пуçĕпе сулласа тав турĕ. Шел, кунта пуçтараннă халăх ăна текех ăмăртусенче кураймĕ. Тилхепеçи, утмăл çула çитнĕ конюх, шăпах çакăн çинчен шутларĕ те çав самантра. Вунă çул вĕсем иккĕшĕ пĕрле çулсеренех мала тухнă. Унăн хуçи миçе хутчен ĕçрен тухса кайма хатĕрленмен-ши? Вăл урхамаха шелленĕ пиркиех вырăнĕнчех юлнă.

—Кăçал юлашки ăмăрту пулчĕ, урхамахăм, эпĕ те сан пекех пенсине кайăп. Каçар,—пăшăлтатрĕ ватă конюх лашана пуçĕнчен ачашласа.

Унтан вăл кĕсйинчен пысăк шоколад плити кăларса тусне хыптарчĕ. Лешĕ пуçĕпе сулларĕ, йĕпе тутисемпе хуçин питне сĕртĕнчĕ, кăкăрĕнчен çăмăллăн тĕртрĕ.

Буян виççĕмĕш ушкăнра ăмăртрĕ. Паян мĕнпурĕ çичĕ мăшăр, вунтăватă предприяти хăйĕн рысакĕсене кăларчĕ.

Пуҫламӑш ҫаврӑнурах ҫӳллӗ те вӑрӑм уралла Буян хӑйӗнпе ӑмӑртаканран тӳрех мала хӑпса уйрӑлчӗ, вӗҫне ҫитичченех хӑваласа ҫитме памарӗ. Каччӑсем вӑл ҫаврӑнса ҫывӑха ҫитсенех чарӑна пӗлмесӗр ӑна ятран чӗнсе, хавхалантарма тӑрӑшрӗҫ, хӗрсем ҫак хушӑра хыттӑн алӑ ҫупрӗҫ.

Тепӗр икӗ сехетрен ӑмӑртура мала тухнисене парнелерӗҫ. Пӗрремӗш вырӑна Крепков ячӗпе хисепленекен колхоз тилхепеҫи Иван Игнатьевич ывӑлӗ Ваҫҫа тухрӗ, ҫӗнтерӳҫӗ колхоза телевизор парнелерӗҫ, тилхепеҫисем пурте нейлон кӗпе илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Иккӗмӗш вырӑна —районти ӗҫтӑвком, виҫҫӗмӗшне вара «Ленинец» хуҫалӑхӗ йышӑнчӗҫ. Вӗсене магнитофонпа радиоприемник парса чысларӗҫ.

Каҫ сӗмӗ ҫапсан тин Катек ҫамрӑкӗсем машина еннелле утрӗҫ. Уяв майӗпен саланма пуҫларӗ, ялтан куҫса килнӗ лавккасене каялла куҫарма пикенчӗҫ. Концерт вӗҫленнӗ ӗнтӗ. Такам ӳркенмесӗр ҫаплах-ха магнитофон ҫавӑрттарчӗ. Пӗр сехет каялла ҫеҫ тӗрлӗ сасӑпа кӗрлекен ӗҫпе юрӑ уявӗ иртнӗ вырӑн пушанса юлнӑ. Йӗри-тавра шӑплӑх. Халь тин ӗнтӗ автобуссем Патӑръел енчен пурте пушӑлла килчӗҫ, каялла вара, ҫапса хӗстернӗ евӗрлех, тулли кайрӗҫ.

Акӑ катексен те машини ҫитсе чарӑнчӗ, 10-15 ҫынран ытла пуҫтарӑнмарӗ, ҫапах та ҫамрӑксем уяв хыҫҫӑн тунсӑхламарӗҫ, кашнин сӑнӗ-пичӗ хаваслӑн ҫиҫрӗ.

Часах вӗсем ирхинехи пекех илемлӗ юрӑ шӑрантарса ял кӗперӗ урлӑ каҫрӗҫ. Ивановсен ҫурчӗ шӑпах клуба хирӗҫ вырнаҫнӑ. Машина текех малалла каймарӗ, чарӑнчӗ.

—Ну, туссем,—кузов ҫинчен сиксе анчӗ Коля,—халӗ тӳрех пирӗн пата каятпӑр.

Анчах та хӗрсем килӗшмерӗҫ, ӗне сума вӑхӑт иккенне аса илтерсе, тепӗр сехет ҫурӑран ҫитетпӗр, терӗҫ.

—Сӑмахӑрсене ҫилпе вӗҫтермелле ан пултӑр, унсӑрӑн сире малашне ӗненмӗпӗр,—асӑрхаттарчӗ юлашки хут каччӑ.

—Чим-ха, Коля. Эппин, эпир те тепӗр сехет ҫурӑран ҫитӗпӗр, малтан киле кӗрсе тухар.

—Чӑнах, эсир халлӗхе сӗтел ҫине хатӗрлӗр,—хушса хучӗ упӑшки сӑмахӗ ҫумне япшар чӗлхеллӗ Тоня.

Саша, Коля, Юра, Леньӑпа Маша хӑйсен тусӗн килӗ еннелле утрӗҫ.

—Маша, тен, санӑн ӗне сума шухӑш пур? Эпир, арҫынсем, кӑмака умӗнче кӑштӑртатӑпӑр,—кударах тата кӑштах аванмарланса сӗнчӗ Коля пӳрте кӗрсен.

—Сума пӗлмест пулӗ вӑл...

Анчах та Маша каччине каласа пĕтерме памарĕ, куçĕсене савăнăçлăн çиçтерчĕ те:

—Вăт кунта эсĕ йăнăшрăн,—терĕ.—Мĕнле-ха ялта ӳснĕскер, сума пĕлместĕп пулать. Колхоз интеллигенчĕ тесшĕн ĕнтĕ, çапла-и?

—Чăнах та, сăвайăн-ши? Енчен те пултаратăн пулсан эпĕ паянах сана качча илме хатĕр,—май килнĕ таран хĕпĕртенĕ пек курăнасшăн пулчĕ Леня.

Акă сĕтел пĕтĕмпех хатĕр ĕнтĕ, пӳртрисем хăнасене кĕтрĕç. Петьăпа Тоня нумай тытăнса тăмарĕç, вĕсем хыççăн часах ферма хĕрĕсем те çитрĕç. Коля кил хуçи пек пулса пурне те сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ. Мĕн кăна çук пулĕ кунта: çӳхен каснă лимон çаврашкисем, йӳçĕтнĕ панулмипе хĕрлĕ помидор, тăварланă хăяр, симĕс хăяр, пылак çимĕçсем. Иçĕм çырли эрехĕпе пилĕк çăлтăрлă коньяк та пур.

—Коля, чăн-чăн ресторанти пекех сан кунта, музыка çеç çитмест, —терĕ Саша сĕтел хушшине Кольăпа Маша çумне ларнă май.

—Музыка çитмест тетĕн. Мĕнех, аллуна тăсма çеç ан ӳркен, магнитофон хăвăн çумăнтах,—астутарчĕ Коля тусне телевизор çумĕнчи «Весна» магнитофон çине кăтартса.

—Мана тек нимĕн те кирлĕ мар.

Магнитофон сасси илтĕнсен, самантлăха çамрăксем шăпланчĕç. Кашниййĕ тимлĕн музыка итлерĕ. Анчах та ку шăплăх нумая пымарĕ. Коля, тулли черккине çĕклесе, ура çине тăчĕ, сĕтел хушшинчи пĕрремĕш сăмаха пуçласа:

—Пурте пĕрле тĕл пулнă ятпа, хамăр çуралса ӳснĕ ялта ытларах та ытларах çамрăксемпе пуçтарăнса, çакăн пек час-часах сĕтел хушшинче туслăн калаçса ларассишĕн ĕçетĕп,—терĕ

—Комсомол ертӳçи сĕтел хушшинче те хăйĕн ĕçнех пурнăçлать,—йĕплесе илме хăтланчĕ Маша, анчах та сăмахне вĕçне çитиччен каламарĕ. Ялти çамрăксен йышне ӳстерессишĕн секретарĕн çеç мар, хăйĕн те ĕçлемеллине аса илчĕ. Вăл аллинчи куркине тути патне илсе пычĕ те Леня çине пăхрĕ. Куçĕсем: «Тусăм, Коля сăмахĕсем саншăн та пулчĕç, унпа килĕшсен, ĕçер пĕрле»,—тенĕнех туйăнчĕç. Çакна каччи сисрĕ, анчах та хăйĕн шухăшĕсене ыттисене пĕлтерме вăтаннă евĕр, никам сисмелле мар куç хĕсрĕ те тутисемпе сарă шĕвек тултарнă рюмкăна перĕнчĕ, ăна курса, ыттисем те. Маша çăмăллăнах сывласа ячĕ. Эппин, пурте секретарь сăмахĕсемпе килĕшеççĕ. Мĕн тери хавасланмарĕ пуль вăл: унăн хĕр-тантăшĕ, пĕр класра вĕренсе ӳснĕ Тоня

тӑван яла таврӑнать. Маша ирӗкӗнчен килсен, паянах, халь тесен халь вӑл ӑна клуб заведующин ӗçне шанса парӗччӗ, ан хирӗçлетӗрччӗ çеç. Унӑн шухӑшӗпе ялти пур çамрӑксем те килӗшнӗ пулӗччӗç.

Сӗтел хушшинчи калаçу чарӑнмарӗ, кашнинех кӑмӑлӗ çӗкленчӗ. Çакна никам та пытарса тӑраймарӗ. Пӳлӗм савӑнӑçлӑ юрӑ-кулӑпа тулнӑçемӗн тулса, илемленнӗçемӗн илемленсе пычӗ.

Магнитофон пӗр самантлӑха шӑпланнӑ пек пулчӗ. Саша лентине куçарма тесе шутланӑччӗ çеç, унччен те пулмарӗ хӑвӑрттӑн янӑракан кӗвӗ пурне те ура çине тӑма хистерӗ. Çамрӑксем урай варрине карталанса тӑрса ташлама пикенчӗç.

Пӗр Саша çеç вырӑнтан хускалмарӗ, сӗтел çине чавсаланса ларса шухӑша путрӗ. Тен, çак самантра каччӑ Вальӑна аса илчӗ. Ялтан тухса кайман пулсан халь вӑл тус-хӗрӗсемпе, унпа юнашар лармаллаччӗ. Хулара пурӑнакан çамрӑксем пурте тенӗ пекех яла курма килчӗç, унӑн та тӑван тӑрӑхра çӳрес шухӑш пулнӑ ӗнтӗ. Ӗçпе юрӑ уявне чӑтаймасӑр кӗтетчӗ. Пуриншӗн те пӗтӗмпех Саша айӑплӑ. Мӗншӗн-ха хӗр çумра чухне çакна ӑнланман? Ытла та час-час аса килетӗн-çке эсӗ, Валя.

Ташӑ вӗçленчӗ. Мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн алӑран тытса тусӗсем каллех сӗтел хушшине ларчӗç. Сашӑна никам та асӑрхамарӗ тейӗн. Тӗрӗссипе, вӑл хӑй тунсӑхланине, чунра капланнӑ туйӑмне палӑртас мар тесе, хутран-ситрен ушкӑнран юласшӑн мар ӑшшӑн кулкаласа илчӗ, ним пулман пек ларма тӑрӑшрӗ.

Маша малтанхи тост сӑмахӗсене çаплах-ха манмарӗ. Ун чухне Кольӑпа килӗшсе пурте пӗр çын пек пулса эрех ӗçрӗç, анчах та çакна тепӗр хут уççӑн çирӗплетсе калаканӗ никам та пулмарӗ. Мӗн тери аван пулӗччӗ, енчен çакӑнта ларакансем пурте пӗр шухӑшлӑ пулса ялта юлмашкӑн калаççа татӑлсан. Вӑл вӑрттӑн Леня çине пӑхса илчӗ. Икӗ çул хушши никама савмасӑр пурӑннӑ-çке хӗр. Мӗн тери йывӑр икӗ çул хушши кӗтме! Каччи халь ун çумӗнче, Машӑпа юнашарах ларать. Çук, пӗрре те уйрӑлмӗччӗ чун савнинчен.

—Тоня,—тантӑшӗ еннелле пӑхрӗ Маша,—пирӗн ялта сана валли çав тери лайӑх ӗç пур. Эсӗ çеç çакна йӗркелесе яма пултаратӑн.

—Ĕçлеме тытăнicчченех ан мухта-ха, упăшка пушшех те юратса пăрахĕ. Малтан кала мĕнле ĕç, тен, эпĕ — пиçмен пашалу çеç,—янăравлă сассипе кулчĕ Тоня.

—Эсĕ тума пултарайман ĕç çук пулĕ. Ку тата шăпах сан кăмăлна тивĕçтерет, ху та вăл енĕпе вĕреннĕ. Ялти клубра пирĕн заведующи çук.

—Чăнах та, Тоня, килĕш,—калаçăва хутшăнчĕ Коля.— Май килнĕ таран пурте сана пулăшăпăр. Ĕнер колхозпа ялсовет председателĕсем çывăх кунсенче клубра юсав ĕçĕсене тума пуçласси çинчен калаçрĕç. Строительство материалĕсене туяннă. Ĕçлекенĕсем çеç пулччăр, терĕç. Çитменнине, атьăр-ха кăтартар хамăр хастарлăха, ваттисем темшĕн пире шанасшăн мар. Нивушлĕ эпир юнашар ялсенчи çамрăксенчен япăхрах?

Пĕр хушă чĕнмесĕр ларакан Петя, пуканĕ çине хыçалалла тайăнса аллисене кăкăрĕ çине хучĕ те ассăн сывласа ячĕ.

—Пĕлес тетĕр пулсан, эпир тахçанах хамăр енне куçса килме ĕмĕтленетпĕр. Тоня валли ялта ĕç тупăнсан, эпĕ хирĕç мар. Хама валли вара çывăхра ĕç вырăнĕ тупма тăрăшăп. Пĕлместĕп, арăмăн кăмăлĕ мĕнле? Маншăн ял-йыш хушшинче, атте-анне çумĕнче пулни аван, паллах.

—Тоня, мĕн хирĕçлесе тăратăн тата? Эсĕ те яла килетĕн пулсан, эпир те Машăпа кунтах юлатпăр. Чăнахах та, кăтартар-ха хальхи çамрăксем мĕн тума пултарнине. Тепĕр тесен, клубне те хамăрах юсаса пама килĕшĕпĕр. Ыранах председательпе кайса калаçмалла.

—Леня,—сисмен çĕртен ыталаса илчĕ ăна Маша,— чăнласах каларăн-и эсĕ ку сăмахсене? Мĕн тери телейлĕ эпĕ паян!

Нина та Машăран юлас мар терĕ пулас, каччи енне çаврăнса, пăшăлтатса темĕн каларĕ. Лешĕ пуçĕпе килĕшсе сулчĕ. Хĕр йăлтăртатакан куçĕсемпе ун çине юратуллăн пăхрĕ, пĕчĕк аллисемпе Юрăн аллине чăмăртарĕ.

Вăхăт сисĕнмесĕрех иртрĕ. Кăн-кăвак тӳпери çутă уйăх урама, уçă сывлăша тухма илĕртрĕ. Çамрăксем пурте пĕрле кĕпĕрленсе, ахăлтатса-кулса пӳртрен тухрĕç. Кăштах канашласа илнĕ хыççăн, яланхилле шкул еннелле çул тытрĕç. Унта халь чуна илĕртмелле шăпчăк илемлĕ юрă шăратрĕ. Каçхи шăплăхра çав сасă таçта çитиех илтĕнчĕ.

*    *    *    *    *

Иванова Тоня клуб заведующийĕ пулма кăмăл тунине пĕлсенех, ялсовет председателĕ Русаков савăнмаллипех савăнчĕ. Мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен-ши вăл Кивĕ Катек клубĕнче çамрăксемпе ĕçлеме пĕлекен çын тупассишĕн? Телей акă хăех килчĕ, ан вĕçерт çеç. Ятарласа вĕреннĕ çын. Вăл хĕпĕртенине Тоня та сисрĕ, анчах палăртмарĕ. Çапах та каллĕ-маллĕ шухăшласа пăхма вăхăт сахал пулсан та, заявлени çырчĕ, Челябинск хулине кайса килсенех, пĕр кун сая ямасăр, ĕçе пуçăнма килĕшрĕ. Унччен шăпах Леньăпа Юра, пулас заведующи сĕннĕ пек, сăрлĕç, тасатĕç, клуба илем кӳртĕç.

Ĕçе çамрăксем çанна тавăрсах пикенчĕç. Паян иккĕмĕш кун ĕнтĕ ир пуçласа каçчен, канма пĕлмесĕр, аллисенчи маляр мелкисене çăмăллăн вылятрĕç. Вĕсен мĕлки айĕнчен илемлĕ çĕнĕ тĕс выртса юлчĕ. Унчченхи стенасем халь ачашшăн та çуттăн, кăмăл-туйăма хăпартмалла курăнчĕç. Клуб залĕнчи илем тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе пĕлсе усă курнинчен те нумай килет çав, çынсен сăн-питне улăштарать, чуна çамрăклатать, илĕртет.

Комсомол секретарĕн те ĕç чылаях хутшăнчĕ. Саккăрмĕш класс ачисем экзаменсем парса пĕтерчĕç ĕнтĕ, часах вуннăмĕшсен те юлашки тĕрĕслев пулĕ. Çавна кура халĕ ун патне ял çамрăкĕсем ушкăнпа çӳрерĕç, кашни хăйĕн ĕмĕчĕпе паллаштарчĕ, теприсем ашшĕ-амăшĕ патне мар, тӳрех ун патне чупрĕç. Чупмасăр! Коля хăй те кăçал вĕсем пекех студент пуласшăн-çке-ха. Çакă çамрăксене татах та çывăхланма пулăшрĕ.

Малашне те ĕç-пуç çакăн пекех лайăхланса пырсан, ялта механизаторсен те шучĕ ӳсĕ. Сакăр çын уй-хир карапĕсене çӳретме кăмăл туса правленине пычĕç. Вĕсен хушшинче пилĕк хĕрача пулчĕ. Часах çамрăксем Канашри СПТУна, çулталăк хушши вĕренмелли курса пĕлӳ пухма каяççĕ. Вĕсем, çитес çул шăпах тырă пулса çитнĕ вăхăтра, машинăсем çине ларса, уй-хир патши пек, алла çăмăллăн пăхăнакан карапсене кĕрлеттерĕç, бункерсенчен машинăсем çине ылтăн тĕслĕ тырă-пулă юхтарĕç. Чăн-чăн телей мар-и-ха çакă ял ĕçченĕсемшĕн!

Колхозра чĕкĕнтĕрпе çĕр улми анисене çум-курăкран тасатма пикенчĕç, катмакларĕç, сайралатрĕç. Секретарь хаçат-журнал йăтса кашни кунах хире çитме тăрăшрĕ. Çынсем каннă хушăра вĕсене çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарчĕ.

Коля паян уй-хиртен яланхи пекех хаваслă та çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăнчĕ. Пӳлĕме кĕрсе ларма ĕлкĕрнĕччĕ çеç, умри телефон тăруках шăплăха пăсса çине-çинех шăнкăртатрĕ.

—Степанов. Итлетĕп,—трубкăна çĕклерĕ каччă.

—Тинех çаклантăн иккен. Ăçта тарса çӳретĕн эсĕ паян? Сана иртенпе шырасан та тупма çук,—трубка витĕр Чекушкин сассине уйăрса илчĕ Коля.

—Халь çулла вĕт. Ял халăхĕ хирте чух ăçтан-ха пӳртре хутсен ăшĕнче чакаланса ларăн? Вăрçас теместĕр пуль?

—Тем тумалла. Вăрçмаллах пуль, çапах та паян мар, тепĕр чух. Халь ĕçĕ пысăк пирки йăпăлтатасах пулать. Пĕлетĕн-и, ыран санăн Шупашкара комсомол секретарĕсен конференцине каймалла. Çакна эсĕ пĕлместĕп тетĕн ĕнтĕ.

—Чăнах та, пĕлмен.

—Малтанах сисрĕм. Ну, юрĕ, ыран вуникĕ сехет тĕлне хулана çитмелле. Патăръелĕнчен пĕрле кайăпăр. Кая ан юлăр, тăхăр сехетре тĕл пулăпăр.

Коля хирĕç нимĕн те калама ĕлкĕреймерĕ. Чекушкин калаçăва урăх енне куçарчĕ, таçтан çĕнĕ завклуб çинчен те илтнĕ иккен. Секретарь темерĕн, ытла та чĕлхи çемçе-çке унăн, пуринпе те сăмах тупать. Вăл пĕлменни ним те çук пулĕ! Камран илтнĕ-ши çак хыпара? Уй-хир, çамрăксен ĕçĕ пирки те ыйтма манмарĕ, шӳтлесе те, йĕплесе те илме ĕлкĕрчĕ. Юлашкинчен конференцине каймаллине тепĕр хут аса илтерчĕ те трубкине хучĕ.

Коля мĕн пулса иртнине ăнланаймарĕ тейĕн, хăлха çумне тытнă телефон кĕскен пиклетме тытăнсан тин, пуçне суллакаларĕ, кулам пекки те турĕ, унтан ура çине тăчĕ: «Вăт пыр та калаç. Темиçе минут хушшинче райком ертӳçи унран ыйтса мĕн чухлĕ çĕнĕ хыпар пĕлчĕ, пĕтĕм колхоз пурнăçĕпе паллашрĕ, хуçи сиссе те юлаймарĕ»,—шухăшлăн сĕтел çинче пӳрнисене шакăртаттарчĕ вăл.

—Эппин, ыран тăхăр сехетре ирхине,—терĕ. Çак сăмахсене ăша хывса каччă пӳлĕмрен тухрĕ.

* * * * *

Сергей Иванович Шупашкара килнĕренпе те канăç курмарĕ. Анна Егоровнăн сывлăхĕ кунран кун япăхланса пыни, паллах, чĕрине пăлхантармасăр тăма пултараймарĕ,

тӗлӗкре те шухӑш ун ҫинчех пулчӗ. Панкреатит чирӗ хӑйӗннех турӗ, чипер ӗҫлесе ҫӳрекен ырӑ чӗреллӗ хӗрарӑма вырӑн ҫине ӳкерсе, вуннӑмӗш талӑк ӗнтӗ юн тымарӗнчен яракан глюкозӑпа тӗрлӗ витаминсемпе ҫеҫ ҫырлахтарчӗ, апат-ҫимӗҫсӗр усрарӗ, сывлӑхне хавшатса, кун-ҫулне кӗскетме тӑрӑшрӗ.

Анна Егоровна хӑйӗн пурнӑҫ ҫулӗ вӗҫленсе килнине сисрӗ пулин те, хавaслӑх ҫухатнӑ кӑвак куҫӗсемпе мӑшӑрне йӑпатасшӑн пӑхса, лӑпкӑн та ачашшӑн курӑнма тӑрӑшрӗ. Ку Сергей Ивановичшӑн пушшех те йывӑррӑн туйӑнчӗ. Ир пуҫласа каҫченех арӑмӗн койки пуҫӗнче ларма хатӗр пулчӗ вӑл, анчах та ҫапла тума ӑна врачсем ирӗк памарӗҫ, вара унӑн пуҫа усса гостиница еннелле утма тиврӗ. Ҫывӑрма выртсан та ыйхӑ килмерӗ, куҫ умне мӑшӑрӗпе паллашнӑ кунсем тухрӗҫ. Ун чухне иккӗшӗ те студент, хаваслӑ та телейлӗ пулнӑ. Нихӑҫан та пуласлӑхӗ паянхи пек ҫаврӑнса тухасса, пӗр-пӗринчен яланлӑхах уйрӑлма пултарасса шутламан та вӗсем. Шутламан ҫеҫ мар, кун пирки тӗлленмен те.

Урамра ҫуллахи ӑшӑ каҫ. Таҫта сӑрт хыҫне пытанма хӑтланнӑ хӗвел пайӑркисем кӑтра хумӗсемпе савӑнса вылякан Атӑл ҫине йӑпшӑнса пӑхрӗҫ. Ӑна илемлӗ, ытармалла мар кӗрен сӑн парнелесе, ахаль те хитрескере, татах та чипертерех кӑтартма тӑрӑшрӗ. Ӗҫ кунӗ хыҫҫӑн пуҫтарӑннӑ ватти-вӗтти ҫыранӑн шурӑ карлӑкӗсем ҫине таянса, таҫти ӗмӗтри инҫетлӗхе курма, ҫутҫанталӑк илемӗпе киленме тӑрӑшрӗҫ. Хӑшӗсем тата ӑмӑртмалла пӗр-пӗрин хыҫҫӑн юлакан сухапуҫ йӑранӗсем евӗр хумсем ҫинче ташлакан кимӗсем ҫине пӑхса, тарӑн шухӑша путрӗҫ. Тен, вӗсен те ҫак кимӗсем пекех хӑйсен хыҫҫӑн йӗр, ырӑ йӗр хӑварас килет пулӗ? Вӑл ан ҫухалтӑрччӗ ҫеҫ.

Шурӑ кӗпеллӗ ҫамрӑк каччӑсемпе хӗрсем алла-аллӑн тытӑнса, Атӑл ҫыранӗ тӑрӑх утса ҫӳрерӗҫ. Вӗсен пичӗсем ҫинче Сергей Иванович хӑйӗн ҫирӗм пилӗк — вӑтӑр ҫул каяллахи кунӗсене курчӗ. Тем тума та хатӗрччӗ ҫав вӑхӑта пӗр пилӗк минутлӑха та пулин тавӑрассишӗн. Аса илсен, ҫав ҫӑтмахри кунсем ӗнер ҫеҫ пулнӑ пек, тин кӑна вӗсем те паянхи ҫамрӑксем евӗр, Иванов бульварӗнчи ҫӑкасен айӗнче ҫӳретчӗҫ. Халӗ акӑ кӑштах пӗкӗрӗлнӗ, кӑвак ҫӳҫлӗ васкамасӑр утакан ҫынна, унӑн уттине пӑхсан, тӳрех никам та темиҫе ҫул каялла ҫеҫ ҫак ҫулланнӑ этемшӗн хӗрӗх градуслӑ шартлама сивӗсенчи ҫӗр пӳртри каҫсем те, ҫуллахи шӑрӑхра ӳт ҫумне ҫыпҫӑннӑ гимнастеркӑпа рюкзак та,

автоматпа кирза ată та хăрушă пулманнине тавçăраймĕ, вăл та тахçан çамрăк каччă пулнине ĕненмĕ. Унăн куçĕсенче яланах хаваслăх çиçнĕ, умĕнче темĕнле йывăрлăх пулсан та çынна кăтартман, мĕншĕн тесен ялан ыррине шаннă, ĕненнĕ. Анчах та мĕншĕн-ха ватлăх кунĕсем çитсен, умри хуйхă-суйхăна пытарма хĕн? Пурте, тăрă шыв çинчи çу пек, çиеле тухать. Мĕншĕн?..

* * * * *

Тепĕр кунне Коля райкома палăртнă вăхăтра, шăпах тăхăр сехет тĕлне çитрĕ. Каччă хура костюмпа шурă кĕпе тăхăннă, мăйне сарлака галстук çыхнă. Уринчи пушмакĕ костюмĕ тĕслех, йăлтăртатса кăна тăрать, çӳçне тирпейлĕн хыçалалла туранă.

Райкома унсăр пуçне ытти колхоз секретарĕсем те килнĕ иккен. Часах пӳлĕмрен Чекушкин та тухрĕ.

—Эппин, нумай кĕттермерĕр, шăп та лăп калаçса татăлнă пек,—кашнине сывлăх сунса алă парса тухрĕ вăл.—Вăхăта усăсăр ирттерсе тăрар мар, кайрăмăр.

Секретарьсем пысăках мар автобус çине вырнаçса ларса çула тухрĕç. Шупашкара патăрьелсем палăртнă вăхăтчен çур сехет маларах çитрĕç. Конференци пуçланиччен вăхăт пурха, çавăнпа та çамрăксем Ленин палăкĕ умĕнчи чечексен клумбисене сăнаса киленчĕç. Гостиница пирки малтанах калаçса татăлнă пулнă, унта кайса çӳресе вăхăт ирттерес темерĕç. Каçхине ушкăнпа театр е кино кайса курма ĕмĕтленчĕç.

Кольăн та тем пекех çамрăксемпе пĕрле пулас килсен те ку шухăша пăрахăçлама тивессине сисрĕ, çавăнпа та чĕнмерĕ. Мĕнле пулсан та унăн амăшĕпе тĕл пулмалла. Чекушкин малтанах ун хуй-хи-суйхине пĕлнĕскер, каччă хăй каласса кĕтмерĕ, ăна яланхилле аллинчен тытрĕ те лăплантарас шутпа:

—Йышран уйрăм пулнишĕн ан кулян, ыран та вăхăт пулĕ-ха, санăн паян аннӳне курмаллах,—терĕ.

—Аннене çеç мар, аттене те. Вăл та Шупашкарта,—нимĕн калама аптранă енне хушса хучĕ Коля.

Пуçламăш кун конференци нумая тăсăлмарĕ, мĕн пурĕ те тăватă сехете яхăн çеç пулчĕ. Залран кĕпĕрленсе тухнă

хыççăн çамрăксемпе каçчен сывпуллашсан, Катек каччи пĕрремĕш номерлĕ троллейбус çине ларса хула урамĕпе тăвалла хăпарчĕ.

Коля троллейбус çинче хăй иртенпех ним те çименнине аса илчĕ. Малтан столовăйне е кафене кĕрсе тухма шутларĕ. «Апатланăп та унтан тӳрех больницăна кайăп»,—шухăшларĕ вăл хăйĕн ăшĕнче.

Коля пек апатланас шутлисем татах та тупăнчĕç, черечĕ пысăк мар пулин те, çичĕ-сакăр çын хыçне тăма тиврĕ. Каччă умĕнче пĕр çирĕм çулхи хитре хĕр пулчĕ. Илĕртӳллĕ сăн-питлĕ, çӳçне кĕске кастарнă. Паллах, кашни çамрăкăнах ун пек чух палламан хĕре мĕнле те пулсан сăмах калаттарас килет. Пĕри ун сассине итлесе пăхасшăн, тепри çак чиперккен кăмăлĕ мĕнлерех пулнине пĕлесшĕн. Кольăн шухăш-кăмăлĕ те ыттисеннинчен уйрăлса тăмарĕ, анчах та хĕр йăл кулса сăмах хушма ĕлкĕреймерĕ, çывăхрах сĕтел çинчи савăт-сапана пуçтарма тăнă шурă халатлă хĕр, аллинчи тирĕк-чашăкне çĕре ӳкересрен аран-аран тытса ĕлкĕрнĕскер, тăруках Кольăна майран çакăнчĕ, питĕнчен чуптурĕ:

—Мĕнле кунта килме пĕлтĕн?—пăшăлтатрĕç унăн тутисем.—Тем пекех хамăр ялсене курас килетчĕ.

Кăнтăр кунĕнчех каччăпа хĕр чуптуса тăни кафери çынсене кăштах тĕлĕнтерчĕ пулмалла, çавăнпа та чылайăшĕ çак минутра вĕсем çине пăхрĕ, анчах та ял çамрăкĕсем çакна асăрхамарĕç те.

—Эсĕ кунтине пĕлсех килтĕм, халь сана хамран хăвармастăп,—савăнмаллипех савăнчĕ Коля. Унтан паçăрхи хĕр енне çаврăнчĕ те,—каçарăр,—терĕ,—кунта акă хамăр колхоз таркăнне тупрăм, тахçантанпах шыраттăмăр.

Палламан хĕр паçăрхи пекех кăмăллăн кулчĕ:

—Халь тин ан вĕçертĕр ĕнтĕ, эсир вĕсен пуçлăхĕ пулас-ха?

—Эпир ун çинчен никама та калама ĕлкĕреймерĕмĕр-çке, ăçтан пĕлетĕр?

—Мĕнле вара, эпĕ сире малтанах асăрхарăм, паян кăнтăрларанпах пĕрле.

—Эппин эсир те конференцине килнĕ?

—Çапла.

—Апла пулсан сирĕнпе татах та курнăçăпăр-ха, çак «таркăнпа» чух чĕререн уççăн калаçам-ха, унсăрăн каллех тытаймăп.

Хĕр чĕнмерĕ, килĕшсе пуçĕпе çеç сулчĕ.

—Ну, каласа пар, мĕнле санăн кунта ĕçӳ-хĕлӳ? Килĕшет-и? Ăçта пурăнатăн?—сĕтел хушшине ларнă-ларман çине-çинех ыйтусем пама пуçларĕ Коля.

—Малтан эсĕ ху ялти пурнăç çинчен каласа пар. Пĕлесчĕ сан эпĕ кунта мĕнле тунсăхласа пурăннине, халь тесен халь таврăнăттăм.

—Апла-тăк мĕн тытса тăрать сана кунта?

—Хам та пĕлместĕп. Юрату тени ытла та тарăн йĕр хăварчĕ пулас, çавна пулах ялтан килтĕм,—куçĕсене вайсăррăн антарчĕ хĕр кăштах чĕнмесĕр ларнă хыççăн.—Ну, мĕн кĕттеретĕн, пуçла,—тăруках йăлăннăн сассине улăштарса пуçне çĕклерĕ вăл.

Коля вилкине турилкке çине хурса çиме чарăнчĕ.

—Чăнах та, юратушăн пулсан, эсĕ кунта текех пĕр сехет те тытăнса тăмăн, тусу патне вĕçтерĕн. Çук, эпĕ юриех нимĕн те каламăп, яла таврăнсан, сана хăвна курăнĕ. Халиччен мĕнле пурăннине каласа кăтарт-ха. Ку вара кăсăклăрах пулĕ. Мĕн чухлĕ кулянтармарăн-ши пире?

—Кирлĕ мар, Коля. Эсĕ манран темĕн пытаратăн-ха, пĕлессӳ килсен, эпĕ каласа пани саншăн çав тери кичем пулĕ.

Каччă хурав памарĕ.

—Мĕншĕн мана тертлентеретĕн-ши? Мĕн калас тенине тӳрех, пĕр шахвăртмасăр, пытармасăр кала. Хăвăртрах,—тархаслама пикенчĕ Валя.

—Мĕн пытармалли пур кунта? Эсир иксĕр те пĕчĕк ачасем пек хăтланатăр. Хăвăр туйăмăрсене кирлĕ чухлĕ тĕрĕслеймен, пĕр-пĕрне ăнланмасăрах уйрăлма шутланă. Халĕ ав, пĕри ялта нушаланать, кашни каç сирĕн кил умне пырса ларса, адрес та пулин пĕлесшĕн çунать. Тепри акă каччишĕн çеç мар, ялшăн та тунсăхласа çитнĕ.

—Çук, çук, секретарь юлташ, кама-кама та, сана эпĕ лайăх пĕлетĕп-ха. Мĕнле те пулсан илĕртсе яла тавăрасшăн ĕнтĕ эсĕ мана, шăпах ыратакан вырăна пусатăн тата. Хама мĕнле йывăр пулсан та, Сашăна манасах пулать. Мĕн тăвасха ман , чăн-чăнах юрату шăпи çапларах килсе тухнишĕн.

—Валя, нивушлĕ эсĕ çынна шанми пултăн? Сана Саша чăнласах та кĕтет. Ĕненмесен, акă унăн çырăвĕ, тăруках пама шутламанччĕ, тен, унсăр та ĕненĕн, терĕм.

Тирпейлĕн тăваткăллатса чикнĕ хут листине курсанах, Вальăн çавракка пичĕ улшăнчĕ, куçĕсем çинче савăнăç шевли палăрчĕ, тутисем илĕртӳллĕн кулчĕç. Вăл чăлт шурă, çинçерех пӳрнисемпе çырăва уçрĕ, куç шăрçисене сăмахсем

çинчен сиктере-сиктере вуларĕ. Коля çак вăхăтра ун çинчен куçне илмесĕр сăнарĕ, хĕрпе пĕрле савăнчĕ, хĕпĕртемеллипех хĕпĕртерĕ. Унăн умне темиçе çул каяллахи çуллахи кунсем тухса тăчĕç. Мĕншĕн аса килчĕç-ши вĕсем, тен, умĕнче ларакан Валя хăйĕн каччине çав тери юратнишĕн-ши? Авă ун куç шăрçисем епле сикеççĕ: пĕрре малалла, тепре каялла.

Ун чухне Коля вуннăмĕш класс пĕтернĕччĕ. Лида тин çеç университетри медицина факультечĕн пĕрремĕш курсне вĕçлесе, вĕсем патне килнĕччĕ. Каччăпа хĕр пĕрле алла-аллăн тытăнса, иккĕшĕ те çырма леш енчи Кĕçĕн Патăръел çаранĕ енне уçăлма кайрĕç. Хĕвеллĕ те шăрăх кунччĕ, тӳпере пĕр пĕлĕт татăкĕ те курăнмастчĕ. Таврари вĕçен кайăк сассин янăравĕ кăмăла татах та çĕклетчĕ. Кунта ĕлĕк вăрман кашласа ларнă, вăйлă пушар вăхăтĕнче çунса кайнă теççĕ. Ку тĕрĕсех пулĕ, халĕ те йывăç тĕмескисем çĕрĕшсе пĕтмен, çавна пула çĕре сухаламан та. Шăпах çак тĕмескесем патĕнче чарăнса пĕр-пĕрне куçран пăхрĕç те ĕнтĕ Кольăпа Лида. Вĕсене чăн-чăн юрату кăварĕ хыпса илчĕ тейĕн. Ун чухне халь Коля умĕнче ларакан Вальăн куç шăрçисем шурă хут çинчи сăмахсем çийĕн сикнĕ евĕр, алла-аллăн тытăнса, пĕр-пĕринчен уйрăлмасăр тĕмеске çинчен тĕмеске çине сикрĕç. Çук, вĕсем таçта аякка каймарĕç, хăйне евĕр тăваткал туса, çав тăваткал ăшĕнче чупрĕç. Пĕр вырăна темиçе хутчен те таврăнчĕç пулĕ. Халĕ çав тăваткал листине аса илтерчĕ.

Акă Вальăн куçĕсем юлашки сăмах çинче чарăнчĕç, вĕсене шурă хут çинче çырнă сăмахсенчен илме хăяймасăр, вăл чылайччен пĕр çĕре тинкерсе ларчĕ. Пĕр вăхăт хушши Сашăна унăн ĕненес килмерĕ-ши?..Чим-ха, ун чухне Кольăпа Лида та, тăруках чарăнса, каллех пĕр-пĕрне куçран пăхрĕç, унтан кавир пек çерем çине ларчĕç. Хĕр таврăннишĕн савăнăçне пытарма пĕлмен каччă часах аллисене пуçĕ айне чиксе, месерле выртрĕ. Ун пуçĕ тăрринче çунаттисемпе пăлтăртаттарса тăри юрларĕ, хăйĕн патне çӳле, таçти инçетри кăвак тӳпене чĕнчĕ. Вăл пĕрре хăпарса, тепре аялалла анса илĕртрĕ. Кольăн мĕнпур вăйĕ çитнĕ таран кăшкăрас, савнине татах та ытларах юратнине пĕлтерес килчĕ. Чăтса тăраймарĕ, çумĕнче ларакан Лидăна аллисемпе ыталарĕ те ачашшăн хăйĕн кăкăрĕ çумне чăмăртарĕ, тутисем шăппăн, таврара никам курăнмарĕ пулин те, такам тем илтесрен шикленсе, юрату çинчен пăшăлтатрĕç. Лидăн сылтăм енчен усăнса аннă çивĕчĕ пит-куçран сĕртĕнчĕ, татах та хытăрах чăмăртама илĕртрĕ.

Тен, Вальӑн та халӗ каччи ҫумне туртӑнас, ун ытамне лекес килчӗ пулӗ. Акӑ вӑл, чӗрӗ япалана ачашланӑн, хут листине икӗ аллипе чӑмӑртаса кӑкӑрӗ ҫумне тытрӗ. Хӑй те сисмерӗ, Коля илтмеллех ҫине-ҫине тутисене чӗтрентерсе «юрататӑп, юрататӑп» терӗ. Куҫӗсем савӑнӑҫ куҫҫулӗпе тулчӗҫ. Кам сӑмахӗсем пулчӗҫ-ши кусем? Коля ӑна ӑнланаймарӗ, мӗншӗн тесен ҫыру вӗҫӗнче те ҫакӑн пек сӑмахсемччӗ. Те унти йӗркесене, те хӑйӗн туйӑмне ҫакӑн пек палӑртрӗ хӗр? Саша ӗнер каҫхине, тусӗ темиҫе кунлӑха Шупашкара каяссине пӗлсенех, ҫыру ҫырма ларчӗ. «Вальӑна курмасӑр каялла ан таврӑн,-терӗ.-Тӗл пулсан, малтан сӑмахпа ӗнентерме тӑрӑш, ӗненмесен, ҫак ҫырӑва пар»,— астутарса каларӗ вӑл.

Валя ура ҫине тӑчӗ. Унӑн сӑн-пичӗ ҫаплах-ха улшӑнмарӗ, савӑнӑҫпа ҫиҫрӗ.

—Коля, мӗнпе тав тумаллине те пӗлместӗп, каҫар ӗнтӗ мана,—каччӑ ҫине хӑюсӑррӑн пӑхса илчӗ хӗр.—Кала-ха, ӗнесем пурте йӗркеллех-и?

Коля унӑн шухӑшне ӑнланчӗ:

—Йӗркеллех, Валя, йӗркеллех, хӗрсем те сана кӗтсе ывӑнчӗҫ.

—Тавтапуҫ.

Малалли калаҫу ҫыпӑҫмарӗ. Тин ҫеҫ ял пурнӑҫӗшӗн ҫунакан хӗре текех нимӗн те илӗртмерӗ тейӗн, куҫӗ умӗнче вӑл савнине курчӗ, хӑвӑртрах унпа тӗл пулма ӗмӗтленчӗ.

—Валя, эсӗ ӑҫта ӗҫленине пӗлтӗм ӗнтӗ, пушӑ вӑхӑт тупӑнсанах килӗп, халь анне патне больницӑнаваскатӑп.

—Кил, кил, эпӗ пулмасан, урӑххисем сана кӗтсе илӗҫ,— кулчӗ хӗр.

Коля тӑваттӑмӗш номерлӗ троллейбус ҫине ларса больницӑна ҫул тытрӗ. Ун умне каллех чирлӗ амӑш сӑнарӗ тухрӗ. Ашшӗ ӑҫта-ши, тен, вӑл мӑшӑрӗн койки пуҫӗнчен хӑпмасӑр, кунӗ-кунӗпе ларать пулӗ?

Каччӑ чӗтре-чӗтре, шурӑ халат тӑхӑнсан, сестра хыҫҫӑн больница картлашки тӑрӑх хӑпарчӗ.

—Акӑ кунта,—терӗ вӑл аллипе палата тӗлне кӑтартса,— анчах та, май килнӗ таран, шӑпрах пулма тӑрӑшӑр, халӗ сирӗн аннӗршӗн чи хакли — канӑҫлӑх.—Унтан тем аса илнӗн:—чим-ха, мансах кайнӑ, унта сирӗнсӗр пуҫне тата тепӗр ҫулланнӑ арҫын пур.

Коля, калаҫу кам пирки пынине тавҫӑрса илнӗскер, ӑна пӳлсех:

—Манӑн атте вӑл,—терӗ.

—Аҫăр?—тĕлĕннĕ пек пулчĕ сестра,—ҫав тери чăтăмлăскер вара вăл сирĕн. Икĕ талăк хушши ĕнтĕ пĕр куҫ хупми аннĕрпе пĕрле.

Коля хирĕҫ нимĕн те чĕнмерĕ, темрен шикленнĕ евĕр, палата алăкне уҫса, шала кĕчĕ. Сергей Иванович, ăна хирĕҫ ҫурăмпа вырнаҫнăскер, пуҫне чиксе тĕлĕрнĕ евĕр ларчĕ, ывăлĕ кĕнине те туймарĕ. Тен, чăнахах та, тĕлĕрет, икĕ талăк хушши куҫ хупмасăр ларать терĕ-ҫке сестра, улталамасть ĕнтĕ. Вăл малалла иртме хăяймасăр пĕр вырăнта чарăнса тăчĕ.

Унăн умĕнче шурă простыньпе витĕннĕ, паламалла мар улшăннă амăшĕ выртрĕ. Пит ҫăмартисем путса кĕрсе илемсĕрленнĕ. Кăкăрĕ ҫине хунă аллисем юн тымарĕсемпе карăнса, татах та хытканнăн курăнчĕҫ, шăммипе ӳчĕ ҫеҫ юлнă тейĕн.

—Аннеҫĕм,—аран-аран вăй ҫитерсе малалла утса кайрĕ Коля, анчах та ку сăмах мĕнле тухнине хăй те сисмерĕ. Ытлашши тĕлĕннĕрен, шелленĕрен пулас.

—Ҫитрĕн эппин,—пуҫне ҫĕклерĕ Сергей Иванович, ывăлĕ сассине илтсе,—эпĕ сана килеймест пулĕ тесеччĕ,—сывлăх сунма манса, ура ҫине тăчĕ вăл.

Амăшĕ ҫаплах-ха хускалмарĕ. Унăн ҫийĕнчи простынь, паҫăрхи пекех лăпкăн, кăшт ҫеҫ палăрмалла пĕрре хăпарчĕ, тепре анчĕ.

—Ыратнине манса ҫывăрма тăрăшать пулĕ. Паҫăртанпах-и?—кравать вĕҫĕнче чарăннă май ыйтрĕ Коля.

—Паҫăртанпах, икĕ талăк хушши ĕнтĕ тăна кĕреймест, юн тымарĕнчен глюкозăпа витамин янипе ҫеҫ пурăнать,—куҫĕсене арăмĕ ҫине антарчĕ Сергей Иванович.

Сăмах вĕҫленчĕ. Мĕн калаҫма пултарччăр-ха ĕнтĕ вĕсем, пурте куҫ умĕнче. Коля пӳлĕмри япаласене сăнарĕ. Койка пуҫĕнчи тумбочка ҫинче ашшĕ хăйĕнпе илсе килнĕ чечексене, вĕсем шанса ларнине курсан, ывăлĕн чĕри ыратса кайрĕ. Шанмасăр, этем кунҫулĕ те унăн ăш-чиккине темĕн чухлĕ эмел ярсан та, вăхăт ҫитсен, ҫак чечексем пекех, вĕҫленет-ҫке-ха.

—Врачсем нимĕнпе те пулăшма пултараймĕҫ-ши, аттеҫĕм? Нивушлĕ ҫапла пирĕн куҫ умĕнчех аннен кун-ҫулĕ ĕмĕрлĕхех татăлĕ?—чунĕ ытла та хурланнăран чăтса тăраймарĕ ывăлĕ.

—Кирлĕ мар ун ҫинчен калаҫма, пурте йĕркеллех пулĕ-ха.

Вăхăт сисĕнмесĕр шурĕ. Пӳлĕме паҫăрхи сестра кĕчĕ, шăплăха пăсасран шикленнĕ евĕр, хăюсăррăн пĕр вырăнта

тăчĕ, унтан Коля патне пычĕ те май килнĕ таран ачаш пулма тăрăшса:

—Çамрăк çыннăм, эсĕ пилĕк минутлăха çеç кĕртме ыйтрăн, ху вара çур сехет ытла ларатăн,—терĕ.

—Ывăлăм, эпĕ кунтах юлăп, пурпĕрех иксĕмĕре хăвармĕç, çитменнине тата сан ыран кунĕпех çынсен хушшинче пулмалла,—сестра сăмахĕсем çумне хушса хучĕ ашшĕ.

—Юрĕ,—килĕшрĕ Коля вĕсемпе. Унăн тӳрех тухса каясси килмерĕ, амăшĕн ачаш та ырă сассине илтес килчĕ, анчах та шел, çакна кĕтсе илеймерĕ. Ывăлĕ йывăррăн, темле пысăк ĕç туса ывăннă хыççăнхи евĕр, алăк еннелле утрĕ.

—Чим-ха,—чарчĕ ăна ашшĕ темĕн аса илсе,—кунта сана валли çыру пур.

Кольăна ку хыпар тĕлĕнтерчĕ, анчах та вăл ăна палăртмарĕ, тăваткăллатса хуçлатнă хут листине кĕсйине чиксен, палатăран тухрĕ, çырăвне кам парса хăварнине те ашшĕнчен ыйтмарĕ.

Сергей Иванович паçăрхи пекех пукан çине ларса куç илмесĕр арăмне сăнарĕ, шухăша путрĕ. Кам шутлама пултарнă-ха, телейлĕ те савăнăçлă, тĕрĕс-тĕкел пурăннă чух вăл çакăн пек йывăр чирлесе ӳкессе? Вăхăтра сиснĕ пулсан, май килнĕ таран хăвăртрах пулăшма, сыватма тăрăшнă пулĕччĕ. Нивушлĕ паянхи куна çитсе те панкреатитран сывалма эмел тупайман? Ĕнер врачсем Киевра çак чиртен сиплекен ăста хирург пур, терĕç. Кăштах сывлăхĕ самайлансанах ун патне илсе кайăттăм. «Сана чĕртессишĕн хам сывлăха, пурнăçа та пама хатĕр эпĕ»,—аллисемпе çаплах пуçне тытса шухăшлама чарăнмарĕ упăшки. Пӳлĕмри шăплăх унăн чунне тата та хытăрах ыраттарчĕ. Ывăлĕ палатăна кĕрсен кăштах çăмăлтарах пекчĕ. Халĕ пур шанчăк та арăмĕ куçне уçса ăшă сăмах калассинче, çакна кĕтсе ĕнтĕ вăл шанăçа çухатмасăр, икĕ талăк хушши унран уйрăлмарĕ.

Коля больницăн алăкне хупса урама тухрĕ, пĕрремĕш хут кунта лекнĕ çын пек, ăçта каяссине те пĕлмерĕ.

—Коля, тетĕп, нивушлĕ паллами пултăн?—янăрарĕ ун хыçĕнче чуна питĕ çывăх сасă.

Вăл çаврăнса пăхрĕ.

—Лида!—тĕлĕннĕрен чутах кăшкăрса ямарĕ вăл.—Ăçтан лекме пултарнă эсĕ кунта?

—Çак ыйтăвах сана парасшăнччĕ. Хула çынни вĕт, халĕ тата кунта практикăра,—каччăпа тĕл пулнăран хĕпĕртенĕ евĕр сăн-питне çутăлтарчĕ çамрăк хĕрарăм.

—Эпӗ анне патне килсеччӗ. Чирлесе ӳкрӗ. Кунта выртать,—ытла та хурлăхлăн тухрӗ каччăн сасси.

—Илтсеччӗ-ха. Паян аҫуна та куртăм. Санăн ăҫта каймалла?

—Хăть ăҫта кайсан та, халь маншăн пурпӗрех.

—Эпӗ сана паллаймастăп. Коля, нивушлӗ арҫыннăн ҫирӗп кăмăлӗ ним чухлӗ те сыхланса юлман чунунта? Тен, пурте йӗркеллех пулать. Ҫапла пуҫа усма юрать-и вара? Атя, пӗреххут, кăмăлна пусармалла пӗрле утса ҫӳрер.

Лида ачашшăн та ҫепӗҫҫӗн сăмахларӗ. Каччăн тунсăхне сирсе яма халӗ шăпах унăн чӗлхи ҫитеймест тейӗн. Вăл темиҫе ҫул каяллахи пекех Кольăна хулран тытрӗ, хулпуҫҫийӗпе ун ҫумне перӗнчӗ.

Каччă килӗшрӗ, анчах та вăл утнă май мӗн пирки сăмах пуҫармаллине тавҫăрса илеймерӗ. Шăпах ҫак ҫумри хӗрарăм пулчӗ те ӗнтӗ унăн пӗрремӗш юратăвӗ. Халӗ акă темиҫе ҫул хушши чуна тунсăх пусса тăнă хыҫҫăн, иртсе кайнă телейлӗ кунсем каялла таврăннăн туйăнчӗҫ. Самантлăха пурте манăҫа тухрӗҫ. «Мӗншӗн кӗтсе илеймерӗн-ши эсӗ мана? Санпа чух эпӗ ҫӗр ҫинчи чи телейлӗ, ҫӗнӗрен ҫуралнă ҫын пекех туяттăм»,—ҫак шухăшсемпе вăл Лидăна ӳпкеленӗн куҫӗнчен пăхрӗ. Вăхăт чылай иртнӗ пулсан та вăл темиҫе ҫул каяллахи пекех ҫап-ҫамрăк, хитре. Пысăк кăвак куҫӗсем йăлтăртатса хӗм сапаҫҫӗ, хитре тутисем илемлӗн те ачашшăн кулаҫҫӗ, йӗтӗн тӗслӗ сарă ҫивӗчӗ ҫеҫ ҫук халӗ. Вăл ҫӳҫне кӗскен кастарса кăтралатнă. Ҫакă ăна татах та илемлетет, ҫулӗпе кăшт аслăлатса ҫитӗнсе ҫитнӗ хӗрарăм евӗр кăтартать.

—Пӗлетӗн-и, Коля, эпӗ санпа тахҫанах тӗл пуласшăнччӗ, паянхи кун ҫитессе чăтаймасăр кӗтрӗм. Анчах та хăвна ҫартан кӗтсе илейменшӗн каҫарма пултарăн-ши эсӗ мана?

—Кирлӗ мар, Лида. Ун ҫинчен кайран калаҫăпăр. Халь тин нимӗн те улшăнаймӗ.

—Чăнах та-и?—темрен хăранă евӗр шикленсе ыйтрӗ хӗрарăм.

—Пӗлместӗп. Атя пӗреххут иртнӗ кунсене аса илмелле уҫăлса ҫӳрер. Хула ҫамрăкӗсем ҫуллахи кунсенче пурте тенӗ пекех Атăл хӗрринче, эпир вӗсенчен мӗнрен кая?

Лида унăн сӗнӗвӗпе килӗшрӗ.

Вӗсем, хӗрпе каччă евӗр, васкамасăр ҫыран хӗррипе утрӗҫ. Анса ҫитеймен хӗвел юлашки хут лăпкăн хумханакан Атăл ҫине пăхас тенӗ евӗр, пӗтӗм ҫуттине сапаларӗ, шыв ҫинче вăл тӗкӗр пекех йăлтăртатрӗ. Шăпах ҫак вăхăтра Атăл варринче кимӗ ишрӗ, вăл, сăмсине каҫăртса, хӗвел ҫинче

çутатакан куçкёски пек шыва çурмалла касса икĕ енне çуркалантарчĕ, анчах та ку нумая пымарĕ, хумсем аяккалла шуса иртсенех, çĕмрĕк йĕр çухалчĕ, паçăрхи пекех йăлтăртатрĕ.

Лида шухăшлăн утрĕ. «Коля, астăватăн-и, санпа пĕрремĕш хут эпир шăпах çакăн пек илемлĕ вăхăтра паллашнăччĕ. Ун чух Пăла хĕрринче воллейболла вылянттăмăр. Эсĕ ман çине темшĕн тĕлĕнсе, илĕртӳллĕн пăхрăн. Эпĕ çакна сисрĕм, анчах та палăртмарăм, чĕререн савăнтăм çеç. Çав каçах урама чĕнессе те кĕтрĕм, туйрăм, анчах пымарăн. Çĕрĕпех çывăраймарăм пуль ун чухне, ыйăх килмерĕ. Тул çутăличчен ĕмĕтлентĕм, хăвăртрах санпа тĕл пулас килчĕ, тепĕр кунне, каç пуличченех Пăла хĕррине чупрăм. Ун чухне, шăпах паянхи пек, хĕвел хăйĕн çутине шеллеместчĕ, çывăхра вĕçенкайăк юрри илтĕнетчĕ. Пăла та, хальхи Атăл пек, ялкăшатчĕ, анчах та вăл лăпкăн юхатчĕ, пулăсем çеç хутран-ситрен вылямалла сывлăша сиксе тухатчĕç те, темрен хăранă пек, каялла чăматчĕç. Таврара никам та çукчĕ, пĕр сана курас шанчăкпа çеç, эпĕ çыран тăрăх каллĕ-маллĕ утса çӳрерĕм, кĕтрĕм. Эсĕ килес шанчăка пĕр самантлăха та çухатмарăм.»

Коля Лидăн шухăшне ăнланнăн ăна çапларах хуравларĕ: «Эппин, эпир иксĕмĕр те пĕр-пĕрне пĕрре курсах юратса пăрахнă. Мĕншĕн-ха халĕ пирĕн çулсем уйрăм? Акă эсĕ çемьеллĕ, ачу та пур ĕнтĕ. Эпĕ вара çаплипех пĕччен. Сана, пĕр сана çеç чунтан юрататăп. Сансăр пуçне мана никам та кирлĕ мар! Халь тесен халь пĕрле алла-аллăн тытса утма хатĕр, анчах та, Атăл варринчи кимĕ хума çурнă пек, çемье пурнăçне ватма юрамасть, йывăр пулин те чăтса ирттерĕп.»

Лида çаплипех хăйĕн шухăшĕсен тыткăнĕнчеччĕ. «Пĕлсемччĕ, Коля, манăн пурнăç кĕрхи кунсем пекех, тĕксĕм иккенне. Çынсем качча кайса çемьеллĕ, ачаллă пулаççĕ. Эпĕ вара тăлăх хĕрарăм пекех. Упăшка пурри те чуна тивĕçтермест. Акă сана курсан, çĕнĕрен телей çитрĕ тейĕн, ĕлĕкхи евĕрлех, туйăм çивĕчленчĕ, пĕтĕм таврари çын илтмелле кăшкăрас килет: «Пĕр санпа, пĕр санпа çеç телейлĕ эпĕ!». Анчах та шухăшне вĕçлеймерĕ çамрăк хĕрарăм. Атăл енчен вĕрнĕ уçă çилĕ ăна татрĕ тейĕн. Вĕсем самантрах ылмашрĕç. Пуç çĕнĕлле, тин çеç урăлнă çыннăнни евĕрлех шутларĕ: «Мĕн хăтланатăп-ха эпĕ?» Каччăна хулран тытса унпа çуммăн çӳрейменшĕн кам айăплă-ши? Хăй вĕт-ха. Кольăна çартан пĕр çулталăк хушши кĕтмеллеччĕ, анчах та чăтса пурнаймарĕ, качча тухрĕ. Пулас

упăшкипе нумай çӳреймерĕç, паллашнă хыççăн виçĕ уйăх иртсенех пĕрлешрĕç. Малтанласа юратнă пекчĕ, лешĕ мăшăрланма сĕнӳ парсанах хирĕçлемерĕ, килĕшрĕ. Ашшĕ-амăшĕ ырă сунса васкама кирлĕ мар тенине те хăлхана чикмерĕ. Кам-ха ăна качча тухма васкатрĕ? Халĕ акă хĕрарăм пулса тăнă. Çемьеллĕ çыннăн савăнăçĕ чĕрке çинче ача сиктернинче, анчах та Лида çак телее туйĕ-ши? Унăн упăшки нихçан та атте пулаймасть-çке-ха, пулас тесен те. Ку хыпар, чăнласах, çамрăк хĕрарăма хурлантарчĕ. Нивушлĕ вăл, сывă та тĕреклĕскер, хăйĕн тивĕçне пурнăçлаймĕ: алла ача илеймĕ, унăн вараланнă кипкисене çăваймĕ? Нивушлĕ ĕмĕрне килте ача-пăча сасси илтеймĕ? Çакăншăн çуралса ӳснĕ-ши вара? Çук, пĕрре те ĕненес килмест.

Икĕ çамрăк хăйсен шухăшĕсен тыткăнĕнче пулчĕ.

—Коля,—сăмах хушрĕ Лида,—атя ман пата кайса ларатпăр. Килте никам та çук, çитменнине каçа хирĕç çанталăк та кăштах сулхăнлатнăн туйăнать.

—Санăн упăшку пур. Сире чăрмантарма аван мар. Кӳршĕсем мĕн калĕç, мăшăру мĕн шутлĕ?—хирĕçлерĕ Коля.

Лида хăйĕн сĕнĕвне улăштарма шутламарĕ:

—Петя çур çула Новосибирскине практикăна кайнă, пурпĕрех халех килес çук. Кӳршĕсем пирки шутлама та кирлĕ мар, пирĕн, пĕр пӳлĕмлĕ пулсан та, хамăрăн хваттер.

Вĕсем паçăрхи пекех пĕр-пĕрне хулран тытса Лидăсен килĕ еннелле утрĕç.

Лида Çеçпĕл урамĕнче пурăнать. Хваттерĕнче газ, ăшă шыв, ванна — мĕн кирли пурте пур. Анчах та этеме çак хăтлăхсемсĕр пуçне урăххи, чĕрешĕн чи çывăх çын, пурнăç илемĕ —ăшă юрату — пулни кирлĕ. Шăпах çакă çитмерĕ те ĕнтĕ Лидăна. Уншăн пурнăç кунран-кун кичем те йăлăхтарнăн туйăнчĕ. Çамрăк хĕрарăмăн пĕр минут та вырăнта ларса тăрас килмерĕ, чунне яланах тунсăх пусса тăчĕ.

Акă халĕ Кольăна тĕлпулсан хăйне хăй çĕнĕрен çуралнăнах туйрĕ, сăн-пичĕ уяв вăхăтĕнчи пек çиçрĕ, вăл шăпах çак куна, çак саманта халиччен кĕтнĕ тейĕн. Унăн каччăран уйрăлас килмерĕ. Коля мĕн ыйтнине пĕтĕмпех пурнăçлĕччĕ, тĕрĕссипе ӳчĕпе те парăнма хатĕрччĕ вăл ăна, пăрăнса ан кайтăр çеç. «Халь эсĕ маншăн çутă хĕвел, таса пĕлĕт, савăнăç шевли,—каччă çумне ларса хăлхаран пăшăлтатас килчĕ Лидăн,—Епле-ха маларах туйман эпĕ çакна? Хам ăна юратнă пулин те, пĕлмен туман çынна качча тухнă. Мĕн калăн-ши эсĕ, Коля, ман туйăма, шухăш-кăмăла,

упӑшкана юратманнине пӗлсен, каҫарӑн-ши?» Ҫак шухӑшсен тыткӑнӗнче пулнӑскер, кӑштах лӑплансан вӑл васкаса сӗтел ҫине ӗҫме-ҫиме, холодильникрен коньяк кӑларчӗ.

—Лида, ан чӑрман-ха, пурпӗрех нумай ларас ҫук. Гостиницӑра юлташсем кӗтеҫҫӗ.

—Тӗлпулнӑ ятпа та пӗрер рюмка ӗҫесшӗн мар-и? Эппин, мана курнишӗн питех хавасланмастӑн та эсӗ. Хӑв пӗрмаях юрататӑп, халь те юратма хатӗр тетӗн,—чӑнласах ҫапла шутларӗ пулин те, сӑмахне шӳтлӗн калама тӑрӑшрӗ Лида.

«Саншӑн яланах шӳтлесе пултӑр, сиссемччӗ эсӗ манӑн туйӑма. Больницӑран тухсан акӑ ҫухалсах кайрӑм, мӗн тумаллине те, ӑҫталла ҫул тытмаллине те пӗлмерӗм, маншӑн пурте тӗттӗм курӑнчӗ. Ҫӗнӗ вӑй-хӑват, ҫӗнӗ кун парнелерӗн эсӗ мана, курасчӗ сан ҫакна!—куҫ илми сӑнанӑ май хаш! сывларӗ каччӑ.—Пӗреххут мӗншӗн тӗл пултӑм-ши сана? Иртнӗ тӗлпулусем манӑҫа тухнӑ пекехчӗ ӗнтӗ».

—Ҫук, Лида, ӗҫме эпӗ хирӗҫ мар, тен, юрататӑп тени те тӗрӗсех, анчах та чуна ыраттарнисӗр пуҫне мӗн парӗ-ши вӑл пире?

«Чӑнласах юратать пулмалла, авӑ куҫӗсем мӗнле ҫиҫеҫҫӗ, пичӗ ҫеҫ темшӗн пӑлханнӑ пек, тен, ытлашши хумханнӑран? Эппин, пирӗн юрату хӗлхемӗ сӳнмен, тен, каҫарӗ? Саватӑп, хам та унран кая мар юрататӑп-ҫке-ха эпӗ ӑна. Качча кайнӑ чух мана темле вӑйӑ вылянӑн ҫеҫ туйӑнчӗ, хамӑн ҫамрӑк, хаваслӑ хӗр кунӗсене ӗмӗрлӗхех ҫухатасса нихӑҫан та пуҫра тытман, кун пирки шутламан та пулӗ. Кайран тин, кая юлсан та, мӗн туса хунине туйса илтӗм, Кольӑн сӑнӗ те аякран аякка тарнӑн туйӑнчӗ. Акӑ халь вӑл каллех ман умра, ун ҫине чун ыйтнӑ чухлӗ пӑхма та, ачашлама та никам та чармӗ, алӑка ҫеҫ питӗрес».

—Сана кун пек килӗшет-и?—Коля ҫумне ларса аллисене ун хулпуҫҫи ҫине хучӗ вӑл.

—Ӑнланмастӑп, мӗншӗн питӗрӗнсе лармалла-ха? Ку сирӗн хӑвӑрӑн хваттер пулсан, пурпӗрех пире кунтан никам та хӑвалас ҫук.

Лида ӑна каласа пӗтерме памарӗ, каччӑ ҫывӑхнерех ларса янахне аллисем ҫине хучӗ те:

—Нимӗн те ӑнланмастӑн эсӗ, Коля. Эпӗ сана юрататӑп-ҫке, тухса тарасран шикленетӗп, ҫавӑнпа ҫеҫ,—терӗ.

—Ҫавӑнпа ҫеҫ-и? Чӑн-чӑнах манӑн юратуран кулма шутламарӑн-и эсӗ? Тен, хӑвӑн патна ҫывӑрма хӑварасшӑн?—чеереххӗн куҫ хӗссе, хӗрсе кайма пуҫларӗ Коля.

Ку калаçу ырăпа вĕçленмессине сиссе, Лида ăна урăх енне куçарма тăчĕ.

—Ну, çитĕ, çитĕ, атя, пĕреххут ĕçер. Эсĕ арçын, хуçа вырăнĕнче пул,—ун умне эрех кĕленчипе пушă рюмкăсем шутарса лартрĕ вăл.

Иккĕшĕ те тĕл пулнă ятпа тулли черккисене харăссăн çĕклесе шаклаттарса ĕçрĕç.

Вăхăт малаллах шурĕ. Акă Кольăн кайма та вăхăт çитрĕ, анчах та унăн хăй чунтан юратакан хĕрарăма пĕччен хăварас килмерĕ. Вăл минутсерен каччăшăн çывăхланса, чиперленсе пычĕ, юрату хĕлхемĕ тени унчченхинчен те вăйлăраххăн çунчĕ. «Çук, хăвăртрах каяс пулать кунтан. Юлташсем те кĕтеççĕ. Паллах, Лида хăйĕн патне хăварма хирĕç мар. Енчен те кунта юлас пулсан, тĕрĕс тăватăп-ши эпĕ? Çук, тинех Лида та пĕччен мар, унăн упăшки пур. Вĕсен хушшине кĕрсе, çемье пурнăçне, паçăрхи кимĕ хумсене касса ваклană евĕр, аркатас мар. Ан тив, иртнĕ юрату, çул маякĕ пек, янкăр çутă пулса, аса-илӳре çеç юлтăр. Каясах пулать»,—çак шухăшăн çирĕплĕхне пăхăнса, вăл ура çине çĕкленчĕ.

—Коля,—шартах сиксе ӳкрĕ Лида, паçăртанпах каччи тухса каясран шикленнĕскер,—Мана пĕчченех хăварас тетĕн-и? Ан кай, чĕререн ыйтатăп, енчен те вăтанатăн пулсан, эпĕ сана валли уйрăм вырăн сарса парăп. Нивушлĕ яланлăхах уйрăлатпăр-ши эпир? Савнийĕмçĕм, мана сансăр пуçне никам та кирлĕ мар. Эсĕ, пĕр эсĕ çеç манăн пулас ачан ашшĕ пулма пултарăн, пĕр сана çеç чунтан парăнма хатĕр эпĕ,—каччăна майран ыталаса илсе кăкăрĕсемпе ун çумнелле çыпăçрĕ хĕрарăм, вĕри тутисем чуптăвасшăн пулчĕç.—Юлсамччĕ,—пăшăлтатнă май чĕтренчĕç вĕсем.

Кольăна малтанласа ун çине пăхма шел пек туйăнчĕ, ăна хăй çумне темрен хӳтĕленĕ евĕр, чăмăртас, ачашлас, юратас килчĕ, анчах та Лидăн юлашки сăмахĕсем ăна тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕç, шухăша ячĕç. «Пĕр эсĕ çеç ман пулас ачан ашшĕ пулма пултарăн».

—Мĕн калаçатăн эсĕ, Лида?—хăвăртрах урăлтарас тенĕ евĕр тĕртрĕ вăл ăна хăй çумĕнчен, анчах та Лида унран хăпасшăн пулмарĕ.

—Пĕр эсĕ çеç,—каллех çав сăмахсенех каларĕ вăл çĕнĕрен ун çумнелле çыпçăнса,—пĕр эсĕ çеç...

Каччă вăйлă аллисемпе черчен пӳ-силлĕ хĕрарăма хыттăнах аякалла тĕртсе ячĕ, умра мĕн пулнине курмасăр, хăвăрттăн çаврăнса, алăк патнелле утрĕ. Ăна шăлтăр-шалтăр уçса, хăй хыççăн хыттăн хупрĕ.

Лида вырăн çине сулăнса ÿкрĕ, самантлăха мĕн пулса иртнине те ăнланаймарĕ, хыттăн шалтлатса хупăннă алăк сасси ăна тăна кĕртрĕ тейĕн.

«Мĕн туса хутăм-ха эпĕ? Нивушлĕ маншăн каллех тĕксĕм кунсем пуçланчĕç? Пĕртен-пĕр юратăва та упраймарăм иккен. Уншăн кам айăплă-ха? Паян кунччен пĕрлештерсе тăракан çинçе çип те яланлăхах татăлчĕ. Никам та мар, хам çеç айăплă. Мĕншĕн пÿрме пултарнă телее аркатма çав териех васкарăм-ши эпĕ?»

Лидăн илемлĕ пичĕ тăрăх, шăрçа пек, куççуль тумламĕсем чупса анчĕç, чĕрери вут-çулăм татах та хытăрах, хĕрÿллĕрех çуннăран, пит çăмартисем хĕрелчĕç. Те çак хĕрÿлĕхе, те вĕри куççуль тумламĕсене пытарас тесе, хĕрарăм пуçĕпе минтер çине ÿкрĕ, пурпĕрех лăпланаймарĕ, черчен çан-çурăмне чĕтрентерсе, ĕсĕклесе йĕме пуçларĕ.

—Пуриншĕн те хам айăплă, каçар, савниçĕм.

Коля, урама тухсан, хăй мĕн тунине аса илес тенĕ евĕр, чарăнса тăчĕ. Ун куçĕ умĕнче çаплах-ха илĕртÿллĕ Лида тăчĕ. Ытла та кăра хăтланчĕ пулĕ, тĕртсе яма кирлĕ марччĕ, лăпкăн ачашласа çывăрма вырттармаллаччĕ ăна. Юратать, чăнласах та юратать вăл. Ÿсĕр хĕрарăмран тем те кĕтме пулать. Енчен те вĕсем паян çывăхланнă пулсан, каччă Лидăна яланлăхах çухататчĕ. Кольăн ăна хăйĕнчен тартас, таса юратăвĕнчен кулас килмерĕ, тен, çавна пулах, пĕтĕм шухăш-кăмăлне çĕнтерсе, суя илĕртÿрен хăпса, тĕртсе ячĕ. Лида чăнласах юратса каларĕ пулсан, мĕншĕн-ха унăн ÿсĕрĕлсен çеç сыпăçмалла?

Тĕттĕмленнĕ, шăв-шавран кăштах лăпланнă Шупашкар урамĕсенче алла-аллăн тытăнса хĕрсемпе каччăсем утрĕç. Çав тери хаваслă та савăнăçлă хăйсем, пĕр-пĕрин çине ачашшăн та ытарлăн пăхса, вĕсем иртен-çÿрене савăнтармалла илемлĕн кулчĕç, шÿтлерĕç.

Коля пĕр мăшăр хыççăн васкамасăр утрĕ. Унăн та тем пекех çак телейлĕ мăшăр евĕр, хăйĕн юратăвĕпе çума-çумăн тăрса, уçăлса çÿрес, кăмăл-шухăшне, савăнăçпа хуйхине пĕрле пайлас килчĕ. Анчах та ăçта-ши вăл унăн савнийĕ? Паллах, унпа нихçан та ĕмĕтленнĕ пек çÿреймĕ. Ăна пачах урăххи хулран çавăтĕ, тĕрлĕ ăшă сăмахсем каласа йăпатĕ, илĕртĕ. Коля вара пĕчченех, хăйĕн юратăвĕнчи çутă кунсене сыхласа, ют мăшăрсем çине пăхса, иртнĕ кунсене аса илĕ, уншăн вăл та савăнăç пулĕ, вăл ĕмĕтĕнче чун савнин сăнарне яланах ырăпа çеç çуттăн упрĕ.

Гостиницăна çитнĕ çĕре юлташĕсем пурте çывăратчĕç, анчах та каччăн ыйăх килмерĕ, çăварне пирус хыпса, комнатăна кĕме вăтаннă евĕр, вăл коридорти диван çине ларса, тĕтĕм мăкăрлантарчĕ. Пирус çунса пĕтнĕпе пĕрехчĕ ĕнтĕ. Коля сасартăк ашшĕ панă çыру çинчен аса илчĕ, пăлханнăскер, вăл ăна вулама ĕлкĕреймерĕ. Халĕ вара тирпейлĕн хутлатнă хут листине васкамасăр хумханса уçрĕ. «Савнă Коля!»—тӳрех Лида аллине уйăрса илчĕ каччă. Çавă, шăпах çавă çырнă. Салтакра чух çакăн пек хуçлатса илемлĕ почеркпа çырнă çырусене вăл час-часах илетчĕ, вĕсем чуна савăнăç кӳретчĕç, çар вĕренĕвĕнче вăй-хăват хушатчĕç. Пĕррехинче, ку уншăн юлашки пулчĕ, почтальон яланхилле конверт тыттарчĕ. Савăнмаллипех савăнчĕ вăл, чĕререн тав туса, ăна тытса ыталарĕ. Яланхилле хитре почеркпа çырнă çырусем чылайранпах килменччĕ, анчах та хальхинче кăлăхах хĕпĕртерĕ: çырура мĕн пурĕ те ултă сăмах çеç пулчĕ. Ултă сăмах пулин те Кольăна вĕсем амантмаллипех амантрĕç. «Эпĕ качча тухрăм, каçар мана, Коля.» Малтанласа çак сăмахсене ĕненес килмерĕ, анчах та конверт ăшĕнче мăшăрланнă чух ӳкернĕ сăнӳкерчĕк пурччĕ. Иккĕленӳ сĕвĕрĕлчĕ. Ним тăвайман енне вĕсене вĕттĕн-вĕттĕн ваклаcа, урайне пăрахса таптас килчĕ. Фото çинче ӳкерĕннĕ каччăпа хĕр, Кольăран кулнăн, иккĕшĕ те пĕр-пĕрне алăран тытса телейлĕн кулчĕç. Анчах шутланă-ши эсĕ ун чухне эпир çапла пĕр-пĕринчен ĕмĕрлĕхех уйрăлнине? Çук çав, хăв каланă пек, çаксем саншăн пурте вылямалли вăйă евĕр çеç туйăннă.

Коля ваклаcа тăкнă ӳкерчĕке урайне пăрахмарĕ. Унăн хăйĕн юратăвĕ çине таптас килмерĕ: «Эсĕ ăна вĕçне çитиччен сыхласа хăвараймарăн пулсан, саншăн эпĕ упрăп»,—терĕ.

Халĕ акă каллех çыру. Унтанпа чылай шыв-шур юхрĕ ĕнтĕ, пĕр-пĕрне асран кăларса пăрахма та вăхăт çитнĕ, çапах та нимĕн те манăçмарĕ. Лидăран çыру илни паян кун та савăнăç кӳчĕ, хумхантарчĕ.

Чĕтрекен аллисемпе тепĕр хут çырăва алла илчĕ. «Савнă Коля!—вуларĕ вăл тепĕр хут.—Эсĕ çартан килнине илтрĕм эпĕ, санпа тĕл пулассишĕн мĕнле çеç тăрăшмастăп пулĕ, анчах та паянхи куна пурăнса çитсе те меллĕ самант тупаймарăм. Паллах, Шупашкара килмесĕр тăмастăн. Мĕн тери савăнăç кӳрĕччĕ мана çав тĕлпулу. Ун çинчен хут çинче çырса та кăтартаймăн. Сана кĕтсе пилĕк çăлтăрлă коньяк та туянтăм, тĕл пуличчен сĕвĕрĕлсе те каять пулĕ. Кăна

шӳтлетӗп ӗнтӗ. Кашни кун тӳсӗмлӗн кӗтнӗрен ҫапла шутлатӑп. Сансӑр пуҫне мана никам та кирлӗ мар. Пӗр сана, пӗр сана ҫеҫ юрататӑп эпӗ. Юрататӑп! Лида.»

«Эппин, темиҫе сехет каялла каланӑ сӑмахсем те тӗрӗсех,—ура ҫине тӑчӗ Коля.—Ҫапла, тӗрӗсех. Ун чухне те эсӗ пӗр сана ҫеҫ юрататӑп, урӑх никам та кирлӗ мар, терӗн. Лида, чӑнласах та сыхланса юлнӑ-ши пирӗн юрату? Мӗн тери телейлӗ эпӗ,—халь тесен халь ун патне чупса кайма хатӗр пулчӗ вӑл.-Юрататӑп, эпӗ те юрататӑп сана,—ҫине-ҫине пӑшӑлтатрӗҫ каччӑн тутисем.—Ыранах тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах чупса ҫитӗп санӑн хваттерне. Эсӗ кӗт ҫеҫ, савниҫӗм!»

Пӳлӗме кӗрсе ҫывӑрма та хатӗрччӗ ӗнтӗ, анчах та шухӑш-кӑмӑл ҫийӗнчех улшӑнчӗ. «Упӑшку ҫумра ҫуккипе тунсӑхланӑ вӑхӑтра ҫеҫ ҫапла шутлатӑн, Лида. Иртнӗ юрату лайӑхпа ҫеҫ аса килтӗр тесен, пирӗн яланлӑхах уйрӑлмалла, епле йывӑр пулсан та уйрӑлмаллах»,-ҫакӑн пек ҫирӗп тӗллев тытрӗ каччӑ.

* * * * *

Валя Саша ҫырӑвне илнӗ хыҫҫӑн самантлӑха та лӑпланаймарӗ, унӑн хӑвӑртрах яла таврӑнас, ҫемйипе, савнипе, тус-тантӑшӗсемпе тӗл пулас килчӗ.

Тепӗр кунне вӑл, чӑнах та, ӗҫри юлташӗсемпе сывпуллашса, Шупашкар хулипе уйрӑлса, пуҫтарӑнса ҫула тухрӗ.

Аслашшӗпе асламӑшӗ килӗнчехчӗ, иккӗшӗ те кӑмака умӗнче кӑштӑртататчӗҫ. Мӑнукӗ чӑматанӗсемпе пӳрте кӗрсе тӑрсан, те ытла тӗлӗннӗрен, те савӑннӑран, ырӑнтан тапранма хӑяймасӑр ун ҫине пӑхрӗҫ.

—Мӗн тӗлӗнетӗр, эпӗ вӗт ку, Валя. Яланлӑхах сирӗн пата килтӗм,—аллисене тӑсса ҫывӑх ҫыннисем патнелле ыткӑнас килчӗ унӑн. Анчах та урисем, тӑлласа хунӑн, темшӗн утмарӗҫ, куҫӗнчен, ват ҫынсене шеллесе пулӗ, куҫҫулӗ чупса анчӗ, халь тин ҫеҫ вӗсене хӗрхенмесӗр пӑрахса хӑварнине ӑнланса илчӗ вӑл.

—Апат пӗҫерме шутларӑр эппин, кӳрӗр-ха, хам пӗҫерем,—ҫӗр улми шуратма тытӑннӑ асламӑш аллинчен

çĕççине илчĕ Валя.—Мĕнле пурăнкаларăр, ытла та йывăр пулчĕ пуль?

Аслашшĕпе асламăшĕ мăнукĕ çывăхнерех вырнаçса ларчĕç.

—Мĕнле каламалла ĕнтĕ, йывăр пулсан та пурăнкаларăмăр. Ватлăх кунĕнче мăнуксене пăхса çитĕнтернĕ хыççăн иккĕн çеç тăрса юлни савăнăç кӳмерĕ ĕнтĕ, çапах та никама та хурламарăмăр. Çынсен ачисем пек ваттисене хисеплеме вĕрентменшĕн хамăрах айăплă,—куççулĕсене типĕтрĕ асламăшĕ.

Аслашшĕ, шухăша путса, нимĕн те чĕнмерĕ, хутранситрен çеç сухалне турткаларĕ.

Хайĕн машинине юсакан Саша, Валя хуларан таврăннă тенине илтсен, гаражра текех пĕр минут та тытăнса тăмарĕ, мазутпа вараланнă аллине çĕтĕкпе сăтăркаласа тасатрĕ те, велосипечĕ çине ларса, анаталла урнă çил пекех вĕçтерчĕ. Вальăсен хапхи умне çитнĕ-çитмен сиксе анса, алăка шалтăртаттарса уçса, пӳрте кĕме васкарĕ.

—Валя, ăçтан-ха килме пĕлтĕн эсĕ, эпир кунта сана кĕтсе халтан кайрăмăр, шанăçа çухатнăпа пĕрехчĕ ĕнтĕ...—Саша сăмахне вĕçлеймерĕ, кăмака умĕнче ларакан Валя ура çине тăчĕ, аллинчи çуррине яхăн шуратма ĕлкĕрнĕ çĕр улмипе çĕççи урайне ӳкрĕç.

—Саша,—темле çухалнă саспа пăшăлтатса аран-аран калаçрĕ вăл,—яла таврăнас, терĕм. Коля калани тĕрĕсех-и?

—Тĕрĕс пулмасăр, мана ĕненмесен, ваттисенчен ыйт, сана кĕтсе йăлтах хăшкăлтăмăр. Çук, халь тин пĕр самантлăха та уйăрмăп хамран,—хĕре хулпуççинчен тытса кăкăрĕ çумне чăмăртарĕ каччă.

Ванькка тетепе Марье аппа чĕнмерĕç, вĕсемшĕн мăнукĕ ял каччипех туслă пулни чăн-чăн савăнăç. Мĕн пытармалли, Валя ӳссе çитĕннĕ, качча пама та вăхăт çитнĕ ĕнтĕ, юта парас килмест-çке-ха. Хайсен хушшинче, ĕлĕкхи пек, ăна валли юрăхлă каччă та куçласа хунă, анчах та çамрăксем вĕсен сăмахне хăлхана чикес çуккине пĕлсе, паянхи куна çитсе те хайсен шухăшĕсене уçса пама хăяймарĕç. Пуçа çĕмĕрни те кăлăхах пулчĕ. Акă вăл, пĕр хут çеç мар канăç паманскер, хăех вĕсен килне пычĕ, мăнукĕн черчен аллинчен тытса, яланлăхах пĕрле пулма чĕнчĕ. Ваттисем хирĕç мар, халь тесен халь ăна качча пама хатĕр мăнукне. Хайсен тахçантанпа ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ кĕтмен çĕртен хăвăрт пурнăçланма пултарнишĕн, пурте йĕркеллĕ килсе тухнишĕн

чунтан хĕпĕртенĕскерсем тӳрех ăшталанса ӳкрĕç, сĕтел çине хатĕрлеме пикенчĕç.

—Çук,—чарчĕ вĕсене Саша,—ан чăрманăр. Çапах та малашне эпĕ сирĕншĕн ют çын пулмăп, эсир мана кăмăллатăр пулсан, пĕреххут сăри-эрехне хатĕрлĕр, тавралăх кĕрлемелле туй ирттерĕпĕр,—пит-куçне именерех çутăлтарса Марье аппана сăмахĕпе тĕртсе илчĕ вăл.

—Хăвăр пĕр-пĕрне саватăр пулсан, пирĕн çавна çеç тумалли юлать ĕнтĕ...

Анчах та Валя асламăшне вĕçне çитиччен калама памарĕ, вăтанса хĕрелнĕскер, пӳлсе хучĕ:

—Шӳтлет вăл, асанне. Унăн сăмахне ĕненсе пĕтерес пулсан, вакка сикĕн,—терĕ.

Те малалла калаçу шаларах кĕрессине туйса, те ваттисен умĕнче именнĕрен, вăл каччăн аллине хытăрах чăмăртарĕ те картишне тухма чĕнчĕ. Саша килĕшрĕ.

Пĕр-пĕрне алăран тытса, вĕсем Пăла еннелле çул тытрĕç, ешĕл кавирлĕ çыран хĕррипе васкамасăр утнă май, такам илтесрен шикленнĕ евĕр, шăппăн пăшăлтатса, юрату çинчен калаçрĕç.

—Пĕлетĕн-и, Саша,—пĕр хушă чĕнмесĕр пынă хыççăн ассăн сывларĕ хĕр,—юлашки каç уйрăлнă чух, эпĕ сана яланлăхах çухатрăм пуль тенĕччĕ. Малтанласа каялла çаврăнса пăхасса, аллусене тăсса ман пата чупса пырасса шантăм, анчах та кĕтсе илеймерĕм, эсĕ ним пулман пек малалла утса кайрăн. Тĕл пулас шанчăка çухатнăскер, пӳрт умĕнче чылайччен каçхи шăплăхра пĕчченех лартăм, пуçа мĕнле шухăш çеç кĕмерĕ пулĕ...

—Валя, ун çинчен тек калаçмăпăр. Эпĕ санăн умăнта питĕ айăплă, халь иртнисене аса илни мар, эсĕ мана каçарма пултарни пуринчен те хакли.

—Шупашкарта пурăннă чух сана усалпа аса илме те, япăх шухăшлама та хăяймарăм эпĕ.

Юнашар утакан Саша сасартăк пĕр вырăнта чарăнса, тӳрленсе тăчĕ, аллисемпе хĕрĕн хыткантарах хулпуççийĕнчен тытрĕ.

—Валя!—терĕ вăл кăшкăрнă пекех, ун çине ачашшăн пăхрĕ.— Ытла та айван-çке эпĕ, халиччен хам çумра чăн-чăн юлташ пулнине мĕншĕн асăрхаман-ха? Çапах та шăпа тени манран пăрăнса иртмерĕ, çакна халĕ питĕ аван ăнлантăм. Валя, телейлĕ, çав тери телейлĕ эпĕ санпа пĕрле чух!

—Тен, каллех ултавлă туйăмсем çеç?

—Хальхинче сана хамран пĕр минутлăха та вĕçертмĕп. Ыранах Патăръелне загса кайса, хамăр пĕрлешме кăмăл туни çинчен заявлени çырса парăпăр. Пире текех никам та, нимĕн те уйăраймĕ,—çирĕппĕн, Валя хирĕçлес çуккине шанса сăмахларĕ каччă.

—Ытла та хăвăрт пулмĕ-ши, аслисем мĕн калĕç?—иккĕленӳллĕ шухăшсенчен тӳрех хăпаймарĕ-ха хĕр.

—Халь тин эпир санпа пĕчĕк ачасем мар ĕнтĕ, чылай ыйтăва хамăрăнах татса памалла, çакна паянах çемьерисене кайса пĕлтерĕп.

Вальăшăн ку хыпар кĕтмен çĕртен пулсан та, вăл каччăна хирĕçлеймерĕ, паçăрхи евĕрлех вĕсем алла-аллăн утса, хĕрĕн килĕ еннелле утрĕç...

Саша паян ĕçрен яланхи пек кая юлса мар, иртерех таврăнчĕ. Маюк аппа, çакна кĕтменскер, шалтах тĕлĕнчĕ, ним калама аптрарĕ. Ывăлĕ çăвăнса тасалнă хыççăн ăна сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ, анчах та лешĕ темшĕн килĕшмерĕ, çемье пуçтарăниччен кĕтес шутпа картишне тухса кайрĕ, пăлханнипе, ăшне пусарас тесе-ши, пирус хыççăн пирус мăкăрлантарчĕ.

—Чирлемерĕн пуль те? Мĕншĕн чĕмсĕр эсĕ паян, ĕçре пурте йĕркеллех-и? Пĕр сăмах та пулин хушса каласам, ара,—тархасланă евĕр ун хыççăн тухрĕ амăшĕ.

—Пурте йĕркеллех. Мĕн лăпланма пĕлмерĕн эсĕ тата тепри? Вăхăт çитсен хамах калăп. Пит пĕлессӳ килет пулсан, авланатăп эпĕ, ăнлантăн-и: ав-ла-на-тăп!,—сигаретне аяккалла ывăтса пӳрт çумĕнчи сак çинчен тăчĕ Саша.

—Мĕн калатăн кирлĕ мара, аннӳпе шӳтлес терĕн-им?—ывăлĕ чăнласах шăл йĕрет тесе-ши сассине хăпартрĕ Маюк аппа.

—Аннеçĕм,—ун çумне лăпчăнчĕ Саша,—чăн-чăнах авланма шутлатăп, ниçтан хăйса калайманран çеç çапла тухса кайрĕ пулĕ сăмахĕ. Каçар. Аттене ку хыпара мĕнле пĕлтермелле-ши тата?

—Чим-ха, ларса йĕркеллĕ каласа пар-ха. Аçуна, тепĕр тесен, хамах пĕлтерĕп. Кам хĕрĕпе мăшăрланма шутлатăн вара эсĕ?

Саша каялла сак çине ларчĕ, анчах та хăйне йĕппе чикнĕнех туйрĕ, амăшĕ те унпа юнашарах вырнаçрĕ, ывăлĕ калаçма пуçласса кĕтрĕ.

—Пĕлетĕн-и, анне,—ассăн сывласа сăмахларĕ Коля,—паян Валя таврăннине илтрĕм те пĕр минут та вырăнта тытăнса тăраймарăм, тӳрех вĕсен килне вĕçтертĕм.

Хитрескер вăл: çаврака питлĕ, куçĕсем пысăк, çутă çăлтăр тейĕн. Паян тата та чипертерех курăнчĕ, çук, хăвăн куçупа курмасăр ĕненместĕн те пулĕ эсĕ мана? Унăн илемне сăнласа пама сăмах та çитмест. Килĕшетĕн пулсан, атя каяр, халь вăл килĕнчех пулма кирлĕ,—темле хумханса та савăнса калаçрĕ Саша, анчах та амăшне ӳкĕте кĕртмелли сăмахĕсем урăх тупăнмарĕç те, вăл шăпланчĕ.

Маюк аппа хăйĕн ывăлĕ çакăн пек пăлханнине пуçласа кураканскер, те тĕлĕннĕрен, те савăннăран ун çине яланхилле мар, урăхларах туйăмпа кăсăкланса, хăй те темĕнле ăнланман çĕнĕлĕх тупас тенĕ евĕр пăхрĕ. Лешĕ те çакна асăрхарĕ пулас, амăшĕн иккĕленĕвĕ хăвăртрах ирттĕр, хăйĕн таса туйăмне ĕнентĕр тесе ăна хистесех савнă хĕрĕн килне кайса курма чĕнчĕ.

—Çук, Саша, каймастпăр. Эпĕ Вальăна мĕн пĕчĕкрен пĕлетĕп, лайăх, хитре те ырă кăмăллă хĕр. Хăвăр пĕр-пĕрне кăмăллатăр пулсан, ашшĕ-амăшĕ хутшăнни вырăнлă пулмĕ.

—Эппин, аннеçĕм, эсĕ пĕрре те хирĕç мар. Аннеçĕм!..—ытла та савăннăран амăшне йăтса илсе чăмăртарĕ ывăлĕ, унтан ăна пит çăмартинчен чуптуса илчĕ.

—Хирĕç мар.

Ку сăмахсене илтсен, лара-тăра пĕлмен Саша ура çине сиксе тăчĕ. Унăн савăннипе кăшкăрса юрлас, чун каниччен ташлас килчĕ. Вăл амăшне тепĕр хут тытса ыталарĕ, унтан уçнă чӳрече янахĕ çинче ларакан купăсне ярса илчĕ, унтан каялла хучĕ, аптраса ӳкнипе тем шыранăн, пĕр енчен тепĕр енне чупрĕ, ниепле те лăпланаймарĕ.

—Ывăлăм, пĕреххут эсĕ Валя патне кайса килсемччĕ. Тен, вăл та сан пекех хăйĕн вырăнне тупаймасть пулĕ. Ку хыпара аçуна пĕлтерессине эпĕ хам çине илĕп,—Сашăна лăплантарас шухăшпа çапларах сĕнчĕ Маюк аппа.

—Чăн-чăнах-и?

—Паллах. Эсĕ мĕн, эпир çамрăк пулман тетĕн-им?

Саша текех пĕр минут та тытăнса тăмарĕ, пĕчĕк ача пек савăнса хаваслă сăн-питпе пӳртрен урама тухрĕ, унтан савнийĕ патне чупрĕ, ун хыçĕнчен хапха алăкĕ шалтлатса хупăнни çеç илтĕнсе юлчĕ. Вăл куçран çухалсанах Маюк аппа темшĕн шухăша путрĕ. Киле кин кĕртесси уншăн пысăк савăнăç, телей. Вăхăт хăвăрттăн шăвать-çке, ĕнер çеç унăн ывăлĕ сăпкара сикетчĕ пек. Паян, ĕненес те килмест, çитĕннĕ те ĕнтĕ вăл. Мĕн тăвăн, амăшĕн чунĕ çапла-çке, ăна кирек хăçан та пĕчĕк ача вырăнĕнче шутласа пурăнать.

—Çитĕнтĕн, çитĕнмеллипех ӳссе çитĕнтĕн, ывăлăм,— хăйĕнпе хăй сăмахларĕ вăл.

*　*　*　*　*

Коля Шупашкарта пĕр эрнене яхăнах пурăнсан та, Лидăпа тепре тĕл пулаймарĕ. Хĕрарăм хваттерĕнче хăйне ытла та тӳрккес тыткаламарĕ-ши, унăн умĕнче кăра çилĕллĕ çын евĕр курăнмарĕ-ши вăл? Тен, Лида хытă юратнăран ун çумне çыпçăнчĕ? Тен, чăнах та ачаллă пулас килет хĕрарăмăн? Вăл çемье çавăрса телейлĕ пурăнассишĕн качча тухнă-çке-ха. Халĕ акă ĕмĕтленни пурнăçлайманнине туйнăскер, чысне вараласа та пулин чунĕпе самантлăха Кольăпа пулассишĕн çунать, кайран малтанхи каччинчен ача çуратса ĕмĕр тăршшĕпе ун çине пăхса савăнасшăн. Хăй çумĕнчен тĕртсе ярса, ăна сăлтавсăрах кӳрентерни пулмарĕ-ши? Пытарма кирлĕ мар, юратнă, халь те чĕререн юратать вăл ăна. Мĕншĕн пĕр-пĕрне ăнланаймарĕç-ха вĕсем? Тепре тĕл пулса темиçе минут та пулин калаçмалла мар-ши? Кӳрентернĕ пулсан, тӳрех каçару ыйтмалла, халь те ăна манайманни çинчен пĕлтермелле. Çак шухăшсем унăн канăçне çухатрĕç пулсан та, Коля хăй шутланине пурнăçлаймарĕ, çавăнпа вăл Лидăран каçару ыйтаймарĕ. Мĕн шутлать-ши халь ун çинчен хĕрарăм, пĕлесчĕ, çак шухăш каччăн чĕрине кунран-кун ытларах та ытларах ыраттарчĕ, шутлаттарчĕ те.

Амăшĕ патне больницăна Коля кашни кунах çӳрерĕ. Анна Егоровна сывлăхĕ юлашки вăхăтра кăштах самайланчĕ, хăйне йывăр пулсан та çын пулăшмасăрах ура çине тăрса уткаласа çӳрекен пулчĕ. Сергей Иванович ун çумĕнчен хăпмарĕ, кунĕ-кунĕпех палатăра ларчĕ. Май килнĕ пек пулăшма, савăнăç кӳме тăрăшрĕ.

Икĕ кун каялла больницăран тухсан, Коля Горький ячĕпе хисепленекен библиотекăн вуламалли залне кĕрсе ларчĕ. Кунта хăвна килĕшекен тем тĕрлĕ кĕнеке тупса вулама пулать, чару çук. Анчах та ăна унчченхи пек илемлĕ литература кăсăклантармарĕ. Вăл халиччен медицина темипе çырнă ĕçсемпе те питех интересленмен-ха. Каччă Хромовăн «Амбулаторипе поликлиника çурчĕсенче хирурги пулăшăвĕ парасси» ятлă кĕнекине ыйтса илчĕ. Унта шăпах панкреатит

чирӗ пирки ҫырса кӑтартнӑ. Коля лӑпкӑн вулама пултараймарӗ, мӗншӗн тесен чи хаклӑ та ҫывӑх, хӑйне кӑкӑр сӗчӗпе тӑрантарса, ачашласа ӳстернӗ ҫын ҫак кӗнекере ҫырса кӑтартнӑ чире, асапа хӑй ҫинче тӳссе ирттерет-ҫке. Каччӑ тӗпленсе ларсах панкреатит чирӗ пирки ҫырса кӑтартнине вуларӗ. Ӑҫтан-ха ун пек чух пӗр шухӑшсӑр, лӑпкӑн ларӑн? Унччен вӑл панкреатит хӑрушӑ чир тенине илтнӗ пулин те, ун ҫинчен аплах шутламанччӗ, халӗ акӑ кашни предложенинчех уншӑн чуна шиклентермелле сӑмахсем пулчӗҫ.

Врачсем Киеври Шалимов профессор поликлиники пирки калаҫрӗҫ. Ашшӗ те хӑвӑртрах унта каясшӑн ӗмӗтленчӗ. Ан тив, чирлӗ ҫынсенчен пилӗк проценчӗ ҫеҫ чӗрӗлтӗр, пурпӗрех каймалла. Тен, телее ҫав пилӗк процент йышӗнче шӑпах унӑн амӑшӗ пулӗ. Вырӑн ҫинче нушаланса выртнинчен усси пулас ҫук, каймаллах, вӑхӑтра сиплемесен, медицина та пулӑшаймасть тенӗ кӗнекере.

Нумаях пулмасть Сергей Иванович ют ҫӗршыв чӗлхисен институтӗнче тахҫан пӗрле вӗреннӗ тусӗсем патне Германине хаклӑ эмел — тразилол ярса пама ыйтса ҫыру ҫырчӗ. Чӑнах та, мӗнле ҫеҫ тӑрӑшмасть пулӗ вӑл. Коля нимӗнпе те пулӑшма пултарайманнишӗн хӑйне амӑшӗ умӗнче айӑплӑ туйрӗ. Пурнӑҫра мӗншӗн пӗр ҫынна ҫеҫ нушаланмалла тунӑши? Май килсен, халь тесен халь чире хӑй ҫине илӗччӗ, вара амӑшне кӑштах та пулин ҫӑмӑллӑх кӳрӗччӗ.

Кӗнекине библиотекаре каялла тавӑрса панӑ хыҫҫӑн каччӑ уҫӑ сывлӑша тухрӗ. Вӑл ешӗл хула урамӗсемпе лӑпкӑн утма пултараймарӗ. Тен, амӑшӗ каллех вырӑн ҫинче? Ку шухӑш ӑна ҫӳҫентерсе илчӗ, троллейбус ҫине ларса, вӑл каллех больницӑна ҫул тытрӗ, хӑйшӗн чи хаклӑ ҫынна курмасӑр та лӑпланаймарӗ, пур шухӑш та халь ун ҫинче ҫеҫ пулчӗ.

Уйрӑлас умӗн Сергей Иванович ыран Киева тухса каясси пирки пӗлтерчӗ. Самолет ҫине ларма вӑл билет та туянма ӗлкӗрнӗ иккен. Май килсен, Коля та вӗсенчен тӑрса юлмӗччӗ, анчах та кил-ҫуртра камӑн та пулсан юлмалла, ялан кӳршӗсем ҫине шанаймӑн, ҫитменнине, вӗсем те ӗҫсӗр мар, ашшӗпе амӑшӗ те ҫакнах каларӗҫ. Шел пулин те, вӗсемпе сывпуллашса яла таврӑнма тиврӗ.

—Телейлӗ ҫул пултӑр, аннеҫӗм, хӑвӑртрах сывал!— уйрӑлнӑ чух питӗнчен чуптунӑ май пӑшӑлтатрӗ вӑл.

Коля килне таврӑнсан ялта чылай улшӑну пулса иртнине пӗлчӗ. Пуринчен те ытларах тӗлӗнмелли савӑнӑҫлӑ хыпар

пулчӗ —Сашӑпа Валя пӗрлешме кӑмӑл туса заявлени панӑ иккен. Халӗ савнисем ҫине пӑхатӑн та ҫӗр ҫинче вӗсемсӗр пуҫне урӑх телейлӗ мӑшӑр ҫук та тесе шухӑшлатӑн. Кашни каҫ алла-аллӑн тытӑнса каччӑпа хӗр клуба пыраҫҫӗ. Саша хут купӑс каласа, Валя вара хӑйӗн шӑпчӑк сассипе чуна тивмелле юрласа ял илемне кӳреҫҫӗ.

Ялти яш-кӗрӗме хаваслӑ та телейлӗ туйтарасси вӗсен ӗҫне, канӑвне тӗрӗс йӗркелесе янинчен те чылай килет ҫав. Акӑ темиҫе эрне каялла ҫеҫ клуб пысӑк ҫӑрапа питӗрӗнсе тӑратчӗ. Халь пӑхатӑн та, ҫамрӑксем ҫеҫ мар, ваттисем те пушӑ вӑхӑт тупӑнсанах унталла утаҫҫӗ. Тоня вӗсене кашнинех ӑшшӑн кӗтсе илме тӑрӑшать.

Патӑръел енче халӑх пӗр-пӗринчен ютшӑнса пурӑнмасть. Ҫынсен канӑвне пурне те килӗшмелле иртterме ҫеҫ тӑрӑшмалла. Клуб ҫумӗнче драмкружок уҫасси те ҫамрӑксем сӗннипе пулчӗ. Вӗсем Николай Терентьевӑн «Пӑр ҫапнӑ ҫеҫпӗл» драмине халӑх умӗнче кӑтартма йышӑнчӗҫ.

Каҫ пулсан, килти ӗҫсене пуҫтарнӑ хыҫҫӑн, Коля тӳрех клуб енне утрӗ. Ҫамрӑксем ӑна ик-виҫ кун каяллах кӗтме тытӑннӑ, хӑш-пӗр ыйтусене унпа канашламасӑр йышӑнма шутламан иккен. Тоня Иванова, клубӑн ҫӗнӗ заведующийӗ, секретаре курсанах, сӗтел хушшинче лараканскер, ура ҫине сиксе тӑчӗ, хӗпӗртенӗскер, тахҫантанпа курман хаклӑ хӑнана йышӑннӑ пек, ӑна вырӑн парса, хӑй ҫумне лартрӗ.

—Эсӗ ял пуррине манса кайсах ҫухалса ҫӳретӗн-ҫке. Шупашкарта пӗр-пӗр сар хӗре юратса пӑрахрӑн пуль-ха, сана ытларах вӗсем илӗртеҫҫӗ вӗт,—тусӗсем ҫине пӑхса, чеен куҫ хӗсрӗ вӑл.

—Хама кӑмӑллаРӗҫ пулсан, мӗншӗн вӗсен юратӑвне хирӗҫлес? Ман вырӑнта кашни ҫапла тӑвӗччӗ.

—Хӑҫан туйна ирттерӗпӗр, секретарь юлташ?—шӳтлӗ калаҫӑва хутшӑнчӗҫ ыттисем те.

—Халь тесен халь, парне ҫеҫ хатӗрлӗр. Хӑвӑр мӗнле пурӑнатӑр-ха?—усӑсӑр калаҫӑва вӗҫлесе сӑмаха урӑх енне пӑрасшӑн пулчӗ Коля.

—Э-э, секретарь, пуҫларӑн пулсан, вӗҫнех ҫитер, пӗр сӑлтавсӑрах, виҫӗ куна кайнӑскер эрне пурӑнмарӑн пулӗ-ха?

—Сӑлтавӗ пур, ун ҫинчен халь мар, кайран калаҫӑпӑр,—сӑн-питне улӑштарчӗ вӑл.—Эрне хушшинче ял палламалла мар улшӑннӑ, сирӗншӗн те йӑлтах тунсӑхласа ҫитрӗм.

Библиотекӑра пуҫтарӑннӑ ҫамрӑксем шӳтлеме чарӑнчӗҫ, вӗсем те хӑйсен ертӳҫин амӑшӗ больницӑра сипленнине аса

илсе пустуй пакăлтатма юраманнине чухларĕç, çавăнпа та-и пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕç.

—Пĕлетĕн-и, Коля,—паçăрхи пекех савăнăçлăн калаçма пуçларĕ Тоня,—часах акă эпир пурте çамрăк мăшăр пĕрлешнине кураканĕсем пулăпăр.

—Кун çинчен илтрĕм-ха, чăнах-и вара ку?—ытларах пĕлес шухăшпа тепĕр хут итлеме хатĕр пулчĕ вăл.

—Чăн пулмасăр,—харăссăн, малтанах калаçса татăлнă пек ĕнентерме тăрăшрĕç пурте,—заявлени те панă ĕнтĕ, шăпах тепĕр уйăхран туйĕ пулать.

Çак вăхăтра алăк уçăлчĕ те, пÿлĕме Сашăпа Валя кĕрсе тăчĕç.

—Акă сăмах тĕлнех çитрĕç тата, çылăхсăр иккен,—хушса хучĕ тахăшĕ.

—Кама куратăп эпĕ? Хăçан çитнĕ вара эсĕ?—аллине тăсса тусĕ патнелле савăнăçлăн васкарĕ Саша.

—Паян таврăнтăм. Ну, салам, салам!—пĕр-пĕрне хулпуççисенчен çапса илчĕç вĕсем.

—Сисетĕп-ха , ман çинчен сана пĕтĕмпех каласа кăтартма ĕлкĕрнине, ял çинче халь сăмахĕ те çавă çеç,—кăштах лăпланнă пек пулсан, калаçма пуçларĕ Саша.—Чăнахах та авланатăп, çитет пĕр-пĕриншĕн çунса пурăнни,—çаплах-ха савăнăçне пытараймарĕ вăл.—Сире пурне те туя чĕнетпĕр, тавралăх кĕрлемелле туй ирттерер-ха, тахçантанпах ялта пĕрлешекенсем пулман, çапла-и, Валя?—пулас мăшăрне сылтăм аллипе хăй çумне пăчăртарĕ вăл. Хĕр ун çине савăнăçлăн кулса пăхрĕ.

—Коля,—пукан çине тайăнса тусне хирĕç ларчĕ Саша.—Ялта пирĕн пирки сарăлнă хыпарсăр пуçне çĕннисем те нумай. Вĕсем çинчен пĕлтерме ĕлкĕреймерĕç пуль-ха сана. Эпир драмкружок йĕркелерĕмĕр вĕт, пьесине суйласа илсе рольсене те валеçсе панă ĕнтĕ. Пĕлетĕн-и, эсĕ кам рольне вылятăн?

—Çук, паллах,—чăннипех те тĕлĕнсе те кăсăкланса тусĕ малалла мĕн каласса кĕтрĕ вăл.

—Куçма Степанович рольне вылятăн. Санăн арăму Тоня пулать.

—Чим-ха, Петя кÿренмĕ-и?

—Ан хăра, унпа калаçса татăлнă ĕнтĕ, шикленме кирлĕ мар. Петя хăй вара сцена çинче райком секретарĕ пулĕ. Эпир Вальăпа иксĕмĕр — пĕр-пĕрне чунтан савакан çамрăксем. Çитменнине Валя сирĕн хĕрĕр пулать, эпĕ унăн савнийĕ, урăхла каласан, кĕрÿ.

Пурте харăссăн ахăлтатса кулма пикенчĕç.

—Чим-ха, «кĕрӳ», эсĕ рольсене валеçнĕ тетĕн, кашни хăйĕн сăмахĕсене çырса илнĕ-и вара?

—Çырмасăр, машинкăпа пичетлесех. Халь тесен халь репетици тума хатĕр. Эпир Вальăпа иксĕмĕр кам хыççăн кам мĕн каламаллисене те веçех пăхмасăр вĕреннĕ ёнтĕ,—кăштах хăпартланас шухăшпа каларĕ Саша.

—Апла пулсан, хăвăра мухтанине тивĕçлĕ эсир,—вĕсен кăмăлне пĕлсех хушса хучĕ Тоня.—Коля, ăнланатăн ёнтĕ эсĕ, эпир чăн-чăн артистсем мар. Çапах та хамăртан мĕн килнине, ял-йышпа кӳршĕ ял ĕçченĕсен кăмăлне каймалла спектакль лартассишĕн пирĕн тăрăшасах пулать. Тырпул пуçтарма тухиччен хамăрăн пултарулăха сцена çинче кăтартса пама ĕмĕтленетпĕр.

—Лайăх ĕмĕт. Парăр-ха мана та текстне, эпĕ те пăхмасăр вĕренме пуçлам.

Библиотекăна çамрăксен тепĕр ушкăнĕ килсе кĕчĕ. Вĕсен хушшинче Валя Наперсткина та пур. Кольăна курсан вăл ун çине именчĕклĕн пăхса сывлăх сунчĕ, куçĕсем хăйĕн телейлĕн çиçсе илчĕç. «Кĕтнĕ пулас, ахальтен мар мана курсанах пичĕ хĕрелчĕ,»-шухăшларĕ каччă хĕрĕн кашни хусканăвне сăнанă май. Тĕрĕссипе, хăй те Вальăпа тĕл пулнишĕн чунтанах хĕпĕртерĕ, сĕтел хушшинчен тухса унăн аллине чăмăртас килчĕ, анчах та çынсен умĕнче çапла тума хăяймарĕ. Вăл хăйне лăпкăн кăтартма тăрăшса, умри хут листи çинчен куçне илмерĕ, çапах та хутран-ситрен вăрттăн хĕре сăнарĕ.

—Атьăр, репетици туса ирттерер, вылякансенчен пурте пухăнчĕç ёнтĕ, халлĕхе сăмахĕсене хут çинчен вуланипе те çырлахăпăр,—сĕнчĕ Тоня пурин çине те пăхса çаврăннă хыççăн.

Çамрăксем ун шухăшĕсемпе савăнсах килĕшрĕç. Репетици, пĕтĕмĕшле каласан, йĕркеллех иртрĕ темелле, артистсен кашни хусканăвне, кашни сăмах-шухăшне Тоня пурнăçри пек кăтартма тăрăшса вĕрентрĕ.

Клубран тухсан Коля Вальăна аллинчен тытрĕ:

—Мĕнле, мансăр тунсăхласа çитмерĕн-и?—ыйтрĕ вăл шăппăн пăшăлтатса.

—Пĕлместĕп, те хăнăхнăран, ял çинче хама кăштах кичеммĕн туйрăм.

—Эппин, эпĕ таврăнасса кĕтнĕ эсĕ?

—Пĕлместĕп.

Вёсем çума-çуммăн тăрса тăвалла утрĕç. Ял вĕçне çитсен те каялла çавăрăнмарĕç, ыраш пуссинчи сукмак тăрăх васкамасăр çӳренĕ май шăппăн калаçрĕç. Лăпкă çил Вальăн çӳçне ачашшăн сĕртĕнсе тĕрлĕ еннелле сапаларĕ. Каччăпа хĕр чылайчченех çӳрерĕç. Вальăсен хапхи тĕлне çитсен, хĕр хăй çине уртса янă Кольăн костюмне каялла тавăрса панă май:

—Паянлăха çитет пулĕ, ыран тĕл пулăпăр,—терĕ.

—Ытла та кĕске-çке çуллахи каçсем,—ассăн сывларĕ каччă.—Кăмăл туличчен çӳреме те çук.

—Тепĕр тесен лайăх та, унсăрăн пĕр-пĕрне час йăлăхтарнă пулăттăмăр.

Каччă ăна хирĕçлерĕ.

—Коля, ун пирки калаçар мар. Эсĕ ман çинчен нимĕн те пĕлместĕн вĕт-ха, пĕр-пĕрне шанăç пама кирлех-ши?

—Тен, эпĕ санăн кăмăлна каймастăп?—сасартăк тӳррĕн ыйтрĕ каччă.—Апла пулсан текех чăрмантармăп...

Валя тӳрĕ, тикĕс шурă шăлĕсене кăтартса тутисене илемлĕн туртăнтарчĕ:

—Чăнах та, айванскер-çке эсĕ, Коля. Енчен те кăмăлламасан, санпа шурăмпуç киличчен çӳренĕ пулăттăм-и вара эпĕ? Ну, ыранччен!—тутисемпе каччăн питĕнчен сĕртĕнчĕ вăл, унтан хăвăрттăн хапха еннелле утса кайрĕ.

Коля хирĕç нимĕн те калама ĕлкĕреймерĕ, куçĕсемпе çеç хĕре курăнми пуличчен ăсатрĕ, Валя хапха алăкне шалтлаттарса хупсан тин, тутисене чĕтрентерсе:

—Ыранччен! —терĕ. Унтан, пĕр вырăнта кăштах тăнă хыççăн, васкамасăр сывлăм ӳкнĕ çеремлĕ урампа килнелле утрĕ.

«Валя, ытла та тĕлĕнмелле çын-çке эсĕ,—шутларĕ вăл,— Лидăна курсан, темшĕн сана маннă пекчĕ, халĕ акă каллех куç тĕлне пултăн та, санпа паçăрхи пек пăшăлтатса калаçас, тавралăхри шăплăхра иксĕмĕрĕн çеç юлас килет. Çук, тем тесен те Лидăна асран кăларса пăрахаймăп. Мĕншĕн тесен вăл манăн пирвайхи юрату пулнă, унпа çамрăклăхăм çыхăннă. Ан тив, халь те эпĕ ăна килĕштерем. Анчах вăл та мана унчченхи пек нихăçан та саваймĕ. Сăлтавĕ паллă: пурнăçра вăл хăйне валли хаклă çын тупса, унпа пĕрлешнĕ. Акă эсĕ, кăмăлламасан —шурăмпуç киличчен çӳремен пулăттăм, терĕн. Юлашкинчен, уйрăлнă чух, хăвăн ачаш тутусемпе пите сĕртĕнтĕн. Анчах та санăн чунунта ултавлă туйăмсем çеç хуçаланмаççĕ-ши? Иксĕмĕр пĕрле чухне те эсĕ ним çукранах шухăша каятăн. Урăх каччăна аса илместĕн-

ши, тен, хӑвна ху лӑплатас тӗллевпе çеç, манпа май килнӗ пек çывӑх пулма тӑрӑшатӑн?—анчах та ку шухӑшсем часах сирӗлчӗç.—Чӑнласах та, сана кӑмӑлланӑран çеç ку, çавӑнпа çапла шутлатӑп эпӗ. Валя лайӑх хӗр, темшӗн унпа чух Лидӑпа юнашар пулнӑнах туйӑнать, сасси те ӑнах аса илтерет. Хӑвӑртрах ир пултӑрччӗ,—çак шухӑшсемпе вӑл çывӑрма выртрӗ.

Тепӗр кунне Коля тӳрех правленине кайрӗ. Колхоз председателӗ ӑна çӗкленӳллӗ кӑмӑлпа кӗтсе илчӗ.

—Ну, секретарь,—терӗ вӑл ӑна алӑ парса,—сана кӗтсе ывӑнтӑмӑр. Тӗрӗссипе каласан, Шупашкарта юлмарӗ-ши тесе шиклентӗмӗр. Çакна шанас темесен те кӑштах иккӗлентӗмӗр.

—Эпӗ телеграмма панӑччӗ-çке, илеймерӗр-им?

—Ӑна илтӗмӗр-ха. Хальхи çамрӑксем шӳтлеме юратаççӗ вӗт, тен, пирӗн серетарь те вӗсенчен аякка каяйман?

—Ун пек япалапа шӳтлемеççӗ. Аннене Киева ӑсатичченех юлас терӗм, çитменнине комсомол ӗçне те вӗçлейменччӗ,—унтан калаçӑва урӑх енне пӑрчӗ.—Мӗн çӗнни пур ялта, колхозра?—председатель çывӑхнерех вырнаçса ларса итлеме хатӗрленчӗ Коля.

—Çӗнни çукпа пӗрех темелле, часах акӑ тепӗр ик-виçӗ кунтан утӑ çулма тухмалла, техника хатӗр, анчах та выльӑхсене валли хӗлӗпе тӑрантмалӑх апат çитӗ-ши? Çумӑр çуманнине пула кӑçал курӑксем ытти çулсенчи пек çӳллӗ ӳсеймерӗç. Тырӑ-пулӑ та çавах, çу варрине çитсе пыратпӑр, çумӑр çук та çук, пысӑк тухӑçлӑх пирки ӗмӗтленме те май килмест. Ӗнер радиопа авӑ хӑшпӗр районсенче пушарсем тухни пирки каларӗç, вӑрмансем çунма пуçлас хӑрушлӑх та пур иккен. Дежурство йӗркелес пирки те сӑмах пулчӗ, вырӑнти влаç мӗн тейӗ ӗнтӗ.

Коля ӑна пӗр пӳлмесӗр итлесе ларчӗ.

—Н-да, чӑнах та, кӑçал йывӑр çул пулать, аллӑ çул хушшинче кун пекки пулман, теççӗ, леш çирӗммӗш çулсенчи выçлӑх вӑхӑчӗсем каялла çаврӑнса ан килччӗрех,—председатель хӑйӗн сӑмахне хӑех çирӗплетсе малалла калаçрӗ.—Чӑнах та çапла, анчах та халь пурпӗрех ӗлӗкхи пек выçӑ ларас çук-ха, ун чухне çӗршыв граждан вӑрçипе юхӑннӑ пулнӑ.—Унтан тем аса илсе калаçӑва урӑх еннелле пӑрчӗ:—Чим-ха, эпӗ сана калама мансах кайнӑ. Çитес эрнере пирӗн пулас механизаторсене вӗренме ӑсатмалла. Вӗсем çитес çул тыр-пул пуçтарнӑ вӑхӑт тӗлне пӗлӳ илсе

каялла таврӑнаҫҫӗ. Малашне ҫамрӑксем пире пулӑшакансем пулаҫҫӗ.

—Ку аван хыпар,—председательпе пӗрле савӑнчӗ комсомол секретарӗ те.

Пӳлӗмре пӗр вӑхӑт хушши калаҫу ҫиппи татӑлнӑ пек пулчӗ. Коля пукан ҫине тайӑнса ларчӗ те кӑмӑлне улӑштармасӑр:

—Николай Филиппович, эсир пирӗн пулас ҫамрӑк мӑшӑр ҫинчен илтнӗ-и-ха?

—Илтмесӗр, ҫырӑнма заявлени парас тенӗ кун ирхине Саша ман пата чупса кӗчӗ. Хӑй таҫтаваскать. Сывлӑш ҫавӑрса янӑ-яманах «авланатӑп» тет. Малтанласа эп ӑна вӑл шӳтлесе калаҫать тесе шухӑшланӑччӗ, анчах та ун хыҫӗнченех Валя кӗчӗ, каччӑн сӑмахӗсене ҫирӗплетсе ҫавнах каларӗ, вара тин ӗнентӗм.

—Валя пирки аса илнӗрен... Эпӗ сире ҫакна каласшӑнччӗ, вӑл фермӑна ӗнесем патне каялла питӗ таврӑнасшӑн. Анна Ивановна хирӗҫ пулмӗ-ши?—сӑмаха хӗр ҫине куҫарчӗ Коля.

Кӑна илтсен Николай Филиппович та шухӑша кайрӗ.

—Йывӑр ыйту патӑн эс мана,—терӗ.—Чӑнах та, эпир ялтан пӑрахса тухса кайнӑ доярка вырӑнне урӑх ҫынна илмесӗр кӗтсе пурӑнаймастӑмӑр-ха. Ҫапах та Вальӑна ӗҫсӗр хӑвармӑпӑр, мӗн те пулин шутласа тупатпӑрах. Вӗреннӗ вӑйпитти ҫамрӑксем пире кирлӗ пулаҫҫӗ. Енчен те бригадӑна кайма килӗшмесен, малтанласа правленине кассира илме пулать, кантур ӗҫне хӑнӑхтӑр. Канашри финанс техникумӗнче заочно вӗренет теменччӗ-и ун пирки?

—Вӗренессе вӗренет-ха, анчах кассир ӗҫӗ пит илӗртӗ-ши ӑна?—иккӗленчӗ каччӑ.

Председатель патӗнчен тухсан Коля хӑйӗн пӳлӗмне кӗчӗ. Вӑл кайнӑранпа кунта никам та пулман пулас. «Бюро членӗсем те килсе курман-ши?»—шутларӗ вӑл. Анчах та сӗтел ҫинчи хут листисене курсан, шухӑшне улӑштарчӗ, чунӗ пӗчӗк ачанни евӗрлех хӗпӗртерӗ. Шупашкара кайиччен вӗсем кӳршӗри «Родина» колхоз ҫамрӑкӗсене ӑмӑртӑва чӗнме шутланӑччӗ. Ҫамрӑксем ҫывӑрман иккен, секретарь таврӑнасса кӗтмесӗрех ӑмӑрту условисен проектне ҫырса хатӗрленӗ, халь ӗнтӗ ӑна пухура йышӑнса ҫирӗплетесси ҫеҫ юлать. Паллах, ҫамрӑк крепковецсене ҫӑмӑл пулмӗ, мӗншӗн тесен «Родина» колхоз районта малта пымасан та, пуяннисен ретӗнче шутланса тӑрать.

—Мĕнех, тăрăшса пăхăпăр,—хăйĕнпе хăй сасăпах калаçрĕ секретарь. Çак вăхăтра алăка шаккарĕç те, пӳлĕме Саша Кошкинпа Галя Никифорова кĕрсе тăчĕç.

—Пăх-ха вĕсене, секретаре курмасăрах ял çуммипе тухса тарасшăн, аран-аран çул çинче хăваласа çитрĕм, йĕтем тĕлне çитнĕпе пĕрехчĕ темелле,—вăрçнă евĕр шӳтлесе кулкаларĕ Саша, Гальăна чавсинчен тытса сĕтел çывăхнелле çавăтса пынă май.

—Эсĕ пире Коля таврăнни çинчен каламарăн вĕт,—хăйĕн айăпне сирме тăрăшрĕ Галя.

—Ну-ну, ун пек чух сирĕн ялан сăлтавĕ тупăнать.

—Юрĕ, эппин, айăплă,—текех хирĕçлемерĕ хĕр.—Кольăна сывлăх сунма ирĕк пар пĕреххут. Салам пултăр, секретарь юлташ!

—Салам, салам! Кунта акă сĕтел çинче эсир хатĕрлесе хунă ăмăрту условисене тупрăм. Аван çырнă, чăннипех мухтамалла сире куншăн. Кӳршĕсем унпа паллашнă-и вара?

—Паллашнă тени çителĕксĕр, ăна эпир пĕрле пуçтарăнса çыртăмăр.

Малаллахи калаçу çамрăксене çĕнĕрен те çĕнĕ ĕçе явăçтарасси çинчен пулчĕ.

—Саша,-тытса чарчĕ алăк патне çитнĕ тусне Коля,—эпĕ санпа ĕнерех калаçасшăнччĕ, май килмерĕ. Атя комсомолла туй ирттерер. Ман шухăшпа Валя та хирĕç пулас çук.

—Питĕ лайăх сĕнӳ ку. Саша, мĕншĕн-ха туя çĕнĕлле ирттерес мар? Клубра, пĕтĕм халăх умĕнче пил паччăр ваттисем. Вĕренсе юлччăр çамрăксем ĕлĕкхи ырă йăла-йĕркесене. Клубра вырăнĕ те нумай,—калаçăва хутшăнчĕ Галя та.

—Тĕрĕссипе каласан, эпĕ хам та кун çинчен шутланă-ха, пĕри те тепри пуçламасан, тата кама кĕтмелле пирĕн, ваттисене-ши?

Çапах та халлĕхе татăклăн нимĕн те каламарĕç-ха çамрăксем, килтисемпе канашлама пулчĕç.

Сашăпа Галя тухса кайсан Коля хăй палăртнă ĕçе тӳрех пуçăнаймарĕ-ха. Çитес шăматкун викторина ирттерме палăртнăччĕ, çавна май кану каçĕн хăшпĕр ыйтăвĕсене çивĕчлетме, интереслĕрех тума шутланăччĕ. Анчах та шухăшсем малтанхи калаçу патнех çитсе чарăнчĕç. Чăнах та, мĕн тери лайăх пулĕччĕ комсомолла туй ирттерсен! Анчах та мăшăрланакансен уявне ватти-вĕтти те килĕштертĕр тесен, малтанах тĕплĕн хатĕрленес пулать паллах. Тоньăпа калаçмалла, клуба илемлетесси, туй сценарине çырасси, ăна

йёркелесе пырасси унран нумай килет-çке. Çак шухăшсемпе вăл пӳлĕмрен тухса клуб еннелле утрĕ.

* * * * *

Валя вырăнне дояркăра ĕçлеме пуçланă Тамара Исаева председатель патне çав тери пăлханса пырса кĕчĕ.

—Хуть те мĕн тăвăр, тек тем тесен те дояркăра ĕçлеместĕп,—терĕ вăл тарăхса.—Çитет, колхозра ĕç пĕтмен, сывлăхăм та йĕркеллех мар манăн, çамрăксем ĕçлеччĕр фермăра!

Николай Филиппович ăна лăпланма вăхăт парса, пукан çине ларма сĕнчĕ, унтан юриех хăйне ĕçлĕ çын пек кăтартас шутпа таçта шăнкăравлама пикенчĕ.

—Мĕн пулчĕ-ха санпа?—ыйтрĕ вăл, хĕрарăм лăпланнă пек пулсан,—ĕнер çеç пурте йĕркеллĕччĕ вĕт-ха.

—Çук, ĕнер çеç мар, ĕçе пĕрремĕш кун тухсанах, эпĕ хам вырăна лекменнине туйрăм. Йывăр мана, Николай Филиппович, çав тери йывăр!—куççулĕсене тутăр вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ Тамара.

—Чим-ха,—хĕрарăма каллех лăплантарас тесе калаçма пуçларĕ председатель.—Паллах, малтанласа ĕçе хăнăхасси йывăр ĕнтĕ, ĕненетĕп, çапах та ĕçӳсем йĕркеллехчĕ вĕт-ха, сĕт тухăçлăхĕ те ыттисеннинчен пĕрре те кая мар, ытларах та.

—Уншăн каламастăп эпĕ,—пӳлчĕ ăна Тамара,—ĕçре манăн кăтартусем лайăх пулни çеç мар вĕт-ха, юлташсемпе мĕнле пурăнни те кирлĕ. Хĕрсем пирки япăх нимĕн те калаймастăп.Ĕçре вĕсем мана пулăшман кун та иртмест, çапах та эпĕ унта кашнийĕншĕн ют çын. Ăçтан-ха вăтăртан иртнĕ икĕ ачаллă хĕрарăм вĕсен тусĕ пулма пултартăр? Ĕнер фермăна Валя пырса кайрĕ. Пурте куç умĕнче-çке: епле савăнчĕç хĕрсем ăна курсан. Эпĕ фермăра ĕçлеме пуçланăранпа та вĕсем çакăн пек хăйсене телейлĕн туйнине курман, ташлама, юрлама пикенчĕç, кайран уççăнах каларĕç. «Валя, эсĕ пире пăрахса кайнăранпах хамăра хамăр кун пек хаваслă туйман». Паллах, çакна мана кӳрентерес тесе каламарĕç ĕнтĕ. Мĕн тери чĕрене ыраттармалла сăмахсем пулчĕç вĕсем маншăн? Аран-аран чăтса ирттертĕм, хама таçтан килсе ернĕ ют çын евĕр туйрăм çак самантра. Кайран

ёнесене сума тухрăмăр. Валя та пулăшмалла тесе витре йăтса пирĕнпех тухрĕ. Курасчĕ сирĕн, выльăхсем те этем евĕрлех, темиçе çул курман пек, ун патнелле туртăнчĕç, хĕре сăмсисемпе кăкăрĕнчен тĕртсе ачашшăн пăхрĕç, кашниййĕ сасă парса хăй патне чĕнчĕ, вĕсем те малтанхи хуçине манаймаççĕ иккен.

—Юрĕ,—ассăн сывларĕ председатель, кăвакарнă çӳçне хыçалалла аллипе шăлса якатнă май.—Вальăна эпĕ асăрхаттаратăп, текех ёнесене пăтратса çӳремĕ. Урăх ĕçе кĕнĕ пулсан, лăпланса унтах вăй хутăр. Хĕрсем вара хăйсемех хăнăхĕç, эс те темле ват карчăк мар-ха, пĕр чĕлхе тупатăнах. Çамрăксен хăйсен вăрттăнлăхĕн пурри паллă ĕнтĕ, халлĕхе сана пит пĕлсех çитеймен пирки çеç ютшăнаççĕ, тепĕр икĕ эрнеренех акă ушкăнпа пĕр чĕлхе тупса килĕштерсе пурăнма пуçлатăр. Хамăр та вĕсен çулĕнче пулнă вĕт, аса ил-ха çав вăхăта,—чăнласах Тамарăна хăй вырăнĕнчех хăварас тĕллевпе ӳкĕтлеме пуçларĕ председатель.—Пирĕн хушăра аслăрах çулсенчи çын тупăнсан, эпир те пĕр çулхисем çиййĕнчех уйрăм ушкăн туса, хамăр шухăшсене вăрттăн сӳтсе яваттăмăр, çапах та аслисен кашни утăмне куç илмесĕр сăнаттăмăр. Аса ил-ха çаксене пĕтĕмпех, Тамара,—хĕрарăм кăмăлне çĕклеме тăрăшрĕ вăл.

—Николай Филиппович, мĕншĕн-ха эсир мана лăплатасшăн, эпĕ паян шутланипе çеç килмен вĕт-ха кунта. Çук, тем тесен те текех фермăна каймастăп, халь тесен халь урăх çын тупса ярăр.

Ку сăмахсем председателе чăнах та шухăша ячĕç, çакăн пекех татăклăн калать пулсан, Тамарăна ӳкĕтлени усăсăр.

—Ху вырăнна кама сĕнес шухăш пур вара санăн?

—Паллах, Вальăна. Мĕн тери хĕпĕртенĕ пулĕччĕ вăл каялла хăй вырăнне таврăнсан? Тантăшĕсен савăнăçне вара каласа та пĕтерейменĕн.

—Килĕшĕ-ши? Ман шухăшпа, кассир ĕçĕ те унăн кăмăлне каять пулас, çитменнине, çăмăлтарах та.

—Николай Филиппович, эсир ăна малтан сĕнсе пăхăр, килĕшессе шансах тăратăп, кирлĕ пулсан, эпĕ ăна халех чĕнсе килетĕп,—ура çине сиксе тăчĕ Тамара.

—Кирлĕ мар, хамах калаçса пăхăп,—ним тăвайман енне хĕрарăмăн сĕнĕвĕпе килĕшрĕ председатель.—Çапах та эсĕ ку эрнере хăвах ĕçле ĕнтĕ. Çын тупмасăр фермăран тухса ан кай, капла та ёнесене нушалантарса пĕтертĕмĕр,—сассине çемçетсе йăвашшăн, ыйтнă пекех, хушса хучĕ вăл.

Пĕчĕк ача евĕр хĕпĕртенĕ Тамара правленинчен савăнăçлă кăмăлпа тухрĕ, çурăм çинчен виçĕ пăтлă михĕ илсе пăрахрĕ, тейĕн, анчах та председателе мĕнле тарăн шухăша янине шутларĕ-ши вăл?

Николай Филиппович ним тăвайман енне кĕсйинчен пирус кăларса тивертсе ячĕ, пĕр хушă пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ утрĕ. «Вăт сана уяр çанталăкра — аслати,—шутларĕ вăл хăй ăшĕнче.—Кам кĕтнĕ-ха паян çакна? Пурте хăй вырăнĕнче пекчĕ. Ку çамрăксене пула,—хăйне хăй мăкăртатса вăрçрĕ вăл çăра тĕтĕме çăтнă май,—çывăрма выртсан та лăпкăн тĕлĕреймĕн. Мĕн калĕ-ши ку хыпара илтсен вĕсен пуçлăхĕ?»—çак шухăшсемпе вăл Коля пӳлĕмне утрĕ.

Секретаре ку хыпар пĕрре те тĕлĕнтермерĕ, шăпах çак куна кĕтсе пурăннă тейĕн, вăл савăнчĕ çеç. Хăй хĕпĕртенине пытарма та шутламарĕ.

—Лайăх, çав тери лайăх хыпар,—терĕ вăл председателĕн тĕксĕмленнĕ сăн-питне курсан,—Вальăна фермăна вырнаçтарас пирки эпир сирĕнпе сăмахланăччĕ вĕт-ха, кассир ĕçĕ уншăн вăхăтлăха кăна пултăр терĕмĕр. Мĕн тери савăнать ĕнтĕ Валя çак хыпара илтсен. —Халлĕхе ун çинчен пĕлмест-и-ха?—ыйтрĕ Коля Николай Филиппович çумне ларса.

Секретарь хăйне çапла тытни председателе килĕшмерĕ, çавăнпа та унăн ыйтăвĕ çине вăл тӳрех хуравламарĕ, каччăна тимлĕн сăнанă хыççăн çеç:

—Пĕлмест,—терĕ.—Анчах та Валя савăнсах килĕшессине ăçтан пĕлетĕн эсĕ? Ман шухăшпа, кассир ĕçĕ те ăна йăлăхтарсах çитермен-ха.

—Çук,—хальхинче сассине пусарса лăпкăн калаçрĕ Коля,—эпир çамрăксем хамăрăн шухăшсене пĕр-пĕринчен пытарса пурăнмастпăр, яланах уççăн калаçатпăр. Эсир сăнани те тĕрĕсех, кассир ĕçне Валя тиркемест, тĕрĕссипе калас-тăк, пĕтĕм ĕçе вăл мĕн пĕчĕкрен тĕплĕн тума хăнăхнă. Хăшпĕрисем пек ячĕшĕн, алран кайса пултăр тесе ĕçлемест , анчах та ĕмĕчĕпе вăл хăйĕн тус-тантăшĕсемпе пĕрле. Ĕнер çеç-ха фермăран таврăнсан, мана хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ. «Председательтен ыйтасчĕ, анчах та ялтан тухса кайнăшăн вăл ман çине çилленнĕ пулĕ, хам шутланине пĕлтерме намăс пек, пурпĕрех ĕненмĕ», терĕ.

—Эппин, эсĕ Вальăнах сĕнетĕн?—каллех ассăн сывларĕ председатель.

—Паллах, Николай Филиппович. Пĕлетĕр-и, эсир Вальăна дояркăна куçарма хирĕç мар пулсан, пирĕн ĕç икĕ хут çăмăлланатчĕ. Фермăри хĕрсем хăйне евĕр художествăллă пултарулăх ушкăнĕ —агитбригада йĕркеленĕ. Часах акă тырпул пуçтарма тухăпăр. Вĕсем уй-хир ĕçченĕсене кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче пысăках мар концерт лартса пама хатĕрленеççĕ. Валя вара, çунатсăр кайăк пек, айккинче тăрса юлать. Унăн сасси те шăпчăкăнни пекех вĕт,—шухăша кайнă председателе ӳкĕте кĕртесшĕн пулчĕ Коля.

Николай Филиппович йывăррăн вырăнĕнчен çĕкленчĕ. Çунса пĕтнĕ пирусне сĕтел çинчи пепельницăна пусарах хучĕ те Коля çине чеереххĕн пăхса, пӳрнипе юнарĕ:

—Асту, секретарь юлташ, кун пек ĕмĕтсемпе эсĕ правленинче пĕр çамрăка та хăвармăн,—терĕ.—Ну, юрĕ, ӳкĕте кĕртрĕн. Кала Вальăна, ман пата кĕтĕр.

Коля бухгалтерсен пӳлĕмне васкарĕ, кассир патне пырса, никам ан систĕр тесе, хăлхинчен пăшăлтатса ăна председатель хăй патне кĕме ыйтни çинчен пĕлтерчĕ. Лешĕ сăлтавне чухлаймасăр каччă çине ыйтуллăн пăхрĕ, анчах та вăл хуравлас вырăнне хулпуççийĕсене çеç сиктерсе илчĕ, куçĕсем, часах пĕлĕн, терĕç.

Валя алăкран çухалчĕ. Каччă юриех вăл каялла килессе кĕтсе пӳлĕмрех юлчĕ, вăхăт чылаях иртессе шанса, Маша çывăхнерех ларчĕ те ăна тĕрлĕ ыйтусемпе аптратма пуçларĕ.

—Туссем!—вирхĕнсе кĕчĕ пӳлĕме тепĕр ик-виçĕ минутран Валя, тинех уççăн сывлама вăхăт çитрĕ тенĕн.—Ыранах дояркăна куçатăп!—терĕ никам çине пăхмасăр сĕтел çине сарса хунă хучĕсене васкаса пуçтарнă май. Вăл ытла та хĕпĕртенипе пĕр вырăнта тăрса тапăртатса ташласа илме те ĕлкĕрчĕ.

—Чим-ха, Валя,—лăплатма тăрăшрĕ ăна Маша,—йĕркипе каласа пар. Ăçта васкатăн эсĕ?

Анчах та Валя ăна каласа пĕтерме памарĕ:

—Тепĕр чух, тепĕр чух, —терĕ те çавра çил пек палтăртаттарса пӳлĕмрен тухса та сирпĕнчĕ. Хăйĕн ыйтăвне татса пама Коля пулăшнине чухласа та илеймерĕ пулас.

Коля, пурне те малтанах пĕлсе тăнăскер, шурă тикĕс шăлĕсене кăтартса хаваслăн кулса юлчĕ.

—Нимех те мар,—лăплантарчĕ вăл пӳлĕмрисене,—паянтан Валя каллех фермăра ĕçлеме тытăнать, саламламалли çеç юлать ăна.

Бухгалтерсем каччăна хирĕç нимĕн те каламарĕç, пĕр-пĕрин çине пăхса, кашнийĕ хĕршĕн хĕпĕртерĕ.

*   *   *   *   *

Правлени çуртĕнче колхоз председателĕсĕр пуçне урăх никам та курăнмарĕ, пурте апатра ĕнтĕ. Хĕллехи вăхăтра пӳлĕмсем нихăçан та пушă тăмаççĕ. Çулла вара пач урăхла, кăнтăрлахи апата кайсан, çынсем ĕçе васкамаççĕ, канун кашни минучĕпе туллин усă кураççĕ, ара, камăн-ха ларас килтĕр çакăн пек пăчăра! Пӳлĕмсенче чӳречесене яриех уçса ярсан та, сывлăш çитмест, сывлама йывăр. Иçмасса, уçă çил кăшт та пулин варкăшса вĕртĕрччĕ. Çук çав. Çумăр çуманни ик уйăха яхăн ĕнтĕ. Хĕвел чарăна пĕлмесĕр хĕртрĕ. Çулсем тахçанах алă лаппи таран тусанпа витĕннĕ. Çара уран çӳрес тесен пусма та май çук. Вăл пушмак витĕр урана хытах пĕçертет. Çук, ку темех мар-ха, енчен те машина е кĕтӳ иртсе каяс пулсан, ял çине тĕтĕм мăкăрланнă евĕр, тусан çĕкленет, вăл куçа кĕрет, татах та сывлăша йывăрлатать.

Николай Филиппович кĕске çанăллă кĕпин çӳлти тӳмисене вĕçертсе янă, çавна пула кăкăрĕ çине шăтса тухнă кăтра та хура çăмĕ курăнать. Вăл сăмса тутрине енчен-енне сулласа, çамки çине тапса тухнă тарне çине-çинех типĕтрĕ. Паллах, тутăрне кашни кун ылмаштарать пулин те, яланхилле чăлт шурă мар, енчен те ӳт çине сăмала пек тусан çыпçăнсан, ăçтан-ха çакăн пек çанталăкра таса пултăр вăл? Председатель пукан çине тайăнса ларса, самантлăха лăштах пулчĕ, утса çӳреме мар, ал-урана та вырăнтан куçарас килмерĕ. Вентилятор ун çине уçă сывлăш хăваларĕ, кунĕ-кунĕпе çакăн пек ларма хатĕр пулчĕ вăл, анчах та унăн чунĕ лăпланма пĕлмерĕ. Çумăр çуманнишĕн, тыр-пул тухăçлăхĕ нихçанхинчен те япăх пулма пултарнишĕн — пуриншĕн те пĕтĕмпех хăйне айăпларĕ председатель. Юлашки вăхăтра ыйăх та килмерĕ. Вăл канăçа çухатса, çĕр варринче тухса çумăр пĕлĕчĕсем килессе кĕтрĕ. Çумăр, çумăр çеç халь кирлĕ!

Коридортан такамăн васкавлăн утнă сасси илтĕнчĕ. Николай Филиппович, вăраннă пек пулса, тӳрленсе ларчĕ, вентиляторне хăй патĕнчен айккинелле пăрчĕ те хăнана кĕтсе, куçĕсемпе алăк еннелле тинкерчĕ.

—Николай Филиппович, тата тепĕр эрне çакăн пек çанталăк тăрас пулсан, тыр-пула пĕлтĕрхи шайăн çуррине те пуçтарасси пулмасть. Уй-хир йăлтах типсе сарăха пуçларĕ, çĕр те çуркаланса пĕтрĕ,—пӳлĕме кĕнĕ-кĕмен калаçма пуçларĕ колхоз агрономĕ.

—Ан та кала ёнтӗ, Анатолий Владимирович, эпӗ те ҫавӑн ҫинченех шутлатӑп-ха. Нивушлӗ тӗнчипех типӗ ҫанталӑк тӑрать?

—Ҫук. Авӑ Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнчех кашни кун ҫумӑр ҫӑвать, теҫҫӗ. Хаҫатсенче вара Амур шывӗ ҫыранран тухса ял хуҫалӑхне пысӑк сиен кӳни, юхан шывпа кӗрешме ҫар ҫыннисене те хутшӑнтарни ҫинчен ҫыраҫҫӗ.

—Унта кун сиктерсе ҫумӑр ҫӑвать, кунта вара ҫырма-ҫатрасенче чӑх ӗҫсе тӑранмалӑх та шыв юлмарӗ.

—Ҫапла. Комсомолецсем халь те килеймерӗҫ-и-ха?

—Ӑҫтан халех килччӗр. Вӗсемшӗн унта чи хӗрӳ самант пулӗ-ха. Вӑрман пушарне сӳнтересси кӑвайт хӗлхемне урапа пусса пӗтересси мар вӗт. Районти пур ҫамрӑк вут-ҫулӑма хирӗҫ ҫӗкленнӗ, ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр хурал тӑраҫҫӗ. Райком секретарӗ ертсе пыракан ушкӑн вара шӑпах пушар сӳнтернӗ ҫӗрте, пирӗн ялсем те унтах.

—Н-да, чӑн-чӑн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек, ялта ватӑрах ҫынсем ҫеҫ тӑрса юлтӑмӑр, ыттисем пурте халӑх пурлӑхне хӳтӗлеҫҫӗ. Малашне те ҫакӑн евӗр лару-тӑру пулсан эпир ыраш вырма та тухаймӑпӑр.

—Эсӗ мӗн, Анатолий, ҫамрӑксене ӳпкелесшӗн мар пуль те?

—Ҫук, шухӑша кайнӑран ҫеҫ ҫапла калатӑп,—йӑвашшӑн хушса хучӗ агроном,—ҫак кунсенчех акӑ ыраш вырма тухмалла. Мӗн пуҫтарӑпӑр-ши, пучахсем пурте, чирлӗ ҫын пек, типсе ҫинҫелсе ларнӑ. Ҫирӗм ҫула яхӑн ӗҫлетӗп пулин те кун пеккине курман эпӗ. Ҫамрӑксене мӗншӗн ӳпкелес, вӗсем унсӑр пуҫне те нумай тар тӑкрӗҫ ӗнтӗ. Ак ҫак ҫирӗм ҫамрӑка вӗренме яни те мӗне тӑрать, ҫитес ҫул вӗсем хуҫалӑха каялла таврӑнӗҫ, малашне пӗтӗм вӑй вӗсенче пулӗ.

—Чӑнах та, ҫамрӑксем хӑйсен ӗҫне йӗркелесе янӑранпа ял пурнӑҫӗ пӗтӗмпех улшӑнчӗ. Спектаклӗ питӗ ӑнӑҫлӑ пулса тухнӑ, теҫҫӗ. Пур кӳршӗ-аршӑ, ял кун пирки калаҫать. Часах ялти клубра лартса парӗҫ. Кунта вӗсен чеелӗхӗ те кӑштах пур, ял-йыш умӗнче чи юлашкинчен чаплӑрах выляма вӗренсе ҫитнӗ хыҫҫӑн тин кӑтартасшӑн, вара хӑйсен йышне татах та ытларах ҫамрӑксене явӑҫтарасшӑн. Ҫак вӑрттӑнлӑха мана секретарь хӑй пӗлтерчӗ, никама та каламӑп терӗм, эсӗ те сӑмах пар, —чеен куҫне хӗссе шӳтлерӗ председатель.

—Халиччен пирӗн кун пек вӑрттӑнлӑх пулманччӗ те, мӗн тӑвӑн, килӗшесех пулать. Унсӑрӑн сан шанчӑкунтан тухса ӳкӗп, Николай Филиппович,—шӳтлерӗ агроном та.

—Çамрăксемпе туслă пурăнас пулать. Колхозăн пуласлăхĕ, малашнехи пурнăçĕ пĕтĕмпех вĕсенчен килет.

—Николай Филиппович,—терĕ агроном кăштах чĕнмесĕр ларнă хыççăн,—пирĕн выльăхсем валли çӳреме вырăн юлманпа пĕрех. Мĕн тăвăпăр-ши, тен каçсерен вĕсене апат хушса çитермелле мар-ши?

Председатель каллех шухăша кайрĕ.

—Толя, хам та пĕлместĕп мĕн тумаллине, çапах та алла усса ларас марччĕ, мĕн те пулин шутласа кăларма тивет.

Çак вăхăтра коридорта çынсем шавласа калаçни илтĕнчĕ. Правленинче ĕçлекенсем апатран килчĕç пулас, председатель хăй те сисмерĕ, сехет çине пăхса илчĕ.

—Пăх-ха, пирĕн интеллигентсем çине, пĕр минут та кая юлмаççĕ,—пӳрнипе сехет йĕпписем çине тĕллесе кăтартрĕ вăл, тусне каллех шӳтлеме чĕнсе. Юрĕ, атя-ха, тепĕр хут уя тухар, хир йĕри-тавра тепре çаврăнар. Нивушлĕ выльăх çӳремелĕх те вырăн юлмарĕ пирĕн, курăк пĕтĕмех типсе çунса ларнă?—Пуканĕ çинчен йывăррăн çĕкленчĕ председатель.

Агроном хирĕçлесе пĕр сăмах та хушмарĕ. Мĕн калатăр ĕнтĕ вăл, енчен те чăнласах çĕр хăйĕн симĕс тĕсне çухатрĕ пулсан. Çумăр, тахçантанпа кĕтнĕ çумăр çеç хăтарĕ вĕсене капланса килнĕ йывăрлăхран тухма.

* * * * *

Сергей Иванович арăмне Киеври Шалимов профессор клиникине сипленме леçсе хăварнă хыççăн каялла яла таврăнчĕ.

Учительсем хăнăхнă йăлипе кашни кунах шкула çӳрерĕç. Вĕренекенсен çуллахи каникулĕ пуçланнăранпа классем пуш-пушах ларчĕç. Паллах вĕсемшĕн, шăв-шава хăнăхнăскерсемшĕн, кăштах кичем пулчĕ, çапах та шкулта тунсăхласа ларма май килмерĕ. Умра ĕç туллиех: çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çитиччен классене сăрламалла, методика пособийĕсем хатĕрлемелле тата ытти нумай вак-тĕвек ĕçсем те мăй таранах.

Ватă учитель килте икĕ эрне хушши пĕччен пурăнчĕ. Ывăлĕ ялти ытти яшсемпе пĕрле вăрмансенчи пушарсене

сӳнтернĕ çĕрте пулчĕ, паллах, вĕсене те унта çăмăл мар ĕнтĕ. Çывăхра пулин те, унран вăл пĕр хыпар та илтмерĕ.

Ял çинче сывлама çук ĕнĕк шăрши тăчĕ. Тĕтреллĕ çанталăкри евĕр, аллă утăмра та умра мĕн иккенне уйăраймăн, пĕтĕмпех тĕтĕм хупларĕ. Ӳпкепе аптракан Сергей Ивановичшăн сывлăш йывăрлансах çитрĕ. Час-часах вăл, никама систерес мар тесе, чылай вăхăт хушши, шывсăр пулă пек, çăварне карса пăрахса сывларĕ. Хăш чухне унăн йĕркеллĕ утса пынă çĕртех куç-пуçĕ хуралса килчĕ, пуçĕ çаврăнчĕ. Çапах та вăл парăнма шутламарĕ, вăрçă суранĕсене хирĕç кĕрешсе, ял-йыш, тусĕсем умĕнче хаваслăн курăнма тăрăшрĕ.

Паян акă çанталăк нихçанхинчен те пăчăрах пулчĕ. Картишĕнчи чăх-чĕпсем хăйсене лартса панă шыв савăтĕнче чарăна пĕлмесĕр чăмпăлтатрĕç, вĕсем çеç мар, тавралăхри пур вĕçен-кайăк та шыв çумнерех пулма тăрăшрĕ.

Сергей Иванович кăнтăрлаччененех хăйне япăх туйрĕ, çапах та вăхăтне шкулта иртерчĕ, анчах та яланхи пек вĕçне çитиччен ларма пултараймарĕ: унăн сывлăшĕ пӳлĕнсе килчĕ, ӳчĕ пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ. Шкул директорĕ çакна тӳрех асăрхарĕ. Вăл Сергей Ивановича хистесех киле кайма ыйтрĕ. Ватă учитель чĕрĕк ĕмĕр шкулта ĕçлесе те нихăçан та ĕç вĕçленмесĕр шкултан кайса курман.

Вăл васкамасăр килĕ еннелле утрĕ, анчах та темшĕн урисем утнăçемĕн йывăрлансах пычĕç, çурăмĕ çине темиçе пăтлă пăрçа миххине хунă тейĕн. Мĕн амакĕ? Халиччен тем тĕрлĕ асапа чăтса курнă пулсан та, кун пекех аптракан марччĕ-çке.

Киле çитсен Сергей Иванович çӳхе кĕпине хывса пăрахса вырăн çине тăсăлса ӳкрĕ. Куçĕсем темшĕн тĕтреленсе килчĕç, пӳлĕмри сĕтел-пукан чарăна пĕлмесĕр пуç йĕри-тавра çаврăнма пикенчĕ. Вăл тăма хăтланчĕ, анчах та шăмми-шакки, йывăрланса çитнĕскер, ăна пăхăнмарĕ. Унăн кăшкăрас, пĕр курка шыв ыйтас килчĕ. Тен, чунĕ ыйтнипе тивĕçтерес шутпа вăл сасă та пачĕ пулĕ, çапах та йывăррăн, пĕтĕм вăйне пухса хăйăлтатнисĕр пуçне нимĕн те илтĕнмерĕ, куçĕсем темшĕн хăйсемех хупăнчĕç...

Коля килне çитнĕ çĕре вăхăт кăнтăрла енне сулăннăччĕ ĕнтĕ. Вăл пушара çĕнтерсе, икĕ эрне хушши пĕр чарăнмасăр кĕрешсе, çулăма сӳнтернишĕн хăпартланса, çиçекен сăн-питпе машина çинчен сиксе анчĕ. Каччă хăйĕн савăнăçне хăвăртрах ашшĕне пĕлтерес шутпа пӳртелле васкарĕ, часах унпа тĕл пулас килчĕ, чылайранпа вăл ăна курман-çке.

Ашшӗ ывӑлӗн тӗтӗм шӑрши ҫапнӑ тумтирне, вӗрипе пиҫсе хуралнӑ сӑн-питне курсан тӑруках паллаймӗ те-ха акӑ.

Ҫак шухӑшсемпе вӑл ашшӗ выртакан вырӑн патнелле чупрӗ, анчах та урай варрине те ҫитеймерӗ, кӑвакарса кайнӑ ашшӗне курсан тӑпах чарӑнчӗ, унӑн куҫӗсем чарӑлса кайрӗҫ, пӗр вӑхӑт хушши чӗлхи те ҫӗтрӗ тейӗн.

—Аттеҫӗм!—талпӑнчӗ вӑл ун еннелле, текех нимӗн те калама пултараймарӗ, ҫапах та ҫухалса кайма юраманнине асра тытса, вӑл васкаса ашшӗн аллине тытрӗ, юн тымарне тупса чӗри тапнине тӗрӗслерӗ, унтан пуҫне унӑн кӑкӑрӗ ҫине хучӗ.

Ашшӗн лӑпкӑн тапакан чӗри сассине хӑйӗн хӑлхипе илтсен ҫеҫ ӑна чун кӗчӗ тейӗн. Вӑл ура ҫине сиксе тӑчӗ, анчах та пӗр вырӑнта юпа пек хытса тӑма вӑхӑт-и? Тин ҫеҫ ларса килнӗ машина каялла ҫаврӑнса кайиччен ӑна урамра тытса чармалла, кайран ашшӗне тӳрех унпа больницӑна ӑсатмалла. Ҫак шухӑшсемпе Коля пӳртрен чупса тухрӗ. Телле машина кайса ӗлкӗреймен.

—Чарӑн, пӗр минутлӑха та пулин чарӑн!—аллине тӑратса май килнӗ таран хыттӑн кӑшкӑрма тӑрӑшрӗ вӑл, ҫине-ҫинех умлӑн-хыҫлӑн шӑхӑрса та пӑхрӗ.

Шофер, пӗр ҫирӗм метра яхӑн пӳрт умӗнчен иртсе кайма ӗлкӗрнӗскер, ун сассине илтрӗ пулас, чарӑнчӗ, кабина алӑкне уҫса Кольӑна кӗтрӗ.

—Мӗн пулнӑ? Темрен хӑраса сехрӳ хӑпнӑ евӗрлех.

Анчах та Коля ӑна каласа пӗтерме памарӗ.

—Аттене йывӑр,—терӗ.

Шофер ҫийӗнчех ӑнланчӗ. «Халех!» тесе машинине кутӑн чакарчӗ те ҫул айккине лартрӗ, унтан иккӗшӗ те пӳртелле чупрӗҫ. Пилӗк минут та иртмерӗ пулӗ вӗсем каялла тухрӗҫ. Сергей Иванович утиял ҫинче пӗр хускалмасӑр выртрӗ, вӑл ҫаплах тӑна кӗреймерӗ. Ӑна асӑрхануллӑн канлӗрех вырттарнӑ хыҫҫӑн шофер ӑҫта каяссине ыйтмасӑрах машинине вырӑнтан хускатрӗ. Каламасӑрах паллӑ ӗнтӗ — больницӑна. Коля хыҫалти ларкӑч ҫинче ларчӗ, ашшӗн пуҫне хӑйӗн чӗрҫи ҫине хучӗ. Катекрен Патӑръелне машина 10-15 минут ҫеҫ каять пулсан та, ку Кольӑшӑн ҫав тери вӑраххӑн туйӑнчӗ, ҫак вӑхӑтра Мускава та ҫитме пулать тейӗн. Пушара сӳнтерсе киле таврӑннӑ хыҫҫӑн савӑнса лармалла чух, кунта акӑ каллех инкек. Амӑшӗн сывлӑхӗ епле-ши тата, тен, вӑл та, ашшӗ пекех, васкавлӑ пулӑшу парасса кӗтет? Кольӑн хурланнипе чунӗ капланса килчӗ.

Куҫёсем куҫҫулёпе тулчёҫ. Ҫак вăхăтра вăл ашшёпе амăшне телейлё те сывă тăвассишён тем туса пама та хатёр пулчё.

Больницăра Сергей Иванович хăйне кислородпа сывлаттарса темиҫе укол тунă хыҫҫăн тин тăна кёчё. Малтанласа ăҫтине те ăнланаймарё пулас, куҫне уҫнă хыҫҫăн ассăн сывларё те:

—Тёлёрсех кайнă,—терё.—Чим-ха, Коля та таврăннă иккен, ну, комсомол, каласа пар, мёнле унта сирён ҫитёнў?

Коля нимён те чёнеймерё.

—Эсё чăн-чăн герой пек, паллама та ҫук, пётёмпех пиҫсе, хёрелсе кайнă, тин ҫеҫ ҫитрён-им? Ҫăвăнма та ёлкёреймен курăнать, питўсем те хуп-хурах. Ну, вăл нимех те мар, каласа пар, аванах тар тăкма тиврё пуль?—ним те пулса иртмен пек каллех сăмахларё ашшё.

«Ҫук, вăл тăн ҫухатнине, систермелле мар, хăвăртрах сывалтăр ҫеҫ, мён пулса иртнине каярахпа та каласа пама пулать»,—вёҫсе иртрёҫ пуҫра шухăшсем. Текех чёнмесёр тăма юрамасть. Коля хăйне хавхалантарма тăрăшрё пулин те, кирлё сăмахёсем чёлхе вёҫне килмерёҫ.

—Аттеҫём!—аран-аран чётренсе тухрё пёртен-пёр сăмах. Вăл тек калаҫаймарё.

—Ывăлăм, сывах-и эсё, мён пулнă сана?—тăма хăтланчё Сергей Иванович, анчах та кăшт ҫёкленсенех каялла вырăн ҫине ўкрё.

Пўлёмре Сергей Иванович йывăррăн сывланисёр пуҫне урăх пёр сасă та илтёнмерё, никам та ăна чăрмантарма хăяймарё тейён.

—Мён шăплантăр, туссем. Эпё хама аванах туятăп. Эсир вилнё ҫын умёнчи пек йёри-тавра пуҫтарăнни ҫав тери чёрене ыраттарать. Кам та пулин пёр сăмах калинччё пёреххут. Халё ăнлантăм. Эпё больницăра вёт. Пўлёмё те кунта килти мар, сывлăшё те урăхла. Мёнле лекнё кунта, ҫавна нимён те астумастăп. Каҫарăр мана.

—Атте, пушара йăлтах сўнтертёмёр,—чылай чёнмесёр тăнă хыҫҫăн ним калама пёлменрен пуҫларё Коля.

—Маттур, ывăлăм. Ăҫта комсомол — унта ҫёнтерў. Ҫавăнпа шанатпăр та эпир сире ваттисем. Халăх пурлăхне ҫăласси вăл — пысăк тивёҫ, телей. Эсё килте пулнă-и?—терё ашшё кăштахран.

Ҫапла ыйтасса пач кётменскер, Коля мёнле хуравламаллине те чухлаймарё. Халё ăна канăҫлăх кирлё, вăл темиҫе сехет каялла ҫеҫ тăнне ҫухатнине, эпё килте пулнине те калама кирлё мар, ахалех ытлашши шутлаттарни пулё.

—Çук, çитсе ёлкёреймерём-ха. Эсё кунта терёç те, тӳрех кёрсе тухас терём.

—Тавтапуç. Куратăн вёт, тёрёс-тёкелех, сывлăхăм та чиперех. Эсё халь киле кай ёнтё, çăвăнса тасал, выртса кансан та юрё. Вăрмансенчи пушара сӳнтернё çёрте пит çемçе тӳшекех пулмарё пулё,—унăн пичё çинче кулă палăрчё, паллах, ку ывăлён кăмăлне çёклентерчё ёнтё. Вăл тикёс шурă шăлёсене кăтартса, çёкленӳллё сасăпа:

—Астумастăп, çёр çине выртсан та, тӳшек çинчинчен те канлёрех çывăрнă пулё ёшеннё хыççăн, пёр енчен тепёр енне те çаврăнса выртман,—терё.

Петров врач, Сергей Иванович сывлăхне тепёр хут тёрёсленё хыççăн, Коля çине пăхрё те çурăмёнчен кăштах лăпкаса:

—Ну, каччă, кайма вăхăт пулё, тепёр ик-виçё кунтан аçу та килне çитё, хăрамалли нимех те çук, ăна халё усă сывлăш çеç кирлё, урăх нимёнле эмел те унăн çирёп чун-чёрине пулăшас çук,—терё.

Ывăлёпе врач палатăран тухса кайсан, Сергей Иванових пёр хускалмасăр шурă мачча çине пăхса выртрё. Паллах, сывлăш çитменнине вăл хăй те пёлет. Анчах та ăçта пур-ши халь иртнё çулсенчи евёр кăкăра усăлтаракан сиплёхлё таса та усă сывлăш? Пур енчен те тётём хупласа илнё-çке. Нивушлё çăвёпех çак кислород паракан трубкăна çăвара хыпса выртмалла пулать? Пушара сӳнтертёмёр, терё ывăлё, эппин, сывлăш та часах тасалать. Больницăра нумай выртас марччё-ха. Унăн чунё хурланса килчё, куçёсем темшён çилёпе тулчёç, анчах та шухăшсем çаплах-ха татăлмарёç. Мён пулчё-ши кăçал çутçанталăка, çемйине, унăн сывлăхне? Инкек çине синкек тупăнсах тăрать. Пёреххут, май килсен пур асап-синкере шăпăрпа шăлса ывăтёччё е хыткан аллипе пёр чăмăра пуçтарса ватса тăкăччё. «Лăплан, тăванăм, çакăн пекех хумханма кирлё-ши?—хăлхинчен пăшăлтатрё ăна ăшри тепёр сасă.—Акă часах пурте йёркеллё пулё. Аса ил-ха хёрёх пёрремёш çула, хăвăн çамрăклăхна, тен, ун чухне сана хальхинчен чылай йывăртарахчё, анчах та эсё çамрăк пуçна усмарăн. Хăвна ху хистесе Аслă Çёнтерӳ кунне хăвăртрах çывхартас тесе пёр вёçём кёрешрён, малалла утрăн. Тен, чăнах та, ватăлатăн, çапах та çулсем иртсен те санăн яланах салтак пулса юлмалла. Часах акă сывлăхна тёреклетме пёр-пёр санаторине кайса килён, унта сипленён, врачсем те пулăшёç, вара вăй илсе яла таврăнăн. Чăнах та, çемьери хуйхă сана кăçал чылай хавшатрё, халлёхе вырт, кан. Акă ир

пулӗ, чӳречерен савӑнса, кулса хӗвел шевли чупса кӗрӗ. Вӑл сана ачашлӗ, ҫавӑн пекех телейлӗ те савӑнӑҫлӑ кунсем таврӑнӗҫ. Тен, вӗсем ҫумрах, алла ҫеҫ тӑсмалла. Халлӗхе асӑрхамастӑн, анчах та шансах тӑр: ырӑ вӑхӑтсем килеҫҫех».

Ку шухӑшсем чӑннипех те Сергей Ивановича пулӑшрӗҫ. Вӑл тӑруках тӗлӗрсе каяймарӗ, пурте йӗркеллӗ пулать тесе, часах лӑпланчӗ, унтан хӑй те сисмерӗ, тарӑн ыйӑха путрӗ, ҫакӑн пек чылай вӑхӑт хушши ҫывӑрманччӗ-ха...

Врачсем тӑрӑшнипе Сергей Иванович валли часах Сочи хулинчи санаторине кайса сипленме путевка тупрӗҫ, ватӑ учитель хӑйӗн сывлӑхӗ хавшанине туйса вӗсене хирӗҫлемерӗ. Тепӗр куннех, тухтӑрсене тав туса, инҫе ҫула тухрӗ.

Коля килӗнче пӗчченех тӑрса юлчӗ. Каччӑн канӑҫсӑр кунсем пуҫланчӗҫ, килти ӗҫсем те ун ҫине тиенчӗҫ. Хирсенче хӗрсех тырпул пуҫтарнӑ вӑхӑтра та вӑл иртен пуҫласа каҫченех ҫамрӑксемпе пӗрле пулчӗ, ҫӗнӗ хаҫат-журналсем вуласа пачӗ, тӗнчери лару-тӑру, ӗҫ пирки калаҫрӗ, вырмара, йӗтем ҫинче малта пыракансен ӑмӑртӑвне ҫутатса паракан стена хаҫачӗсем кӑларчӗ. Ӗҫӗ унӑн ҫителӗклех пулчӗ, ҫитменнине тата пӗр яла ҫеҫ мар, виҫӗ яла та ҫитмелле. Каҫпа вара, хӗвел ансан, вӑхӑтне клубра ирттерчӗ, час-часах кӳршӗ ялсене тухса ҫӳрерӗ. Унта вӗсем хӑйсем хатӗрленӗ спектакле кӑтартрӗҫ. Ҫамрӑксене пур ҫӗрте те чӑн-чӑн артистсене кӑмӑллалӑ пек хапӑлласа кӗтсе илчӗҫ, халӑх кашнинчех чун-чӗререн тав турӗ. Патӑръел енче пурӑнакан ҫынсем мӗн ӗлӗкренех концерт-спектакльсене час-часах сцена ҫинче курма май килменрен, артистсене кирек хӑҫан та хапӑл туса кӗтсе илеҫҫӗ. Ача-пӑчасем вара пуринчен ытларах савӑнаҫҫӗ. Вӗсем Шупашкарти театр е пӗр-пӗр ялӑн пултарулӑх коллективӗ килет тенине илтсен, клуб алӑкӗ уҫӑлсанах сцена ҫывӑхнерех урайне вырнаҫса ларaҫҫӗ те чаршав уҫӑласа чӑтӑмлӑн кӗтеҫҫӗ. Хальхинче те ҫаплах пулчӗ.

Катексен театрӗ ҫинчен таврара ырӑ ят сарӑлчӗ. Кашни кун тенӗ пек тӗрлӗ ялсенчен правленине шӑнкӑравлакансем пулчӗҫ, хӑйсен клубне пырса кӑтартма тархасларӗҫ. Паллах, пӗр кунта темиҫе яла ҫитейместӗн, ҫавна шута илсе, секретарь е клуб заведующийӗ кашнинех часах вӗсем патне пырассине систерсе лӑплатма тӑрӑшрӗҫ. Панӑ сӑмаха ҫилпе вӗҫтерме юрамасть. Ют ялсем кӗтме те пултараҫҫӗ-ха. Вӗсемпе сайра-хутра ҫеҫ тӗл пулатӑн. Ялйыш умӗнче вара пач урӑхла лару-тӑру: кунта кашни утӑмра тенӗ пек ҫынсемпе курнӑҫатӑн, пурте хамӑр ялта та спектакль лартса

пама вăхăт çитнĕ тесе ÿкĕтлеççĕ. Эппин, вĕсен шанчăкне тÿрре кăлармалла. Çавăнпа та çамрăксем ушкăнпа пуçтарăнса калаçнă хыççăн халăх ыйтнине тивĕçтерме шутларĕç: ыран каçхине ют яла каймастпăр, хамăр патăрта спектакль лартса паратпăр тесе, килĕшрĕç. Ку хыпар часах ял çине те сарăлчĕ. Ача-пăча савăннипе аслисенчен уйрăласшăн та мар, вĕсен йĕри-тавра чупса çÿрерĕ, хăвăртрах палăртнă вăхăт çитессе кĕтрĕ. Вĕсемшĕн пĕр талăк çав тери вăраххăн иртнĕн туйăнчĕ. Ялти артистсемшĕн вара вăл сисĕнмерĕ те, паллах, кашниййĕшĕ кăштах хумханчĕç те.

Тепĕр кунне, каç пулсанах, уяв вăхăтĕнчи пек капăр тумланнă халăх клуб еннелле утрĕ. Коля пынă чух артистсенчен унта Тоньăпа упăшкисĕр пуçне никам та çукчĕ. Ун хыççăнах Сашăпа Валя çитрĕç, часах ферма хĕрĕсем те шавласа пырса кĕчĕç, анчах та Валя Наперсткина темшĕн вĕсен хушшинче курăнмарĕ. Вăл мĕншĕн вăхăтра килменнине тантăшĕсем те пĕлеймерĕç.

—Мĕнле-ха капла, нивушлĕ хамăр ялта çакăн пек пурте пуçтарăнайман пирки спектакль лартаймасăр мăшкăл курма тивет? Мĕнле пит-куçпа утса çÿремелле кайран урампа?—пĕри те тепри ытларах та ытларах пăшăрханма пуçларĕç çамрăксем.

—Çук, Валя, ун пек çын мар, мĕн те пулин сиксе тухнах пулĕ.—пурте илтмелле каларĕ Коля.—Пĕреххут килне кайса килем-ха,—чăннипех те ним тăвайманран сиксе тăчĕ вăл.

Текех пĕр минут та тытăнса тăмарĕ, Вальăсем патне чупрĕ. Клубпа вĕсен килĕ хушши 300-400 метртан ытла та мар пулĕ. Каччă пынă чух Валя килĕнче пĕчченех сĕтел хушшинче пуçне усса, хурланса ларатчĕ. Куçĕсем темшĕн шывланнă. Коля пÿрте кĕрсе тăнине курсан, вăл темшĕн кăмăлсăрланни тÿрех сисĕнчĕ, çавăнпах пулĕ малтанласа пĕр сăмах та чĕнмерĕ.

—Валя, мĕн пулнă сана, мĕншĕн клуба пымастăн? Пĕлетĕн вĕт-ха, халăх тахçанах пуçтарăннă, пурте чаршав уçăласса çеç кĕтеççĕ.

Валя тÿрех хуравлас вырăнне каччă çине пушшех те кăмăлсăррăн пăхрĕ те улшăннă сасăпа:

—Мĕншĕн килтĕн, эс каламасăр пĕлместĕп, тетĕн-им?—терĕ.

Ку сăмахсем, паллах, Кольăна пăлхатмасăр тăма пултараймарĕç.

—Мĕн калаçатăн эсĕ, пĕлетĕн пулсан мĕншĕн хăв хыççăн килессе кĕтетĕн?

Çак вăхăтра, те ют сасса илтсе, чаршав хыçĕнче сасартăк пĕчĕк ача йĕни илтĕнчĕ. Валя текех пĕр сăмах та чĕнмерĕ, унталла чупрĕ. Каччă хăйĕн вырăнĕнчех тăрса юлчĕ, чĕри теме сиссе хăвăрттăн тапрĕ. Ача йĕме чарăнсан, Валя ăна кăкăрĕ çумне çупăрласа Коля патне тухрĕ.

—Каçар, Коля, эпĕ хамăн айăпа ăнланатăп, ăш-чик тăвăнса килнĕрен хытă каларăм пулĕ. Эсĕ кай, çамрăксене лăплат. Вăл часах килет, ачине никампа та хăварма çукран тытăнса тăрать те. Хам та тем пекех васкатăп, анне кўршĕсем патне каçрĕ те халĕ те килеймерĕ.

—Хăçанччен ăна кĕтмелле пулĕ-ши? Эпĕ пĕреххут кайса чĕнем,—алăк хăлăпĕнчен ярса тытрĕ Коля.

—Çук,—чутах хыттăн кăшкăрса ямарĕ Валя, васкавлăн алăк умне пырса тăрса, каччăн çулне пўлсе.—Çук,—кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн сассине пусарса пуçне пĕкрĕ вăл,—ан кай.

Коля чĕнмерĕ.

—Унăн ачи мар вĕт, эпĕ ăна мĕн чухлĕ ларсан та чĕнме пултараймастăп, хăяймастăп та, ахаль те кунĕ-кунĕпе килтен тухмасăр ларать.

—Валя мĕн калаçатăн эсĕ? Усрав ача мар вĕт ку, аннўн пулмасан тата камăн пултăр-ха вăл?

—Текех ун çинчен ан ыйт. Эпĕ сана тахçанах каласшăнччĕ, калаймарăм. Ку ача манăн...

Çак сăмахсем Кольăшăн аслати сассинчен те хăрушăрах пулчĕç. Вăл пуçласа Валя çумĕнчи пепке çине тимлĕн сăнаса пăхрĕ, кам сăнлăрах терĕ пулĕ, анчах та çулталăкри пысăк хура куçлă хитре ача ăна никама та аса илтереймерĕ.

Валя каччă ĕненмест, иккĕленет терĕ пулĕ, пукан çине йывăррăн ларчĕ те:

—Халĕ урăх нимĕн те ан ыйт, вăхăт çитĕ, пĕтĕмпех каласа парăп, тен, вăраха ямасăр, паянах, спектакль хыççăн.

Коля ăна хирĕç чĕнмесĕр ларчĕ. Мĕн калатăр ĕнтĕ, тин çеç вăл ăна хăнăхса çитнĕччĕ, уншăн тунсăхлакан пулчĕ, тен, юрату тени те амаланса вăй илме пикенчĕ. Кунта акă каллех урлă сиксе каçмалла мар тарăн çырма, çыран леш енче Валя тăчĕ. Пĕр шутласан вăл çывăхрах, ăна тытма пулать тейĕн, тинкерекен куçсем те юнашарах, вĕсем çутă пуласлăха шанаççĕ, чунсем пĕр тĕвĕре пулассишĕн ăнтăлаççĕ, анчах та ку ўкерчĕксем капланса килнĕ шухăшсен тĕнчинче çеç курăнаççĕ. Вĕсене пĕрлештерме кĕпер те, ансăр каçма та çук. Çамрăксем чылайччен пĕр-пĕриншĕн тунсăхласа куçран сăнĕç, анчах та пĕр вĕçĕм кунĕ-кунĕпе пăхса тăма пултарĕç-

ши? Çук, паллах, часах каç пулĕ е хĕвелтухăç енчен шурăмпуç çуталса килĕ, ирхи сывлăм ӳкнĕ курăк çийĕн çамрăксем килĕсене утĕç, вĕсем хыççăн ура йĕрĕсем юлĕç, анчах та хĕвел хĕмленсе, çуталса тухсанах çав йĕрсем йăлтах çухалĕç. Паянхи тунсăх та çутçанталăк саккунне пăхăнса умран çĕтĕ. Тен, кам пĕлет, малашне çывăхланма пуçланă икĕ çыннăн чунне ĕмĕрлĕхех суранлатĕ е çывăхлатĕ...

Мотя аппа Коля пырсан нумай кĕттермерĕ.

—Хĕрĕм, каçар, хĕрарăмсемпе калаçса ларнă май эпĕ санăн клуба каймалли çинчен мансах кайнă. Çапла вăл пирĕн чĕлхе, пĕр кĕçтеме тытăнсан, ниçтан та чараймастпăр,—хăйĕн çепĕç, вырăсла акцент чĕлхипе кĕнĕ-кĕмен çине-çинех каçару ыйтрĕ амăшĕ.

Мотя аппа, Мускаврa çуралса ӳснĕскер, пĕр çирĕм çул каялла упăшкипе яла куçса килнĕ. Малтанласа чăвашла пĕр сăмах та пĕлменскерне пирваях çăмăл пулман. Анчах та вăл çухалсах кайман, вĕрентсен упа та ташлама хăнăхать, тенĕ евĕр, хăйне-хăй вăхăтра алла илнĕ. Халĕ чăвашла тĕрĕсех калаçать, анчах та акцент тени юлнă. Вăл темех мар-ха, ăна çынсем асăрхамаççĕ те. Тĕрĕссипе каласан, ялйыша унăн калаçăвĕ килĕшет. Коля та ăна кăмăлласах итлерĕ.

—О-о, пирĕн патăрта хăна та пур иккен, кăштах та пулсан ларсамăр,—Кольăпа Валя хыпаланнине курса тытса чарасшăн пулчĕ Мотя аппа çамрăксене.

—Анне, пире кĕтеççĕ, вăхăт çук.

—Тавтапуç, Мотя аппа, тепĕр чухне килĕпĕр,—хушса хучĕ Коля та.

Спектакль ытти ялсенчи пекех ăнăçлă иртрĕ.

Унччен сцена çинче савăнăçлă та телейлĕрех тытакан Коля паян темшĕн шухăшлă, хăйне хурлăхлă çын пек туйрĕ. Тĕрĕссипе, спектакльте шанса панă герой рольне унăн çапларах выляса кăтартмаллаччĕ-ха, çапах та юлташĕсем тем пулса иртнине сисрĕç, ним çукранах çапла улшăнмалла мар-çке. Сцена хыçĕнче те çамрăксен ертӳçи хăйне темле урăхла тыткаларĕ, кашни сăмахне виççе, сахал калаçрĕ. Спектакль вĕçленсен вара ăна клубра тек курмарĕç, вăл таçта кайса çухалчĕ. Ку çамрăксене, паллах, хытă тĕлĕнтерчĕ, комсомолецсен ертӳçине яланах ушкăн хушшинче курма хăнăхнă-çке.

Коля вара спектакль хыççăн Вальăна ăсатма кайрĕ.

—Валя,—терĕ вăл хĕре хулĕнчен тытса, унтан ун çумнерех сĕртĕннĕ май,—эсĕ паçăр манăн ача пур терĕн. Чăнласах, шӳтлемесĕрех каларăн-и вара?

Хӗр пуҫне усса шухӑша путрӗ.

—Ҫапла,—терӗ кӑшт тӑрсан,—манӑн ача вӑл. Эсӗ ан васка, пӳлсе те нимӗн ыйтма кирлӗ мар, пӗтӗмпех хам каласа парӑп. Сӑмахӑма пуҫлама ҫеҫ йывӑр. Вунӑ класс пӗтерсен эпӗ пӗр вӑхӑт хушши хулара пурӑнтӑм, тӗрӗссипе, Володя хыҫҫӑнах Шупашкара тухса кайрӑм. Эсӗ ун чухне ҫартаччӗ. Вӑл вара ҫав вӑхӑтра салтакран таврӑнчӗ. Шкулта вӗреннӗ чухнех эпир унпа ҫырусем ҫӳрететтӗмӗр, кайран пӗрле пулма ӗмӗтленеттӗмӗр. Володя манпа курнӑҫнӑ чух хӑйне ҫав тери йӗркеллӗ тытатчӗ, кашнинчех юрату ҫинчен калаҫу пуҫаратчӗ, анчах та пӗр-пӗринпе ҫывӑхлансан, пирӗн ача пулассине пӗлсен, те ҫакна пӗрре те кӗтменрен, вӑл тӑруках улшӑнчӗ. Тен, эсӗ мана урӑхла ӑнланатӑн: эпӗ ҫӑмӑлттай пулман, ӑна чун-чӗререн шаннӑ, ҫапах та ун хыҫӗнчен мӗскӗнленсе чупман. Халӗ те Володя пирки япӑх сӑмах калама пултараймастӑп. Эпӗ каялла таврӑнтӑм, хамӑн хуйха-суйха пӗччен ирттерсе яма тӑрӑшрӑм. Паллах, малтанласа ял ҫинче тӗрлӗ сӑмах ҫӳрерӗ, анчах та ялан пӗр ҫын ҫинчен калаҫмаҫҫӗ вӗт, манчӗҫ темелле. Халӗ акӑ каллех Володя ман пата ҫырма пуҫларӗ. Иртнӗ эрнере яла килнӗччӗ, хӑй патне Шупашкара илсе кайса пӗрле ҫемье ҫавӑрма ӗмӗтленет, анчах та эпӗ татӑклӑн хурав параймарӑм-ха. Тӗрӗссипе калас-тӑк, текех ниҫта та тухса каяссӑм килмест, чунӑмри малтанхи юрату сӳнмен-ха, ҫитменнине ачашӑн вӑл ют ҫын мар-ҫке, хут ҫинче пӗрлешнине ҫирӗплетсе ҫырмасан та, тӑван ашшӗ шутланать. Унӑн пуласлӑхӗ пирки те манӑн шутламаллах. Ашшӗ ҫумра пулни, ача унӑн ҫумӗнче ӳсни ӑна телей, савӑнӑҫ кӳрет. Пӗлетӗн-и, Коля, сцена ҫинче эсӗ манӑн атте пултӑн, килтен хӑваласа кӑлартӑн. Тен, чӑн-чӑнах тӗрӗс турӑн, пурнӑҫра та ҫаплах пултӑрччӗ. Эсӗ лайӑх, ырӑ кӑмӑллӑ каччӑ Хӑвӑн пурнӑҫунта таса чунлӑ, чысне вараламан чипер хӗр тупӑн, вара эсир пӗр-пӗрне юратса пурӑнӑр. Сан ҫине никам та пӳрнепе тӗллесе, ӗмӗрте пӗр хут ҫеҫ авланса та хӑйне валли таса хӗр тупайман, тесе кулаймӗ. —Вальӑна ҫак сӑмахсене калама йывӑр пулни курӑнсах тӑчӗ, унтан кӑштах тӑхтасан,—Хам мӗн шутланине, калас тенине йӑлтах пӗлтертӗм, чуна уҫса патӑм. Халӗ акӑ йывӑр пулсан та, пирӗн уйӑрлма вӑхӑт ҫитрӗ,—терӗ вӑл.

—Мӗн калаҫатӑн эс, Валя?

—Ҫук,—татах та темӗн каласшӑн пулнӑ Кольӑна чарчӗ хӗр,—малтанах ан пӳл терӗм-ҫке. Пытармастӑп, эпӗ Володьӑна юрататӑп. Санпа чухне мана ҫав тери лайӑхчӗ,

хуйхă-суйхă çинчен те манаттăм темелле, анчах та пирĕн хушăра юрату мар, туслăх çеç çирĕпленнĕ, эппин, вăл малашне те упранса юлтăр.

Сăмах çăмхи йăлтах сӳтĕлсе пĕтнĕ пек, вĕсем пĕр хушă чĕнмерĕç.

—Нивушлĕ ялта пурăнса та эпĕ ачаллă хĕрарăм иккенне илтмен эсĕ?—ыйтрĕ шăплăха хускатса Валя.

—Çук, илтмен. Хăвах каларăн-çке, ялан пĕр çын çинчен сăмах вакламаççĕ тесе.

Коля шухăша кайса утрĕ. Паллах, Валя тĕрĕс калать ĕнтĕ, мĕн тесен те унăн ачишĕн вăл ют çын, тăван ашшĕ пур çинчех пĕчĕк чунăн телейне татма юрĕ-ши, çитменнине, Володя та хăйĕн вăйлă, çирĕп аллисемпе ăна сывлăша ывăтса, чĕрке çинче сиктересшĕн, йăпатасшăн, яланах ачине çумра курасшăн. Пулса иртнине манмалла çеç.

—Валя,—тăруках сассине улăштарса ун еннелле çаврăнчĕ Коля,—мĕншĕн-ха хăв аннӳнтен вăтанатăн? Ăна санăн маларах кайса чĕнмеллеччĕ, ун чухне вара спектакле шăпах палăртнă вăхăтра пуçланă пулăттăмăр.

Хĕрарăм ун çине кăштах тĕлĕнерех пăхса илчĕ те тутисене илемлĕн туртăнтарса:

—Эсĕ халь каччă, çемье пурнăçне сахал ăнланатăн. Анне хăй килĕшмесĕр ачана унпа хăварма ниепле те хăяймастăп. Вăл айăплă мар-çке эпĕ хĕр пуççăн ача çуратса панишĕн. Сирĕн пек çамрăксемпе пĕр шухăшсăр пĕрле çӳрес тесен манăн малтанах пуç тавра шутламалла пулнă, ахаль те кĕске хĕр ĕмĕрне çăмăлттайланса пĕтермелле пулман.

Вĕсем васкамасăр утса Вальăсен тĕлне çитрĕç.

—Уйрăлма вăхăт,—терĕ хĕр каччăн хулĕнчен аллине вĕçертсе.—Яланхи пек автансем авăтасса кĕтер мар, ман шухăшпа эпир санпа юлашки хут тĕл пултăмăр, çийĕнчех пурне те уçса паманшăн каçар, чăнлăха тӳрех пĕлтерме ниепле те хăяймарăм.

—Каçару ыйтма кирлĕ мар. Санпа чухне мана та çав тери лайăхчĕ. Тен, каçхи шăплăхра тата кăштах уçăлса çӳрер? Кăнтăрлахи хĕвел айĕнче мар вĕт, ĕнĕк шăрши кĕрсен те, сывлăш пурпĕрех уçăрах.

—Кирлĕ мар. Пурнăçра санăн хăвăн телейне тупмалла пултăр. Чипер кай! —пысăк кăвак куçĕсем каччă çине илĕртӳллĕн пăхрĕç, унтан вăл хăвăрттăн çаврăнчĕ те хапхаран кĕрсе çухалчĕ. Вăрăм хулăн çивĕчĕ те, сыв пуллашса алă сулнă евĕр, сывлăша çĕкленсе, çăмăллăн вĕлкĕшсе илчĕ.

Коля васкамасăр килĕ еннелле утрĕ. Шкул пахчи енчен çаплах-ха çамрăксен сасси илтĕнет, вĕсем хĕрсе çеç çитнĕ пулмалла, анчах та Кольăн чунĕ унта каяссишĕн туртăнмарĕ, вăл хăйне темĕн çитмен пек, хаклă çынна çухатнă евĕр туйрĕ. Унăн юлашки вăхăтра çакăн пек туйăм яланах пулчĕ, чунĕ тем ырă марра систерчĕ.

Пĕр шутласан, халĕ каччăна нимĕн те илĕртмест. Унччен кăмăла çĕклекен улмуççи йывăççисемпе çӳллĕ ӳснĕ йăмрасем, тирексемпе шурă кăтра хурăнсем, вĕçен кайăксем хăйсен чĕлхисемпе çепĕççĕн чĕвĕлтетни те уншăн пулман пекех туйăнчĕç, яланах илĕртекен пурнăç йăлăхтарнă тейĕн. Пушă пӳрт кичеммĕн, тĕксĕммĕн ларнăн курăнчĕ, ларса-тăрас та килмерĕ. Ашшĕ юнашар чух унпа сăмахлама, чĕрене лăплантарма пулатчĕ, кирлĕ чух Сергей Иванович ăна ăс парса ятласа та илетчĕ, халĕ акă вăл пĕр-пĕччен, никам та çук.

«Юрату мĕншĕн пуриншĕн те пĕр пек мар-ха? Вăл çынсене суйласа илнĕн, хăш-пĕрне телей, савăнăç кӳрет, теприсене, тунсăх, асап çеç паратъ. Эпĕ шăпах юлашкисен шутĕнче тăратăп ĕнтĕ. Чăн-чăн юрату нихăçан та пулман, пулас та çук пек туйăнать. Пур хĕрсем те пĕр пекех темелле, санпа юнашар çумлă тăнă чухне вĕсем ырă чунлă, çепĕç чĕлхеллĕ, уçă кăмăллă, ачаш курăнма тăрăшаççĕ...Çук, пурне те пĕр калăппа виçес мар-ха,» —хăйĕн малтанхи шухăшĕсенчен хăпма тăрăшрĕ Коля.

Сехет йĕпписем ним пулман пек çаплах малалла чупрĕç, часах акă хĕвел тухăçне шурăмпуç сăнĕ çапĕ, автансем çакна систерсе, пĕрин хыççăн тепри сас парса, ăмăртмалла авăтĕç. Ял тутлă ыйха путнă. Шăпах çак самантра правлени енчен хыттăн чан çапни илтĕнчĕ, каçхи шăплăхра пĕр кĕвĕллĕн янăракан сасă урамсем тăрăх васкавлăн чупрĕ, кашни киле кĕрсе тухса çынсене ыйхăран вăратрĕ.

Тĕлĕрсе кайма ĕлкĕреймен Коля хăвăрттăн хăй çинчи утиялне илсе ывăтрĕ. Чĕре ырă маррине сиссе ыратса илчĕ.

—Нивушлĕ каллех пушар тухнă?—вĕльтлетсе илчĕç пуçра шухăшсем. Вăл трико вĕççĕнех урама сиксе тухрĕ.

Ферма тĕлĕнче ялкăшакан çулăм тавралăха вăйлăран та вăйлăраххăн çутатрĕ. Чан çапнă сасă çаплах чарăнмарĕ. Кил картинчи йытăсем урса кайсах вĕрчĕç. Ял варринче такам питĕ хăрушла сасăпа: «Пушар! Пушар!» тесе кăшкăрчĕ.

—Пушар! Пушар!—ун сассине илтсе мĕн пулнине тин ăнланнă евĕр ярса илчĕç ытти енчен те. Кĕске вăхăт хушшинче ял-йыш ура çине сиксе тăчĕ, хапха алăкĕсем

хыттӑн шалтлатса хупӑнни, пуш витресем чӑнкӑртатни, тӑпӑр-тӑпӑр чупни ҫеҫ илтӗнсе тӑчӗ.

Коля тӳрех ферма еннелле чупрӗ. Ҫулӑмсӑр пуҫне ун куҫӗсем тек нимӗн те курмарӗҫ, хӑвӑртрах ҫитсе пушара сӳнтересчӗ тесе вӑл малалла васкарӗ, малтанах вӑйлӑ хумханнипе тата чупнипе сывлӑшӗ пӳлӗннине те, ура вӑйӗсем пӗтсе килнине те туймарӗ. Килтен тухсанах ферма ҫуннӑ пек курӑнатчӗ, анчах та сывхарса пынӑ май, ҫак шухӑш улшӑнчӗ, вут-ҫулӑм ял хуҫалӑх техникин паркӗнче хуҫаланать иккен. Кунта паллӑ ӗнтӗ: тӗрлӗ тӗслӗ ҫунмалли-сӗрмелли хатӗрсем упранаҫҫӗ. Вӗсене вут хыпса илсен питӗ пысӑк инкек пулма пултарать, колхоз тем чухлӗ тӑкак тӳсет. Ҫавӑнпа та пушара асса кайма памалла мар. Коля чупса ҫитнӗ ҫӗре кунта виҫ-тӑватӑ ҫынран та ытла марччӗ, анчах та халӑха пуҫтарма нумай вӑхӑт кирлӗ пулмарӗ, ун йышӗ ӳссех пычӗ, пӗрисем тивсе илнӗ хурал ҫуртне сӳнтерчӗҫ, теприсем хӑйӑр-тӑпра хутӑшне сапса хӑшпӗр ҫунакан техникӑна ҫӑлса хӑварма тӑрӑшрӗҫ, виҫҫӗмӗшсем хӗрсех пушар сӳнтеркӗҫӗпе ӗҫлерӗҫ, тӑваттӑмӗшӗсем тӗрлӗ сеялкӑсемпе плугсене хӑрушӑ мар вырӑна сӗтӗрчӗҫ. Часах районти пушар сӳнтерекен машинӑсем те хыттӑн сиренисене ҫухӑртса ҫитсе чарӑнчӗҫ. Анчах та кунта пуриншӗн те кӗтмен инкек сиксе тухрӗ, ун ҫинчен никам та малтан шутламан ӗнтӗ. Пушар сӳнтерекенсем машина ҫумӗнчи насус пыршисене салатма ӗлкӗреймерӗҫ, сывӑхри бензин складӗнчен ҫулӑм палкаса ҫӗкленчӗ. Ҫӑра тӗтӗм, юпа пек, ҫӳлелле талпӑнчӗ.

—Пӗтрӗмӗр! Кунтан хӑрушши урӑх нимӗн те ҫук,—хӑй тӗллӗн мӑкӑртатрӗ ушкӑнри ҫынсенчен тахӑшӗ.—Унта шӑпах тулли пичкесем упранатчӗҫ,—вӑл калас тенӗ сӑмахне вӗҫлеймерӗ, ҫак самантра ҫулӑм ярса илнӗ топливо пички ҫӳле ҫӗкленчӗ, хӗрарӑмсем хыттӑн кӑшкӑрса тӗрлӗ еннелле чупрӗҫ, паллах, вӗсем ҫеҫ мар ӗнтӗ, кашнийӗ сывлӑша хӑпаракан пичкерен хӑтӑласшӑн пулчӗ. Ҫӗртен пӗр аллӑ-утмӑл метр чухлӗ ҫӳллӗше ҫӗкленсен, вӑл сывлӑшра хӑрушла сасӑпа ҫурӑлса кайрӗ, унӑн хуппи уйрӑлса сывӑхри тулӑ пуссине ӳкрӗ. Пушар халӑх мӗнле тӑрӑшса вӑй хунине пӑхмасӑрах, унӑн ӗҫне ним чухлӗ те хакламан евӗр, вӑйланнӑҫемӗн вӑйланса пычӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫунакан вырӑн патне сывхарма та май ҫук, таврана вӗри сывлӑш хумӗ ҫапрӗ. Тата та хӑрушӑрах инкек сиксе ан тухтӑр тесе, тин ҫеҫ килсе ҫитнӗ милиционерсем ҫынсене хӑрушӑсӑртарах вырӑна кайма ыйтрӗҫ. Чылай вӑхӑт хушши ҫумӑр ҫуманнине пула ҫӗр ҫеҫ мар, тыр-пул та, ҫум-курӑкӗ те типе пуҫланӑ,

вёсене вут хыпса илме нумай та кирлё мар, пёр шăрпăк пёрчи те çитет. Хальхинче те çаплах пулчё. Пичке ванчăкёсем çёр çине ÿксенех, тулă пусси çунма пуçларё. Таçтан çак вăхăтра тата çил çёкленчё, çулăм, умра чăрмав çуккине туйса, чупнă евёрлех малалла куçрё.

Чăм шыва ÿкнё Саша Кошкин çывăхри трактор еннелле чупрё.

—Мён, пёчёк ача пек мёшёлтететён? Сухала!—аллине сулса кăшкăрчё вăл чупнă май хурçă утне пёр вырăнта кёрлеттерсе тăракан механизатора. Лешё малалла хускалма иккёленсе двигатель кёрлевне пёрре ÿстерет, кăшт вăхăт иртсенех ăна чакарать.—Ан йăралан! Часрах!..

Механизаторё ун сассине, паллах, трактор шавне пула илтмерё, çапах та Саша аллисемпе хăлаçланса мён каланине тавçăрса илчё, хăй ăнланнине систерсе, тракторне хыттăн кёрлеттерсе илчё те тулă пуссине кёрсе кайрё. Часах плуг айёнчен пётёрёнсе ылтăн тёслё пучахсем çёрпе хутăшса курăнми пулчёç. Паллах, хăйсен ёмёрне çёр ёçёпе ирттерекен çынсемшён çакна пурнăçлама йывăр пулчё. Камăн-ха пулса çитнё тырпула пуçтармасăрах çёр айне чикес килет, кăçал ахаль те çăкăр ылтăнран та хаклă пулмалла чух. Анчах та ним те тăваймăн, ваттисем калашле, пысăк инкекрен пёчёккине суйласа илме тивет, такамăн тирпейсёрлёхёшён çынсем çиес çăкăр çёр айне пулчё.

Камăн тăрлавсăрлăхне пула иксе тухнă-ши çак инкек, анчах та ун çинчен шутлама халлёхе вăхăт çук: çулăмăн тискер ёçне чарса лартас тесен, умри йывăрлăха, хăрушлăха пăхмасăр кёрешмелле, ăна çёнтермелле.

Акă сывлăша тата тепёр пичке çёкленчё. Вăл малтанхи пекех çÿле хăпараймарё, часах хăйён хăвăртлăхне чакарса, çёре лаплатса ÿкрё. Паçăр бензин складне вут хыпса илсен тахăшё: «Ку — пуринчен те хăрушши!»—терё. Тен, пуринчен япăххи ун чух мар, халь пуçланчё? Пичке çёре ÿксен пёр вырăнта выртмарё, вăл аналла, çывăхри пăру вити еннелле кусма пуçларё, ун хыçёнчен умри çула кăтартнă евёр, çулăм йёрё юлчё. Çакна курса тăракан халăх аптраса ÿкрё, хăйён вăйсăрлăхне туйса, малалла мён тумаллине те пёлмерё темелле, куçёсене илмесёр, татах та пысăкрах хăрушлăх пуласса туйса, çак ёç мёнпе вёçленессе хускалмасăр кётрё.

Сасартăк хăйён умёнчи çула картласа, пÿлсе тăракан çынсене айккинелле тёрткелесе Коля халăх хушшинчен сиксе тухрё, самаях пысăк йывăç пуленккине ярса илчё, çунакан пичке хыççăн хăваласа малалла ыткăнчё. Пăхса

тăракансем вăл мĕн шутланине тинех тавçăрса илчĕç, хăюллăраххисем ун хыççăн васкарĕç. Каччă ялкăшакан çулăм çулне пӳлес тесе пуленккине пичке айне пăрахрĕ, анчах та лешĕ кусма чарăнмарĕ, хăйĕн çулне пĕр çирĕм градус улăштарса, вут сыппи урлă чалт çеç каçса кайрĕ. Уçă пичке пăккинчен пуленкке çине çулăм сирпĕнчĕ, çиййĕнчех вут сыппине хыпса илсе ялкăшма тытăнчĕ. Хĕрсе кайнă Коля ăна асăрхамарĕ те тейĕн, пуленккене çара алăпах ярса илсе малалла ыткăнчĕ. Вĕри çулăм, чупнă май каччă еннелле туртăнчĕ, унăн çиййĕнчи çӳхе кĕпине хыпса илчĕ, пит-куçне, çан-çурăмне пĕçерчĕ. «Хăвăртрах хăваласа çитесчĕ, нумай юлмарĕ ĕнтĕ, ăна кăшт çеç айккинелле пăрасчĕ, ун чух хăрушлăх иртсе кайăччĕ, çунакан пичке çырманалла кусса аннă пулĕччĕ. Чăт, салтак, чăт, нумай мар, тепĕр виç-вăват метр çеç юлчĕ темелле, хăвăртрах, пур вăй-хална пухса хуса çит!»—хăйне хăй хавхалантарчĕ Коля. Пичĕке унăн шухăшне тавçăрса илнĕн, анчах та каччăна хирĕçлес тенĕ евĕр, тĕрлĕ путăксемпе ланкамасем урлă чăлт та чалт сиксе анаталла татах та хăвăртраххăн кусма пуçларĕ.

«Ну, тепĕр утăм, акă çитрĕн, юлашки вăйна пухса меллĕреххĕн çеç ывăт, çук эсĕ ăна чараймăн, вут сыппине хăрах еннерех пăрахса ун çулне çеç улăштар!» Такам хăйне хушса каланине пăхăннă евĕр, Коля чупнă май пуленккине пĕтĕм вăйне пухса пичке айне ывăтрĕ, анчах та тепĕр самантран хăй те тепĕр еннелле сулăнса çĕре лаплатса ӳкрĕ. Вĕри çулăм хăйĕн пит-куçне, çан-çурăмне пĕçернине те, пичке кайран ăçталла куснине те текех курмарĕ вăл. Каччă, çеремлĕ çĕр çине пичĕпе тăрăнса ӳкнĕскер, часах тăнне çухатрĕ.

*          *          *          *          *

Умри шурă стенасемсĕр пуçне пуç тĕлĕнчи пысăках мар чӳречене тата çӳллĕ маччана асăрхама пулать. Çан-çурăмне бинтпа чĕркесе хытарнă каччă йывăррăн куçĕсене уçрĕ. Анчах та куç хупанкисем темĕнле ăнланмалла мар вăя парăннăн çиййĕнчех каялла усăнчĕç, каллех тавралăх тĕттĕмленсе ларса курăнми пулчĕ. Çук, пулма пултараймасть, ĕненместĕп тенĕ евĕр, вăл пур йывăрлăха çĕнтерсе тавралăхри илеме, хĕвел çутине куçĕ умне тавăрма

васкарӗ, вӗсене каллех тепре курма пултарнишӗн чунтан хӗпӗртерӗ. Тен, малтанласа хӑй ӑҫта лекнине те пӗлеймерӗ пулӗ, тин ҫеҫ вӗт-ха вӑл кӑмӑл туличчен чупма, май килнӗ пек хуҫкаланма, сиккелеме пултаратчӗ. Унтанпа нумай та вӑхӑт иртмерӗ темелле, тӗрӗссипе каласан ҫакна каччӑ чухлаймарӗ-ха. Тӑнне ҫухатнӑ хыҫҫӑн те пӗр эрне, те икӗ эрне иртсе кайнӑ, ӑна вӑл путлӗн пӗлмест. Ку темех мар-ха, ҫапах та чи япӑххи вӑл халь хӑй тӑрса ларас тесен те вырӑнтан тапранайманни, ӳт-пӗвне хускатайманни. Кӗлеткине хыттӑн чӑмӑртаса чӗркенӗ бинт ҫакна пӗр вӗҫӗм аса илтерсе тӑрать.

Каччӑ иртсе кайнӑ вӑхӑта, хӑй кунта епле майпа килсе лекнине аса илме хӑтланчӗ, анчах та унӑн шухӑшӗсем ҫулӑм сирпӗтсе малалла кусакан пичӗке ҫинче чарӑнчӗҫ. Тата... вӑл ун хыҫҫӑн чупатчӗ. Тек нимӗн те пуҫа кӗмерӗ. «Мӗнпе вӗҫленчӗ-ши пушар?» Ҫурӑмӗ ыратнинчен те йывӑртараххи, чуна ыраттараканни ҫак шухӑш пулчӗ.

—Акӑ пирӗн паттӑр та тутлӑ ыйӑхран вӑраннӑ!—алӑка уҫнӑ уҫман каччӑ ҫывӑрманнине курса ун еннелле утрӗ Маюк аппа.—Темиҫе хутчен те килсе кайрӑм, халӗ акӑ ҫула тухас умӗн тепре кӗрсе пӑхам-ха терӗм. Ну, сывлӑхусем еплерех?—ун ҫумнерех пырса ларнӑ май ачашшӑн куҫран пӑхрӗ вӑл.

—Майӗпен сывалса пыратӑп, нимӗн те ыратмасть темелле. Тавтапуҫ килсе курнӑшӑн,—май килнӗ пек кӗскен хуравлама тӑрӑшрӗ вӑл.—Ялта мӗнле хыпарсем пур, пушар епле вӗҫленчӗ?—паҫӑртанпах хӑйне канӑҫ паман ыйтӑвӑн серепинчен тухасшӑн, тӑнне ҫухатнӑ хыҫҫӑн мӗн пулнине йӑлтах пӗлесшӗн пулчӗ вӑл. Кайран хӑйӗн сывлӑхӗ ҫинчен те пуплеме юрать. Пушара пула вӑл колхоз хуҫалӑхне пысӑк инкек кӳрессине сирес тесе больницӑна, шурӑ палатӑна ҫакланчӗ-ҫке.

Маюк аппа ун ҫине тӗлӗнерех пӑхрӗ те йӑпатас шутпа:

—Пурте йӗркеллех иртсе кайрӗ, пушара сӳнтертӗмӗр,—терӗ.

Анчах та ун сӑмахӗсенче темӗн каласа ҫитерменни туйӑнчӗ. Ҫакна Коля ҫийӗнчех сисрӗ.

—Маюк аппа, эсӗ тӗрӗссине каламастӑн пулас, темӗн пытаратӑн, те мана кулянтарас мар тетӗн?

Хӗрарӑм чӗнмерӗ.

—Чӗререн ыйтатӑп, тархасшӑн, ан пытар, чӑннине, мӗн пулнине пӗр пытармасӑр каласа пар-ха,—хӑйӗн тусӗн амӑшне куҫран пӑхса тархасласа ыйтрӗ Коля.

Вăл чавсипе криватăн тимĕрĕ çине пусса, тĕрев тупса тăма хăтланчĕ, анчах та çан-çурăмĕ кăшт хускалсанах чĕтме çук ыратни ăна шăла çыртса каялла матрас çине вырттарчĕ. Хĕрарăм çакна тӳрех асăрхарĕ, çамрăк каччăн суранне хăй çинче чăтса ирттерчĕ тейĕн. Ăçтан-ха пытарăн çакăн пек паттăртан чăнлăха?

—Пĕлетĕн-и, Коля, мĕнле тăрăшрăмăр пулсан та, пăру витине çăлса хăвараймарăмăр. Эсĕ хăваласа çитнĕ çунакан пичĕке хăйĕн усал ĕçнех турĕ, инкеке сирме, вите çумĕнчен пăрса яма тепĕр 10-15 сантиметр çеç çитеймерĕ. Вăл пысăк хăвăртлăхпа кусаканскер вите кĕтессине çапăнса ун еннелле çаврăнса ларчĕ, типсе çитнĕ пĕренесене вут хыптарса тивертме вăхăт нумай кирлĕ пулмарĕ, юрать-ха пушарĕ кĕтесрен пуçланчĕ, унсăрăн пăрусене алăкран хăваласа кăларма ĕлкĕрейместĕмĕрччĕ. Эсĕ тăрăшнин усси пулчĕ, витен алăкне тӳрех хĕрӳ çулăм ярса илеймерĕ. Çуртне вара шеллеме кирлех мар, вăл кивĕччĕ, ăна çĕнĕрен тумаллаччĕ. Тен, çунса каймасан, хăçанччен нушаланма тивĕччĕ-ши пăрусен унта, халь акă çĕнни тăвĕç.

Маюк аппа нумаях лармарĕ, хăй илсе килнĕ кучченеçсене тумбочка çине кăларса хунă хыççăн, килне кайма васкарĕ. Чăнах та, унăн хыпаланма сăлтавĕ те пур: ыран Сашăпа Вальăн туйĕ-çке, пĕр хатĕрленмесĕр пулмасть ĕнтĕ ку.

Коля çаплах-ха лăпланаймарĕ. Пĕр шутласан, вăл тăрăшни пĕтĕмпех ахаль пулчĕ-ши? Пушар çапла вĕçленессине малтанах пĕлнĕ пулсан, чупмалла та марччĕ. Анчах та ку шухăш часах сĕвĕрĕлчĕ. Енчен те Маюк аппа калашле, вут-çулăм вите алăкне тӳрех ярса илнĕ пулсан, пăрусем пурте çунса пĕтетчĕç вĕт. Эппин тăрăшни сая кайман. Тепĕр тесен этемĕн яланах тĕрлĕ инкек-синкекпе кĕрешмелле. Вăл кашнинчех çĕнĕрен те çĕнĕ меслет шыраса тупса йывăрлăха çĕнтерсе çиеле тухма тăрăшать. Ан тив, хальхинче Коля çан-çурăмне пĕçерттернĕ тейĕпĕр, анчах та унăн суранĕ сипленĕ, вăхăт çитсен пурте хăйĕн вырăнне ларĕ, унччен пĕрер уйăх шăла çыртса вырăн çинче ирттерес пулать. Çапах та каччă, хăть мĕн каласан та, хăй шутланине чыслăн пурнăçланă. Кĕтмен çĕртен сиксе тухнă пушар унăн сывлăхне сиенлетнĕ ĕнтĕ, анчах та ку пит хăрушах мар темелле, ял халăхĕ ăна малтанхи пулăшу пама, больницăна леçме ĕлкĕрнĕ, ӳт-пĕве кăштах суранлатнă пулсан та, çулăм пит-куçа тĕкĕнмен, ку пуринчен те хакли.

Çапла шутласа выртнă май, Коля тепĕр хут тăма хăтланчĕ, анчах та хыттăн пăчăртаса çыхнă шурă бинт ăна,

паҫӑрхи пекех, хускалма памарӗ, шӑм-шакка пур енчен те хӗстерсе, пуҫне каллех минтер ҫине хуртарчӗ. Эх, ытла та асап-ҫке чӗрере вӗри юн таппине туйса тӑнӑҫемӗн каччӑна ҫакӑн пек пӗр хускалмасӑр выртма.

Кампа та пулсан сӑмах хушса калаҫасчӗ, анчах палатӑра никам та ҫук, вӑл кунта пӗр-пӗччен. Унӑн шухӑш-кӑмӑлне сиснӗн, пӳлӗме часах шурӑ халат тӑхӑннӑ сестра кӗрсе тӑчӗ.

—Сан пата хӑна килнӗ,—терӗ вӑл Кольӑпа йӑвашшӑн калаҫма тӑрӑшса.—Ыран килӗр-ха тесе, ӳкӗтлесе ыйтатӑп, вӑл яхӑнне те ямасть. Ҫук, паянах курмалла, тет.

—Чарса ан тӑрӑр ӗнтӗ, кӗртӗр,—анчах та сӑмахне вӗҫлеймерӗ, алӑк хыҫӗнчен хыткантарах шӑм-шаклӑ арҫын тухрӗ. Коля ӑна курсан сасартӑк туртӑнса илчӗ, хӑй те сисмерӗ, савӑннипе пӗтӗм чун-чӗререн,—аттеҫӗм!—тесе кӑшкӑрса ячӗ.

—Ывӑлӑм, сывах-и эсӗ?

Сергей Иванович аллисене малалла тӑсса койка патне васкаса утрӗ, айӑпа кӗнӗ ҫын пек, ывӑлӗн кравачӗ патне ҫитсен, чӗркуҫленсе ларчӗ. Куҫӗсенчен пӑчӑртанса ҫутӑ шӑрҫасем шуса тухрӗҫ, савӑнӑҫ е хуйхӑ тумламӗсем пулчӗҫ-ши вӗсем, ҫакна Сергей Иванович хӑй те пӗлеймерӗ, тутисем сӑмах тупаймасӑр темшӗн вӗттӗн-вӗттӗн чӗтренчӗҫ.

—Аттеҫӗм, лӑплан, пурте йӗркеллӗ. Часах сывалса тухатӑп, хӑвах куратӑн: ал-урасем, куҫ-пуҫӑм та чиперех, нумай та вӑхӑт иртмӗ, каллех унчченхи евӗр санпа пӗрле уҫӑлма, шкул ачисем патне хӑнана пыма та пултарӑп,—ӗмӗтленсе калаҫрӗ Коля.—Халь эпӗ ҫамрӑк-ха. Чӑнах та кунта пӗр минут та тӑрас килмест. Кӗт, аттеҫӗм, кӗт, нумай мар, пӗр икӗ эрнерен ура ҫине тӑратӑп.

Ашшӗ ҫаплах-ха чӗркуҫҫи ҫинче ларчӗ, Коля калаҫнине пӳлмесӗр итлерӗ. Кам пӗлтернӗ-ши ӑна ывӑлӗ больницӑра иккенне? Хӑй те сипленес тесе ялтан тухса кайнӑччӗ-ҫке, вӑхӑт ҫитмесӗрех унтан пӑрахса килнӗ. Мӗншӗн-ха вӑл сывлӑхне упрамасть?

—Ывӑлӑм, каҫар, темшӗн хама тӳрех алла илеймерӗм, ҫемҫелсе кайрӑм, ватӑлса пыратӑп пуль. Вӑрҫӑра чух кашни кун туссене ҫухатсан та, куҫҫуль тухмастчӗ, шӑла ҫеҫ хытӑрах ҫыртаттӑмӑр. Кунта акӑ эсӗ больницӑра тенине илтсессӗнех, пӗчӗк ача евӗр, куҫҫулӗ кӑларатӑп. Вӑхӑт шунӑ май, йывӑрлӑха ҫӗнтерме те вӑй-хал чакать пуль ҫав. Каҫар,—Коля умӗнче тӳрре тухас тенӗ пекех сӑмахларӗ ашшӗ.

—Ун ҫинчен калаҫмӑпӑр. Эсӗ килте пултӑн-и?

—Çула май тӳрех кӗрес терӗм. Ялтан телеграмма илсен, пӗр кун та санаторинче тытӑнса тӑмарӑм. Малтан, хам киле таврӑннӑ чух, аннӳ патне çитсе курма ӗмӗтленеттӗм. Юрӗ ӗнтӗ, эсӗ сывалса тухсанах пӗрле кайса килӗпӗр. Унччен мӗнле те пулсан пурӑнкалӑпӑр.

—Ялта Саша авланать. Эс киличчен пӗр-ик сехет маларах ман пата унӑн амӑшӗ кӗрсе тухрӗ. Ыран туй пулмалла, кайса курма тӑрӑш. Сана чӗнеççех ӗнтӗ вӗсем. Эпӗ, хӑвах куратӑн, темӗн пек ӗмӗтленсен те, вӗсем патне çитейместӗп.

—Пӗлместӗп-ха, киле çитсен куç курать унта.

Сергей Иванович ура çине тӑрса пукан çине ларчӗ. Каç пуласпа çеç, ывӑлӗпе сыв пуллашса, палатӑран тухрӗ.

Больница çурчӗ часах хыçа тӑрса юлчӗ. Ватӑ учитель çуранах утрӗ. Патӑръелпе Катек хушши çул вӑрӑмах мар, иквиçӗ çухрӑм çеç, çапах та утнӑçемӗн шухӑшламалли тупӑнсах пырать, ун валли вӑхӑт çителӗклех пулчӗ, вӗсем ватӑ салтак чӗрине хутран-ситрен пӑшӑрхантарчӗç те. Вӑл хӑйне хирте пӗччен ларакан йывӑçпа та танлаштарчӗ, çапах та малалла талпӑннӑçемӗн çав шухӑшсенчен хӑпма тӑрӑшрӗ. Ара, çапла пулмасӑр, вӑл тӑр пӗччен мар-çке. Унӑн çемйи пур. Чи çывӑх çыннисем халлӗхе иккӗшӗ те больницӑра выртаççӗ пулин те, ку темех мар-ха. Вӑхӑт çитӗ, вӗсем часах сывалса тухӗç, вара виççӗшӗ те унччен пекех килӗштерсе пурӑнма пуçлӗç. Эппин, чуна ыраттаракан йывӑрлӑха парӑнмалла мар, лайӑххине çеç шанмалла. Çак шухӑшсемпе хӑпартланса Сергей Иванович килӗ тӗлне çитрӗ.

*   *   *   *   *

Больницӑри кунсем пӗр евӗрлӗ иртеççӗ. Çуллахи вӑхӑтра çутçанталӑк çынсене хӑйӗн ытамне чӗннӗ чух, чӑнах та, эмел шӑршиллӗ пӳлӗмсенче пӗр самант та выртас килмест, урама, уçӑ сывлӑша киленсе сывлама тухас, сарӑ хӗвел çутине курас, чӗвӗлти кайӑксен çепӗç юррине итлес килет.

Кольӑшӑн та вӑхӑт кунта çав тери вӑраххӑн шунӑн туйӑнчӗ, палатӑра ирттернӗ пӗр талӑк та уншӑн пӗр эрне пекех тӑсӑлчӗ, кӑштах та пулин вӑхӑт хӑйӗн урапине хӑвӑртрах кустартӑр, ӑна пулӑшас тенӗн хаçат е кӗнеке вулас кӑмӑлӗ те пурччӗ, анчах та май килмерӗ, кӑшт çеç хускалсанах пиçнӗ вырӑнсем чӑтмалла мар ыратрӗç, вара

ирӗксӗрех унӑн шурӑ мачча ҫине тинкерсе выртнипех ҫырлахма тиврӗ. Врачсем, сестрасем ҫакна сиснӗн, вӑл выртакан палатӑна час-часах кӗре-кӗре тухрӗҫ, тепӗр чух, ӑна юлташа тесе, тухса кайма васкамасӑр чылайччен сӑмахласа та ларчӗҫ, каччӑна пӳлӗмре пӗччен выртма кичеммине ӑнланчӗҫ ӗнтӗ. Вӑл тӑван килӗшӗн, ял-йышшӑн, тусӗсемшӗн тунсӑхлани уҫҫӑнах палӑрчӗ.

Чӑнах та, Коля шухӑшӗсемпе яланах вӗсемпе пулчӗ. Паян Вальӑпа Саша пӗрлешеҫҫӗ. Шел, больницӑна лекнине пула вӑл шавлӑ уява хӑйӗн куҫӗпе кураймасть, туя лекеймест, ҫамрӑк мӑшӑр телейӗшӗн халӑхпа пӗрле савӑнаймасть.

Ҫакӑн пек кулянса шухӑшланӑ вӑхӑтра коридорта такамсем шавлани, шӗвӗр кӗлеллӗ пушмаксемпе йывӑҫ урай тӑрӑх хыттӑн шаклаттарса утни илтӗнчӗ, хӗпӗртӳллӗ сасӑсем ҫывӑхланса-ҫывӑхланса пычӗҫ, пӗр-пӗринпе калаҫнӑ сӑмахсем хӑлхана уҫҫӑнах пырса кӗчӗҫ.

—Пӑх-ха эсӗ ун ҫине, епле канлӗн выртать вӑл кунта, курортра тейӗн,—икӗ еннелле алӑк яр уҫӑлнӑ-уҫӑлман хыттӑнах сӑмахлама пуҫларӗ Саша.

—Чим-ха, апла каласа ан кӳрентер-ха, эсӗ ху ун вырӑнӗнче пулса кур-ха, вара урӑхларах калаҫаттӑн,—тӑруках тӗртрӗ ӑна чавсинчен Валя.

—Шӳтлетӗп эпӗ. Вӑл мана ӑнланать. Халь тин мӗн тӑвӑн ӗнтӗ, куҫҫулӗ юхтарса шелленипе пурпӗрех пулӑшас ҫук. Ҫапла вӗт, тусӑм,—Коля пуҫӗ тӗлӗнче чарӑнса ачашшӑн сӗртӗнчӗ Саша бинтпа ҫыхса лартнӑ аласене.

—Эсир шӑпах шухӑш тӗлне ҫитрӗр, тин ҫеҫ сирӗн ҫинчен аса илсеччӗ. Эппин, ҫылӑхӑр ҫук, ну мӗнле, саламлама вӑхӑт ҫитрӗ-и?

—Саламламалла, саламламалла!—тӑруках хутшӑнчӗҫ калаҫӑва тӗрлӗ енчен сасӑсем.—Эпир Загсран тӳрех сан пата килтӗмӗр, катаччине чупма кайран та ӗлкӗрӗпӗр, каҫ пуличчен самаях вӑхӑт пур.

Тӗрӗссипе, Загсран тухни ыйтмасӑрах паллӑччӗ ӗнтӗ. Сашӑпа Вальӑн иккӗшӗн те сылтӑм алӑри ятсӑр пӳрнисем ҫинче ылтӑн ҫӗрӗ пур. Валя шап-шурӑ кӗпепе, пуҫӗ ҫинче ҫавӑн тӗслех илемлӗ сарлака шӗлепке, аллинче вара самаях пысӑк чечек ҫыххи. Саша та уяв тумӗпе, шурӑ кӗпе ҫийӗн хура костюм тӑхӑннӑ, мӑйне галстук вырӑнне, артистсем пек, «лӗпӗш» ҫакнӑ.

—Сирӗншӗн савӑнмаллипех савӑнатӑп,—саламланӑ май куҫӗсене ҫиҫтерчӗ Коля.—Пӗлсе тӑрӑр, чунпа эпӗ сирӗнпе пӗрле туйра тейӗр.

—Ҫук, ҫук, кун пек мая килмест. Пӗрремӗш шампански бутылкине эпир санпа пӗрле уҫатпӑр, тепӗр тесен, хамӑр туя кунта, больница палатинче ҫывӑх туспа юнашар чухне пуҫлатпӑр, ҫапла-и?—паҫӑрхи пекех савӑнӑҫлӑн пӳлӗмри тустантӑшӗсем енне ҫаврӑнчӗ ҫамрӑк кӗрӳ.—Леня, Юра, ӑҫта унта пирӗн хатӗрсем?

Пӳлӗм каллех шӳт-кулӑпа, пӗр-пӗрне йӗплесе тӗрткеленӗ кӳренмелле мар сӑмахсемпе тулчӗ, анчах та умлӑ-хыҫлӑ маччана шӑтарасла вӑркӑнса ҫӗкленнӗ пӑкӑсем самантлӑха пур сасса та ҫӗнтерсе хупласа хучӗҫ, ҫакна кӗтнӗ каччӑсемпе хӗрсем савӑнӑҫлӑн алӑ ҫупса кӑмӑл-туйӑмӗсене яриех уҫса ячӗҫ, кашниех ҫамрӑк мӑшӑра саламларӗ.

Стакансене тултарса ҫӗклеме ӗлкӗрейменччӗ, пӳлӗме райком секретарӗ, Александр Сергеевич Чекушкин халиччен курман-палламан ҫынпа килсе кӗчӗ.

—Аха, вӑт кӑна, чӑнах та, кӗтменччӗ вара. Эпир хамӑр герой пӗччен ҫеҫ тесеччӗ, кунта чӑн-чӑн туй пырать иккен,—сывлӑх суннӑ-сунманах пуҫларӗ вӑл.—Валя, Саша, пӗрлешнӗ ятпа саламлатӑп. Хӑнапа паллашӑр. Манпа юнашар тӑракан ҫын Мускавран. Вӑл ятарласа Коля патне редакцинчен килнӗ. “Комсомольская правда” хаҫат корреспонденчӗ —Борис Амелькин.

Лешӗ, паллах, чӑвашла пӗлмест, хӑйӗн ятне асӑнсан пуҫне кӑштах сӗлтсе илчӗ те, фотоаппаратне кӑларса, ҫамрӑк мӑшӑра, пуҫтаруннӑ халӑха, унтан Кольӑна темиҫе хутчен ӳкерсе илчӗ.

Александр Сергеевич темӗн шут тытрӗ пулмалла, пӗр самантлӑха тесе пӳлӗмрен тухса таҫта кайса ҫухалчӗ. Чӑнах та, нумай кӗттермерӗ вӑл хӑйне, часах каялла таврӑнчӗ, анчах та хальхинче пушӑ алӑпа мар, парнесӗр пуҫне, баянпа пӗчӗк ачасенни евӗр хитре сасӑллӑ купӑсне те манман. Чекушкин унпа выляса районти концертсенче час-часах куракансене тӗлӗнтеретчӗ.

—Туй тени туй пекех пултӑр,—тӑсса ячӗ вӑл купӑсне.—Атьӑр-ха пурте пӗрле юрлар.

Ой, милăй Чотикас,
Ой, милăй Чотикас,
Çĕр тĕпретсе килтĕмĕр,
Ай-йа-рай-йа, рай-йа-йа...

Купăс сассине илтсе-ши е юрри кăмăла кайнăран, алăк умне тĕрлĕ палатăсенчи сипленекен çынсемпе пĕрле шурă халат тăхăннă врачсемпе сестрасем те пуçтарăнчĕç. Малтанласа, тен, чирлесе выртакансене чăрмантарăпăр тесе, туя çурма саспа шикленӳллĕн пуçланăччĕ, анчах та савăнăç хăвăртрах сывалма пулăшать тесе ӳкĕтлени хăюллантарчĕ, халĕ вара юрă-ташă вăй илсе уççăнах янăрарĕ.

—Çитĕ, туссем, кăштах каçа валли хăварар, машинăсем те кĕтсе ывăнчĕç пулĕ,—сĕнчĕ чылайран Юра Цыпленков.—Каяр. Сире те туйра кĕтетпĕр,—терĕç вĕсем пӳлĕмре тытăнса юлнă корреспондентпа Александр Сергеевича.

—Çитсе куратпăрах, чăваш туйĕнче халиччен пулса курманччĕ-ха,—хăнана чĕннĕшĕн хаваслансах тав турĕ Борис Амелькин корреспондент.

Ушкăн кĕпĕрленсе урама тухрĕ.

—Ну, мĕнле туятăн хăвна, герой?—пӳлĕм пушанса юлнă-юлманах Коля çывăхне вырнаçса ларчĕ корреспондент, хăй çийĕнчех пĕчĕк магнитофонне те кăларса лартма манмарĕ.

—Мĕн геройĕ, ман вырăнта кашниех çапла тунă пулĕччĕ,—хăйне герой тесе чĕннĕрен именчĕ каччă.—Анчах та шел, ферма çуртне темле тăрăшсан та упраса хăвараймарăмăр...

—Эпĕ пултăм унта, енчен те солляркăпа тулнă пичĕке хăй çулĕпе куснă пулсан, унта ферми çеç мар, пĕр чĕрĕ чун та юлмастчĕ, пурте вут-çулăм ăшĕнче пĕтетчĕç.

Пĕр-пĕрин хушшинчи кăмăллă калаçу сехет ытларах та пычĕ. Мĕн çинчен çеç калаçмарĕç пулĕ вĕсем: ачалăха, шкулти вĕренӳ кунĕсене аса илчĕç, çарти тусĕсемпе ялти пурнăç çинчен те, малашнехи ĕмĕт-шухăшсем те кăсăклантарчĕç Бориса. Вăхăт сисĕнмерĕ те темелле. Пĕр-пĕрне тахçантанпах пĕлекен çынпа тĕлпулнăн, уйрăлас та килмерĕ. Сестра каçхи апат вăхăчĕ çитнине систерсе, пӳлĕме чашăк-тирĕксем илсе килсен тин корреспондент, Кольăна хăвăртрах сывалма сĕнсе, унпа ăшшăн сывпуллашрĕ.

"Комсомольская правда" хаçат корреспонденчĕ килсе кайнă хыççăн тепĕр эрнерен Геннадий Петрович Петров тĕп врач хаваслă сăн-питпе Коля выртакан палатăна килсе кĕчĕ.

—Ну, тусăм, енчен те вырăн çинче выртса тăман пулсан, ку хаçата ташламасăрах тыттарман та пулăттăм. Кур-ха, çур страница ытла сан пирки çырнă, пĕтĕм Çĕршыв умĕнче паллă çын эсĕ паянтан,—аллисемпе тытайманран каччă кăкăрĕ çине сарса хучĕ вăл илсе килнĕ хаçатне.

Кольăн ĕненес те килмерĕ, чăнахах та, çӳлти кĕтесре хăйĕн сăнӳкерчĕкне курчĕ, унăн айĕнче пысăк саспаллисемпе "Ялти герой" тесе çырнă.

—Тĕлĕк мар пулĕ те, ытла та юмахри евĕр...

—Чапа хăнăхас пулать, ĕçре палăрни çеç мар, кур-ха, çамрăк ӳтӳ те кунсерен тенĕ пек йăл илсе пырать, халлĕхе тĕреклен, часах акă пулса-иртнине те манĕ çан-çурăму, пурăна киле суранун палли те юлмĕ.

—Тавтапуç сире, пуриншĕн те тавтапуç!—кăштах пусарăннă сасăпа хумханса хирĕç хуравларĕ Коля.

* * * * *

"Комсомольская правда" хаçатра Коля Степанов çинчен çырса кăларнă хыççăн, унăн пурнăçĕ йăлтах улшăнчĕ. Çав кунах Çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсенчен вуншар телеграмма çитрĕ, больницăрисемшĕн урăх калаçу пулмарĕ те тейĕн, кашниех вăл выртакан палатăна кĕрсе сăмах хускатма тăрăшрĕ.

Тепĕр кунне кăнтăрла çитеспе Шупашкартан Лида килсе çитни каччăна вара тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Çамрăк хĕрарăм пĕр хушă сăмах тапратма хăяймасăр, алăк патĕнче чарăнса тăчĕ, унтан аллисене тăсса, хăй пекех чĕлхине çухатнă Коля еннелле ыткăнчĕ, питĕнчен, тутинчен, вĕттĕн-вĕттĕн чуптурĕ:

—Савниçĕм, чунăмçăм, епле-ха капла?—вĕри сылăшпа пĕрле тухрĕç унăн сăмахĕсем.

Кăштах лăплансан тин вĕсен куçĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç.

—Мĕншĕн пĕр хыпар та пĕлтерместĕн? Эпĕ пĕтĕмпех канăçа çухатрăм, шухăшсемпе яланах санпа, кашни кун кĕтетĕп. Ĕнер хаçатра санăн сăнӳкерчĕкне курсанах чĕре темĕн ырă марра туйса илчĕ, аран-аран вуласа тухрăм, куç умĕнче вара юлашки тĕлпулу пулчĕ, тен, каллех эсĕ мана йышăнмăн?

—Лида,—чарчӗ ӑна Коля,—кирлӗ мар ӑна аса илме.

—Каҫар, пуриншӗн те каҫар,—пуҫӗпе тепӗр хут каччӑ патне ӳпӗнчӗ Лида,—чӗре ыратнишӗн ҫеҫ иртнине аса илтӗм...

Вӗсем иккӗшӗ тепӗр кун та каҫ пуличченех пӗрле калаҫса чунӗсене йӑпатрӗҫ, хӑйсене хумхантаракан ыйтусен уҫӑмсӑрлӑхӗнчен тухма тӑрӑшрӗҫ. Кольӑн чӗри пӗр хумханса, пӗр савӑнса тапрӗ. Хальхинче Лида унпа ҫумлӑ пулни ӑна сӑмахпа калама пӗлмелле мар савӑнӑҫ кӳчӗ, унӑн аллинчен ҫинӗ апат тути те пӗтӗмпех урӑхла туйӑнчӗ. Сестрасем кӑмӑллӑн шӳтлерӗҫ ҫеҫ, пирӗн пата "васкавлӑ пулӑшу" ҫитрӗ, терӗҫ. Чӑнах та, Лидӑшӑн, университетри медицина факультетӗнче вӗренекенскершӗн, тӗрлӗ им-ҫамсем парасси, суран ҫине бинт хурасси е укол тӑвасси ҫӗнӗ япала мар ӗнтӗ, вӑл савӑнсах сестрасемпе пӗрле май килнӗ таран пулӑшу пама тӑрӑшрӗ.

Телеграммӑпа ҫырусен шучӗ вара кунран-кун хушӑнсах пычӗҫ, вӗсен хисепӗ ҫӗртен те иртрӗ пулӗ, кашниййӗ хӑй ҫинче туйса ирттернӗ инкек вырӑнне хурса, ӑна ырӑ кӑмӑлтан хӑвӑртрах сывалма сӗнчӗ, хӑшӗсем, пӗр палламан ҫын пулсан та, хӑйсем патне хӑнана чӗнчӗҫ. Темиҫе уйӑх каялла сывпуллашнӑ чаҫран та хыпар ҫитрӗ, вӗсем те пӗр хумханмасӑр вулайман иккен Борис Амелькин очеркне. Ҫыру вӗҫӗнче командирпа пӗрле темиҫе ҫын алӑ пуснӑ. Лида кашни телеграммине, ҫырӑвне тирпейлӗн пуҫтарса пычӗ, хӑй вара пӗр эрнене яхӑн ӗнтӗ ир пуҫласа каҫченех Кольӑпа юнашар пулчӗ, тем пекех тархасласан та каччӑ сывалса ҫитиччен каялла Шупашкара таврӑнасшӑн пулмарӗ. Тӗрӗссипе, Кольӑн хӑйӗн те уйрӑлас килмерӗ, кӑварлана пуҫланӑ юрату унчченхи пекех ялтӑр ҫулӑмпа хыпса илчӗ, вӑл кунран-кун ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ вӑй илсе пычӗ.

Ҫапла пӗррехинче, Лида Кольӑпа калаҫнӑ вӑхӑтра, палата алӑкне такам асӑрханулӑн шаккарӗ, кӑшт тӑрсанах пӳлӗме Леша Завражновпа Володя Иванов кӗрсе тӑчӗҫ.

—Ак тамаша, эсир ӑҫтан тата?—тӑруках тӗлӗнчӗ Коля ҫарти тусӗсене курсан.

—Ӑҫтан, ӑҫтан? Паллах, Челнырен, эрне каяллах килесшӗнччӗ, май пулмарӗ, канмалли кунсемпе усӑ курас терӗмӗр,—сывлӑх суннӑ май пӗлтерчӗҫ Володьӑпа Леша.—Ну, мӗнле эс, хӑвна еплерех туятӑн? Тӳрех каламалла, сан ҫине пӑхсассӑн, пит савӑнмаллиех ҫук.

—Халь ҫӑмӑлтарах, малтанхи эрнере кӑшт хускалсанах ыратнипе кӑшкӑрас килетчӗ. Юрать-ха, ҫумра Лида пур. Вӑл

асапа сирме пулăшать. Чим-ха, сире курсан савăннипе унпа паллаштарма та мансах кайрăм. Паллашăр,—пуçĕпе сĕлтсе çамрăк, хитре сăн-питлĕ хĕрарăм енне кăтартрĕ вăл.

—Эпир ку чиперкке Лида иккенне тӳрех тавçăрса илтĕмĕр, унăн сăнӳкерчĕкне пĕрле чухне сахал мар курнă вĕт. Леша, Володя,—алă парса пĕрин хыççăн тепри паллашрĕç вĕсем.

—Эсир мĕн, йăпăртлăха килнĕн ура çинче тăратăр? Вырнаçăр,—терĕ Коля вырăн тупма пĕлмен тусĕсене хăйĕн кравачĕ çине ларма сĕнсе.

Каччăсем, салтак служби хыççăн, темиçе уйăх тĕл пулманскерсем, больница алăкĕсене питĕриччenex пĕрле пулчĕç. Каярахпа вĕсем, ыран ирпе тепĕр хут тĕл пуласса шантарса, пĕр-пĕринпе уйрăлчĕç, Лида, яланхи пекех, тăванĕсем патне, Лешăпа Володя вара Кольăсен килне кайрĕç.

* * * * *

Çуллахи кунсем самаях вăрăм. Катеке çитнĕ тĕле хĕвел чылай çӳлтеччĕ, халăх хирти ĕçрен те таврăнманччĕ-ха. Сергей Иванович килте пĕчченех хуçалăхра ăшталанатчĕ. Хăнасене курса паллашнă хыççăн вĕсем пӳрте кĕчĕç, малаллахи калаçу сĕтел хушшинче иртрĕ. Володьăна, ялта çуралса ӳснĕскере, кунти пурнăç самаях чĕрине хускатрĕ. Леша та вĕсен калаçăвне кăсăклансах итлерĕ, вăл та Володя пекех, Сергей Ивановичран катексем пирки ыйта-ыйта пĕлчĕ. Чей ĕçсе сĕтел çинчен савăт-сапана пуçтарнă хыççăн, çамрăксем ял урамĕсемпе паллашма шут тытрĕç. Сергей Иванович та хапăл тусах вĕсемпе пĕрле тухма килĕшрĕ, çул çинче вăл ертӳçĕ вырăнĕнче пулчĕ. Шăкăлтатса калаçса утнă май, икĕ каччăпа ватă учитель ял вĕçне — йĕтем еннелле тухрĕç, кунтах фермăсен çурчĕсем курăнаççĕ, ĕлĕкхи пăрусен вити çеç çук, халĕ унти, пушар хыççăнхи çунса пĕтеймен кăмрăклă муклашкасене пĕр çĕре пуçтарса тасатнă ĕнтĕ, пушă çĕр лаптăкĕ çинче часах çĕнĕ стройка пуçланмалла. Канашри ял строителĕсен комбинатĕнчен никĕс валли блоксем турттарса килме пуçланă. Анчах та колхоз ертӳçисем малтан шутласа хунă пек, транспортпа строительсем çитменнине кура, ĕç кал-кал йĕркеленсе

каяймасть çав. Çамрăксене кун пирки Сергей Иванович каласа пачĕ.

—Шартлама сивĕ кунсем çитиччен ĕлкĕрейĕр-ши? —ăна ыйту памасăр чăтаймарĕ Володя.

—Темĕн çав, шикленмелли сăлтавĕсем тупăнсах тăраççĕ,—иккĕленсе, çавна пула хăй те айăпа кĕнĕн куçĕсене тартрĕ Сергей Иванович.—Председатель йăлтах канăçне çухатрĕ ĕнтĕ, ăçта пыратăн, унта лимит теççĕ, тет. Юрать-ха, материалĕсене черетсĕрех памалла тунă. Халĕ тата ĕç вăйĕ çитменни ура хурать, вăл пур çĕрте тенĕ пек строительсем шырать.

—Колхозра çук-им вара вĕсем?

—Пурри пур та, çителĕксĕр.

Калаçу самантлăха татăлчĕ. Вĕсем каялла çаврăнма шутланăччĕ çеç, çак вăхăтра çывăхри çурт кĕтессинчен пăру кĕтĕвĕн ушкăнĕ тухрĕ. Вĕсем, пĕчĕк ача евĕр, хăйсене çитес вăхăтра мĕн кĕтнине туймасăр, пĕр-пĕринпе выляса-тĕрткелесе, вăхăтлăха хăмасенчен çапса тунă хӳтĕ енне утрĕç. Çынсемпе танлашсан, кашниййĕ чарăнса, вĕсемпе паллашас тенĕн, çывăхарах пыма тăрăшрĕ, хăйсен кӳренчĕксĕр пысăк куçĕсемпе куçран пăхрĕ, лешсем çул панă хыççăн вырăнтан кăшт çеç хускалсанах, ăмăртма чĕннĕн, хӳрисене тăратса малалла тапса сикрĕç.

Каçхине çывăрма выртсан та Володя тăруках тĕлĕрсе каяймарĕ, шухăшĕсемпе Ишлее, тăван килне те çитрĕ, чунĕ çак самантра темшĕн яла туртрĕ. Акă вăл Коля çуралса ӳснĕ тăрăхра. Темиçе сехет каялла çеç-ха васкамасăр унăн хитре урамĕсемпе утса çӳрерĕ, усă сывлăша киленсе сывларĕ, Катекпе Ишлей хушшинче пĕрпеклĕхсем нумайран ăш-чик вырăнтан хускалчĕ, халиччен пулса курман ял ăна килĕшрĕ.

Челны — пысăк стройка. Икĕ уйăх ытла ĕнтĕ вĕсем унта вăй хураççĕ. Анчах та Володьăн чĕринче темĕн çитмен, хăйĕн вăйĕпе, пултаруллăхĕпе çителĕклĕ таран усă курман пек туйăнать. Пытарма кирлĕ мар паллах, пысăк строительствăра та чăрмавсем чылаях тĕл пулаççĕ, тĕслĕхрен, тепĕр чух раствор е кирпĕч вăхăтра тиесе килменрен е тата урăх сăлтава пула, сахал-им тĕрлĕ ыйтусем сиксе тухаççĕ, смена сменипех бригадипех ĕçсĕр ларнисем те час-часах пулаççĕ. Общежитине таврăнсан кăмăл пăсăлать, мĕн кăна курмастăн пулĕ тепĕр чух, тарăхнипе куçа хупса ăçта та пулин тухса тарас шухăш та пуçра сахал мар çуралнă. Çарта хĕсметре тăнă вăхăтра хăвăн ĕçӳпе ытларах усă кӳрессишĕн ĕмĕтленнĕ. Кунта вара йăлтах урăхла, тепĕр чух, эсĕ çут

тӗнчери пурри никама та кирлӗ мар пекех туйӑнса каять. Ҫакӑ вара пурнӑҫ ҫине тӗпчевлӗрех пӑхма хистет, малашне умри тӗллев умӗнче яваплӑ пулма хушать. Акӑ вӗсем паян фермӑна ҫитсе курчӗҫ. Колхозра пысӑк стройка пуҫланмалла, анчах та ӗҫ вӑйӗ ҫитмест. Пӗлет Володя, енчен те Коля больницӑра сипленмен пулсан, пӗр минут та шутласа тӑмастчӗ, ҫаннине тавӑрсах ӗҫе пуҫӑнатчӗ, хӑй хыҫҫӑн пыма ытти ҫамрӑксене те хавхалантаратчӗ. Вӗсен тусӗ ҫавнашкал ҫын ҫав, яш-кӗрӗме ертсе пыма пӗлет. Анчах та мӗншӗн-ха вӑл Коля пек мар-ши? Мӗн тӑвӑн? Ҫынсене пурне те пӗр калӑппа виҫсе туман ҫав. Пӗрисем ертсе пыма пӗлеҫҫӗ, теприсем ӗҫлеме ӳркенмеҫҫӗ. Тен, Челныре мар, унӑн ӗҫшӗн тунсӑхласа ҫитнӗ аллисем ҫакӑнта ытларах кирлӗ пулаҫҫӗ? Ҫак шухӑшсем канӑҫ памарӗҫ те ӗнтӗ Володьӑна. Вӗсем ыйӑха сирсе, тӗплӗнрен тӗплӗнрех шухӑшлаттарчӗҫ, ӑна хӑйӗн тусӗ ҫуралса ӳснӗ яла юлма, кунта пурӑнса йӑва ҫавӑрма хистерӗҫ.

Ирхине ирех вӗсене телефон шӑнкӑравӗ ыйхӑран вӑратрӗ, Анна Егоровна Киевранах калаҫма кӑмӑл тунӑ иккен. Володьӑпа Леша унӑн сассине илтмерӗҫ, ҫапах та Сергей Иванович калаҫӑвӗнчен ӑнкарса илме май пулчӗ: вӑл ывӑлӗпе пулса иртнӗ инкек пирки ӗнер каҫхине ҫеҫ ӑнсӑртран хаҫат вуланӑ хыҫҫӑн пӗлнӗ. Амӑшӗн сӑмахӗсем пӑлхануллӑ туйӑмпа тулни тӳрех сисӗнет, вӑл мӑшӑрне чӑннине ҫийӗнчех пӗлтерменнишӗн вӑрҫса та илчӗ пулмалла. Ҫакна Сергей Иванович хуравӗнчен чухласа илме май килчӗ, мӗншӗн тесен упӑшки тӳрре тухасшӑн арӑмне лӑплантарма тӑрӑшрӗ, анчах та Анна Егоровна яхӑнне те ямарӗ, ӑҫтан чӑттӑр ун пек чух амӑшӗн чӗри? Вӑл ҫывӑх кунсенче киле таврӑнма шут тытнӑ иккен, хӑй вара йӑлтах сывалса ҫитеймен-ха.

Володя чӑтаймарӗ, Сергей Иванович хутне кӗрсе трубкине илчӗ:

—Пӗлетӗр-и, Анна Егоровна,—сывлӑх суннӑ-сунманах васкамасӑр сӑмахлама пуҫларӗ вӑл,—хӑрамалли нимех те ҫук, тӗрӗссине пӗлтеретпӗр, сирӗн халӗ хӑвӑрӑн сывлӑхӑра упрамалла. Сергей Иванович паянах сирӗн пата Киева тухса пырӗ. Шанатӑр пулсан, эпӗ кунта юлатӑп. Ан иккӗленӗр, маншӑн, ялта ӳснӗскершӗн, ҫурт-йӗре, выльӑх-чӗрлӗхе пӑхса тӑрасси ҫӑмӑл ӗҫ мар.

Ку сӑмахсене илтсен, Сергей Иванович та, Леша та пӗр вӑхӑт хушши ҫухалсах кайрӗҫ. Вӗсем иккӗшӗ те пӗр-пӗрин ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗҫ. Володя татах та калаҫрӗ, юлашкинчен,

Анна Егоровнăна лăплатса ӳкĕте кĕртсен, трубкине каллех Сергей Ивановича тыттарчĕ, хальхинче вĕсен калаçăвĕ çăмăллăнах шурĕ пулмалла, сăмахĕсем кĕскен те ăнланмалла пулчĕç:

—Юрĕ, эппин, кĕт мана. Эпир кунта Володьăпа сӳтсе явăпăр та часах сан патна Киев хулине больницăна çитĕп,—терĕ сывпуллашнă май вата учитель. Мăшăрĕпе часах тĕл пулас ĕмĕт ăна савăнтарчĕ, хăй те сисмерĕ, унăн пичĕ самаях çуталчĕ, куçĕсем телейлĕн çиçрĕç.

Кăнтăрлаччен вăхăт çав тери хăвăрт иртсе кайрĕ. Çарти пек тĕрлĕ инструкци панипех темелле. Ара, кил хуçи вырăнне юлаканăн пĕлмелле-çке-ха, ăçта, хăш кĕтесре мĕн выртнине, савăт-сапа-и, ĕç хатĕрĕсем-и, е тата: хăçан выльăх-чĕрлĕх кĕтӳрен таврăнать, вĕсене мĕнле пăхмалла? Кĕскен каласан, сахал-им кил-çуртра куллен-кун пурнăçламалли ĕçсем?

—Енчен те йывăрлăха лексен, вăтанма е ютшăнма кирлĕ мар. Эпир кунта пурте пĕр çемьери пек пурăнатпăр. Маня аппу патне кайса канаш ыйт, вăл пулăшатех,—вĕçлерĕ кил хуçи хăйĕн сăмахне, Володьăна тин çеç кӳршĕрен каçнă пысăках мар, тулли ӳт-пӳллĕ хĕрарăмпа паллаштарнă май.

—Сергей Иванович, пĕр шиксĕрех çӳрĕр, мĕнле те пулсан пĕр-пĕрне пулăшса пурăнкалăпăр,—лăплантарчĕ ăна Маня аппа та.—Çулăр такăр, Турри сирĕнпе çумлă пултăр! Анна Егоровнăна вара пиртен салам калăр, вăл часрах сывалса килтĕр.

Патăръелне çитиччен Володя та ăсатма пулчĕ, уйрăлас умĕн вĕсем виççĕшĕ те Коля патне больницăна кĕчĕç.

Сергей Иванович ывăлĕ çумĕнче ларакан Лидăна курсан тĕлĕнчĕ те, савăнчĕ те. Лешĕ шăпах Кольăн бинчĕсене улăштаратчĕ, çамрăк ӳт-пӳ пулсан та, çăмăлах мар иккен ывăлне, шăлĕсене çыртса пит-куçне чалăштарчĕ вăл, анчах та хăй кăмăллакан хĕрарăм умĕнче сасă пама хăяймарĕ, ыратнине тӳсĕмлĕн чăтса ирттерчĕ. Çамки çине тапса тухнă тарне шăлса илчĕ те, килсе çитнĕ тусĕсемпе ашшĕне курчĕ, вырăн çинчен тăрса ларчĕ.

—О-о, кун пек эсĕ часах çӳрекен те пулатăн. Пулас врачсем ăшă сăмахпа та сиплеме пĕлеççĕ. Сываласси вара хăв ĕмĕтленнинчен, хăвна ху шаннинчен çеç килет,—ывăлне хирĕç пырса ларчĕ вăл. —Ну, мĕнле, çăмăлтарах-и?

—Хăвах куратăн вĕт, халь çеç тăрса лармарăм, паçăр, эсир киличчен пӳлĕмре хам тĕллĕн темиçе утăм та турăм. Тепĕр икĕ-виçĕ кунтан палатăран та тухакан пулатăпах. Манăн

урасем хытах пиçсе кайман, часах сипленĕп,—хăпартланса калаçма, çав вăхăтрах ашшĕне савăнтарма тăрăшрĕ вăл.

—Эппин, аннӳне те çаплах пĕлтерĕп.

Кольăна ашшĕн хыпарĕ, вăл Киева амăшĕ патне кайма çула тухни савăнтармаллипех савăнтарчĕ.

—Аннене каласа пар. Ăна Лида куç илмесĕр ирĕн-каçăн сиплет, те. Вăл маншăн ан пăшăрхантăр,—хăйĕн чун савнийĕ çумра иккенне пытараймарĕ каччă. Амăшĕ вĕсене тахçанах иккĕшне пĕрле курасшăнччĕ, чăнах та, Лида качча кайнă тенине илтсен сахал мар кулянчĕ, ывăлĕ каллех унпа пĕрле тенине илтсен, тен, кăштах та пулин хĕпĕртĕ. Халĕ пĕр-пĕринпе юнашар чух вĕсем телейлĕ. Те-лей-лĕ!—тесе кăшкăрас, хăйĕн чунтан тухакан юрă, кирек кама та савăнтаракан çĕнĕ хыпара чи хаклă çынни —амăшĕ патне те хăвăртрах çитерес килчĕ Кольăн.

—Юрĕ, калăп,—сăмах пачĕ ашшĕ.—Килти хуçалăхра кам юлнине мĕншĕн ыйтмастăн тата?—яланхи пекех чеен пăхрĕ вăл.

Володя Катекре юлать тенĕ хыпар, пуçран тукмакпа çапнăнах туйăнчĕ, мĕне-мĕне, çакна вара пĕрре те кĕтменччĕ:

—Володя, чăнах-и?—савăннипе чутах кăшкăрса яратчĕ Коля,—вăт ку хыпар-тăк хыпар, пĕреххут, кил-ха, сана чăмăртам,—асăрхануллăн бинтланă аллисене тăсрĕ вăл,—Ну, Володя, хăвăртрах сывалса çеç тухасчĕ, кăтартăпăр вара эпир пурне те çамрăксем мĕн тума пултарнине, пире ун чух аякран ăмсанса пăхакансем те чылайăн пулĕç-ха,—ĕмĕтленсе калаçрĕ секретарь.

Часах пӳлĕмре вĕсем иккĕн çеç тăрса юлчĕç.

—Куртăн-и манăн туссем еплерех иккенне!—Лидăна хăй çумне çывăхарах ларма сĕнсе, пуçларĕ вăл хăнасене ăсатса янă-яманах, çаплах-ха лăпланаймасăр.—Чăн-чăн туссем, сисетĕп, Леша та Челныре пĕччен чăтса тăраймĕ, часах персе çитĕ. Сăнарăн-и, куçĕсем çав тери шухăшлă, сăнĕ-пичĕ те хăйĕн мар. Ну, савăнаççĕ ĕнтĕ ял хĕрĕсем! Вĕсем клубра чух ялан йĕкĕлтеме пăхатчĕç, эсир, каччăсем, хулара пурăнакан чиперккесем çине çеç пăхатăр, сире çавсем ытларах илĕртеççĕ, тетчĕç. Чим, Лида,—сасартăк темĕн аса илнĕ пек пулчĕ вăл,—атя эсĕ те яла таврăн, кунта, чăнахах та, пурнăç интереслĕрех, пурте пĕр-пĕрне паллаççĕ, шанаççĕ, пулăшаççĕ. Хулара пиншер çын хушшинче сана пĕлекен те çук, кунта вара кашни çын, авă пирĕн врач тесе пуçне сĕлтсе кăтартĕ, сывлăх сунĕ. Ял халăхĕ хушшинче врачсем чи

хисеплӗ ҫынсем. Вӑл ҫеҫ те мар, ирхине тӑратӑн та, пур енче те автансем авӑтаҫҫӗ, ҫӗнӗ кун ҫитнине пӗлтерсе сас параҫҫӗ, ҫулла тата епле чуна ырӑ: кайӑксем юрлаҫҫӗ, сывлӑшӗ тата мӗне тӑрать! Сана каланӑ ӗнтӗ эп ун пирки, ахальтен мар пуль ҫав аннене, хулара ӳссе ҫитӗннӗ пулин те, чунӗ пурнӑҫне ӗмӗрлеме ялах туртнӑ.

—Эсӗ хӑв килне чӗнместӗн пулӗ те вӗт?

—Мӗншӗн чӗнмелле мар, атте-аннешӗн пӗлмен ҫын мар,—терӗ те Коля ҫийӗнчех шӑпланчӗ, тин ҫеҫ савӑнӑҫпа ҫиҫекен куҫӗсем тӑруках улшӑнчӗҫ. Пӳлӗмре чылай вӑхӑт хушши шӑплӑх хуҫаланчӗ.—Пӗлетӗн-и,—каллех пуҫларӗ вӑл,—эпӗ санпа юлашки хут уйрӑлнӑ каҫ сирӗн унччен манпа кӑмӑллӑн вылякан йыттӑр умри ҫула пӳле-пӳле вӗрчӗ, йӑпатсан та лӑпланаймарӗ, самантлӑха чарӑнчӗ те, утма пуҫласанах, каллех мана темшӗн чарӑна пӗлми вӑрҫрӗ. Халӗ шутлатӑп та, эпир уйрӑласса маларахах сиснӗ пулӗ ҫав, вӑл мана тем пекех каялла тавӑрасшӑн пулнӑ е сана хампа пӗрле ӗмӗрлӗхех илсе кайма хистенӗ. Ҫартан таврӑнсан, ӑна юриех шырарӑм, каҫару ыйтасшӑнччӗ, ҫук тупаймарӑм, вилнӗ терӗҫ. Куҫҫулӗм юхса анчӗ, эппин, эпӗ те сана яланлӑхах ҫухатрӑм иккен.

—Коля, мӗн калаҫатӑн?—чарчӗ ӑна Лида.—Куратӑн вӗт-ха, эпӗ санпа юнашар.

—Юнашар, тетӗн, пӗлетӗп вӗт-ха мана шелленипе ҫеҫ эпир халь пӗрле, чылайлӑха-и, ӑна пиртен никам та калаймӗ. Санӑн упӑшку пур...

Лида каччӑ ҫине ӑшшӑн пӑхрӗ, аллисемпе ӑна питӗнчен ачашласа илчӗ.

—Эх, эсӗ те ҫав, —ассӑн сывларӗ вӑл,—нивушлӗ нихӑҫан та мана каҫармӑн-ши? Юрататӑп сана, юра-та-тӑп. Хамӑн хӗрупраҫ ҫӑмӑлттайлӑхне каҫарттарассишӗн тем тума та хатӗр. Айӑплине те пӗлетӗп. Халь тин мӗн тӑвас-ха, пӗреххут санпа пулассишӗн?—Унӑн куҫӗсенчен куҫҫулӗсем пӑчӑртанса тухрӗҫ те, вӗсене пытарасшӑн пулса Лида пуҫне каччӑ ҫине хучӗ, анчах та самаях йывӑрланнӑ шӑрҫасем тытӑнса тӑраймарӗҫ, чупса анса, Коля пичӗ ҫине ӳкрӗҫ, тӑварлӑ шыв каччӑн тутисене пӗҫертрӗ. Вӗсенчен пӗри те чухлаймарӗ, хӑшӗн куҫҫулӗ вӗрирех пулчӗ-ши? Чылайччен ҫапла пӗр-пӗрин сывлӑшне, чӗри таппине туйса хускалмарӗ икӗ юратакан чун. Нумай вӑхӑт иртсен тин пуҫӗсене ҫӗклесе йӗпеннӗ куҫӗсемпе пӗр-пӗрин ҫине тинкерчӗҫ, унтан ассӑн сывласа, каллех ыталанса илчӗҫ...

*     *     *     *     *

Пӗр эрне каялла калана Коля сӑмахӗсем тӗрӗсех пулчӗҫ. Леша Завражнов хулана каялла таврӑнсан канӑҫне йӑлтах ҫухатрӗ. Вӑл хӑйне япӑх туйрӗ, шухӑш-кӑмӑлӗпе яла, унта юлнӑ тусӗсем патнех туртӑнчӗ. Унӑн Челнынче пӗр самант та тӑрас килмерӗ, каччӑшӑн пурнӑҫӗнчи чи ҫывӑх ҫынсем ҫухалнӑнах туйӑнчӗҫ. Ҫук, кун пек аван мар, туссем патнех таврӑнмалла, шухӑшларӗ вӑл. Чӑнах та, Челныре текех тытӑнса тӑраймарӗ, унпа сывпуллашса Катеке килчӗ. Халиччен ҫак кун ҫитессе шанса пурӑннӑ Володьӑпа Коля хӗпӗртемеллипех хӗпӗртерӗҫ, пуринчен те ытларах колхоз председателӗ Николай Филиппович савӑнчӗ. Сӑлтавӗ те пур ҫав, пӗр эрне ытла ӗнтӗ вӑл кӗрхи кунсем ҫитиччен пӑрусен фермине хута ярассишӗн кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр тенӗ пек ӑшталанчӗ, стройкӑра ӗҫлеме ҫынсем шырарӗ, бригада йӗркелерӗ, кунта акӑ татах пач кӗтмен ҫӗртен тепӗр вӑйпитти каччӑ хутшӑнчӗ, ӗҫлеме килӗшрӗ. Вӑл вӑхӑта сая ямарӗ, председательпе калаҫнӑ хыҫҫӑн тепӗр куннех ӗҫе пикенчӗ. Кам кӑна пулмарӗ кунта: ватти те, ҫамрӑкки те, шкул ачисем те. Кашниййӗ вӑй ҫитнӗ таран тӑрмашрӗ. Фермӑра ӗҫлекенсем те, пушӑ вӑхӑт тупӑнсанах, строительсене пулӑшма тӑрӑшрӗҫ. Паян та акӑ ӗнесене суса таврӑннӑ хыҫҫӑн стройкӑна ҫитрӗҫ. Паллах, Лешӑна вӗсем ҫийӗнчех асӑрхарӗҫ. Тӗреклӗ ҫан-ҫурӑмлӑ, ҫӳллӗ, яштака каччӑ тӳрех хӗрсен куҫӗ тӗлне пулчӗ.

—Аха, кунта пирӗн каллех хутшӑну, каччӑсем ҫук тесе кӑлӑхах кулянатпӑр иккен. Юлашки вӑхӑтра вӗсем кӑмпа пекех ҫитӗнеҫҫӗ,—сӑмахне шеллемерӗ Галя Самойлова унпа паллашнӑ май.

Тепӗр ҫур сехетрен ҫак ушкӑн Тренъелне кирпӗч тиеме кайрӗ, Лешӑна та шӳтле-шӳтлех хӑйсемпе пӗрле илчӗҫ:

—Саншӑн усӑллӑ экскурси пултӑр,—терӗҫ вӗсем.

Лешӗ хӗрсенчен ютшӑнса тӑракан, ӗҫленӗ чух ӳркенекен каччӑ мар. Вӑл савӑнсах ҫула тухма килӗшрӗ.

Тренъел Катекпе ҫумлӑ ял. Вӑл хӗвеланӑҫ енче сӑрт ҫинче вырнаҫнӑ. 10-15 ҫул каялла кунта колхозсем пӗрлехи вӑйпа ҫуллахи вӑхӑтра ӗҫлекен кирпӗч завочӗ йӗркеленӗччӗ. Ӗҫ хатӗрӗсем асаттесен вӑхӑтӗнчи пулсан та, усси аванах. Унӑн пуҫлӑхӗ Николай Александрович Кошкин, хӑй те нумаях пулмасть ҫеҫ ҫартан таврӑннӑскер, ытти хуҫалӑхсене малтан пама палӑртнӑ кирпӗч хисепне чакарма, вӗсен шучӗпе катексене йывӑрлӑхран тухма пулӑшма шутларӗ. Лешсем,

паллах, ăна хирĕçлеме те хăтланчĕç: «Мĕнле-ха капла, заводне тунă чух эпир пурте пĕр пек тăккаланнă, кирпĕчне вара эсĕ кама ытларах парас тетĕн, çавна паратăн»,— ӳпкелешрĕç вĕсем. Сăлтавĕ пур ĕнтĕ, колхоз ертӳçисен кашниййĕн хăйсен хуçалăхĕнче юсамалли ĕçсем тупăнсах тăраççĕ, çавна пурнăçлама вара яланах строительство материалĕсем, уйрăмах кирпĕч çитмест. Николай Александровичăн, ĕнерхи офицерăн сăмахĕ, çарти пекех, кĕске те татăклă пулчĕ:

—Эсир халлĕхе чăтатăр, сирĕн выльăх-чĕрлĕх хӳтĕре, вĕсене кĕрхи çумăр та, хĕллехи çил-тăман та хăратмасть. Катексен вара лару-тăру сирĕннинчен çĕр хут япăхрах, кăкăр ачисем евĕр, çамрăк пăрусем пушара пула кил-çуртсăр тăрса юлнă. Епле-ха пулăшмалла мар вĕсене? —ӳкĕте кĕртрĕ вăл хăйсен хуçалăхĕшĕн çеç тăрăшаканскерсене.

Коля вут-çулăмра суранланни те Николай Александровича кулянтарчĕ, çак хыпара илтсенех, вăл ун патне больницăна кĕрсе тухрĕ, сăмах хакне пĕлекенскер, ăна хавхалантарма тăрăшса:

—Чăт салтак, чăт, пулса иртнипе çырлах. Тен, Турри хăвăнпа пулман пулсан, татах та йывăртарах пулма пултарнă,—терĕ.

Куçĕсем каччă çине темле хурлăхлăн та ачашшăн пăхрĕç, тен, нумаях пулмасть хăй те госпитальре выртса тухнине аса илчĕ пулĕ вăл. Çак самантра, чăнах та, чăтса иртнерĕ асап ăнсăртран куç умне тухсан, çан-çурăм, пĕтĕм шăмшак сӳлесе каять, ытла та хăрушă-çке вĕсене тепĕр хут шухăш али витĕр кăларнă чух. Инкеке лексен Николай Александровича, тăн çухатнăскере, самолетпа Южносахалинск хулине илсе çитернĕ. Миçе кун выртнă-ши вăл реанимаци пӳлĕмĕнче — вилĕмпе пурнăç хушшинче? Çакна каччă нимĕн те астумасть. Тусĕсем, виççĕ теççĕ. Юр айĕнче сакăр сехет выртнине шутласан, виçĕ талăк анчах-ши?

Кунĕ ун чухне хаваслă та савăнăçлă çурхи хĕвелпе пуçланнăччĕ, инкеке никам та кĕтместчĕ. Вĕçен кайăксем нумаях пулмасть çеç ăшă çĕртен таврăнса Сахалин утравне хăйсен çепĕç юррисене парнелетчĕç, чуна çĕклентеретчĕç. Пограничниксен нарячĕ вĕсен сассипе киленсе ту хĕррипе утатчĕ. Шăп та лăп çак самантра таçта çӳлтен тăруках йывăçсем шартлатса хуçăлнă, темĕн кĕмсĕртетни илтĕнчĕ. Чикĕ хуралçисем кăшт çеç пăхма ĕлкĕрчĕç, шурă пĕлĕт тӳперен татăлса анса вĕсем çине хăрушла хăвăртлăхпа васкарĕ. Сăмах калама та ĕлкĕреймерĕç, тĕттĕмлĕх ытамне

çакланса пĕр-пĕрне çухатрĕç. Кайран, тăна кĕрсен, унăн ытти юлташĕсене шырас килчĕ, вăл хăй ăçта иккенне те туймарĕ пулас. Йĕри тавра малтанхи пекех шап-шурă тĕс çеç курăнать, анчах мĕншĕн-ха алли-урисене йăлтах бинтланă? Пӳлĕмре те шăплăх кăна хуçаланать, пĕр сасă та илтĕнмест. Тепĕр самантран тин мĕнле хăрушă инкекре пулнине, хăйне операци тунине пĕлчĕ. Тухтăрсем май килнĕ таран тăрăшсан та унăн урисене çăлса хăварайман иккен. Каччăн чунĕ хурланчĕ, вăл мĕн пĕчĕкрен çар çынни пулма ĕмĕтленнĕ, малашне епле пурăнмалла-ха? Çамрăк, çулĕпе те вăтăра та çитмен-çке, хăйĕн çемйине те çавăрма ĕлкĕреймен. Мĕн калĕ ăна чун савнийĕ Галя, вăл Тренъеле чăлах таврăнсан?

Малтанхи кунсенче çутă та ырă ĕмĕтсем йăлтах путланнăн туйăнчĕç. Анчах та пограничниксен хушшинче тăватă çынран тăракан нарядран хăй çеç чĕрĕ юлнине пĕлсен, вăл хăйне хăй алла илсе, шăлне татах та хытăрах çыртрĕ: найкăшмалла мар, пурăнмалла, шăпа пӳрнине йăлтах чăтмалла.

Чун савнийĕ пирки каччă кăлăхах куляннă. Галя таса юратăвне чыслăн упранă, ăна кĕтнĕ. Яла таврăнсанах вĕсем туй турĕç. Кайран хăйĕн кăмăлне тивĕçтерекен ĕç те тупрĕ. Чун тĕпĕнче, таçта шалта пытарăннă пултаруллăхĕ те çиеле тухрĕ, халăха ертсе пырас ăсталăхĕ унăн çулсерен вăйланса пычĕ. Çынсем ăна хисеплеме пуçларĕç, район ертӳçисем те Николай Александровичăн ырă сĕнĕвĕсене шута илме пикенчĕç. Экономика ыйтăвĕсене тĕрĕс татса пани унăн сумне, ятне тата та çӳллĕрех шая çĕклерĕ. Иртсе кайнă кунсене, тусĕсене вăл яланах асра тытрĕ, йывăрлăха лекекене кирек хăçан та пулăшма тупа турĕ. Юлташĕсене шантарнине е халăх умĕнче сăмах панине вăл кулленех пурнăçласа пычĕ. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç тенĕ пек, çынсем те ăна ырă ĕçĕшĕн ырăпа тавăрма тăрăшрĕç, чуна кирек хăш вăхăтра та çĕклекен çак килĕшӳ Николай Александрович Кошкина пурнăçра хавхалантарчĕ, унччен иккĕлентернĕ шухăшсем хĕвел тухсан ирхи тĕтре сирĕлнĕ евĕр, куç умĕнчен йăлтах çухалчĕç. Пурнăçра вăл хăйĕн вырăнне тупнăшăн савăнчĕ...

Катексем икĕ машинăпа вĕçтерсе çитрĕç. Кирпĕчĕ кустăрма çинченех тиенет тейĕн, çукпа пĕрех. Леша нумай шутласа тăмарĕ, çывăхри тачкăна илсе, шала вĕри кăмака патне кĕрсе кайрĕ. Кирпĕчĕсем аллисене алсатулĕ витĕр те пĕçертнине пăхмасăр тиеме пикенчĕ. Хăй тăрăх шăпăртатса тар юхрĕ, çан-çурăмĕ, кĕпи паçăрах йĕп-йĕпе унăн, вăл

ываннине пахмасар тачка хыҫҫан тулли тачка илсе тухрӗ. Хӗрсем вӗсене пушатнӑ хушӑра ҫеҫ канмалла тенӗ пек пирус тивертрӗ, паллах, ҫӑмӑл пулмарӗ ӑна.

Ҫакна пурне те асӑрханӑ Николай Александрович, васкамасӑр алтуйи ҫине тайӑнса утаканскер, паҫӑртанпах айккинче кӗпӗрленсе пуҫтарӑннӑ рабочисем патне ҫитрӗ, кӳршӗ ялсене пӑхмасӑр, вӗсене вӑрҫса илчӗ, кирпӗч тиеме пулӑшманшӑн намӑслантарчӗ. Ку уншӑн ҫӗнӗ япала мар иккен. Лешсем, ӗҫ вӗсемсӗрех шунине курса, пӑлахая переҫҫӗ. Камӑн нушаланас килтӗр вӗри кӑмака умӗнче, енчен те тар тӑкмасӑрах ӗҫ укҫи кӗсъене кӗрет пулсан?

Каҫ пуличчен икӗ машинӑпа виҫшер рейс тума та ӗлкӗрчӗҫ. Кӳршӗсен ӗҫ епле шунипе интересленсе Николай Александрович Катеке пырса кайрӗ.

—Аван, енчен малашне те ӗҫ ҫаплах кал-кал пырсан, авӑн уйӑх вӗҫнелле пӗтеретӗр те,—унтан ҫамрӑксем еннелле ҫаврӑнса,—астӑвӑр, ыран ирпе иртерех ҫитме тӑрӑшӑр, ҫӗр варринче кӑларнӑ кирпӗч йӑлтах сирӗн пулӗ, паянхи пек вӗри кӑмака умӗнче тар тӑкма тивмӗ,—терӗ.

—Пире вӗри кӑмака умӗнче тӑни хӑратмасть, кирпӗчӗ ҫеҫ пултӑр, таҫтан кӑларма та хатӗр эпир,—терӗҫ лешсем пӗр харӑс.

Володьӑпа Леша, ӗҫ кунӗ вӗҫленсен, киле пӗрле таврӑнчӗҫ.

—Эсӗ чӑн-чӑн тус, кунта пӗччен аран ӗлкӗрсе пыратӑп темелле, халь иксӗмӗре ҫӑмӑлтарах пулӗ. Кур, кунта пахчаҫимӗҫ йӑлтах пулса ҫитнӗ, хӑярӗпе помидорӗ йӑтӑнать кӑна. Тем тумалла вӗсемпе?

—Чим-ха, мӗн ӳпкелешетӗн? Суккӑр пулас марччӗ, куҫна уҫса пӑх-ха, мӗн чухлӗ чиперкке сан ҫумӑнта явӑнать, ши! шӑхӑрса хӑть пӗрне чӗнсе ил,—Володьӑн сӑмахне пӳлсе кӑштах шӳтлӗн тӗртсе хучӗ Леша.

—Кӑна вара тӗрӗс калатӑн, хӗрсемпе паян каҫ пулсан тӗл пулма калаҫса татӑлнӑччӗ. Вӗсенчен пулӑшу ыйтма тархаслас пулать ӗнтӗ.—Иккӗшӗ ҫапла калаҫса Кольӑсен ҫурчӗ тӗлне ҫитсе пыратчӗҫ, ҫав вӑхӑтра хӑйсенчен ӗҫрен маларах таврӑнма ӗлкӗрнӗ хӗрсен ушкӑнӗпе тӗл пулчӗҫ.

—Енчен те сире кӗтсе ларнӑ пулсан, нимӗн те туса ӗлкӗрейместӗмӗр, юрӗ ӗнтӗ, кил-ҫурт ӗҫне тирпейлесе пӗтерӗр те клуба хӑпарӑр, паян ташӑ каҫӗ пулать унта,—каччӑсене йыхравласа хушса хучӗ Маша Сынкова.

—Эпир хӑяр пуҫтарса тӑварларӑмӑр, помидор маринадларӑмӑр, банкисене сивӗнсе ҫитсен, нӳхрепе антарса

лартма ан манăр,—тăруках темĕн аса илнĕн чарăнса пĕлтерчĕ Нина Федорова.

Шўтлесе те кулса хĕрсем килĕсене саланчĕç. Леша Володьăна чавсинчен тытрĕ, утма чарăнса, тин çеç çумра тăнă ушкăн çине тинкерчĕ.

—Каласамччĕ, тархасшăн, нивушлĕ Катекре çакăн пек хитре хĕрсем пур, уйрăммăнах лешĕ, приказ параканни,—унтан пĕр самант чĕнмесĕр тăнă хыççăн, çаплах-ха хăйĕн шухăшĕнчен уйрăлаймасăр ассăн сывласа,—чăн-чăн вутăш, чиперкке,—терĕ.

Володя унăн шухăш-туйăмне çийĕнчех ăнланчĕ, тусĕ çине чеен пăхса илчĕ те:

—Чăваш тăрăхĕнчи чи капăр хĕрсем кунта, çакна халиччен хам та ĕненменччĕ, акă нумай вăхăт иртмĕ, курăп-ха, епле эсĕ те пĕр-пĕр хитре пикен тыткăнне лекнине, уншăн çĕрĕн-кунĕн çуннине,—картишне кĕнĕ май хăйсен малашнехи пурнăçĕ улшăнассине систерсе хушса хучĕ вăл.

*     *     *     *     *

Кăнтăрласенче çăмăл машина Степановсен килĕ умне çитсе чарăнчĕ те темиçе хутчен кĕскен пиклеттерсе илчĕ. Салонран арçынпа хĕрарăм васкамасăр тухрĕç. Коля, Леша тата Володя шăпах çак самантра пўртреччĕ, вĕсем кайри пўлĕмре апат çисе ларатчĕç. Машина сассине илтсе Леша малти пўлĕме кĕрсе кайрĕ те чўречерен урамалла пăхрĕ:

—Пирĕн пата хăнасем килчĕç пулмалла, арçынпа хĕрарăм,—терĕ вăл каялла пўлĕме таврăнса.

Коля, пĕр-икĕ кун каялла çеç больницăран тухнăскер, уçă алăкран урамалла карăнса пăхрĕ:

—Анне! Атте!—савăнса кăшкăрчĕ вăл, унтан кашăккине сĕтел çине пăрахса урамалла вирхĕнчĕ, ун хыççăн Лешăпа Володя та васкарĕç.

—Коля, ывăлăм!..

—Анне!..—ыталанса илчĕç амăшĕпе ывăлĕ.

Çак самантра урăх сăмах тупайманнипе пĕр-пĕрин çине хумханса, пăлханса пăхрĕç, хăйсен чĕри тапнине туйрĕç. Чылайччен чĕнме хăяймасăр тăчĕç çапла, иккĕшĕ те шанманччĕ ĕнтĕ вĕсем тăван килте ыррăн-сыввăн та тĕрĕс-тĕкел пĕр-пĕрне курасса.

—Ну, хӑвна мӗнле туятӑн?—ывӑлӗшӗн ытларах пӑшӑрханса ачашшӑн ыйтрӗ Анна Егоровна.

—Аванах, хӑвах куратӑн, пурте йӗркеллӗ, ӗҫе те ҫӳретӗп ӗнтӗ. Санӑн сывлӑху мӗнле?

—Тавах Турра, самайлантӑм пек, малашне чирлемесӗр пурӑнасчӗ.

Сергей Иванович мӑшӑрӗпе ывӑлӗ ҫине савӑнса та юратса пӑхрӗ.

—Сана, атте, Леша тӑруках палласа та илеймен, чылай ҫул хушши пуян пурӑнассине пӗлтерет пулӗ ку, —ашшӗне ыталаса, ҫурӑмӗнчен лӑпкарӗ Коля. —Эсӗ тата хӑвна еплерех туятӑн?

Чӑнах та, ҫакӑн пек унран ыйтма сӑлтавӗ те пулчӗ. Кӑҫал сахал мар хуйхӑ-суйхӑ чӑтма тиврӗ, ҫапах та пуҫӗ ҫине капланса килнӗ пур инекек-синкеке те вӑл чӑтӑмлӑн, чыслӑн ирттерсе ячӗ.

—Эпӗ тем те курма хӑнӑхнӑ ӗнтӗ, ватӑ салтак вӗт, сывӑ та йӗркеллӗ, пурте куҫ умӗнче.

—Эппин, анне каланӑ пек, Турӑ тени пурах, акӑ, тахҫанхи ӗмӗт тулчӗ, тӑван кил-ҫуртра тепӗр хут пурте пуҫтарӑнтӑмӑр. Малашне те яланах пӗрле пуласчӗ, —савӑнса сӑмахларӗ Коля.

Кӗпӗрленсе пӳрте кӗчӗҫ. Анна Егоровна пӗрре те шанманчӗ чир-чӗре ҫӗнтерсе, ҫакӑн пек сывалса, хӑйӗн урисемпех утса, тӑван кил-ҫурта каялла таврӑнасса. Кунти кашни япала уншӑн ҫывӑх, нимӗн те улшӑнман. Чӗри, пӑлханнӑран, вӗттӗн-вӗттӗн тапрӗ, куҫӗ савӑнӑҫ шевлийӗпе ҫуталчӗ, чунӗнче ырӑ та хаваслӑ туйӑмсем хуҫаланчӗҫ.

—Эсир шӑпах вӑхӑтра ҫитрӗр, сӗтел хушшине ларӑр, пӗрле апатланӑпӑр, пирӗн часах ӗҫе тухса каймалла,—сунтӑхран чашӑк-тирӗк кӑларнӑ май сӗнчӗ ашшӗпе амӑшне ывӑлӗ.

—Пирӗншӗн ан пӑшӑрханӑр, эпир ӗлкӗретпӗр, кӑштах кил-ҫурт сывлӑшӗпе киленсе сывлар-ха,—ӑшра тулса ҫитнӗ кӑмӑлне пытараймарӗ Анна Егоровна.

Шӑкӑлтатса калаҫса ларнӑ хыҫҫӑн, килти, ялти хыпарсемпе паллашсан, тепӗр ҫур сехетрен ҫамрӑксем ӗҫе кайма пуҫтарӑнчӗҫ.

—Эпӗ те сирӗнпе пыратӑп, тунсӑхласа ҫитрӗм. Юлашки кунсенче тӗлӗкре те ял урамӗсем тӑрӑх утаттӑм, уй-хир те куҫ умӗнчен кайма пӗлмерӗ, тӑван тавралӑхпа часах курнӑҫасса чун та сисрӗ пулӗ,—хыпаланса пуҫтарӑнма, урама тухма хатӗрленчӗ амӑшӗ.

Çамрăксем хирĕçлемерĕç. Вĕсем васкамасăр пӳртрен тухрĕç те пĕр-пĕринпе калаçкаласа ял вĕçнелле çул тытрĕç.

—Юрĕ, малалла пĕчченех утатăп, эсир кайăр. Мана тулă пуссисем тахçантанпах кĕтсе ывăнчĕç пулĕ. Миçе çул хушши, миçе хутчен, миçе çухрăм каллĕ-маллĕ хутламан-ши эпĕ кунта? Кашни тумхахĕ, кашни сукмакĕ маншăн çывăх.

—Анне, тăхта-ха, эпĕ те санпа пĕрле кăштах уçăлса çӳрем,-тусĕсенчен вăхăтлăха уйрăлса, амăшăпе юнашар утма кăмăл турĕ ывăлĕ.

Вĕсем çума-çумăн тăрса, хирелле сукмак тăрăх утрĕç. Кăçал çăвĕпе те çумăр пулмарĕ, çавна пула вĕри хĕвелĕн çутипе вăхăт çитмесĕрех сарăхнă пучахсем, пĕр шитрен кăшт çеç вăрăмтарах тунасем çинче лараканскерсем, лăпкă çил çупăрланипе тунсăхлăн хумханчĕç. Тен, сăлтавĕ çумăр çуманнинче кăна мар, тен, шăпах ӳсмелле чухне вĕсене агрономăн, Анна Егоровнăн ачаш аллисем лăпкаса сĕртĕнме ĕлкĕреймен? Çавăнпа сарă пучахсем, тăлăха тăрса юлнăскерсем ытти çулсенчи пек çӳле çĕкленеймен пулĕ.

Амăшĕпе ывăлĕ пĕр-пĕринпе сăмах хушса калаçмасăр тулă пуссине шаларах кĕрсе кайрĕç. Çулленех вĕсем кăкăр таранах çитĕнетчĕç, тинĕсри пек хум кăларса малалла чупатчĕç, çилпе чӳхенсе таврана ырă шăршă сапалатчĕç, кăштах пĕшкĕнсенех пит-куçа сĕртĕнсе кăтăклатчĕç.

Анна Егоровнăн чунĕ пăчăртанса кăштах ыратса илчĕ, ытлашши пăлханма юраманнине аса илсе хăйне хăй хавхалантарма тăрăшрĕ, çапах та вăл ăнланчĕ: сывлăхĕ хавшанă. Эппин, ĕлĕкхи пек, кашни кунах ирех тăрса хире тухса чупаймĕ, çитĕнекен пучахсене те савăнса ачашлаймĕ. Нивушлĕ уншăн кăçал тырă-пулă ӳстересси юлашки хут пулчĕ?

Амăшĕн кăштах путса кĕнĕ хурлăхлă куçĕсене, ывăлĕ ним те пулса иртмен пек, çăмăлттайла, пĕр шухăшсăр пăхма пултараймарĕ, çак самантра ăна чăрмантарма, унăн шухăш-кăмăлне татма та хăяймарĕ. Çапах та, кăштах вăхăт иртсен, Коля Анна Егоровнăна ачашшăн чавсинчен тытрĕ те, хăйĕн çине пăхма, итлеме хистенĕн:

—Пĕлетĕн-и, анне, эсĕ çамрăк чухне шухăш тытнă евĕр, эпĕ те кăçал сан пекех агроном пулас тесе вĕренме каятăп,—терĕ. Унтан амăшĕн иккĕленчĕклĕ туйăмне çийĕнчех сирсе ярас шутпа.—Çук, çук, тин çеç мар, эпĕ кун пирки унччenex, хуларан яла каялла таврăнсанах çапла тума шут тытрăм. Анчах та ку хыпара сана пĕлтерме меллĕ самант та, вăхăчĕ те тупăнмарĕ. Ача чухне эсĕ мана ăс пани сая

кайман, ырă канашусем чун тĕпĕнче упраннă. Чăнах та, çĕр çинче тыр-пул ӳстернинчен пахарах ĕç тек çук. Çакна эпĕ халĕ унчченхинчен те лайăхрах ăнланса илтĕм. Савăнатăп, тивлетлĕ эсĕ, аннеçĕм. Эппин, телейӳ ан иксĕлтĕр тесен, манăн та юнашар тăрса, санăн ĕçне малалла тăсмалла, тăван тăрăхра малашне те тухăçлă тырă-пулă çуллен-çул ӳстермелле.

Анна Егоровна çак сăмахсене ывăлĕ каланине тӳрех ĕненмерĕ те пулас, вăл, чăнах та, хамăн хăлхасемпех илтрĕм-ши тенĕн ун çине: "Эсех çапласăмахлатăн-ши?"-тесе пăхрĕ. Иккĕленчĕ, хытах иккĕленчĕ вăл. Аптранипе: "Чир-чĕр татах çыпăçрĕ-ши? Ку — галлюцинаци — çуккинех пур пек курни, туйни пулмарĕ-ши тата?"-шухăшларĕ амăшĕ. Çавăнпа та унăн сăн-питĕнчи пĕр мускулĕ те хускалмарĕ.

Вĕсен куçĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç. Коля тӳрех тавçăрса илчĕ: амăшĕ унăн сăмахĕсен пĕлтерĕшне ăнланмарĕ е илтмен пек ним вырăнне те хумарĕ. Вăл хĕрӳленсех, аллисене сулсах калаçма пуçларĕ:

—Тĕрĕссине калатăп, кирлĕ документсене Шупашкарти ял-хуçалăх институтне ярса патăм ĕнтĕ, часах унта экзаменсем пуçланаççĕ, —тепĕр хут тата ĕненмелле, çирĕплетсе каларĕ Коля.

Эппин, шухăшра та, тĕлĕкре те мар илтнĕ сăмахсем, пурнăçра вĕсем чăнахах пулчĕç иккен. Мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен-ши çак куна çитерессишĕн, ывăлĕ те хăйĕн çумĕнче тăрса агроном ĕçне малалла тăснине курассишĕн?

Амăшĕ савăнса кайрĕ, сăнĕ-пичĕ çуталчĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл çамрăкланса кайнăн туйăнчĕ:

—Пехил сана, ывăлăм!—чунтан хĕпĕртесе те пăлханса каларĕ Анна Егоровна. Вăл тĕрек тупнăн пуçне Кольăн кăкăрĕ çине хучĕ, хыткан та шанчăклă аллисем ăна пилĕкĕнчен ыталарĕç,—телейлĕ пул, пурнăçра сана яланах ăнăçу кĕттĕр, —çаплах-ха тăсрĕ амăшĕ хăйĕн сăмахне.

—Тавтапуç, аннеçĕм...

Ял енчен лăпкă ăшă çил вĕрчĕ. Тӳпере тин çеç амăшĕпе ывăлĕн калаçăвне илтнĕ тăри, савăнăçне ниçта хурайманран, пуç тăрринче темĕнччен чарăнмасăр тăрăлтатрĕ. Тен, вăл тахçантанпах Анна Егоровнăна уйра курманнипе халĕ ăна хăйĕн юррине парнелерĕ. Тен, часах Коля та ирсерен унăн çывăх юлташĕ пуласса шанса ĕмĕтленчĕ. Ан тив, епле пулсан та кайăкăн телейлĕ кун паян. Вăл, анлă тӳпере çӳлтен уй-хире ирĕн-каçăн сăнаканскер, пĕччен тек тунсăхламĕ...

## ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ

Паян катексемшӗн пысӑк уяв — пӗрлехи хуҫалӑха йӗркелесе янӑранпа 70 ҫул ҫитрӗ. Чӗннӗ хӑнасем тата кунта ҫуралса ӳснӗ, кайран тухса кайнӑ, халӗ Ҫӗршывӑн тӗрлӗ вырӑнӗсенче пурӑнакансем ял-йышпа курнӑҫма, юбилее палӑртма ӗнерех килме тытӑнчӗҫ. Вӗсене кашнинех ялӑн урамӗсем, сарлака та куҫ виҫейми анлӑ уйӗ-хирӗсем куллен-кун пӗрле пулма йыхӑраҫҫӗ, шухӑ ачалӑха е иртсе кайнӑ ҫамрӑк чухнехи ырӑ вӑхӑта аса илтереҫҫӗ, тахҫан ӳкерӗнсе, халӗ те асра юлнӑ юмахри пек самантсене куҫ умне кӑларса тӑратаҫҫӗ, кӑмӑл-туйӑма хускатса, чун-чӗресене пӑлхантарса хумхантараҫҫӗ.

Петр Васильевич Кузнецов, хальхи хуҫалӑх ертӳҫи, тахҫантанпах канӑҫне ҫухатнӑ. Ара, ҫапла пулмасӑр, яваплӑхӗ ытла та пысӑк-ҫке. Чаплӑ уява йӗркелесе иртересси, халӑха пӗрле пӗр ҫемйери пек пуҫтарасси унран сахал мар килет-ҫке-ха. Ҫавӑнпа та ҫине тӑрсах, пур вӑйхалне хурса, чунтан тӑрӑшать те ӗнтӗ вӑл.

Ял вӗҫӗнче, Пӑла хӗрринче, ҫаран ҫинче хӑмасенчен ҫапса сцена туса лартнӑ, унӑн умӗнче куракансем валли ретӗн-ретӗн вӑрӑм саксем вырнаҫтарас тухнӑ.

Ҫанталӑкӗ ятарласа ыйтнӑ пек, уяр, хӗвеллӗ килчӗ. Хутран-ситрен ҫеҫ, ҫан-ҫурӑма усӑлтармалла, ӑшӑ лӑпкӑ ҫил вӗрсе иртет, вӑл та уява хутшӑннӑн туйӑнать.

Акӑ, тахҫанах хумханса кӗтнӗ, палӑртнӑ вӑхӑт та ҫитрӗ. Правлени енчен хӑнасемпе ларса тулнӑ ҫӑмӑл машинӑсен колонни вырӑнтан хускалчӗ. Кунта катексем ҫеҫ мар, ҫӗнӗ ахпӳртсем, татмӑшсем те пур. Ӗлӗкрех ҫак виҫӗ ял пӗр колхоза кӗретчӗ. Темиҫе ҫул каялла вара, хамӑрӑн Аслӑ Ҫӗршывӑмӑр сапаланнӑ евӗр, вӗсем те уйрӑм хуҫалӑх тытса пурӑнаҫҫӗ, шӑп та лӑп ҫитмӗл ҫул иртсен тин, хуҫалӑхсем йӗркеленнӗ вӑхӑт каялла таврӑнчӗ тейӗн. Юрӗ ӗнтӗ, ҫав тапхӑрти ертӳҫӗсем тӗрӗс тунӑ-и е тӗрӗс мар, ӑна паян никам та ӗнентермелле уҫӑмлӑн ӑнлантарса параймӗ, ҫак ыйтусем ҫине истори ҫеҫ пур енчен те тӗпчесе хакласа явап парӗ. Ҫапах та виҫӗ яла пӗрлештерсе тӑракан колхоз виҫӗ ушкӑна пайлансан та, ялӗсем хӑйсен вырӑнӗсенчех тӑрса юлнӑ. Ҫынсен хушшинче пӗр-пӗринпе ҫирӗпленнӗ, ҫыхӑннӑ хутшӑнусем татӑлман, ӗмӗртен йӑл илсе аталаннӑ туслӑх ӗлӗкхи евӗрлех тӑрса юлнӑ. Ҫапла пулмалла та, мӗншӗн тесен, тӗрӗслӗхре ҫирӗпленнӗ юрату темӗнле усал, хура вӑя

та ҫӗнтерет. Уншӑн чикӗ тавращӗ ют. Тен, ҫак куҫа курӑнман вӑя пӑхӑнса, виҫӗ ял тӑрӑхӗнчи хӗрсемпе каччӑсем ытти тӑван-пӗтенӗсем пекех, пӗрлешсе ҫемье ҫавӑраҫҫӗ, кайран пӗр ҫӑвартан сурса, ӗмӗр-ӗмӗр пӗрле килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ.

Петр Васильевич, хӑнасене кӗтсе, аллинче хӗвел пек сарӑ питлӗ ҫӑкӑр тата пӗчӗк савӑт ҫине тултарнӑ тӑвар тытса, ушкӑнран кӑштах маларах тухрӗ. Унӑн яштака та хитре сӑн-питне тӗрленӗ чӑваш кӗпи татах та хитрелетет. Вӑл аллӑ ҫула ҫывхарсассӑн та ӑна паян никам та икӗ хутчен асатте ятне илтнӗ тесе калаймӗ, хӑйӗн ҫумӗнче анатри чӑвашсен икӗ аркӑллӑ кӗписене тӑхӑннӑ икӗ ҫамрӑк хӗрарӑм унӑн хӗрӗсем пулнине тавҫӑрса илеймӗ.

Колонна ҫитсе чарӑнчӗ. Делегатсем хушшинче Чӑваш республикин ял-хуҫалӑх министрӗн ҫумӗ Николай Сергеевич Степанов та пур. Вӑл районти тӗрлӗ хуҫалӑхсене ертсе пыракан пуҫлӑхсемпе пӗрле пулчӗ. Кунта, паллах, «Тренъел» пӗрлехи пай предприятийӗн пуҫлӑхӗ Николай Александрович Кошкин та хӑйӗн ҫӑмӑл машини ҫине ларса килнӗ. Пур ӗҫе те тӗплӗн пурнӑҫлама тӑрӑшаканскер, автомашина рулӗ умне те хӑйех ларнӑ, уяв ҫитнипе хавасланса йӑл-йӑл кулать. Николай Сергеевич хальхинче тӑван тӑрӑха ҫемйипех килсе кайма шут тытнӑ. Унӑн ҫумӗнче савнӑ арӑмӗ, тухтӑр пулса ӗҫлекенскер, Лида ларать. Машинин хыҫалти ларкӑчӗ ҫинче 17-18 ҫулхи кӗҫӗн хӗрӗ вырнаҫнӑ.

Юлашки ҫулсенче Николай Сергеевич те вӑхӑчӗ ҫитменрен, те канӑҫсӑр ӗҫрен малтан шутласа хунӑ пек пушанайманран яла та сайра-хутра ҫеҫ килкелесе кайрӗ. Ҫапах та ҫирӗпленнӗ йӑлана пӑхӑнса, кашнинчех тусӗсене пуҫтарса, ирчченех, ҫамрӑк чухнехине аса илсе, ӗлӗкхи евӗрлех хапха умӗнче шурӑмпуҫне кӗтсе илчӗ.

Ҫывӑх тус-тантӑшӗсем: Леша Завражнов, Володя Иванов, Саша Кошкин, Петя Кузнецов, Юра Цыпленков ялтах пурӑнаҫҫӗ, тӗрлӗ вырӑнта ӗҫлеҫҫӗ. Енчен те Лешӑпа Володя министр ҫумӗшӗн Ҫарти тусӗсен йышӗнче пулсан, ытти тантӑшӗсемпе вӑл мӗн пӗчӗкрен пӗрле вӗренсе, выляса-кулса ӳснӗ, ҫуллахи каникулсен вӑхӑтӗнче уй-хирте пӗрле ҫанӑ тавӑрса ӗҫленӗ. Малтанласа кил хуҫисене ҫухатнӑ хӗрарӑмсем упӑшкисене шыраса арҫынсен ушкӑнне хутшӑнма та пӑхрӗҫ. Анчах та вӗсен хушшинче сӑмах яланах ӗҫ ҫинчен пычӗ. Арҫынсем пӗр-пӗрне пулӑшмалли пирки калаҫнине, ял хуҫалӑхӗнче ҫитӗнӳ тумалли майсем

шыранине, пĕр пус çумне икĕ пус хушса услам илмелли меслетсем пирки калаçнине илтсенех килти «прокурорсем» тутлă ыйăха тăсма килĕсене васкарĕç. Ĕçкĕпе иртĕхмеççĕ, эппин, пире, хĕрарăмсене, арçынсен пур калаçăвне те хутшăнни илем кӳмест, терĕç пулĕ.

Унччению яш-кĕрĕмĕн çамрăклăхри вăхăта аса илмелли вара чăнах та, сахал мар ентĕ. Ытла та сисĕнмесĕр, хăвăрт иртет-çке кун-çул. Вĕсем тин çеç ыран мĕн пулать тесе ĕмĕтленсе, кулленхи пурнăçа лайăхлатассишĕн çунса пурăнатчĕç. Халĕ акă пăх та кур, атте-анне, чылайăшĕ асатте-асанне пулма та ĕлкĕрнĕ, пурнăçăн тути-масине аванах курса ăнланнă, ăна активнĕ.

Хăнасем сцена çине хăпарчĕç. Вĕсен шутĕнче ветерансем те чылаях: Николай Сергеевич çумĕнче алтуйи çине тайăнса, шап-шурă çӳçлĕ, иртнĕ çулсенче «Крепков» ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ Николай Филиппович Чернов, Петр Михайлович Быков механик, ферма заведующийĕ Анна Ивановна Николаева тата ыттисем те.

Çаран ял-йышпа тата унăн хăнисемпе тулнă. Кĕске митинг хыççăн чăн-чăн уяв пуçланчĕ, юрă-ташă, вăйă-кулă каçченех пычĕ.

Хăнасене апат-çимĕç çитерсе тата сăйласа ăсатнă хыççăн, Коля Степанов тусĕсене яланхиллех пĕр ушкăнпа, анчах та хальхинче çемйесемпе пĕрле, хăйсем лартса ӳстернĕ хурăнлăхра тĕл пулса пуçтарăнма сĕнчĕ. Пурте савăнсах килĕшрĕç. Саша Кошкин арăмĕ Валя хирĕçлерĕ пулин те, лешĕ хуткупăсне илме те манмарĕ. Вăл ĕлĕкхи пекех, ушкăн кăмăлне çĕклеме хăнăхнăскер, ялта çеç мар, кĕвĕ-çемĕ калассипе те, шофер ĕçĕнче те районта мала тухнă.

Леша Завражновпа Володя Иванов вăтăр çула яхăн ĕнтĕ Кивĕ Катекре пурăнаççĕ. Пĕри механик пулса ĕçлет, тепри строительсен бригадине ертсе пырать. Иккĕшĕ те тахçанах çемье çавăрнă. Галя Самойлова Володя арăмĕ пулчĕ, Рая Сорокина — Лешăн. Вĕсен кашнийĕнех виçĕ ача çуралчĕ, пурте ӳссе çитĕннĕ, халĕ пĕрер мăнук.

Юра Цыпленков Нина Федоровăпа пĕрлешрĕç. Вĕсен те икĕ ача кун çути курчĕç, иккĕшĕ те фермăра ĕçлеççĕ. Кунтах хăйĕн мăшăрĕпе Володя Падисовпа Валя Наперсткина пулчĕç. Володя пĕр вăхăт хушши хулара пурăннă хыççăн, тăван яла таврăнчĕ, унтанпа нумай вăхăт иртрĕ, асатте-асанне тесе чĕннине те илтме ĕлкĕрчĕç ĕнтĕ вĕсем.

Маша Сынкова та хаваслă ушкăнран хăпас темерĕ. Анчах та темшĕн унăн Леня Антоновпа çемье телейĕ пулмарĕ. Пĕрлешнĕ хыççăн вĕсем тепĕр темиçе çултан уйрăлчĕç. Хальхи вăхăтра Леня Патăръелĕнче пурăнать.

Петр Кузнецов вунă клас пĕтернĕ хыççăнах Шупашкарти ял-хуçалăх институтне вĕренме кĕнĕччĕ. Ăна пĕтерсен, хуларан хăйĕнпе пĕрле Люба ятлă вырăс хĕрне качча илсе, Кивĕ Катеке таврăнчĕ. Лешĕ часах ялта чăвашла калаçма вĕренсе çитрĕ. Халĕ вăл кирек кама та «сутса» яма пултарать, пĕрре пăхсан, Люба вырăс пулнине ĕненме йывăр, тап-таса чĕлхепе пуплет.

—Ну, туссем, пурте пуçтарăнтăмăр-и? — йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ Коля ларса канмалли сак çине вырнаçнă май. — Епле паян каçĕ хитре. Тен, каллех темиçе çул каяллахи пек, пĕрле тĕл пулнăран?

—Вăхăт хăвăрт шуса иртнине те сисмерĕмĕр, аса илетĕн те, пĕтĕмпех ĕнер çеç пулнăн туйăнать,—хавхаланса, тунсăхласа, çапах та савăнăçне пытараймасăр, хăпартланса сăмах хушрĕ Нина.

—Астăватăр-и, чăн малтан, пирвайхи хут çакăн пек, лăпкă та ăшă тӳлек вăхăтра, каçхине пуçтараннăччĕ-и-ха эпир? Кайран вара шурăмпуç киличчен, автансем пĕрин хыççăн тепри шарлаттарса авăтиччен, ыйăха çухатса, çывăрма та манса кайса лараттăмăр, ĕмĕтленеттĕмĕр, хутранситрен тавлашса та илеттĕмĕр, хамăрăн пурнăçа лайăхлатассишĕн çеç мар, тăван колхоз пуянлăхне ӳстерес пирки те калаçаттăмăр,—иртсе кайнă кунсем пирки калаçрĕ Коля.

—Эсĕ тата Саша, хальхи пекех, хуткупăсна алăран ямастăнччĕ, ташлаттăмăр, юрлаттăмăр,—сăмахламасăр чăтаймарĕç Гальăпа Рая та.—Çамрăк пулнă çав, хамăра тӳпере вĕçнĕнех туяттăмăр.

—Çав вăхăта аса илсе, тен, шăм-шаксене çемçетмелле пĕрер хутчен тăпăртаттарса та илетĕр. Юра, санăн ташшуна эпĕ яланах ăмсанса пăхаттăм,—купăсне халь тесен халь тăсса яма хатĕр пулчĕ Саша.

—Тавтапуç, тусăм, ырă сăмахушăн, анчах та çав кунсем иртсе кайрĕç пулĕ,—ассăн сывларĕ Юра,—юррине вара савăнсах юрлăпăр.

Сашăн пӳрнисем çăмăллăн купăс тӳммисем тăрăх аялалла чупса анчĕç, каçхи шăплăха хускатса, юрă кĕвви таçта çити, аякка вĕçсе кайрĕ, хурăнлăхра пуçтараннă арçынсемпе хĕрарăмсен чунĕсене пăлхантарчĕ. Вĕсем чăтса тăраймарĕç,

çамрăк чухнехи вăхăта аса илсе, тахçан юрланă юрра шăрантарма пуçларĕç:

Ма хитре-ши Катексен урамĕ
Пĕр-пĕрне чĕререн юратсан...

Акă шурăмпуç та çуталса килни курăнчĕ, автансем те ун пирки паçăрах систерчĕç ĕнтĕ. Вĕсем çунаттисене çапса авăтнă май, сирĕн саланма, килĕрсене кайса канма вăхăт çитрĕ тесе пĕлтерчĕç. Анчах та васкакан пулмарĕ, кашнийĕ уйрăлас умĕнхи самант халех ан çиттĕрччĕ тенĕн хĕвелтухăç еннелле тинкерсе те хумханса пăхрĕ. Пĕлĕтпе çĕр пĕрлешнĕ вырăнтан хĕвел сарăлса тухнине курасшăн пулчĕç вĕсем. Арçынсемпе хĕрарăмсем шухăш-ĕмĕтре çеç темиçе çул каяллахи евĕр, çамрăкланма ĕмĕтленчĕç, паллах. Иртсе кайнă кунсен çути кашнийĕн чун-чĕрине ăшăтрĕ, çав тапхăр вĕсем патне вăхăтлăха хăнана килнĕн туйăнчĕ...

Благодарим за поддержку и помощь в изданни книги:

| | |
|---|---|
| ГУП «Чувашгаз» | —Генерального директора Поликарпова Анатолия Поликарповича; |
| ОАО «Росгосстрах-Чувашия» | —Генерального директора Васильева Геннадия Васильевича; |
| Коллективно-долевое Сельхозпредприятие «Новокотяковское» | —Директора Кошкина Николая Александровича; |
| ЗАО «Чебоксарский щебеночный завод» | —Директора Спиридонова Андрея Никитича; |
| ЗАО «ССК «Чебоксарский» | —Директора Мазик Виктора Александровича; |
| ОАО «Чебоксарский хлебозавод» | —Генерального директора Кислова Юрия Михайловича |

**ИГНАТЬЕВ Геннадий Сергеевич**

**СВЕТ МИНУВШИХ ДНЕЙ**
Повесть
на чувашском языке

Редактор *Кушманов Н.К.*
Художник *Агеев В.И.*
Художественный редактор *Сидоров В.П.*
Компьютерный набор и верстка
*Дмитриевой Г.С. и Кушманова Е.Н.*

Сдано в набор 6.03.2000 г. Подписано к печати 9.07.2000 г.
Формат 84x108 $^{1}/_{32}$ Бумага офсетная. Гарнитура Baltica.
Усл.п.л. 15,12 Уч.-изд.л. 12,4. Тираж 500 экз.
Цена свободная.

ОКДП 2211201

Издательство Писательского фонда ЧР «Калем».
Соучредитель — Чувашский национальный конгресс.
Лицензия № 030927 от 10.09.1999 г.



«Калем»